К84.09(=Чув)
Х-98
Ч-39258

# Петĕр Хусанкай

## *Çырнисен пуххи*



Национальная библиотека ЧР
4-039258

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Кф
К 81.09(=Чув)
Х 98

# Петĕр Хусанкай

*Ҫырнисен пуххи*

Ултă томпа тухать

Тăваттăмĕш том

ЭПИКĂЛЛĂ ПОЭМĂСЕМ

«АПТРАМАН ТАВРАШ» СĂВĂЛЛĂ РОМАН

ЮМАХСЕМ

1930—1956

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2003

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) — 4
X 98

*Пичете «Хисеп палли» орденлă
Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн
Ăслăлăх канашĕ çирĕплетнĕ*

Редакци ушкăнĕ:
**Ю.М.Артемьев, В.В.Никифорова, В.Г.Родионов, В.П.Станьял, А.П.Хусанкай**

Пухса йĕркелекенĕ, умсăмахпа асăрхаттарусене çыраканĕ **В.П.Станьял**

4-34258
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО
20 10 13 СЕН 2017

ISBN 5-7670-1283-0

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2003
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2003

# ЧĂВАШ ПОЭЗИЙĔН ÇАР ПУÇĔ

Чаплă ăстаçă хăй çут тĕнчерен кайсан халăх умне чăн-чăн анлăшĕпе те тарăнлăхĕпе, пахалăхĕпе те халалĕпе тата уççăнрах тухса тăрать-мĕн, çĕнĕ ăру паллă ĕçченĕн пултарулăхне çĕнĕ ÿсĕм уттипе, çĕнĕ вăхăт виçипе шайлаштарса тайтарать, кивелми тĕшшине уйăрса илет. Тутă тĕшĕллĕ астăвăм — ăса çунтаракан сăмах-и вăл, куçа шартакан илем-и, чуна витерекен кĕвĕ-и — хăйĕнче пур шухăшпа, чăнлăхпа, кивелми çĕнĕлĕхпе ăстаçă ятне ĕмĕрсем витĕр чапа кăларса пырать.

Чăваш поэзийĕн сăмахне тутăхми шухăшпа, шупкалми илемпе ялкăштарнă поэтсене асăннă чухне Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши ячĕсем хыççăн чĕлхе çине Петĕр Хусанкайăн сăваплă ячĕ килет. Вĕсем виççĕшĕ те — чăваш лирикин çĕнтерÿçĕ-революционерĕсем. Илемлĕ сăмахпа, вĕри шухăшпа, таса кăмăлпа çунатланнă поэзин талантлă çар пуçĕсем. Кунта пысăклатса калани çук. Чăваш поэзийĕн чĕлпĕрне Петĕр Хусанкай чылай вăхăт çеçпĕлле хĕрÿлĕхпе карăнтарса пынă.

Поэтсем çăлтăр çинчен çырма юратаççĕ. Петр Петрович Хусанкай (1907—1970), чăваш халăх поэчĕ, К.В.Иванов тата Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премисен лауреачĕ, — пĕрремĕш ретри çăлтăрсен ушкăнĕнчи чи шултри те хăватли, хăй сÿнсен те çĕр çине пин-пин йăлтăр çутă сапаканни. Унăн çăлтăрĕ чăваш поэзийĕн тÿпине XX ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсенче тухнă, вара çур ĕмĕр тăршшĕ çап-çуттăн çунса, çÿлтен çÿле хăпарса пынă, ыттисене хăй тавра пухса тăнă.

«Сунталăн» чи малтанхи номерĕнче (1924) ман сăвăсем пуçласа пичетленнĕччĕ. Çырасса эпĕ вун иккĕрех çырма пуçланă... Вĕренчĕкле çыркаланă сăвăсене пичетлесессĕнех мана ятлăрах поэтсем асăрхарĕç. Нумайăшне ман халь, пысăк тав туса, ăшă кăмăлпа асăнас килет. Кĕркури Алентей, Элкер, Хумма Çеменĕ — маншăн нихçан та манми ятсем», — тенĕ каярахпа Хусанкай «Кĕске автобиографире».

Çĕршыв граждан вăрçи кÿнĕ юхăнчăклăха, калама çук хăрушă выçлăха сирсе XX ĕмĕрĕн чĕрĕлĕхĕпе тĕрĕслĕхне тĕнче умне кăларса пынă вăхăтра янăраса кайнă Атăл леш енчи Сиктĕрмере ÿссе Хусанта вĕренме пуçланă çамрăк сăвăçăн янкăс сасси.

Совет индустрийĕн вучахĕсенче — Донбасра, Чулхулара, Магниттура çирĕпленнĕ вăл, пĕрремĕш колхозсен анлă уй-хирĕсенче çивĕчленнĕ, Тăван çĕршывшăн пынă юнлă вăрçăра хăватланнă. Унăн пултарулăхĕнче революци историйĕн паттăр страницисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. «Çирĕм ултă», «Улмуççиллĕ Тĕрлемес», «Басмач», «Таня», «Горкăри çурт», «Владимир Маяковский», «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэмăсен геройĕсем — революци, халăх, Ленин. Кашни сăнар ăш-чикĕнче — çĕршыв историйĕ, халăх кун-çулĕ. Историзм принципне П.Хусанкай чăваш поэзине çине тăрса кĕртнĕ, май пур таран çирĕплетсе пынă. Вăл революциллĕ тĕрĕслĕхпе çынлăха мухтаса юрланă. «Чăн сăмах чул касать. Чăнни вăл — ĕмĕрхи кĕрешӳ, киввине çĕнни çĕнтерсе пыни, çине тăрсан пĕр хĕлхем пек йăлтăр çутăран пурне те ăшăтмалли çулăм хыпма пултарни».

Поэзи сентри çине «Çĕрйĕркелӳ», «Магнитту», «Яманкас юмахĕ», «Таня», «Çĕнтерӳ юрри» поэмăсем ахах пек вырнаçаççĕ. Аслă Пушкинăн «Евгений Онегин» романне чăвашла куçарса кăларни сăвăça «Аптраман тавраш» сăвăллă роман çырма хĕмлентерсе тăнă. Теçеткепе халĕ çӳлĕк çинче Петĕр Хусанкай кĕнекисем. Чăвашла, вырăсла, тутарла, пушкăртла, грузинла, украинла, пăлхарла тата ытти нумай халăхсен чĕлхипе пичетленнĕ унăн произведенийĕсем. Икĕ чĕлхеллĕ поэт теççĕ Хусанкая. Вăл вырăсла та пайтах çырнă. Пĕлессе вара нумай чĕлхе пĕлнĕ, нумай чĕлхерен чăвашла куçарнă. В.Шекспир, Ш.Руставели, И.Вазов, М.Горький, В.Маяковский, Т.Шевченко, Я.Райнис, Н.Бараташвили... 178 поэт хайлавне куçарнă Петĕр Хусанкай. Тата мĕнле куçарнă!

Ача-пăча произведенийĕсем: юмахсем, сăвăсем, поэмăсем. Вĕсен ретĕнче — литературăна ылтăн сас паллипе кĕрсе юлнă «Тăван çĕршыв» поэма.

Петĕр Хусанкай çинчен ăшă та тĕрĕс сăмахсем нумай каланă, пултарулăхне пур енчен те тишкернĕ. Тĕпчевçĕсен ăслă сăмахĕсенчен пăрăнса поэт çырнисене вулама пуçлатăп та вăл хăйшĕн хăех калама çук уçăмлă критик пулнине курса савăнатăп. Сĕтел çинчен пурнăçĕн юлашки çулĕсенче кăларнă «Суйласа илнисем» кĕнекин икĕ томĕ, «Хушка хумсем», 1977 çулта пухса хатĕрленĕ «Пин-пин чĕре» публицистика сборникĕ кайма пĕлмеççĕ. Пурнăç кĕнекисем пекех вĕсем. Унта поэт кун-çулĕ те, çĕршыв историйĕ те сăнарлăн курăнать. «Ирхи», «Савни», «Хура пĕркенчĕк», «Хамăр ялсем», «Аслă чĕре», «Пулчĕ вăрçă», «Кун-çул тӳпинчен» сăвă ярăмĕсем — поэзин ылтăн фончĕ, хрестоматисене кĕрсе юлнă произведенисем. Петĕр Хусанкай кĕнекисене уçмассерен унăн сăнсăпатне, уттине, калаçăвне аса илетĕп, ячĕ умĕнче пуç таятăп.

* * *

Петĕр Хусанкай пултарулăхĕ тарăнлăхĕпе, ăсталăхĕпе — хăйне хальлĕн пĕр пысăк тĕнче. Лирик, историк, этнограф, критик, чĕлхеçĕ, публицист, тăлмач, трибун — вăл сăмах искусст-

вин пур жанрĕсене те алçемми тунă, вĕсене чĕр кĕмĕл пек таса тĕслĕхсемпе пуянлатнă. Хăйĕн ĕçне хаклаканĕсем пулма аслă Пушкинпа Çеçпĕле чĕннĕ, вĕсем уншăн яш чухне те, çитĕнсен те поэзи эталонне упракансем шутланнă.

Тĕпчевçĕсем ăна Есенинран, Маяковскирен, вырăс поэчĕсенчен вĕренсе пынă теççĕ. Пĕрпеклĕхсемпе уйрăмлăхсене çавран-çавран шыраççĕ, эпитет-эпитетăн танлаштараççĕ. «Тилли юррисем» ярăм пичетленнĕ хыççăн поэт тăван халăх сăмахлăхне тарăн тымар яни çинчен чылай çырчĕç. Йăлтах тĕрĕс. Анчах çакна та палăртмалла: пĕтĕм чăваш халăхĕн пурнăçĕ, тĕнче культурипе литературин историйĕ унăн ăс-хакăлĕнче пĕтĕçсе шăраннă. Унăн ĕçне-хĕлне пухса «Лермонтовская энциклопедия» евĕрлĕ кĕнеке кăларас пулсан вăл пирĕн культура, литературăпа чĕлхе энциклопедийĕ пекех курăнĕччĕ. Пысăк ĕмĕтпе те шанчăкпа, хĕрӳ ĕçре те кĕрешӳре, пĕр вĕçсĕр шыравра ирттернĕ поэт хăйĕн пултару терчĕпе тулнă пархатарлă пурнăçне. Унччен пултарнинчен тата çӳлерех çĕкленмелле тытнă вăл ăнтăлу çунатне, ăсталăх тӳпине тăтăшах кармашса пынă. Кашни çĕнĕ произведенийĕ — ан тив, вăл критиксене тавлаштарнă та, хирĕлтернĕ те пултăр, пур чухне те кĕтнĕ пекех çыпăçуллă шăранайман пултăр — тăван чĕлхене чыс, тăван халăха мухтав кӳнĕ. Пăтранчăк шухăшлă, шуçлака эстетикăллă произведенисем çыракансене — халăх пуçне минретекенсене хирĕç тăнă вăл, хăй те халăхлăхпа çынлăх принципĕсене çирĕп тытнă, тĕрĕслĕхе асла хунă. Халăх мухтавĕпе, культурипе пĕрле Хусанкай ячĕ те тивĕçлипе çĕкленнĕ.

Наци пĕлӳлĕхĕпе ăслăлăхĕнче халăх поэчĕ поэзири пекех çӳллĕ вырăнта тăрать. Анлă пĕлӳшĕн, ăс-хакăлшăн, тĕрĕс тавракурăмшăн çунать унăн вучĕ. Кашни йĕркинче пысăк ăнтăлу, шырав, шухăш-туйăм пур. Саманан историллĕ аталану çул-йĕрне тарăн ăнланса тăни, тăван наци историне тарăн пĕлни, халăхăн çул çинче ӳксе-çĕтсе юлнă пин-пин ахах-мерченне культура арчине каялла илсе хума пĕлни, малашлăха вут чуль пек шанса тăни — Хусанкай поэзийĕпе публицистикин тĕп шăнăрĕ. «Ман патриотлăхăм хам çуралнă пӳрт умĕнче ӳсекен йăмраран пуçланать, ваттисем выртакан масар тăпринчен тапранать вăл, тăван букварьти тăван сăмахран, уяв юрринчен, хантăсла тĕрĕрен, акатуй вăййинчен, ырă кăмăллă ĕçчен Улăпран ӳссе аталаннă. Çакăн пек вăйлă тымар пуртан çеç манăн патриотлăхăм мана Раççейпе, Чăваш çĕршывĕпе, Совет Союзĕнчи Раççейпе, социализм лагерĕнчи Совет Союзĕпе мухтанма тивĕç парать. Çакна ăнланни аслă ĕçчен çын А.М.Горький асăннă «ирĕк ĕçпе пултарулăхăн аслă телейне» кӳрет те ĕнтĕ мана», — тет поэт трибун.

Петĕр Хусанкай — XX ĕмĕрĕн аслă гражданинĕ, чăваш сăмахлăхĕн талантлă ялавçи. Вăл хăй пурăннă вăхăта, Тăван çĕршыва, халăхăн тарлă та шарлă пурнăçне сăнарланă. Хĕсĕк

самана сăвăçăмăра сарăлса вĕçмелĕх ирĕк паман. Апла пулсан та вăл чăвашлăх туйăмне, ăсне, хакăлне XX ĕмĕр варринче никамран хăюллăраххăн çĕклесе пынă.

Наци патриотизмĕпе этемлĕх интернационализмĕн туйăмĕсем пĕр-пĕринпе диалектикăлла тачă çыхăнса тăраççĕ. Интернационализм — виçесĕр анлă, анчах сăпатсăр мар. Вăл наци сăнсăпатне, йăли-йĕркипе хăй евĕрлĕхне шута илмесĕр тăмасть. Литература таппин çăлкуçĕ — тăван çĕр, тăван халăх, тăван чĕлхе. Вĕсем урлă пĕтĕм этемлĕхпе тĕнче умĕнче тăракан тĕллевсем, халăхсен туслăхĕпе пĕр шухăшлăхĕ, танлăхпа тăнăçлăх кĕрешĕвĕ палăрса кĕрет. П.Хусанкай халăхсен интернационализмĕ çинчен каласа хăварнине çамрăк ăстрăмри чăваш поэчĕсен çине тăрсах ăша хывма, ун идейисемшĕн аслă поэт пек сăмахпа та, ĕçпе те тăрăшма пысăк тивĕç пур.

Халăх поэчĕ чăваш çĕрĕпе халăха пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи ытти аслă халăхсен ретĕнче чыслă та танлă курнă. Танлăхпа тăванлăх туйăмĕ ăна тĕнче литературин корифейĕсемпе — П.Тычинăпа, Н.Хикметпа, Ж.Амадупа, Луи Арагонпа, Д.Линдсейпа, Х.Ботевпа, А.Тодоровпа тата ытти нумай-нумай çынпа паллаштарнă, вĕсен «тăван сассисене» чăвашлатма хистенĕ. «Чăваш чĕлхи эрешĕпе витсе чи аслă шухăша, эпир тĕнче мехелĕпе паллаштаратпăр чăваша», — çапла хаклать поэт тăлмачсен ĕçне «Эпир — чăваш çыравçисем» сăвăра.

Вăхăт иртнĕçемĕн халăх юратăвĕ сӳнмест те, иксĕлмест те. Вăл тата тарăнрах та вăйлăрах аталанма пуçларĕ. Поэт произведенийĕсем, вăхăт пусăмне сирсе, наци культурин чи ырă тĕслĕхĕсен ретне тухса пычĕç, çынсене — уйрăмах çамрăксене — кирлĕрех, хаклăрах, ăнланмаллăрах пулса тăчĕç. П.Хусанкай хайлавĕсем — вăл пурăннă вăхăт ялавĕ пекех. Вĕсем вĕренӳ кĕнекисенче нумайлăха хăйсен çирĕп вырăнне палăртса хучĕç.

«Аптраман тавраш» поэма авторне хăй пурăннă чухнех чăваш поэзийĕн кервен улăпĕ, тĕпри лаши, кĕрекери ăсчахĕ тесе калатчĕç. Вăхăт ку сăмахсем тӳрре килнине тата çирĕпрех ĕнентерчĕ. «Ыранхи çапăçура эпĕ вилсен мана коммунист тесе шутлама ыйтатăп». Эпĕ те — рядовой салтак — çаплах çыртăм, — тесе аса илнĕ поэт хăй фронтра тăнă вăхăта. — Эпĕ ĕнтĕ уйрăм çыннăн пурнăçĕнчен чылай вăрăм ĕмĕрлĕ пек туйрăм хама хам. Çав туйăм пĕрлехи, калама çук пысăк, вĕçĕ-хĕррисĕр, вилĕмсĕр ĕçĕмĕртен тĕвĕленсе çуралчĕ».

Художник кирек хăçан та вăрăм ĕмĕрлĕ. Петĕр Хусанкай поэт кĕрешӳçĕ, чăваш литературин аслă ăстаçи нумай нацилле Раççей литературинче малашне те малтисен ретĕнче тăрĕ.

***Виталий СТАНЬЯЛ***

# ЭПИКĂЛЛĂ ПОЭМĂСЕМ

## ÇĔРЙĔРКЕЛӲ

Пуçлатăп çĕрйĕркелӳ калавĕ.
Ăста мишавайăн ăс-халĕ кăна
Нихçан та пирĕн çĕре аналаймĕ,
Нихçан та касса чикĕлеймĕ ăна.

Çĕр çап-çара хир, вилĕ хир пулсассăн —
Юпа, кĕреçе те хăлаç — çитĕччĕ.
Анчах çĕр сывлать: пĕр çинçен, пĕр мăн саслăн
Çухăрать çĕр хаяррăн та çивĕччĕн.

Çĕрте кĕрешӳ, икĕ класăн вăрçи,
Кам ун айккине тăрса юлĕ?
Юрист, педагог, инженер, сăвăç-и —
Кашнин хăйĕн бомба, граната та пуля.

Тавайăр мĕн пурĕ пĕр анлă фронтпа
Тăшман лагерьне атаклар пĕрле.
Поэмăн шултра бомбине, вăхăтпа —
Сăввун сăннине те, поэт, ан шелле...

Апрелĕн пĕрремĕшне вунă мĕльюнăн
Кĕрсе чăмăртаннă кил-çурт колхоза.
Мĕн чухлĕ ялкор, комсомолецсен юнĕ
Тумлать халь çав цифрăсенчен сăрхăнса!

Ку — юнлă çĕртме, вăрçса илнĕ çĕртме.
Кулак-эрешмен шăнана-чухăна
Хăй танатинчен ахалех вĕçертмест,
Вĕт унсăр ниçтан та сĕткен çук ăна.

Хуçалăх вăтамĕ — пит йывăр йăтаймĕ,
Вăл хăй кĕлетне хăй уçма юратать,

Хăрах урипе хăй кулак вăл, вăтамĕ.
Батрак пур та чухăн пур — ак урата.

Кусем улталамĕç. Кусем çинче хывăн
Çĕнĕ çурт никĕсне, сарăн çирĕп урай;
Анчах тăрласах çитерейимĕн: çĕршывăн
Ула — хĕрлĕпе шурă тĕс — пит нумай.

Ку çав — çĕлĕкне пусса лартнă вăтам.
В ă т а м. Лекнĕ вăл икĕ вăй варрине:
Ăçтан ăшăрах çил вĕрет — вăл унта.
Мĕне пĕлтерет ку меслет? Ак мĕне.

Колхоз тунă чух пурнăçа чухлаканĕ
Расна тыр пурки çакнипех юлсан
Тĕреклĕ лараймĕ айри ун пуканĕ,
Пÿрми те тăраймĕ тулса.

Кулак тымарне тĕппипех хăртнă чух
Вăтам пулатех чухăнпа пĕрле.
Нимле урăхла май, мел те çук.
Вăтам умĕнче халĕ пĕр çул, п ĕ р р е:

Колхоз унăн çулĕ. Ытах пăрăнать тĕк —
Кулак куллинчен именсе-и, мĕн-и, —
Ку тинĕс варне ывăтан парамат пек,
Кам пур тинĕсе вăлтапа çĕнтерни?

Колхоз вăл халь тинĕс. Пĕччене — вăлта.
Ун кунĕпе тытнă пулли те — пĕр пус.
Паян-и, ыран-виçмине-и — вăтам
Пулать, пулмаллах талккăшпех пирĕн тус...

Эпир хальлĕхе çĕр ĕçлевлĕ çĕршыв,
Тинрех хурçă-тимĕрленсе пыратпăр.
Тинрех уя çапрĕ бензин шăрши,
Кашни лашанах тăварман-ха трактор.

Анчах хăлтăркка тылă пек кĕсрепе
Ытлах коммунизм тăваймăн.
Уя машинсем тухмалла пинĕпе,
Тырра тирпейлетĕр комбайн.

Кĕсремĕрсене тăварас пулать пирĕн,
Фордзон ăйрисем хитререх тесе мар.

Фордзон лашипе ĕç часрах пулса пырĕ,
Çавна чи малтан астăвар.

Ĕçре хăвăртлăх, тырă-пулăра тухăç.
Анчах пĕччен-иккĕн фордзон илме йывăр,
Хупа пĕр канашлă ĕçчен йыша пух эс,
Эрехсĕр, сăрасăр ниме тума йывăр.

Хула хатĕрлет халь пир-авăр, чей-сахăр,
Пур сахăрăн савăчĕ, пирĕн пур хапрăкĕ.
Хресчен пўлмине тўпелет те — сапăр,
Капла ĕç тума пултаратпăр-и-ха?

Май çук, пире кирлĕ тĕш-тырă савăчĕ.
Çынсем лартса панă янтă çурта
Ухмах та кĕрсе вырнаçĕччĕ,
Йăт ху эс коммун кĕрешне, ху чутла.

Хула ĕç çынни тăрăшать хĕлĕн-çăвĕн.
Хресчен тыррине пуçтарать те арлан пек
Выртать вара шĕкĕлчесе. Епле тăвăн
Капла коммунизм? Хăçан вăл тăрланĕ?

Çавăнпа пролетариат диктатури,
Батрак-чухăна, вăтама чĕнсе
Шултра, пĕрлешўллĕ хуçалăхсем турĕ.
Малтан хăнăхсах çитеймерĕç çынсем:

«Епле вăл п ĕ р л е? Арăмсем те пĕрле-ши?»
«Хай, ху çемйўнте латти çук та ара ...»
«Епле ман кĕсре ют алла илешĕ?..»
«Епле сутам мар-ха эп хамăн тырра?..»

Хăш чух хальчченех-ха унтан та, кунтан та
Çапла сăмахсем те илтмешкĕн пулать:
«Ирĕк сутă тума Ленин чарман та!..»
Кам çав «çирĕп ленинçă»? Ку вăл — кулак.

Ленинизм — пăшал вăл. Ăна, псалтир пек,
Хура кăтатпа пĕркеместпĕр эпĕр.
Ĕнер унпа пенĕ пĕр калибĕрпе,
Паян эпĕр тепĕр калибĕр илетпĕр.

Вилес чухнехи эрешмен
Усал пулать теççĕ, вăл хытă ĕмет.

Кулак та пуçларĕ çапла кĕрешме,
Сисет: ăшă ĕмĕт пăрланчĕ, кинет.

Экономикăн çĕнĕ политики пире
Пăртак сывлăша çавăрмалăх пулсассăн
Кулак чăннипех, тен, шутлатчĕ: «Сĕре
Паха диктатура ку класăн!..»

Ларатчĕ вăл çап-çутă курницара.
Çунать йывăç çу. Ырă, лăпкă кĕтес.
Кӳпет сысна ашĕ, сăхатчĕ сăра,
Ма унăн йĕркине пит тиркес?

«Çутти» те пур, — шăршлă ханша юхтарать-и вăл!
Унпа аппалантăр камичĕ-театрĕ!
Ун пӳлĕмĕнче илтĕнет ку чух радио,
Вăл «Правда» хаçат вуламашкăн тапратрĕ.

Вăл член та хăех, перекет касси членĕ.
Заем илесси те кĕрет шухăша.
Страховка укçи ун виç çуллăх тӳленĕ,
Кĕскен — вăл «Канаш ирĕкне пулăшать».

Вăл хăй интересĕшĕн элчĕ те янă,
Ак, калăпăр, ун депутачĕсем:
Малтан Кондратьевпала Чаянов,
Унтан Рамзина пуççапать чĕнсе.

Халь ак тата Громовпала Суханов,
Пĕтĕм Иккĕмĕш интернационал...
Çав сар лачака ăшĕнче çухалнă
Кулак пружинне пĕл, палла эс ăна!

Лере французсен генераллă штабĕ,
Кунта вĕсен агенчĕсем ирттермеççĕ.
Пĕр-пĕр тутăх шпорлă Шкуро çитсе тапĕ —
Пуçланĕ те тетчĕç пуль интервенци.

Буржуй тĕк тăмалăх памасть пулăшу.
Ку — вăрçă, чеен авăрланнă пăшал.
Совет анине сухаласшăн буржуй.
Итле чикĕ урлă килен пăш-пăша.

Вĕсем шухăшпа пире уйăрнă, каснă,
Союз карттинчи пур çĕре ярса илнĕ:

Пĕрне Туркестан, теприн — Крым-Кавказăн
Пуянлăхĕ, виççĕмĕшне — Украина.

Анчах чикĕ урлă та пур пирĕн шанчăк,
Ахаль-им çак тар хатĕрлен кунсенче
Испани королĕ Альфонс персе анчĕ
Кивелнĕ те тайăлнă тронĕ çинчен.

Пиреней çур утравĕ инçе-и?
Гибралтар çав терех сарлака-и?
Революцин çунатлă идейĕ
Хĕрĕх тинĕс шыв урлă та кайĕ.

Пулас çапăçу иртнинчен пĕчĕк мар,
Ку — вĕçĕ-хĕррисĕр тема.
Анчах вăхăт мар халь унпа пăчăхма,
Фактран малалла эс иртеймĕн.

Ак вунă мĕльюн. Пит сулмаклă та йывăр!
Буржуй шлепкине пĕлĕм пек вăл сарать.
Хыпашлăр, элекçĕ-тăшман, тытса çыртăр,
Çăварăр çитсен, çавăрса чавсăра!

Çук вунă мĕльюн тӳп-тӳлек хисеп мар вăл;
Вăл куçнă — пĕр сикнĕ кунта, пĕр лере.
Мĕльюн — пинсенчен, пин — çĕртен хăпарнă,
Çĕрсем — вуннăран, вуннăсем — пĕрререн.

Çак вунă мĕльюн хытса ларнă тăм мар,
Вăл ĕмĕрлĕхе пулас çук пирĕн чикĕ.
Колхоз хапхинчен кĕриччен сăввăм ман —
Вăл вун пĕр, вун пилĕк, çирĕме çитĕ.

Хушсамăр ун чух сăвăçран ыйтмасăрах, —
Саманчĕ мĕн чухлĕ калĕ.
«Пилĕк çуллăх вĕçне тухиччен СăСăСăРа
Коллективласа çитермелле». — Сталин.

Çĕртен хĕрĕхĕш колхозра. Пит нумай-и?
Большевиксемшĕн — нумай та, сахал та.
Пире-и халь тимĕр шапа пек шума-и?
Юрт, хырăмсалăхна салт та!

Вĕçне тухасси икĕ çул. Вăрах-и?
Большевиксемшĕн — вăрах та, кĕске те.

Кам çак самант мăлатук пăрахĕ?
Çап — пĕлĕте хĕм çĕклентĕр!

Мĕн чухлĕ хăвăртрах — çавăн чухлĕ часрах
Пур йывăрлăха çĕнтеретпĕр.
Халь пирĕн пĕртен-пĕр ĕмĕт асра:
Коммунизм тăватпăр эпĕр.

Коммуна. Мĕскер вăл? Тем пысăкăш палăк
Е çĕнĕ Хеопс хăпартан пирамида.
Вăл мар, ку та мар. Анчах паллă:
Хальхи виçесем ун патне пырайми-тĕр.

Коммуна вăл — вĕçĕ-хĕррисĕр пуянлăх.
Мĕн пур çĕрте выртнă саппас тапранса
Тухса çиеле çĕнĕ форма туянĕ,
Вăл парăнĕ тăм пек алла та ăса.

Çĕрти çитмесен — пĕр-пĕр çăлтăр çине
Хăпарĕ атакăпа ирĕк этем.
Хальхи юн тăкан харкашу вырăнне
Пуçланĕç çынпа çут тĕнче вăрçисем.

Коммуна вăл — урăм та сурăм машшинлăх.
Машшин — хуçа мар; машшинсен ян сасси —
Тулли пурнăçăн килĕшӳллĕ ташши вăл.
Професçи те çук, çук ĕçе пайласси.

Тăватăн мĕн чухлĕ пултарнă таран,
Илетĕн — мĕн чухлĕ пĕтерме пултаран.
Нимле кĕрешӳ те пулмасть, нимле тарçă.
Ĕç хăй йыхăрать, ĕç — хаваслăх, телей.
Ана трактăрларĕ, сăвва шăрантарчĕ.
Чĕрӳ хăш май выртрĕ — çав май кĕвĕле.

Коммуна вăл — темĕн сарлакăш ирĕк.
Пиншер çул юхтарнă этем куççульне
Юрлан шăрçасем туса туп-тулли тирĕ
Телейшĕн çуралнă йăх кăкăр умне.

Нумай вăйă-кулă, нумай савăнăç.
Артист кулли мар ку: ман шухăшпала,
Ун чух тĕнчипех пĕр уяв пулса çаврăнĕç.
Тусанлă театрта лармĕç капла.

Коммуна вăл — чаплă, пин енлĕ ăсталăх.
Ак, калăпăр, темĕн çитмест пек сана.
Кичем (хальхилле каласан). Уçрăн алăк —
Соната янрать çĕклесе кăмăла.

Ăçта унта санăн Бетховен-Моцартă!
Хупан алăка — тарчĕ мусăк.
Уçатăн — каллех. Хурлăхна-мĕнне чартăн —
Тытан ху ĕçне. Кĕчĕ вăй. Куç салхусăр.

Коммуна вăл — темĕн сарлакăш шухăш.
Хальхи çăмăлттай сăвăç-кайăксене
Унта электрицăпа та тупас çук уш,
Вĕсен чĕлтĕркке хӳрисем хĕсĕнĕç.

Унта пĕр-пĕрне кĕвĕçсе ăмсанмăн,
Тек авмăн «асли» умĕнче ĕнсӳне.
Коммунăн кодексĕ: сан — манăн, ман — санăн,
Веçех! — савнипе пит шăллисĕр пуçне.

Коммуна — хальччен ялкăшман юрату-мĕн.
Кил-йыш тăллипе тăлласа варлине
Ача кипки çеç шăршлакан чура тумăн,
Çатма аври çеç тытмĕ вăл аллине.

Нихçан пурăнса курман тăм кĕлеткен —
Адамăн — аяк пĕрчинчен тунă арăм
Çухатĕ ун чух хăйĕн мĕскĕнлĕхне, —
Пулмасть чĕлхере çав сăмах коммунарăн.

Пулмасть «сăнчăрпа» «çăраççи» чĕлхере,
Пулмасть «чăваш», «вырăс», «чаххуткă» та «сифилис».
Коммуна вăл — сыввăн тапан пĕр чĕре,
Унта виç çĕрччен те кĕрен ӳпкен сывлĕç.

Коммуна вăл — çамрăклăх. Çамрăк Çĕр.
Пулмасть çурта-ладăн та, тупăк-хĕрес
Малашлăх биолăгĕ! Çывăр, чĕрт:
Эп хам пурнăçа ç а в ă н  ч у х пĕтерес теп!

Ак калĕç: «утопи», ак калĕç: «фантази».
Анчах чĕлхĕре малтан туптăр.
Пуянлăхпа çеç пурăнас пур — ан та çыр,
Суха та ан ту, ан çĕкле мăлатук та.

Эпир халь истори рульне ярса тытнă,
Мĕльюн алăпа чăмăртанă ăна.
Эпир пролетариллĕ хытлăх,
Малашлăх пире пăхăнать.

Рабочи пур тансăрлăха та пĕтерĕ,
Ун хыççăн тек пулмĕ пуян, пулмĕ юрлă.
Коммуна çĕрне социализм кĕперĕ
Каçарĕ пайтах кĕрешӳ хумĕ урлă.

Социализм — план, дисциплина, йĕрке.
Ун примерĕ — пĕр шăнăрлă парти.
Мĕн чухлĕ киревсĕр, йăх-ях кирĕке
Хăй ӳчĕ çинчен вăл шăлса антарчĕ!

Тĕрме пек тискер çĕршывра çуралнă,
Шăн катăргăна пуçиле янăскер —
Вăл чирлĕ те пулнă, вăл пулнă суранлă,
Анчах мĕн çĕнтерĕ ăна? Мĕскер?

Таçти тайга витĕр, якут хирĕ урлă,
Финлянди çаранĕ çинчи ӳплерен
Çитсе тӳрлетет пĕлсе каснă хирургăн —
Ильичăн — эмелĕ кашни ӳт-тире.

«Пĕрне вĕлерсессĕн тата вуннă хатĕр,
Каллех парти мускулĕсем тимĕр пек.
Малалла, пролетарисем! Атьăр
Хăватлă та ăслă Маркс йĕрĕпе!

Пролетарин, сăнчăрĕсĕр пуçне,
Тек нимĕн те çук çухатмалăх:
Илессе вăл илĕ пур тĕнчене,
Ăна ĕмĕрлĕх пăхăнĕ çут çанталăк».

Хальлĕхе Çĕрĕн улттăмĕш пайĕ —
Ĕç халăхĕпе унăн партийĕн.
Ленинизм тĕнче тăрăх кайрĕ, —
Мавзолей ăшĕнче вилĕ мар тейĕн.

Ăмăрту вăй-хăвачĕ султан çул
Çĕршыва Улăп пек хăпартрĕ.
Кам вăл çав ывăнми сунталçă?
Вăл — Ленин туптанă парти.

Парти çапăçăва ертсе тухрĕ, —
Çĕнтерӳллĕ çĕкленчĕ ялав.
Парти ĕç хатĕрне пĕрле пухрĕ,
Партиех ак кăклать кив яла.

Епле пурнаттăмăр эпĕр хальччен?
Пăхар-ха чакса каялла кăшт кăна.
Утар-ха пĕр-пĕр Чăвашкас-Шăхальтен
Пĕр-пĕр салана Воскресенкăна.

Уй, хир. Хир те уй. Пиçиххи пек ансăр,
Ситрелчĕклĕ пирĕн ырхан анасем.
Нумайăш юлатчĕç сухаламасăр,
Выртатчĕç хĕвел питĕнче ĕнсе.

Телей хурт-кăпшанкăшăн е саранчашăн:
Măян, армути, йыт пырши те пиçен...
Тырра шĕкĕлчеççĕ те — ывăçăн, чашкăн
Çăварниччененех кĕленетпĕр кивçен.

Пуян Каруксем ахалех тыттармаççĕ,
Пĕр çапнă кĕлтешĕн те сикĕç шыва.
Илетĕн ик-виç пăт — çур çул пулан тарçă,
Хăш чух юлашки çи-пуçна та хыван.

Хĕл каçрăн шăна пек — ни выçă, ни тутă.
Кĕтен акнине, ыраш мар тăк — пăрçа.
Анчах пĕр тумлам çумăр çук. Çуртна хуп та —
Уттар бурлака е каллех кĕр тарçа.

Каллех юлашки алса тулĕ таран
Леçсе пăрахан саклата.
Каллех арăмна шӳлкеме таттаран,
Сурпан çаккине салттаран.

«Памарĕ-ха турă, шуйттан памĕ-ши?» — тен,
Тытан эсĕ карт, ярăнатăн вăййа.
Малтан пăртак шиклĕн — вершукăн та шитĕн,
Кайран — хăлаçшар, çухрăмшар та каять.

Хăрах сас палли палламан тăм писмен те
Çав вăтăр ултă листаллă «кĕнекене»
Уçса-хупласа сурчăкпа ислетнĕ,
«Вуланă», вĕреннĕ пăхса тĕррине.

Кĕр акнă ана та, çур шăтнă калча та
Орлянкăпа картшăн пĕтни вĕçĕмсĕр.
Паян пĕр çурпилĕк, ыран — çичĕ ятăн,
Тепĕр кун вун ик çуллăх вĕçерĕнчĕ çĕр.

Хуплать хура хурлăх. Хупах — чун уççи.
Кĕрет те кӳпет, кĕсйине те тиет:
«Эп кам?! Эп пуян, ырă çын, ăслă çын...
Эп хам халь пурмис, хам тиек!

Çыхлан манпала пуç чашки шалккă мар тăк!
Çул парăр! Ман ăш, ăш çунать...
Мана çут тĕнче тăвăр, кам тытса чартăр
Буслай Васки пек сарлака ман чуна?!»

Çапла çӳресен, çухраша-çухраша,
Пăртак ывăнать те, кайран —
Пĕриншĕн тĕрме, тепĕриншĕн — тип шар,
Тепри — ĕмĕрне тухаймасть тарçăран.

Пуян Карукпа хыт кукар Михетерĕн
Кĕлет тулли тырă çĕрет.
Вĕсен — кив капан, ăна епле тӳнтерĕн
Касса урăхла тытмасассăн çĕре?

Уй, хир. Хир те уй. Пиçиххи пек ансăр
Выртатчĕ анамăр — ситрелчĕк, çинçе.
Пĕр касăм кĕр ют йăрана, астумасăр, —
Тыттарчĕ те ячĕ хăлха чиккинчен.

Çул çын валĕнчен ăнсăртран чикĕм утă —
Çаранлăхра, калăн, чикан тапăрĕ!
Унтан сĕтрĕнеççĕ полицийĕн-судăн
Е пĕр тĕттĕм каç çут çава тавăрĕ.

Шутлатăр-ха ют лупас урлă
Пуçтах сар автанăр каçма —
Хуçи кăшкăрать тилпĕрен çисе урнăн:
«Ман çурт, ман карташ, ман паçма!..»

Хыçри пахчуна уç-ха алăк —
Кӳршӳ çурăкран сăнасах тăрать...
Çапла çирĕм пилĕк мĕльюн хуçалăх
Кӳтсе пурăнатчĕçĕ çак таран.

Çирĕм пилĕк мĕльюн пĕчĕк йăва
Сапаланнă Р а ç ç е й текен хир тăрăх.
Грузин е вырăс, тутар е чăваш —
Пурин те вĕсен пĕр тымарччĕ, пĕр тăрă.

Истори пире пăхтарать каллĕ-маллĕ.
Малтан пур хресчен пулнă пĕр «маннă ял».
«Ак килĕ улпутăмăр, çав пире майлĕ...» —
Тесе шаннă чухăн. Шаннă пĕлтĕр, кăçал:

Тата тепĕр çул — тулчĕ виççĕ, тăваттă.
Улпучĕ килет, вилнин шăтăкне питĕрет,
Куççульсĕр куçне кăшт шăлам пек тăвать,
Тухса вĕçтерет Питĕре.

Некрасовăн «маннă ялĕ»
Çаплах — маннипех — юлать.
Кĕтсех тăр, асту — майлĕ
Сан ишĕлчĕкне хула!

Вĕсен акнă та, вырнă та.
Мĕскер вăл мужик улпутшăн?
Ăман пек вырт пĕр вырăнта,
«Çӳлти» ĕçсене ан хутшăн!

Мужик улпута ĕне евĕр:
Сăвать те сăвать — вил те пар.
Ытах çав «ĕне» сĕтсĕрлентĕр —
Тытса улăшать йытăпа.

Мужик тухнă пур тивĕçрен.
Авлан эс савса, çураçса, —
Хĕрне, ху хĕве хупиччен,
Паран улпута пĕр каçа.

Тата мĕскер пур кунтан ирсĕр,
Кунтан аскăнлă япала?
Хресчен йăнăшать: «Сирĕр, сирĕр!»
Анчах кам сирсе ямалла?

Нумайăшĕ — ырлăх е шырлăх! —
Тухса тараççĕ паяр патĕнчен.
Хӳтлет таркăна çăмăл йĕлтĕр, сĕм хырлăх,
Сыр-варлă, сăрт-туллă тĕнче.



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
4-39258

Тӑрать таркӑнсен варрине шултра ҫын,
Дон шывӗн хусахӗ Разин:
«Кам панӑ ҫӗре улпута? Ӑҫтан панӑ?
Кӑлар вӗсене йӑвинчен хуҫа!..»
Куллен ӳсӗнет вӑй-хӑват Аҫтаппанӑн:
Холоп хутшӑнать, таркӑн, юрлӑ хусах...

Ҫӗнтернӗ ялсем хусах тӳре-шари
Туса йӗркелеҫҫӗ; мелне тупсанах
Улпут кӗлетне уҫтараҫҫӗ чари,
Ҫакаҫҫӗ пупа, тӳрене, купсана.

Иртен караванҫӑсене хут ҫук,
Ҫӗрле аслӑ ҫул хӗррине ан тух та.
Ҫтаппан Тимофеевича ҫут ҫул,
Ҫтаппан Тимофеевича мухтав.

Юлать Аҫтӑрхан, Чархули, Сарӑту;
Иртет Самартан, хӑпарать Чӗмпӗре.
Камра саламат йӗрӗ пур — хапӑл ту;
Ларт йӳҫӗ уйран ун умне, чӗн — кӗрет.

Ҫтаппанӑн Мускав ӗмӗтре, ылтӑн Кремӗл.
«Час пӗлӗр, — тет вӑл, — мӗн тути хусах».
Анчах Кремӗле хӳме урлӑ кӗреймӗн,
Ҫӑри унӑн пулнӑ сулмаклӑ та пысӑк.

Ҫӑри — икӗ пуҫ, тӑват куҫ ӑмӑрт кайӑк.
Ҫапайнӑ вӑл хӑлаҫланса ҫуната —
Ҫтаппан Тимофеич кимми хӑвӑрт кайнӑ
Калле, шыва май хумханса, аната.

Юнланӑ шыва ӑмӑрт кайӑк, йӳнчетнӗ,
Ҫулла шӑнтӗччӗ хал ҫитсен Атӑла!
Пӗр татнӑ арман пӗвине эс йӳн тетӗн-и
Часах пӗвесе хытармашкӑн калла?

Пӑлхавӑр путланнӑ. Сӑлтавӗ халь паллӑ:
Ытла тӗрлӗ ҫын, тӗрлӗ пуҫ, тӗрлӗ сас.
Ҫтаппанӑн пулман ӳссе ҫитнӗ, хӑватлӑ,
Ертсе пыракан пӗр тӗллевлӗ класс.

Иртет шӑп пӗр ӗмӗр. Раҫҫей сӑн-сӑпачӗ
Пӑртак улшӑнать тӗнче улшӑннӑ май.

Ак чи малтанхи савăт та сасă пачĕ,
Шăлт-шалт шатлатать малтанхи шăлтăрма.

Патшалăхсен мул ӳссе çитнĕ кашнин,
Ӳсен промысла ăстасем кăларттарать:
Аркрайт хатĕрлет арлакан машшин,
Тĕртекеннине хатĕрлет Катрайт.

Тĕртет те, арлать те Англи, анчах —
Машшин çумне ут кӳл е çавăр шывпа,
Пĕрех сăмахпа: машшинсем-ха начар;
— Аста! Хăвăртрах ĕçлекен машшин пар! —

Чĕр хатĕр нумай-çке, сĕвемĕн су-ха,
Хăçан арласа пĕтерес ку çăма?
Çавăнпа чăрсăр чунлă Джемс Уатт
Машшин ӳтне сывлăш кӳртме пуçăнать.

Халлапĕ калать: чей ĕçсе вăл ларать,
Чейникĕ умра-мĕн Уатт инженерĕн.
Пăхать те — чейник хуппи ак тытăнать
Сиксе ташлама! Мĕншĕн терĕн?

Уатт ухмах мар: «Ку вăя пар пире! — тет. —
Пăс çаврĕ машшин таврашне, çаврĕ-ха!»
Чут çеç çарамас ыткăнан Архимед пек
Тăрса çухăрмасть «эврика!».

Ларать-и тепре чей ĕçме, лармасть-и, —
Чейник хуппинчен тапранать революци:
Мĕн пур шăкăр-макăр кустарь, ал ăсти
Сиксе вĕрен сывлăшлă ут айне пулчĕ.

Сасартăк ялпа хула хушшине
Выртать тĕпсĕр вар пек уйрăмлăх.
Хула ӳт-тирне хытарать, пружинлет;
Ял уншăн — çӳçе хуппи, хуйăр вăл.

Сĕвет те сĕвет машшин çав хуйăра.
Хресченĕн юхать хури мар — хĕрлĕ тарĕ.
Машшин халь ăна çĕрĕнчен уйăрать,
Машшин çуратать пролетари.

Раççей хирĕнче унта та кунта
Чăнк-чанк чанклатать шăтăрнаклă сунтал.

Урал рудине шăрататать вырăс мулĕ.
Улпут хресчене хăвалать савăта.
Ун чух ĕнтĕ палăрнă, курăннă пулĕ
Путилов мĕлки те, Морозовăн та.

Çыхать те лартать вут пучах умне — пиçĕн!
Ялти йăлмакран та нăкрах тăха çав.
Çавăнпа çак сăлтавшăн та пур ĕлĕкхишĕн
Çунса çĕкленет çĕнĕ ят Пăкачав.

Каллех Каçпирен Хусан хумĕ таран
Вирт кайрĕ, тымарĕ ĕнет кăлкансен:
«Çакар улпута! Сĕтĕрсе антарар
Хăйне те — леш кĕрт амине — трон çинчен!..»

Майра аслапай çакăн чух айне янă, —
Вăрман пек салтак хăвнă «пунттă» енне.
Анчах патшана хăмсаран Емельянĕ:
«Эп — Виççĕмĕш Петĕр ĕмпӳ», — тет хăйне.

Каллех Пăкачавăн та ĕмĕт çитмен:
Пулман пĕр программăллă çирĕп тĕллев.
Сарепта вăрçи хĕрĕх пин пуç чиксен
Хресчен революцийĕ сӳннĕ каллех.

Корпус çине корпус çĕклет капитал:
«Алт, пролетари, кăлар тимĕр-тăмăр!
Ку кам вăл ахлатрĕ? Хĕне, тап йытта!
Каланă ан пултăр «кантар», «ывăнтăмăр»!

Алтать пролетари, анать çĕр тĕпне.
Çĕрти пурлăха кăларать çиеле.
Çав пурлăх ăна кĕтнĕ пуль ĕмĕрне,
Çав пурлăх ăна сăнчăрпа пиелет.

Колони тавраш юнĕпе çăвăнсан
Мул хĕп-хĕрлĕ питлĕ килет: «Çул инçе, — тет, —
Кĕскет-ха çула эс, Якур Стефенсон!..»
«Халех, — тет Якур Стефенсон, — кĕскетĕп».

Якур — пролетари. Анчах ун пуçра пур:
Çырать, хуратать, хисеплет, туртать.

«Халех, — тет, — веçех пăспала куçаратпăр;
Шуйттан та чараймĕ пире, турă та!»

Ачи пултарать: маçтăр çумĕ малтан,
Кайран вăл директор, хăйĕншĕн хăй лорд.
Ăна перчетке вĕçертсех ал тытать
Хуçи ун — çĕр кăмрăк патши Ревенсворд.

«Кунта ак Манчестер, лере — Ливерпуль.
Мĕнле шухăшлатăр эсир: çав хушша,
Тен, сирĕн талантăрпа май килет пуль
Пăртакçă пĕрмешкĕн?..» — тет мул, ĕç хушать.

Директор çырать, хисеплет, планшет чĕрет
Пĕр мăшăр йĕрпе Ливерпуль — Манчестĕре.

Йĕрсем ӳтленеççĕ, шăваççĕ çĕленĕн.
Йĕрсем янраса йывăçа ыталаççĕ.
Шпалсем-йывăççем пĕтĕмпех чĕмсĕрленнĕ, —
Ӳкеççĕ, выртаççĕ хăлаçăн-хăлаçăн...

Кĕç ак тулхăрать пăравусĕ «Ракета».
Çынсем тупăшаççĕ, тытаççĕ пари:
«Тиев машшинран висĕ хут нăкрах тет те
Ăçта сĕтĕрмешкĕн! Лартать мар-и!»

«Ракета» тиет пилĕк хут та ытла,
Паран вăхăта икĕ хут хăвăртлать.

«Ракета» çĕнтернĕ. «Урра Якура!»
Чунне çĕклеме премипе астараççĕ:
«Ыр кур, Стефенсонăм, хăвна кура».
«Юрать, — тет Якур, — тавтапуç. Рад стараться!»

Якур пăравусĕ каçать чикĕ урлă.
Пĕри те юласшăнах мар айккине.
Ак куç уçайми çил-тăманлă та юрлă
Раççей те сирет феодал ыйхине.

Вăл кирпĕч йăтать, хапрăк-савăт лартать.
Мăрйи кăшкăрать: «Кӳр часрах пролетари!»
Анчах ĕç алли пĕтĕмпех ялта.
Кама мул тĕрттерĕ, кама арлаттарĕ?

Тавар йышланать, тăкăнать тырă-пулă.
Таваршăн халь тăвăр шалти пасар.
Улпут тинкерет тулалла, тинĕс урлă,
Буржуйĕ: «Тавай, — тет, — шалта лавкка сар!»

Чее акăлчан ÿкĕте кĕми пулчĕ, —
Тырра хаклатать, илмест пошлин тавраш та.
Америка фермерĕ, Пруси улпучĕ
Пырать те хывать мĕн чул кирлĕ — лаштăр.

Раççей кимми мар вĕсемпе ăмăртмашкăн, —
Çĕкленĕ те çапнă ăна конкуренци.
Хресченĕ хăйне кăшкăрать: «Пăртак маншăн
Çак халăх пăлханнă самант кун кÿринччĕ!»

Салтак та тÿрккес. Ак ăнмасть Крым кампани.
Ак «пунттă» та «пунттă» — пуçлатăр пĕри çеç.
Улпут лупасси тĕлне çулăм капланнă;
Улпут паçмисем çинче к р и з и с.

«Çитет! — тет чура. — Ман сĕткенпеле савăнтăр!
Ман çурăм çинче таш ташлаттăрччĕ, анăр».
Чи пысăк улпут Иккĕмĕш Элексантăр
Патша пуçĕпе шикленет: «Тикĕн мар-тăр...

Кăна, улпутсем, хамăрах тăвар мар-и?
Таçтан аялтан улшăну кĕтиччен —
Çÿлтен йăпатас. Мужике кăшт шантарăр,
Эп турă тивлечĕпе пусăп пичет...»

«Пусма пусăн та эс, ăна-кăна сис:
Улпутăн усламĕ мăскал та ан чактăр!..»
Ак чарăлтаттарчĕ патша мăнахвис,
Мужикшĕн тăвата енне те çул такăр.

Анчах çĕр пĕр шит те çук, çĕршĕн тÿлев.
Тÿлев ху чунна «ирĕкленĕшĕн» те.
Мăнтарăнĕ халĕ йĕрет те ÿлет,
Пиçме хатĕр, шет, крепăсла сÿсментех.

Асту ан кăларччăр сана ирĕке!
Асту — коронланă хурах анкăл пулĕ!
Кунта капитал çирĕплетнĕ йĕрке,
Хуçа — хапрăк-савăтçăсем, вĕсен мулĕ.

Хресчен сийленет: хăш-пĕри — арендатор,
Кулак, туртăнать улпута хăй.
Тепри чунĕшĕн тӳлесе аран татрĕ, —
Е выçă вил, е савăта кай.

Хресчен пролетариленет. Тĕрекленчĕ
Капитал сăпкинче çамрăк класс.
«Народниксем» тенĕ интеллигенци
Пуç çаврăннă сурăх пекех халь пулас.

«Пĕтет халăх, — теççĕ, — пĕтет, Раççее
Европа çулне тыттарасчĕ тесессĕн!»
«Çук, вырăсăн пурнăç йĕрки вăл хăех
Социализмалла туртмалла», — тет Герцен.

«Общинăран тӳрех коммуна кĕме шеп-çке», —
Теет каярах Чернышевский.

«Мул хапрăкĕ, ун пăравусĕ, вакунĕ
Хăртать революци ĕçне тымартан.
Революцие халăх тăвĕ, — тет Бакунин, —
Вăл вĕреннĕ пĕрле пурăнма авалтан».

«Халăх» та «халăх» çав халăхçăсенĕн,
Вĕсен «халлă халăхĕ» пулнă хресчен.
Анчах хулара корпуссем ӳснĕçемĕн
Хăпарнă тепри тĕрлĕрен цехсенчен.

Рабочи пастовккăсем тунă, пăлханнă.
Кăтартнă вăл хăй çиллине те вăйне.
Çавăнпа ак марксизм тăлмачĕ Плеханов
Мĕнпур ăсĕпе çаврăнать ун енне:

«Раççейре революци çĕнтерĕ
Рабочи класс çĕкленсессĕн çеç,
Унсăрăн шанчăк çук пирĕн», — терĕ.
Вĕçет çав сăмах, кĕç кĕрет вăл ĕçе...

Мужик коммунизмĕ ăнман пирки
«Çĕрпе ирĕк» ушкăн саланать: пĕр енчен
«Халăх ирĕкĕ» тухать, тепри —
ПăСăКăПă ашшĕ «черный передел».

Мул хуçи тунă хăйĕн ĕçне,
Пролетрийĕ тунă хăйĕнне.
Мул хуçи тумлам юн ĕçнĕ,
Пролетарин витре кĕнĕ ун вырăнне.

Пĕлнех пролетарин малта пыран çарĕ:
Мул харпăрлăхĕн пĕр финал çеç —
Хăй сăхнă юна кĕç хăсса кăларĕ
Хăй пыршисемпех капиталçă.

Акă вăл юлашки пусăмне те пусать,
Тÿнес картлашки ун — империализм.
Вара пĕтерет хăй ĕçне вăл туса,
Вара вăл — истори валли сăн.

Анчах юлашки сăхăм — чи хăрушши,
Вилет те — сăхса сăнăлать вăл сана.
Çирĕм пилĕк, вăтăр çул хушши
Хăйрать капитал çав сăнна.

Çĕре, чăмăр Çĕр çăкрине,
Чĕллĕн-чĕллĕн касса уйăрать те
Пуçлать хапсăнмашкăн вăл пĕр-пĕринне:
Çын аллинчи кукăль пысăк курăнать тет.

Пролетари класĕпе унăн парти
Çав сăнна хирĕç хăйранса хăпарчĕ.

Партин пулнă хăйĕн чир-чĕрĕсем.
Парти сайралнă, чакнă, иккĕленнĕ;
Анчах саланман вăл, мĕншĕн тесен
Парти шăтăрнакĕ умĕнче тăнă Ленин.

Мул хĕснĕ, ылханнă пире: «Эй, пĕтинччĕ
Çак ман тарçăма ернĕ ерĕç-ултав...»
Анчах ак эпир юлашки репетици
Туса кăтартатпăр пиллĕкмĕш çулта.

Металçă, пуставçă, шахтер, чугунçулçă —
Çирĕм тăватă мĕльюнăн — тăрать те тухать.
«Çитет! Çур кун-çул савăта ÿксе юлчĕ.
Ху ан çĕр айне, ху ĕçле, ху ту-ха!..»

Хресченĕн суха калекки пек алли
Хура тăпрана кармашать:
«Çитет пĕкрĕлмешкĕн помещик валли.
Час хамăр анашăн вăй парăн, лашам...»

. . . . . . . . . . . . . .

Хресчен сапаланчăк. Рабочи пăлхавçă
Тин çеç çĕкленейнĕччĕ тĕрĕссипе...
Дубасов атти айĕнче йăванаççĕ...
Кăрлач юнăхтарчĕ юра йăм хăмаçăн,
Витеймĕн ăна эс Гапон ризипе...

Унчче çынсем шаннă: «Патша вĕт!
Пăрахмĕ тăван кил-йышне...
Кĕтӳ сасси мар-çке хура халăх шавĕ!
Тӳлеккĕн пырсан йышăнĕ...»

Те ӳсĕр пуçпа, те урă
Чăваш та юрланă ăшшăн:
«Çĕрте-и те патша, çӳлте турă,
Ăрахматах тĕнче тытнăшăн...»

Тытнă тĕнче: пĕр Питĕрте çеç
Ик çĕр вĕлернĕ, сакăр çĕр амантнă.
Мĕн чухлĕ ытти хулара вĕлереç...
Патша мĕнли палăрнă, шанчăк йăлт шаннă.

Реакци урать. Пăлханан ялсенче
Хура юпасем лартса вăл çӳрет.
«Çĕр ыйтнăччĕ эс, ак сана çĕр, пичче!»
Юн çеç чарт та чарт сирпĕнет ӳтрен.

Хресчен ан хускалтăр тек çĕршĕн
Тесе туптараççĕ часрах меслетсем.
Тарлаççĕ проект туса кунĕн те çĕрĕн
Министрĕсем пур хевтипе эхлетсе.

Унта та кунта та сарать ак тимре пек
Кулак валли хутор Столыпин кĕрепĕ.

Ялта никĕс пур — пурăнать улпут влаçĕ,
Мужик нăхтине хытармашкăн пулать...

Шăп вăтăр мĕльюн хресчен выçă юлаççĕ
Ялти кулаксен ырлăхне пула.

Ленин çырать: «Авалхи йĕркене
Помещик хăй çĕмĕрет пулсассăн
Вăл ирĕксĕр пĕр ушкăн кулаксене
Тем чухлĕ чухăн, вак хуçалăх çăттарасшăн.

Хресчен çĕмĕрме тытăнсан аваллăха —
Пĕтĕм улпутсен аллинчи çĕре
Конфискацилесе яланлăха
Хăй аллине илессе пĕлтерет».

Ленин çырать. Унăн партийĕ вирлĕ
Сарать çакă шанчăка хĕн çулпала.
Кĕрхи тĕттĕм каç пек кун-çул урлă-пирлĕ
Шевле çутипе çутăлса çункалать.

Малтан аслатисĕр пастовккă пуçарчĕç,
Çук çыншăн кĕреп çине çилĕ хура;
Салтак шинельне чăркаса пуçтарчĕ:
«Мĕскершĕн-ха, камшăн çĕрес окопра?

Георгишĕн-им? Татса ил те сур!
Хĕрес лартса памĕ ура.
Ялта юхăнса ишĕлет кил-çурт,
Лаша — юлашки те — каять напура...»

Çыру. Пĕлтерӳ. Тепĕр вăхăтсăр вилĕм.
Салтак арăмне тухмалла тет укçа.
Миçе тенкĕпе эс, мĕн хак парса илĕн
Ĕçленĕ те савнă чĕрĕ пуçа?..

Е ак таврăнан икĕ хул хушшине
Туя хĕстерсе ял мухтанă ĕçчен.
Салху куçпа çеç пăхтаран ху çине,
«Мăнтарăн» та «мĕскĕн» илтен пур енчен...

Çав ĕмĕр курман чĕрĕ аш пăтти витĕр,
Çав юнлăн сиксе вĕрекен хурана
Тухса чĕтретет пин çăварлă сас: «Çитĕ!!!
Пăрахăр пăшал! Мĕншĕн çын туранать?!»

Салтак урипе сасăлать килĕшӳшĕн,
Хресчен акапуç шăрчĕпе сасăлать.
Анчах «патриотшăн» сан ӳкĕтӳ мĕн?
Вĕсен çав-çавах виçĕ тĕслĕ ялав.

«Вăрçар вăрçа хирĕç! Туппун кĕпçине
Тăрат çавăрса, тĕлле мул хуçине!»

Çапла Циммервальд чĕннине илтнĕ хыççăн,
Керенский февралĕн фальшне те сиссен
Хускалчĕ хай вăтăр мĕльюн выçă
Хресчен те салтак, хапрăкри-савăтри çын
Кĕрхи çиçĕм пек аслатиллĕн çиçсе.

Метталçă, пуставçă, шахтер, чугунçулçă...
«Е вилĕр йăлтах çапăçса, е вĕлерĕр
Харам тĕнчене», — тет, хушать революци.
Юпа уйăхчен пĕр эрăн кун тулчĕ,
Юпи тапратрĕ вара тепĕр эра.

Халь çав ик тĕнче хушшине чикĕ çапнă
Куна ватă паттăрсен, большевиксен
Калавĕсемпе асилсен хăть хăçан та
Хăвна маларах çуралманшăн шеллен.

Хĕнрех ху курман, ӳтӳпе ху тӳсмен
Мухтавлă та тертлĕ ĕçе асăнмашкăн.
Хăвна пăртак хырнă пулсассăн сӳсмен,
Ху çав мăн лава кӳлĕнсе хăшкăлсассăн!

Эп çул та çӳрерĕм, эп турăм экскурси —
Хама шыраса, çĕршывран тĕлĕнсе.
Анчах пĕр музейлĕ тирпейлĕх çеç курчĕ
Ман куç ĕнерхи çапăçу тĕлĕнче.

Ак Смольный. Унта Ленинград пролетарийĕ
Тăвать хăйĕн кирлĕ ĕçне кулленех.
Тăлмач — çак вун çич çулхи хĕр — ăнлантарĕ-и
Вун виçĕ çул ĕлĕк мĕн-мĕн пулнине?

Ун чух çак халь хăнăхнă влаç суртĕнче
Вĕркенĕ çын хурт уйăрас вĕлле пек.
Иртен çĕр ирччен, тепĕр кун çур çĕрччен —
Виçшер талăк та куç хупман тĕлĕпе.

«Таса хĕр упраç институчĕ» тăрăх
Таканлă салтак утăмлать каптăр-каптăр...
Маттур матруссем. Куçĕсем — витĕр тăрă,
Шалта тем çиçет, питĕ вăрттăн кавар-тăр...

Тĕпчеççĕ, ыйтаççĕ-ха пĕр-пĕринчен:
«Хăçан тухмалла? Хăçана-ши хăварнă?
Ватасчĕ те — амбă! Тата мĕн çитмен?..»
Хистет тинĕс хумĕ пулас, вăл — тăварлă!

Сасартăк сĕрлен коридор тăршшĕпе
Хыпар чашкăрать хăлхаран хăлхана.
Пĕр çӳçентерет, пĕр кăвар чĕртнĕ пек,
Чĕре кĕрешме чĕнет, юн пăлханать.

«...Х ă й килнĕ, атьсем. Ĕненменччĕ эпир...
Çӳрет имĕш вăл парикпе... пулĕ те ...
Çирĕм тăваттăмĕшĕ — восстанишĕн ир,
Çирĕм улттăмĕшĕ — каярах пулать», — тет.

«Апла çирĕм пиллĕкмĕш-и? Ну, Керенски,
Калаçăпăр эпĕр санпа ыран!
Нева кăпăкне чикĕм пуçлă кĕрĕн-çке», —
Тесе саланаççĕ çынсем Смольнăйран.

Шалта — коридор вĕçĕнче — пĕчĕк пӳлĕм.
Ильич тĕрĕслет ӳсен тăвăл халне.
Умри телефонăн кĕпçи хĕрӳллĕн —
Мунча чулĕ пек — тивет ун тăнлавне.

«Мĕнле кăмăлпа ĕç çынни? Хатĕр-и?» —
Ыйтать вăл Антонов-Овсеенкăран.
Çарта мĕнле шухăш, флотра — çав тери
Пĕлсе тишкерет вак-тĕвекĕ таран.

Мĕнле ĕçлет Вăрçăллă Ревкомитет? —
Подвойский патне хăй кĕрет, хăй тĕпчет.

Штурм сарăлнă, ӳснĕ, хĕрсе ĕлкĕрнех.
Пĕр вĕçĕ — ĕç халăхĕ, тепĕр вĕç — Ленин.
Этемлĕх курман аслă штурм чĕрине
Этемлĕх курман революци мими тĕрĕсленĕ.

Ĕнер куçрĕ йăлт Комитет енне
Петропавловск гарнизонĕ. Çĕр пин пăшал.
Паян хыпар çитрĕ Хельсинкине.
Çĕрле — Комитетăн мĕн пур вокзал.

Кĕпер. Кĕперсем çинче Хĕрлĕ Гварди.
Кĕпер айĕпе шăвăнать «Аврора».
Ремонт тума килнĕ крейсер хăварчĕ
Черетлĕ ĕçне, тупăсем авăрларĕ.

Ирпе — çиччĕре — телефон станци пирĕн.
Йăл-ял хулпуççиллĕ юнкерсем,
Шереписемпе чăлханса урлăн-пирлĕн
Чăл-пар саланаççĕ юн пĕрĕхсе.

Ильич юлашки секундчен хыпаланă
Восстани пульсне. Вăл пилĕк пӳрне пек
Пĕлет — мĕнле çул малалла, мĕнле план ун,
Çавăнпа çав ирех вăл çырать: «Пурне те!

Вăхăтлăх тӳре-шаран шалчи тулчĕ...
Ĕç халăхĕ мĕншĕн кĕрешнине веçех —
Çĕре илесси, килĕшӳ, ĕç кантрулĕ,
Совет влаçĕ — май пур халь тума çав ĕçе...»

Каçпа Комитет штаб çуртне хупăрланă.
Пĕр пульăсăр парăнчĕ штаб çиччĕре.
Унтан Хĕллехи Кермене: «Тухăр, анăр!
Кĕрсе ватиччен пултăр ĕç чиперех!»

Кунта вĕçкĕн юнкерсем чăрсăрланаççĕ,
Керменĕ тавра баррикада тăваççĕ.
Вутран, виле тăрăх е чĕрĕ çын урлă
Сик, каç, хайăр, кĕр, пусмапа чупса улăх!

Шалта кукша пуçлă министрĕсем
Пур люстрăсене чаршавланă та
Хуллен йăпанаççĕ: «Мĕн-и?.. Кĕрессе
Кунтах кĕреймеççĕ пуль те?» — «Ăçта!»

Анчах та «Аврора» туппи кĕрĕслетрĕ.
Прожектор сивлеккĕн пăхать, вилĕм пек.
Чĕтрет Варфолом Варфоломăч Растрелли
Мĕн пур пин те аллă çич пӳлĕмĕпе.

Пакунлă çынсен тайăлать ăсĕ-тăнĕ.
Разведка — самантсеренех тулăн-шалăн:
«Пулмасть çапăçса... çĕнтерет восстани...
Пени усăсăр... парăнатпăр, пожалăй...»

Унччен те пулмасть — çилĕллĕн пĕрĕхсе,
Нева хумĕсем татнă пек çыранне,
Çăвар тулли çавăрттарса ылханне,
Сăран пиншаксем, аçамсем, кĕрĕксем
Кĕпĕр-р-р кĕрсе кайрĕç патша керменне.

Тулта илтĕнет-ха урра! та урра!,
Кӳпчек юлашки юнкĕре чӳпĕклет.
Кунта: «Пĕтрĕ вăхăтăр çак минутра!
Тасалăр часрах! Аллăра çӳлелле!!!»

Çав кун кăнтăрлах Питĕр Советĕнче Ленин,
Виç уйăх ытла вăрттăн пурăннăскер,
Октябрь çинчен каласа евитлерĕ:
«Халех килĕшӳ, хресчене — халех çĕр...
Социализм тума тытăнатпăр», — терĕ.

Унтах Ленина илтнĕ çын
çав сăмах,
Пайтах çын пуçне муталанă ăнлав çав —
Куллен тумалли ĕç пекех, чăн-чăнах
Пулса пырасса питĕ уççăн ăнланчĕ.

Каçпа çав сăмах кăмăлланчĕ тата:
Советсен иккĕмĕш съездне пуçтарăннă
Большевиксем Ленин сĕннĕ декрета —
Çĕрпе килĕшӳ декретне — йышăнтарнă.

Тин лаш сывласа ирĕкленчĕ хура çĕр,
Тин тупрĕ чăн-чăн хуçине те, тусне те.
Ялта çĕр декречĕ вулаççĕ те макăраççĕ, —
Мĕн чухлĕ вăрçман уншăн, мĕн-мĕн тӳсмен-тĕр!

Ахаль тыттармарĕç ăна пире.
Улпут, хăпма мар-ха, чĕрре те кĕрет.
Съезд йышăннă хыççăн уя та хире
Штыкпа çырмалла пулчĕ тепĕр декрет.

Истори кун-çулĕн ани çийĕнчен
Кайса пыракан класăн ирсĕр хăвачĕ
Тултан та, шалтан та — мĕн пур енчен
Пире эрешмен карти евĕр карсаччĕ.

Салатрĕç те ватрĕç, йăлт юхăнтарчĕç;
Тиерĕçĕ ылтăн — савукăн та ывăçăн,
Унтан Парижсен хупахне тухса тарчĕç.
Çăва тĕпне! Кайăр! Умăртан хыçăр!

Никам пулăшмасăр, пĕр хамăр вăйпа,
Тăран транспорта, сасăсăр савăта
Яратпăр хута. Лартатпăр юпа
Вăрçа пĕтерем пек туса вăхăта.

Виççе, чухласа — пĕр чике ытла мар! —
Чакатпăр эпир малалли вăрçăран.
Лартатпăр лавкка, йышлататпăр тавар:
Хула кӳртет тырă, ял — çитсă, сăран.

Усламăç та тем те тупса парать сире,
Вăл вывескине сарса ячĕ самай.
Анчах пирĕн вăй кооперацире,
Ун урлă ӳсетпĕр социализăма.

Блокадăсем хыççăн, нэп çемми витĕр
Тухатпăр ак эпĕр — патвар та вăй-халлă.
«Америк-и, мар-и, — хăвалăпăр шиксĕр,
Хăварăпăр та!» — терĕ ĕç халăх.

Плансем алăра. Хисепленĕ, кăларнă.
Юмах та, фантази те мар — кур, çит:
Кунта Днепрострой, кунта пулă тăварлăн,
Кунта автосавăт, кунта Турксиб.

Лере ав электростанци, лере — сахăрăн
Савăчĕсем. Ку — Кузбасс, ав леш — нефть...
Кăçал вĕсем пилĕк çĕр вун саккăрăн
Кĕреççĕ социализм картишне.

Ытах цифра çеç хăй тĕллĕн шантармасть тĕк,
Шупка курăнсан вăл кун пек ĕçсенче,
Паян эп пĕрне вĕçертсе кăтартас теп
Çав вăрăм та пысăк конвейер çинчен.

Нумай та пулмасть вăрçă-харçă пушарĕн
Хура тĕтĕмне сирсе янă çĕрте
Чăлт шурă станицăсемпе юнашаррăн
Пĕр пысăк хуçалăх куçа илĕртет.

Ик-виçĕ çулта — никам та ĕненмĕр,
Курсан — ĕненмесĕр юлмăр никам:
Хăй калăпĕпе тĕнчере пĕртен-пĕр
Кĕрлет тулă хапрăкĕ «Гигант».

Çулла. Утă уйăхĕ пĕтсе килетчĕ.
Шăп пĕрчĕ хытса çитнĕ вăхăт иккен.
Малтан элеватор — совхозăн кĕлечĕ —
Пире саламларĕ таçтан инçетрен.

Яла пынă чух ĕлĕк пирĕн чиркӳ
Курăнатчĕ малтан çинçешке тăррипе.
Ку çурт... чиркӳрен çӳллĕрех-тĕр те ку,
Анчах каппаймасть вĕçкĕлчĕк тăри пек.

«Тӳпе кирлĕ мар, — тет вăл хăй сăнĕпе, —
Унта пуш-пушах çак сенкер çавра алтăр.
Курак-чакакпа ват хĕрсемшĕн тӳпе,
Пурăнас тен пулсан — çĕр çинче çанă тавăр!»

Вăл тавăрнă çанă. Бетон пӳне вирлĕн
Тăрать каçăртса. Тымар янă çĕре.
Кун пек хуралтсем Коммуна ӳтлĕн-тирлĕн,
Ĕнентермелле кăтартаççĕ сире.

Çĕр те çитмĕл пин гектар талккăш
Выртать пĕр йăрансăр уй-хир.
Ану санăн хăшĕ-ши? — Тахăш.
Çук çĕр валеçес хуйхи.

Веçех, пурте санăн кунта, шăпипех.
Лере ав расна ĕçлекенĕн лаши,
Комбайна пăхсан вĕтĕннĕ шăши пек.
Сухаçă хыçать пуçне: «Ма капла-ши?»

Комбайн вырать те çапать, сăвăрать.
Пăрçа пек, суса хунă пек чыслă тулă.
Комбайн çапла акă ман сăвăра
Пĕччен сухаçа хуравлать пусă урлă.

Комбайн калать пек: «Мана йăлăхтарчĕ
Америк улпучĕсене самăртма.
Çук, урăх пулассăм килмест манăн тарçă,
Хама та тек тарçă тавраш кирлĕ мар.

Эп ирĕк ĕçри çынсемпе пурăнасшăн,
Тарпа ан çулаччăр ман ал-урама.
Эп килтĕм кунта хам йăха хăвармашкăн —
Кайран, хăмăл каснăн, мула турама.

Эп килтĕм кунта йăрансем пĕтерме:
Ана йăранне, ял-хула йăранне.
Ĕç сирĕншĕн пулнă вăл ĕлĕк — тĕрме,
Манпа вăл çĕкленĕ телей вырăнне...»

Комбайнĕ калать-ха. Комбайнçă Джек
Илтет-ши сулмаклă машин калавне вăл?
Е кирлĕ ăна ытларах укçа çех?
Е уншăн пĕрех Ленинпа Кампанелла?..

«Америка мар ку. Нью-Йорк е Чикаго —
Çĕршыв вăл çĕршыв çав, анне вăл — аннех.
Кунта ют тăпра ăшне алă чик акă,
Чухла хытă вырăс чĕлхин ăнлавне...»

Салху кулăпа вăл тăнлать тăлмача
Çак Джек е çак Джон кăшт хĕссе ик куçне.
Епле тăрăшсассăн та халь çав ача
Йăлтах пирĕн пек пăхаймасть ĕç çине.

Анчах шалта пур ун пытарăннă сасă,
Çав сасăра класс чĕлĕхĕ паларать.
Çав сасă тăлмач хыçĕнчен, йăнăшмасăр,
Калать те хурать ăнсăртран: «Ол райт!»

. . . . . . . . . . . . . . .

Çĕр те çитмĕл пин гектар...
Комбайнсем тем пысăкăш чĕрĕ хурт пек
Çисе çаврăнаççĕ тырра — сик те лар...
Ану санăн хăшĕ-ши? — Пурте!

Кăçал, çакă виççĕмĕш татăклă çул,
Пулса çитмелле пирĕн никĕс.

Чугун-кăмрăка та тĕллетĕр куçу,
Пуссем те пулма тивĕç тикĕс.

Кăçал пин те хĕрĕх машшин-трактор станци.
Вăл пин те тăват çĕре çитĕ, пĕлетпĕр!
Çак вунă мĕльюн çирĕм пиллĕк парсанччĕ.
Вара, пан-Европ, урăхла пуплĕр эсĕр!

Халь эсĕр пăхатăр: «вăрçма сăлтав пур-и?
Шур илнĕ монокăльлисем кураççех:
«Раççей вăл — террорçăсен диктатури...
Раççей ирĕксĕр ĕçлеттерет... Раççей...»

Тăсатăр элек чĕлхине, тăсăсăр.
Элек-и халь пирĕн çула-йĕре татĕ?
Историе тăватпăр эпир — СăСăСăР —
Тĕнче пролетарин ударлă бригади.

Этемлĕхĕн чи пултаруллă çынни,
Чи аслă ăссем, чи хăватлă талант
Пире тинкереççĕ халь. Эпĕр çĕнни
Вĕсене сире хирĕç тăма хавхалать.

Ĕмет вĕсене капитал хĕстерсе,
Ниçтан хĕлхем çутă çук, нихăш енчен.
Вĕсем калаймаççĕ «мул çĕрмĕ» тесе, —
Çĕрет вăл хăех хăйĕнчен.

Чыхас та кӳпес, конкуренци те биржа —
Епле чун çырлахтăр-ха çакăнпалан?
Çавăнпа ак çĕклет аллине халĕ пирĕншĕн
Искусствăн чи тӳрĕ çынни Роллан.

Эсир пире «варвар» та «скиф» та терĕр.
Чăнах, тăшманпа эпир скиф, эпир варвар.
Анчах туссене пит паллатпăр эпĕр,
Туса чĕрене касса парăпăр.

Веçех, пурте пирĕн: çак хĕрлĕ хĕвел те,
Çак анлă Атланти те, шукăль Парижĕ.
Шопен чĕлĕхĕ пире май чĕвĕлтетĕ,
Ӳкерĕ пире Рафаэль-Рембранд йышĕ.

Пĕр вăхăт кăна уйăрать пире халь:
Ку — Франци, ку —Латви; ак гени, ак ахаль сăн...
Кăтартăпăр эпĕр — кам гени, кам ахаль,
Тепрер пилĕк çул хушшисем тавлашсассăн!

Марш малалла, çĕнтерӳллĕ бригада!
Ерт тĕнчери хастара хупала.
Çамрăк-и эпĕр е эпĕр ватă,
Пирĕн çулсем йышлă мар — вун тăваттă,
Эпĕр малта — пионер — пулмалла.

Тунă нумай, тумалли тата вĕççĕр.
Лозунг пулса çак чĕнӳ паян вĕçтĕр:
Пĕр элекçе те ал ан тăс, юлташ!
Ирĕк ĕçӳшĕн ударлă тăр!
Пилĕк çула тăвата çулта
Тухăпăр, татăпăр, тултарăпăр!

1930—1931

## МАГНИТТУ

Большевизмăн пысăк ăсталăхĕшĕн
Пырать кĕрешӳ кунĕн-çĕрĕн.
Мел халь пĕрре кăна мар-ха. Ăсталла, хăшĕ
Чи татăклăн пирĕн кун-çул сăнне çырĕ?

Шавлан, хумханан тинĕсрен хăш карап
Патвар та хастар ишсе тухĕ ванмасăр?
Эпир çирĕм тăвата сехет вахтăра.
Эпир маттурсем. Карап чăтрĕ — чăтатпăр.

Пароль — Пилĕк çуллăх, курс — Коммуна.
Çаплах, капитан! Пăрăнмастпăр шит те.
Эпир çырана кăларма тупа тунă.
Хутма нефть пĕтсен юн çунса карап иштĕр!

Сăрта, сăмахра, кирпĕчре, мраморта —
Ăçта алă хывнă искусство —
Халь икĕ меслет, икĕ стиль ăмăртать:
Искусство — карап е писевлĕ пит-куç вăл.

Эп ҫыртӑм та ҫак сарлака сӑввӑма
Ижентӗм — ӑҫта кӑна кӗртӗҫ?
Вӑл литературӑн Магниттӑвӗ мар, —
Чӗрӗ Магниттушӑн тӑвас тенӗ пӗр ӗҫ.

Вӑл пысӑклатан бинокль те мар,
Ҫакна хуравласшӑн эп халӗ:
Пултарчӗ-ши вӑл ӗҫ чысне кӑтартма?
Тапать-ши унта мӗльюнсен вӑйӗ-халӗ?

Атя сӑнава, ҫапӑҫса пиҫнӗ ҫарӑм!
Тӑшманӑн джазбанчӗ урса чӑнкӑртат хӑть —
Уттарӑр, ӗҫчен рифмӑсем, тӑватшарӑн!
Куҫ-пуҫ малалла! Урана чӑнкӑрах йӑт!

### Атач атакӗ

### 1

Пӑхӑр карттӑ ҫине. Карск тинӗсӗнчен,
Сивӗ тундра тумхахӗсенчен тапранать те
Пӑлан ҫурӑмӗ пек тӑсӑлать тӗксӗмрех йӗр.
Икӗ пин ҫурӑ ҫухрӑм. Виҫӗ пинмӗшӗнче —
Каспи вашӑклӑхне, лӗп шыва тарават пек —
Вак тӗмсем пулса шупкаланать, тӑвар евӗр
Ирӗлет Азирен Европа уйӑран
Ту йӑран.

Урал! Геологи калать: п а л е о з о й,
Ун чух хытса ларнӑ пулать ҫак сӑртсем,
Тӗнчен ик пайне те пӗр валӗллӗ сӑй
Кӳресшӗн — чикке мул кукли катертсе.
Мӗн ҫук кунта, ку кукӑле мӗн кӗмӗ?
Пур ылтӑн, шур ылтӑн, йӗс, пӑхӑр та кӗмӗл...
Гранит, диорит, диабаз, мрамор, яшма
Кунта кӑмрӑкпа, тӑварпа пӑтрашнӑ...

Урал! Географи калать: ч ӑ р ӑ ш, х ы р тет.
Лӑс кедӑр ... вӗт мӑйӑр шӗкӗлчет пакша.
Ача чухнехи шкул картине кӗҫ пыр та
Ларт тапӑ часрах, авӑрла эс пӑшал.
Этем: лӑпсӑр-лапсӑр тумтир е хӑлхаллӑ
Калпак — вогулсем, кӑркӑссем, пушкӑртсем...

Раççей панкрутне «шур патша» тенӗ халӑх
Çӳренӗ Урал тӑрӑх пуç пӗшкӗртсе.

Урал! Истори калать: в ӑ р ç ӑ- х а р ç ӑ.
Уксах Тимӗрсем каçнӑ уксахласа.
Рылеев юрри вӗççӗр çумӑр çутарчӗ —
Ермак та Кучум килсе тухрӗ аса.
Унтан — Пугачев... Салават йӗлтӗрӗ
Вашлатнӑ çӗмрен пек Урал тӑршшӗпе.
Анчах ӑна мар — эй, эсир илтетре? —
Ӑна мар кӑтартмашкӑн халь тӑрӑшӑп эп.

Геолог, географ, историк-и, итлӗр:
Урал урӑх ӑшлӑ паян, урӑх питлӗ.
Хӑпарӑр Магнитту çине. Ак Уралӑн
Чӗри, унӑн тӗп юн тымарӗ.
Виç, компас, тӗпче. Тӑнлӑр, шутлӑр,
хураллӑр —
Планетӑн малашлӑхӗсем кунта мар-и?

Тахçан, çӗрӗн чӑмӑрӗ тӑтӑш вулкан пек
Çунса-вӗресе кусса çаврӑннӑ тапхӑр,
Мильярд çул авал (маларах пулман тӑк)
Çуралнӑ çак ту тесе эпӗр шутлатпӑр.
Çӗр тин пиçсе тухнӑ хуплу пек вӗри,
Хытайнӑ черчен çӳхе хупӑллӑ чух
(Шалти пӑчлӑхпа килӗшмен-тӗр-и
Е тулти сивве хирӗç?) сасартӑк, трук
Чалт сирпӗннӗ те тимӗр хумӗ хӗмпе,
Килес революци вӑйне хаярлан
Хӑват пек сийленнӗ тӑватӑ тӳпе:
Ежовка, Узянка, Атач, Ай-Дарла.

## 2

Руда, пуçласа Пугачев тупнӑскер,
Тӗшленнӗ вӑрах пӑра шӑлӗ кӗтсе.
Емельянӑн промышленнӑçпа суд кӗске, —
Ӑна кирлӗрех пуçтахрах йӗкӗтсем.

Пӗлмен утаман: тата ик çӗр çултан
Вӑл тупнӑ сулмаклӑ чул катӑкӗсем
Улпут йӑх-тӗпне, унӑн пӗтӗм чунтан
Курайман тӑшманне, шӑтӑка тӗкессе.

Пĕлмен утаман: Белорецк патĕнчен
Сайралнă çарне йăпатса чакнă чух
Çав ват савăтрах, çав руда çийĕнчех
Йăлт урăх хĕç хыврĕ вун саккăрмĕш çул.
Блюхерпа Каширинăн паттăр отрячĕ
Пугачев çĕнеймен тăшмана хуса
Пиншер çухрăма чикĕ урлă чактарчĕ,
Эй, Емельян çакна пĕлнĕ пулсан!..

Алттарнă Пашков, Мясников чаваланӑ,
Алттарнă ют акционерлă ВАГАО,
Анчах Атач-ту парăнман çăмăл аллăн,
Таптарнă калла мул сулан тукмака вăл.

Ун çӳллĕшĕ улт çĕр вун ултă метр пулнă,
Шăп улт çĕр вун улттă паян та.
Тĕпрен, никĕсрен вăл чугунлă,
Кăлар та шăрат — янтă.

Тăхăр çĕр пĕрремĕш çулта Марозевич
Хĕрĕх тăхăр мĕльюн тонна кăтартнă руда.
Вун пĕр çултан Заварицкий виçевĕç
Сакăр вунă çичĕ мĕльюн кăтартать.

Вун саккăрмĕш çул профессор Бауман
Тупать çĕр утмăл тăватă мĕльюн-мĕн.
Унтан Заварицкий каллех: «Ма унăн
Сахал? Ик çĕр çитмĕл мĕльюн! Алт хăюллăн!»

Ак вăтăрмĕш çул (юлашки сăнав,
Тăва çавăратпăр пичченĕн, тӳнтерĕн).
Магнитометр ӳсрĕ, хăпарчĕ те — на!
Виç çĕр икĕ мĕльюн тонна! терĕ.

Шанатпăр эпир: большевизмăн штурмĕ,
Тĕнче сăн-питне çĕнетсе улăштарас ĕç,
Çут çанталăк енчен пĕр çитменлĕх те курмĕ.
Вăхăт кустăрмисем пирĕн май кустараççĕ.

Эпир йыхăратпăр, руда пире илтĕ,
Килес пилĕк çуллăхшăн парĕ вăл сас.
Америкăран — океан хирĕ витĕр —

Гольфстрим вĕри хумĕсене пăрса,
Сан-Луис, Дирборн, Детройтсем айĕн,
Пур Генри Форда хăварса панкрута,
Октябрь уявĕ пек шавлăн, нумайййăн
Ирĕк ĕç çĕршывне ярăнтарĕ руда.
Лерен, пĕр-пĕр швед шĕветен Балкантан,
Норвегийĕн юхăннă Нарвикĕнчен-и
Тапранĕ руда хирĕçле планпалан:
«Совет домнине! Сахал мар шĕкĕлченнĕ
Пăшалшăн та, хĕçшĕн те тупă-етрешĕн.
Çитет! Эп историе ыррăн кĕресшĕн.
Хускалăр, çĕрти тимĕр-тăмăр, атьăр
Пулар пĕрлешӳллĕ тыр-пулçăшăн трактăр.
Кун-çул тăршшĕне пирĕнпе пĕрле тарăхнăшăн
Пулар самолет çĕнтерен пролетаршăн, —
Çаптаркăç машинка пулар «хапăл тăвĕç-ши?» —
Тесе тек питне сăрламан çĕнĕ сăвăçшăн,
Сăвă çырса çаптăр, юрлатăр юрă —
Хушусăр, хупахсăр, ирĕк те урă.
Совет домнине! Çавăнта шăранасчĕ.
Тултан революци кĕтсе ывăнтăмăр,
Хускалăр шалтан! Кам унта парăнас тет?!»
Хӳтерĕ çак сасăпала тимĕр-тăмăр.

Руда тухса тарĕ Эльзас — Лотарингирен,
Шыв айĕ шутарĕ Лапландирен...
Кĕскен: вĕсен кризисĕ халь вăлттарин пире
Пуйтарĕ çĕн вăрçă тапраннă çĕре.

Эпир тĕлĕнместпĕр пуль çывăх çулсем
Эртеллĕ юнгштурмлă пирĕн турист
Таçта чукчасен чиккинче çӳресе
Тăпах чарăнсан: «Кунта тимĕр пур-иç!»

Эпир тĕлĕнместпĕр пуль ахăртнех те
Чăваш инженерĕ — Орьев е урăх —
«Сĕнтĕрвăрринче пур нехтă», —
Тесе пĕлтерсен хаçат урлă.

Эпир тĕлĕнместпĕр-çке ĕнтĕ халĕ
Ни Курск аномалинчен, ни Ткварчельтен.
Тата ик-виç çулăн тĕпчевĕ мĕн калĕ?
Çурри те лекмен хисепе хальччен, тен!

Пуян пирĕн ирĕк вăй-халлă шырав,
Çĕр улттăмĕш пайĕ çине сапаланнăскер.
Ниçта та мар — хамăрăн çак çĕршыврах —
Тăвар-ха тума пулнине, вара, —
Юна, капитал, тупăлан, хисте, —
Шутсем пирĕн пит санпалан кĕске!

### 3

Унччен-ха, çак тема фабула туптарнă май,
Эс йышăн конкретлă рудник, алт та чав.
Пĕтĕм Союзран пухăнан ударлă вăй
Паян ак кунта атаклать Атача.

Унччен-ха Дмитриев инженер пире,
Пĕр çамрăк çыравçăпа иксĕмĕре,
Норд-ост çилĕпе хĕрĕх градус витĕрех
Хастарлăх фронтне тĕпчеме сĕтĕрет.

Техника рекорчĕ. Кайла — пит сайра çеç.
Алмаз, хурçă вĕçлĕ электăр пăра.
Армстронг станĕсем кранк та кранк
хайăраççĕ —
Чула хăвалаççĕ вуншар метăра.

— Эй, сыхлан, пит ан кĕр эс унта! —
Сăрта, çĕр пин партизанăн, аммонал
Çурать, картлать горизонт горизонта,
Хушса картлама çак сăвва та мана.

Таçтан аякран (калăн — кнопка пусайрĕç)
Саланчăк хула пек руда патне
Кĕç çитрĕ кусса экскаватор Бьюс-Айрес,
Слонла каçăртса хурçă мăн хобăтне.

Вăл çитрĕ, хашлатрĕ, васканă куран;
Унтан аппетитлăн шăлне шаккаса
Пуç пĕкрĕ, астиврĕ те — харăс туран
Çыртса йăтрĕ пилĕк çĕр пăт. Тап-таса!

Тепре хашăлтатрĕ, утмăл тонлă Думкар
Вакунĕ çине тиесе ăснине;
Тепре ăсса тăкрĕ, тепре те — çул пар! —
Вĕçтерчĕ Думкар Ай-Дарла тăррине.

Унта рудана хупăрлать карантин:
Хаяр «тухтăрсем» — Доруошерпа Трайлер —
Вакласçĕ, çăвасçĕ ăна тĕрлĕ майлă,
Уйăрасçĕ кӳкĕртрен, фосфортан, вара тин
Руда Хопперкарпала домнăна кайрĕ.

Унччен хальлĕхе, домнăна хутиччен,
Çав Дмитриевах ак пире
Çакна каласа кăтартать ту çинчен,
Çакна ĕç мехелĕ çинчен пĕлтерет:

— Малтан хăпаруçăн Атач — ĕненмĕр! —
Ем-ешĕл выртатчĕ, лăс пекчĕ çырла.
Казах кĕрсисем, качака-тăр, ĕне-тĕр...
Швейцари пейзажĕ! Ӳкер те сăрла.

Иккĕмĕш сыпăклă шкул хĕрĕсем
Гербари пухасçĕ. Станица шкулĕ.
К а л е м п ĕ р, к ă л к а н теççĕ. Эпĕр хĕрсе
Пĕлесшĕн: шалти «чечекки» мĕнле пулĕ?

Сиенçĕсем пурччĕ. Ежовка çинче
Аппаланкаларĕç малтан хăш этем.
Ежовка — Магниткăн пĕр процентчĕ çеç,
Тата урăх сий пит тачка, пушă тăм.

Кунта... Эсир пăхăр... (калавçă йăтрĕ
Сулмаклă кăна чьпшкă мăнăш руда)
...Куратăр-и? Çак пĕрчĕк-пĕрчĕк йăлтăрĕ —
Йăлт тимĕр. Вăл утмăл процент-мĕн кунта.

Çакна хăшĕ-хăшĕ курасшăнах марччĕ.
Оппортунисĕ — пĕр-пĕр Андзелевич —
Çавсен шыв арманĕ çине шыв яратчĕ.
«Тухмасть ĕç! Фантази! Тулмасть план!» —
пелкерĕç.

Пĕверĕмĕр çав «шывсене». Рудкомран
Кăлартăмăр класс тăшманне Крушинские.
Шур гварди çынни пулнă-мĕн. Ак камран
Килнĕ пирĕн плансен «крушенийĕ».

Вара çирĕм виçĕ ударлă бригада
Пуçларĕ тăва штурмлама чăннипех.

Çавсем çинчен юрлăр та çырăр, кăтартăр.
Хавас пулăшма сире мĕн пĕлнипе.

Попов бригади — тĕрлĕ халăх пĕр варлă,
Çынна пилĕкшер вагонет ырăнне
Вĕсем кунсерен çиччĕ çурă кăларнă,
Пĕри — Лесогурский — вун ик вагонет.

Сакмаров ударникĕсем те ялан
Плана пĕр çĕр аллă процент тултаратчĕç.
Лосёв комсомолец, Гордеев, Галан
Хăш чух ик çĕртен те ытла хăвалатчĕç.

Севастьянов слесарь вун ултшар сехет
Чарăнмасăр прорыв пĕтересшĕн ĕçленĕ.
Федосеева та картни килĕшет —
Кун кунланă машинĕ çинче, çĕр çĕрленĕ.

Пур Варочкин — чи малтанхи ударник.
Хăй вată ĕнтĕ. Теçетник. Партизан.
Кĕрешрĕ çарти пек: — Тултарнă-и, тултарнă-и?
Ан манăр, атьсем, планăр пултăр таса!..

Пăра пит сахалччĕ. Начарччĕ пăра:
Юсман пек пулатчĕ пĕр-иккĕ чиксессĕн.
Мухтав комсомол-организатора
Электăрлаçри ĕçĕсемшĕн!

Çитместчĕ этем. Хула парткомитечĕ
Атач çине çакрĕ йыхрав: «Авари!» —
Ак хайхисем хăпараççĕ, çитеççĕ —
Хĕрлĕ Çарĕ, хĕрарăмĕ, курсĕ-студенчĕ —
«Хамăрăн ĕç!» Çичĕ пин пролетари
Плана чакарма ниепле те памарĕ.

Ик çĕр аллă хĕрарăм туçă
Тăчĕ арçынсемпе юнашар.
— Плита ĕлкĕрĕ-ха! Кунта сывлăш уçă.
Нивушлĕ, старик, эп санран начар?.. —

Халь хăвăр куратăр — ялав çӳлте.
Выртмасть ту юлхавлăх кутникĕн.
Юмахлă ватсупнă Атач çуккă тек,
Пур çамрăк, вĕри комсомол рудникĕ.

### Сӑрт-ту ӗҫченӗсен юрри

Пурнатпӑр пурнӑҫа эпӗр —
Махорка та кайла.
Чавмалӑх пурне чавӑпӑр
Пӑхмасӑр каялла.

Лутраланать Магнит тӑвӗ,
Мӗскершӗнне ан ыйт:
Кашни ывҫах манит тӑвӗ,
Хут мар — кӗмӗл манит.

Вӑй-хал кӗртет гигантӑмӑр:
Хӗвел тухсан тӑрса,
Хӗвел ансан тин кантӑмӑр
Никам хушмасӑрах.

Пурнатпӑр пурнӑҫа эпӗр
Чи татӑклӑ ҫулта.
Хӑҫан-ши курнӑҫайӑпӑр
Санпа, чугун юлташ?

Хӑҫан эс, Домн Ивановна,
Пуҫтарӑнатӑн ҫак?
Хӑҫан эс, Домн Ивановна,
Паран пӗрремӗш шлак?

Хӑҫан сана, чугунӑмӑр,
Шӑратӗ-ши мартен?
Тем те пӗр ун чух унӑпӑр
Санран, вӗрискертен.

Рельссем те, плуг та,
трактӑр та
Пире — ҫӗнӗ кайла.
Ҫампа вӗт ӑмӑртатпӑр та,
Пӑхмасӑр каялла.

Пурнатпӑр пурнӑҫа эпӗр —
Пӗр тӑтӑш ӑмӑрту.
Ӗлӗкхи хур хыҫа юлтӑр
Тесессӗн — хӑвӑрт ут.

Вăй-хал кĕртет гигантăмăр,
Тĕнчен вăл пĕрех çех...
Çитет-и? — Çитĕ. Кантăмăр,
Юрларăмăр. Ĕçе!

### Пĕве

### 1

Урал — ту çеç мар. Урал — вăл çырма та,
Васкавлă, хастар, кукăр-макăр çырма.
Вăл пушкăрт лаши пек, канма-çывăрма та
Пĕлмен Салават пек юртать пĕрмай.

Вăл хир халăхин тăсăлан юрри евĕр,
Вăл çиллĕ-тăманлă курай шăхăравĕ,
Вăл тин пуçлакан сăвăç лирикипе пĕр,
Вăл — иртнĕ пăлхавлă ĕçсен тĕпсĕр авăрĕ.

Вăл харсăр художник ăста кăна çырнă
Çăра, вĕри юнлă картинăсем пек:
Хумсен шавĕнче илтĕнет çыра çыррăн
Тăрса çапăçни ухăпа, кĕсменпе...

Çакăн пек çырмана, çакăн пек шыв-шура
Тăвасшăн эпир ĕçре пиçнĕ ударник.
Мускаври чухлĕ шыв кирлĕ Магниттура,
Ăçтан каплипех шăварма вăл пултарĕ?

Тĕл-тĕл сакăлталлă та чуллă,
Тĕл-тĕл ут йĕнерĕ таран.
Типсех вилмелле Пилĕк çуллăх
Пĕве хывмасан бетонран.

Мĕн пурĕ ыйтать шыв та шыв.
Мартен, домнăсем, коксохимĕ —
Руда çăвăнмасăр ирĕлмĕ:
Урал урлăшпех пĕве хыв.

Аваллăх ĕç мелĕ — пăрахăç,
Электăр ăслай, хăрт кивве!
Хума халь турбин çавăрттарĕç:
Шыва тарăнлаттăр пĕве.

2

Пĕве. Миçемĕш-ши ку пирĕн?
Кура та Волхов, улăп Днепр...
Çĕршывăмăр шăнăрне вирлĕн
Электăр юн эпир кĕртетпĕр.

Пĕве — бетон та тимĕр çеç-и?
Шыва кăна чараççĕ-и?
Çук. Харсăрлăхпала пĕвеççĕ
Стихийлă, нĕрсĕр Раççее.

Пĕвеççĕ супнă ĕмĕт-шухăш
Пăтранчăк çырмине, кивве,
Буслай чарусăрлăхне, шухă,
Киревсĕр, ӳсĕр кĕрлеве.

Ӳркев, наянлăх та кахаллăх
Пĕлмест мухтавлă ăмăрту.
Бетон ӳт-тирлĕскер ку халăх,
Шăмми-шакки ун — арматур.

Кунта чăнах та Ленин стилĕ:
Амерĕк ĕçлĕхĕпеле
Раççейĕн чăн революциллĕ
Сулмакĕ хутшăннă пĕрле.

3

Урал кăтăрать, кăтартать шур шăлне,
Шур кăпăк тăкать çăварлăхланă утпа пĕр.
Ик ушкăн этем: — Эсир леш енне,
Эпир ку енне... Пуçлатпăр!

Эй, комсомолецсем, харăс!
Пур çамрăксем — вĕсем хыççăн!
Шыв вăррине — ялав-парăс:
Эс-и малтан ишсе çитĕн,
Эп-и малтан çитсе карăп...
Икĕ çыран янрать вичкĕн.

Икĕ çыран ăмăртать: — Итлĕр эсĕр,
Сылтăмрисем, «сылтăм сулăнчăксем»!

Пире пурпĕрех тупăшса çитейместĕр,
Пăртак ăшăнсамăр-и улăм чĕртсе...

Лерен кăшкăраççĕ: — Пуçсем çаврăнмаççĕ-и
Халь сирĕн унта, «сулахай пăрăнăç»?
Бетонăр патрак çăрăнмасть-и пăртакçă?
Сурсамăр, вара тăкăсрах çăрăнĕ...

Кулă та шӳт — çын хастарĕ,
Ĕç хăвăртрах юртать.
Комрад, геноссе, товарищ,
Кардаш, иптеш те юлташ...
Ку Вавилон башни мар-и
Халь — икĕ пинмĕш çулта?

Çук, çук: кунта çур сăмахран ăнланаççĕ;
Куçпа, алăпа калаçаççĕ çынсем.
Проектçă, бетонçă, хура çĕр алтавçă —
Илтеççĕ йăлтах пилĕк çуллăх чĕнсен.

Сывлăш пăчă, кунĕ шăрăх,
Куç хупланать тусанпа;
Тар сăрхăнать çурăм тăрăх,
Кансĕр те йывăр... Çапах
Чи ыррисен шухăш тăрă:
«Çапăçăп, хĕнлĕх, санпа!»

Ĕçлеççĕ хĕлле пăр шăнсан та. Кам курнă
Урал шартлама сиввипе сывласа?
Кам курнă пĕр шит пăр айне ахаль тумлăн
Чăмса япала шыран водолаза?

Эп ун ятне пĕлеймерĕм,
Пулнă ирçе çав патвар;
Лум пăр айне вăл ӳкернĕ:
«Хамăрăн вĕт, хуçан мар,
Тимĕршĕн тимĕр тӳлер-им?!» —
Тенĕ те чăмнă вăр-вар.

Калĕç: ку — шăрпăк кăна тейĕç. Пултăр!
Шăрпăк пушар хыптарать вăл, ан манăр.
Магнитту пролетарийĕсем! Шыраса тупăр
Çав çыннăн ятне, вăл шывра ан çухалтăр.

Çăлăннă лум — тимĕр татăк —
Пирĕн тирпейлĕх палли.
Тӳрĕлĕх вăл. Ĕмĕрте те
Çук халь пире авмалли,
Ак ç а к н а ш к а л чăмăртатать тĕк
Кашни лума ĕç алли!

**4**

Хĕвел ансан Хĕветĕр
(Эсир ăна пĕлетĕр)...

*«Арçури»*

Çук, ку Хĕветĕре эсĕр пĕлместĕр.
Пĕлмешкĕн кирлех пек кăшт, ман шухăшпа.
Ак ун сăн-сăпачĕ, ним илемлетмесĕр, —
Ыйтмасть те хăйне сăрлама ку шăпа.

Çирĕклĕ Шăхаль, Кĕçĕн Елчĕк таврашĕ.
Çуралнă тăхăр çĕр вун иккĕмĕш çулта.
— Килте ĕçлекен çук... — Ярасшăн мар ашшĕ.
Хĕветĕр — кĕресшĕн-мĕн урăх çурта.

Вун саккăрта камăн ĕмĕт т ĕ н ч е мар-тăр?
Вун саккăрта кам çырлахать сахалпа?
Тĕнче тĕк тĕнче! Вăрнартан сиксе лар та
Тăван ял енне аллуна сула пар.

«Сыв пул» тенĕ-и, каламан-и Хĕветĕр —
Сăн-пичĕ çунать, куçне карчĕ тĕтре.
Чĕре йыхăрсассăн, мĕскер вăл! Хĕве пĕр
Пăри çăкри чикнĕ те — асăн пире!

Юртать, явăнать пуйăс симĕс çĕленĕн...
Мускав. Хыпаланчăк та тăкăс хула.
Хĕветĕр Мосстрой патĕнче ĕçленĕ.
Ку вăтăрмĕш çул. Çулла.

Çĕкленĕ вăл кирпĕч, цемент, алебастр.
Хура-и? Хура ĕç. Анчах хăçанччен?
Вун саккăрта камăн ĕмĕт т ĕ н ч е мар-тăр?
Вун саккăрта кам йăнăшать хăй çинчен?

Касас тăк касас тĕнчене. Пĕччен пыршăн,
Хастар ал-урашăн кун пур çĕршывра.

Хĕветĕр телейĕ çав: çук пирĕн биржа, —
Çын мар ĕçе, ĕç çынсене хăй шырать.

Хыпар: — Уралта халь ăсаççĕ тет ылтăн...
Магнит тăвĕнче ўкереççĕ пиншер... —
Атя, Йўç кăшман Хĕветĕрĕ, ыткăн!
Тен, тутлăланмашкăн пултарăн пит шеп.

Хĕветĕр ун чух ни «летун» сăмаха,
Ни «рвач» тенине ăнланман пулмалла.
Вăл пулнă «сезонник» Мускавшăн. Ма-ха
Сезон хупăнсан тапас мар малалла?

Урал сиввипе Магнитту магничĕ
Кĕрешрĕç пăртак пуçĕнче... Шўт тетне!
Çĕнтерчĕ магнит, пăта пек туртса илчĕ
Хĕветĕре çĕнĕ гигант хăй патне.

* * *

Кăрлач шартлами. Градус — вăтăр та хĕрĕх:
Затонский бригади чавать шăн çĕре.
Хĕветĕр унта... Çĕршывăмăр пĕр-мĕн,
Ансат ăсăнмасть иккен ылтăн ĕçре.

Хĕнпе хăпăнать кубометр, Хĕветĕр!
Анчах ку бригада — ударлă.
Тавайăр, атьсем, хирĕçле план кĕртетпĕр,
Тавай васкарах утар-ха.

Кирка — çўлерех! Кĕреçе — туллирех!
Бригада ятне çĕртес марччĕ.
Ак кайăк патлатнă кунсем тумтире
Тар витĕр витсе шывлантарчĕ.

Çĕр пиллĕк, çĕр вуннă, çĕр çирĕм, çĕр вăтăр кĕç —
Сахал пек процент, тулса çиттĕр çĕр аллă хăть.
Ак çак ĕнтĕ чаплă, хисеплĕ, паттăр ĕç,
Ак çак ĕнтĕ пирĕн программăн реаллăхĕ.

Затонский бригади — йăлтах — илет преми:
Пиншак, сăран атă, кĕпе-шăлавар...
Анчах чи пахи — ку пиншак пек кивелмĕ,
Ку патуш пек таптанмалла мар. —

Хĕветĕр чĕри тĕлĕнче КИМ çунать.
Ултă мĕльюн ун кил-йышĕ халь.
Мухта хăвăн тивĕçлĕ çыннуна,
Çĕн çул çине тăнă Çирĕклĕ Шăхаль!

Хĕветĕр ăнланчĕ: кил-çурт кирек ăçта та,
Ăçта та хастарлăх тăвать телее.
Анчах хăйпеле ӳсекен эстакада...
Хăй сарнă тăпрас... кам ăна тăрлĕ, е?..

Çук, çук, вăл каймасть халь кунтан. Вăл —
кадăр,
Вăл пур мăрьесен тĕтĕмне те курасшăн.
Ял-йыш çĕн Шăхальшĕн, колхозшăн хал патăр,
Вăл ак — колхоза хурçă никĕс хурасшăн.

Сăмахшăн çеç мар «хурçă». Ун алтăмĕпе
Чăнах та мартен тĕпĕ курнăçăнать.
Ахаль сĕтĕрмен çав магнит пăта пек,
Пит кирлĕ çĕре çапать пурнăç ăна.

Вун саккăрта камăн ĕмĕт тĕнче мар-тăр?
Халь ав вăл ал тивнĕ ĕçпе хĕрĕнет.
Хĕветĕр малашлăхĕ? Мĕнпе вăл кадăр?
Ан хăрăр — вăл тупнă хăйĕн тĕп йĕрне.

Хура-и? Хура ĕç. Хăçанччен хура?
«Курса пĕтерсе тухиччен хурипех.
Унтан, ахăрах, кӳлĕп теп мотора, —
Моторçăсен курсне халь çӳреп эп...»

Рычаг, шăлтăрма, блок — Хĕветĕр
сăмахĕ.
Уделлă виçе, киловатт тет Хĕветĕр.
...Армстронг, Марион...
Кам-ши ку? Çав çынах-и?
Çавах. Ун çулне ĕнтĕ эсĕр пĕлетĕр.

**5**

Бетон хурăнать сийĕн-сийĕн.
Урал хĕсĕнет, пĕрĕнет.
Тăшман тарăхать, сиввĕн-сиввĕн
Пăхать çĕн çыран хĕррине.

Тăшман ирсĕр спрут-сакăрал пек
Кĕтет меллĕ тапхăр, сехет:
— Хăçан кусен шăтĕ карапĕ?
Хăçан ку çынсем путĕç? — тет.

Унччен... тен, унччен хамăрпах вăл —
Кĕрет, сĕкĕнет, çыпçăнать.
Вăл ăмăртмаллах ăмăртать вĕт
Пĕр трук тавăрса ик çанна.

Вăл хăй нормине те тултарнă,
Çынна та тăрса пулăшĕ.
Вăл... вăл калама çук ударлă,
Укçа çапмалла тăк — пушшех.

Анчах пĕр-пĕр каç (шанса лар вăт!)
Станицă кулакĕ патне
Çунман кирпĕче ăсатать вăл
Сармашкăн нӳхрепĕн тĕпне.

Е акă ударлă маттур
Кулак хăтăшпе пĕрле
Йăтать пĕр çĕклем арматур
Трантас кукăр-макăрĕлĕх.

Хресчен «хамăрьяллăхĕ» пур-ха,
Кĕрет хапрăка, савăта.
Кăшт çеç куçна хуп, ан кур кăшт —
Вăл тĕпсĕр вара çавăтать.

Тăшман лахлатать сиввĕн-сиввĕн
Пĕр суккăр тупсан та. Анчах
Бетон хурăнать сийĕн-сийĕн,
Хĕсет тачăран тачча.

Тата пĕр мехел, кăшт, пăртакçă...
Хĕрсе ăмăртан çырансем
Кунпа, сехетпе çывхараççĕ
Уралăн пырне сĕрĕнсе.

Ак сыпăнчĕ шăп километр
Пĕве-пăчăкă. Урала
Çĕр икĕ шăлне кĕртсе лартрĕ
Карланкă тĕпне вăл урлах.

### 6

Уралăн анат енче
Упраннă-ха урăх тĕнче.
Икĕ казах пĕр ир вăранаççĕ те
Анаççĕ лаша шăварма çырмана.
Анчах шыв çук. Ăçта çăвана çĕтнĕ?!
«Ак пĕсмĕлле! Куç пăваççĕ-тĕр мана...
Пăхсам, эс куратăн-и?» — тет,
Ыйтать Оспантан Ахмет.

— Куратăп эп хăйăр та чул, — тет Оспан, —
Шыв çук, типрĕ шыв. Ай, аллах! Мĕн курас?..
Ку пулнă шăпах пĕве сыпăннă самант.
Тарса ĕлкĕрен шыв «урра!» та «урра!»
Сассем хăварать казаха,
Казах тĕлĕнсе касăхать.

Казах тўсейми çилĕпе авăрланнă,
Тыт, чар ак таран хумсене, хăвала!
— Большевиксем Урала вăрланă!! —
Тесе ик юлан кустарать тăвалла,
Анчах мĕн кураççĕ çитсен
Вĕсем çăм йĕнерĕ çинчен?

Хирĕç пырать аул-йыш Юнус,
Тумтирĕ — тусан, хăй хаваслă сĕре:
«Салам-аликкĕм, туссем! Калхуз
Пĕве уявне ячĕ-и-мĕн сире?
Атьăр-ха. Ав ман барак. Чей вĕрет...»
Лĕш ячĕ икĕ юлан чĕлпĕре.

«...Пăхăр. Паллайăр-и халь çырмана?
Çаплах пулĕ тулăх та хўхĕм казах çĕрĕ».
— Тĕнче! — тет Оспан тĕлĕнсе. — Самана!
Шывĕ те тутлă пулас — лаша лак ĕçрĕ...
Ахмет та утне шăхăра-шăхăра
Куçне хĕвелтен хупласа шăварать.

Урал вун сакăр тăваткал километр
Кўлĕ пулса выртнă. Ăçта типме!
— Çыран ытла çўллĕ çав, кăшт тулайман-тăр,
Тулсассăн пырать-ха Урал, — тет Ахмет.
«Еçлет большевик башка,

Маттур большевик башка!» —
Тесе казахсем тĕлĕнсе пуç сулласçĕ,
Чĕлхе вĕçĕпе чак-чак-чак тутарса...
Ку — пирĕн аваллăх, ку — сĕмлĕх,
ку — Ази
Тытать юлашки ураса.

7

Урал çинче кану кимми,
Ударниксем канаççĕ.
Хут купăса илтĕнтерми
Юрра шăрантараççĕ.

«Эх, Маруся, çĕр çăтманă,
Пилĕк пăтлă пукане!
Эп санпа бетон çăрман-и?
Çаврăнмастăн ман енне.
Си-ре-ень че-чек-ре,
Чĕ-не-ет ман чĕ-ре».

— Çаврăнатăп эп, çаврăнатăп,
Юрату вăл бетон мар:
Ăна кирлĕ серенада,
Тулли уйăх, плащ, гитар.
Ах, Ко-ля! Сив-нет кӳл.
Ю-рат-рăм, çи-тет пуль.

«ТЭС лампи çутăрах мар-и
Шурнă чĕмсĕр уйăхран?
Телефон кантрин гитарĕ
Янрамасть-и уçăрах?
Си-ре-ень че-чек-ре,
Чĕ-не-ет ман чĕ-ре».

—Телефон кĕпçи вăл — шыçă,
Райкома савни чĕнсен.
Лампа çутă ытлашши çав:
Курăнаççĕ шатрамсем.
Ах, Ко-ля! Сив-нет кӳл.
Ю-рат-рăм, çи-тет пуль.

«Эх, Маруся — кастелянша,
Пиллĕкмĕш барак хуçи!

Классăрлантăн та-и, Маша?
Пилĕк çул вĕт-ха хушши.
Ăç-тал-ла çу-лу сан?
Кам хыç-çăн су-лă-нан?»

—Эх, ударник-бригадир эс,
Комсопуçлăх Микула!
Манпала эс пит ан хирĕç
Çĕнĕ портфельне пула.
Порт-фель-ре чу-ну сан,
Кă-ла-рăн ю-рат-сан!

«Ме! Ман чунăмçăм яр уçă, —
Пичетле, пăртакула!
Сылтăмрах эс кăшт, Маруся».
— Сулахай эс, Микула! —
«Ăç-та-ши тĕп вар-ри?
Пĕр-леш-се шы-рар-и?

Шырăпăр кунĕн те çĕрĕн,
Тупрăн — çĕнĕ юрă ту.
Нихăçан та пулмĕ пирĕн
Çулсăр-йĕрсĕр юрату.
Си-ре-ень че-чек-ре,
Чĕ-не-ет ман чĕ-ре...»

**8**

Йĕп чиксе курăнми Урал kaçĕ,
Çăлтăрсем тухнă-мĕн хурала —
Комсомолецсемпе хуралласçĕ
Сарлака та пуян Урала.

Эй, ан çывăр, патруль! Революци
Чарăнман, чарăнас шухăш мар.
Мăшăр мĕлке пĕве хыçне пулчĕ.
Савнипе савни-им? Çук, тăшман.

Шăрпăк çутрĕç... хăю... ак шаплатĕ,
Бетона çĕмĕрсе динамит...
— Кам унта? Эй, тăхта! Эс çапла-и?! — тет
Комсомолец çилле чăтайми.

— Ме! — курок вĕçернет. — Пĕтех, ирсĕр!
Хырăмпа эс ан шу калталла!
Хăвăртрах... хăюне... туртса илĕр!
Касăр!.. — Каснă. Пĕве хăтăлать.

Кам каларĕ «кунта вăрçă çук» тесе?
Кам фронт мар, тупă мар терĕ çак —
Çак чугун пĕрĕхен хĕрлĕ çут тĕсе?
Кам хĕç мар тет юхан хурăça?

Кам калать — окоп мар тет ударлăн
Çĕр алтавçă алтан тăпра кубĕ?
Кашни шит, кашни тӳррĕн тултарнă
Кубометр — тăшманшăн вăл тупăк.

Кам калать — вăрçă крепоçĕ мар тет.
Урала тарăнлатнă пĕве?..
Хавхалат, ертсе пыр пире, парти,
Çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерĕве.

Йĕп чиксе курăнми Урал каçĕ.
Çăлтăрсем. Вĕсенчен нумай хут чее —
Çăлтăр куçлă çынсем хуралласçĕ
Урала, çĕршыва, революцие.

## Чугунпа чугунçăсем

### 1

Уралăн чĕри Магнитту пулсассăн,
Магниттăвĕн — домна цехĕ чĕре.
Митта сăввинчен те питрех хулăн саслăн*
Вăл, ман шухăшпа, мĕкĕрет.

Миçе тапхăрччен, çав чĕре пек çăмăллăн
Шаккатăр тесе, сикекен чĕреме
Эп — çирĕп те ирĕк, хаваслă та кăмăллă —
Леçеттĕм ун çут анинче çӳреме.

Эп çирĕпчĕ, мĕншĕн тесен манпалан
Пĕрле — мĕльюншар ал-ураллă тĕрек.

* Митта Васлейĕ çав çулсенче «Хулăн сас» поэма çырма пуçланăччĕ.

Эп ирĕклĕ, мĕншĕн тесен ман талант —
Хуҫа тарҫи мар, хамăр ĕҫшĕн хĕрет.

Хаваслă эп, мĕншĕн тесессĕн ак ҫак
Шăраннă чугун пĕлĕте сапан шуҫăм
Мана пĕрлехи ĕҫĕмĕр ăнасса
Ялан кăтартать тӳрĕ шухăш пек уҫҫăн.

Эп кăмăллă, мĕншĕн тесессĕн ҫак аслă,
Ҫак ăслă чугун чĕрене ман чĕре те
Хĕртсе ăшăтать хăйне май. Уҫă саслă
Гудок чĕннине ҫын пекех эп илтетĕп.

**2**

Тӳлек, ҫилсĕр каҫ. Тĕлĕрет хурăнлăх.
Ăна вăратмасть, хумхатмасть пĕр никам халь.
Ҫанталăк мещен шухăшлă: «Пурăн лăп».
Лăп хурăнлăхра лăп ҫуртсем — Мĕриканка.

Анчах мистер Фребель ак тĕлĕреймерĕ,
Мĕскер-ши ăна кансĕрлет ҫав терех?
Е пирĕн айри кун ҫутиллĕ Амерĕк
Шăв-шавĕ халь ун ыйхине вĕҫтерет?

Ҫуралнă ҫĕршыв... хăнăхнă пĕлĕш-тантăш...
Ҫавсем-шим ун куҫ умĕнче сăрланаҫҫĕ?
Ҫук, пĕлĕш пулма пултарать кирек кам та.
Ҫук, мистер Фребель вăл — интернационалҫă.

Йăлт урăх паян пăшăрханăҫ сăлтавĕ,
Йăлт урăх инкек чĕрене ҫитсе ленкет:
Профессиллĕ мăнкăмăллăх! Ăҫта вăл
Пăрахтăр ăна — «ирĕк» интеллигент?

Вăл — алгебра формулĕсен виртуозĕ.
Ăна теорема тавраш — пулла шыв.
Ĕҫлен ĕҫĕнче вăл поэт та философ,
Инженери ăсталăхĕ — ун ҫул лашИ.
Анчах тĕлĕнет вăл: партком секретарĕ
Хăҫан инженер чĕлхине кăшт ăнкарĕ?

Ĕнер вăл калать Фребеле: «Сирĕн срукăр
Большевиксемшĕн ытла та вăрах.

Çулталăкран мар, сакăр уйăхран хутăр
Пĕрремĕш çав домнăна... Пулăшăпăрах...»

Амерĕк ăсти хирĕçмен: — Темпи-темпи! —
Тесе вăл виртлешнĕ чĕлхе вĕреннĕн.
Анчах ăшĕнче кӳренсе: «Ку этем пит
Нумай чухлаять-ши домна мĕнне?» — тенĕ.

Цех пуçлăхĕ курчĕ: «Салам, мистер Фребель!
Хастарлă бригадăсем сирĕн алăра,
Срука татасса ĕненетпĕр эпĕр...»
— Аван, — терĕ Фребель кĕскен, — ол райт! —

Монтаж бригадирĕ калать: «Халăх пачĕ
Хисеплĕ ударник ятне мистера.
Мĕнле? Йышăнать-и? Ыйтсамăр, тăлмачă».
— Каçарăр, — тет Фребель, — эп аристократ! —

Çынсем кĕçĕр ун асĕнче çаврăнаççĕ
Ыйха вĕçтерсе хăямат хĕрнелле.
Вăл тытрĕ Джек Лондона, пулчĕ вуланçă.
Вăл чĕртрĕ пирус — экспортлă «Кремĕле».

Пирус савăтне чылайччен вăл тинкерчĕ:
— Ку — уншăн туса хатĕрленĕ тавар...
Парткомçăн — махорка, час-час тип икерчĕ,
Парткомçăн ĕçки — кофе те... «Моккă» мар.

Йăлтах, пурте уншăн. Усраççĕ хăна пек.
Анчах вăл — хăна та... хуçа та пăртак.
Вăл чыслă, тĕреклĕ тăвасшăн, шанап эп, —
Кашни кăмаках ун ятне хăпартать.

Вăл шахмат хăми çинчи пек халь курасшăн —
Ăçта мĕнле кирпĕч, мĕнле тимĕр татăк.
Унтан пур фигура та тĕрĕс ларсассăн
Вăййа чĕнме хатĕр вăл Генри Форда та!

Ĕç пултăр тирпейлĕ, таса та илемлĕ:
Металл-и сан, йывăç-и — ту, çиçтере пĕл.
Çав ĕç р е в о л ю ц и л л и н е — е пĕлмен вăл,
Е пĕлнĕ пулсан та шанман мистер Фребель.

«Да, темпи, — сывларĕ вăл, — е ĕлкĕреймĕн?..»
Пирусĕ ĕмме астумасăр кĕлленнĕ.
Ун хучĕ çинче пĕчĕкçеççĕ Кремль,
Пуçра инженерăн — Уэллс тата Ленин...

### 3

Ку — Фребель — пĕр енĕ, пĕр полюс.
Сехре Терентейĕ вара — тепĕр ен.
Хăçан-ха вĕсем çывхарса тĕл пулĕç?
Ыйтар пĕрех хут Фребельтен:

Хăçан параллельлĕ йĕрсем пĕрлешеççĕ?
Саккун математикшăн улшăнми.
Сехре Терентейĕ — чăваш ачи-çке,
А Фребелĕн куçлăхĕ те — слон шăмми.

Анчах мĕн тăвăн Гераклит старике:
Пурте юхать, пурте улшăнать...
Фребель Америкшĕн çунтăр иккен,
Сехре Терентейĕ те — çавăншăнах.

Чăваш шухăшлать: «Ма-ши çав Пĕрлешӳллĕ
Штатсен революци хавалĕ начар?
Ку мистер тавраш пит хакла ӳкет пулĕ...
Хăçан коммунизм ячĕпе (штăп ан чар!),
Субботник пек çеç йыхăрса, пĕр ерçӳллĕ
Кунсем эпĕр ĕçлĕпĕр аслă пĕр çар?

Штăп кашни ăста, инженер-пролетари,
Çак пирĕн çĕре юратса, ăшшăн
Ана килсе пулăштăр — кам мĕн пултарĕ —
Социализм çуратнăшăн.

Штăп пур чикĕ урлă, шыв-авăр тăрăх —
Тӳлек океан е хум-шавлă Атланти —
Пĕр пек паспортпа е ним паспортсăрах
Совет çыннисем каллĕ-маллĕ ăсанччăр.

Штăп пур портсенче, пилĕк юплĕ çут çăлтăр
Çунса йыхăравлăн, хăюллăн та уççăн,
Пуриншĕн те пур еннелле хапхи уçăлтăр
Пĕтĕм тĕнчери Совет Союзĕн!..»

Пайтах «штăп» Сехре Терентейĕн, пайтах
«штăп».
Анчах хальлĕхе вăл — монтаж бригадирĕ.
Вун икĕ сехет патнелле. Барак шăп.
Тата мĕнле шухăш кĕрсе ыйха сирĕ?

Фанерăпала пӳлсе тунă пĕр пӳлĕм.
Сĕтелĕ те — саваламан хăмаран.
Стена ҫинче — «Ленин субботникре». Ӳлĕм
Ак пурăнăпăр лайăх. Тăвар-ха малтан...

Сехре хăй хуҫа. Ун ав соцхулара
Ҫуртсем пилĕк-улт хутлисем хăпараҫҫĕ.
А Фребель... Пĕлетпĕр! Пулин, пултăрах:
Вăл халь Терентей патĕнче хăнара ҫеҫ...

Монтаж бригадирĕ кăшт ассăн сывларĕ.
Умра «Ленинизм ыйтăвĕсем»
Тата пĕчĕкҫеҫ акăлчан словарĕ
Секретлă ҫăра пек выртать илĕртсе.

Анчах большевик илейми крепăҫ пур-и?
Хывсамăрччĕ, мистер, мăн куҫлăхăра!
Чăваш Терентей шăл ҫыртса тупа турĕ:
Пуплет сирĕнпе вăл тăлмачсăрах!

«Ленин субботникре» — Соколов картинĕ,
Вăраххăн Сехре тинкерет те сăнать.
Хальччен комсомолец ятне вăл илнĕ,
Халь тепĕр ĕмĕт пуҫĕнче вăранать.

Хăймасть вăл хăйне ĕненме ҫăмăл чунлăн,
Парне туйăнать чĕрине шăнăҫмассăн:
Мĕнле ăраскал — ҫак субботникри ҫыннăн
Ятне партбилет илнĕ чух асăнсассăн!

Кам савăнмĕ ҫакă чи ҫывăх та паттăр,
Ĕҫ евĕр хăватлă, ялав пек таса
Ильичăн ҫарне кĕме тивĕҫ пулсассăн,
Куллен тăрăшса, вĕренсе, каппаймасăр?..

Пĕрремĕш гудок. Цех чĕнет. Ҫамрăк сасă!
«Выртман та-и эпĕ? — тет ҫын. — Ак сана!»

Пит çурĕ те иккĕмĕшне тăхтамасăр
Уттарчĕ Сехре хăй ĕçлен сменăна.

Икĕ йĕре пĕрлештересшĕн пулнă,
Пуç ватнă Лобачевский математик.
Магниттуне çеç килмеллеччĕ-мĕн унăн,
Кунта ик тĕнче уйрăмне ун сăнасчĕ...

**4**

Пуху председателĕ

...Пурне те ку паллă пуль тетĕп: халĕ эпĕр
Малтан домнăна хутма панă срука
Пĕр квартал ытла кĕскететпĕр.
Кунтан тĕлĕнмелĕх çуках.
Ударлăхпа соцăмăрту кунсерен
Ĕçе хăвăртлатаççĕ. Çĕршыв курнăçать
Нихçан пулман паттăрлăхпа. Юн вĕрет!
Ударникĕн пулмĕ сăмахĕ сĕре:
Каларăн иккен эсĕ — кӳрт пурнăçа.
Сăмах сирĕнте, инженер-техниксем!
Мĕн чухлĕ хускатăр эсир те тĕксе —
Ун чухлĕ ĕç юртĕ часрах.
Эпир, хăй каларăш, сире пит картман тăк
Е эсĕр пиртен йĕрĕнсе ютшăнсан, —
Тата виç çул ларăпăр, — тек пар команда!
Апла пулмĕ тетĕп, пулман та.
Сăмах сирĕнте, инженер юлташсем...
Тавайăр, юлташ Омега!

Омега

Эпĕ
Нумай чарăнсах та тăмăп:
Паллах, халĕ пирĕн ӳсет ĕç хисепĕ.
Çĕршыв мăйĕнче кăпăкланнă хăмăт.
Анчах, ман шутпа, вĕçĕмсĕр хистемешкĕн
Май çук... кирек кам пултăр ямшăкĕ ун.
Конкретлă, çак хамăр савăта илсессĕн,
Мĕскер-ха куратпăр эпир паян кун?
Унта выртать тислĕк, кунта çӳпĕ-çапă,
Лере тимĕр брус тутăхса выртать.
Эпир акă домна хутма çапăçатпăр,
А хатĕр-и пирĕн ытти агрегат?

Ну, хатĕр-и пирĕн мартен? Пур-и блюминг?
Ăçта-ха ударник валли соцхула?
Çĕнĕ савăт тăк — пултăр вăл савăт. Ак ку мĕн?!
Кĕскен — ман шутпа, кăшт тăхтас пулать.

Председатель

Черетлĕ сăмах... Инженер Тренба.

Тренба

Эп килĕшĕп теп хам коллегăмпа.
Паллах, хăй стихийлă хӳтерĕннĕ темпăн
Пур çакă: аван вырăнне — нумай пар,
Тĕреклĕ тăвас вырăнне — хăвăрт ту.
Виçеллĕ илес вырăнне — сарлакан ил...
Конечно, аван япала **ăмăрту**,
Анчах пит начар-çке — ăна варлаканĕ.
Начар — ют патшалăх ăсти умĕнче
Питпе эпĕр пылчăк ăшне вăрăнсан.
Вĕсем чăннипех те хутма пулнăччĕ —
Пур цех та пĕрле ĕлкĕрсе хăпарсан.
Эпир вĕсенчен вĕренме тивĕç халĕ.
Металл вăл — питĕ пысăк искусство, ан манăр.
Паллах, канашлу хăйĕн шухăшне калĕ,
Çапах та ку татăклă шухăш халь манăн.

Председатель

Ударница Власова. Соцхула.

Власова

Кунта ман çакна евитлес пулать:
Постолько-поскольку эп — штукатурçă,
Пĕлетĕп: хула хатĕр мар-ха кăшт пирĕн.
Çуртсем чĕрĕрех-ха. Типмен. Тата пур çук.
Анчах мана хушрĕç: кала терĕç вирлĕн —
Пĕрремĕш домнăна чĕртнĕ тĕле
Паратпăр эпир те таса хваттирсем.
Ĕненĕр: чугунăн хĕрĕвĕпеле
Çуртсем хăвăртрах ĕлкĕреççĕ типсе.
Пĕри «кăпăкланнă сӳсмен» тет кунта.
Лăпланăр, ыр çын! Сирĕн çухăр таса.
Эпир туртăнатпăр пулсан пур чунтан
Ан чарăр пире эсĕр чăхăмласа.
Чăрмав та, асап та. Пĕлетпĕр йăлт хамăр!

Çампа хăвăртлатпăр та çавă. Анчах
Сире, пичеве, сулăнка яма памăпăр.
Ĕçлетĕр тĕк — тӳррĕн. Сăмахăм ман çак.

Председатель

Альберт Гейм. Стальмост.

Гейм

Геноссен!.. Калам вырăслах. Ан ӳпкелĕр...
Омега — грексен юлашки сас палли.
Пăртак тĕлĕнетĕп: ма малтан вăл пуплерĕ?
Шутлатăн та — паллă мĕскершĕн апли...
Эпир, ют çĕртен кĕрĕшнĕ ăстасем,
Пĕрре те хăвăртлăхсене хирĕç мар.
Анчах эпĕр ак мĕскертен тĕлĕнсе
Хăймастпăр хăш чух «темп» тесе çăвар уçма:
Пĕр вырăс сăмахĕ пур сирĕн, вăл — «завтра».
Çитмест матерьял, пырса ыйтрăн — «завтра!»
Станок пăсăлать, тӳрлетес пулать — «завтра!!»
Пĕтет хутмалли — татах «завтра!!!»
Юрать. Пĕр кун кĕтĕн. Анчах та пур хурлă
Пословица çав сăмахпа. Вăл калать:
«Бюрократăн завтракĕ — хĕрĕх ужин урлă».
Хăш чух тĕрĕсех те вĕт çак япала.
Эп нимĕç, йăлтах хамăн ман пĕлмелле,
Анчах çав сăмах халь çӳрет те пур савăтра —
Паян (тăрăшам эп кирек те мĕнле)
Пĕлместĕп: ăçтан çуралать-ши вăл «завтра»?
Тавай кăларар ăна хăваласа!
Пăхар: тен, ларать хамăрпах ун хуçи.
Тытар та калар ак çав кахал ăса:
Тăрантрĕ сан «завтраку», тусăм, ху çи!
Эпир тупмасан, РКИ йĕрле,
Судпа прокурор кĕрсе çавăттăр.
Уттар ху сăмахупалан эс пĕрле,
Укçа илме килĕн... «завтра!»

Председатель

Забойщик Жуйборода. Руда.
Тавайăр, юлташ Борода!

Жуйборода

Эп калăп кĕскен те тӳррĕн. Шихта
Пĕрремĕш домна валли пирĕн хатĕр.

Çич-сакăр уйăхран (чакмăпăр шит те!)
Хутсамăр-и саккăрĕшпех. Паратпăр!
Мухтанмăп, анчах çав Атач сăрчĕн темпĕ
Шайне халь кунта асăрхаймăп.
«Металл вăл — питĕ пысăк искусство», — тет Тренба.
Тата вăл — политика мар-ши? — теп хам эп.
Халь пирĕн чугунăн кашни кăмаки
Коммунăмăр пурнăçлине кăтартать.
Ан тив-ха, чĕвен тăрса пăхтăр Мак-Ки —
Мĕнле çут хĕвел пирĕн патăмăрта!
Каçарăр мана, ырă çыннăмăр Тренба,
Анчах та Омегăпа сирĕн срук...
Ун чух сирĕнпе çавă янкки хрен бы
Калаçĕччĕ, вăл çĕлĕк те хывас çук!
Хăйсен фирмине кĕрĕшсессĕн — мĕн пиллĕ...
Эсир ун çинчен кăштă шухăшлăр-ха...
Вĕсен унта паллă вĕт: пиллĕк тĕк — пиллĕк,
Сӳнен домнăсем пăсас çук шăплăха.
Эпир те кунта шухăшлар: кам вăл Тренба?
Омега тени мĕнле кайăк? Пĕлер те —
Чи требă вĕсем халь пире, чи не требă?*
Текех каламастăп. Пĕтертĕм.

Председатель

Монтаж. Электросварщик. Сехре.

Сехре

Юлташсем! Тимĕр-тăмăр енчен пирĕн выçлăх.
«Машин!» — тет уй-хир. Çав сасса илтетре?
Кунта ик ăста инженер умлă-хыçлă
Калаçрĕç срука татас маршăн,
Çапах домнăна чĕртсе ярăпăр эпĕр.
«Тăвата шитре пур çĕрте те пĕр аршăн», —
Тени ĕмĕрех тĕрĕс мар пулĕ тетпĕр.
Халь пирĕн шитсем ăраснах чармака,
Вĕсем аршăна виççĕ те кĕмĕç тен.
Шанар: хирĕçле планпала кăмака
Шăратĕ чугун çул срукра та срукчен.
Тавах пирĕнпе пĕр каварлă та тӳррĕн
Ĕçлен ют патшалăх этемĕсене.

* Чи требă, чи не требă — кирлĕ-и, кирлĕ мар-и (*украинла*).

Кунта Гейм сăмахĕ те пит тĕрĕс тухрĕ:
Çав «завтрак» пайтах цехсенче сисĕнет.
Аван вăл тирпейлĕ хуçа куçĕпе
Пăхса, пур çитменлĕхсене пытармасăр,
Пур савăт ĕçне килĕнчи ĕçĕ пек
Çын хапăл туни. Кашни маçтăр
Çапла куçма-куçăн, хăюллăн
Инкек-синкеке курса тăтăр малтан.
Инкек алăкран кĕриччен ĕлкĕр — сулăн,
Кас эсĕ ăна çурмаран.
Пире намăс пулĕ çынна култарсассăн,
Эпир Геймсене шантарма йыхăрса вĕт.
Пит мăшкăл вара такăнса çеç утсассăн
Çак аслă çĕршывăмăрти аслă савăт!

Председатель

Çырăнни урăх çук. Тата кам калаçас тет?
Инженер Лунин? Пожалстă.

Лунин

Калас та теменччĕ эп... Маншăн çак паллă:
Пин алă çĕннишĕн çĕкленчĕ иккен —
Текех палтăртаттăр ик-виç чăлах алă
Хăяр пахчинчи кĕлетке пеккисен.
Ударниксем нишлĕ чĕп мар, пит хăрамĕç,
Анчах, юлашки яш оратор каларăш,
Мана халĕ намăс... Тӳсме хал çук намăс!
Совет çăкăрне çисе çитĕнтĕр мар-и?
Теес килет манăн коллегăмсене.
Конешнă, кавычкăпа ĕнтĕ «коллега»
Пуласшăн мар-ха, мĕншĕн тесен эп
Ĕçре юлашки сас палли — Омега.
Каланисене çĕнĕрен тепĕр хут
Калассăм килмест. Ман сăмахăм кĕске.
Е сакăр, е çич уйăхра домна хут, —
Ан пӳл масса харсăрлăхне! Ак мĕскер.
Халь масса вăл пирĕн ним сасăсăр, тĕссĕр,
Кĕтӳç хыçĕнчен пыракан кĕтӳ мар.
Унта паян Власовăна куртăр эсĕр,
Унта Сехресем йĕрке пуçлĕç тума.
Унта ав ик-виç революцире пиçнĕ
Ват Жуйборода пеккисем — урата...
Нуль çеç те-ха вăл нăйкăшсан иккĕн-виççĕн,

Анчах ку пире-çке, пире хуратать.
Тата çакă пур: эпир хамăр та — масса,
Ёçрен уйрăлмасăр ўсен ăстасем.
Нивушлĕ эп класăн ятне варламасăр
Утаймăп хама унпа тан хистесе?
Прорыв час-часах проектрах пур, пĕлетпĕр.
Тинкер, парти куçĕ, тĕпче тавçăруллă!
Классемсĕр текен пурнăçра халĕ эпĕр
Утатпăр хаяр класс кĕрешĕвĕ урлă.

5

«Тиев каять Магниттуне,
Минут та ытлашши ан чарăр!»
Çулти кашни вакун çумне
Çак хушăва çĕршывăм çакрĕ.
Кашни çур шитшĕн хăй çине
Ответ илет чугун çул çарĕ.
Америкрен тем вăйлăш кран,
Мăн экскаватор, çунман кирпĕч,
Стандарт çуртсем Куславккаран,
Инженерсем Германирен —
Иртеççĕ. Иртĕç, иртĕç, иртĕç...
Рельссем хĕреççĕ хăвăртран,
Пăравуссен ялан — иртен
Каçчен — пĕр кĕвĕ: «Ăмăрт, ăмăрт!»
Днепропетровскран тимĕр пай,
Бакуран нефть, Кузнецкран кăмрăк —
Куçаççĕ вĕçĕмсĕр, пĕрмай...
Ленинградран телефонсем,
Мытищăран иртет вакун,
Чулхуларан — машинăсем —
Бензинлă, янтă... Кашни кун —
Мускавран çын, Çĕпĕртен çăкăр —
Çулла, хĕлле е кĕркунне...
«Минут та ытлашши ан чарăр:
Тиев каять Магниттуне!»

6

Шанмасăртарах, пăртак вăрттăн, куç айĕн
Пăхса илчĕ те вăл мана алă пачĕ:
«Остап Бондарчук. Çўрес тетĕр курса-им?
Пит лайăх, пит лайăх... Тахçан пымаллаччĕ!

Пуçлам хăвăртан. Литератор? Писатель?
Шăп сирĕн йышши çав ĕнтĕ — пĕринче,
Нумай та пулмасть, çакăн евĕр çырсаччĕ:
«Пур кокс кăмаки таврашне тӳпинчен
Чи хаклă, таса антрацит тултарнă...»
Донбасс антрацичĕ — паха, мĕн калас!
Анчах çав хаçатçă çапах ял култарнă,
Мĕскершĕн тесен — антрацит коксланмасть.
Прокопьевскри шахтăсенчен кăмрăк çак,
Эпир — унталла ăсататпăр руда.
Ак никĕс Уралăн — Кузбасăн, ак
Вĕсен тĕп тӳлемĕ ăçта.
Эпир кăмрăкран кунта чухăн та хăрăк,
Кузбасăн — руда, тимĕр-тăмăр çук ун.
Анчах унăн пур коксланан паха кăмрăк,
А пирĕн паха шăранан чугун.
Çапла пуçма-пуçăн тавар улшăнать.
Те эпĕр лартатпăр пăртак, те вĕсем?
Пĕр вунă вакун ӳстерсен... station уншăнах
Эпир ятлаçмастпăр, анчах çитмесен!..
Вĕсем те çаплах пуль лере, ан хăра, —
Пиртен хăть çур тонна ан çиттĕр!
Лартни ун пек чух — юта мар, хамăра,
Пĕри те эпир сывлаймастпăр теприн сĕр.
Кокс çулĕ çапла (тĕрĕсрех — кăмрăк çулĕ):
Малтан вĕтетсе авăртатпăр ăна,
Унтан транспортер (ав мĕн тăршшĕ, мĕн çӳллĕш!)
Ăна хăпартать батарейăна.
Кашни батарейăн утмăл тăхăр кăмака.
Хупса сывлăшсăр çунтаратпăр та
Илетпĕр эпир уйăрса аммиака,
Сăмала тавраша... Кусем — химсавăта,
Вара тап-таса, шĕл кăвар пек, лапчăк
Кокс çеç — «кокс кукли» тетпĕр эпĕр —
Тухать хĕсĕнсе... Чим, кăна курмаллахчĕ,
Кăна сăмахпа ăнланма май килмест-тĕр.
Каяр-ха манпа!» — Ăшталанчĕ ăста.
Ак кокс кăмаки. Йăл та ял çулăм-факел,
Газпа кислород хутшăнать пулас та.
Çав çуттăн çунса ялкăшать пулĕ... «Ак вăл! —
Тет шуххăн çитсе чарăнсассăн Остап. —
Час пиçет-и-ха? Эй! Кам унта? Куртăр-ха çак...»
Кокс тĕртевçĕ машина çинчен калать: — Час!

«Утмăл тăхăр вучахăн пĕр турчăкаçă!
Каппайтăр, каппайтăр Америка, да-с!»
Ак хай кукăль хĕп-хĕрлĕ тухрĕ пиçсе,
Ăна электровозĕсем васкаса
Тиеççĕ те вирхĕнтерсе çиçсе
Юри тунă кокс сӳнтерен стантса.
Кунта чăш та чаш пăс тухса капланать,
Шап-шур пĕлĕт пек çĕкленет çӳлелле.
«Кукли» сивĕнет, вакланать, халь ăна
Тăвар сапнă евĕр — акшар витмелле:
Вара домна тин рудапа çимелле.
Остап пĕлтерет: «Сая каймĕ пĕр нимĕн,
Ак çак пăспа çеç кураймастпăр-ха усă.
Анчах пролетарийĕн миме çĕрни-мĕн?!
Тен, курăпăр пăс уссине, мĕнле, тусăм?»
Çынна мухтаса ачашлас йăлам çук,
Анчах Остапа эпĕ пурĕ пĕр:
«Чăн! Курăпăр, — тетĕп, — юлташ Бондарчук,
Сан пек этемсем пулсан — курăпăр!»

7

Кунсем чугун пек шăранаççĕ,
Ан тив, ударника пăхса:
«Тăхта, малтан эс тăрана çи!» —
Виртлештĕр — кам чунпа уксах.
Пĕлетпĕр эпĕр — камăн влаçĕ
Ярать сана, харам сăпса!

Эй, хатĕр-им? — Хатĕр!
Юпа-и, пăта-и,
Йăтатпăр-и? — Атьăр —
Мĕн чухлĕ йăтатăн!

Çур метртан пăрланĕ сурчăк,
Питрен кастарĕ çил каç-каç.
Эпир тăватпăр ăшă çурчĕ,
Пин градус хĕрмелле çĕн лаç:
Кунта шăранĕ пирĕн хурçă.
Шăранмасса — ан та калаç!

Кăрлач шатăртаттăр,
Çилсем пулчăр хирĕç,
Ударниксем паттăр —
Тусен пăрне ирĕç!

Пĕрремĕш кăмака монтажĕ,
Электăр та металл анчах.
Мăлатуксен хастарлă ташă —
Йăлтăр та ялтăр, чанк-чанк-чанк!
Тата çак çĕр çинче ăçта-ши
Кун пек çĕршыв, ача-пăча?!

Çапатпăр-и? — Çапăр!
Тепре-и, тата-и?
— Тата! Ывăнмасăр —
Мĕн чухлĕ чăтайăн!

Срукчен хутатпăр! Чараймаççĕ
Элекçĕсем: вĕсен çук кун.
Ударник ямĕ харама çеç
Вăйне çĕршыв асра чух ун.
Кунсем чугун пек шăранаççĕ.
Кунсем пек шăранать чугун.

Чугун! Ак вăл килчĕ.
Малтан юхнинчен
Хывар Ленин пичĕ:
Çав — аслă ĕçчен!

## 8

Мускавра вун çиччĕмĕш партконференци.
Андрей залĕнче Кремльре çав кун
Хăш-пĕр коммунист, ахăртнех те, кĕтменччĕ
Ĕç тăвакан мандатпа чугун —
Чугун делегат! — Магниттăвĕнчен
Килсе пилĕк çуллăхшăн сасăласса.
Вăл пынă сулмаклăн, янтравлăн, чечен,
Мĕн пур çĕршыва илттерсе çав сасса.
Курман эп, пĕлместĕп, кĕмен Кремĕле.
Анчах, ман шутпа, ун сасси пурне те
Илтĕннĕ (каламăп — таса кĕмĕлĕн),
Илтĕннĕ хĕл варринчи çуркунне пек.
Унпа хирĕçмен, пренире тавлашман-тăр,
Пуçра пĕр сăмахсăр вăл тĕп йĕр хывать.
Чи витĕмлĕ, чи шантаран агитатор —
Вăл чĕррĕн кăтартнă пулас çĕршыва...
Мускавра вун çиччĕмĕш партконференци.

Магниттăвĕнче — шăп чугун халь, пĕрремĕш!
Ударниксем тивĕçлипе хĕпĕртеççĕ.
Çын çине çын, çапса хĕснĕ, тен, цирк,
Лазаренкăна курма та ун чухлĕн кĕреймĕç.
Хĕрĕх лаша урлă сиктĕр Лазаренко,
Ударниксен сальто-мортальне курса.
Пĕрремĕш домна талăксерен халь
Парнелĕ пин тонна чугун Союза.
Пиллĕк çеç мар — пин машин ертсе тухтăр
Вартанио велосипедçă.

Металл халь пирĕн çĕршывăн шутсăр,
Резин та, подшипник та хамăрăн пиçеççĕ.
Кашни ударник — çĕршер хут Вартанио,
Куллен кĕрен цехĕ — мухтавлă арен.
Пурнăç куса тăранне хăвăртлатнă вăл
Рекламăсăр, йывăррăн, тĕп никĕсрен...

Вĕри сăмахсем. — Çĕн чугун сывă пултăр! —
Темле чĕрĕ чун пек тĕл пулчĕç ăна.
Ударниксен пухăвĕ уçăлчĕ. Вун пĕр
Ударник арен варрине йышăнать.
Гладиаторсем мар, чура мар вылĕ — кĕрĕ
Вăрçа. Рим патрицин киленĕвĕшĕн
Ирĕк çĕре ирĕк ывăлĕ-хĕрĕ
Пур çамрăклăхне пехилленĕ ăшшăн.
Гладиаторсем мар та, кашни — яш Спартак!
Ĕçпе ăмăрту хытарать ӳт-тире.
Илемлĕ эпир халь спецовкăсăр та,
Спецовкăпалан — çирĕм хут хитререх!
Вун пĕр çын хушшинче — Сехре Терентейĕ,
Кама çак шырать куçĕпе халь Сехре?
Цирк пит çутăран-и, хĕпĕртенĕрен те-и —
Ун куçĕ пăртак курăнать хĕсĕкрех.
Кама çак шырать-ши вăл? Çук, тупăнмарĕ.
Президиум тытăнчĕ акă ĕçе.
Ĕçчен хыççăн тепĕр ĕçчен сăмахларĕ.
Кĕскен. Шывакне пăрса илнĕ веçех.
Сăмах илтĕнет витĕмлĕн, татăклăн,
Кашни пуплеврех курăнать, палăрать
Хăвачĕ те пысăкăшĕ савăтăн;
Кун-çулĕ ун куç умĕнче, алăра.
Тухать Атача атакланă хĕрарăм,

Тухать хӗр бетонҫӑ, тухать ватӑ туҫӑ,
Тухать яш мартенҫӑ: «Хурҫӑ халь парӑм...
Паратпӑр! — теер ҫакӑнта пурте уҫҫӑн...»
Тухать ак строительство пуҫлӑхӗ Гугель,
Унтах — ҫӗр чаван хастарсен бригадирӗ...
Магниттӑвӑн историне ку хӗл
Уяр ҫуркунне пулса ҫырӑн!
«Интернационал». Ҫӗр чӗлхеллӗ пӗр кӗвӗ.
Раснах вӑл янрать вӗр ҫӗнӗ хулара.
«Пӗр хамӑрӑн алӑпа ҫеҫ...» Чӑннипех вӗт
Ҫапла пуласса, п у л н и н е халь куран.
Сехре тинкерсех такама шав шыратчӗ,
Ак тупрӗ хайхи ҫав ҫынна, саламлать:
— Хелло, мистер Фребель! Эсир...
аристократ-ҫке!
Сывах-и! — тет уҫҫӑн вӑл акӑлчанла.
Палларӗ-мӗн Фребель те: «Комрид Сехре!»
Унтан хӑй машинӗ патне утнӑ чух
Шӳтлерӗ вӑл: «Ан каласамӑр сӗре!
Манран ударли пӗр ударник та ҫук!»
Ӑста хавасланнӑ, ҫиҫет сӑнӗ-пичӗ:
«Ҫырсамӑр часрах. Йышӑнатӑп... Гуд бай!»
Мотор пӗрре канӑҫсӑр тулхӑрса илчӗ,
Авто тӗрӗлтетрӗ этем хушнӑ май.

1932, Магнитогорск, Мускав

## ТАНЯ

### Умӗнхи юрӑ

Эп илтнӗччӗ пӗр юмах-халап
Сар Хӗвел хӗрӗ Хӗвелпи ҫинчен...
Тахҫантан тахҫан, ӗлӗк-авалах
Вупӑрпа Хӗвел вӑрҫнӑ пӗринче.

Тӗттӗм пуҫлӑхӗ усал Вупӑр ҫав
Хӗвеле ҫиме хатӗрленнӗ тет.
Хӗвелпи аппа ак каять вӑрҫа,
Амӑшне ҫӑлма вӑл шырать меслет.

Ырӑ амӑшӗ ӑсатать, пиллет,
Анчах Вупӑрӗ вӑйлӑрах иккен:

Сар хĕре хăйне тыткăна илет;
Амăшне вара тархаслать пике:

«Эс аннем те ман, эс аттем те ман,
Ыр Хĕвелĕмçĕм, çут тĕнче тытан!
Тӳсĕм пар мана хурлăха чăтма,
Ан кулайтăрччĕ курайман тăшман...»

Илтрĕ амăшĕ — çут тĕнче хуçи:
Кăкăрне суса пашалу çăрать,
Тĕттĕм витĕр вăл тăсрĕ ылтăн çип,
Çав çиппи тăрăх çимĕçне ярать.

Хĕвелпи аппа кăшт астиврĕ те —
Çавăнтах ăна вăй-хăват кĕрет;
Юн выля пуçлать пĕтĕм ӳт-тирте,
Вупăрпа вăрçма хĕтĕртет хĕре.

Ак пуçларĕ хĕр тăшмана хирме,
Сăнăлать ăна, ухăлать ăна.
Ак пуçларĕ вăл тĕттĕме сирме,
Вупăр карчăкĕ ахлатать кăна.

Анчах вăйĕ ун пĕтĕмпех пĕтмен,
Парăнмасть-ха вăл хăй мехелĕсĕр.
Хĕвеле çаплах авалтан хальччен
Талăкне пĕрре хупăрлать сĕм çĕр.

Çав сĕтпе çăрнă пашалу вара
Тулли уйăх пек курăнать пире.
Çăлтăр мар хыпать сĕм тӳпе тавра —
Хĕвелпи уххи Вупăра тирет.

Çиçĕм мар çиçет тепĕр чух çĕрле —
Хĕвелпи сăнни ялкăшать çинçен.
Шевле мар вылять тĕр тĕрле-тĕрле —
Хĕвелпи кулать Вупăртан иртчен.

«Пулатех самант, çитетех мехел:
Тĕттĕме-сĕме çĕнетех Хĕвел,
Çавăнпа кулать Хĕвелпи!» — тесе
Йăпанать этем ĕмĕтне кĕтсе.

**1**

Мускав урамĕнче плакат:
«Атьсемĕр! Хыҫăмăр — Мускав-ҫке!»
Урам чулне такан шаккать,
Салтак-сынсем тапса пусаҫҫĕ.

Грузин утать эрменпеле,
Вырăспала пырать тутарĕ,
Чăвашĕ — таджикпа пĕрле...
Тăван ҫĕршыв пĕр хĕҫ туптарĕ.

Туптарĕ те хăй халăхне
Тыттарчĕ ҫав хĕҫе ҫĕршывăм:
«Ан ярчĕ ман чĕрем патне
Хăрушă тăшмана эс, ывăлăм!

Пуҫсăрланать усал тăшман,
Сĕмсĕрленет, кĕрет... Ан яр эс!
Касса пăрах ҫав аҫтахан
Вутпа сывлан пуҫне пĕр харăс!»

Сасартăк чĕрĕлчĕ плакат:
«Атьсемĕр! Хыҫăмăр — Мускав-ҫке!»
Ав Лермонтовĕ хăйваскать,
Курать — ун сăввипе утаҫҫĕ.

Вилни ҫĕр ҫул тултарнă кун
Паян вăл чĕрĕрен те чĕрĕ.
Ҫунса тăрать сăн-пичĕ ун:
Мĕнле халь ҫутă савнă ҫĕрĕ!

Мĕнле халь ирĕк ҫак кил-ҫурт!
Мĕн аслăш сăвăҫăн мухтавĕ!
Йăлтах — тăван, ҫук ҫичĕ ют,
Хăватлă халăхсен хускавĕ!

Паллать вăл ҫав халăхсене, —
Россия утăмлать мăнаҫлăн.
Бородино чухнехине
Поэт аса илет хаваслăн.

Тĕттĕмленет. Унта-кунта
Прожектор ялтăрать шевле пек.

Утать поэт, унпа утать
Пин-пин салтак; утатăп эпĕ.

Пурне те ун сăвви чĕнет:
«Атьсемĕр! Хыçăмăр — Мускав-çке!»
Вăл чĕрене çитсе тивет,
Ăна вуличченех чухлаççĕ.

Сĕм каç çăм бурка пек хура.
Хура йыхравçă-сăвăç куçĕ...
«Тăшман пулаймĕ Мускавра!» —
Тупа тăвать Совет Союзĕ.

**2**

Амăшне카ларĕ хĕрĕ
Вăрттăн, ерипен:
— Эп вăрçа каятăп, — терĕ, —
Маншăн ан шиклен.

Амăшĕ чăр пăхрĕ: — Эсĕ?!
Чакрĕ, чакрĕ вăй...
Хĕрхенсе куççульленмесĕр
Тӳсеймерĕ хăй.

Куç тулли тăрать чипер хĕр
Унăн умĕнче.
Таврара кĕрлет хисепсĕр
Юн тăкан тĕнче.

Эх, анне чĕри! Çунать-çке
Вăл çапла ялан
Çумĕнчи ăшă çуначĕ
Пушшине туйсан.

Йăвине тĕрĕс-тĕкеллĕн
Вăл усрасшăнах.
Ун чĕппи ĕнтĕ тĕкленнĕ,
Вăл калать сăмах:

— Ан йĕрсем, — тет вăл, — ан макăр,
Ан кулян, анне.
Астăватăн-тăр, манман-тăр
Ху каланине.

«Пул хăюллă, тӳрĕ чунлă!» —
Теттĕн эс мана.
Вăхăт çитрĕ: вут та çулăм
Хыпрĕ таврана.

Вăхăт çитрĕ: тĕрĕслетĕр
Самана пире.
Камăн-ха юлас килет-тĕр
Хыçалти ретре?

Халь Мускавшăн хĕрĕнеççĕ
Тăшмансем, пĕлеп.
Эп — Мускав хĕрĕ, аннеçĕм,
Комсомолка эп.

Е эп паттăр пулса килĕп
Каялла киле.
Е эп паттăр пулса вилĕп...
Сывă пул! Пилле.

3

Тирпейлĕ пĕчĕк пӳлĕмре
Юлаççĕ ун кĕнекисем.
Хут-кăранташĕ... Ӳлĕмрен
Йăлт кирлĕ пулĕç-ха вĕсем.

Кăçал урăхларах йыхрав
Пырса шаккарĕ кĕркунне.
Ноябрь те çитет — Мускав
Уçман та-ха чылай шкулне.

Шкул ачисем уйра, ялта
Ĕçлерĕç çу каçичченех:
Тыр-пул, паранкă... Зоя та
Пĕр колхозран килейнĕ çех.

Килсессĕнех унта-кунта
Вăл чупрĕ хăй ĕçĕпелен.
Каясшăн пулчĕ хĕр фронта,
Анчах ансат та мар иккен.

«Тен, госпитале кайăр, а?» —
Тесе сĕнеççĕ хăшĕсем.

Ачах çав-ха, вун саккăра
Пусайнă. Хĕрхенеççĕ тем?..

Пĕр командирпалан тата
Курса калаçрĕ вăл кайран.
— Илсемĕр, — терĕ, — отряда,
Пуласшăн эпĕ партизан.

— Хăрамăр-и? — тет майĕпен
Çав пĕлĕш командир ăна. —
Çĕрле... вăрман... эсир пĕччен...
— Çук! — терĕ Зоя. — Ăнланап...

Ун хăмăр куçĕсем таса,
Ун шухăшĕ пĕрре, паллах.
Леш, командир, çаплах тăсать,
Татах ыйтать сăнамалла:

— Тăшман тытсан сасартăках?
— Пĕлетĕп: хĕнĕç, мăшкăллĕç,
Ыратĕ, — терĕ хĕр, — анчах
Эп тӳсĕп йăлт. Хупланмĕ ĕç.

Ĕненĕр: хам юлташсене
Тыттармăп эпĕ нихăçан...
Çын тинкерет. Çын ĕненет:
Çуралчĕ çĕнĕ партизан.

4

Ак кайрĕ тухса вăл — Тăван çĕршыв хĕрĕ.
Анне тӳссе юлчĕ, анне пехиллерĕ.

Куççулĕ çунать те куççулĕ типет,
Хĕлхем пек янтăрать хăрпăксем хушшипе.

Хĕрин куçĕсем — эс куратăн, туятăн —
Çиçеççĕ хаваслăн, выляççĕ уяваăн.

Вăл савăннă халĕ, вун çиччĕрискер,
Ун кăмăлĕ çирĕп, çĕкленнĕ çав тер.

Тен, ун асĕнче янăрать пулĕ юрă,
Бетховенпа Гетене, тен, вăл астурĕ:

«Шăхлич шăхăрать, тӳнклетет параппан,
Ман тусăм-савниййĕм пырать çарпалан.

Вăл сăнă çĕклет те мĕн пурĕ çĕклеççĕ.
Ах, чунăм çунать-çке ман, юнăм вĕрет-çке!

Эй, хурçă тумпа хурçă шлемччĕ хама!
Эп кайăттăм савнă çĕре сыхлама.

Тăшман ав чакать пирĕн çар хĕснĕçемĕн.
Мĕнле ăраскал çĕнтерен паттăрсемшĕн!»

Юратнă вăл çакă юрра тахçанах,
Тетрачĕ çине çырса илнĕ ăна.

Нумай шухăшланă, нумай ĕмĕтленнĕ...
Ак хай хурçă тум, хурçă шлем мĕскерле-мĕн!

Фуфайка, çăм шарăх, калпак, алса туль...
Трамвай умĕнче вĕçленет ăсату.

Темле кутамкка сĕнчĕ амăшĕ; хĕрĕ:
— Унта автопа çӳрес çук, анне, — терĕ. —

Эп чикрĕм, ман пур пĕтĕмпех мĕн кирли:
Пур сахăр, пур супăнь, йĕп-çип, пит шăлли...

Ак кайрĕ тухса вăл — Тăван çĕршыв хĕрĕ.
Анне тӳссе юлчĕ, анне пехиллерĕ.

Пиллерĕ чи сыхă хура кĕркунне,
Пиллерĕ Мускав та хăюллă хĕрне.

Пиллерĕ ăна пур çĕршыв ăшă чунлăн,
Ват Кремль çинчи ялавпа алă сулнăн.

Ноябрь пуçланчĕ, тата эрнерен
Ак шавлĕ парад та уяв çитнĕрен.

Унта параппанĕ, шăхличĕ сас парĕ,
Пĕри алă çĕклĕ те — çĕклĕ пур çарĕ.

Унта чăн-чăнах хурçă тум, хурçă шлем,
Тĕрек те, мухтав та вăл, чыс та илем...

Кирек те мӗнле ҫичӗ ют уртӑр, астӑр —
Ҫав шухӑшпалах иртӗ пирӗн пур харсӑр:

Тӑшман тӳсеймест, вӑл чакать, вӑл тарать...
Мӗнле ӑраскал ҫӗнтерен паттӑра!

**5**

Вӑл Пушкина юратнӑ теҫҫӗ.
Апла пулсан ун чӗрине
Илешнӗ чи паха поэзи,
Ҫав илӗртнӗ хӗр ӗмӗтне.

«Этемӗн пултӑр йӑлт илемлӗ, —
Ҫырса хурать вӑл пӗр тӗлте: —
Сӑн-пичӗ, тумӗ, ӗмӗтленнӗ
Ӗмӗчӗсем те, чунӗ те...»

Тата ҫырса илет ҫав харсӑр
Пӗр хӑйшӗн ӗмӗрлӗх ҫакна:
«Вилсессӗн те — ху юратмасӑр
Ҫынна ан чуптутар хӑвна!»

Ак ҫакнашкал чӗкеҫ чӗриллӗ
Этем кӗрет вут-кӑвара.
Чи аслӑ юрату та ҫилӗ
Ӑша-чикке халь хыптарать.

«Тӑван ҫӗршыв! Мӗскер эп сансӑр? —
Тесе вӑл шухӑшлать, хастар. —
Сана чунтан-вартан савмасӑр
Юратӑва эп тивӗҫ мар.

Чи аслӑ юрату вӑл — эсӗ,
Чи аслӑ ҫилӗ вӑл — тӑшман.
Ӑна тӗпрен ҫӑлса илмесӗр
Телей те, канлӗх те ҫук ман...»

— Пӗлетни, Шурик, эс: мӗскершӗн
Пурнаҫҫӗ ҫӗр ҫинче ҫынсем? —
Тесе пӗрре хӑй шӑллӗнчен-мӗн
Тӗпченӗ Зоя пикенсе.

Унтан хӑех калаӑ уҫҫӑн:
— Ҫапла хушать ҫынна ыр чун:

«Эс тăрăш хăвăн халăхушăн,
Ун ăраскалĕшĕн эс çун!»

Пĕрремĕш юрату-мĕн — халăх
Çак çитĕннĕ чипер хĕрĕн.
Унпа хăйне вăл уйрăлмаслăх
Ĕмĕрлĕхех тĕвленĕ-мĕн.

Вăл Пушкина савса вуланă,
Тен, асĕнче çавна тытсах
Ятне те Т а н я вăл суйланă
Хăйне йăлтах вăрттăнлатса.

«Чăн вырăс чунлăскер — Татьяна,
Хăй те пĕлмесĕр мĕншĕнне,
Раççей хĕлне пит кăмăлланă,
Ун вырăсла сив илемне...»

Хăй те пĕлмен... Çук! Ку ăнланнă
Шартламине те сиввине,
Куçа уçма хал çук тăманлă
Кунне те м ĕ н ш ĕ н савнине.

Ăнланнă, пĕлнĕ пирĕн Таня:
Хĕлле, çулла — кунта кăна
Анми-сÿнми хĕвел çуталнă,
Пил тунă ирĕклĕ çынна.

Çавна хупласшăн, сÿнтересшĕн
Ытарайми çав хĕвеле,
Тăшман сĕмсĕрленет кĕресшĕн
Çĕршыв чĕри варринелле.

Çавна, çав хĕвеле, çап-çуттăн
Ялкăштарас тесе ялан
Пăшал тытса тупа эс турăн,
Вун çиччĕри хĕр партизан.

**6**

«Ытарайми аннем!
Мĕнле пурнатăн-ха?
Мĕнле сан вăй-халсем?
Сывах-ши эсĕ халь?..

Анне! Май пур пулсан
Ҫырсамччӗ кӑшт кӑна.
Еҫӗмсене тусан
Эп пырӑп хӑнана...»

Ҫапла ҫыру ҫырать
Хӗр амӑшне кӗскен.
Хӑй темшӗн Шекспира
Аса илет иккен.

Аса илет пике
Яш Гамлет пӗр-пӗччен
Хӑй ашшӗн мӗлкипе
Сӑмахлани ҫинчен.

«Сыв пул, сыв пул! Ан ман,
Ан ман мана!» — тесе
Ҫырса хурать паян
Ак Таня эрленсе.

Ыран вӗсен ирех
Фронт урлӑ каҫмалла.
Отрядӑн чун пӗрре,
Мухтав комсомола.

Анчах кашнин, кашнин
Пур хӑйӗн чунӗ те.
Пӗрин юлать савни,
Теприн — тӑванӗ, тен...

Тен, ашшӗ-амӑшӗ,
Ачи асне килет...
Ах, кӑмӑл анлӑшӗ!
Кам виҫнӗ? Кам пӗлет?

Юратнӑ ӗҫ юлать,
Яш ӗмӗт вӗҫленмен;
Тӑван кил пек шкула
Хӑварнӑ, шеллемен.

Пур вуласа тухман
Кӗнекисем вӗсен.
Мӗнпе пӗтет роман?
Нихҫан та пӗлмӗн тен...

Пур çыръанса пĕтмен
Сăвви те хăшĕсен.
Штыкпа, тен, вĕçлеме
Шутлаççĕ пуль вĕсем.

Эй, комсомолецсем!
Вун саккăрти тĕнче!
«Романтика» тесен —
Эсир-мĕн çав чечек.

«Сыв пул, — тет хĕр. — Сыв пул!..»
Кампа сывпуллашать?
Тен, юлашки хут пуль...
Мĕскер тулать ăша?

Мĕскер кĕтет унта —
Тăшман тамăкĕнче?
Çапла чăн паттăр та
Ыйтать пуль хăйĕнчен.

Анчах асрах, асрах
Чуна çĕклен тупа.
Вăл чĕрĕ чи таса,
Сӳнми юратупа.

Вăл чĕрĕ тӳсме çук
Хăватлă çулĕпе.
Пур шухăша ку чух
Хуçа вăл вăйĕпе.

Чĕркуçленсе ларса
Пурăннинчен — пĕрре
Алтивĕççĕн тăрса
Вилни илемлĕрех.

«Вилес е çĕнтерес!» —
Тет пирĕн çын хăйне...
Ыран е кĕçĕрех —
Çĕрле — тăшман тылне...

**7**

Ак тинех пĕрле тапранчĕ
Пурнăçпа юмах вара.
Комсомолецсен отрячĕ —
Тăшман пуснă çĕршывра.

Мĕнешкел çĕршыв! Сăхланăн
Эс курсассăнах ăна.
Унта Шишкин, Левитанăн
Йĕрĕсем сыхланнăнах.

Хырлăх, чăрăшлăх е хутăш
Çăтăрмахлă сĕм вăрман.
Каш кашлать... Мĕн чухлĕ шухăш
Хускатать вăл тăнласан!

Эс тăнланă, эс пикеннĕ
Ăнланма çав кашлава,
Эс ăнлантăм пулĕ тенĕ,
Ăнланман ун чух çавах.

Эс шутланă: çук тек урăх
Мускав шыв хĕрринчи пек
Сăн-сăпатлă, хӳхĕм, тулăх
Çут çанталăк тĕнчипе.

Эс шутланă: çук тек уçă,
Сиплĕ сывлăш, ăшă сĕм,
Кăшт тĕтреллĕ ирхи шуçăм,
Çăмăл шурă пĕлĕтсем...

Вырăс çĕрĕн сăн-сăпачĕ,
Шухăша яран илем!
Çав çĕре ак халь пăсаççĕ,
Чыссăрлаççĕ ирсĕрсем.

Халь çĕр хут ытла туятăн
Эс ун пур пахалăхне.
Урăхла эс ăнланатăн
Сĕм вăрманăн кашлавне:

«Нихăçан та никама та
Парăнмастăп!» — тет вăрман.
Эс шанатăн, эс чăматăн
Ун ăшне çĕршыв хушсан...

Ик эрне ак пурăнаççĕ
Çамрăксем сĕм вăрманта.
Кăнтăрла вут хуркалаççĕ,
Кăшт пулаççĕ кăтăш та.

Тăвăнать çĕрле халь пур ĕç.
Пытарсам, тăван вăрман!
Хӳтĕле пире, юп кур эс,
Пулăшсамччĕ тавăрма!

Пулăшать вăрман, итлет-мĕн:
Шар курать тăшман нумай.
Çăмăл мар, анчах питрех хĕн
Курнине пĕр тĕп тума.

Эрешмен пек каркаланă
Таврана вĕсем карта;
Хурçăпа вутпа пусарнă
Тарайман çынна ялта...

Кăтăрать ноябрь çилĕ,
Йĕпе юр лаплаттарать...
Хыр çумне хăлхаллă çĕлĕк
Пусса лартнă хĕр ларать.

Кăнтăрла. Кăшт вăрттăн-карттăн
Вут çунать йăсăрланса.
Ун тавра виççĕн-тăваттăн
Ăшăнаççĕ хутланса.

Теприсем ларсах сĕнк пулнă,
Тĕлĕреççĕ пĕр кана.
Апат пурччĕ пилĕк кунлăх, —
Тăсрĕç ик эрне ăна.

Паян ир вĕсем валеçрĕç
Юлашки сухарине.
— Таврăнмашкăн вăхăт, — терĕç, —
Каялла хамăр енне...

Хыр çумне таяннă çӳллĕ,
Яштака, илемлĕ хĕр:
— Юрĕ, кайăр, — тет, — мĕн пулĕ...
Эп юлап-ха пурĕ пĕр...

Эп çителĕклĕ туман-ха,
Эп çитесшĕн леш ялах...
Хам вилсессĕн те унта халь
Вуннăшне ман хумаллах!..

Кабурне тӳрлетрĕ танлăн,
Тăчĕ вăл ура çине...
Ах, епле хитреччĕ Таня,
Пирĕн Таня ун чухне!

**8**

Хĕлле. Шатăртатать декабрь
Автоматпа унта-кунта.
Тĕнче çапах та хӳхĕм, капăр,
Пурнас килет такамăн та.

Пурнас килет те — пурнăç туснă,
Ху çăкруна та йăлăнан.
Хура эсрел пек килсе пуснă
Пăшалсăр ялсене тăшман.

Çунтарнă, пенĕ, асапланă.
Ватти-вĕтти кăна ялта.
Хăтăлнисем йăлт сапаланнă,
Вĕсем çӳреççĕ вăрманта.

Юрпа эрешленсе лараççĕ
Илемлĕ чăрăш лăссисем.
Анчах вĕсем те пытараççĕ
Мĕн те пулин... асту, сиссем!

Пурнас килет... Тăшман канасшăн,
Çаврасшăн сывлăш хальлĕхе.
Упа пек выртнă хĕл каçмашкăн
Вăл янтă, ăшă пĕсмĕхе.

Фрицсем чăх-чĕп тăпăлтараççĕ
Е пусмăрлаççĕ хĕрсене:
«Капут, капут Мускав!..» — палкаççĕ
Куллен пĕр çав сăмахсенех.

Анчах канма паман хăрушă
Сăмах та пур-мĕн: «партизан».
Ăçтан кăна тухать вăл! Уншăн
Тем парĕччĕç тытас пулсан.

Унта автомобиль шартлатнă,
Кунта вут тĕртнĕ витене,

Лере телефона ав татнă...
Ăстан пĕлес кам иккенне?

«Сых ячĕшĕн перес пĕр-икĕ
Çынна ялтан илсе тухса...»
Переççĕ. Кама кирлĕ — илтнĕ.
«Час ик çĕр тӳлĕр!» — тет çав сас.

Шатăртатать хаяр декабрь
Автоматпа унта-кунта...
Тĕнче çапах та хӳхĕм, капăр,
Пурнас килет такамăн та.

Кĕске куна сĕмлерĕ энтрĕк,
Çĕр ӳплерен пĕр çын тухать.
Вăрман хăлхаллă: çын итлерĕ.
Уй куçлă: пăхрĕ çын. Утать.

Пырать вăл сукмакпа. Шăп касĕ.
Пĕлсе тытать çын çул-йĕре.
Тĕттĕмленет. Чăл-пар хыпаççĕ
Сив çăлтăрсем сив тӳпере.

Ката та хир. Вак-вак ĕшнеллĕ
Хăртнă пек вырăн, хир каллех...
Кăвак кăçатăпа çын меллĕн
Пусса пырать сукмакпала.

Хутран, пуçне пăрса, хăяккăн
Утать вăл кăшт ӳпĕнерех.
Пасарнă сăрă мулаххайăн
Хăлха хĕрри — шур чĕнтĕрех.

Тăп-тăп шур кĕрĕк айĕн хулăн
Шăлаварне куран хутран.
Аяккинче хутаçĕ унăн,
Ун сылтăм аллинче наган.

Пĕр ял сывăхарать. Хуралтă
Мĕлкĕшленет... Куç чарăлчĕ.
Çын çав ялах утать пулсан та,
Курсан тăхтарĕ, чарăнчĕ.

Вăл тăчĕ пĕр самант. Сĕм тĕттĕм
Тавраналла вăл тинкерет.
Темле çунăк шăршиллĕ тĕтĕм
Таçтан кӳ-кӳ килсе кĕрет.

«Фрицсем сысна çури ĕнтеççĕ
Е ăшалаççĕ пуль чăхсем...»
Тинкернĕ куçĕнче çиллессĕн
Çиçсе илет хаяр хĕлхем.

Ак утрĕ çын, çывхарчĕ, çитрĕ
Сăнанă хуралти патне;
Хӳме çумнех вăл пычĕ; чикрĕ
Часрах хĕвне ак наганне;

Бензин кĕленчине кăларчĕ,
Юхтарчĕ, сапрĕ хăвăртрах;
Унтан вăл пĕшкĕнчĕ... часрахчĕ!
Пĕр шăрпăк çеç кирли... часрах!

Шăп çав самант салтак хуралçă
Ярса та тытрĕ хыçалтан.
Çын туртăнчĕ. Тăрать. Пуçлаççĕ
Вăрçма ик курайман тăшман.

Вĕçерĕнчĕ, тĕртсе те ячĕ
Çын салтака. Илет наган.
Анчах салтак çапса антарчĕ
Ăна тăсайнă аларан.

Пемешкĕн çын ĕлкĕреймерĕ, —
Тревога турĕ нимĕçĕ.
Сиксе тухать салтак эшкерĕ,
Çынна чĕр хальлĕн илчĕçĕ.

### 9

Ак штаба илсе пыраççĕ
Çав çĕрле çӳрекене.
Пӳрте кӳртрĕç, тин кураççĕ
Вăл мĕнле çын иккенне:

Хăмăр куçлă та кĕрнеклĕ
Çамрăк хĕр тăра парать...

— Эппин, ҫакă? Эппин, лекрĕ?
Пит телейсĕр маскарад!

Штабрисем лах-лах кулаççĕ:
Салтаксем сĕтел ҫине
Хĕр револьверне хураççĕ,
Хутаҫне, кĕленчине...

— Ну, мĕскер каласа парăн,
Жанна д'Арк? — тет офицер, —
Эс-и ҫав тĕртсе ҫунтартăн
Пирĕн витене ĕнер?

— Эпĕ! — тет чипер хĕр хирĕç.
Нимĕҫсем пĕрне-пĕри
Тĕлĕнсе кăшт пăхса илчĕç...
— Пултаратăн! — тет штабри.

А миҫемĕш ҫын вăл, э с ĕ,
Партизан отрядĕнчен?
Ыттисем ăҫта ĕҫлеççĕ?
Тĕп йăви ăҫта вĕсен?..

— Каламастăп! — терĕ лăпкăн,
Касса татрĕ ҫамрăк хĕр.
— Ка-лат-та-рă-пăр! — тет ҫăткăн,
Шăлне ҫыртрĕ офицер.

Кил хуҫисене тухмашкăн
Хушрĕ вăл кухньăналла.
Куҫма-куҫ юлать тăшманăн
Ҫиллипе ак хĕр шала.

Салтăнтарчĕҫ ăна акă,
Тăсса хучĕç сак ҫине...
Нăчлатан резин патакăн
Сасси ҫеç халь илтĕнет.

Илтĕнет тата ҫав харсăр,
Йăлăну мĕнне пĕлмен
«Каламастăп!» тенĕ сасă —
Хытăрах... кайран хуллен...

Ик çĕр çапрĕç. Хĕр чĕнмерĕ.
Хĕнеме пуçласанах
Пĕр çап-çамрăк офицерĕ
Сиксе тухрĕ кухньăна.

Пуçне тытрĕ те çав каччă
Куçне хупрĕ; пӳрнине
Хăлхине чиксе вăл ларчĕ
Мĕн допрос пĕтичченех.

Çынлăхне çухатайман-и?
Е пĕрремĕш хут этем
Вăрçăн чи усал, ăнманă
Сăн-питне курать-и тен...

Каярах хăй кам пулсан та,
Ун чухне çав чăтакан,
Асапланакан хĕр тантăш
Çинелле вăл пăхайман.

Тен, çав нимĕç вилнĕ халĕ
Мĕншĕнне пĕлмесĕрех.
Тен, хăй сăмахне вăл калĕ
Вăрçă хыççăн тин пире.

Тен, кунта вăл тыткăнра-тăр,
Тин куç уçрĕ, тен, çав чун:
Куртăр, пĕлтĕр те ăнлантăр —
Мĕншĕн тӳснĕ хĕр ун чух...

**10**

Илсе кайрĕç çаруран,
Кĕпепе кăна,
Çĕрлехи урампалан
Çавăтса ăна.

Шартлама хĕртет. Кӳтет
Тăм илен ура.
Тĕртсе кӳртрĕç пĕр пӳрте
Тыткăнçа вара.

Кĕрсенех йăванчĕ хĕр,
Çĕкленет аран.

— Партизан-им? — терĕ пĕр
Нимĕç. — Пит аван!

Шăрпăк çутрĕ, янаххи
Патнелле çĕклет:
— Пĕçерет-им? Чăнах-и?
Пирĕншĕн епле?!

Çунтаран пире, касан,
Астивсе пăх! — тет,
Çурăмран пăчкăпалан
Сăтăрса илет.

Хĕр юнланнă тутине
Тепĕр хут çыртать,
Тĕшĕрлет вăл урайне,
Шăппăн шыв ыйтать.

Кил хуçи — Кулик пичче —
Шыв катки патне
Тӳсеймесĕр пынăччĕ,
Тытрĕ куркине.

Анчах кăшкăрчĕ харах
Нимĕç чун илли:
— Ан ĕçтернĕ пул! Пăрах!
Е патак кирли?..

Ме! Ĕçсе пăх ак краççын,
Кӳп шыв вырăнне! —
Тытрĕ лампа чурăс çын
Хĕр тути умне.

Хĕр пĕррех халь ун çине
Хăррăн пăхрĕ те,
Чун пулсан — çав куççене
Манмăн ĕмĕрте.

Чунсăр вăл, çавна пула
Асаплать хĕре.
Кăларать тата тула
Кашни сехетре.

Юр ҫинче вăл уттарать
Мĕскĕне ҫарран.
Хĕр ури халь хуп-хурах,
Пускалать аран...

Ҫур ҫĕр иртрĕ. Ик сехет.
Кайрĕ чун илли.
Хурала тепри килет,
Ку тата мĕнли?

Нимĕҫсем йăлтах пӳртре
Ҫывăрса пĕтсен
Сак ҫине выртма хĕре
Ку чармасть иккен.

Ҫывăрас пачах килмест
Ват Праски инкен:
— Ăҫтисем пулатăн эс? —
Вăл ыйтать хĕртен.

Хĕр калать: — Эп Мускавран,
Таня ятлă, — тет.
— Аҫу-аннӳ пур-и сан? —
Тет Праски, тĕпчет.

Анчах шăпăрт пулчĕ хĕр.
Тĕпчесессĕн те
Пĕр сăмах та вăл кĕҫĕр
Каламарĕ тек.

## 11

Эсĕ-ҫке ку, Таня!
Зоя, эсĕ-ҫке!
Кам сана ăнланĕ
Ху аннӳ пекех?

Кам чунне ĕненĕн,
Кама шанăн-ха
Стенасем итленĕ
Вăхăтра эс халь?

Тен, тăван хĕрарăм
Санпала ырах —

Чунтанах, мăнтарăн,
Калаçма пырать.

Анчах эс пĕлетĕн,
Ăнланан аван:
Пĕр сăмах вĕçертрĕн —
Пин çынна сутан.

Эс тӳсен чĕнмесĕр
Пĕр-пĕччен кунта.
Ыратсан та эсĕ
Ахлатмастăн та.

Кам мана пĕлтерĕ
Çав сĕм каçхине
Эс, çĕршывăн хĕрĕ,
Мĕн шутланине?

Кам каласа парĕ
Çĕрĕпе, ирччен
Хăмăр куç кăварĕ
Мĕн курни çинчен?

Аслă халăхунăн
Умĕпе хыçне
Эс хĕн витĕр курнă
Харăс ун чухне.

Тен, Иван Сусанин
Тухнă сан умна:
«Эсĕ-çке ку, Таня!» —
Тенĕ вăл сана.

Харсăр Василиса
Пынă пуç вĕçне:
«Эс — çĕршывăн чысĕ!» —
Тенĕ йăмăкне.

Эсĕ-çке ку, Таня,
Эсĕ — Зоя та...
Миçе ят капланĕ
Сан тавра тата?

Миçĕшне йыхравлĕ
Сан хăюлăху?!
Çакна çеç эс халĕ
Пĕлейместĕн ху...

**12**

Илĕм-тилĕм кăвак çутă
Сăрхăнать пӳрте.
Çывăрать-и халь вăл, çук-и —
Сасă çук пĕртте.

Кулик арăмĕн Праскин те
Ыйхă вĕçнĕ-тĕр:
— Леш каçне... эс пултăн-им?.. — тет.
— Эпĕ, — терĕ хĕр.

— Çунчĕç-им? Мĕн чухлĕн пулнă?
— Кам пĕлет ăна...
Çын çунман тет... Шел! Мĕн çуннă?
— Лашисем кăна...

Йышлă пĕтнĕ пек пуплеççĕ.
Çав каçах тата
Хĕç-пăшал та çуннă теççĕ
Пĕр çĕрте пайтах.

Таня кăмăллă. «Çав кирлĕ!
Пĕттĕр ытларах!
Хăйсенечченĕ те пуçхĕрлĕ
Çав вут-кăвара...

Урăм-сурăм вирт ярасчĕ,
Çулăм-тĕтĕмпе
Тĕтĕрсе кăларттарасчĕ
Арлан-сăвăр пек...

Мĕнле мелсĕр эп çаклантăм!
Мĕнле эп сахал
Тума ĕлкĕртĕм вăрçса та,
Пурăнса та халь!..

Пурăнса... Пуçланнă-ши вăл
Пурăнăçăм ман?

Каçарах мана, çĕршывăм, —
Эп сана манман...

Хăтăлса пулмасть. Пĕлетĕп.
Пĕлнĕ малтанах.
Вăй парсам, çĕршыв, пурне те
Чăтма çеç мана.

Вăй парсам тасан тӳсмешкĕн
Сан ятупалан.
Ёненетĕп: эс çĕнтерĕн,
Асна ил... ан ман...»

### 13

«Сыв пул, сыв пул! Ан ман эс ман çинчен».
Кам Гамлет, кам халь Ёмĕлкĕ кунта?
Çук, иккĕш те вĕсем чĕрех иккен:
Çĕршыв та, унăн хĕрĕ Таня та.

Пĕр кăвапа, пĕр юн вĕсен ĕнтĕ,
Пин-пин чĕре пĕр чĕрере тапать.
Тăшман епле татас тесессĕн те —
Нихçан та татăлмĕ çав кăвапа.

### 14

Кĕрет офицер. Çĕнĕлле
Пуçлать тĕпчеме Таньăран:
— Кам эсĕр? Чăн ятăр мĕнле? —
Тесе вăл ыйтать чи малтан.

Ыйтать вырăслах ку тата:
Ăçта, миçе çын унпала...
Чĕнмест хĕр. — Тĕп штабăр ăçта? —
Тесе леш тĕпчет малалла.

Сасартăк хĕр калт туртăнчĕ,
Питне писевлет вĕри юн;
Çап-çутă хĕлхем куçĕнче
Ӳссех, сарăлсах пычĕ ун.

Пуçне хĕр çĕклерĕ, сынна
Çӳлтен пăхса илчĕ, вара
Хăюллăн каларĕ ăна:
— Штабсем пирĕн — пур таврара.

Нумайййăн эпир. Мĕльюншарăн
Пире хисеплеççĕ ку чух.
Эпир чĕртсе янă пушарăн
Кăварĕ халех сӳнес çук! —

Питрен çупнă пек офицер
Тăрать тилĕрсе, талхăрса.
Пӳртри кил-йыша çав тискер
Хуса кăларать кăшкăрса.

Каллех ак пуçланчĕ асап:
Касать саламат — чĕн çĕлен.
Анчах пĕр сăмах та касса
Вĕсем илеймереç хĕртен.

Мĕнрен тунă-ши чĕрине?!
Хăйсем те йăлтах тĕлĕннĕ.
Кӳртеççĕ пӳртех çынсене,
Кӳреççĕ тумне хĕрĕнне.

Чăлха, кофтăпа шăлавар
Тата тĕрлĕрен япали:
Кăшт мамăк та шăрпăк, тăвар,
Пĕр-ик кĕленче — бензинли...

Кăçаттипеле кĕрĕкне
Валеçнĕ иккен унтерсем;
Алса тулĕпе çĕлĕкне
Вăрланă çаплах путсĕрсем.

Ак Таня мăйне «партизан»
Тесе çырса çакрĕç хăма;
Бензин çакса ячĕç унтан...
Ăçта ăсатма? Мĕн тума?

## 15

Тулта шатăртатать декабрь.
Килтен киле çӳрет тăлмач:
«Паян партизана çакатпăр,
Йăлт тухăр, юрамасть юлма!»

Ял варрине кашта тăваççĕ.
Ирĕксĕрех колхозниксем

Сайра пулин те пыркалаҫҫӗ,
Пуҫтарӑнаҫҫӗ пуҫ чиксе.

Тепри пыни те, май килсессӗн,
Хуллен-хуллен шӑвать килне.
Епле пӑхса тӑрас тӳлеккӗн?
Тен, ҫакӗҫ хамӑр ялсенех...

Нимӗҫӗсем вара нумайӑн:
Ҫӗр ҫын ытла салтакӗсем,
Офицерсем... Мӗнле уяввӑн
Тапать пуль халь чӗри вӗсен!

Пӗр вунӑ юлан ут тӑратнӑ
Йӗри-тавра кашта патне;
Хӗҫӗсене вӗсем кӑларнӑ,
Ташлаттараҫҫӗ утсене.

Мӗнле уяв!.. Анчах уяв-ши?
Ҫук, ҫук, хӑрав кашни куҫра.
Хӗлхем сӳнмен, вӗсем туяҫҫӗ,
Вӑл хӑвӑртлать ҫӗн пушара...

«Илсе килеҫҫӗ», — терӗҫ. Пурте
Пӑхса тинкерчӗҫ пӗр енне.
— Ах турӑ! Хӗр ача-ҫке, кур! — тет
Пӗр карчӑк хӑйӗн кӳршине.

Декабрӗн лутра хӗвелӗ
Ҫунать пек уйрӑмах тасан.
Чӑлхапалан кӑна тӗреклӗ
Пусса пырать хӗр партизан.

Ах, Таня, Таня! Епле хӳхӗм
Пур ҫут тӗнче те ҫак самант!
Ҫӗршывӑм, пар ӑна эс тӳсӗм,
Чунне, ачашлӑх, ан амант.

«Чӑн вырӑс чунлӑскер — Татьяна,
Хӑй те пӗлмесӗр мӗншӗнне,
Раҫҫей хӗлне пит кӑмӑллана,
Ун вырӑсла сив илемне...»

Ку пĕлнĕ, пĕлнĕ мĕншĕнне те,
Юратнă пур чунтан-вартан:
Юрне те, сивĕ хĕвелне те —
Юратнă вăл, ытарайман...

Пăхса тăран ял-йыш хумханчĕ,
Хĕре кĕртеççĕ варрине.
Пуçне çӳле йăтса çывхарчĕ
Хăюллăн вăл кашта умне.

Ик ещĕк айлă-çийлĕ хунă,
Кашта çинчен анать йăлмак.
Хĕре тăратрĕç, сивĕ ункă
Мăйне тăхăнтараççĕ ак...

Палач кантра туртмашкăн хатĕр,
Анчах тăхтарĕ комендант:
Кашта тавра хыпкаланать пĕр
Фотограф... Таня кăшкăрать:

— Эй, юлташсем! Мĕскер хавассăр
Пăхатăр пит! Хăюллăрах!
Кĕрешĕр, çапăçăр, çунтарăр
Фашистсене йĕри-тавра!.. —

Пĕр нимĕç Таньăна хăмсарчĕ,
Анчах ăна тĕртсе ярса
Çаплах хĕр хыттăн янраттарчĕ,
Мĕн пурĕ илтрĕç çав сасса:

— Вилмешкĕн эпĕ хăрамастăп,
Хам халăхшăн вилни — телей... —
Палач кĕтсе аптрать пулас та,
Комендантне куçпа тĕллет.

— Часрах! — тет комендант, васкатрĕ
Сăн ӳкерен офицера.
Валт çаврăнчĕ те хĕр каларĕ
Тăшман çыннисене вара:

— Эсир мана халех çакатăр,
Анчах та эп пĕчченçĕн мар,
Пурне те пурĕпĕр çакаймăр,
Час килĕ пирĕн аслă çар!

Çĕршыв йăлтах тапраннă, чухлăр!
Эй, салтаксем! Ӳкĕнмелле
Ан пултăрччĕ: кая ан юлăр,
Каçсамăр пирĕн еннелле.

Ан вăрçăр, парăнăр, пăрахăр
Пăшалăра — часрах, халех!
Пирте вăл тĕрĕслĕх, ăнланăр,
Эпир, эпир çĕнтермелле! —

Итле тăран этем ĕречĕ —
Асаплă вырăс çыннисем —
Хуллен ĕсĕклесе йĕреççĕ
Куççулĕнчен те шикленсе.

Палач карт туртрĕ, карăнтарчĕ...
Анчах тепре, чĕвен тăрса,
Ик аллипе хĕр тармакланчĕ...
Пушатрĕ... ячĕ кăшкăрса:

— Сыв пулăр, юлташсем! Кĕрешĕр!
Ан манăр: парти пирĕнпе!
Ĕненĕр... — Ещĕк кĕмсĕр-кемсĕр
Йăванчĕ нимĕç тапнипе.

Юр чăкăртатрĕ те лăпланчĕ...
«Ах-х!» — терĕ халăх тăвăнса.
Пĕри шари çухăрса ячĕ,
Вăрманалла кустарчĕ сас...

### 16

Ĕнтĕ кун иртет,
Ĕнтĕ çĕр иртет.
Таня ӳт-пĕвĕ
Çакăнсах тăрать.
Сăлпăран тухать —
Сапалать, витет:
Типĕ çил килет —
Тасатать, шăлать.

Ĕнтĕ кун иртет,
Ĕнтĕ çĕр иртет,

Пĕр эрне ҫитет —
Пытарман хĕре.
Канлĕх ҫук ӑна.
Вĕлерсессĕн те
Вырттармаҫҫĕ-ха
Хӑй саван ҫĕре.

Юр хуплать ӑна,
Ҫил силлет ӑна;
Ҫил силлет, шӑлать,
Сулласа илет.
Тӳпери чĕнми
Ҫӑлтӑрсем кӑна
Ӳпкелеҫҫĕ пек
Хĕрхенмен ҫиле;

Ӳпкелеҫҫĕ те,
Йӑлӑнаҫҫĕ те:
«Татса ил эс, ҫил,
Хытӑрах вĕрсе,
Канлĕх пар часрах
Ҫав таса ӳте,
Вырттарсам ӑна,
Шурӑ юр витсе...»

Ĕнтĕ кун иртет,
Ĕнтĕ ҫĕр иртет,
Тулчĕ уйӑх та —
Пытарма хушман.
Тата мĕн кĕтет,
Тата мĕн тĕпчет
Парӑнман хĕртен
Антӑхан тӑшман?

Ялпа ҫар пырать,
Нимĕҫсен ҫарри, —
Каштана курсан
Ахӑраҫҫĕ ҫав;
Ҫынлӑхне манса,
Вилене юри
Патакпа чышса
Хӑвараҫҫĕ ҫав.

Ял çынни пырать —
Пуçне лăш ярать,
Курас мар тесе
Васкаса утать.
Ачапча кăна
Аякран вара
Пӳрнине тăсать
Хăш чухне унта.

Вată çын иртет —
Ал-ури хытать,
Куç харши хушши
Пĕрĕнсе килет;
Каччă çын иртет —
Ăшне вут хыпать,
Хĕр ача иртет —
Çӳçенсе илет.

Пĕрех шухăш çав,
Пĕрех ĕмĕт çав:
Тавăрасчĕ-çке,
Хăвăртрахчĕ-çке!
Юн чĕнет вăрçа,
Хĕрхенми вăрçа.
Тăшман хăй сисет:
Кунĕсем кĕске...

Ĕнтĕ кун иртет,
Ĕнтĕ çĕр иртет,
Çĕнĕ çул çитет —
Пуçтарман хĕре.
Ак уяв туса
Ĕçкĕ ĕçрĕ те
Шуйхатать ют çар
Хĕллехи çĕре.

Çăхан ушкăнĕ
Пырса сырăнчĕ
Çакăнса тăран
Хĕрĕн шур ӳтне.
Кĕпине касса
Çурса хыврĕçĕ:
Кинжалпа чиксе
Тухрĕç пур енне.

Тепĕр кун тата
Çакăнса тăчĕ
Çарамас ӳт-пӳ
Çав кашта çинче...
Çак тискерлĕхе,
Çак хура ĕçе
Мĕн питпе-куçпа
Тӳсĕ-ши тĕнче?!

Çĕнĕ çул кунне
Каçпала кăна
Каштана тĕпрен
Касса ячĕçĕ.
Çунапа вара
Пирĕн Таньăна
Ним вителĕксĕр
Илсе кайрĕçĕ.

Ял хыçне тухсан —
Пĕччен хурăн пур,
Вăл кĕтмен кун пек
Хăнана нихçан.
Вăл кĕтмен, кĕтмен
Кунашкал хĕн-хур
Хăй айне пырса
Выртасса таçтан.

Шурă юр çине
Хучĕç сар хĕре,
Кантри татăкĕ
Мăйĕнчех иккен...
«Алтса чикчĕр те
Пĕттĕрех йĕрĕ!» —
Терĕ пуль тăшман,
Анчах çук, пĕтмен...

**17**

Вил тăпри часах шуралчĕ,
Юр айне вăл пулчĕ.
Хурăн çех — пĕччен хуралçă —
Сыхламашкăн юлчĕ.

Çил-тăман шăлса хупларĕ,
Палăрмасть тĕми те.
Хурлă хурăн хускалмарĕ,
Вăл пĕлет: хĕл иртĕ...

Вăл пĕлет: каллех юр кайĕ,
Йывăç сулçă çурĕ;
Таня пуç вĕçĕнче кайăк
Янăратĕ юрă.

Ĕнтĕркенĕ шурă хурăн
Шавласа çеç ларĕ;
Мĕскер илтнĕ вăл, мĕн курнă —
Йăлт каласа парĕ...

Тĕмсĕлет çапла хуралçă
Вăранса кас-кассăн,
Çиле май çара турачĕ
Кăшт çатăлтатсассăн.

Анчах акă хытăраххăн
Шавлашать тавралăх.
Çывăхри хура вăрманăн
Кĕпĕрленнĕ халăх.

Юр-кĕрт çиййĕн, тăвăл айĕн,
Çулпала та çулсăр
Кустараççĕ каялла-мĕн
Нимĕçсем ним шутсăр.

Тăшман йĕрĕ çине пусрĕ
Хĕрлĕ Çăлтăр çарĕ;
Ураган пек килсе тухрĕ,
Аслати пек çапрĕ.

Çичĕ ют тек тӳсеймерĕ,
Юр юнпа хĕрелчĕ.
Тăкăнать вĕсен эшкерĕ,
Сайралать ĕречĕ.

Çук! Мускавăн хапхи хупă!
Çын çине çын тӳнчĕ...
Кĕрĕслетрĕ пирĕн тупă —
Çĕнтерӳ салючĕ.

Ял тасалчĕ. Шикленмесĕр
Ял-йышсем пыраççĕ.
Шуйхаштарнă кайăк евĕр
Йăвине шыраççĕ.

Вилмеллех аманнă кашкăр
Ишнĕ те тустарнă;
Çын мулне вăл упрамасăр
Вут тĕртсе çунтарнă.

Ăçта пăхнă — сĕтĕреççĕ
Çунашка çул тăрăх.
Ачисем шăнса йĕреççĕ —
Килсĕр-çуртсăр, тăлăх...

Вăрмантан пуçтарăнаççĕ
Партизан тавраш.
Халапланççĕ, асăнаççĕ:
Çав та çав ăçта-ши?..

Ак çĕкленчĕ Таня ячĕ
Чыслăн та асаплăн.
Тĕлĕнсе хытса каяççĕ
Пурте, каласассăн.

Ушкăнпа çынсем уттарчĕç,
Хурăн патне тухрĕç;
Çĕлĕкне хывса пуç тайрĕç,
Паттăра чыс турĕç:

— Тăпру çăмăл пултăр, паттăр!
Пурте пĕр канашлăн
Сан çинче тупа тăватпăр
Саншăн тавăрмашкăн!..

Чăрăш-хыр тĕме пĕркерĕ,
Сăрхăнчĕ куççулĕ.
Халăх кăмăлĕ çĕклерĕ
Тĕме ту пек çÿллĕ.

Курăнать таçтан вăл халĕ,
Ун çинчен çĕршывăм
Юратса юмах та калĕ,
Юрăсем те хывĕ.

Чап-мухтав вĕҫсе хăпарчĕ
Тĕм ҫине ялавăн,
Таса чунлă Таня ячĕ
Янăрать йыхравăн.

Чап-мухтав ҫиҫсе саланчĕ
Таврана ҫап-ҫуттăн;
Пархатарлă асамачĕ
Ĕмĕр сӳнес ҫук ун.

Тăшман хыҫҫăн хĕвел анăҫ
Еннелле иртӳҫĕн
Маттурсем, тен, пирĕн канĕҫ
Ҫак яла ҫитӳҫĕн.

Пĕччен хурăн патне пырĕ
Ҫар ҫынни салхуллăн.
Ҫĕлĕк хывĕ командирĕ,
Хывĕ пĕтĕм ушкăн.

— Тавтапуҫ сана, тăванăм,
Йăмăк, тус, хĕр паттăр!
Пире ҫул уҫса эс пană,
Ҫав ҫулпа пыратпăр... —

Тав туса сăмах калассăн
Вĕр ҫĕнĕ шинельлĕ
Яш сержант та сывлĕ ассăн,
Ват салтак та шеллĕ.

«Тавтапуҫ!» — тесе хăварĕ
Лейтенант таврашĕ.
Генерал машина чарĕ,
Ҫырнипе паллашĕ...

Вăхăт ҫитĕ — пĕтĕм халăх
Таньăна пахалĕ.
Юлĕ ĕмĕр асăнмалăх
Паттăр чун хавалĕ.

1942, апрель, Шупашкар

# АПТРАМАН ТАВРАШ

*Сăвăллă роман*

**Халал**

*Атнер! Ик аллăма хурам-ха*
*Сан ик хулпуççийӳ çине.*
*Хура куçусенче курам-ха*
*Ачалăхăм таврăннине.*

*Çакна çырма эп пуçласассăн*
*Эс сукчĕ çутă тĕнчере.*
*Çакна эс вулакан пулсассăн,*
*Тен, урăх тапмĕ ман чĕре...*

*Пехил сана, пĕртен-пĕр ывăл,*
*Ăру малашлăхĕ, пехил!*
*Пуянлăхăм— тăван çĕршывăм,*
*Атте-аннен чечен чĕлхи.*

*Çавна эп сан валли упрасшăн*
*Ăша çунтартăм кунран-кун.*
*Выля, ачам! Тӳленĕ саншăн:*
*Тӳленĕ тар, куççулĕ, юн.*

*Таса ăрусенчен çуралнă*
*Сан пек ача-пăча çаплах*
*Ан пултăрччĕ ĕнтĕ суранлă,*
*Ан пултăрччĕ уксах-чăлах.*

*Çитет! Вăхăтсăрах ан шанчăр*
*Вĕсен çеçке ĕмĕрĕсем.*
*Кĕпер çинче тăсса ан ларччăр*
*Пӳрнесĕр аллине çынсем.*

*Атя, Атнер! Çулу сан такăр.*
*Йĕри-тавра пăхса тинкер:*
*Тĕпче, шыра, самант та ан тăр,*
*Çитмен ĕмĕтĕме çитер.*

*Вĕçĕ-хĕррисĕр çут çанталăк,*
*Татти-сыпписĕр пурăнăç.*
*Ниçта та, ним те çук яланлăх,*
*Тĕнче тăраймĕ пĕр тăнăç.*

*Васка, çитсе пыр! Çитеймерĕн —*
*Чупса пыракана çул пар.*
*Йăран çинчи пĕлтĕрхи эрĕм*
*Пулса ан лар хура чунпа.*

*Тасат хăвна! Çук мар, нумай-ха*
*Çак пурнăçра хура-мара.*
*Кашнин çинчех кун-çул уртмахĕ*
*Тĕве курпунĕ пек пырать.*

*Вăл сисĕнмест. Куллен вăраххăн*
*Çав курпуна эс купалан.*
*Епле ăна касса пăрахăн?*
*Вăл сыпăннă çурăмпалан.*

*Унта йăлтах: хаваслăх, хурлăх,*
*Телей,инкек — пĕр çĕклемре.*
*Кун-çулăн çеçен хирĕ урлă*
*Утса каçатăн меллĕрех.*

*Асап — çулта пĕччен пулсассăн!*
*Пĕччен часах эс ывăнан...*
*Çитсех пыран е кăшт юлатăн,*
*Малта çапах та — караван.*

*Ăна эс куçунтан ямастăн:*
*Малти тĕве шăнкравĕсем*
*Янраççĕ кĕвĕллĕн, хавассăн,*
*Сана хистеççĕ пек вĕсем...*

*Атя, Атнерĕм! Алла-аллăн*
*Утар çав вăрăм çулпала.*
*Халал сана çак вăйăм-халăм,*
*Çак канăçсăр чĕрем — халал!*

## I. Несĕл

Аптраман тавраш
ĕ пирĕн —
Йышлă йăх ялăмăрта.
Çĕр султан та ĕнтĕ иртрĕ
Теççĕ çав хушамата.

Çĕр киле те пуль çитеççĕ
Авалтан хисеплесен.
— Çăра юнлă халăх! — теççĕ
Пирĕн çав ăру çинчен.

Çирĕм пилĕк çул çӳренĕ
Пĕр ял-йышăм салтакра,
Кавказран çакса çитернĕ
Çавракa медаль вара.

Çав медалĕ ун усраннă
Ывăлин ывăлĕнче.
Ăна эп те куркаланă,
Астăватăп халиччен.

Ун çинче çыру та пурччĕ,
Сăмаххи «не нам, не нам,
А имени твоемуччĕ»,
Тем тени — эп ăнланман.

Хăй те çав ăру аслашшĕ
Чухлайман мĕн иккенне.
Пĕлнĕ вăл «так точно», «ваше
Благородье», «никак нет».

Ăнланман старик нимпе те —
Темĕнле вăй ун чухне
Пурнăçне çеç мар, чапне те
Туртса илнĕ унăнне.

Хăй çапах яла килсессĕн
Тантăш-пĕлĕшĕпеле
Ĕçкĕре хĕрсе çитсессĕн
Такмакланă ак епле:

«Ай-хай-ах Капкас, Капкас!
Калама кăна канас!
Çĕрте чул, çӳлте кĕрт-юр,
Шанмасассăн çитсе кур.

Эпир курнă çав, тăван,
Курнă, тӳснĕ — аптраман...

Ай-хай-ах салтак нуши!
Тата йывăр та пур-ши?
Хĕç витмин — патак витет,
Чун чĕрне вĕçне çитет...
Анчах эпĕр аптраман,
Аптăрас та çук, тăван...»

Çаплалла вăл кĕвĕленĕ,
Çавăнтан вара ăна
Аптраман Унисĕм тенĕ,
Хушамат панă çынна.

Хăшĕсем тата пуплеççĕ:
Параппан патша чухнех
Аптраман чап илнĕ теççĕ.
(Бонапарт теессине

Çавнашкал пăсса каланă
Ял-йышсем, ман шутпала,
Тен, чĕлхи те çаврăнман-и
Калаçмашкăн ютпала,

Тен, хăй еверлĕ ăнланнă
Ют сăмахсене çапла,
Тен, пăртакçă мăшкăлланă, —
Пирĕн пур-çке çав йăла...)

Тĕплĕрех пĕлсен пĕлет-тĕр
Аптраман ăрăвĕнчен
Чи ватти — салтак Хĕветĕр,
Калĕ-ха вăл май килсен.

Паллă çакă: тем тесен те
Хушамат ахаль паман.
Тĕнчере пулнах вăл ĕнтĕ
Малтанхи пĕр Аптраман.

Аптраман таврашĕ тенĕ
Ун йăхне вара ялта.
Çав йăхра пайтах ĕрченĕ
Харсăр та патвар салтак.

Тĕрĕкпе те вăрçма тивнĕ,
Яппунпа та вĕсене.
Каярах та вĕсем вичнĕ
Польшăн, нимĕçĕн çĕрне.

Тыткăна та хăшĕ лекнĕ,
Тарнă та-мĕн тыткăнран,
Шуррисен çарне ислетнĕ —
Аптраман та аптраман!

Халь вĕсем ак пархатарлă
Пурнăç турĕç колхозра.
Аптраман? Пĕлетпĕр, паллă,
Ятлă ĕçченсем, ара.

Эп каларăм-ха: Хĕветĕр —
Чи ватти хăй йăхĕнчен.
Аслă Аптраманĕ тетпĕр
Халь ăна ял хушшинче.

Унăн карчăкĕ те сывă,
Пит йĕркеллĕ-ха, чипер.
Ĕлĕк виç витрепе шыв вăл
Кӳнĕ теççĕ, харсăрскер.

Кам сума сумасть-тĕр халĕ
Сăпани кинемее?
Ун ачашĕ, ун халалĕ
Йăх ĕрчетнĕ телее.

Ывăл уйăрнă, хĕр панă:
Асанне те кукамай
Текенсем çуллен хунанă,
Савăнтарнă пĕрехмай.

Сăпанипеле Хĕветĕр
Ĕмĕр пулнă чун та чĕм.
Хушшинче сив çил вĕрмен-тĕр,
Çук, вĕрсессĕн — сисĕттĕм.

Тĕп çуртрах вĕсем пурнаççĕ
Аслă ывăлĕпеле.
Хăй те йышлă ача ашшĕ
Аслă ывăлĕ Илле.

Хăй те халь ĕнтĕ чăпар кăшт
Çав Вăталăх Аптраман,
Кулине инки каларăш —
Хăлчăкланнă çурмаран.

Арăмне те хĕрхенмен-мĕн
Чĕрĕ пурнăç уйрăмах:
Пичĕ-куçĕ пĕркеленнĕ,
Çӳçĕ те кăшт сайрарах.

Ун ури сăпка сиктернĕ,
Алли пĕтĕрнĕ сĕвем...
Миçе çул çапла ирттернĕ,
Ыттисем пекех, инкем!

Сак тулли ача пилленĕ
Вăл юратнă мăшăрне.
— Мĕн пани ĕрчетĕр, — тенĕ,
Хĕн пулсан та, Кулине.

Çичĕ тапхăр авкаланнă
Хăва пек пĕвĕпеле,
Çичĕ чуншăн асапланнă,—
Виççĕш вилнĕ пĕчĕкле.

Пурăнаканни тăваттă:
Виçĕ ывăл та пĕр хĕр.
Çавсене пире пăртак та
Пĕлмесен юрамĕ-тĕр.

Герман — аслă шкул пĕтернĕ,
Мускаврах-ха вăл, килмен.
Кĕнеке çырма пикеннĕ
Чăваш халăхĕ çинчен.

Ун пирки сăмах вакланчĕ
Аспирант та аспирант...
Илтсенех пăртак кулянчĕ
Ват аслашшĕ пĕр самант:

«Ку мĕскер? Мĕне пĕлтерĕ?
Çĕнĕ хушамат ай мар?
Хамрăннех çырасчĕ, — терĕ,—
Аптраман мĕнрен начар?!»

Тепĕр кĕçĕн Аптраманĕ
Вăл пулать Энтри ятли.
Унăн йăмăкĕ — кил савнă
Хура куçлă Натали.

Пур тата пĕр ывăл — Павăл,
Палля теççĕ килĕнче.
Вун тăваттăра кăна вăл,
Йăх асси Илле пиччен.

Ну, Палли вăл шкул ачи-ха,
Картинсем сăрлакалать.
Хальлĕхе Энтри — тĕп çыхă,
Сăмах çавăн тавралла.

Çав вăталăх чипер ывăл,
Çав Энтри теекенни —
Кутăруçăн çар çынни вăл,
Час ик çул çара кайни.

Кĕркунне тулатчĕ срукĕ.
«Тем тăвас-ха малалла?
Таврăнас-и киле, çук-и?
Тен, пĕр çуллăх юлмалла?»

Шав шутларĕ вăл хăй тĕллĕн...
Таврăнма та йĕкĕте
Çуках мар сăлтавĕ тейĕн:
Чун пекех савни кĕтет.

Инçетри ялтан килетчĕ
Час-часах Н. хулине
Пĕр çыру... Пăхсах пĕлетчĕ
Аптраман кам çырнине.

Ак паян та ун юлташĕ
Кăтартать кăвак конверт:
— Яр ташша! — «Кӳр-ха,
тархасшăн,
Тен... юрра яма тивет», —

Тет Энтри; хăйне кĕç çапрĕ
Йăмăх хĕрлĕ сăн, чĕтрет...
Çавă-çке: Верук шăрçа пек
Сас паллисемпе тĕрлет.

## II. Верук çырăвĕ

Асăмран кайми Энтри!
Чи малтан сана çырам
Чунăмран-вартан салам.
Тунсăхларăм çав тери!
Каласан ĕненмĕн эс,
Калас мар — епле тӳсес?

Кĕркунне каян чĕкеç
Çуркунне вĕçсе килет,
Эс хăçан çитен киле?
Хăçанччен сана кĕтес?
Кĕтсе кĕтĕк пулмăп-ши?
Юлĕ-ши чĕрӳн ăшши?

Ёнтĕ пирĕн пахчара
Çеçке çурчĕ пан улми —
Туратти те палăрми.
Эс улма çиме вара
Ёлкĕрмешкĕн тăрăшсам,
Хăвăнтан килет пулсан.

Сан валли эп хĕл каçах
Пытарса та усрăп та
Хывăх ăшĕнче пăртак, —
Вăл сĕткенлĕ пулмĕ çав:
Те шăнас, те лапчăнас,
Те тата темскер пулас...

Çимĕç хăй вăхăтĕнче
Тутлă теççĕ ваттисем,
Эс çавна пăртак сиссем...
Виçĕм кун сад патĕнче
Сар Миккен тĕл пулчĕ те —
Вăтанса вилеттĕмччĕ.

«Ну улма пулать кăçал!
Салтаксем таврăнасса
Сиснĕ-шим?» — тет чарăнса.
Хăй кулмасть те, мăк сухал!
— Пулĕ, — терĕм эп вара, —
Таврăнкалĕç, ахăрах...

Леш утарçă Йăкăнат
(Ăна лайăх астăван)
Кайса килчĕ Мускава.
Ячĕç выставка ăна.
Хăй курни çинчен пире
Каласа тĕлĕнтерет.

Вăл юрра-сăвва ăста,
Çĕнĕрен Мускав çинчен
Юрă хунă... эс илтсен!
Пĕркунне Шупашкартан
Пĕр поэтласкер килсен
Ăнтан кайрĕ старикрен.

«Ак ăçта вăл Сулейман!
Ак ăçта Джамбул!» — тесе
Хăлаçланчĕ çĕкленсе.
Аплах мар-и, тен, пăхсан,
Анчах чунĕ ун сатур.
Ватăласшăн мар. Маттур!

Стариксем кунта хастар.
Леш Сар Миккенех илес,
Мĕн тесе пĕлетĕн эс?
Вăл ĕнтĕ ахаль çын мар,
Вăл — хирти инспектор халь:
Тĕрĕслет пахалăха.

Сăмах май, ĕçченлĕхпе
Çав Миккен пичче тата
Илчĕ вĕт кăçал медаль.
Тăп-тăп, чыслă йĕкĕт пек,
Хăш чухне халь медпункта
Кĕркелет вăл ман пата.

Куçĕсем таса-ха ун,
Кăшт канса тухам-ха тет,
Эп ĕçленине тĕпчет...
Манăн ĕçĕм кунран-кун
Пĕр пекех: яла анчах
Тасатасчĕ теп часрах.

Пур вĕт-ха çав мур инкек!
Пин çулхи чире-чĕре

Кăклама тивет пире.
Çăмăл мар, асап иккен,
Анчах эпĕр асапран
Нихăçан та хăраман.

Эпĕ те, хама кура,
Хамăн пĕчĕк ĕçĕме,
Тен, пултарăп вĕçлеме...
Сывă пул-ха! Хăвăртрах
Çырса яр. Кĕтме хал çук.
Сан тусу — пĕччен Верук.

## III. Вăрманта

Шыв хĕрри. Тӳрем çаранлăх.
Çыранта вĕт-вĕт хăва.
Сылтăмра кашлать шултралăх
Тем канаш тăва-тăва.

Чăнкă сăрт çинче лараççĕ
Юмансем, вĕренесем.
Хурăнсем курăнкалаççĕ
Куçсене килентерсе.

Çам вăрман ăшнех ун-кунăн,
Сыхламашкăн кĕрĕшсе,
Кăрнатир пек тăрса тухнă
Шĕвĕр шлемлĕ чăрăшсем.

Кунашкал эреш тем чухлĕ
Пирĕн аслă çĕршывра.
Кăнтăр сăнĕ мар, тĕл пулĕ
Варринче вăл ытларах.

«Вырăсла вăтам çанталăк», —
Тетчĕ шкул мĕн ĕлĕкрен.
Нимĕнпех те капăр, чаплă
Курăнмасть вăл çиелтен.

Тен, эпир хăнăхнăран-и
Сăнаман ăна питех.
Ăшĕнче ун пек вăрманăн
Тем те пурччĕ, темĕн те.

Чăтлăхра ашать Сусанин...
Аташса çӳрет француз...
Руçăн аслă сĕм вăрманĕ
Халăхпа вăл пулнă тус.

Ку вăрман та ак пăхсассăн
Пĕр манерлĕ, лăпкă çеç;
Кассăн-кассăн пин-пин сассăн
Янăрать вĕçрен вĕçе.

Кайăк-кĕшĕк сассине те
Илтĕнми тăвать çав сас.
Çын юрлать иккен. Миçен-тĕр? —
Вăрман çеç пĕлет пулас.

Вăрмана вырнаçнă лагерь —
Çуллахи салтак хули:
Хĕç-пăшал та тĕрлĕ хатĕр,
Тум, апат — йăлт пур кирли.

Мĕн ытлах? Тăват шалча та
Аршăн çӳллĕш пек çерем.
Ун çине каратăн чатăр,
Пурăнать вара этем.

Улăм, хăмăш, типĕ çулçă,
Типĕ утă-и айра —
Ак сана тӳшек те пулчĕ,
Минтерӳ те — çав шайра.

Вырăн шеп. Ан вăрç, ан чăркăш, —
Мамăк сармĕç паянах.
Хăвăртрах канмашкăн тăрăш, —
Пит тăсаймăн ыйхуна.

Ирхине, сигнал парсассăн,
Икĕ-виçĕ минутра
Тумланса строя тăратăн,
Пуçланать «физкульт...урра!»

Йӳле пилĕк, çарамас-и
(Ку — çанталăкне кура)
Кăшт хуçкалансан чармаççĕ
Чӳхенме те çырмара.

Чарасси-мĕнĕ... хушаççĕ!
Ишеймен çынна курсан:
«Мĕн вара эс... Вăтам Ази
Штолĕ? — тет сержант кулса. —

Çавăнта чат хăйăр теççĕ...»
— Ничево! — тет старшина. —
Пăрахсан вĕсем ишеççĕ,
Шыв хăех çĕклет çынна...

Шӳт те кулă — вĕренетĕн.
Чей, яшка, политсехет,
Тактика, матчасть — пурне те
Çырса хунă. Кун иртет.

Тепĕр чух аяккалла та
Похода кайма тивет.
Хуп-хура тавăрăнатăн, —
Куç шурри те шăл çиçет.

Çухасем тусанлă, тарлă,
Скатка айĕ йĕп-йĕпе.
Хул хушши те шар тăварлă
Тарĕ витĕр витнипе.

Ураран ура иртет-и,
Пускалан аран-аран.
Пĕри шӳт туса илет те —
Çын çынах пулса тăран.

«Утрăм пулĕ хĕрĕх çухрăм, —
Хĕр тухса тăрас пекех...
Кил эппин, пăшалăм-тусăм,
Ыталам сана каллех.

Савнисем вĕсем савнах-ха,
Кĕтсе илĕç сыв пулсан.
Тасатам, пăшал, санах халь, —
Пăхмаллах сан куçунтан».

Ак çу савăчĕ, ак чӳпĕк:
Шомпăлна чĕркетĕн те
Пĕр тусан пĕрчи, пĕр çӳпĕ
Юлмиччен чиксе тĕнтен.

Кайранхи çав чӳпĕк пăкă
Хурçă пек кăвакарса
Шаплатса тухать те, пăх-ха
Пăшална эс çавăрса.

Пăх-ха унăн кĕпçи витĕр —
Çап-çутах йĕр явăнать.
Ахăрнех, тăхлан пули те
Çав йĕрпе çавăрăнать.

Командир пăхать те «да!» тет.
Ăшĕнче çавна кура:
«Тăшмана ку шар кăтартĕ!»
Салтакне калать: «Юрать...»

Тепĕр чух, аван пулсан та,
Час тупать вăл сăлтавне:
«Сан мулёк* çинче тусан!» — тет,
Хăтăрать кăшт — сых ятне.

Е матчасть вĕреннĕ чух ак:
«А мулёк мĕн чул таять?» —
Тет вара сасартăк шухă
Ват сержант рядовоя.

Кив сăмах чылайăш сӳнчĕ
Çĕнĕлле калаçура.
Авалхи çарсен çав шӳчĕ
Пурăнать-ха службăра...

Çырмаран чăмса тухсассăн
Кĕç-вĕç тепĕр похода
Каймалла пекех васкавлăн
Уттаратăн... апата.

Апатне те старшинамăр
Çитерет çав тутлине.
«Пăтă — кадрăвăй, ан манăр!..» —
Тет вара вир пăттине.

Хуратул пăтти «гвардейски»
Ятпала çӳрет ялан...

* Мулёк — мушкăпа мушка çаврашки (ореолĕ) хушшинчи пушă вырăн.

Çинĕ хыççăн — эх, телей-çке
Сулхăна кĕрсе выртсан!

Исленсех эс çывăратăн,
Тĕлĕк тарнă таçталла.
Каннă-тунă. Ялт тăратăн.
Чим, тата мĕн тумалла?

Хулара та, лагерьте те
Пĕр мехел пулать каçчен:
Ăна «хамăн вăхăт» тетĕн,
Кирлĕ пек ĕçне ĕçлен.

Çырусем çыран, вулатăн,
Тӳмесем çирĕплетен.
Шухăшлатăн, тунсăхлатăн,
Асунта тăван-пĕтен.

Асунта пур пĕлĕш-тантăш
Капланса тухать вара...
Эс кирек ăçта пулсан та
Пĕччен мар çак çĕршывра.

Сан çинчен те шухăшлаççĕ:
Лайăх таврăн, ырă çит...
Эс — хисеплĕ çын, хуралçă,
Мирлĕ ĕçĕн хуралçи.

* * *

Çаплалла пурăнкалатчĕ
Вăрманти салтаккасси.
Яланхи пекех янратчĕ
Каç пулсан «Заря» сасси.

Çав кĕвве илтсессĕн темшĕн
Авалхи çар асапне,
Çул-йĕрне аса илетĕн,
Унăн вилĕмсĕр чапне.

Инçетри сăрт-ту та тинĕс,
Ансăр, çӳллĕ кĕперсем,
Шыв сикки те ĕмĕр симĕс
Çарансем, сенкер пăрсем

Тĕрленсе эрешленеççĕ
Çав «Заря» çеммипеле...
Пурте выртнă. Тĕлленеççĕ,
Тĕлленмеççĕ-и çĕрле —

Хальлĕхе пур çур сехетлĕх
Куç уçса вырта-выртах,
Тен, курать этем шерпетлĕ,
Сиплĕ тĕлĕк чатăрта.

Кулкалать,шӳтлет, тапраннă
Шăкăл-шăкăл вак сăмах.
Тул енче çӳрет дневальнăй,
Çывăрма хистет çаплах.

Пĕр палаткăра ик тантăш
Пуçлă-вĕçлĕ тахçанччен
Пуплесе выртаççĕ. Халь кăшт
Тапратар çавсем çинчен.

— Асанне тӳшекĕ мар та, —
Тет пĕри, — тен, тĕлĕкне
Хитринех тупса кăтартĕ,
Çаврăнас хăрах енне. —

«Çаврăн, çаврăн, — тет юлташĕ, —
Сулахай енне выртсан —
Савнине курать». — Чăн та-ши? —
«Чăн-чăнах, эп каласан!»

Чăштăр-чăштăр типĕ улăм
Пусăрнать те лăпланать.
«Еплерех-ши эс, Верукăм?
Илтĕм те-ха çырăвна... »

Аптраман тавраш... Кунта-мĕн
Пурăнать хайхи Энтри.
Çар почти йăлт палăртаймĕ —
Таçта çак вăрман хĕрри...

Çавă çав! Тен, çу та каçăн,
Тен, кĕре те юлăн-ха...
Тĕрекленнĕ çын хальхаççăн:
Уçă сывлăш — сывлăха.

Çӳллех мар та — сарлака вăл,
Çĕр чĕтрет нăк пуснă чух.
Кутамас юман пек, савăл
Çапма вырăн тупас çук.

Сăмала пек хура куçлă,
Хура çӳçлĕ, кăтрарах,
Уçă кăмăл, лăпкă кулă.
Çирĕм виççĕ тултарать.

«Эс, чăваш, пăхма йăваш та
Тăшмана тĕлех пулсан
Эс пултарăн-ха, чăваш!» — тет
Унăн тусĕ шӳт туса.

Унăн тусĕ — Виктор Басов.
Слесарь пулнă заводра.
Горький вырăсĕ. Хавассăн
Калаçать вăл тăсарах.

Сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă,
Яштака, хитре ача.
Туслашсассăн — ĕмĕр туслă
Курмалла пек çав качча.

Тӳрĕ чунлă йĕкĕт — хăй те
Вăл пурне те килĕшĕ,
Энтрипе вĕсем халь хытă
Килĕштернĕ иккĕшĕ.

«Унта курăпăр-ха, Виктор, —
Тет Энтри ăна вара, —
Асатте ман ĕлĕк пит те
Харсăр пулнă вăрçăра.

Ху та эс... хăвна та çиччĕн
Сахалтан та кирлĕ-çке.
Ахаль мар вĕт эсĕ — Минин
Е Пожарский тĕпчĕкĕ...»

Çаплалла кăшт тĕрткелеççĕ
Икĕ тантăш пĕр-пĕрне.
Радио-хыпар итлеççĕ
Кулленех вĕсем пĕрле.

Хаçатсем пăхса тухаççĕ —
Мĕн халпа тăрать тĕнче;
«Крокодил» журнал вулаççĕ, —
Кулмаллах кулмаллинчен...

Сарлака Тăван çĕршывăн
Тĕрлĕ халăхĕ çапла
Хутшăнать тĕреклĕ, сывă,
Вăйпитти вырăспала...

Пуплеме пуçлать вара вăл
Вырăсла та лайăххрах.
Ахаль мар каланă çавă:
Уçăлать çын салтакра.

Эй, салтак юррин ян-янĕ!
Илтĕнет вăл аякран.
Сĕм вăрман, Раççей вăрманĕ,
Хӳтĕ, сыхă эс ялан...

## IV. Тĕп çурт

Аптраман тавраш хунанă ял
Пит аслах та, кĕçĕнех те мар:
Тăпăл-тăпăл, чух кăна; вăр-вар
Пуçтарать вăл пур ĕçе кал-кал.

Ялĕн ячĕ Ярмуххаль те-ха,
Ку чухне чĕнмеççĕ пит апла:
Чкалов теççĕ, колхозне пула
Çĕнĕ ят çĕклерĕ халăха.

Ячĕ çеç те мар... епле калас? —
Колхозсен саманине кĕрсен,
Ярмухха йăранĕсем пĕтсен,
Çунат хушăнчĕ-çке-ха яла.

Ахăрнех, туйса çав çуната
Колхоз ячĕ йышăннă чухне
Ял Валерий Павлович ятне —
Чкаловăн ятне — ырланă та.

Ял-йышне те кӳршӗ ялсенче,
Пасарта е районта-мӗнте
Чкаловсем тесе чӗнеҫҫӗ те,
Мӗн каласси пур халь ун ҫинчен?

Урӑхланчӗ пурнӑҫ Ярмуххан.
Ҫамрӑксем ӗлӗкхине, паллах,
Астусах каймаҫҫӗ пулмалла:
Сухапуҫ тытман, йӑран ҫурман,

Пӗр суха кассишӗн хирӗҫмен...
Тен, вӗсемшӗн ӗмӗр-ӗмӗрех
Трактор сухаланӑ уй-хире,
Ячӗ те тахҫанхиех-и тен...

Аслӑ летчик пысӑк хисепре:
Ывӑлсен те ҫавӑнтан вара
Савнӑ ят Валери ытларах,
Пӗринчен пӗри вӗсем шепрех.

* * *

Аптраман тавраш тӗп ҫурчӗ аслӑ:
Урам енӗ — виҫӗ чӳрече,
Виҫҫӗш те уҫӑлмалла, тӑпсаллӑ,
Иккӗшӗ тата — карташ енче.

Тӑкӑрлӑк хӗрри иккен паҫми те —
Тепӗр кантӑк тӑкӑрлӑкалла
Кастарса ларттарнӑ: ҫутӑ ҫитӗ,
Ӳс, кил-йышӑм, пӳрт тулли шавла!

Вырӑсла хапхин хӑма вителӗк —
Пӳрт кӗтессинчен кӗлет таран.
Чӗнтӗрленӗ тӑрӑллӑ, илемлӗ,
Юрласа уҫӑлмалла, куран.

Ах, нумай пулмасть-ха капла марччӗ
Пурнӑҫ-тӑрмӑшӗ Илле пиччен:
Хӑрӑмланнӑ хура пӳрт ларатчӗ,
Каярах сӑмахӑм ун ҫинчен.

Сад ӑшне вӑл юлнӑ... Шыва кутӑн
Пӗчӗкҫеҫҫӗ йывӑҫ пахчинче

Улмуççи те, чиесем те курăн,
Вĕллесем те — йывăç хушшинче.

Çавăнта тăрмашкалать çу хутăн
Хай Хĕветĕр, Аслă Аптраман.
Ак паян та тухрĕ, çăвăр хуртăн
Вĕллине сăнать вăл хушăран.

Кун уяр. Хуртсем хĕрсе ĕçлеççĕ.
Улмуççи шап-шурă чечекре.
Урлă-пирлĕ кумкалать чĕкеçĕ.
«Тем... ку хуртсене сăхас пекрех...

Каласаттăм-çке çав ывăла та.
Мĕн тăвайăн: çурт илемĕ тет.
Пахчана кушак яртармалла-тăр...» —
Тет Хĕветĕр, шухăш тĕвĕлет...

«...Çитĕ-çке тата, тепĕр тесессĕн,
Чĕрĕ чун вăл пурăнма хавас.
Хурт йăли — хăйне,
хăйне — чĕкеçĕн;
Ăнмасан кушакĕ те ăнмасть.

Иртнĕ кĕр пĕрне хам аташтартăм:
Шурă кăвакарчăн аçине
Тытса çирĕ! Питĕ юрататтăм
Ир çинче вăл кăвăлтатнине.

Йăлт йӳтерĕ, урчĕ, мур курасшĕ,
Ырлăха пулать-и-ха... тепле...»
Йышлă йăх аслашшĕ те кукашшĕ
Пурăнать-ха хăй йăлипеле.

Ялккасне вăл пусса лартнă хытă,
Ун тавра Кампур явăнкалать —
Лапсăркка хӳреллĕ сарă йытă,
Пит вăл туслă ват хуçапала.

Ун шуралнă шĕвĕр сухалне те,
Çи-пуçне те лайăх уйăрать;
Çухалсассăн пăхăр чĕлĕмне те,
Енчĕкне те час тупса парать.

Ак старик хурт пӳрчӗ умне ларчӗ.
(Хура пӳрт, музей вӑл ку чухне.)
Ак Хӗветӗр енчӗкне кӑларчӗ,
Йытӑ шӑппӑн пычӗ ун умне.

Кусӗнчен вӑл пӑхрӗ, пуҫне хучӗ
Икӗ чӗркуҫҫийӗ хушшине:
Ахӑрнех, тусне вӑл ыррӑн курчӗ,
Туйрӗ ватӑ кӑмӑл ӑшшине.

— Ну, Кампурӑм, — тет хуҫа, — ну, анчӑк,
«Вилме маннӑ» тетӗн-им мана?
Энтрие кӗтсе илсен аванччӗ,
Мӗнлерех салтак — курас ӑна!

Герман та тӑватӑ ҫул килмерӗ,
Чӑвашла манман пуль тетӗп те...
Наталийӗ — аппӗ-амӑш хӗрӗ —
Хальлӗхе ялтах-ха... тем кӗтет...

* * *

Натали!.. Хӗветӗр асаттешӗн
Хамӑнах калас, уҫас чуна.
Наталийӗ вӗренме кӗресшӗн,
Аслӑ шкулшӑн ҫунмаллах ҫунать.

Никама та пӗлтермест анчах вӑл
Чӗринчи ҫав вӑрттӑн ӗмӗтне.
Чухласассӑн чухлӗ пӗчӗк Павӑл
Унӑн пысӑк кӗнекисене.

Пурнӑҫра мӗскер пулса иртмест-тӗр!
Вӑл хир урлӑ каҫасси ҫеҫ мар:
Вӑтам шкул пӗтерчӗ те чипер хӗр,
Амӑшӗ чирлерӗ, — ӗҫ начар.

«Яшка-ҫӑкӑр хам та пӗҫеркелӗп», —
Терӗ те асламӑшӗ хӗре,
Килӗшмерӗ Натали: «Йӗркеллӗ
Пурнӑҫ пулмӗ, — терӗ, — ҫемьере».

Шӑп Энтрийӗн те ят тухнӑ ҫулччӗ,
Ырӑ каччӑ Петӗр те унпа
Пӗр кунах ҫара юравлӑ пулчӗ,
Натали тӳрриччӗ вӑл — Сумбай.

Пӗр класрах вӗреннӗччӗ те иккӗш,
Кӗнеке-тетрадь хушшинченех
Юлташланчӗҫ, пӗр мӑйӑрӑн ик тӗш
Тенӗ пекчӗ... халь ак пӗччеех.

Тепле ӗнтӗ хӗрӗн пилӗ-тӗлӗ?
Кил-ҫуртра пӗр вӑйпитти пулин...
Герман та... Мӗн Герман? Каснӑ чӗлӗ!
Вӑл ял чунӗ мар ӗнтӗ халь тин.

Амӑшне те Натали хӗрхенчӗ,
Ват асламӑшне те; хӑй ҫапах
Тракторпа сухалама вӗренчӗ,
Каярах — вырма та комбайнпа.

Ҫаплалла ик ҫул иртсе те кайрӗ,
Тек юлмасть хӗр тем тусассӑн та!
Кӳршӗ хӗрӗ ав — Турхан Тамара —
Тухтӑра тухать тет Хусанта.

Аплах мар та-ха ку, — ял сӑмахӗ:
Натали пӗтернӗ ҫулхине
Вӑтам шкул пӗтерчӗ ҫав аван хӗр,
Халь канмашкӑн килнӗ вӑл килне.

Наталипеле ҫаплах вӑл ҫывӑх,
Ютшӑнмасть, вашаватрах та пек:
«Кай кӑҫал, — тет, — халь аннӳ те сывӑ,
Тен, пиччӳ те таврӑнӗ кӗрпе...»

Типӗ тар пӗрчи пек тӑкӑнаҫҫӗ
Наталин ҫунан чӗри ҫине
Хӗр сӑмахӗсем... Анчах пӑртакҫӑ
Савӑнӑҫ та пур ҫак ирхине.

## V. Натали кӗпе тӗрлет

Натали кӗпе тӗрлет,
    Кам валли
Ҫав тери хитрелетет
    Натали?

Тап-таса юр евӗрлӗ
    Шур пире
Хӗрлӗ, симӗс ҫиппеле
    Вӑл тирет.

Хӗрлӗ пурҫӑн — яш чӗре,
    Вӗри юн;
Симӗсси — вӑрман, ҫерем
    Пулӗ ун.

Сарӑпа сенкер хушать
    Тӗлӗпе.
Ку — хӗвел пек курӑнать,
    Пӗлӗт пек.

Хурине те хушшинчен
    Вӑл хурать:
Пурте, имӗш, ҫӗр ҫинче;
    Ҫӗр — хура.

Тӗррӗн пур-ҫке авалтан,
    Тахҫанхи,
Ӑсти ҫеҫ ӑнланакан
    Хӑй чӗлхи.

Ҫут телей те, сӗм тӗттӗм
    Хурлӑх та,
Юрату та, ӗмӗт те
    Пур унта...

Натали кӗпе тӗрлет,
    Кам валли?
Мӗн калать тӗрӗпеле
    Натали?

Чикӗрен, инҫе Хасан
    Патӗнчен,

Илнĕ вăл çыру паян
Савнинчен.

Орден панă-мĕн тусне —
Петĕре.
Таврăнас пек кĕркунне
Пĕлтерет.

Пĕрех шухăш Наталин
Пуçĕнче:
«Кĕтни шанчăклă пулин
Юрĕччĕ...

Хур туманччĕ те ялта
Вăл мана, —
Кам пĕлет ăна тата
Арçынна...

Тен, хурать вăл халь хăйне
Пит асла.
Каçăртать пуль-ха пуçне,
Ан шарла!

Хитререх пĕрер майра
Çаклансан —
Асăнма та çук вара,
Пĕтрĕ ман...»

Канăç çук паян хĕре:
Ăш вĕçет.
Аллине йĕппе тирет
Вăл кĕçех.

«Ай, пуççавăрмăш!» — тесе
Пўрнине
Хыпрĕ, печĕ кĕтесе
Кĕпине.

Кăшт тăрсан вăл пĕр тетрадь
Илчĕ те
Ларчĕ. Халь çыру çырать
Инçете.

* * *

«...Çырам терĕм шур хута
Хуратса,
Сана, тантăшăм, чунтан
Юратса...

Лавĕпех салам тăван
Колхозран!
Пурăнатпăр-ха аван,
Шар курман.

Орден илнĕ ятпалан
Эп сана
Тытса икĕ хăлхунтан
Шеп кăна

Чуптăвам пĕрре халь ак
Чăвашла...
Хам çинчен çырам пăртак
Малалла.

Мухтанмалăх çук та ман, —
Ӳсрĕм теп:
Трактор мар, эп халь комбайн
Çӳретеп.

Эс çĕре сыхла унта
Хассанла,
Эп ĕçе ĕçлем кунта
Стаханла.

Пирĕнпе тăрать тĕнче,
Ăнланап.
Манăн шухăш сан çинче
Яланах.

Пурте тĕрĕс-тĕкелех
Халиччен...
Тем пекехчĕ кĕрпеле
Эс çитсен.

Аннӳ хирĕç пулчĕ те:
«Петĕр те

Ыр ят илтнĕ пирĕн», — тет,
Хĕпĕртет.

Сан валли эп пĕр парне
Хатĕрлеп.
Эс курсассăн тĕлĕнен
Пулĕ теп.

Анчах эс асту! — Унта
Пит чечен
Хĕр упраç пырать кунтан,
Ку енчен.

Авланса килсен киле
Эп сана
Тивĕç мар эс теп халех
Ордена.

Манăн кăмăл çаплалла:
Юратни
Вăл тупа пек пулмалла,
Юрать-и?

Тупа тунă эс тăван
Çĕршыва
Сыхлама ăна ялан
Ыр-сывах.

Çавăнпа çĕклет сана
Халăх та,
Тӳрĕ кăмăллă çынна
Вăл картать.

Эп ыйтманччĕ халиччен
Тупасем.
Ман пĕрех ĕмĕт: пĕччен
Эс килсем.

Эп камне кунта хăвах
Пĕлĕн эс.
Пурнăç шав вĕт малаллах,
Ĕлкĕрес!

Виçĕ норма вырнă эп
Ку таран.

Преми илнĕ. Вĕренеп.
    Сыв пулсан

Ангелина пек вара,
    Тен, эп те
Пулса курăп хăнара
    Кремльте...

Вăрăм çыртăм, выходной,
    Çампала.
Каçпала клубра кино
    Пулмалла...

Çыр. Тен, пулĕ уставпа
    Канмалли.
Комсомолла салампа
    Натали».

* * *

Çыпăçтарчĕ çыруне
    Сарă хĕр.
(Кинона кайнă чухне
    Ярĕ-тĕр.)

Пăхрĕ вăл тĕкĕр çине:
    Хăй — тӳрккес.
Курчĕ мăй таран çӳçне, —
    «Ӳстерес...»

Икĕ куç харши хушши
    Тикĕс мар.
Мĕнле пысăк шухăш-ши
    Хывнă карт?

Пăх-ха эс ун куçĕнчен:
    Ăс та пур,
Алхасу та пулĕ тен —
    Хĕр вĕт, мур!

Кăшт хăяккăн тĕкĕрне
    Пуç пĕксе:
«Курăпăр!» — терĕ хăйне
    Куç хĕссе.

Тĕрлесе пĕтереймен
Кĕпине
Тытса пăхрĕ хĕр чеен
Хăй умне;

Çавракана янахĕпе
Хĕстерсе
Сарса ячĕ анĕпех
Çиçтерсе.

Хĕрлĕ пурçăн çап-çутах:
Юн, ялав,
Юрату та, пурнăç та
Хĕрлĕ çав!

## VI. Пĕрремĕш кун

Хăй майăн кун иртет ялта.
Уйра — çĕртме, ав трактор тухнă.
Хĕрсем çумлаççĕ çум. Шкулта
Сас çук. Клуба тасатнă, çунă.

Çуллен-çулах Шупашкартан
Килсе тăратчĕ те театр,
Кăçал та килĕ сыв пулсан...
Акатуйне пуçтарăнатпăр.

Илле пичче Урхамаха
(Вăл конюхра ĕçлет те халĕ)
Раснах авантарах пăхать:
Тепре юрттарăпăр, мĕн калĕ...

Вăл пĕлтĕр те районĕпех
Мала тухса парне илсеччĕ.
Кăçал тата тĕреклĕ пек,
Тăсмак та, çӳллĕш те çĕкленчĕ.

Курка чĕрнеллĕ, тунахар*,
Вут куçлă та кăлкан çилхеллĕ.

---

* Тунахар — вăрăм уралла.

Тăваттăри улма-чăпар
Чăнах та вăйпитти, илемлĕ.

Лупас чĕтрет вăл кĕҫенсен,
Авкаланса тухать те ăйăр —
Ик енĕпе ик чĕлпĕртен
Тытса пырсан тытса пырайăр —

Тапса сикет те сĕтĕрет,
Чĕвен тăрать, вылять, ташлать вăл.
Кичем-ҫке тăвăр витере, —
Ҫăварлăхне ҫыртса кышлать вăл.

Вĕрен вĕҫҫĕн паян та ак
Илле Урхамаха вылятрĕ.
Йăвалансан-тусан пăртак
Ăна хăрчăкласа тасатрĕ.

Унтан вăл тараса патне
Илсе пырса ăна шăварчĕ,
Вара каллех хăй витине
Шалиш! тесе вырăнаҫтарчĕ.

Кăшт сывлăш уҫăлтармалла
Вăл витене уҫсах хăварчĕ,
Анчах лаша тухас ҫукла
Уҫ алăк урлă сăлăп ячĕ.

* * *

Килте — Наталипе асламăш.
Асламăшĕ чăлха ҫыхать,
Хĕр пушă чух е тунсăхран кăшт
«Нарспи» кĕнекене пăхать.

Хура куҫ юртать, юртать
Кĕнеке листи ҫинче.
«Шăнкăртатса шыв юхать
Ҫӳллĕ валак пуҫĕнче...

Кĕмĕл-мерчен тухьяпа
Сарă хĕрĕ шыв ăсать...»
Хура куҫ пулать тăпах,
Хупăнать те уҫăлать.
— Мерчен мĕскер вăл, асанне?

— Мерчен-и? Вăл, ара... шăрçаччĕ.
Шăрçа, няням. Вĕттисене
Тухья çумне сăрса яратчĕç,
Шултрисенчен тăватчĕç сулă,
Мăя çакатчĕç, хăлхана...
Мерчен вăл тĕрлĕ тĕслĕ пулнă:
Хĕрли, сарри... Вăл йăлана
Халь манчĕç ĕнтĕ...» — Асанне,
Кăтарт-ха тухьюна мана. —
«Тухья? Мĕскер тума сана?»
— Ну, кирлĕ ĕнтĕ... — «Мĕн тĕлне?
Те тăхăнса хĕр тантăша
Тĕлĕнтересшĕн, апăрша?»
— Çук, эп курасшăн мерченне. —
«Ухтарасах-шим çӳпçене?
Ахаль те кунĕ пит уяр,
Хĕрарăм арăш-пирĕшне
Пăртак кăна хĕвел çине
Сарса илсен те сарăп мар».

«...Учук хыççăн чăвашсем
Айкашрĕçĕ хирсенче:
Валем, купа, капансем
Ларчĕç улăх варринче...»
Хĕр вулать, тĕл-тĕлĕпе
Чарăнать тĕлĕннĕ пек.
Сăпани йăтса кĕрет
Хăйĕн арăш-пирĕшне:
Сурпанне, пĕркенчĕкне,
Хушпуне те саррине;
Шӳлкеме, тухья, тевет
Ялтăрса çиçсе илет.
Хĕр пăхмасть-ха ун çине.
— Чим, асанне... — «Мĕскер, чиперĕм?»
— Тăхта-ха, чим... мĕн вăл учук? —
«Ах тур! Темскер аса илтерĕн!
Учук тумаççĕ-çке ку чух.
Учук, ара... чăваш кĕлли вăл:
Хăш чух çич-сакăр ялпалан
Тухса чӳклетчĕç, пур хĕр-ывăл
Пуçтарăнатчĕ тавраран.
Пĕр-пĕр юхан шыв хĕрринче
Шывпа сапса, силлентерсе

Тына пусатчĕç ир çинче
Е вăкăр, вăхăтне пĕлсе.
Хĕвел тухăçнелле пăхса
Чӳк пуçĕ кĕлĕсем калатчĕ,
Çимĕçпеле сăра тăкса
Малтан ваттисене хыватчĕ.
Вара пур пынă çын йĕркеллĕн
Харкам хăй тиркипе ларатчĕ,
Хуран ватти тени тирпейлĕн
Апат валемлесе паратчĕ.
Ватсем кĕç пичĕке пуçлатчĕç,
Эпир уяв калаттăмăр.
Тус-пĕлĕшсем тăваттăмăр.
Аташнă çав. Йăли çаплаччĕ,
Пиртен тухман... Эй, самана!
Мĕне халь çак тухья сана?»

Хĕр хăрах алли çине
Тăхăнтарчĕ тухьяна,
Çавăрать енчен енне,
Сăнаса пăхать ăна.

— Мерченĕ хăшĕ, асанне? —
«Ак çак эрешĕ — йăлт мерчен».
— Тăрри те-и? — «Э, чăн. Хыçне
Çитереймен ав: тĕсĕнчен
Пĕрех пулин те — кĕленче,
Суя мерчен тесе ăна
Калаттăмăр, çав шăрçана».

Натали, кăшт вăтанса,
Куçкĕски умне тăрса
Тăхăнса пăхать тухья.
Мĕн шутлать вăл, мĕн туять?
Мĕнле халăх çарĕн шлемĕ
Çак тӳлĕк хĕр пуç илемĕ?
Хăçанхи, миçемĕш ĕмĕр
Паттăр амазонкисен*.
Йăмăкĕ тăрать халь чĕмсĕр?
Сăпани пĕлет пĕлсен...

---

*Амазонка — грексен мифологинчи юлан утпа çӳренĕ харсăр паттăр хĕрарăмсен йăхĕ.

«Ай-вай, илемлĕ-ҫке пике!
Кай, хам хĕр чухнехи пекех».
— Эс, асанне, Нарспи ҫинчен
Илтсе-и ҫак? — «Епле илтмен!

Пулатчĕ ҫав вăл чăвашсен:
Пуртех кайман хăй савнине.
Хăюллăрах хĕрсем пирте
Савсах суйлатчĕҫ пулĕ те...

Эп хам та, ылтăнăм-няням,
Хăюллăччĕ, сана калам.
Кунта эп аслаҫупалан
Пӳлер хули таврашĕнчен —
Элле, миҫе ҫĕр ҫухрăмран! —
Килсе ҫаклантăм пĕр-пĕччен.
Маттурччĕ те ҫав аслаҫу!»

Кинемей ĕлĕкхине
Аса илнĕ сăлтавпа
Шăлт уҫать те пуракне
Нăш туртса ярать тапак.

«Ачху! Чăнах та!» — Сывлăха! —
«Тавах, чиперĕм! Аслаҫу
Ниҫта кайса кĕме хал ҫук
Илемлĕччĕ... хăть халь те-ха...
Йĕке сутмашкăн Пӳлере
Вăл пынăччĕ тепле пĕрре.
Каскалама, хăйне кура,
Ăстаччĕ те — йĕке, тура,
Турахупсем те тукалатчĕ,
Ҫӳрес те килнĕ пулĕ. Каччă!
Ара... ҫапла ĕнтĕ, ку пычĕ...
Ҫунса кăна тăратчĕ пичĕ,
Хăй те куҫ хыврĕ, пит сисеп,
Анчах тĕне кĕмен-ҫке эп!
Ман ят та урăх — Савнепиччĕ.
Атте парас ҫуках, пĕлеп.
Мĕскер тăвас? Пасартанах
Утатăп каччăпа, хамах!
Анатпăр Атăл хĕррине,
Пăрахутпа ларатпăр та

И-ишетпĕр çак вирьял енне».
— Ак интерес! — «Эс чим, тăхта.
Çитетпĕр — пуп венчет тумасть.

Пăятамсем кăмăлсăрланнă,
Ӳпкелешеççĕ ывăлне:
Тасти тĕне кĕмен хĕрне
Кӳрсе вăл, имĕш, ял култарнă.
Вара эп çитĕннĕ пуçпах
Шыва кĕмешкĕн вăтанмарăм.
Хĕрес çакса аслаçупа
Венчет çĕрри те улăштартăм.
Кайран вара атте-анне
Пиллерĕ чиперех мана.
Каçарчĕç пулĕ. Ку енне
Çӳре пуçларĕç хăнана...
Эй, пӳлĕхçĕм! Çырлахсамах.
Ваклатăп кирлĕ мар сăмах...»

Асаннемĕр йăл кулса,
Тем астунă пек пулса
Пуçтарать япалине.
Наталийĕн хăлхине
Сĕрме купăс ян та ян
Янрани кĕрет таçтан.
Хĕр калать асламăшне:

— Хурт уйăрман-ши пахчара?
Тем... купăс сассине илтеп. —
«Э, аслаçу калать ара,
Ун тĕшмĕшне пĕлетĕп эп:
Хурт çурине вăл купăспа
Тытса чарасшăн ват ăспа...»

* * *

Сăпани пупле-пупле
Тухрĕ япалипеле.
Кăшт тăрсассăн калинкке
Шăлтăрт турĕ те, тулта
Хăйăр тĕслĕ шĕлепке,
Çав майлах костюм тата
Сар пушмак чӳречерен
Курăнах каять хĕре:

Пĕр вăр-вар арçын кĕрет,
Чăматанĕ аллинче,
Макинтошĕ — теппринче.
Палламасть-ха хĕр çапах,
Темле... куçĕ йăмăхнăн...
Хăй тăрать вăл тухьяпах.
Ку — пиччӳ-çке, йăмăкăм!

«Наташа?» — Герман! — «Натали!
Мĕн ку? Те эс маскарада?»
— Ку асаннен... Илемлĕ-и? —
«Чипер». — «Нарспи» вулаттăм та... —
«А! Ну, мĕнле?» — Хăшне-пĕрне
Ăнланаймастăп. Илтнĕ пек,
Анчах... — «Ну, пирĕн ку енпе
Энциклопеди — асанне.
Ăçта вăл çак?» — Килтехчĕ-ха,
Садра пулас вăл. — «Ыттисем?
Вырсарни кун-çке-ха...» — Аха.
Ĕнер пĕтереймен тесе
Анне пăртак кăнтăрлаччен
Çум çумлама каясшăнччĕ.
Аттен пĕр шухăш — лашасем.
Энтри килмен-ха службинчен.
Мана хăварчĕç хистесех:
Халь пушăрах чухне хĕрсе
Вĕрентĕр терĕç-ха кĕрччен.
Кил-йыш канашĕ йышăнчĕ. —
«Тата кам пур-ха пирĕн? А!
Палля». — Вăл яланах уйра,
Килте кураймăн пит ăна.
Сӳре сӳрет, килет сайра. —
«Палля-и?!» — Вун тăваттăра!
Вăл халь картинăсем çырать,
Анчах пит вăрттăн хăтланать! —
«Апла художникех вара,
Художник вăрттăн çырмалла,
Мольберт вăл — чун пек япала.
Ăçтан-ха эсĕ пур çынна
Уçса кăтартăн çав чуна?
Асли ăçта?» — Вăл пахчара,
Килти вĕллесемпе ларать.
Ах, Герман, эсĕ хуп-хура!

Çăвăнтарам-ха... — «Тин курать!
Хура эппин? Ку — Крым хĕвелĕ,
Ту çилĕ, ку — тилĕрекен
Хура шыври шап-шурă çилхеллĕ
Урхамахла хумсем-и, тен...
Аптрамансем тĕнче касса,
Ту-чакăлта чулсем ватса,
Шывсем çинче кĕсмен сулса
Çĕршер çул йӳçĕтнĕ кĕвелĕк
Манра çĕкленчĕ талхăрса —
Çав хуратать сăна, çав меллĕ
Хăйрать, çивĕчлетет ăса...
Е ку — тăван хирти, çеремлĕ
Çул хĕрринчи йăваш тусан?
Юрать! Кил-йыш сывах пулсан
Ытти... ытти вара йĕркеллĕ».

Герман чăматанĕнчен
Илчĕ супăнь савăчĕ,
Пит шăлли... Салатиччен
Натали те ёлкĕрчĕ:
Пиччĕшин мăйĕ çине
Çакрĕ хăй тĕрленине.
Кӳренсе вара пăртак
Сăмахне хушать вăл ак:
— Ял пирĕ те тасах-и, тен... —
«Хăвах тĕрлерĕн-и?» — Кам пултăр? —
«Шанмастăп: асанне-тĕр». — Çук-тăр! —
«Маттур! Чим, тĕррине тĕпчес...
Ку — хантăсла, ку — мĕшкĕлле...»
— Ăçтан пĕлен пурне те эс?
Те ху тĕрлен? — «Ман пĕлмелле».

* * *

Сăпани мĕшĕлтетсе
Килсе кĕчĕ ерипе.
Наталийĕ куç хĕссе
Каварлашрĕ пиччĕшпе.

«Хăна та пур. Кам пулчĕ ку?»
— Ку — манăн каччăм, асанне. —
«Пӳрни килет-мĕн пӳрт хыçнех».

— Пӳртех кĕрет! — «Хăюлăху
Çитет... Е-е! Сăпайлă пул.
Тухью тăрри те питрĕнмен*, —
Каччупалах! Аçу пĕлсен!..
Мĕскер кулатăн? Пит ан кул...»

— Аван-и, асанне! — «Мĕн тен?
Аюй, ачам! Эс пултăн-и?
Кервенĕм килнĕ, ман Кервенĕм!
Куç-пуç витĕрех мар, няни,
Сана кĕтни, сана кĕтни!
Курмасăр вилес мар тесеттĕм...»

Йăм хĕрелчĕ карчăк пичĕ,
Пырĕнчи макра хытти
Хытрĕ-хытрĕ те вăй илчĕ, —
Çитетех-шим ун ватти?
Герман хăй йĕрсе яратчĕ,
Кăмăлне пăртак хытарчĕ:

— Вилме тăхтар-ха, асанне,
Тултарас çук ял масарне.
Эп сан валли пит инçетрен,
Таçти лĕп тинĕс хĕрринчен
Ту-утлă шăршăллă тапак
Кучченеçе çитертĕм... ак! —
«Çаплах-и? Аслă çын пулах!»

* * *

Асаннемĕр Сăпани
Тулăн-шалăн çӳриччен
Ик тăван мĕн калаçни
Илтĕнет пире пӳртрен.

— Итле-ха, Герман, ма сана
Ялан Кервен тет асанне? —
«Вăл ман Кервен тет, эс сăна!»
— Çапла. — «Калам-шим мĕншĕнне?»
— Сана савать вăл ытларах. —
«Эс кĕвĕçен пулать вара?
Ĕнен мана: çак тĕнчере

---

* Ăс кĕрсе çитмен.

Пур асаннен те пĕр чĕре,
Çуртри мĕнпур ача-пăчашăн
Тапать вăл пĕр пекех ачашшăн,
Кĕçĕннисемшĕн — ачашрах...
Анчах та эп çураличчен
Виç ывăл вилнĕ-çке аннен.
Çав инкекпе вара часрах,
Эп çуралсассăн, асанне
Ытти кил-йышсенчен урлах
Хăй хунă-мĕн ача ятне.
— Чиркӳ хуни ăнмарĕ те,
Тен, ку упранĕ, — терĕ тет.
Кервен, Кервен... хайхи атте
Тĕне кĕртӳçĕн çавăн майлă
Çыртарнă хунă — Герман ятлă.
Çапла çав Герман, çав Кервен
Халь пурăнать». — Апла иккен. —
«Асаннерен тем те килет!»
— Эс тĕшмĕш мар-и? — «Кам пĕлет!
Çакна пĕлетĕп: асаннен
Асамăçлăхне чăн тума —
Пурăнмаллах пулать пуль ман...
Ну, йăмăкăм, ĕçсем мĕнле?»
— Мĕн ĕçĕ ман? Халь çум çумлатпăр,
Каç-каç вăййа та тухкалатпăр.
Çапах та ман çак кĕрпеле
Пĕр институт тĕлне пĕлесчĕ.
Эп çырнăччĕ сана... — «Çапла.
Эппин, пайтах тарламалла.
Хатĕрленен апла?» — Пăртак...
Жеманство мĕн вăл? — «Вăл-и? Ак!»

Герман пичĕ-куçĕпе,
Аллипе, кĕлеткипе
Артистла хăтланкаларĕ,
Натали ăнланаймарĕ.

— Мĕскер ара? — «Жеманство? Ну...
Хуçланкалу, курнăçлану.
Французларан пуль... Мĕн тума?»
— Онегинра тĕл пултăм. — «А!»
— Эс ху мĕн турăн ку таран? —
«Эп! Эп аспирантурăра.

Час тишкереççĕ ак мана,
Защита теççĕ». — Ăнланап.
Чăваш историне çыран
Тесе илтсеттĕмĕр эпир. —
«Çырма пултарăп тен. Кайран.
Халь ир-ха, ăс çитеймĕ. Ир.
Истори — вăрăм япала.
Ман халь пĕр пĕчĕк сыпăкне
Çырсан та кăмăл тулмалла».
— Кайса чĕнем-и аттене? —
«Ма? Килĕ-ха вăл кăнтăрла,
Час вăхăт пулĕ...» — Халь чĕнеп!

* * *

Герман юлчĕ пĕчченех,
Вăл çӳрет уткаласа.
Картинсем, сăнсем çакса
Хитрелетнĕ пӳрт ăшне.
Ак курать вăл ăнсăртран:
Сурпан çакнă хашакран
Константин Васильевич
Тĕлĕнсе пăхса ларать.
Ун ачаш сăвви-кĕвви
Иртнине астутарать.

«Тăвата çул килсе курманччĕ...
Çурт — çĕнĕ. Сухăр та типмен.
Хура пӳртпе пĕр типшĕм анчăк
Асран каймарĕ халиччен.
Эп çав хура пӳртре çуралнă.
Кăçал — вуларăм хаçатра —
Атте унта музей уçтарнă:
Пĕртен-пĕр пӳрт-мĕн районра!
Ак мĕн тени колхоз тени.
Ялта музей! Илтетĕн-и?
Поэтăмăр! Пурнасчĕ сан,
Çитесчĕ сан çак тарана,
Курасчĕ ху куçупалан
Ытарайми тăван ялна!
Музей... Унта пытанчĕ пулĕ
Ват суха пуçĕ, хăй чикки,
Шĕшли, чакми, пур ĕлĕкхи

Тĕшмĕшлĕхсем, асап, куççулĕ...
Ку — икĕ самана чикки.
Нумай та иртмĕ ак тата —
Тар-шурлă, хăнчăр пӳртсенчен,
Лутра лупас сыпписенчен
Юпи те юлмĕ çакăнта:
Чи çӳллĕ йăмрапа пĕр тан
Çĕкленĕ юмахри кермен...
Çĕршывăмçăм, кил-вут ăшши!
Паха хыр сухăрĕн шăрши!»

* * *

Пахчара шап-шур пир-авăр
Типĕтен асламăшĕ
Старикне ним шарламасăр
Кăшт тăхтарĕ темĕншĕн.

Чунĕ савăннă, ачашшăн
Йĕкĕлтет хĕвел ăшши.
Çавăнпа кăшт шӳт тумашкăн
Карчăк шухăшларĕ-ши?

Иккĕленчĕ те — «калас-ши,
Калас мар-ши?» тенĕ пек:
— Кĕр-ха, кĕр пӳрте, аслашшĕ,
Хăна пур... — тет майĕпе.

«Кам?» — тесе ыйтать Хĕветĕр,
— Камне курăн, — терĕ те
Йăл кулайрĕ асаннемĕр,
Асатте кĕрет пӳрте.

«Хăна тет карчăк...» — Асатте! —
«Эс пултăн-и, ачам? Эпе-ей!
Ай-хай кураймăп теттĕм те,
Пĕтмен иккен-ха ман телей».

— Мĕн эс? Сывах çӳрен пуль-çке? —
«Сывви-масарĕ... кун кĕске.
Çĕр тунсăхлать, ачам, тăпра».
— Халех-и? — «Эс шӳтпех вара.
Пыратăп сакăр вуннăра!

Тăватă çу килмерĕн вĕт.
Çухатрăмăр сана. Кĕт-кĕт...
Мĕне тухан ĕнтĕ капла?
Нумай вĕрентĕн. Кам пулатăн?»
— Тата кăшт вĕренсен... — «Каллах!»
— Çапла, кăшт вĕренсен тупасшăн
Эп пĕр юмахăн тупсăмне:
Чăваш ăçтан хунанине
Кĕнекене çырса хурасшăн. —
«Кĕнекенех?! Эппин, ĕне
Çимен чăваш кĕнекине?»
— Тен, çинĕ пулĕ киввине.
Эп халь çырасшăн çĕннине. —
«Юрать, юрать... Хушамату
Аптраманах-и-ха?» — Çавах-çке. —
«Çавнах çырасчĕ: кăмăл ту
Аслаçусен йăхне пăртакçă...
Туртма юрать пуль те?» — Чим-ха!
Ак кучченеç сана — тапак.
Крымран. — «Пархатарна тупах!
Ху тĕтĕм кăларман-им-ха?»
— Çук çав. — «Вараланманни паха.
Тапакĕ техĕмлĕ ахаль...» —
Терĕ ватă ветеран
Пĕрре-иккĕ сывласан.
«...Хрансус саманинчен варах
Пырать çав хушамат, ан ман.
Хай леш... Наплюн патшапалах
Кĕрмешнĕ пирĕн Аптраман.
Мухтанасси тарам та-ха,
Хăйсен Парижĕнче кайран
Наплюн хăй аллипе вара
Хĕç сĕннĕ имĕш паттăра,
Асаттене ĕнтĕ...» — Аха,
Наполеон? — «Çапла-и, тен...
Анчах хĕçне ун аллинчен
Илмерĕм тетчĕ асаттеçĕм.
«Ют пилпелен пулаймăп паттăр,
Раççей ятне асра тытатпăр», —
Тесе хăйса каларăм тетчĕ.
Ун сăмахне ăнлантарса
Пĕлтернĕ имĕш йăнăрал,
Наплюн патша намăсланса

Шарт хуçрĕ тет хĕçне вара».
— Асту-ха эс! — «Çапла. Варнех
Витернĕ çав мăнтарăнне
Йăх ашшĕ аслă Аптраман».
— Медалĕ çавăн вĕт? — «Ара.

Якур хĕресĕ — ку вăл ман.
Эп те асаттерен юлман:
Ахаль салтак çеç мар — ехветтĕр.
Атте кайман, хăвах пĕлен-тĕр».
— Пĕлеп. — «Эппин, хушамату
Аптраманах-ха сан?» — Çавах. —
«Асламăш!.. Чим-ха, эп хамах...
Пулар-ха иксĕмĕр тату.
Пăртакçă хам симленине
Ăсса кĕрем-ха, тутлине.
Çулу инçе, ырмалăх пур...
Аптраманах пулсан — маттур!..»

* * *

Пирĕн ватă Аптраман
Кăкшăмпа кĕркеличчен
Пÿрт тулли тулать тăван.
Аякри хăна килсен
Çавă-çке вăл ял-йышра, —
Курмаллах ăна вара,
Хурăнташ ачи-пăчи
Хĕвĕшет пăлтăрĕнче,
Хăшĕ алăк сыппинче,
Илтĕнет «кукки», «пичи».
Вĕтĕр-шакăр хушшинчен
Кĕçĕ ак Илле пичче
Кĕçĕн Аптраманĕпе,
Хай Палля текеннипе.
Аслă ывăлĕ пăхатчĕ
Натали кĕнекине,
Ашшĕнчен те çÿллĕ каччă —
Тăчĕ вăл ури çине,
Тăчĕ, ыталарĕ те —
«Герман!» илтĕнчĕ, «атте!»
Куç хупахĕ хĕрринчи
Ăшă, çутă тумламне

Шăлчĕ те Илле пиччи
Çавăрчĕ кăшт сывлăшне.

«Нумай кĕттертĕн... Вăраха-и?»
— Пурăнатăп пулĕ-ха... — «Çу каç.
Ĕç кунĕ ыйтмăпăр. Пур халĕ...
Халь ман Палля та шеп сухаç».

Павăл, кăшт куç айĕпе
Пăхрĕ те енчен енне
Пионер салючĕпе
Саламларĕ пиччĕшне.
«Ну, пионер, ĕçсем мĕнле?»
— Пырать. — «Пырать кăна-и?» —
Лайăх. —
«Кĕркуннепе комсомола-и?»
— Тепле-ха, вырăслипеле
Тăрать кăçал тăваттă паллă, —
Тет ашшĕ, — хăй, ахаль, хастарлă,
Ачи кулач çитермелле! —
«Картинăсем епле тăватăн?»
— Тумастăп эп! Ахаль кăна... —
«Пиччӳ ыйтать — мĕн пытаратăн?»
— Тумастăп эп! Аппа ăна...
Кам хушнă калама сана?! —
Терĕ хирĕç кĕрекен
Аппăшне Палля чарса,
Чышкипе кăшт хăмсарса
Тухрĕ тарчĕ пӳртĕнчен.

Натали кулса кĕрет:
— Мĕн ара? — «Леш... картини, —
Тет Илле пичче хĕре, —
Йышăнмасть Палля, ни-ни!..»

Наталипелех — Тамара,
Хыççăн — кĕчĕ Кулине:
Курчĕ те вăл чăтаймарĕ —
Шăлчĕ типшĕм пит-куçне.
Ыталарĕ, çупăрларĕ
Герман савнă амăшне,
Тинкерсе пăхса сăнарĕ
Наталийĕн тантăшне.

— Герман, лайăх çитрĕн-и? —
Тет леш, чакăр куçлăскер.
Именет Мускав çынни:
Кам-ши ку хăюллă хĕр?
«Тамара?» — Эпĕччĕ. — «Турхан?!»
— Хальччен çаплаччĕ, Аптраман! —

* * *

Икĕ хĕр кулса яраççĕ,
Натали пӳлĕмнелле
Тĕпеле кĕрсе каяççĕ,
Герман та кĕрет пĕрле.

Пирĕн ватă Аптраман
Кĕчĕ сарă чăмпалан.
Сăпани те шур пирпе
Темĕскер чĕркенĕ пек.

«Тирпейлес сĕтел çине,
Сармалла пуль çиттине», —
Тет асламăшне аслашшĕ.
— Те сарас тĕрленинех? —
Тет асламăшĕ. «А какшĕ!

Тĕнче тĕнĕлĕ тĕреклĕ,
Пурăнăç аври парка.
Малашне, тен, кĕнекеллĕ
Аптраман пулăпăр-ха!

Хамăр кĕнекеçĕ килнĕ,
Эсĕ илтнĕ-и çавна?»
— Ах, аслашшĕ! Илтнĕ, илтнĕ,
Те эс сыпнă кăшт кăна? —

«Сыпнă, карчăк, ӳпĕнтернĕ,
Паян кун та сыпмасан,
Эс вара йăлт тĕлĕнтертĕн!
Çыртмалли пулать-и сан?»

— Асăнса шăрттан усрарăм. —
«Ăçта-ха, кăвакарман-и?»
— Кай, аслашшĕ! Ман шăрттан-и?

Эп тусан çĕр çул упранĕ. —
«Юрĕ, юрĕ, эс пултарăн...»

Ывăлне курсан шăпланчĕ
Ват салтак труках темле,
Куркине часрах тултарчĕ:
«Тыт-ха, яр пĕрне, Илле!

Мăнука хисеплесе
Ăсрăм-ха...» — текелесе
Кĕчĕ вăл пӳлĕмелле,
Пăхрĕ Герман çинелле:
«Леш тĕпел кукринчисем
Çимĕçне ларткаличчен,
Тен, аптрамĕ астивсен?» —
Тет Хĕветĕр ĕмпичче.
Тултарать те ĕçтерет
Тав туса вăл Германа,
Хĕрсене те ĕретлет,
Унăн пĕр йăла кăна:
Чăм тĕл пултăн — эс хăна!

Шăкăл-шăкăл калаçса
Йыш ларать-ха. Кулине
Нӳхрепе хутлать, лаçса,
Хатĕрлет мĕн кирлине.
Сăпани тăрмашкалать
Пĕлтĕрхи мăйăрĕпе,
Ывăлне темскер калать
Витерсе вăл ерипе.
Шалтисем ахаль те халь
Илтес çук, шавлаççĕ-ха.

Пӳлĕме яр уçрĕç алăк:
«Çатмасем сивĕниччен,
Тен, ларма тивет пуль, халăх?» —
Йыхăрать Илле пичче.

Пукансем шутарчĕç, тухрĕç,
Герман уçрĕ чăматан:
Кăларать парне. Чыс турĕ
Амăшне вăл чи малтан.

Кулине курать: шел тутăр.
«Тĕве мамăкĕ пуль тем?
Е ку качакан-ши?» Шутсăр
Савăнса каять инкем.

Хăй калать: «Илмелле марччĕ,
Хаклă пуль ку япала...»
Аншĕне хăна тыттарчĕ
Çăм кĕпе алран алла.

Çуталать Илле сухалĕ:
«Тавтапуç та ывăла,
Эс профессор мар-çке халĕ,
Тăхтасан та пымалла...»

Ваттисем те хĕпĕртерĕç:
Вĕсене те Герман ак
Пĕрер мăшăр парнелерĕ
Кил валли ч ă в ă ш пушмак.

Шур çăмпа-мĕн хăнтăрланă
Сар пушмакăн хĕррине.
Чăвăш-чăвăш чăвăшлатнă
Утнă чух вăл, ахăрне,
Çавăнпа çапла каланă —
Чăвăш тенĕ ун ятне.

«Ват ура çемми ку, карчăк!» —
Тет аслашшĕ. Çавăнтах:
«Тăккаланмалла та марччĕ», —
Теççĕ иккĕш харăсах.

Наталийĕ асăрхарĕ
Кӳршĕ хĕрĕ хăй çине
Тинкерсе пăхнисене,
Пӳлĕмне вăл кĕрсе кайрĕ.

Пиччĕш кулчĕ, пĕшкĕнет,
Ухтарать чăматанне.
Кăларать кăвак берет,
Йыхăрать вăл йăмăкне:

«Ку саначчĕ, тухья пуç,
Те юрайрăм?» — Тавтапуç. —

Кӳршĕ хĕрĕн хӳхĕм пичĕ
Ялкăшса çиçсе илет:
Ах, беречĕ килĕшет!
Çав самант Палля та килчĕ.

«Ку — сана, художник!» Меллĕ
Сӳтсе ячĕ те хайхи
Пачĕ пиччĕш шерепеллĕ,
Кĕмĕлленĕ пиçиххи.

«Айвазовский çырнă тинĕс
Кирлĕ пулнă та сана,
Ӳлĕмрен пĕлтер эппин эс,
Тупса ярăп эп ăна».

«Эп художник мар!» — теейрĕ,
Çĕнĕ чĕн пиçиххине
Явкаларĕ, сӳткелерĕ,
Çыхса пăхрĕ пилĕкне.

«Юрĕ, юрĕ, — терĕ Герман, —
Мар пулсан, мĕн тăвăн-ха?
Пурăнса пăхар — мĕскер ман
Шăллăм кӳрĕ халăха...»

* * *

Кĕреке кĕтет. Ларсамăр!
Кил хуçи, атя, хускат!
Кăларса лартать хăнамăр
Пуçламан кĕрен мускат.

Вутăн-хĕмĕн ялтăрарĕ
Кĕленчи сĕтел çинче.
Кăнтăрти хĕвел кăварĕ,
Тинĕс, сăрт ун ăшĕнче.

«Виноград сĕткенĕ мар-и?» —
Тет аслашшĕ пĕлнĕ пек.
— Çавă, — терĕ, пăраларĕ
Герман пекĕ пăрипе.
«Çак шерпет пит сиплĕ, карчăк!
Ку хай... иçĕм çырлине
Сăрхăнтарнă», — ăнлантарчĕ
Асатте асаннене.

— Исĕм тетĕн? — «Çав, асламăш,
Астăван-тăр, пĕринче
Илсе патăм эп сана кăшт
Ытлари пасарĕнче?

Симĕс ку тесе çимерĕн».
— Астăватăп-çке. — «Кайран:
«Ма тата пăртак илмерĕн?
Терĕн мар-и?» — Санпалан!

Сăрлă пыр пек йӳтетмен-тĕр. —
«Йӳтетнишĕн мар та-ха, —
Тутине пĕлни паха...» —
Лĕх-лĕх-лĕх кулать Хĕветĕр.

* * *

Шӳт турĕç, савăнчĕç. Нумай-и,
Сахал-и — вăхăчĕ иртет.
Иван Исаевич Самаев
Пӳрте кăштăрт килсе кĕрет.

Хисеплĕ çын, ял-йыш каларăш —
Ялти коммунистсен асли.
Пат тӳрĕ, çивчĕ пăхкаларăш.
Çамки çинче суран палли.

Колчакпала Исай Иванĕн
Вăрçмашкăн тивнĕ Çĕпĕрте.
Çавна аса илсен суранĕ
Илемсĕр мар пире пĕртте.

Шӳтлес шутпа-и ку, ахаль-и,
Сума суса-и ыр çынна —
М е д а л ь тесе ят панă халĕ
Тантăшĕсем çав сурана.

Хăш чух пуху хĕрсе çитсессĕн
Çынсем тĕкеççĕ пĕр-пĕрне:
«Медалĕ хĕрелмест-и? — теççĕ. —
Астăвăр халĕ аслине...»

Хĕрелĕн те, шурса та кайăн:
Тав-шав пит вирлĕ-çке ку чух.

Çапах çĕре кĕнĕ Исайăн
Ятне çĕртмен-ха ывăл, çук!

Çак колхозра вăл председатель:
Вăтам çулхи вăр-вар этем,
Миллионер пулма тытать тĕл,
Пĕлме хал çук, — пултарĕ тен...

Лара-тăра пĕлмен, хастарлă,
Вăйпиттискер, çак çуртпала
Тахçантанпах вăл туслă-варлă
Тесессĕн те юрамалла.

Ĕлĕкренпех вĕсем хăйматлăх
Туса, пĕрле ĕçсе-çисе
Пурнатчĕç те, халь тепĕр лайăх
Сăлтав та пур пулас вĕсен.

Мĕн пытарас: Иван Исайчă —
Верукăн ашшĕ. Ун хĕрне
Пĕлетĕр: вăл сăмах парсаччĕ
Аптрамансен вăталăхне.

Пĕртен-пĕр хĕр те-ха Верукĕ,
Курман-илтмен çĕре кайсан...
«Верук — Энтри... шăпи, тен, тухĕ».
Шутлать ик килĕ те пĕр тан.

Шыв патĕнче-мĕнте курать-и
Хĕр амăшĕ Кулинене —
Чĕнет вара: «Çыру ярать-и?
Курма килмест-и кĕркунне?»

Иван Исаевич Самаев
Ю л т а ш ятпа çӳрет ялта,
Мĕн-ма тесен — май мар-и, май-и —
Пурне те хăй чĕнет: «юлташ».

Хайхи «юлташ» кĕрсессĕнех:
«Аван-и! — терĕ. — Ман килес».
Силлерĕ Герман аллине:
«Мускав çынни те пур! Мĕн эс?

Мĕн эс, юлташ, кĕлĕмçĕ пек
Çуран çӳретĕн вăрттăн-карттăн?»
— Утпа-çке. — «Хă, ют ялсемпе!
Мĕскершĕн телеграм çапмарăн?

Рысак яртарăттăм станца!
Таçти çын мар-çке эс, юлташ,
Çур ял вĕт Аптраман тавраш.
Вăтантаратăн колхоза».

— Манпа чăрманмасассăн та,
Ĕçсем çителĕклĕ пуль-çке. —
Ĕçсем! Ĕçсем, юлташ, кунта
Нихçан та пĕтмĕç...» — Кил, ĕç-ха, —
Тесе курка парать Илле.
Самаев ал сулса илет:
«Çук, пуçăм унсăр та анранă».
— Аптрамĕ-çке. — «Пĕлеп, юлташ,
Аптрамĕ санăн, Аптраманăн.
Сан пĕр карташ, ман çĕр карташ».

Самаев ĕçсе пăхрĕ те:
«Ай-яй! — тет вăл Аптрамана. —
Ку — сан, хăйматлăх асатте,
Пĕлетĕп эп, юлташ, сана!»

— Э, пулĕ, — тет старик сăпайлăн.
Çав самантра чӳречерен
Шаккаççĕ: «Пухăва пуçтарăн,
Илле!» — тет сасă ерипен.

Самаев кантăка яр уçрĕ:
— Мĕнле пуху тăр кăнтăрлах?! —
Ялисполнитель хурлăн хушрĕ:
«Тапраннă вăрçă». — Мĕн?! Каллах...

* * *

Асра-пилте тытман çынсемшĕн
Чул евĕр ӳкрĕ çак хыпар.
Салатнăн туйăнчĕ тискеррĕн
Кĕрекене вăл чăл та пар.

Асламăшĕ хăйле шутларĕ:
«Çын тулчĕ-шим çут тĕнчене?»

Кулинене куççуль хупларĕ:
— Ах, ачамсем!.. — «Ан йĕр, анне...»
— Кам тапăннă? Вăрçи кампа-ши? —
«Кампа пулсан та, çап, тавлаш! —
Тет тарăхса кил-йыш аслашшĕ. —
Эпир вĕт Аптраман тавраш!»
— Чăн, — тет Самаев, — чăн, юлташ!

## VII. Шупашкар карлăкĕсем

Çĕршыв чикки, çын шучĕ, карттă
Урăхлана пуçлать куллен.
Шупашкарта вăл çул сасартăк
Йыш ўсрĕ икĕ хут та, тен.

Союзăмăр — пĕр несĕл килĕ,
Пурнатпăр пĕртăвансем пек.
Таçтан çывхарчĕ Балти çилĕ
Латышсемпе, эстонсемпе.

Пахча, урам, хула пасарĕ —
Ăçта та палламан çынсем.
Украинла чĕлхе янрарĕ,
Белорусла калаçнисем.

Купала Янка пурăнатчĕ
Элкер Çеменĕ патĕнче,
Çуралнă çĕрĕшĕн çунатчĕ
Хумханнă Атăл хĕрринче:

«Ах, Беларусь! Кĕл пултăн пулĕ.
Хаяр тăшман вут тĕртрĕ-çке.
Çеçкеччĕ халăхăм кун-çулĕ,
Тымарĕпех хăри çеçке?..

Кил-çурт, кĕнекесем, архивăм...
Хăй Горький янă çырусем...
Çунтарчĕç пуль йăлтах, çĕршывăм,
Хура хĕреслĕ хурахсем.

Ах, Беларусь! Вăй-хал сунатăп
Сăваплă, йывăр ĕçўнте.

Эс ҫăлăнатăн, эп шанатăп,
Сӳнтермĕп ҫутă ĕмĕте...»

Каҫ-каҫ сĕм тĕттĕмччĕ хуламăр,
Ниҫта тухма та аптăрав.
Чăваш поэчĕпе хăнамăр
Сахал ларман ҫав вăхăтра.

Хăна-и вăл, асаплă-чун-и, —
Кам ырăран тĕнче касать?
Ун чĕринче ҫĕршывĕ ҫуннă,
Вăл илтнĕ инҫетри сасса.

Элкер салтак ҫавна чухланă,
Ăнланнă каламасăр та.
Хăй тӳшекне сарса вăл панă
Ҫулта ĕшеннĕ поэта.

Ăна Купала парнеленĕ
Хăй сăввисен кĕнекине.
Ун ячĕ «Чĕререн» икkenĕ
Нумай пĕлтернĕ ун чухне...

Ик халăх сăвăҫи калаҫнă
Хăйсен ҫĕршывĕсем ҫинчен,
Историйĕсемпе паллашнă
Фронтсен хыпарĕ хушшинчен.

Ик халăх сăвăҫи асилнĕ
Эрмен ҫĕрне, Еревана:
Сасун Давичĕн ыра килĕ
Асра сыхланнă ялана.

Вĕсем унта пĕрле ҫӳренĕ,
Кĕрекере пĕрле пулса
«Чăвашшăн!», «белорусшăн» тенĕ
Пĕрне-пĕри кун-ҫул сунса.

Кавказ эрехĕ ялтăртатнă.
Телейлĕ, мирлĕ самана.
Кашни хăй тимлĕхне кăтартнă:
«Ак эп мĕнле, курсам мана!»

«Тăванлăх! Туслăх!» шав кĕрлерĕ
Юбилейле уявсенче.
Купала халĕ тĕлĕнмерĕ
Чăвашăн хапăл чĕринчен.

Ăшталанать Эльгер хуçамăр,
Телефонпа тем калаçать.
Чĕре сурилĕх шурă çăкăр,
Пирус паянлăх тупăнать.

Сасартăк хĕсĕнчĕ-çке пурнăç.
Укçа йӳнелчĕ. Япали —
Виçеллĕ: «Хальлĕхе эс кунăç!» —
Чарса тăрать çĕршыв алли.

Хуса кăларнă вăрçă-харçă,
Мĕскер илейĕ çын хăйпе?
Çине мĕн тăхăнни кăна çав, —
Кӳрше кайма тухайнă пек.

Çулсем-йĕрсем пит аякра-ши?
Е çакăнтах хĕле кĕрсен?
Машинĕ пур та, тум таврашĕ
Çӳхе иккен Купалăсен.

Тен, çитмелле пулать таçта та...
Ури шăнсассăн сăвăçăн?
Элкер патне хура кăçатă
Илсе пырать ак хушнă çын.

«Кунта-и-ха, юлташ Купала?» —
Ыйтать вăл кĕрсенех. — Кунта. —
«Кăçатă ак... тен, тăхăнкалăр...
Хакне тӳленĕ тет унта».

— Тав! — тет поэт. — Чăваш ĕçченĕ
Юп курчĕ килсĕр çӳревçе. —
«Атти — ятнех, — тет леçекенĕ, —
Кĕрхи çăмран. Хитре. Çемçе.

Кунпа таçта та ăшă пулĕ...»
Пăхать Купала çын çине.
Пĕччен юлсан кĕтмен куççулĕ
Нӳрлетрĕ ун куçĕсене.

* * *

Хулара камне пĕлмесĕр
Марш юрри янрать ялан:
«Украина — ылтăн пек çĕр,
Белоруссия — ыр тăван!..»

Çамрăксем утса çӳреççĕ
Шупашкар урамĕпе.
Çапăçма хатĕрленеççĕ
Харсăр чунĕ хушнă пек.

Хĕç-пăшал, шинель тĕркемĕ,
Кĕреçе, хуран таран —
Хăй çинче салтак-этемĕн:
Вăрçă йывăр йăттарать.

Ирхине шепрех иртетĕн,
Юрă та янравлăрах.
Кунĕпе тарпа пиçсессĕн
Таврăнан урăхларах.

Çав-çавах пуçна усмастăн:
«Яр-ха, юрăç тус, тавай! —
Тет асли утсан-утсассăн. —
Юрă кĕнĕ устава...»

«Украина — ылтăн пек çĕр,
Белоруссия — ыр тăван!
Ăраскалăра хӳтлетпĕр
Эпĕр хурçă штыкпалан».

Çак юрра юрлаççĕ уççăн
Чăвашсем те ытписем.
«Белоруçăм, Белоруçăм!» —
Тет Купала итлесен.

* * *

Хутран-ситрен кăрăлтатаççĕ
Ют сасăллă самолетсем,
Хула çине ак вăркăтаççĕ
Пĕрремĕш бомбине вĕсем...

Ак кунĕн-çĕрĕн, кунĕн-çĕрĕн
Мускав енчен хуланалла

Машинăсем — çĕршер, пиншерĕн
Кĕреççĕ те шав малалла —

Хĕвел тухăçнелле куçаççĕ,
Канаш енне, Хусан енне...
Нумайăш илтнĕ, халь кураççĕ
Çĕршывăмăн çулне-йĕрне.

Шыва чăмса шур чул кăларнă
Серебряный асаттесем,
Тябуковсем сарса хăварнă
Çак аслă çулсене пĕлсе.

Çавсен хисеплĕ, пархатарлă
Ĕçченлĕхĕ те çĕнтерет.
Хула пĕр чунлă, пĕр каварлă.
Сехри хăпман ун. Ĕç вĕрет.

* * *

Айхăрса кĕçенчĕ капăр
Шур çилхеллĕ Урхамах,
Çитсе тăчĕ тăпăр-тапăр
Атăл-ту çине часах.

Тăрантас çинче тăваттăн:
Виççĕш шăнăçнă тĕпе,
Ларкăчра — тепри. Пăхсассăн —
Аптраман тавраш̆ĕ пек.

Ларкăчри Палля сăнарлă
Курăнса каять пире.
Çатанра курма пултарăр
Гермăна та ик хĕре.

Наталипеле Тамара
Ларнă иккĕн ик енне.
Гермăна ăсатма мар-и?
Ма анаççĕ пристăне?

Çапларах пулас, çапла-тăр.
Натали хĕр тантăшне
Шупашкар курма каятпăр
Тенĕ те — леш килĕшнĕ.

Хăйĕн те, Тамарăн, пулнă
Çăмăлĕ шăп çав тĕле.
Ашшĕ — ват учитель унăн,
Германăн учителĕ.

Германăн та, ыттисен те:
Аполлон Иванч Турхан
Вăтăр çул та пулĕ ĕнтĕ
Пĕр ялта ĕçлет, кусман.

Хулара вăл сессире-мĕн:
Ватăлмалăх кунĕнче
Ăс-пуçне кăшт çĕнетмешкĕн
Хăй — заочно — тытăнчĕ.

Ашшĕне курманччĕ хĕрĕ
Хусантан килнĕренпе...
Май килсен шыва та кĕрĕ
Атăлта Наталипе.

Тен, таçтан тата ачашшăн
Вĕрекен лĕп çил пекрех
Германа кăмăл тумашкăн
Чунĕ хушрĕ пуль хĕре...

Ял-йышран çĕкленнĕ каччă,
Ăслă та сăпайлăскер
Ĕмĕрте пулни аванччĕ
Терĕ пулĕ лайăх хĕр.

Герман кăшт та пурнаймарĕ, —
Васкатать-çке самана.
Тĕл пулайнăччĕ Тамара —
Ăсатать те ак ăна.

Ăйăр чалăшшăн, çиллессĕн
Пăхкалать енчен енне.
Кукалет — сăрта ишессĕн,
Вылятать хăлхисене.

Ак Палля сиксе анать те
Çавăта пуçлать утне:
«Ан алхас, асту сана!» — тет.
Анчĕç аслă шыв умне.

* * *

Çын шавĕ. Пăрахут каяйнă,
Анаталлаваскать вăр-вар.
Шупашкара пайтаххăн аннă,
Ялан çӳренĕ халăх мар.

«Эсир ăçтан?» — Ленинградран эп. —
«Эсир ăçтан?» — Эп Мускавран. —
«Епле çитес? Мĕнпе тăранăп?
Ачасемпе-çке...» — Ан кулян!
Эс çеç-и? Çур Раççей тапранчĕ. —
«Кунта кăшт йӳнĕрех пулас...»
«Ман Куйбышева анмаллаччĕ, —
Пит тăвăр теççĕ. Тем тăвас?»
«Яла каяр-ха. Ĕç тупасчĕ.
Ĕлĕкхи мар вĕт: колхозран...»

Шав пĕр сăмах: «эвакуаци»
Тухать калаçнă хушăран.
Ак çурмалла салтак тумтирлĕ,
Сар куçлăхлă этем çитет:
«Кам хулана? Кам вакуирнăй?» —
Тет вăл. Палля çапла илтет.

Ав халăх хушшипе хăпарнă
Шап-шурă тумлă медсестра
Аллисене çыхса çактарнă
Ик салтака ертсе пырать.
Кĕç грузовик килсе сас турĕ.
Тата салтак, тата, тата...
Туя, костыль... йăтса та тухрĕç...
Тен, хурлăх таçта Атăлта?

Çынсем пăхаççĕ, ахлатаççĕ,
Чараççĕ аманнисене.
Ыйтса пĕлмешкĕн хăтланаççĕ:
Курман-ши теççĕ хăйсенне...

Аптрамансем кураççĕ куçăн
Тапраннă вăрçăн сăнарне.
Тăван çĕр сарлакан та уççăн
Тухса тăрать вĕсен умне.

* * *

Аслă шыв, хăватлă Атăл!
Ахаль мар сĕм авалтан
Юмахра та юрăра вăл
Юхса выртнă сарлакан.

Ахаль мар чăваш ят панă
Хăй сăмахĕпе ăна.
Çакăнта эпир çуралнă,
Пиçĕхтернĕ ăс-тăна.

Ахаль мар тĕл пулнă ырă
Вырăса шăп çак тĕлте:
Волга-матушка тет вырăс,
Чăваш Атăл-атте тет.

Атăл — халăх пархатарĕ,
Атăл — пирĕн ăраскал!
Хăш çĕршыв сана мантарĕ?
Çук санран писмешкĕн хал.

Çуркунне ейӳ каятăн,
Куçкĕски-сăну çине
Пăхтарса савăнтаратăн
Йăлăмри йăмрасене.

Сарлака çаранлăх тăрăх
Ĕнĕл-юшкăн хăварса
Ашкăртатăн сиплĕ курăк
Чечекпе капăрлатса.

Выльăх-чĕрлĕх çитермешкĕн
Тухакан ачи-пăчи
Шăхăртса ярать тӳлеккĕн
Тĕрлĕ тӳттĕл-шăхличи.

Çурсерен пĕрре çав сасă
Хăлхана килсе кĕрсе
Шухăша ярать пĕр касă
Чĕрене çĕклентерсе.

Сан çинчен юрлаççĕ мар-и
Çут çанталăк ачисем,

Тăван халăхăн тымарĕ,
Ырă Атăлăм-аттем?..

Тăр çулла, хĕвел кун каçăн
Сар çу пек шăраннă чух,
Атăлтан ирпе тухсассăн,
Атăлах вăл аннă чух;

Йăлăмра шап-шурă тумлă
Вирьялсем ут çулнă чух,
Шĕпĕл-шĕпĕл вĕтĕ хумлăн
Алхасса эс кулнă чух;

Кăнтăрла канмасăр шăрчăк
Чăр-чăр чăрăлтатнă чух,
Ирлĕ-каçлă харсăр шăпчăк
Шăнкăр-шăнкăртатнă чух —

Янраса тăратăн, Атăл,
Эсĕ пĕтĕм таврана.
Çамрăксем нимрен те хапăл
Ун чухне сан ырлăхна.

Ярăнса ут çулнă хыççăн
Ярханах кăкăрсемпе
Сан умна пыраççĕ йышлăн
Каччăсем хĕрĕсемпе.

Иртĕнмесĕр алхасаççĕ,
Сирпĕшеççĕ шывпала.
Шурă пулă пек чăмаççĕ
Ушкăн-ушкăн шывалла.

Каçпала т у й л а выляççĕ:
Лашасем кӳлсе, юри
Шăнкравсем çакса яраççĕ,
«Хĕр йĕрсе» çӳрет пĕри.

Такмаклать унта уртмахçă
Ватă çын пек тумланса.
Ҫултарать пĕр мыскараçă
Ӳсĕре хăйне хывса.

Шав шавлаççĕ, кĕр кĕрлеççĕ,
Çуллахи кĕске çĕре
Вăйăрах вара çĕрлеççĕ,
Ирхине — каллех ĕçре.

Авалтан, пуçне йăтмасăр,
Тырă вырнă çынсене,
Сарăма тăрса çич-сакăр
Тăпачпа çапнисене,

Вăрманта ĕмĕр ирттернĕ
Чăмăр йывăç пек йăха,
Юмансем касса тӳнтернĕ,
Кăк кăкланă халăха

Канасрах та пулĕ çавă
Ухлĕм курăк çуласси,
Илтĕнет те пуль уявăн
Ян та ян çава сасси...

Кĕркунне хăяматран-и
Хускалсан хушка хумсем,
Чашкăрса йăран-йăранăн
Çырана çитсе хӳсен,

Хутлă-хутлă хулăн суллăн
Çыххине лăка-лăка
Татнă йывăç вуллăн-вуллăн
Вăркăнсан та аякка,

Кимĕпе тухса хăш паттăр
Таракан пĕренене
Кач лартасшăн тимĕр пакăр,
Вайкăнсан та пĕр енне,

Е шуçихурах пек урнă
Хумсене вата-вата
Ватă пулăçă шыв урлă
Йĕп-йĕпе каçсассăн та, —

Ун чухне те эсĕ çывăх,
Хурăнташлă манпала,
Çĕр илемĕ, аслă шывăм,
Хăпартатăн кăмăла.

Хĕл ларсан, кăвак пăр çийĕн
Çуна çулĕ хывăнсан,
Кассăн-кассăн чăрсăр çилĕ
Ямшăкла юрра ярсан,

Вăрмана йăлт урăх саслăн
Урăх шăпчăк та куккук —
Пăчăк-пуртă янратсассăн
Чăррăн-чăррăн, тук та тук,

Çамрăк-кĕрĕм парăн-парăн
Йĕлтĕрпе шуса кĕрсе
Хырлăхра тупсассăн тарăн —
Шурă мар — сенкер пăрсем,

Ĕмĕтсем — каллех сенкеррĕн
Эрешлеççĕ пурнăçа.
Пас тытсассăн та ешернĕн
Эс куратăн йывăça.

«Çуркунне татах та килĕ, —
Тетĕн лăпкăн ун чухне, —
Çут çанталăк ăшă килĕ
Çĕклентерĕ çын чунне.

Çывăр, Атăл, канлĕ çывăр,
Ырă тĕлĕк тĕлленех.
Пăр виттӳ ан пултăр йывăр,
Ан çиллен эс хĕллене.

Сан аваллăху тав-шавлă,
Паянхи куну пуян.
Пуласси тата мухтавлă —
Халăхсен, çĕршывăн, сан.

* * *

Çапла е кăшт урăхларах-и
Историк Герман шухăшлать.
Тен, уйрăмрах та пуль сăмахĕ,
Анчах ун туйăмĕ çапла.

Тăшман сĕмсĕрленет тискеррĕн.
Ху халăхун умне-хыçне

Раснах эс ҫивĕччĕн тинкерĕн,
Куҫ-пуҫлă ҫын, ун пек чухне.

Ҫак чăнкă, ешĕл Атăл ҫырĕ,
Ҫак Шупашкар карлăкĕсем,
Ун хыҫĕнчи чăваш уй-хирĕ,
Унти хăй евĕрлĕ этем —

Раснах вĕсем, темле пĕр харăс
Пĕр тĕкĕре пуҫтарăнса
Сана пăхтарĕҫ, астутарĕҫ
Нихҫан, нихҫан та манмасса...

Ак Герман пăхрĕ расписани:
Кайма пулать ик сехетрен.
Халь улттă... Лартăр чăматанĕ...
Унччен шыва кĕрер-и тен?..

Палля Урхамаха тăварчĕ,
Тип утă хучĕ ун умне.
Ав пиччĕш пляжалла уттарчĕ,
Хуса та ҫитрĕ хĕрсене.

Пыраҫҫĕ виҫҫĕн. Кĕҫ Тамара
Сукмакпала чупса кайса
Тăп тăчĕ те: «Атте, эс мар-и?!» —
Теейрĕ ячĕ кăшкăрса.

«Такамăн ашшĕ-ха... Шанманччĕ
Сана кунта курассине», —
Тет шӳтлĕн Аполлон Иванчă,
Пытараймасть именнине.

Хăрах ури ҫинче ташлать те
Шăлаварне тăхăнкалать,
Ҫӳҫне-пуҫне туракалать те
Йĕс куҫлăхне сăтăркалать.

Пырать вăл акă: парăс пирĕ
Толстовка унăн ҫийĕнче,
Карттусĕ те ҫав пир, ӳт-тирĕ
Кăшт туртăннă пĕлтĕрхинчен.

«Эс тĕлĕнетĕн пуль пăртакçă, —
Тесе килет вăл ерипе, —
Çынсем лере юн юхтараççĕ,
Эпир — шыва кĕрессипе...

Тăшман тĕп пулнине курмашкăн
Тĕрекленесшĕн-çке аçу.
Ăçта-ха... ўсрĕн-и, тынашкă?
Тăсмак-мĕн те, какайĕ çук!»

Тамарăна вăл ыталарĕ,
Чуптурĕ. Германсем патне
Илсе пырать ăна Тамара.
Турхан тинкерчĕ вĕсене.

Ик çамрăк харăс сывлăх сунчĕ.
«Пĕри Наташа-ха, паллах.
Тепри, тепри тата кам пулчĕ?
Чим, чим, пăхар-ха лайăхрах...

А! Герман пулчĕ-çке ку. Гера!
Мĕн тет-ха асаннў сана?»
— Кервен. — «Да, да, çапла çав», — терĕ
Учитель алă тытсанах.

«Эс маншăн — пул хăть академик,
Премьер-министр, президент —
Сана эп урăхла чĕнеймĕп:
Эс маншăн Гера çĕр çулччен!»

Çапла çынсем калаçса кайрĕç.
Э с тет ватти, яшши — э с и р.
Шыва кĕрсе шăлăнкаларĕç.
Тата кăшт вăхăт пур-ха, ир...

Юлашкинчен Турхан каларĕ:
«Чим, чим, аптранă Аптраман!
Эс каялла тапасшăн мар-и?
Ку камăн чăматанĕ?» — Ман.

Ман, Аполлон Иванч. Каятăп.
Института çитсе ўкес.
Кĕме хĕн пулĕ Мускава та, —
Хут пур-ха ман... Пĕрле тўсес. —

«Çапла-çке, — тет Турхан, — эп маннă,
Çултан тухатăп пулмалла.
Хăнăхаймастăп-ха, тăванăм:
Мĕн чухлĕ ĕçчĕ! — Вăрçмалла...

Пĕр ĕмĕт асăмран каймарĕ...
Шутлаттăмччĕ: тен, малашне
Эп шаннă Герман тупса парĕ
Чăвашăн йывăр юмахне.

Чи йывăрри — истори пирĕн,
Ун тупсăмне тупаймасан
Малашлăха курма та пит хĕн,
Шав умăнта тĕтре пек сан.

Кичем, кичем асаттесемсĕр!
Пĕлес килет: ăçта тымар?
Мĕльюнлă йыш — камсем-ха эпĕр:
Финн, яфетид, хазар, пăлхар?»

Йăл кулчĕ Аптраман; тăнланăн
Пуçне вăл тайрĕ те кăшт-кашт
Каларĕ ерипен, сăпайлăн:
— Ман шутпала эпир — чăваш. —

«Ах, чăвашсем? Çапла, пĕлетĕп.
Унччен камсем?» — Унччен те çав,
Кайран та, халь те, малашне те... —
«Малашнехишĕн çук-ха тав...

Ун чух юлсан та чăваш ячĕ
Юлать словарьсенче анчах».
— Эсир шет, Аполлон Иванчă,
Кăшт нигилист? — «Çук, çук, ачам!

Эп кăшт аяккарах куратăп.
Унччен... унччен пур вăйăма
Эп шкул партти çине хуратăп —
Сире нигилист мар тума.

Эп Чĕмпĕрте вĕреннĕ, тусăм,
Хальхи шайран аса илсен,
Ах турă, йывăрччĕ çав пусăм,
Çав малтанхи картлашкасем!

Эс Яковлев камне пĕлетĕн.
Пайтах тавлашрĕç унпалан.
Анчах çава туптанăçемĕн
Çивĕчĕрех пулать, ан ман.

Ун ĕçĕ чĕрĕ — ак сăлтавĕ,
Ак ма тăшман-çĕлен чашлать.
Ун ĕçĕ — эп те, Герман та вăл:
Эс те вĕрентĕн чăвашла.

Пире юнарĕç: «Манăр! Писĕр!»
Епле сурам эп йăвана?
Хурал тăр, Герман! Йăхсăр-пилсĕр
Ан пултăр халăх яланах.

Тĕпренчĕкшерĕн, ывăçшарăн
Пуçтарнă ăс мулне сыхла.
Бичурин, Яковлев — йăлт хамрăн,
Вĕсемшĕн те çапăçмалла».

— Ку тĕрĕс, — терĕ Герман, — тĕрĕс.
Профессор ман пĕррехинче:
«Вăл — сирĕн Ломоносов!» — терĕ
Çав пирĕн Яковлев çинчен.

Нумай эп илтнĕ: имĕш, унăн
Пит хытă пулнă шкул йĕрки.
Халап-и е чăнах кун курнă
Ун «Аслă Петĕр патакки»?

Ун пек этем тавра тем чухлĕ
Юмах çăмхаланать ялан.
Паллах, кăшт тĕрĕсси те пулĕ... —
Куçне хĕссе илет Турхан. —

«Старик хаярччĕ те кăраччĕ,
Упрасшăнччĕ вăл хăй шкулне:
Хĕлхем çути те çав кăначчĕ
Чăваш кун-çулĕн ун чухне.

Сире ансат, суйла та йышăн —
Чĕлхе, истори — çыр, тĕпче.
Эпир пичетлĕ сас паллишĕн
Чуна памашкăн хатĕрччĕ!

Ашмарин словарьне уҫатӑп:
Сайра пулин те, скобкӑра,
Унта эп хам ята вулатӑп,
Мӗскер мана савӑнтарать?

Эпир — чӑваш интеллигенцин
Пӗрремӗш сийӗ, пирӗнпе
Пур халӑх — ҫав энциклопедин
Чӑн авторӗ пуль тетӗп эп.

Профессора сума сумасӑр
Иртни пулмасть ку. Ҫук, тен, час
Ӑна ак палӑк та лартатпӑр,
Ман шухӑш халь... мӗнле калас?

Ҫӗршер ҫул тӗттӗм пуснӑ, ассӑн
Сывланӑ халӑх чи малтан
Хӑй чӗлхипе букварь курсассӑн
Мӗн шухӑшлӗ, сан шутпалан?

Ҫав букваре эп, ырӑ ҫыннӑм,
Курсаттӑм ӑнсӑртран ӗнер.
Хӑй аллипе ӑна-мӗн ҫырнӑ
Эс «Ломоносов» тенӗскер.

Тӗпчев институтне пырсаттӑм.
Кӑтартрӗҫ те ал ҫыруне, —
Сасартӑк макӑртӑм та ятӑм:
Хӑй тухрӗ манӑн куҫ умне.

Студент чухнех ӑшне ҫунтарнӑ
Чӑвашшӑн шеремет этем.
Букварӗ ҫитмӗл ҫул тултарнӑ,
Вӑл — пирӗн малтанхи хӗлхем.

Ҫав хӗлхемрен вут хыпрӗ мар-и?
Ҫав амаланчӗ ерипе:
Ҫырулӑх... кӗнеке... Ашмарин!..
Тӗнче паллашрӗ пирӗнпе.

Тем мар пек: вырӑслах, пӗлетпӗр,
Кӑшт паллӑ лартнӑ та иккен —
Шӑнкӑртатать кӑна чӗлхемӗр
Сархайнӑ хут листи ҫинчен...

Старик чухлатчĕ — мĕн, мĕскершĕн...
Пире тем каласассăн та,
Российăна хисеплемешкĕн
Вĕрентĕмĕр эпир унта».

— Россия иккĕ пулнă, — терĕ
Историк. Лешĕ — хăйĕннех:
«Кун пек саманара, тен, Гера,
Мансан та юрĕччĕ пĕрне.

Кун пек саманара патшалăх
Ялан вăл уйрăлми, пĕрре.
Çитменнине, халь пирĕн халăх —
Пĕр кăмăллă. Ун пĕр чĕре.

Россия иккĕччĕ, ку тĕрĕс:
Тĕрме, жандарм пулсан пĕри,
Ашмарин пек хăюллă, чĕрĕ,
Çут ăслă вырăсчĕ тепри».

— А ма Радищев мар е Герцен,
Белинский, Чернышевский мар? —
Тет Аптраманĕ итлесессĕн.
Турхан чăр пăхрĕ: «Ма та ма!

Тен, эс — ма Пушкин мар-ха? — тейĕн!
Ун пек масштаблă çынсене
Пĕр халăх виçипе виçеймĕн,
Пĕлместĕп мар эп вĕсене.

Анчах халь урăх шухăш манăн:
Ученăй пĕтĕм ăс вăйне
Фанатик пек йăлт халалланă
Пĕр пĕчĕк халăх чĕлхине».

«Пĕтет, пĕтет!» — тесе мĕн чухлĕ
Вăслаттарса ĕрле-ĕрле
Çав чĕлхене тулатнă пулĕ
Туртса çурас пек чĕрĕлле!

Сасартăк çав шăй-шайлă хорăн
Мăкланнă, хытă хăлхине
Тезаврус лингве чувашорум*
Çитсе кĕрет пĕр ирхине.

* Тезаврус лингве чувашорум — чăваш чĕлхин пуянлăхĕ (*латинла*).

Çапла чĕлхеçĕ евитленĕ,
Çапла вăл пĕтĕм тĕнчене
Латин чĕлхипеле пĕлтернĕ
Чăваш чĕлхин пуянлăхне.

Шанатăп эпĕ: ун словарĕ
Кĕрсессĕн халăх хушшине
Пайтах сăмах ăсти кăларĕ,
Вăл тин пуçлать-ха хăй ĕçне.

Шел: çак инкек, çак вăрçă татĕ
Тем чухлĕ çамрăк ĕмĕте.
Анчах эс: «Халăх пурăнать!» — те,
«Вăл нихăçан та вилмĕ!» — те.

Тен, кам пĕлет, тата илемлĕ,
Хăватлă пулĕ пурнăç çав:
Кăвар та, сивĕ шыв та меллĕ
Пиçĕхтермешкĕн хурăçа».

— Юратнă Аполлон Иванчă! —
Тет Герман. — Манăн каймалла. —
Турханăн куçĕ салхуланчĕ:
«Эппин, эс Мускава?» — Çапла.

Ав манăн пăрахут та тухрĕ.
Çав пулĕ... Темĕншĕн паян
Атăлпалан кайма чун туртрĕ.
Тен, час кураймăп терĕм... — «Шан!

Шан, Герман!» — терĕ ват учитель.
Анан хĕвелĕн шевлипе
Çуталчĕ те ун типшĕм пичĕ —
Йĕс куçлăхĕ тĕтреллĕ пек...

Ак вăрăммăн, пăртак салхуллăн
Сас пачĕ кĕтнĕ пăрахут.
Çыран вăрманĕ, йăлăм-улăх
У-у! хутларĕ нумай хут.

«Илтетĕп! — тенĕ пек çĕршывăм
Пĕлтерчĕ пур тавраналла. —
Эп сыхă, çирĕп, ĕмĕр сывă,
Тăван Россия, санпала».

Вырнаçрĕ Герман. Сывă пулăр!
Сулланчĕ унăн умĕнче
Ача алли, карттус, ик тутăр
Йăлтах, йăлтах курăнмиччен...

* * *

Ирхине. Хĕвел тухайнă.
Вăранать пур çут тĕнче.
Герман кантăк уçса янă,
Вăл каютăра пĕччен.

Чарлансем чарăлтатаççĕ,
Кумкалаççĕ Атăла:
Мĕлкисем куçса пыраççĕ
Ешерен çыранпала.

Çыранне вырнаçнă Атăл
Чӳхенет те чӳхенмест.
Хăй хакне пĕлет ялан вăл,
Пит йӳнелмĕ! — тейĕн эс.

Йăлăмра йăсăрланаççĕ
Лăпкă пулăç вучĕсем.
Хырлăхра хырсем кашлаççĕ
Хытăрах çул иртнĕçем.

Хырлăх çумĕн — ĕмĕр ирĕк
Шыв сасси те хум сасси...
Çакăнта аваллăх пирĕн,
Паянхи те пуласси.

Ĕмĕрех пуçтах, пăтравлă,
Чăнкă хумлă, кăпăклă,
Чашкăравлă, ахăравлă
Атăл ĕмĕр кăмăллă.

Хăш çĕре илсе çитерĕ
Вăрçă хумĕ Германа?
Ав тăрать чăваш чиперĕ,
Астуса юлас ăна.

Аптраман бинокль тытрĕ,
Пăхрĕ Атăл хĕррине:

Шурă шупăрлă хĕр йăтрĕ
Икĕ симĕс витрине.

Йăлăмран вăл каçнă ахăр,
Сунă пуль унта ĕне.
Тӳрленсе тăрать те ак хĕр
Ыталать кĕвентине.

Ыталарĕ те тăхтарĕ,
Пăхрĕ Атăл еннелле:
Курчĕ, курчĕ, асăрхарĕ
Çуталан бинокăле.

Мăшăр куçĕ ялтăр турĕ,
Кăшт тути хĕррипеле
Кулса илчĕ те вăл утрĕ
Сукмакпа сăрт çинелле.

Таврăнать юмах тĕнчи:
Темшĕн хĕр асилтерет
Тулли уйăх çийĕнчи
Шыв йăтса тăран хĕре...

«Кун пек чух йăлтах чипер-мĕн...
Чăнĕ те, юмахĕ те,
Пурте хамăрăн, — тет Герман, —
Пурте çак тăван çĕрте.

Çакăнта эпир вăй пухнă,
Вырăс халăхĕ умне
Çăкăрпа-тăварпа тухнă
Атăлпа Сăр хĕррине.

Хан таврашĕн кукăр хĕçĕ
Хусанта хуçăлнинче
Чăвашсен те пулнă ĕçĕ,
Астăватпăр халиччен.

Сарри паттăр йĕнерленĕ
Лăс çилхеллĕ урхамах
Тапса сикнĕ, йыш кĕрленĕ:
«Вырăс майлă яланах!»

Ак ĕнтĕ тăватă ĕмĕр
Пурăнатпăр чун та чĕм.
Халиччен эп вырăссемсĕр
Чăвашла пуплейместтĕм.

Вырăс халăхĕ хăтарчĕ
Пирĕн халăхăн ятне,
Чĕлхине пуянлантарчĕ,
Аслăлатрĕ ăс-тăнне.

Сар пергаментлă аваллăх
Курăнать куçа паян.
Нихăçан та икĕ халăх
Пĕр-пĕрне хаяр сунман...»

Шухăшлать те яш тĕпчевçĕ
Архивра та музейре
Хăй ирттернĕ кун-çĕре
Астуса пырать пĕчченçĕ.

Кĕнеке, нухрат, чул палăк,
Кивĕ летопись, пăшал...
Тем те тытнă çакă алă,
Çав-çавах ăна сахал.

Пĕлтĕр çеç-ха çын чухларĕ
Тепĕр ĕç пит кирлине:
Арабла вула пуçларĕ,
Тухрĕ çĕнĕ йĕр çине.

Хĕвел тухăç суннă майăн
Пăхрĕ Герман унталла...
Шырасси нумай, нумай ун...
Тупĕ-ши вăл? Тупмалла.

## VIII. Петĕр çырăвĕ

Савнă тусăм Натали!
Илтрĕн пуль хăвах:
Вăхăтсем халь канмалли
Мар ĕнтĕ, паллах.

Пыраймастăп пуль кăçал.
Ан кулян. Ăнлан:

Çав тăшман чĕртен вăрçа
Çĕнтерер малтан.

Çав пуçтах сыснасене
Хамăр пахчаран
Пăскăртса ярас чухне
Епле-ха ларан?!

Эс ан шухăшла темскер, —
Орденпа çиçсе
Ял-йышу сан çав хатер
Каппаять тесе.

Чăн: çĕклет вăл кăмăла,
Анчах ман ĕçе
Пур салтак та тумалла,
Тăвĕç-тăвĕçех.

Курăн ак: çак вăрçăра
Тăшмана çĕнсе
Пинĕн-пинĕн паттăра
Тухĕç çĕннисем.

Хам пирки ан иккĕлен...
Пĕр кĕнекере
Эп вуларăм... мĕн пуль тен?
Чим-ха, пĕлтерем.

«Мăшăрлăх илес пулать
Çамрăкрах пике,
Кӳршĕрен ăна суйла!» —
Тет çав кĕнеке.

Чăвашсен те, Натали, —
Астăватăн пуль? —
«Кӳршĕ хĕрĕ — кӳрнекли»
Тенĕ юрă пур.

Çавăнпа, татах калам,
Эс ан иккĕлен.
Хальлĕхе сана салам
Пĕтĕм чĕререн!

Ху каларăш — пурте ман
Тĕрĕс-тĕкелех...
Пит асаймĕ-ха тăшман,
Эпĕр çĕнмеллех...

Итлесем, чĕкеçĕм, эс...
Ху мĕнле пăхан:
Хул çине хĕрлĕ хĕрес
Сăрас мар-ши сан?

Сестрасен курсне кĕрсе
Çӳрес мар-ши теп.
Аслăскерĕм, пĕлтерсем,
Чун пекех кĕтеп.

«Пирĕнпе тăрать тĕнче», —
Тетĕн эс. Маттур!
Мĕн шутлатăн фронт çинчен?
Шутламалăх пур.

Кам пĕлет: çĕршывăмăр
Пысăк, сарлака...
Тен, пĕрле çул тытăпăр
Таçта аякка...

Юрĕ. Çитĕ. Чарăнас.
Калаçса санпа
Тăранассăн туйăнмасть...
Лейтенант Сумбай.

## IX. Натали вĕренет

Натали, пĕлнĕ пекех,
Вăрçă тапрансан
Сестрасен курсне хăех
Кĕчĕ чи малтан.

Вĕренет хĕр тăрăшса, —
Каçсерен вара,
Ĕçлесе тавăрăнсан,
Вăл больницăра.

Больници çывăхра мар,
Юнашар ялта,

Икĕ-виçĕ çухрăма
Утмалла унта.

Пысăк, çутă корпуса
Пур район пĕлет.
Тавраран халь çав курса
Йышлă хĕр çӳрет.

Вĕрентеççĕ пикенсе,
Кăшт васкаççĕ те.
Кам пĕлмест: çĕнĕ вăйсем
Пирĕн фронт кĕтет.

Радио калать куллен
Вăрçă пит хаяр
Сарăлсах пыни çинчен, —
Лăпланмалла мар.

Кăшт итлеççĕ те хĕрсем
Каннă пек чухне
Тирĕнеççĕ пит хĕрсе
Вĕренӳ ĕçне.

Натали вăл тимсĕр мар:
Эмелсен ятне
Латинла çырать вăр-вар
Хăйĕн тетрадьне.

«Натали! Эс тухтăра
Тухан теççĕ-няк?» —
Тет пускил матки вара
Шăл йĕрсе пăртак.

— Тухăп та! — тет Натали. —
Мĕн лĕкĕртетен?
Мĕн паран-ха фронт валли
Ăшă тумтиртен?

Ютсем мар унта, асту,
Хамăр Хĕрлĕ Çар.
Сан, калар ак, упăшку,
Ман — пичче вăрçать... —

«Пиччӳ çеç те мар та-ха... —
Тет тĕртсе матка. —
Памаллах ара... Чăлха
Çыхаттăмччĕ-ха...

Е ак хăйĕн кухвайкки...»
— Пурте юрĕ. Пар.
Тен, хăйне ăшăраххи
Лекĕ, ан вырттар.

Тен, Çĕпĕр колхозĕнчен
Янă дохана
Тăхăнтарĕç сивĕтсен
Санăн мăшăрна.

Эсĕ панă тум, паллах,
Теприне юрать.
Хамрăн вĕт, пулăшмаллах
Хамăра кура... —

Натали лара-тăра
Пĕлмен пек пăхсан:
Е ĕçре вăл, е клубра...
Вĕренес хăçан?

Е хаçат вуламалла
Комсомолецсен,
Е ак ăшă япала
Пухмалла вĕсен.

Натали унтах иккен,
Ӳкĕтлет аван.
Вăл сестра пуласшăн-çке,
Вĕренес хăçан?

Тупăнать, çитет пулас
Вăхăчĕ яш чух,
Ал-ура та ывăнмасть
Çĕкленсессĕн чун.

Кăмăл тулчĕ — çын ĕçчен,
Виç-тăват сехет
Тĕлĕрсессĕн те ирччен —
Хăш чухне рехмет.

* * *

Каç. Тулта чашлаттарать
Çумăр ярăнса.
Натали больницăран
Килчĕ шапарса.

Кĕчĕ, хыврĕ сăкманне:
Йывăр, йĕп-йĕпе.
«Кăшт çиесчĕ те, анне...» —
Терĕ ырнă пек.

Апатларĕ амăшĕ
Куç тулли хĕре.
«Ах, хăçан эс канăн-ши?» —
Терĕ çеç пĕрре.

«...Самани те çав ĕнтĕ...»
Кăмака çинче
Темиçе вăл çаврăнчĕ
Тул çутăличчен.

«... Пурăнаттăмăр аван,
Тунăччĕ йĕрке.
Ăçтан тухрĕ ку тăшман?!» —
Тарăхать инке.

Кулине инкемĕр çав,
Ăшĕ çуннипе,
Ылханса выртать вăрçа
Пĕтĕм чунĕпе.

«...Германран çыру килмест,
Шăпăрт, сас та çук.
Ăçтарах-ши, ыльăм, эс?
Сывă-ши пуçу?

Тепле ак вăталăх та...
Ах, Энтри, Энтри!
Пулмин юрĕччĕ таçта
Çичĕ ют хурри.

Ачи пултăклă та-ха,
Хăй йĕрне питех

Тĕрлĕ йăпăх-япăха
Пустарманччĕ те...

Кам пĕлет ăна тата —
Çавă нимĕçе:
Аякра-çке-ха ялтан,
Темле вăл?.. Инçе...»

Ыратать анне чĕри
Хăй ачамĕшĕн.
Хурлăх, хурлăх çав тери
Салтак амăшĕн.

Çывăрса каять вара
Вăл ĕшеннĕ пек.
Наталийĕ шав ларать
Пĕр кĕнекепе.

Тухтăр-лекĕр кĕнеки
Пулĕ, ахăрнех:
Курăнать çын кĕлетки,
Çыхнă кăкăрне.

Пĕр хĕр тăнă ун умне
Марлине тытса, —
Мĕнешкел çыхмаллине
Панă кăтартса.

Тĕпел çӳлĕкĕ çинчен
Урăхла томсем
Наталийĕн куçĕнчен
Пăхрĕç хĕрхенсе.

Пушкин, Горький ячĕсем,
Лев Толстойăн та
Ылтăн-кĕмĕллĕн çиçсе
Курăнчĕç унта.

Иванов та, Çеçпĕл те
Пĕчĕк те пулин
Вырăн илнĕ çав тĕлте
Тĕплĕ Наталин.

Вӑл «Нарспи» вуланӑ май
Германпа вӗсем
Канашланӑччӗ нумай
Тӗрлине виҫсе.

Пиччӗшӗ: «Ҫырулӑха,
Хамӑр чӗлхене
Тӗпчекен пит кирлӗ халь», —
Терӗ ун чухне.

Литфака кӗрес патнех
Ҫитнӗ хӗрӗнне
Вӑрҫӑ татрӗ ӗмӗтне,
Шӑнтрӗ чӗрине.

Шӑнтрӗ те пӗр ҫулӑма,
Тепӗр вут-кӑвар
Вӑл пуҫларӗ хыптарма
Тӳсме ҫук хаяр.

Ҫӗнтерӳ! Тӑван ҫӗре
Кӳр эс ҫӗнтерӳ!
Ҫавӑншӑн ҫунать чӗре
Ҫулӑм пек хӗрӳ...

Кассӑн-кассӑн ҫил килсен
Ҫумӑр ҫат та ҫат
Чӳрече кӗленчинчен
Ҫилленсе шаккать.

Таҫта улӑм чашкӑрать,
Шӑхӑрать мӑрье...
Пӳртри хӳтӗ ӑшӑрах
Ҫӳҫенет чӗре.

Темле сыхсӑр пек тӗнче
Ҫавнашкал чухне...
Натали ҫав тер пӗччен
Туйӑнать хӑйне.

Наталийӗн такампа
Калаҫас килет.
Вӑл кӗнекине хупать,
Вӑл перо илет.

Тахăшне çырас малтан?..
Куçне хупрĕ те
Натали пĕр саманта
Ларчĕ, тем кĕтет...

Чавсаланнă аллине
Сиктерсе хуллен
Сăтăрчĕ вăл çамкине
Ик пӳрнипелен.

Вара йăл çутăлтарса
Уçрĕ те куçне
Пиччĕшин ятне çырса
Хучĕ хут çине:

* * *

«Энтри! Эс ан ӳпкеле...
Хăвăнтан та халь
Çыру çук та-ха киле,
Хамăн та сахал

Вăхăтсем ку хушăра...
Эс ан пăшăрхан.
Пурăнатпăр-ха ырах,
Сывă пур тăван.

Ялтисем пирки сăмах,
Фронтрисем çинчен
Каламашкăн хĕн, анчах
Халь темех илтмен.

Сайралать ял-йыш куллен,
Пĕл: хăйматлăх та
Çук ĕнтĕ пирĕнпелен,
Çапăçать таçта.

Ят тухмасăр-мĕнсĕрех
Пынă тăнă та:
«Эпĕ çирĕм виççĕре!» —
Тенĕ вăл малтан.

Военкомĕ ĕненмен:
«Епле-ха апла?»

Леш çавнах перет иккен:
Çапла та çапла...

«Эпĕ çирĕм виçĕ çул
Партире тăрап,
Лайăхрах астуса юл!» —
Терĕ тет вара.

Çавăн пек пуплекелет
Халăх ун çинчен.
Верук тĕрĕс-тĕкелех
Амăшĕпелен.

Асатте каларăшле,
«Самаюх Иван
Вăрçине пĕтермеллех
Кайрĕ вăл, куран!»

Аттене суйларĕç халь
Председателе.
Çамрăксем ялта сахал,
Эс хăвах пĕлен.

Ну, аптрамĕ-ха ытлах
Пирĕн Аптраман.
Çăмăл мар ĕнтĕ, паллах,
Пуç пулса тăма.

Тырăсем кăçал питех
Вăйлă, пӳ çитмест.
Ĕлĕк те канман атте,
Халь — лара пĕлмест.

Вăл çырасшăнччĕ çыру
Хăй те-ха сана.
Темĕскер... тăван ăру
Пирки асăнать.

Пехиллесшĕн-и, мĕн-и,
Каламасть мана.
«Ку — секрет!» — тет, илтрĕн-и?
Атте те ăна!..

Ну, салам сана, пиччем!
Паттăр пул, тăван!
Сансăр халь мана кичем,
Анчах мĕн тăвам?

Час эп хам та вăрçăра
Пулмалли этем.
Час пулатăп медсестра,
Курăпăр-и, тен...

Çыруна çырах тăрсам:
Аттепе анне
Палляпа эпир кайсан
Курмĕç канлĕхне.

Асаттепе асанне
Пурăнччăрччĕ те...
Кам пĕлет ватăсенне, —
Хуйхă типĕтет.

Герман та, килсе кайсан,
Пĕрре çырчĕ те
Шарламасть-ха ку таран,
Те инçе çĕрте?..

Сан патна çырать-и тен?
Пĕлтерсем. Кунта
Шухăшлатпăр ун çинчен
Темле шухăш та.

Павăл саккăрмĕш класа
Пĕтермесĕрех
Летчиксен шкулне кайса
Кĕреспе çӳрет.

Кайтăр. Ирĕк хăйĕнче.
Аптраман тавраш
Ĕмĕр пулнă çĕр çинче,
Халь — çӳле кармаш!

Сывă пул, пиччем! Мана
Эс ан ман, юри?
Йăмăку çырать кăна —
Ху пекех хури...»

## X. Ашшĕн çырăвĕ

Юратнă ывăлăм Энтри!
Кăçал сана кĕтеттĕмĕр.
Анчах тĕнчен кĕвви-тĕрри
Çапла та-ха... мĕн ĕçлĕпĕр?

Алхапăлах сиксе тухса
Килеймĕн пулĕ терĕмĕр.
Мĕнле питпе ура усса
Ларас? Çунать-çке çĕрĕмĕр!

Ăçта хурас-ха намăса?
Эпир вĕт Аптраман тавраш!
Салтак парса, вăрçă вăрçсах
Хунанă пирĕн хурăнташ.

Эс тыткалаттăн яланах
Тĕп асаттемĕр медальне.
«Не нам, не нам» тет те, çапах
Ăнах вăл лекнĕ çав парне.

Пĕлмен те пулĕ вăл ун чух
Хăй мĕншĕн вăрçнине, анчах
Вăл саншăн хывнă аслă çул,
Аçу пĕлнех вара, ачам!

Аçу пĕлнех мĕскер пирки
Окопсенче шапарнине,
Мĕскершĕн хăй пăчкă кĕрпи
Германире чăмланине.

Аçу пĕлнех — Перекопра
Мĕскершĕн тинĕс таппине
Тăшманăн кĕвĕлнĕ, хура
Юнĕпеле пĕветнине.

Халь ак килесшĕн янтине
Чыхма çав ĕмĕтсĕр çăхан.
Çук! Ун валли колхоз хирне
Эпир пĕр пĕрчĕ те акман!

Çап, çĕмĕр, ывăлăм, çунтар
Çав чун илли эсремете!

Аптрамансен ятне унта
Эс нихăçан та çĕртмĕн теп.

Ман пилĕм çакă. Çемьепех,
Пур хурăнташ-ăрупалах
Салам яратпăр. Хам пĕр пек
Çӳретĕп-ха сывлăхпала.

Аннӳ те сывă. Кулленех
Эс ун çăвар уççи вара:
Каç-каç сан çырăвусене
Икшер хут та вулаттарать.

Аслаçупа асаннӳнтен
Расна салам та ăшă пил.
Çапла чăмăртанса хуллен
Пурнатпăр-ха, саланмĕ кил.

Пиччӳ пĕрре çырнăранпа
Текех хыпар тумарĕ те,
Ăна усрать пуль-ха шăпа,
Куç-пуçлă çын çухалмĕ теп.

«Курма та килеймерĕ-çке» —
Тесе ял-йыш сана шеллет,
«Ĕмри ан пултăрччĕ кĕске», —
Тесе пăшăрханса пиллет.

Миккен старик те, кӳршĕмĕр,
Курмассерен халь асăнать:
«Салам çыр, тусчĕ иксĕмĕр,
Ват çын ăслахчĕ», — тет сана.

Тата салам çырма калать
Утарçă — ватă Йăкăнат.
Вăл халь ял пуçĕ шутланать,
Çырăвунта ан ман ăна.

Ватти пулсаччĕ Элтиван,
Эп пĕлтерсеттĕм: вилчĕ вăл.
Вăл хураллană хапхаран —
Çын мар — кĕреймĕ çил-тăвăл!

Ишеймĕ çичĕ ют килсе
Колхозăн укăлчисене.
Суя саран сӳпĕлтисем
Пиртен тараймĕç инçене.

Эпир, ватти-вĕтти, йăлтах
Сыхлатпăр хамăр пурлăха;
Мĕнпурĕ мантăмăр ыйха,
Кайран та çывăрăпăр-ха.

Эп хам та ополченире,
Апла-капла пулас пулсан —
Ман стариксем кунта хивре:
Кашни сунарçă — партизан.

Ну, сывă пул-ха. Натали
Çырах тăрать-тĕр те сана,
Çапах хăш чух эс ман валли
Хам ятăмпа та çыр... расна...

Эп пуçлăх халĕ колхозра.
Ответлă çын. Эс ху чухлан...
Тен, хăш чухне хăш хыпара
Хам çеç те пĕлмелле пуль ман...

Сыхлан. Ан сăхтарах мĕнпур
Аташнă, суккăр сăпсана.
Анчах хăрас-тăвас ан пул,
Асту Чапаев землякна.

Тĕп асласу та паттăр сан,
Ху асласу та аптраман,
Тăван асу та çапăçса
Тăшман ури айне пулман.

Пурин çилли те таврăнса
Санра халь чăмăртантăрах!
Эс арăслан пек вăрçасса
Пур хурăнташ шанса тăрать.

Хам эпĕ — Аптраман Илле —
Герой пулмах сана пиллеп!

## XI. Госпитальре

Аптраман Энтри суранĕ
Çăмăлах пулман,
Çавăнпа ăна куçарнă
Аякка фронтран.

Тӳрленсе пурнать вăл халĕ
Хыр вăрманĕнче.
Кунĕсем иртеççĕ канлĕ,
Кĕр-шавран инçе.

Самайланнă пек пулсассăн
Пĕр ирпе вăл ак
Тухрĕ кăшт уткаламашкăн
Коридоралла.

Халатпа утса пыруçăн
Тĕкĕр анинче
Ăнсăртран хăйне вăл курчĕ,
Шăппăн чарăнчĕ.

Порошок-и, темĕскер-и
Ернĕ пуль тесе
Тăнлавне Энтри силлерĕ
Пӳрнипе чиртсе.

Анчах нимĕн тăкăнмарĕ.
Кĕленче патнех
Пычĕ те: «Шуралтăн мар-и?» —
Терĕ вăл хăйне.

Чăн, юлташăм! Çирĕм виççĕ
Тултарсассăнах
Пĕрчĕ-пĕрчĕ кĕмĕл çиçрĕ
Çӳçӳнте сан ак.

Чăн, Энтри. Ачалăх тарчĕ
Сан куçусенчен.
Куç харши хушшин те карчĕ
Тарăнрах-и, тен.

Аслăрах эс курăнатăн
Хăвăнтан пăртак.

Тытăнайрăн пурăнма та,
Ак ĕнтĕ — салтак.

Е пуçламăш çеç пулсассăн
Пур нушу та сан?
Хатĕр-и-ха эс йăтмашкăн
Пысăкрах асап?

Хатĕр-и куçран пăхмашкăн
Вилĕме тепре?
Эп иккĕленместĕп саншăн:
Пăхăн тӳп-тӳрех.

Çĕнтеричченех эс пулăн
Малтисемпеле.
Халĕ... халĕ эсĕ хурлă,
Ан пытар, пĕлеп...

Эс веранда çине тухрăн
Ерипен утса;
Тарăн хăмăш кресло куртăн,
Лартăн ак путса.

Пурнăçра пулать пурин те
Çавăн пек самант.
Мĕн тери асап пулин те
Чунна ан амант.

Çавăн чух эрех ĕçеççĕ
Ытларах вара;
Савнинчен, тусран писет çын,
Кил-йышран тарать.

Çавăн чух сăвă çыраççĕ
Пулĕ сăвăçсем —
Усала курсах ырра çеç
Шанаканскерсем.

Çавăн чух пуплеççĕ пулĕ
Курăкпа, çилпе.
Çунтарать ăшна куççулĕ,
Куçусем типех...

Канашланă пек кашлаççĕ
Çĕр çулхи хырсем...
Хăш поэт çапла калатчĕ?
Астуса илсем.

Астăвать Энтри, вуланă,
Нимĕн те манман.
Хăй те сăвă çыркаланă, —
Кăтартма хăйман.

Халь веранда çине ӳкнĕ
Хыр йĕппилсене
Вăл пăхса ларсассăн чунĕ
Вĕçрĕ инçене.

Халь кĕр çилĕ хăваланă
Тăрнасемпеле
Те йĕрес ман Аптраманăн,
Те юрлас пĕрле?

Вăл кăларчĕ пĕчĕкçеççĕ
Блокнотне çумран.
Сас паллийĕсем ӳкеççĕ
Тӳррĕн, çавракан:

«...Тусăм, тусăм, хăмăр куçăм,
Манăн чун ăшши!
Асăнатăн-ши эс, тусăм,
Асăнмастăн-ши?

Кунĕн-çĕрĕн ыткăнатпăр
Вăрçăран вăрçа.
Çамрăк ĕмĕр! Кам-ха патăр,
Тусăм, тавăрса?»

Çуркунне килен чĕкеçĕн
Вĕçсе килчĕ вăл.
Тивейменччĕ, силлейменччĕ
Пире çил-тăвăл.

Хӳтĕ, ăшăччĕ йăвамăр,
Çумăр та кайман.
Кун иртместчĕ юрламасăр
Кăмăл тулнăран.

Ҫăхан ушкăнĕ капланчĕ
Пĕлĕтпе пĕрех,
Шуйхаштарчĕ те кăларчĕ
Йăваран пире.

Эс таҫта ҫӳрен, савниҫĕм,
Эп таҫта инҫе.
Аслати те аҫа ҫиҫĕм
Пирĕн пуҫ ҫинче.

Анчах харсăр ăмăрт кайăк
Евĕрлех эпир
Ӳссе ҫитрĕмĕр сасартăк
Кăҫалхи пĕр ир.

Вĕҫсе ыткăнтăмăр харăс
Ҫăхансем ҫине.
Хăтăлаймĕҫ, час юхтарĕҫ
Хуп-хура юнне.

Хамăртан тăкса хăварнă
Юн тумламĕсем —
Ҫитсе тирĕнĕҫ тăхланăн
Тăшмана вĕсем.

Кĕмсĕртеттĕр те кĕрлетĕр
Хытăрах, ан тив,
Пур пулас вăрҫа пĕтертĕр
Ҫакă аслати.

— Вăйлăрах ҫĕкленсе кайтăр
Аслă ҫавра ҫил! —
Тес килет санпа ман, паттăр
Тăвăл йыхравҫи...»

## XII. Агитпунктра

Темĕн пысăкăш хула
Курăнать таҫтан.
Поезд ҫитрĕ вокзала
Кăнтăрлах паян.

Агитпункт пӳлĕмĕнче
Туллиех ҫынсем.

Малалла тата инçе
Каймалла вĕсен.

Шпаллисем те пур пăртак.
Ромб та хушăран.
Лейтенант е сержанта
Йышлăрах куран.

Пуринчен йышли, паллах,
Рядовой кунта:
Тĕрлĕрен ушкăнпала
Ларса тухнă та —

Е юрлаççĕ ерипен,
Е тăмра кăштах
Тĕнклетет хăш кĕтесрен,
Пур хут купăс та.

Мĕнле халăх çук иккен!
Вăйлă вырăссем,
Юрăран хăпа пĕлмен
Украинецсем;

Тăп-тăп пӳллĕ, яштака
Грузинсем; маттур
Туркменсем те, сарлака
Казахсем те пур;

Ярăнса утан узбек —
Сар карелпала...
Пур çĕршыв хускалнă пек,
Ку чăнах çапла.

Пур çĕршывăн пĕр тăшман,
Çĕр чĕлхепелен
Ылханар ăна паян,
Аркатар тĕпрен!

Аслă туслăхăмăра
Тĕрĕслер вутпа.
Çунас çук вăл çулăмра —
Чи таса тупа.

Пĕтĕм халăх ячĕпе
Чуптăвар хĕçе.
Хурахсем çине çил пек,
Тăвăл пек вĕçер...

Пырса кĕчĕ Натали
Çул йышсемпеле.
Паллашаççĕ: ăçталли?
Хăш енчен? Епле?

Тĕрлĕ халăх хушшинче
Чăвашпах хăш чух
Калаçатăн пулĕ те, —
Уйăрмашкăн çук.

Вырăсла чухлать чăваш,
Шыв пек юхтарать!
Хăшĕ пур — юри кăшт-кашт
Каппаять вара.

Салтакран килне килсен
Пĕлмене перет.
Аппĕ-амăш «çи» тесен
«Я çиею» тет.

Кĕрепле аври пĕрре
Çамкаран çапсан
Çын часах тăна кĕрет
Тенĕ авалтан.

«Хытă пачĕ ăçтиçук!
Кам пăрахнă-ши?» —
Тет вара вăл ун пек чух
Çав салтак йышши.

Уншăн-куншăн сăмах çук,
Пирĕншĕн — телей
Вырăсла пĕлни ку чух:
Хамăрăн Раççей!

Натали пăхать, сăнать,
Тăрăшать пĕлме.
Вăл шутлать: чăваш раснах,
Куçĕ ун темле...

Мĕнлине вăл, тен, хăй те
Калаймасть, анчах
«Курсан йăнăшмăттăм», — тет,
Йăнăшать паллах.

Йăнăшать вăл, ма тесен
Пирĕн те ĕнтĕ
Урăхла куçăмăрсем,
Наталийĕн те.

Натали пăхать, сăнать...
«Ак сан енчисем,
Ак кунта», — терĕç ăна
Чăвашне пĕлсен.

Виç кĕтеслĕ çухасем,
Кубиклă çуха...
Куçĕсем çав чăвашсен
Уйрăмах-ши-ха?

Çук: чăваш, тутар, ытти —
Кам сăнне пăхан —
Хурçăпа кăвар çути
Куçĕнче куран;

Çилĕ вут пекех хĕрӳ,
Шăнăçмасть чуна.
Пысăк шанчăк — çĕнтерӳ
Шанчăкĕ çунать.

Тулăн-шалăн вокзалта
Хĕвĕшен çынсем
Пĕртăван пек тахçантан,
Пĕр ĕмĕт вĕсен.

Кăшт хăяккăн çеç кулса,
Пĕр сăмахсăрах,
Иртнĕ майăн тус туса
Хавхалантарать...

Поезд каççăр килес çук.
Çыр çыру, пăртак
Вĕри чей ĕç май пур чух,
Пычĕ лектор ак.

Артистсем çитрĕç унтан —
Пĕр ик-виçĕ сас.
Янратать агитпункта
Витерӳллĕ бас.

Хĕллехи кĕске куна
Хупăрларĕ сĕм.
Карăнаççĕ хулана
Тĕттĕм чаршавсем.

Шăши куç пек çутă та
Курас çук тултан.
Сыхă шăплăх çеç. Шалта —
Пурнăçах хулан.

Тен, тата та чĕрĕрех,
Хыпаланчăкрах,
Тен, тата та вĕрирех,
Курăнмасть анчах.

Кĕç концерт итленисем
Майĕпен, кăштах
Тапратаççĕ ак хăйсем —
Кам мĕне ăста.

Натали те, чĕннипе,
Ташлама тухать,
«Сербиянка» çеммипе
Вăл хуллен юхать.

Хирĕç тăнă пĕр сержант,
Кĕллисемпеле
Хушăран вăл шалт-шалт-шалт
Тутарса илет.

«Хытăрах! — тет йыш ăна
Ятранах чĕнсе. —
Систĕр Гитлер-сатана
Кун кĕскелессе!

Тӳсеймесĕр çакăнса
Вилтĕр пуçхĕрлех!
Çĕр варланмĕ иçмасса
Ун юнĕпеле».

Хăвăрт-хăвăрт хăвăртлать
Купăсçи кĕвве.
Сержантпа ăмăртмалла
Натали «сĕвет».

Пичĕ-куçĕ çунăхать,
Тути йăл кулать.
Савăнар-ха тунсăха,
Ыран — мĕн пулать...

## XIII. Натали — медсестра

Пĕчĕкçеççĕ шур кăçатă,
Шурă кĕрĕк, малахай...
Вăл çитсе кĕрет таçта та,
Тĕл пулан ăна пĕрмай.

Симĕс сумка çакса янă,
Хул çинче хĕрлĕ хĕрес.
Наталийĕм! Аптраманăм!
Кам ăна кунта пĕлмест?

Асли «йăмăк» тет ачашшăн,
Кĕçĕнни калать «аппа».
Хăшĕ пур, хăй — ача ашшĕ,
«Анне» тет чипер тăнпах.

Ыратсассăн тем те калăн:
Юн юхни — шыв юхни мар.
Сăмахпа та йăлăнатăн,
Куçупа та: çăл, хăтар...

Хĕр çыхса ярать алхапăл
Сурана вута кĕрсе;
Çулăмран йăтса тухать вăл
Паттăра тирпейлесе.

Пĕчĕкçеççĕ шур кăçатă,
Шурă кĕрĕк, малахай...
Йăл кулса ярать-çке çав та —
Çаврăнать чĕре ун май.

Çапăçса вилме те хатĕр,
Çĕнтерме те йĕкĕтсем.

Пĕринче, асрах тăрать-тĕр,
Пулчĕç ак епле ĕçсем...

Сивĕ-сивĕ шартламаччĕ,
Пат ÿкетчĕç кайăксем.
Кун каçах вăрçин хăвачĕ
Хĕрсе пычĕ хĕрнĕçем.

Ик-виç хут та куçрĕ пулĕ
Аларан алла пĕр ял.
Шăхăрать хисепсĕр пуля,
Тытăçаççĕ алла-ал.

Нимĕçсем те тăкăнаççĕ,
Тăкăнаççĕ хамрăн та.
Унсăр пулмĕ вăрçă-харçă,
Е çĕнтер, е вил унта.

Янăрать: «Тăван çĕршывшăн!
Халăхшăн! Атакăна!..»
Çапрĕçех, кăларчĕç, йышлăн
Тапăнсан та, тăшмана...

Пĕчĕкçеççĕ шур кăçатă,
Шурă кĕрĕк, малахай...
Вăхăт çук ăна канма та,
Ыткăнать вăл пĕрехмай.

Йăпшăнса та çывăхарчĕ,
Пытанса та — чи мала;
Темиçе çынна хăтарчĕ,
Йăтса таврăнчĕ яла.

...Илĕм-тилĕм кăвак çутă
Курăнайрĕ сисĕнми.
Тÿпере ик-виçĕ çăлтăр
Тĕлкĕшет сÿни-сÿнми.

Шĕвĕрех уйран пек уйăх
Тăрă, сивĕ сывлăшран
Сăрхăнса çухалчĕ — урăх
Курăнмассăн нихăçан.

Хăшĕсем чăнах та ĕнтĕ
Курас çук çав уйăха.
Сивĕ хĕл те, йывăр хĕн те
Хăратмасть вĕсене халь.

Аллинчен пăшал ямасăр,
Тăн пур чух тĕлле-тĕллех,
Тĕшрĕлсе анайнă паттăр
Хĕвел анăç еннелле.

Хурланма та, пуç тайма та
Пирĕн вăхăт çук паян.
Ун ятне — мухтав янратăр
Хăй хăтарнă çĕршывран!

Чăн-чăнах вилĕмĕпе вăл
Халь çĕнтернĕ вилĕмне.
Ун йĕрне тăманлă тăвăл
Пытараймĕ ĕмĕрне...

Пĕчĕкçеççĕ шур кăçатă,
Малахай... Миçемĕш-ха
Йăпшăнса та, шăвăнса та
Натали пырать-ши халь?

Çӳçĕ кăшт тухса пасарнă,
Хăй чие пек — хĕп-хĕрлех.
Куçĕсем ун сапаланнă, —
Çывăрман çĕрĕпеле.

Пур тĕнче, пур япала та
Темле çĕннĕн курăнать.
Тасарах куран, хаклатăн
Хаклăрах вара ăна.

Шухăшсем раснах хăюллă,
Уçăрах, татăклăрах:
«Ну, лексессĕн выртса юлăп,
Ан ыраттăр çеç вăрах...

Вилĕм килтĕр вăл сасартăк...»
Анчах пурнăç ĕмĕчех
Вăйлăрах та, пысăкрах та
Наталийĕн чĕринче.

Мĕн усси, мĕскер хăварĕ
Ăнсăртран вăл тĕшрĕлсен?
Икĕ хут вилетĕн мар-и
Çамрăклах çĕре кĕрсен?

Пурăнма та пуçламасăр
Пурнăçран епле писен?..
«Санитар!.. Сестра!..» — тет сасă
Кĕрт хысакĕ хыçĕнчен.

Натали пырать хăюллăн,
Ахлатса выртать пĕр çын:
Шурхăн сăнлă, пысăк куçлă,
Мăйăх сăрнă яш грузин.

Натали пĕр тăхтамасăр
Çыхса ячĕ яш çынна;
Йăтрĕ: «Тыт мăйран, каятпăр», —
Терĕ вăл çав грузина...

Хĕç-пăшалĕ таврашне те
Хăвармарĕ унăнне.
Ял патне çитет вăл ĕнтĕ,
Йывăр, кансĕр мĕскĕне.

Суранланнă çын асаплăн
Йынăшса илсессĕнех —
Тивертет, çĕçĕпе каснăн,
Наталийĕн чĕрине.

Анкарти тăрăх пырать хĕр,
Ак кĕрет пĕр сарая.
Кĕчĕ çех вăл — аçа çаптăр! —
Икĕ çын курах каять.

Гитлер икĕ эсремечĕ
Кĕнĕ тăнă леш вĕçе.
Ак пĕри кĕрĕслеттерчĕ
Натали енне кĕçех.

Грузина хурать, ун урлă
Ыткăнать хĕр малалла.
Чăштăртатрĕ типĕ улăм,
Наталин васкамалла.

Шутласа-туса тăмарĕ,
Пĕтĕм юн сиксе вĕрет:
Пĕрне печĕ те пăрахрĕ,
Тепĕри каллех перет.

Пĕçертсе сăхса хăварчĕ
Пĕр сăпса хулпуççине.
Сулăнса кайса таянчĕ
Натали хăма çумне.

Тăнĕ пур-ха ун, çĕтмерĕ,
Çавăнтах вăл темиçе —
Кĕрĕс-кĕрĕс ответлерĕ
Перекен çав нимĕçе.

Сарайри çурма сĕм сутă
Сăнсене кăшт тĕссĕрлет.
Натали çапах та курчĕ —
Нимĕç ӳкнĕ месерле.

Пĕр самант пек хĕр тăнларĕ...
«Тĕсĕ!» — терĕ, грузина
Улăмпа витсе майларĕ,
Хăй çапла калать ăна:

«Час сана килсе йăтаççĕ...
Ял халь пирĕн, ан кулян...»
Сăрт çинче шав çапăçаççĕ,
Аякрах та мар ялтан...

## XIV. Парне

Чарусăр çил пĕр тăтăш
Уй-хир тăрăх çӳрет,
Кăшт тамалать те — кăпăш
Малтанхи юр кӳрет.

Юр — çăмăл. Аса килĕ
Çĕмĕрт çеçки сире.
Каçпа шăнтать те — çилĕ
Каллех хивре, хивре.

Пур шăтăк-шăхăр витĕр
Вăл шăхăрать юри...

«Прaçник те çитрĕ, Виктор...» —
Тет шухăшлăн Энтри.

«...Ыран Октябрь кунĕ...
Эпир хăть окопран
Сайра ку яхăн тухнă,
Çыру та пит çырман.

Килте кăçал мĕнле-ши?
Мĕнле иртет уяв?
Хыпар кĕтеттĕм, темшĕн
Килмерĕ-ха паян...»

Çав самантрах чĕнеççĕ
Ятран çак ик туса,
Ăшă парне сĕнеççĕ
Хастаршăн ыр сунса.

Çĕршыв, тăван çĕршывăм!
Туятпăр ырлăхна.
Ўстеретĕн паттăр ывăл,
Пăрахмăн çав ăна.

Вут урлă, çулăм урлă
Такам ав ал парать.
Энтрин хавaслă кулă,
Вăл парнине пăхать.

Хĕç витĕр, пуля витĕр
Çын кăмăлĕ çитет.
Парне салатнă Виктор,
Çыру та вăл илет:

«Юлташ хĕрлĕ армеец!
Кăмăл тусам манран
Çак парнене илме эс,
Парап чунтан-вартан.

Сана пĕлместĕп эпĕ,
Тен, пĕлмĕп нихăçан.
Анчах çĕршыв хисепĕ,
Пĕлеп, килет санран.

Эс вырăс-и, тутар-и,
Эрмен е молдаван,
Ман кăмăла тултарĕ —
Парнен усси пулсан.

Хам арласа хам çыхрăм
Çак ăшă чăлхана.
Унпа нумай çĕр çухрăм
Хăвалăн тăшмана.

Çăм çип ăшăтмасассăн
Чĕрем ăшăттăрах.
Тапта усал тăшманăн
Ури çине часрах!

Хам арласа хам çыхрăм
Çак ăшă алсана.
Тыт çирĕп, паттăр çыннăм,
Унпа эс пăшална.

Ярать колхозăн хĕрĕ
Сана çак парнене.
Хăйне кура ĕçлерĕ
Вăл чыслăн хăй ĕçне.

Камне пĕлес килсессĕн
Пытармăп эп, пĕлсем:
Верук тесе чĕнеççĕ
Мана ял-йышăмсем».

Энтри ыйтать: — Килтен-и? —
«Çук, — тет юлташĕ, — çук.
Чăлха çумне çĕленĕ,
Çырать темле... Верук».

Энтри вуларĕ: «Чкалов»
Колхоз... Районĕ те,
Республики те... — Паллă.
Алли те çавăн», — тет.

«Маттур, маттур Верукăм!»
Хыпса ӳкет Энтри.
Тухса тарас пек шуххăн
Таклаттарать чĕри.

Анчах унтах хăй ассăн
Сывларĕ пĕр кана.
«Мĕскер эс? — терĕ Басов. —
Мĕн пулчĕ-ха сана?»

— Нимех те мар, юлташăм,
Туртар-ха, çавăрар.
Ик тантăш пĕр çулташăн
Пĕри айăплă мар. —

«Мĕскер эс юптаратăн?
Ăнланаймастăп эп, —
Тет Басов аптăранăн, —
Кала-ха чăннипе».

— Нимех те мар, тăванăм:
Аннем эп çуралсан
Телей ыйтмашкăн маннă
Кăвак хуппи курсан. —

«Мĕскер тĕшмĕшленетĕн?
Йӳтерĕн-им элле? —
Тет Виктор кăшт кӳреннĕн. —
Кала тӳррипеле».

— Нимех те мар-ха, тантăш,
Манар пур чир-чĕре.
Паян вĕт сан та, ман та
Тăшманăмăр пĕрре.

Пĕрле тӳсетпĕр, тусăм,
Мĕнпур сивве-ăшша.
Çитерĕпĕр, тен, тӳсĕм
Кунта та, тантăш, а?

Çĕршыв пире хушсассăн,
Хушсассăн самана —
Пултарăпăр манмашкăн
Пур хамăр нушана.

Хытарăпăр хăюллăн
Чуна та чĕрене.
Хĕç пултăр ăшри çулăм,
Çĕнмешкĕн вĕренер.

Илемлĕ, киленӳллĕ,
Чуна кăтăклакан
Ачашлăх килĕ ӳлĕм,
Халь хыт та шăнăрлан.

Тӳрех калас пулсассăн,
Парне яраканни —
Вăл пирĕн ял... вăл манăн
Савни... ăнлантăн-и?.. —

«Чудак эс! — терĕ Басов. —
Каласчĕ тахçанах...
Ме!» — Энтрие хавассăн
Парать вăл чăлхана.

— Çук, çук, — тет Аптраманĕ, —
Ху телейӳ — хăвна.
Мана... мана вăл манмĕ,
Пĕлетĕп эп ăна... —

## XV. Илмен кӳлĕ хĕрринче

Илмен кӳлĕ хĕрринче те,
Илмен кӳлĕ хĕрринче
Ак мĕн пулчĕ пĕринче те,
Ак мĕн пулчĕ пĕринче...

Хурçăланă пысăк кимĕ
Хумхантарнă Илмене.
Çав кимме çӳретнĕ нимĕç
Вăрттăн кунĕн-çĕрĕнех.

Кимĕпе вăл çар ăсатнă
Унталла та кунталла.
Шыв çинче чарусăрланнă
Вăрăлла та хурахла.

Пăр шăнсассăн кимĕ ларнă
Хӳтĕ бухта варрине.
Кимĕ ларнă та сăнанă
Таврара мĕн пуррине.

Ун çинче — çĕр çын та пулĕ —
Пулнă теççĕ нимĕçсем.

Тупписем те темĕн чухлĕ
Пулнă имĕш кимĕçсен.

Хĕл каçмашкăн хатĕрленнĕ
Çавăнта çав сĕмсĕрсем.
Пирĕн сиснĕ, пирĕн пĕлнĕ,
Тăкас тенĕ çĕмĕрсе.

Шухăш чăрсăр, шухăш харсăр,
Ĕç тумашкăн хĕнтерех.
Тумалла ним тăхтамасăр:
Вăхăт та халь çĕнтерет.

Командир каласа пачĕ
Çав тăшман кимми çинчен.
«Салатасчĕ, — тет, — ватасчĕ,
Анчах — кимĕ сисиччен...»

Аптраман Энтри (пĕлетĕр?)
Çитнĕ вăл Илмен патне.
«Ну, Пожарский князь, мĕнле?» — тет
Шӳт туса хăй юлташне.

Ун юлташĕ Викторах-мĕн,
Кăвак куçлă Басовах.
Пĕр-пĕрне вĕсем пăрахмĕç
Виличчен те, ахăрах.

Шывра путмĕ тенĕ евĕр,
Вутра çунмĕ тенĕ пек
Туслăх çав пурнать пĕртен-пĕр
Пархатарлă ĕмĕтпе:

Хамăр çĕршĕн, çĕнтерӳшĕн,
Чи таса тăванлăхшăн
Пĕрле вăрçăн, пĕрле тӳсĕн,
Вилĕн те кирлех пулсан.

«...Ну, Пожарский, мĕн тăватпăр?» —
Терĕ Виктора Энтри. —
Тен, сан Невский Александр
Пулма вăхăт çитмери?»

Авалхи çав вырăс паттăр
Çич çĕр çул шăп ĕлĕкрех
Йытă рыцарьсене ватнă
Пăр çинче чип-чиперех.

Аптраман чухлать, вуланă:
Пĕр чăваш историçи:
«Чăвашсем те вирлĕ панă
Вĕсене...» — тет, тĕрĕс-ши?

— Мĕн тăвар-ха? — терĕ Виктор. —
Шухăшлас пулать-тĕр мур!.. —
«Хăвăрт! — тет Энтри. — Халь пиçтĕр!
Ман пĕр шухăш пекки пур...»

Аптраман Энтри аптрать-и!
Ку пулманччĕ халиччен.
Хĕвĕшет, çуралчĕ, хатĕр
Харсăр план ун пуçĕнче.

Вăл çуна туса майларĕ,
Ансăр, çăп-çăмăл çуна;
Мăшăр йĕлтĕр çине лартрĕ
Лайăхрах çыхса ăна.

Çунаран кăкарчĕ хурçă
Телефон пралукĕ вăл.
Кнопка хучĕ. Пурте пулчĕ.
Кирлĕ... сивĕ çил-тăвăл.

Хăçан килĕ çурçĕр çилĕ
Хĕвеле хăлхалатса?
Тĕттĕм каç çеç вара кирлĕ
Пăр çителĕклĕ хытсан.

Çитрĕ çил те, хулăмлатрĕ
Сив мучи Илмен пăрне.
Тĕттĕм каç та хупăрларĕ,
Энтри анчĕ çыр хĕрне.

«Ну, Пожарский, то есть Басов! —
Тет Энтри хăй юлташне. —
Пĕр чăваш пĕтес пулсассăн
Асăн мĕншĕн пĕтнине.

Çĕрĕшне е кăшт ытла вăл
Тăшмана хăй аркатсан,
Ну, ун чух... сочтемся славой,
Сăвăç евĕр каласан.

Ак кунта шăнкравĕ пулĕ,
Хам ĕçе тусассăнах
Кнопка пусăп эп, мĕн чухлĕ
Вăю пур — эс турт часрах.

Туртăр, тусăмсем, мĕнпурĕ;
Хальлĕхе телейлĕ çул,
Ăнăçу сунсан та юрĕ.
Кайрăм эпĕ...» — Сывă пул!.. —

Аптраман Энтри ак выртрĕ
Ерипен çуна çине,
Ик енчен хуллен вăл тĕртрĕ
Аллипе Илмен пăрне.

Шăвăнма çуна тапратрĕ
Çĕрлехи атакăна.
Пăр пăртакçă шăтăртатрĕ,
Такана пек авăнать.

Çул инçе те йывăр, кансĕр,
Темиçе сехет иртет.
Аптраман шăвать канмасăр,
Тапхăр-тапхăр кăшт итлет.

Илтĕнмест ниçтан пĕр нимĕн,
Фашистсем лăпках, куран:
Аякра тăрать-çке кимĕ...
Анчах çитрĕ Аптраман.

Курăнмасăр çывăхарчĕ
Хурçăланă ким хĕрне,
Вăрттăн çеç хурса хăварчĕ
«Кучченеç» мĕн кирлине.

Шнурне чĕртрĕ те вăл пусрĕ
Хăвăртрах хай кнопкăна.
Лере Виктор илтрĕ, туртрĕ.
Сĕтĕрет часрах ăна.

Сĕтĕреççĕ ыттисем те,
Ярăнать çуна калла.
Пĕр ик-виç минут иртет те —
Кимĕ шарт çех çурăлать:

Тип аçа пек килсе çапрĕ
Урăм-сурăм çав хăват.
Пур çынни, туппи-масарĕ —
Çӳлелле, унтан — шыва.

Аслати сасси илтсессĕн,
Вут-кăвар çути ӳксен
Леш енчен перкелешмешкĕн
Тапратаççĕ нимĕçсем.

Анчах харсăр йĕкĕт ĕнтĕ
Блиндажа пырса кĕрет.
Именсе кулса илет те —
Чей ĕçет вĕре-вĕре.

Командир ал тытрĕ: — Тав! — тет. —
Çакăн пек пул ĕмĕрне. —
«Халăха служить тăватăп, —
Тет Энтри, — Совет çĕрне!»

### XVI. Аптраман кăмака шăлать

Перкелешрĕç çĕрĕпе.
Час чакмарĕç тăшмансем.
Кăвак çутă килеспе
Тӳсеймерĕç тек вĕсем, —
Тухса тарчĕç каялла.
Хĕрлĕ Çар кĕрет яла.

Аптраман Энтри ялта
Улахрах кĕтессене,
Тăкăрлăксене йăлтах
Тĕрĕслерĕ ирчченех.
Халĕ вăл утса пырать —
Çитнĕ тейĕн мăн парад.

Ăнсăртран кăчăк туртса
Пĕр матка ăна чарать,

Темĕскер вăл васкаса
Хăлхинчен пăшăлтатать.

Аптраман унпа пĕрле
Чупрĕ кĕчĕ пӳртелле.

«...Хам пӳртрен хама хуса
Кăларни çитмест вĕт-ха,
Пĕр шуйттанĕ — ав, курсам —
Ăçта кĕнĕ!» — тет матка.
Ку мĕскер? Кăмакара
Пĕр фашист вырта парать.

«Нимĕç, нимĕç, нимĕçле!
Мĕскере ку тивĕçлĕ?
Тух часрах кăмакаран,
Çăкăр хывмалла халь ман», —
Тет матка такмакласа.
— Тух! — хушать Энтри. — Тасал! —

Нимĕç тухрĕ. Кĕл кăна.
Чĕркуçленчĕ, йăлăнать.
Çĕтĕк симĕс шинельпе,
Çăм чăлха ун мăй тавра.
Пăхсан çав тери шел пек
Сурăх тирлĕ кашкăра.

«Тăр, ариец! Каярах
Ӳкĕнетĕн-çке ара,
Мĕн мана халь пуççапма? —
Тет Энтри. — Эп Геббельс мар...
Ут, ариец! Эс ан ман:
Хушамат ман — Аптраман».

Энтри нимĕç салтака
Танкăлтаттарса пырать.
— Хытăрах эс! — тет матка. —
Прикладпа харам пыра!.. —
«Тивес мар, — тет Аптраман, —
Кĕллес мар прикладăма...»

Пырса çитрĕç компункта.
Виктор курчĕ: — А!.. Лекри?

Ма варланчăк пит тата? —
«Ан кĕрле-ха, — тет Энтри, —
Пăртак шăннă ахăрах, —
Çывăрать кăмакара.

Ну, мелке пек, шинельпе
Шăлса тухрĕ кирпĕçе...»
Хыпарларĕç йĕркипе,
Салтăнтарчĕç нимĕçе:
Вăрăм чĕнтĕрлĕ кĕпе,
Хăй хĕрарăм йĕмĕпе.

Эдмунд Шиффке. Рядовой.
Утмăл саккăрмĕш полкран.
Маргарита майлă вăл
Курăнмасть-ши салтăнсан?
Çук çав, ун ĕнси çинче
Хурт куççи пек пыйтă çеç.

Фашистсем çĕрле ялтан
Вărттăн шунă та тухса,
Халсăрланнă çак салтак
Юлнă имĕш çывăрса.
Вăратман та хĕрхенсе
Çак пыйтланнă нимĕçе.

— Мĕншĕн эсĕ çаратан? —
Тесе ыйтрĕç салтакран.
Вăл калать: «Йĕрке çапла,
Хушăн ху тăрăшмалла.
Хĕллехи тумтир паман,
Çиме çук, вилес-и ман?»

— Мĕншĕн эсĕ çапăçан? —
Тесе ыйтрĕç салтакран.
Вăл калать: «Эп ун çинчен
Шутламанччĕ халиччен.
Хушнă — кайнă. Малашне
Шухăшлатăп пулинех...»

— Шухăшла! — терĕç ăна,
Кĕленче пек пуш куçа.
Эдмунд Шиффкен халь, чăнах,

Темĕнле мĕлке куҫать...
Пуҫласа хăй тивĕҫин
Чăн хакне пĕлмест-ши ҫын?...

## XVII. Сарлака ҫунат

Хĕллехи кун тĕксĕмленчĕ.
Шăрпăк ҫутрĕҫ те шалта,
Председатель кабинечĕ
Янк ҫуталчĕ саманта.

Сивĕрех те, кăшт пасарнă
Кăраҫҫын лампин тăрпи.
Хăюне кĕске кăларнă, —
Шартлатса ан кайтăр пит.

ГЭС тума пĕвелеме те
Пулнăччĕ те ял шывне,
Вăрҫă чарчĕ-ҫке ...теме те
Чарчĕ вăл, хăҫанччене?

Кĕленче типет. Хăпартрĕ
Хăюне пăртак хуҫи.
Шăлкаларĕ те кăшт лартрĕ.
Ҫук, Самаев мар ку ҫын.

Вăрҫăра ҫӳрет Самаев,
Халь Илле ун вырăнне.
«Халăха ертсе пыма-и?! —
Тет хăй. — Так... ҫын ҫук енне...»

Аптраман хаҫат вулать те
Шухăша каять: тыл, фронт...
«Чăнласах та Головатый
Пулмалла ҫав Ферапонт.

Ăнланса илме пултарнă
Фронтпа тыл пĕр иккенне,
Халăха та ăнлантарнă —
Кăларайнă енчĕкне.

Ҫĕр пин панă! Пурнăҫне те
Вăйлă пурăннă, куран...

Ун сикки сикеймесен те
Эп çапах, хама кура,

Çын çинче çынахчĕ халĕ, —
Тет Илле пичче, — тата
Самани пире мĕн калĕ?
Пулăшу кирлех фронта.

Манăн йышăм унта мар-им? —
Икĕ ывăл та пĕр хĕр.
Герман темĕншĕн çырмарĕ,
Тупăнĕ-ха, чĕрĕ-тĕр...

Тен, пичетлĕç хаçата та
Манăн хушаматăма.
Мухтанасшăн мар калатăп,
Ачасемшĕн ку сăмах.

Ачисем ман куçлă-пуçлă,
Курĕç, тен, çав хаçата;
Хытăрах вăрçма та пуçлĕç;
Курĕ, тен, Самаев та.

Эс те кайрăн çав, хăйматлăх!
Ман çие халь тиенет
Сан ĕçӳ. Юрать-ха халăх
Ĕненет, итлет, ĕçлет.

Вată-вĕтĕ те хĕрарăм,
Вăйпитти пачах та çук...
Ферапонт... Çапла. Ку — парăм,
Чыслă парăм вăрçă чух».

Çĕнĕ шухăш тĕвĕленчĕ
Аптраманăн пуçĕнче:
Эй, пĕр самолет илсенччĕ!
Вăй çитеймĕ çав пĕччен...

Халăха çураçтарсассăн
Епле пулĕччĕ унта.
Колхозпа илес. Кăшт-кашттăн
Калаçса пăхас малтан...

Халь, ăна-кăна кĕтмесĕр,
Килĕнче мĕн пуррине
Хисеплет Илле пиччемĕр,
Пĕркелет çамки тирне.

Сутлăх тырă пур пăртакçă,
Пыл та пур-ха пĕлтĕрхи,
Çур енне хакла тăрать-çке...
Вăкăр пур ун ик çулхи.

Пăрахут кайсассăн килĕç
Çĕр улми илекенсем;
Хĕл каçарнă пахча çимĕç
Кăшт суткалĕç арăмсем...

Атăл халь ĕнтĕ тасалчĕ
Тăршшĕпех теес пулать.
Фронт анăçалла ăсанчĕ,
Час тăшман шалчи тулать.

Аптраман пăхать Союзăн
Кивĕрех картти çине.
Аслă вăрçă пуçланусăн
Илнĕ çеçчĕ карттине.

Ял «стратегĕсем» мĕн чухлĕ
Тĕрлĕрен кăранташпа
Çав картта чĕрмерĕç пулĕ
Каллĕ-маллĕ унтанпа!

Алăран алла сахал-и
Куçрĕç пирĕн хуласем?
Лăш сывларĕ пĕтĕм халăх
Хамăр çар çĕнтернĕçем.

* * *

Головатый патриотăн
Ĕçĕ анлăн сарăлать.
Чăвашла та Ферапонтăн
Тусĕ-йышĕ хушăнать.

Çирĕм пилĕк пин те аллă,
Çĕр те хыврĕç хушăран.

Лайăхчĕ «Валерий Чкалов»
Самолет туса парсан.

Колхоз ячĕ-çке. Вĕçевçĕ —
Чĕрĕ пек. Каларăм-ха:
Чкаловсем тесе чĕнеççĕ
Çак ялти пур халăха.

Тĕллĕ, меллĕ пулма кирлĕ
Çав ята вăрçа кĕртсен.
Активсем калаçрĕç вирлĕ,
Витерсех çав ĕç çинчен.

Çуркунне йӳнеçтересчĕ,
Юлас мар çынран кая.
Тутарасчĕ те пиллесчĕ,
Сăмахран, пĕр Героя.

Чăвашсем те, ахăр, тухнă
Паттăра ку вăрçăра?
Пур, паллах. «Чăваш коммуни»
Çырчĕ-çке пĕр кун, ара.

* * *

Аслă, ăслă çут çанталăк
Пĕрмаях енчен енне
Çавăрать, сирет çулталăк
Кĕнекин листисене.

Ĕмĕр чĕрĕ, ĕçлĕ, харсăр
Çут тĕнчемĕршĕн тесен, —
Мĕн ăна çак вăрçă-харçă,
Çак этем инкекĕсем!

Е ун пеккине курман-и?
Ах, çак пĕлĕтпе çĕре —
Çилĕ, тăвăлĕ, тăманĕ,
Шăрăхĕ, сивви — пĕрлех.

Пур мехелĕн те хăй карчĕ —
Çавăнтан ак çак таран...
Хăпарту пек çĕр хăпарчĕ,
Пăсланать ăшăпалан.

Ав хуртсем йăраланаççĕ,
Суккăр вĕлтĕрен çинче,
Кăчкăсем çинче нăрлаççĕ
Чечексем çурăличчен.

Кайăксем вĕçсе килеççĕ
Тинĕс урлă, катаран.
Ав Аптрамансен чĕкеçĕ
Сăвăлать чунтан-вартан:

«Кĕр каятпăр, çур килетпĕр,
Пирĕн кăмăл пĕр пекех.
Хапăл-и, салтак Хĕветĕр?» —
Тенĕ пек вăл старике.

Асатте вĕллисемпех-мĕн
Маташать яра куна:
Шалчасем çапать тĕреклĕн
Эхлетсех пуш вырăна.

Çаврăнса пăхман иккен те —
Ывăл тухнă: «Мĕнле пек?
Чухлаканччĕ эс, атте, — тет, —
Пулмалла пек-и чечек?»

— Тепле-ха... Хĕл шурă ларчĕ,
Шыв та тикĕс сăрхăнчĕ.
Пархатарĕ пулаканччĕ
Çавăн пек хĕл хыçĕнчен... —

Ывăл савăннă пек пулчĕ,
Ашшĕне те кăмăллă.
Ашшĕ чĕлĕм чĕртсе юлчĕ,
Ывăл кĕчĕ çăмăллăн.

* * *

Хĕрĕх тăхăр пин пуçтарнă
Хĕл хута Илле пичче.
Йӳнеçтернĕ, кăшт хытарнă
Пурнăçне хăш-пĕр енчен.

Аллă пин хуçа хывасшăн —
Шăнкăрт тенкĕ тенĕ пек.

Икӗ мӑшӑрӑн канашӗ
Халь пырать ҫав енӗпе.

«Хӑвӑрах пӗлетӗр, — терӗ
Кил-йышне Илле хуллен, —
Пирӗн ял та час вӗҫтерӗ
Самолет хӑй вӑйӗнчен».

— Ярапла вӑл, — ӑнлантарчӗ
Кил ватти хӑй мӑшӑрне.
«Ёхӗ», — терӗ шӑппӑн карчӑк.
Ывӑл тӑсрӗ сӑмахне:

«Укҫине хывсах тӑраҫҫӗ
Ял-йышсем вӑй ҫитнипе.
Ман парас пулать пӑртакҫӑ
Ытларах пуль тетӗп эп.

Эп ҫапах та — колхоз пуҫӗ...»
— Уншӑн ҫеҫ те мар та-ха, —
Тет ватти, — ҫынран ан юл ҫав,
Аптраман тени паха! —

«Хӗрӗх тӑхӑр пин пуҫтартӑм», —
Тет Иллемӗр. — Аюях! —
Тет Хӗветӗр. — Мӗн сутар-тӑр?
Чӑмӑртанаймасть кӑштах. —

Сӑпани калать: «Тен, ҫитӗ?
Тӗш укҫа-ҫке-ха, ачам!»
Кулине хушать: — Хӗн питӗ,
Тем кӑна сутса тӑвам? —

«Ун вӗҫне юлман, ан юлтӑр! —
Терӗ аслӑ Аптраман, —
Аллӑ пин тӗк аллӑ пултӑр —
Ан йӳнел ман шутпалан!»

— Авалхи сӑмах каларӑш —
Пӗрне ҫых, пӗрне вӗҫер.
Йӳнеҫтерӗпӗр, — тет амӑш,
Кулинемӗр, хайхискер.

«Сан, асламăш, пурччĕ мар-и
Çӳпçӳнте хушпу-тухья? —
Тет аслашшĕ. — Тен, сутар-и?
Урăх лармăн теп туя».

— Кай, аслашшĕ! Пакăлтатрăн...
Кам хăтлантăр ку чухне? —
«Ийя ну! А Шупашкарăн
Пикисем валли — ятнех.

Пĕлтĕр килнĕ хĕр упраçăн,
Ташă-юрă ăстисен,
Тухйисем ытла пăрахçă —
Шăвăç — терĕç ял-йышсем.

Хак парсах санне туянĕç,
Сан мерчен те, кĕмĕл те.
Шӳлкеме, тевет... пуян эс!»
— Чим-ха эс, ан йĕкĕлте. —

Аслă ывăл — председатель —
Перекет кĕнекине
Уçкалать те, хупкалать те,
Çат çапать хăй çамкине.

«Чимĕр! — тет вăл. — Астуман та:
Çĕн çултан вара кунта
Процентне хушса хуман-тăр.
Хĕрĕх тăхăр пин... чăн та!

Пулчĕ! — тет вăл. — Ан кулянăр,
Аллă пин хăех тулать.
Йăлт шута илсессĕн, ахăр,
Перекечĕ те юлать».

* * *

Аптраман хыпарĕ çитрĕ
Района, Шупашкара,
Çунатланнă пек çул тытрĕ
Мускава çитех вара.

Ял-йышсем пуçтарса панă
Сум çинчен те, тĕплесе,
Çавăнтах хушса каланă —
Самолет илме тесе.

* * *

Çуллахи ем-ешĕл улăх,
Чăп-чăпар ларать чечек.
Кунĕ ăшă, кăмăл тулăх,
Ярмухха çырми тӳлек.

Ансăр çеç иккен те шывĕ,
Каçмасем ун тăршшĕпех
Хурса тухнă питĕ йăвă —
Пĕтĕм ял каçмалла пек.

Вата-вĕтĕ, ар-хĕр тантăш —
Йышлă пухăннă этем.
Районтан, Шупашкартан та
Килнĕ терĕç хăнасем.

Ят тухман ялти яш-кĕрĕм
Тăркалать ушкăнпала.
Йышлăланнă ялăн хĕрĕ, —
Туй сайралнă пулмалла.

Авалхи сăмах каларăш —
Йĕрĕлче йăмăкĕсем,
Кĕвенте е кисĕп аппăш —
Тухнă йăлт кĕпĕрленсе.

Галстуксем кăвар пек хĕрлĕ
Пĕр йĕркеллĕ ушкăнта.
Шкул ачи-пăчи пуль, тĕрлĕ
Çи-пуçпа пулсассăн та.

Аптраман Палли те авă,
Тăхăр класс пĕтернĕскер.
Шухăша кайса тăрать вăл —
Хытканрах, яштак, чипер.

Каяйман-ха вĕренмешкĕн
Вăл ниçта та колхозран:
Пиччĕш хушнă пĕтермешкĕн
Вунă класс ăна малтан.

Пиччĕш, Герман, уншăн халĕ —
Ăс виçи те чун виçи.

«Çамрăк пуçăн идеалĕ», —
Тет учитель, лайăх çын.

Ку хайхи — ăна пĕлеççĕ —
Аполлон Иванч Турхан.
Тахçанах илет те пенси —
Вĕрентет-ха, пăрахман.

Вĕренет çаплах Тамари,
Хамăр тухтăр пулĕ час
Тенине илтме чыс мар-им?
Апшĕ кăмăллă, хавас.

Тава тивĕçлĕ учитель
Хăй республикăмăрта;
Депутат вăл, орден илчĕ,
Пултарать-ха, ăмăртать.

Ачасемпеле ялан вăл,
Ав коллега хушшинче
Ун Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялавĕ
Çиçсе илчĕ умĕнче.

Вăл Палля енне тинкерчĕ
Куçлăхне йăлкăштарса.
Тен, ача аса илтерчĕ
Пиччĕшне, хурлантарса?

Кайрĕ те хыпар тумарĕ
Герман. Те вăл пур, те çук?
Саламне кăна каларĕ
Аппĕ хĕрĕх пĕрмĕш çул.

Ăслăччĕ вĕренекенĕ:
«Аполлон Иванăча
Час çыратăп уйрăм», — тенĕ
Аспирант салтак. Анчах...

Унтанпа килне те урăх
Çырмалла пулман тем ун?..
Шăллĕн те шăпах çав хурлăх
Çак уяр, илемлĕ кун.

Çук, çырмасть хальччен те пиччĕш.
Темĕн тĕрлĕ шухăш та
Сӳтсе явĕччĕç ак иккĕш,
Халь вăл ӳснĕ-çке кăштах...

Çук, çырмасть. Ăçта, ăçта вăл?..
Анчах ак Хусан енчен
Самолет килет, йăл та йăл
Курăнать хĕвел çинче.

Виççĕ çаврăнчĕ те ларчĕ
Самолет çаран çине.
Летчик тухрĕ, рапорт пачĕ
Ятлă-сумлă çынсене.

Çырнă-мĕн Валерий Чкалов
Самолетăн ик енне.
Алă çупрĕ ячĕ халăх,
Сырса илчĕ летчикне.

Героях иккен вăл, паттăр
Асламасов капитан.
«Ылтăн Çăлтăр» та куратпăр
Комбинезонне хывсан.

Хăй пăхма тем мар: пĕр майлă,
Хамăр пек чăваш кăна;
Сăнĕпе те пит сăпайлă,
Калаçать те лăпкăнах.

Куçĕсем кăна малтан ун
Йăл кулса ĕлкĕриччен
Çиççе илчĕç ăмăрт халлăн
Сăран шлемĕ айĕнчен.

Ун çине пăхсассăн шухăш
Сарлака çунатпала
Харсăррăн, хăюллăн, шуххăн
Вĕçнĕ пек аяккалла.

Ак унпа утса пыраççĕ
Аптраман Илли тата
Ялпала районăн влаçĕ,
Обкомри те пур кунта.

Шупашкар корреспонденчĕ
Хатĕрленĕ блокнотне.
Кирлĕ пулĕ сăнӳкерчĕк,
Ав фотограф та ятнех.

Кепкине вăл кутăн лартнă —
Сăмсипе хыҫалалла.
Самолет сăнне ҫаклатнă
Паҫăрах лейкăпала.

Пилотне те темĕн тĕрлĕ
Вăл ӳкернĕ малтанах.
Халь татахваскать, хăй хĕрлĕ,
Ăшша писнĕ аванах.

Пĕшкĕнет те, кукленет те,
Кутăн та утса пырать.
Ҫын умне те, айккине те
Ĕлкĕрсе «эффект» шырать.

Ак хăмач карса пĕтернĕ
Вăхăтлăх трибунăна
Йышăнаҫҫĕ те пĕрерĕн,
Чаплă митинг тапранать.

Юнашар ларан ҫăкалăх
Сывлăша сулхăнлатать.
Тинкерсе итлет пур халăх,
Сăмаха Илле пуҫлать.

«Ял-йышсем, хăна-вĕрлемĕр,
Пуҫлăхсем те! Паян кун
Ҫав тери телейлĕ эпĕр,
Савăнса ҫĕкленчĕ чун.

Ҫитнĕ ĕмĕт питĕ хаклă:
Паттăр ăмăрт кайăка
Самолет паратпăр, ак вăл,
Вĕҫтĕр харсăр аякка!

Ирĕк ҫĕр ӳстернĕ ывăл,
Ҫак манпа тăраканни —
Хамăр халăхăн ачи вăл,
Асламасов Анани.

Вăл чăваш ятне çĕртмерĕ,
Халь те çĕртмĕ тетĕп эп.
Совет халăхĕ çĕнтерĕ,
Аслă парти пирĕнпе!»

Кил ватти — салтак Хĕветĕр
Таянса çăка çумне
Ывăлне итлерĕ те пĕр
Тĕртрĕ хăйĕн кӳршине:

— Асламас тавраш темест-и?
Шеп ӳстернĕ йĕкĕтне!
Ăçталли этем? — «Пĕлместĕп,
Илтнĕ пек хушаматне...»

Татăлса ӳкес çырла пек
Пиçсе çитнĕ хĕрĕсем
Капитан çинех — курап эп! —
Пăхкалаççĕ хĕрĕнсе.

Ак ун сăмахне итлеççĕ,
Кăлт та кăлт пĕрне-пĕри
Чавсипе тĕртсе илеççĕ:
«Паянах каять-тĕр-и?..»

Асламасов евитлерĕ:
«Çак самолета илсе
Эп тупа тăватăп, — терĕ, —
Ун ятне те çĕртмессе.

Пирĕншĕн, пур пилотсемшĕн,
Чкалов ячĕ — чыслă ят.
Çĕнтермешкĕн, мир кӳмешкĕн
Манпала вăл халь каять...»

Аптраман Палли тăнларĕ
Пилота каçса кайса.
Вĕçсе кайĕччĕ, мăнтарăн,
Çакăнтах çунат сарса.

Калакан татах та пулчĕ
Районтан, Шупашкартан...
Хаçатсем чылайăш тулчĕç
Çав сăмахсемпе кайран.

Хамăркор тесе кăларнă
Информаци те чылай
Куртăмăр эпир. Халь манăн
Сăмахсен кăшт урăх шай.

Çывăхри çăкалăх карнă
Сулхăн чатăр айĕнче
Кĕреке те майлаштарнă
Аптраман Илле пичче.

Хăнана çăкăр-тăварсăр
Кăларса ăçтан яран?
«Ан ÿпкелĕр-ха, çырткалăр, —
Терĕ вăл çынсем ларсан. —

Хулари пек мар та пирĕн,
Вăрçă пĕттĕр-ха, пулать!
Пурăна пуçлар-ха мирлĕн, —
Тăвăпăр ялтах хула...»

«Çуттипе мухтанаймастпăр,
Аншарли сĕнсен кăна...» —
Тет пĕр арăм. — Çук, çырлахтăр!
Пылĕ сиплĕ, — тет хăна.

«Пылĕ пур-ха, — тет утарçă,
Шур сухаллă Йăкăнат, —
Хăмлапа та юркалаççĕ,
Тутлăлла та тăкăнать...»

Куркине тытать те паттăр
Асламасов капитан:
— Ку хăмлаллă пулĕ, ахăр? —
Тет пăртакçă тутансан.

«Теплерех... Ахаль пит хапăл
Пулакан пыл хăмлана...»
Ялĕ-йышĕ ахăл-ахăл
Кулса ячĕ таврана.

Нумайччен янрать çăкалăх...
Моторпа кĕрле-кĕрле
Ыткăнать «В а л е р и й  Ч к а л о в»
Хĕвел анăç еннелле.

* * *

Сарлака çунат çĕклерĕ
Кăмăла çӳлтен çӳле.
«Пур çĕршыв та — хам(ă)рăн!» — терĕ
Аптраман ăру каллех.

Сарлака çунат... Мĕн чухлĕ
Шухăш ӳкрĕ пуç çине!
Пĕтĕм халăхăн кун-çулĕ
Тухса тăчĕ куç умне.

Тепĕр хут кăтартрĕ халăх
Хăй çĕрне юратнине,
Нихăçан писми, яланлăх
Вырăспа пĕрлешнине.

Вĕçтĕр, вĕçтĕр ĕмĕр хывнă
Йĕрпеле ялан çапла
Сан историйӳ, çĕршывăм,
Çӳлелле те малалла!

## XVIII. Коммунист тесе хисеплĕр

### 1

Тăрăхла сĕтел çинче
Ешĕл курăк пек пустав;
Тăваткал мăн кĕленче,
Календарь; ун çумĕнчен
Секретарь илет устав —
Хамăр парти уставне,
Уçкалать вăл листине.
Кантăклатнă шкапĕнчен
Кăларать пĕр кĕнеке:
Силуэт — çавра мĕлке —
Курăнать ун çийĕнче.
Чăнкă та çуткам çамкаллă
Хамăр Ленин сăнĕ, паллă,
Секретарь пăртак вулать,
Сехетне пăхать, тăрать.

Сарă-симĕс хĕрĕллĕ
Сарлака урай сарри.

Секретарь ҫӳрет пӗр шай,
Пичӗ-куҫӗ пӗрӗннӗ,
Ҫывӑрмасӑр куҫ шурри
Кӑшт хӗрелнӗ. Вӑл чылай
Каллӗ-маллӗ уткалать,
Акӑ кнопкине пусать.
Кӗҫӗ яш пулӑшакан,
Секретарь ыйтать унран:
«Ҫавӑ пур-и?» — Пур, кунта. —
«Чӗнӗр. Хӑвӑр — апата».
Ҫын кӗрет именерех,
Партбилет илме кӗрет.
Пуҫтарулӑх, чыс, тирпей
Чӑмӑртанчӗ пӗр тӗле:
Ҫак ҫӳхе кӗнекепе
Халличен пулман телей
Аллуна эс илнӗ пек.
Шухӑш, кӑмӑл, чун-чӗре —
Яр уҫах ҫав сехетре.
Ҫур сехет-и санпала
Е ик-виҫ минут кӑна
Секретарь пуплет ҫапла,
Анчах эс унтанпала
Урӑхла куран хӑвна.
Сулахай кӗсйӳ ҫине
Эс хаваслӑн ал хуран,
Ма тесессӗн ун ӑшне —
Чӗрӳне ҫывӑхарах —
Партбилет эс пытаран.
Парткомран ҫав кунхине
Урӑх ҫын пулса тухан.
Час-часах ҫулта-йӗрте
Е килне тавӑрӑнсан
Кӗсйӳне эс хыпалан,
Хыпалан та хӗпӗртен:
«Ҫавӑнтах-ха, вырӑнтах», —
Тетӗн хӑвӑн ӑшунта.
Тепӗр чух, ҫапла пӗччен
Хӑвна ху тӗрӗслесессӗн,
Тахҫанах иртни ҫинчен
Ҫӗнӗрен аса илетӗн:
Кам сана билет тыттарнӑ,
Аллуна чӑмӑртаса

Мĕнлерех вăл саламланă,
Ху мĕн тенĕ таварса —
Астăватăн пĕтĕмпех;
Курăнать тин кĕнĕ пек —
Кабинет, сĕтел, пустав,
Ленин томĕ те устав...

* * *

Пурте мар çапла пĕрлешнĕ
Партипе. Çук, пурте мар.
Вар умра. Хыçра та вар.
Пĕчĕкçеççĕ шыв илешнĕ
Çав вара, çав васана.
Йкĕ варăн хушшипе
Çурçĕртен кăнтăрлана
Тăсăлать çип çапнă пек
Вашăкрах пĕр сăрт хысакĕ.
Çав сăрт тăрăх йĕркипе,
Командир кăтартнă евĕр,
Вăрттăн-карттăн, çĕрĕпе
Окопсем алтса чĕнмесĕр,
Вырăнаçнă взвод салтакĕ.

Оборона. Чи малта
Взвод выртать-ха хуралта.
Сылтăмра, сулахайра —
Çавнашкал ытти взводсем
Çĕр хута, маршран çитсен,
Шăтăк чавнă. Каярах —
Тепĕр йĕр; командлăй пункт —
Батальонăн, полкăн... армин...
Подполковник хутран-хут
Карттине пăхать: çак вар-мĕн...
Çак хысакăн номерне,
Высота Н тенине,
Хĕрлĕ кăранташпала
Шутарать вăл малалла,
Çĕмĕрен туса тĕллет
Нимĕç çарĕ еннелле.
Оборона мар апла:
Наступлени пулмалла...
Сăрт çинчи траншейăра
Пурнăç халь — хăйне кура.

Кӳ те кӳ сӑрт тӑршшӗпе
Йӳҫӗ эрӗм шӑршипе
Ёнӗк, тар шӑрши килет.
Пуля пуҫ ҫинче шилет.
Хушӑран тӑшман енчен
Улт кӗпҫеллӗ миномет
Ашакла улать темччен,
Кунӗн-ҫӗрӗн самолет —
Салтаксем сӳре е рама
Тенӗ «фокке-вульф» сӗрлет.
Кӑнтӑрла, каҫпа, ҫӗрле
Ҫар ҫара куҫран яраймӗ:
Е разведкӑпа пӗрле
Пулкалать кӑшт тытӑҫу,
Е «чӗлхешӗн» пӗр-пӗрне
«Кансӗрлеҫҫӗ» каҫхине, —
Вӑрҫӑ-харҫӑн канӑҫ ҫук.
Хура тинӗс хӗрринчен
Баренц тинӗсӗ таран
Выртнӑ вӑрҫӑ хирӗнче —
Хӑш фронта кӑна пыран —
Ротӑра, хӑш чух взводрах
Пӗр чӑваш салтак пурах.
Йӑлт саккунлӑ: Раҫҫейре
Ҫӗр ҫынтан пӗри — чӑваш!
Ак кунта та пур пӗрре,
Кам-ши ҫавӑ? Чим, паллаш.
Хӗвелпе ҫунса шуралнӑ,
Тусанпа та кӑшт хуралнӑ,
Пӑшал ҫӑвӗ леккеленӗ,
Вут-хӗмпе те вӗтеленнӗ
Симӗс ҫӑлтӑрлӑ пилотка —
Сылтӑм куҫ харши ҫинче.
Автомат, пӗр-ик «лимонка»
Яланах ун ҫумӗнче.
Хуп-хура ик куҫӗнче —
Чӗрӗ шухӑш... Мӗн ҫинчен?
Пӗлӗр-и, пӗлеймӗр-и?
Харсӑр шухӑш-и, йӑваш-и?
Ӑслӑ шухӑш-и, ачаш-и?
Пурте пулӗ. Ку — Энтри,
Аптраман ӑру таврашӗ.

* * *

Наступлени. Ун хыпарĕ
Окопа кĕрсе вырнаçрĕ...
Çил вĕрет, çĕклет тусан.
Çеçен хир тăрăх кусать
Çĕлĕк пек те çĕлĕк пек
Хир тилли текен тип курăк.
Çĕрĕпе хупман куçа
Ырнипе е тĕлĕкпе
Упаленнĕ нимĕç хурăм
Курăнать çав типĕ тĕм, —
Çывăрмасăр тем те курăн.
Окопра выртан этем
Затворне шăлт-шалт уçать те
Тинкерсе пăхать: «Ку — çав, — тет, —
Санпала ман суд кĕске!»
Çывхарсан ятлать пĕр тапхăр:
«Ку — шуйттан кустăрми-çке!»
Хăрăк курăк чăштăр-чаштăр
723а Варалла кусса анать.

Илĕм-тилĕм ир çинче,
Юлашки ракетăна
Кун çути сӳнтериччен,
Сывлăшра çунан тем тĕслĕ
Пульăсем те сӳниччен,
Тăмлă, нӳрлĕ, сивĕ кĕллĕ,
Чăнкă çĕр çурăкĕнчен,
Дотсенчен, блиндажсенчен —
Малтисен хыпар-хăнарĕ
Пĕр тĕле пыма пуçларĕ:
Ротăсем — батальона,
Батальонĕсем — полка,
Полкĕсем — дивизие
Пĕлтереççĕ халь ăна.
«Ан кĕттер! Васка, васка!
Хăвăртрах!» — тее-тее
Талăкри çав хыпара
Штаб пухать хăй йĕркипе,
Политпай — хăйĕннипе.

Энтрирен чылай кайра —
Виç накатлă блиндажра

Политинформаторпа
Партучет инструкторӗ
Лăчăр-лачăр путмарпа
Татрӗç те кӗрхи çӗре,
Шурăмпуçӗ те килмен-тӗр —
Тăчӗç сивӗ тӗттӗмре.
Хӗрӗх пилӗк миллиметр
Туппăн пушă гильзине, —
Тăварпа кăшт тамалтарнă,
Тап-таса бензин тултарнă
Леш «катюша» лампине, —
Васкаса çутса та ячӗç.
Хăюне касса майларӗç...
Кам пӗлмест ун йышшине —
Çав окоп чун ăшшине?
Пӗтӗм вăрçă тăршшӗне
Вăл хура çӗре çутатрӗ,
Ыранхи çула кăтартрӗ,
Службине виç сруклăх татрӗ.
Тав, мерттес салтак тусне!
...Лампа çутрӗç. Кун пуçланчӗ.
Пируссем мăкăрлантарчӗç.
Çывăрман пирки тăртаннă
Çамкине пӗркелесе
Полксенчи замполитсен
Вӗçкӗнрех писарӗсем
Çырнине пит тинкерсе
Пăхса тухрӗ капитан.
Йӗркерен тухса каян
Урăм-сурăм япала
Курăнмарӗ-ха паян,
Çилӗ, терт, хаяр тăшман
Çирӗплетрӗ кăмăла.
Канчӗ те кăшт информатор —
Ларчӗ. Армие çырма-тăр.
Армирен — фронта, вара —
Ставкăна çитех хайхи
Малтанхи траншейăран
Ăсатаççӗ хыпара:
Начарри те лайăххи,
Салтаксен нуши, хуйхи,
Паттăр ӗçӗ, вӗренни,
Мӗн çитни, мӗн çитменни —

Кăçатти те пир тăли,
Супăнĕ те пит шăлли,
Пăшалне çуламалли,
Сухарийĕ те эрехĕ,
Сывлăх сиплĕхĕ, тĕрекĕ,
Ашĕ-пăшĕ, кĕрписем,
Дисциплина йĕркисем —
Йăлт пĕрле пуçтарăнать
Пĕр çĕре, çав ставкăна.

Хальлĕхе мĕнпур енчен
Чи малти маттурсенчен
Темĕн чухлĕ хут пĕртен-пĕр
Ыйтупа васкать иккен:
«Çапăçса ыран вилсен
Коммунист тесе хисеплĕр».
Çав хăй чунĕн сăмахне
Пĕлтерсе çыран хутне
Çар сынни почтальонпа,
Санитаркăпа-мĕнпе,
Парторгпа, разведчикпа,
Командир связнойĕпе
Çитересшĕн «шал енне».

Куç хупмасăр, каллĕ-маллĕ
Пуç тавра çĕр хут ытла
Çавăрнă шухăшпала
Салтаксем лараççĕ халĕ
Пĕчĕкшер ушкăнпала.
Çав пĕртен-пĕр ыйтăва
Çырас мел — кашнин хăйне:
Хăшĕ пур — кутамккине
Майласа сĕтел тăвать,
Хăшĕ керз кунча çине
Хунă-мĕн хут листине;
Хăш-пĕрне — алтса çуталнă,
Чехолтан юри кăларнă
Кĕске авăрлă, яка
Кĕреçе те пит паха.
Котелок тĕпĕ çинче те
Кăтăртаттарать пĕри.
Çывăхрах, анчах инçетĕн
Сăмахланă пек тепри:

«Халь вилсен те, чӗрӗлсен те —
Чи хăюллă йышпала
Партин çулӗ малаллах».
Кăранташ хыпса илет те
Ал пусать: «Тен, час билет...» — тет.
«Ӗмӗрлӗх» перо çеç мар —
Пуш патрон ăшне пуç чикнӗ
Тӗрлӗрен инкек те шар,
Хур та шур йăлт витӗр витнӗ,
Сăрӗ кайнă пӗчӗк татăк
Кăранташ та халь сасартăк
Çӗклесе ярать чуна,
Пӗр ӗмӗтпелех çунать.

* * *

Аптраманăн хăлхине
Хăйӗн ячӗ кӗнӗ пек.
Кӗç траншея ăшӗпе
Басов пычӗ ун умне:
«Сан чернильнăй-и?» — Чернильнăй. —
«Ху çырсассăн пар эппин...»
Аптраманӗ, ӗçлӗ çын,
Пуçне çеç сулать: — Юрать. —
Хăй саппаслăх тесе илнӗ
Автомат дискне хурать,
Лӳчӗркеннӗ, хӗвел çинӗ
Хут çине вара çырать
Пусарах та пит кӗскен:
«Çапăçса ыран вилсен
Коммунист тесе хисеплӗр...»
Вилмесен? Мӗнле телей-тӗр
Çӗнӗрен çураласси!
Çук-ха, çук, Энтри, тӳсетпӗр,
Хамăртан килмест, пӗлетпӗр:
Вăрçă ӗнтӗ, мӗн тесси!
Тен, ик-виç суха касси
Урлăшне ярса пусайăн —
Шăп лăпланӗ çӗр шăй-шайӗ...
Çавă та, — пурнасчӗ тетпӗр.
Урăх çук-çке-ха, пӗртен-пӗр
Пурнăç панă этеме,
Çавăнпа вута кӗме
Хăрамастпăр та халь ак —

Эсĕ, эп, кашни салтак.
Ырă пурнăç пуласси —
Санăн, манăн, пур тĕнчен —
Çак траншея умĕнче.
Тупăсен салху сасси
Лăпланма кирлех пĕрре.
Ун чухне çак вар-вĕре,
Çакă йывăр асаппа
Алтнă тарăн окопа
Шуркутсем йăва шăтарĕç,
Чĕпĕсем пусса кăларĕç.
Çуркунне, чăн çуркунне
Çитĕ пирĕн çĕр çине!

Ун чухне, кĕр-шав пĕтсен,
Хамăр пĕлĕт айнелле,
Аттесем-асаттесем
Лартнă кил ăшшинелле,
Тен, эпир те лекмелле.
Ял-йышпа пĕр-пĕринне
Çурт-йĕр çавăрнă чухне
Пĕрене пуççем çĕкленĕ
Нимесен кĕрекине,
Каç пулсассăн кĕр кĕрленĕ
Уявпа улах çĕрне,
Тен, эпир те вут çинчен
Çитмелле тĕрĕс-тĕкел.
Тен, пире ĕлĕкхинчен
Хапăл йышăнĕ хĕвел.

Çитмесессĕн... е, вăраххăн
Çывхарса уксах-чăлаххăн,
Шавлă вăйă картисен
Айккине тăрсан хăраххăн...
Çав-çавах «аюй» тесе
Салтака ан кӳрентерĕр,
Мĕскĕне хурса ан шеллĕр:
Йывăр-йывăр кунсенче
Çĕршывпа пĕрлеччĕ эпĕр,
Партипе пĕрлеччĕ эпĕр,
Пăрăнман ун çулĕнчен,
Çавăнпа мĕн виличчен
Коммунист тесе хисеплĕр...»

**2**

Хальлĕхе сехечĕ çапрĕ:
Таçтан, хамăр çар енчен,
Пур салтак та пĕлекен,
Тăшмана чĕтретекен
Урăм-сурăм вăйă вут сапрĕ,
Ӳхĕрешрĕ, хăшăлтатрĕ.

Басов чĕнчĕ: «Ав, Андрюша,
Купăсне калать «катюша».
Ну, пуçланчĕ пулмалла.
Шав пĕрлеччĕ санпала,
Тен, паян уйрăлмалла...»

Кĕç Энтри окопĕ урлă
Вĕçрĕç çулăм «кайăксем».
Аптраман паллать, вăл курнă:
Хĕп-хĕрлех çĕрле вĕсем.

Чашкăрса кăна иртеççĕ
Сывлăша варкăштарса.
«Сан курасчĕ, асаттеçĕм!» —
Шухăшлать Энтри пăхса.

«Уйрăлма та тӳрĕ килĕ,
Тем те пулĕ ыранччен.
Суйлама пĕлмест-çке вилĕм», —
Калаçать вăл ăшĕнче.

«Мĕн вара эс, Виктор? — тет хăй. —
Эс рая, эп тамăка?
Тамăк пуçĕ те кĕртет-ха,
Те кĕртмест вăл салтака?

Эп санпах пырас пуль тетĕп,
Вырăн тупăпăр-и тен.
Çылăх kaçнă, ху пĕлетĕн:
Çĕр çинче сахал тӳсмен».

«Шӳт тăватăн та эс, тантăш, —
Терĕ Басовĕ, — чĕрӳ
Хăвăн та сикет пуль сан кăшт?» —
«Тĕрĕс, тусăм! Ĕç хĕрӳ...»

Аптраман чикар чĕркерĕ,
Çаннине чиксе туртать.
Авиаци çĕр чĕтретрĕ,
Артиллери аркатать.

Миномечĕсем переççĕ,
Ыткăнаççĕ танкĕсем.
Кӳп те кӳп кӳплеттереççĕ
Çывăхрах ак хайхисем.

Çынсăр вĕçмĕ самолет та,
Кĕрĕслетмĕ тупă та.
Пуринчен ытла пехота
Йышлăрах кирек ăçта.

«Хир патши» тесе калатпăр
Ахаль мар ăна иккен:
Çĕр алтса выртан салтаксăр
Пĕр çар пусĕ çĕнтермен.

Хурçă, тимĕр, тар, тăхлан —
Йăлт вĕçленĕ çынпалан.
Çĕр чикки вăл çын шăм-шакĕ.
Тăшмана эс вил те чар!

Ак хускалчĕ взвод салтакĕ,
Батальон... дивизи... çар!
Мĕн унта пĕччен этемĕн
Ĕçĕ-хĕлĕ, тамаши!
Мĕн ăна пит тинкермешкĕн!
Ах, апла-ши? Чăн та-ши?..

Командирĕ хушрĕ: «Басов!
Танк хыçне Аптраманпа!
Ан кăларнă пулăр сасă,
Çĕкленетпĕр ушкăнпа.

Çывхарма парсан команда
Нимĕççен траншейнелле
Вăркăнтарăр та граната —
Сикĕр иксĕр ик тĕле.

Сулахай енчен эп çитĕп,
Сылтăмран — Пономарчук,

Ыттисем те... Пулăр çирĕп!
Ыйтмалли тек çук-и?» — Çук.

* * *

Тăп ларать аманнă танк,
Уснă тупă кĕпçине.
Хамăр танк вăл. Çавăнтан
Чупмалла тăшман çине.

Çавăнта шăваççĕ ак
Икĕ тантăш, ик салтак.
Пакăлчак таран тусан, —
Тимĕр çĕмĕрнĕ çĕре.
Йăпшăнса выртас пулсан
Сăнама та хĕнтерех.

Çăлнă, тĕшĕрнĕ мăян,
Армути шăршин йўççи.
Çĕр сывлать, пурнать ялан —
Таптĕçин, тĕшĕрĕçин.

Армути шăршипеле
Ăшă сĕт аса килет,
Хамăр ен... Хăçан? Епле?
Тивĕ-ши пире тивлет?

Аптраман шăвать, тăнлать,
Апчăхху аптратнипе
Сăмсине сăтăркалать,
Ятлаçать те ерипе.

Чăх йăви пек шăтăксем —
Çеçен хир талккăшĕпех,
Хушăран пысăккисем —
Тĕпсакай вырăнĕ пек.

Çăвĕпех тўнккенĕ çав
Мина, бомба çак хире.
Кĕç — ракета... «Басов!» — Ав! —
«Ку — сигнал пулас пире...»

Ак унччен те пулаймарĕ —
Вырăсла сăмах «ур-ра!»

Кĕрлесе иртсе те кайрĕ
Пĕр самант пек хушăра.

Каварлашнă пек çĕкленчĕ
Икĕ тантăш унпала.
Танк патне те çитейменччĕ —
Ыткăнаççĕ малалла.

Инçетрен таçтан аранчă
Илтĕнет-ха кăшкăрни,
Ку тĕлте — ĕç-пуç тапранчĕ,
Шăлне çыртрĕ çар çынни.

Аптраман чупать-чупать те
Лап выртать тусан çине.
Басова куçран çухатрĕ,
Перкелет хăй сых ятне.

Хирĕç сасă шăтăр-шатăр —
Пуç йăтма паман пекех.
Йăтмасан... выртса юлатпăр
Çакăнта ĕмĕрлĕхех.

Йăт та, чуп та, сик те, çап та.
Ак пралук карта тĕлне
Çитрĕ те Энтри — граната
Вăркăнтарчĕ леш енне.

Саперсем уçман пулать-ха
Унăн йывăр çул-йĕрне.
Вăл пăрахрĕ плащ-палатка
Шăртланан пралук çине.

Каçрĕ, чупрĕ те вăл сикрĕ
Ишĕлен траншейăна.
«Хенде хох!» сăмах вăл илтрĕ,
Кам каларĕ-ши кăна?

«Аллуна йăт»! — терĕ! Чим эс!
Эп йăтманччĕ халиччен...
Ăçтарах-ши çавă нимĕç?
Çук-çке вăл куç умĕнче.

Тул та çутăлнă. Çавах та
Тĕттĕмрех траншейăра.
Мăч хупать куçне чăваш та,
Чал кăна уçса ярать.

Пĕр самант иртмерĕ ахăр
Çав сасса илтнĕренпе —
Тапса сикрĕ, çитрĕ паттăр,
Курчĕ, пĕлчĕ пĕтĕмпех.

«Хенде хох!» кăшкăраканĕ
Басов-мĕн вăл, чăрсăр чун.
Çурăмпа тăрать тăшманĕ,
Аллинче граната ун.

Хыçалтан ман Аптраман
Ячĕ тытрĕ çав алла:
«Эс хох мар-им, çĕр çăтман?!
Миçе хут каламалла?»

* * *

Хыпалаççĕ нимĕçе:
Автомачĕ пуш-пушах,
Юлнă пĕр гранати çеç,
Тăваймарĕ вăл нуша.

Тавăраççĕ кĕсйине —
Зажигалки пур иккен,
Чĕре пек туса хăйне
Эрешленĕ пит хитрен.

Тавăраççĕ теприне —
Çăвар купăсĕ тухать.
«Хохнер» ятлă фирмине
Палласа илме пулать.

Çавăнтах хайхи-майхи
Намăссăр та симĕссĕр
Парижри бульвар пики,
Çарамас ӳкернĕскер.

Пур тата пĕр... ку мĕн тес?
Пăртманит пекки çумне

Виçĕ хĕрлĕ виç кĕтес
Тирнĕ çак фашист темме.

Пирĕн кĕçĕн командир
Çухинчи виç кĕтессем!
Сăрлатса каять ӳт-тир
Ун пĕлтерĕшне пĕлсен.

Басов пăхрĕ: «Сержанта
Вăл вĕлернĕ пулмалла, —
Терĕ вăл, — тек мĕн тата?»
Аптраман калать: «Паллах.

Авалхи çын çиенсем
Пуснă çын шăлĕсенчен
Тунă теççĕ шăрçасем,
Ку инçех кайман иккен...»

Çав самант Пономарчук
Теприне ертсе килет.
«Тельман, Тельман! Гитлер çук!» —
Тет çав нимĕç нимĕçле.

«Тельман, Тельман! Коммунист!» —
Тет вăл ик юта курсан.
«Вăл апла-ха, ху кам эс?» —
Терĕ хирĕç Аптраман.

Ак леш хыврĕ аттине
Шал енчи тĕпне сӳсе,
Кăларать партбилетне:
Çамрăкрах та — ун тĕсех...

«Коммунист? Геноссе? — терĕ
Виктор Басов. — Чăн апла?»
Нимĕç питĕ хĕпĕртерĕ:
«Я, я, я! Çапла, çапла!..»

«Юрĕ, тĕрĕслĕç те тупĕç, —
Терĕ Виктор, — Аптраман!
Иккĕшне те илсе тух эс
Хамăр тыл енне, ан ман.

Эс, Пономарчук, атяччĕ
Манпала халь малалла.
Шăтăр-шатăр та лăпланчĕ,
Фриц вĕçтерчĕ пулмалла».

* * *

Аптраман атти таккать
Путăк-шăтăк çĕр çинче.
Икĕ нимĕç салтака
Пĕр чăваш ертсе тухать.
Икĕ нимĕç — ик тĕнче...

## XIX. Телей

Вăрçăра пулать çапла та:
Çĕрĕпе те кунĕпе
Çурăлса етре шаплатĕ,
Мина ӳлĕ ӳхĕ пек;

Танк качи качăртаттарĕ
Чуллă-хăйăрлă çĕре...
Пăхăсăн — юрласа ярĕ
Кайăк та çав сехетре.

Чĕвĕлти чĕвĕл чĕкеçĕ
Бруствер хĕррине ларса:
«Ма çынсем алтса кĕреççĕ», —
Тет пулас пире пăхса.

Пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă,
Ачалла пуплен чĕкеç.
Маншăн, темшĕн, кĕрлĕ-çурлă
Савнă кайăк çавă çеç.

Эреветлĕ те теветлĕ...
Пин çулхи юррипеле
Йĕкĕлтет те илĕртет вăл
Пур çĕртен те килелле.

Мĕн ăна траншея, лини,
Чикĕ... ах, ан ашкăнăр!
Ун хӳри вĕçне туй килнĕ,
Якат Петĕр пăчăнтăр!

Петĕр! Петĕр... Ăçтарах-ши
Тепĕр Петĕрĕ — Сумбай?
Натали çавна курасшăн,
Тĕлĕкре те вăл унпа.

Çывăрать-и, çывăрмасть-и, —
Тĕлĕк, тĕлĕк курăнать.
Чун ăшши пулсан пĕр ластăк,
Çавăнпах çын пурăнать.

Чун ăшши! Хаяр, хăрушă
Вăрçăра та вăл сӳнмест.
Тен, вĕриленет-тĕр пушшĕ,
Усрама кăна пĕл эс.

Наталин шăпи мĕнле-ши?
Хăй тасалăхне пула,
Тен, вăл курнăçĕ, пĕрлешĕ
Ĕмĕтри ял-йышпала?

* * *

Çуркунне! Мĕнле пулсан та
Килчĕ ырă çуркунне.
Юн вĕрет. Пур ар-хĕр тантăш
Тунсăхлать халь пĕр-пĕрне.

Çуркунне! Комбат çӳренĕ
Хăла ут та хавасрах
Кĕçенет: теприн, çӳренĕн,
Шухăшне пĕлет часрах.

Хырлăхра ăсан та карăк
Туйлашать. Хурт-кăпшанка,
Лĕпĕше пăх: виçĕ талăк
Пурăнсан та — капăркка.

Чечексем сарса лараççĕ
Пурçăн чĕнтĕр аркине.
Шăпчăксем тăнран яраççĕ,
Пĕлĕт янкăр. Çуркунне!

* * *

Украина урлă каçрĕ
Вăрçăпа ман Натали.
Мĕн астурĕ, мĕн сăнарĕ
Çав çулта вăл хăй валли?

Çăмăл мар та вăрçă терчĕ,
Украинкăсен тĕрри
Тĕрĕçе пит тинкерттерчĕ,
Вĕчĕхтерчĕ çав тери.

Яланхи сатур та сывă
Ăмăрту ĕçченлĕхне
Хăйĕнче халь туйрĕ-ши вăл
Е кичем пĕчченлĕхне?

Тĕрлесси килет-çке унăн!
Кайăк чĕвĕлтетнĕ пек,
Çулçă çурăлнă пек — чунăн
Туртăмне вăл тĕрĕпе

Каласа пама пĕлетчĕ.
Халь — алли те хытнă-тăр...
Ах, чĕкеçĕ-шеремечĕ:
Якат Петĕр пăчăнтăр!

Çуркунне — пур чĕррисемшĕн,
Хамăршăн та, ютшăн та,
Сывăх миршĕн, ма тесессĕн
Буг халь ĕнтĕ хыçалта.

Пирĕн гвардийĕн ялавĕ,
Шĕл кăвар пек ялкăшса,
Ыткăнать шав малалла вăл,
Çулăм витĕр варкăшса.

Ун çинчи тĕнче çул пуçĕн —
Ленинăн сăнĕпеле
Çуталса куçать çĕн шуçăм
Хĕвел анăç еннелле.

Çуркунне — пур чĕррисемшĕн.
Шит çĕре те эс çапах

Юн тăкмасăр илейместĕн,
Нимĕç те памасть çаплах.

Кам сыхланĕ, кам упранĕ
Урăм-сурăм вăрçăра?
Çут тĕнче курни, курман-и, —
Çĕр курман ку хаяра.

Камăн пуçĕ юлĕ чĕрĕ?
Хӳтлĕх çук никамшăн та.
Шав çунать-ха Польша çĕрĕ,
Çулăн вĕçĕ — Берлинта.

* * *

Натали çапах вăраххăн
Формировкăра-мĕнте,
Походра-и, блиндажрах-и,
Кăшт çĕлем пек турĕ те

Чĕр çитти тĕрле пуçларĕ,
Юр пек шурă чĕр çитти.
Вăхăчĕ нумай пулмарĕ:
«Тен, Германие çити

Тĕрлесе пĕтерĕп», — терĕ
Шӳт туса вăл ăшĕнче.
Чĕрĕлет ик майлă тĕрĕ,
Хантăс тĕрĕ, пит чечен.

Ак паян комбат чĕнтерчĕ
Хăй патне Наталие.
Мĕн сăлтав-ши ун? Пĕлесчĕ.
Чирлемен-и ĕнтĕ? Е...

Пĕр сăлтав комбатăн пулнă:
Ĕнерхи ĕçре иккен
Адъютанчĕ ун пуç хунă —
Штаб ĕçне йĕркелекен.

Çĕнĕ офицер кĕтетчĕç
Пополненипе пĕрле.
Çитрĕç, алтрĕç, çирĕпленчĕç
Салтаксем хура çĕрлех.

Офицерĕ те çитет-мĕн,
Хучĕсем тăрăх — чăваш.
Ну комбат калать пĕлсессĕн:
«Йăмăку пур сан, юлташ!»

— Кам? — «Мĕнле калас?.. Пĕр лекĕр.
Батальон этемĕсем
Юратса çавна вилетпĕр».
— Хушамачĕ? — «Чим, чĕнем.

Васкататăн эс ытла та!
Уншăн-куншăн çулăхсан
Эп сана тӳрех калатăп:
Ĕçӳсем ăнаймĕç сан.

Аманни те, тӳрленни те
Пулчĕ хĕрĕн ку таран.
Ыттипе — вăл çирĕп питĕ...»
Натали кĕрсе тăрать.

Аллине йăтса вăл хăйĕн
Сăмахне каланă чух
Тинкерсе пăхать куç айĕн
Çĕнĕ çын çине... «Çук, çук!

Вăл пулма пултараймасть-тĕр.
Блиндажра çутах та мар...»
Леш те тирĕнчĕ: аван хĕр...
Кĕç çĕкленчĕ вăл вăр-вар.

«Çĕр çăмха пек çеç пуль, ахăр! —
Кăшкăрса ярать Сумбай. —
Натали! Ăçта куратпăр!»
— Петĕр, эс-и? — «Эпĕ». — Кай!.. —

«Кайăттăм та çав... ямаççĕ!»
Пĕр-пĕрне куçран пăхса
Тăчĕç те — ыталашмаççĕ,
Чуптумаççĕ савăшса.

Качча аслă лейтенант та,
Хĕрĕ — старшина кăна,
Çавăнпа хăймасть-шим? Мар-тăр,
Юрату пăхмасть ăна.

Çаплалла вăл ĕмĕртен-мĕн:
Чуптăвас е ыталас
Йăлана чăваш этемĕ
Пит хакла хурать пулас.

Арлă-арăмлă çынсем те
Уйрăлса тĕл пулнă чух
Йыш çинчех, темскер тесен те,
Чуптумаççĕ пирĕн, çук!

А кунта — чăнне калатăп —
Каччăпа хĕр хушшинче
Нимĕнле апла-капла та
Пулайман-ха халиччен.

Тен, пăртак именесси те
Пулчĕ пулĕ Наталин:
Ни çи-пуç маси, ни çивтĕ...
Ача мар-çке вăл халь тин!

Темĕнле хура-шура та
Курнă кив пилотка ун,
Сарлака кунчаллă атă,
Хулпуççи çинче пакун.

Икĕ хут чĕркуççи лартнă
Шупка симĕс шăлавар,
Пластунла шуса кăтартнă
Хĕр ăна тем чухлĕ шар.

Сассине кăлармасассăн,
Гимнастерка кĕсйисем
Хăпарса тăман пулсассăн —
Йĕкĕт тейĕн çав, этсем!

Анчах тухрĕ ĕнтĕ сасă,
Савнă тус куçлать, куçлать...
Хушăран хĕр касă-касă
Хăвăртрах сывла пуçлать.

«Тухма ирĕк парăр», — терĕ
Натали куçне шăлса.
Аллипе комбат сĕлтейрĕ
Сумбая: юрать, ăсат...

* * *

Çав кунах вăтам çеç пӳллĕ,
Шур тăнлавлă генерал
Печĕ çитрĕ ак каç кӳлĕм.
Яланах вăл çавнашкал —

Пур çĕре те ал çитернĕ:
Салтаксен тӳми таран
Асăрханă, тĕрĕсленĕ
Теççĕ ун пирки ялан.

Хăй батальонран пуçланă
Çак вăрçа: Сталинградра
Вăл майор пакунĕ çакнă,
Халь комдив пулса тăрать.

Çитсенех тухса ăсанчĕ
Комбатпа вăл Эн-пене.
Перископ лартса хăтланчĕ,
Хăй сăнарĕ «лешсене».

«Халь лешсем пăртак çилленнĕ, —
Терĕ вăл тăшман çинчен, —
Эс ĕнер аван силленĕ!
Юрĕ, курăпăр ирччен...»

Чей ĕçме кĕрсе вăл ларчĕ
Комбатпа ун блиндажне.
Тараватъ хуçа тыттарчĕ
Çуттине те хăнине.

— Генерал юлташ, мĕнле-ши?
Манăн çĕнĕ адъютант
Савнине тĕл пулчĕ. Лешĕ
Медсестраччĕ те кунта...

Иккĕш те чăваш. Вăрçаççĕ
Хĕрĕх пĕрмĕш çултанпа, —
Ниепле курнăçаймаççĕ.
Халь шăп курчĕç. Ак шăпа! —

«Те мана эс загс тăвасшăн? —
Тет комдивĕ шӳт туса. —

Чăвашсем? Кунта чăвашăн
Генералĕ те пулса.

Сылтăм кӳршĕм ман чăвашчĕ —
Авандаев генерал.
Хăтăлайрĕ-ши? — Йăвашчĕ,
Суранланнăччĕ кăçал...

Йыхăрттар эппин, курам кăшт
Санăн икĕ чăвашна...»
Çитрĕ, кĕчĕ икĕ тантăш,
Курчĕ, тăчĕ яшт кăна.

* * *

«Чăвашсем апла?» — Так точно! —
«Чăваша шанма пулать, —
Тет комдив, — ăна мĕн хушнă —
Хăй вилсен те вăл тăвать.

Савнипе савни пулсассăн
Мĕн тăвас-ха ман сире?» —
Тет те вăл сывлать кăшт ассăн.
Натали пăхать çĕре.

«Эс асту! — тет генералĕ. —
Мăшкăл çеç кӳрсен хĕре
Капитан мана час калĕ, —
Ашшĕне эп пĕлтереп!»

— Офицер сăмахĕ парăп! —
Тет Сумбай. — «Юрать, шанар,
Эп çапах та çырса ярăп:
Шĕвĕрсем те сахал мар...

Хушшăрсем инçех те мар-тăр,
Тупĕ вăл сана пĕрре!»
— Пĕр ялтах-çке пурăнатпăр, —
Терĕ каччă, — кӳршĕрех. —

«Ну, апла сăмахăр витнĕ,
Чăвашсен вăл енĕпе
Хытă тенине эп илтнĕ,
Чăн çапла-и?» — Çавăн пек, —

Терĕ те Сумбай именчĕ.
Генерал пăхать куçран:
«Юрату хăват кӳрсенччĕ
Çĕнтерме! — тет вăл унтан. —

Ну вара... вара мĕнле пек?»
— Тем каласшăн-çке? — «Чудак!
Берлина çитсессĕн эпĕ,
Тен, хĕреснашшĕ пулăп ак».

Наталин — хăмач пек пичĕ.
«Намăс!» — терĕ те пĕрре
Тӳсеймесĕр туртса илчĕ
Çаннинчен вăл Петĕре.

Петĕр те палан пек пулчĕ,
Ним тумашкăн аптраса:
«Тавтапуç!» — тесе вăл хучĕ
Аллине хитрен авса.

Кĕлине кĕли шалтлатрĕ:
«Каймалла-и?» — Кайăрах. —
Тухиччен куçпа ăсатрĕ
Генералĕ куларах.

Час пуçланĕ çĕн атака,
Генерал ахаль килмен.
Савнă мăшăрăн пăртак та
Савăнма тĕл килмĕ тен.

Пур траншея урлă иртĕ
«Малалла!» сăмах, «ур-ра!».
Чĕкеçсем чĕвĕлтетни те
Илтĕнмĕ çав хушăра.

Кĕмсĕртетĕ канонада
Пĕтĕм çĕр кисренмелле...
Хăçанччен çын савăнсан та,
Ку çапах та — чăн телей.

* * *

Икĕ пуç та çамрăк пуç
Пĕр пуçелĕк çийĕнче.
Тинкерет тăвату куç
Шухăша кайса инçе:

Ашшĕ-амăш йăлипе
Мĕн тӳсмеллине тӳссен
Юрату куççулĕпе
Сиплĕн çăвăннă куçсем!

Туй кĕлечĕ мар, пӳрт мар, —
Мина вăтăрнă вăрман.
Каçĕ лăпкă та уяр,
Кун пекки хальччен пулман.

Йывăç витĕр ялтăрать
Алтăр çăлтăрăн аври.
Çавă-ши? Çав Алтăрах,
Хамăр çӳллĕ тӳпери.

Вăрман урлă таçталла
Çăлтăр ӳкрĕ ярăнса,
Инçетри тăван яла
Пăхтаринччĕ, иçмасса!

Çăлтăр витĕр курнакан
Салтак çул-йĕрĕ çинчен
Асăнатăн-ши, тăван,
Пĕлĕтрен куçна илсен?

«Манăн çăлтăр тӳпере!» —
Терĕ шăппăн Натали,
Шинель айĕн Петĕре
Ыталарĕ ун алли.

Савнă мăшăр месерле
Чылайччен пăхса выртать.
Пурнăç çитнĕ темелле —
Кăмăллă та, ырă та.

Çывăхрах каçса кайса
Такмаклать пĕр шăпчăкĕ;
Аякри тăван сасса
Астутарчĕ пĕчĕккĕн.

Атăл тăрăх, Сăр тăрăх,
Çавалпа Пăла çинче

Илтĕнетчĕ хытăрах
Çакă юрă каçсенче.

Канашпа Шупашкара
Каллĕ-маллĕ хутласан
Киленеттĕнччĕ вара
Çак юрра эс тăнласа.

Çулăн икĕ хĕррипе
Хамăр лартнă йывăçсем
Янăратчĕç çĕрĕпе
Шăпчăксем туй тунăçем.

Польшăн ырă кайăкне
Чунтанах çапах та тав,
Вăл юрлать ик çын ятнех:
«Чуп-чуп-чупту, савăн, сав!»

Анчах ак инçе те мар
Пĕр ракета çакăнать...
Ассенче каллех — хаяр,
Вĕçсĕр вăрçă, çав кăна!

## XX. Польшăри пĕчĕк хулара

Польшăн пĕчĕк хулинче
Пысăк ĕç вĕçленчĕ.
Информаци ун çинчен
Пит кĕскен пĕлтерчĕ:

Çавăн чухлĕ çын унта
Нимĕçсем хăварнă,
Çавăн чухлĕ тупă, танк,
Пулемет пăрахнă.

Çавăн чухлĕ хамăрăн
Тĕрлĕрен шар курнă,
Çавăн чухлĕн паттăррăн
Çапăçса пуç хунă...

Çав хула ятне салют
Мускавра памарĕç,

Кăлармарĕç уйрăм хут,
Медальсем çапмарĕç.

Тепĕр чух ытла хĕссе
«Местного значенья»
Тенĕ çав çапăçусем
Сахал мар кĕрленĕ.

Çав-çавах, — пĕр вырăнта
Эрнешер тăратăн
Е çĕр çухрăм пĕр кунта
Çĕнтерсе пыратăн, —

Пур тĕлте те чĕрĕ çын,
Хăйшĕн хăй — пĕртен-пĕр.
Тен, эрне тăраканнин
Ĕçĕ хĕнтерех-тĕр.

Утнă утăм ӳсĕнмест,
Кăмăл та кăшт хуçăк:
Те тапранăпăр, — тен эс, —
Те çĕкленмĕ пуçăм?

Пур тем анлăш сăмахсем:
Фронт, маневр, задача.
Тĕшĕсем мĕнле вĕсен?
Эс катса кăтартчĕ!

Эп — салтак, эс — командарм,
Анчах эп пĕлесшĕн:
Мĕн çак пĕчĕкçĕ плацдарм
Пĕтĕм мăн хисепшĕн?

Эп чухласшăн хам ăспа:
Мĕн пахи вара ун —
Хăяхпа та хăмăшпа
Витĕннĕ утравăн?

Висла шывĕн леш енне
Виç хăлаç çитмесĕр
Ларакан йывăççене
Ма пит тинкеретпĕр?

Мĕншĕн-ха термоспалан
Çавăнта кун-каçăн
Иккĕмĕш эшелонран
Апата каçаççĕ?

Вăтăр çын унта вăрçать,
Фронт тытать канмасăр.
Вăтăрччĕ ĕнер каçа,
Халь, тен, çурмалла-тăр.

Çурмалла-и, вуннăн-и
Е никам юлмасть-и, —
Ăнланать окоп çынни:
Кирлĕ çак участок.

Çак утрав ик енĕпе
Кăшт тăрсассăн акă
Пĕтĕм шывăн анĕпе
Ахăрĕ атака.

Утравра пуç хунисен
Ячĕсем упранĕç,
Сивĕнмен винтовкисем
Висла урлă каçĕç.

Каçĕç кĕр кĕрле-кĕрле,
Ыранхи кун çутă,
Чап та, хурлăх та пĕрле,
Вилĕм те, кун-çул та.

* * *

Польшăн ирĕк хулинче
Хурлăхлă ĕç пулчĕ:
Натали алли çинче
Яш Сумбай пуç хучĕ.

Пыраймарĕ вăраха
Мăшăр ăраскалĕ.
Арăм юлчĕ тăлăха,
Мĕн тăвĕ вăл халĕ?

Май килмерĕ çав нумай
Вăрçă ахăруçăн

Пĕр пуçелĕкпе выртма
Икĕ çамрăк пуçăн.

Мĕн пуçелĕкĕ унта,
Мĕн тӳшек-минтерĕ!
Чул çине выртсассăн та —
Час ыйху çĕнтерĕ.

Çывăрма кăна мел çук,
Вăхăт çук: вăрçатпăр...
Пулчĕ вăйлă çапăçу
Çăвĕпех çав тапхăр.

Шилесе те шăхăрса
Пуля чун шырарĕ.
Тупрĕ, тупрĕ шыраса,
Тытрĕ те... ямарĕ!

Çав ĕç пулчĕ кĕр енне.
Илĕм-тилĕм ирччĕ.
Натали штаб алăкне
Тул енчен кăшт сирчĕ.

Усăлать кăшăртатса
Плащ-палатка-алăк.
Ординарец яшт тăрса
Авса хучĕ алă.

— Çук-им аслă лейтенант? —
Ыйтрĕ Наталийĕ.
«Эн-пере вăл», — тет ăна
Рядовой Алиев.

Пĕчĕк тимĕр кăмака
Çункалать тӳлеккĕн.
Яш узбек котелока
Чей ярать тирпейлĕн.

Вăл паллать Наталие
(Кам ăна пĕлмест-ши!).
Пăтратать те кăшт чее:
«Ларăр», — тет пуплесшĕн.

Тĕрĕс вырăс чĕлхипе
Çирĕмри салтак çав
Калаçать хăй майĕпе
Çемçерех пăртакçă.

Натали, тем сиснĕнех,
Пит лармах тумарĕ,
Висла шывĕн хĕррине —
Эн-пеневаскарĕ.

Вăрманти кашни сукмак,
Кайăк çулĕ-йĕрĕ
Наталишĕн тахçанах —
Хамăр ялăн çĕрĕ.

Батальон чылайранпа
Çакăнта тăрмашрĕ,
Уншăн йăмăк та аппа
Сахал мар çĕр ашрĕ.

Суранланнă çын çинче
Вăл ялан именчĕ:
Тусĕ аманассинчен
Кулленех шикленчĕ.

«Çав ан пултăрччĕ!» — тесе
Шиклĕн вăл ку яхăн
Сирчĕ хĕрлĕ хĕресе
Сумка уçнă майăн.

Пĕр çынна хура çĕрле
Вăл çыхса майларĕ.
Чăвашла пупле-пупле
Çав салтак аташрĕ.

Чунсăр пулчĕ Натали:
«Петĕр мар-ши?» — терĕ.
Çын пусне хăрах алли
Ĕнсинчен çĕклерĕ.

«Ăçтисем эс? Хăш ялсем?
Мĕн çырма хушатăн?..»
Калаçмасть текех этем,
Куçĕсем пушах ун...

Кĕреймерĕ вăл тăна
Темĕн каласан та.
Паллаймарĕ тăвана
Аякри çав тантăш.

Кам алли хăйне тытса
Ларнине сисмерĕ,
Кам арки çине вытса
Вилнине пĕлмерĕ.

Сахал мар ун пеккисем —
Сарăмсăр, сăмахсăр
Инçетре пуç хунисем,
Халь те манаймастпăр.

Вĕсем тунă хăйсенне,
Ахаль çар е гварди —
Кам хăйса вĕсем çине
Пўрнипе кăтартĕ?

Кил куплет-и асăнса,
Халăх асилет-и, —
Яланах вĕсен таса
Гражданин тивлечĕ.

* * *

Наталие чăваш салтакĕ
Умрах пуç хунăранпала
Чи çывăх çыннине ак-акă
Курассăн туйăнчĕ çапла.

Вăл Энтрие асран ямарĕ
Е Герман асапланасса
Шухăщĕнчен кăлараймарĕ
Ўт-пĕвĕпе сăрăлтатса.

Нимрен ытла — юлташ та, ар та
Сумбай çапла ўкес пулсан...
Юн хухнă пек шăнса сасартăк
Хытатчĕ Натали ялан.

Вăрман. Тăп-тăвăр утма çулччĕ.
Комбат килет-мĕн: «Старшина!

Наташа! Пĕлтĕн-им?» — Мĕн пулчĕ? —
«Аманчĕ аслă лейтенант».

— Сумбай?! — «Çапла, пит йывăр Петĕр.
Тем... çыхăну та татăлчĕ.
Эсир Эн-пе тĕлне пĕлетĕр».
— Пĕлетĕп. — «Чимĕр. Атьăрччĕ.

Ăна эп сылтăма куçартăм
Уçланкăри траншейăпа...»
Пуçне пĕксе утать хĕрарăм,
Мĕн кӳрĕ-ши ăна шăпа?..

* * *

Кĕрхи тирек çулçи пек шурхăн
Выртать Сумбай шинель çинче.
Çав шинелех çире те унăн,
Çав шинелех пуç айĕнче.

Аяккинче ун автомачĕ,
Ун пистолечĕ — çумĕнчех.
Телефонист тата ларатчĕ
Ват санитар ун умĕнче.

Капитана курсассăн харăс
Çĕкленчĕç иккĕш яшт кăна.
«Çыхăнăва тытан начар эс!» —
Тет капитанĕ яш çынна.

Телефонист хĕрелчĕ кайрĕ:
«Амантăм, капитан юлташ... —
Вăл сылтăм аллине кăтартрĕ. —
Час сыпаймарăм провода...»

Комбачĕ хăй те хĕрелет-тĕр,
Кукленчĕ ак Сумбай тĕлне:
— Мĕнле, асли? — «Сывлап, — тет Петĕр,
Вăл асăрхать Наталине: —

Эс те кунта-им?» Тӳсеймерĕ,
Йăванчĕ лешĕ ун çумне.
Кура-тăран этем чĕнмерĕ,
Именнĕн пăхрĕ айккине.

— Медсанбата хама ярсамăр, —
Тет Натали капитана.
«Кайсамăр, — тет комбат, — ăсатăр,
Леççех хăварăр», — тет ăна.

Час шалалла çĕклесе кайрĕç
Çынна ак плащ-палаткăпа.
Кĕçех кӳлсе пырса тăратрĕç
Тем те пĕр курнă урапа.

Кĕрхи тирек çулçи пек шурхăн
Выртать Сумбай, кăшт йынăшать.
Хĕвел тухать. Çӳçенчĕк сулхăн.
Хĕрарăм ларчĕ юнашар.

* * *

«Шанатăп!» — терĕ, ыталарĕ
Вырттарнă Сумбая комбат.
Куçне çынран пытараймарĕ:
Куççуль тумларĕ пат та пат.

Уттарчĕ Натали, хистерĕ
Хăйне паллană лашана.
Часрах çитсе ӳкесчĕ терĕ
Тин çеç хăтарнă хулана.

Хула аяккине вырнаçнă
Хай медсанбат — сиплев хули,
Сип-симĕс чатăрсем вăл карнă
Тăваткăл хыр кати тулли.

Çав хырлăхра халь йышлă лекĕр
Кĕрешнĕ çын вилĕмĕпе,
Çав хырлăхаваскать-çке Петĕр
Хăй савнипе, арăмĕпе.

Çапла! Туй-шыльăксăр, парнесĕр,
Сăрасăр пĕр-пĕринпеле
Пĕрлешрĕç пирĕн тантăшсемĕр
Пăшал сассиллĕ сĕм çĕрле.

Çурхи сĕткенлĕ çут çанталăк
Çитерчĕ пурнăç ĕмĕтне.

Юратăва астутармалăх
Юрларĕ шăпчăк ун чухне.

Ак турттарса пырать хĕрарăм
Чун савнине, упăшкине.
Миçе кун евĕр лав, мăнтарăн,
Тиенĕ вăрçă нушине!..

...Сиктеркелет вăрманлă çулĕ,
Сумбай пăртак йынăшкалать.
Пăчăртатса тухан куççулĕ
Наталие вут хыптарать.

Уçланкă курăнчĕ, ун урлă
Сайралнă йывăç хушшипе
Шоссе çине тухса сатуррăн
Лаша васкарĕ юрттипе.

Çул тикĕсрен-и, вăйсăртан-и —
Сумбай пăртак кăтăш пулать.
Таккать, таккать лаша таканĕ,
Ав курăнать ĕнтĕ хула.

Çӳлте, пур шанчăкне çухатнăн,
Чĕтре-чĕтре сĕрлет çаплах
Вăрăм туна пек йĕрĕнтернĕ
Пĕччен разведчик ероплан.

Пире çав «фокке-вульф», çав рама,
Сӳре, Германи старшини
Сталинградран Берлин таран вăл
Пĕр кун иртмен сăнаманни.

Çапах чакать, чакать ефрейтор
Çĕлен-калта йăвинелле...
«Шалчу тулать! — тет хыттăн Петĕр. —
Граната! Автомат! Тĕлле!..»

— Мĕскер эс, Петĕр? Тĕлĕк мар-и?
Е аташан? — тет Натали.
Ах, талтлатать-çке ал тымарĕ!
Нумай та марччĕ каймалли...

«Мĕскер эс, Петĕр? Мĕн тĕллентĕн?
Тăна кĕрсем, палла мана.
Эс сывалатăн, тӳрленетĕн,
Çитетпĕр акă хулана...»

Сумбай чĕнмест. «Ах! — тет хĕрарăм. —
Хамах тӳр килчĕ-ши курма?
Мĕскер тăвам? Ах, калаймарăм:
Эп йывăр çын, çире пур ман...

Чим, Петĕр, пулăпăр телейлĕ:
Эп йывăр çын, эп йывăр çын...»
Чи сиплĕ, чи паха эмелĕ
Çав пулнă тейĕн Наталин.

Темскер астунă пек сасартăк
Тытать вăл Петĕр аллине,
Хĕпĕртесе те, хăраса та
Хурать хăй хырăмĕ çине:

«Ну, Петĕр, Петĕр, теп, илтсемччĕ,
Кĕр-ха тăна, куçна уçсам.
Эп йывăр çын, çавна пĕлсемччĕ.
Пăх ман çине, сăмах хушсам...»

Медсанбата çитсех пыруçăн —
Те ăнлансах çав сăмаха? —
Чар уçăлчĕ Сумбайăн куçĕ,
Тем пысăкăш пулса пăхать.

Çав куç тĕпнех путса ларассăн
Тинкерчĕ Натали ăна:
«Эп йывăр çын», — тет лăпкă сасă.
Сумбай йăл кулнăн туйăнать.

«Ăнланчĕ, пĕтĕмпех ăнланчĕ!..» —
Çапла шутлать ун măшăрĕ.
Юлашки хут, тен, тармакланчĕ
Вилес этемĕн шăнăрĕ.

«Итле-ха, Петĕр...» — Ывăл пултăр... —
Теейрĕ упăшки ăна.
Тек чĕнеймерĕ... Пĕлĕш тухтăр
Тĕл пулчĕ: «Мĕн эс, старшина?

Мĕскершĕн татăлсах йĕретĕн?
Ху аманман-и ăнсăртран?»
— Амантăм... Чунăм та, чĕрем те —
Сипленейми... Ак ман суран... —

Пĕрремĕш хут савни чуптурĕ
Çын умĕнче хăй савнине.
Куççулĕ çурĕ, çурĕ, çурĕ
Тин сӳннĕ усă куç çине...

Çаплах йăл кулнă пек, çаплах вăл
Йăлтах ăнланнă пек ăна,
Пурне те тарават та хапăл, —
Тăрса пурăнмалла кăна.

Этемлĕхшĕн вăрçса, тата пĕр
Тем тăршшĕ ĕмĕрĕ пулсан
Ăна та вăл памашкăн хатĕр
Выртать салтакăмăр, тăван.

Хĕрарăм чĕр çитти кăларчĕ
Хĕрлĕ хĕреслĕ сумкинчен,
Упăшкине витсе хăварчĕ,
Ӳксе пуççапрĕ умĕнче.

Çыхман çĕн чĕр çитти — шап-шурă,
Тасалăх, çамрăклăх палли —
Парне парса тусне чыс турĕ
Сăмах тытнишĕн Натали.

Çаплах вара ăна пытарчĕç
Хула масарĕн картине,
Сăнне çапса йĕс çăлтăр лартрĕç
Юман юпин чи тăррине.

Çав гильзăран касса кăларнă
Йĕс çăлтăрсем çине пăхса
Пĕрре çеç мар эп шухăшланă,
Хускатнă кăмăла, ăса.

Эп çавсене пула халь сывă,
Тĕрĕс-тĕкел çӳреп пулсан
Вилме, çавсем пекех, çĕршывăм,
Сан ятупа вилесчĕ ман.

Йĕс çăлтăр айĕнчен хисепсĕр
Салтак сасси янранă пек:
«Тăван çĕре вут ан тĕрттерĕр!» —
Хушать вăл пĕтĕм вăйĕпе.

Тивĕçлĕрех тытса усрасчĕ
Вĕсен чысне, чапне ялан.
Йĕс çăлтăра ялкăштарасчĕ
Чи сутă çăлтăрпа пĕр тан.

* * *

Польшăри хула масарĕ.
Хĕрессем, пайтах чул палăк...
Натали тĕлне сăнарĕ
Май пулсан килсе курмалăх.

Вил тăпри çине салхуллăн
Тайăлса ларать черешня.
Çырлисем юлман халь унăн,
Çулçисем кĕрхи эрешлĕ.

Натали çырлаллине те,
Чечекрисене те курнă.
Иртĕ вăхăт — чĕвĕлтетĕ
Кайăк-кĕшĕк, вылĕ пурнăç.

Ирĕк Польшăн ывăл-хĕрĕ
Çак масар çине вăл тапхăр
Урăхла кăмăлпа кĕрĕ.
Батальон кĕтмест. Каятпăр.

Висла урлă каçнă ĕнтĕ
Малтисем, хуса çитесчĕ!
Иккĕмĕш эшелонсем те
Хускалма хушу кĕтеççĕ.

Айăп ан тăвăр, мухтавлă,
Ырă ятлă паттăрсемĕр:
Вăхăт шавлă та васкавлă,
Чарăнса тăрсах йĕместпĕр.

Сирĕн тĕрĕс хĕç-пăшалăр
Пирĕнпе пырать; тус-йышăр

Ун чапне хуратмĕ, шанăр,
Ĕмĕр-ĕмĕр канлĕ выртăр...

Натали алли типтерлĕн
Тăпрана кăпкалантарчĕ,
Темиçе тĕм йăмăх хĕрлĕ
Георгин лартса хăварчĕ.

Чĕрĕ пуç вăл йӳнеçтерĕ
Темелле-ши ĕнтĕ манăн?
Кайрĕ-ха çĕршывăн хĕрĕ,
Утмалли сахал юлман ун.

Кĕленче тăваткăл витĕр,
Чалăшрах пилотка айĕн
Тинкерсе пăхать пĕр шиксĕр
Йăл кулса юлан Сумбайĕ.

Мĕн тăвас! Çапах, çапах вăл
Ыттинчен телейлĕ тейĕн.
Кашнинех витмерĕ çавă
Савнă тусăн чĕр çиттийĕ.

Кашниннех куçне хупмарĕ
Савнă алă, ăшă алă;
Тĕмески çине лармарĕ
Хăй ятнех тутарнă палăк.

Мĕн тăвас-ха! Вăрçă-харçăн
Каярах кăна ларать ун
Ятсăр, паллă мар салтакшăн
Çӳллĕ палăкĕ мăнаçлăн...

Польшăн пĕчĕк хули çийĕн
Самолет сасси лăпланчĕ,
Тупă сассине те илтмĕн, —
Фронт чылай инçе ăсанчĕ.

Тăлăх мар тăпри Сумбайăн:
Поляксем лартах тăраççĕ
Тĕрлĕрен чечек, çул майăн
Тирпейлеççĕ те çумлаççĕ.

Пĕринче пĕр ватă карчăк:
«Ĕненместĕн пуль те эсĕ...» —
Терĕ те касса хăварчĕ
Çеремрен чиркӳ хĕресĕ.

«...Тен, тĕне кĕмен эс, ывăл,
Кам пĕлет-ха унта...» — терĕ.
Тăпрана католикла вăл
Хĕрес хыврĕ, пехиллерĕ.

Çавăнтах конфедератка —
Тăваткал поляк карттусĕ —
Тăхăннă поляк салтакĕ
Пурччĕ, пурччĕ унăн тусĕ.

Тусĕ — хĕрччĕ, тен, савни-тĕр,
Хăй пекех салтак тумтирлĕ.
Тем сăнатчĕç йывăç витĕр,
Уткалатчĕç урлă-пирлĕ.

Ватă карчăк çине иккĕш
Пăхса илчĕç те пĕр харăс,
Хурлăраххăн арçынни кăшт
Шӳт туса çапла каларĕ:

«Халь вилсен те чун лăпланĕ:
Тунсăх мар пулсан хура çĕр,
Салтака ав ырă пани
Пĕлĕтре çăлмашкăн хатĕр...»

Тăванне-тусне пĕлмесĕр
Итлесе ларать черешня.
Кам пулсан та çын, пĕртен-пĕр
Пархатаршăн вăл кĕрешнĕ:

Ырă кăмăлшăн та миршĕн,
Ырă çынлăхшăн вăл тăнă,
Тухăçран хĕрелнĕ иршĕн,
Ун çутишĕн вăл хĕç йăтнă.

Аслă, ирĕклĕ ăссемшĕн,
Çĕнĕрен талант чĕртесшĕн —
Вăл Коперникшăн, Шопеншăн,
Вăл Мицкевичшăн кĕрешнĕ.

Пĕтĕм Польша ырă суннăн
Лар, черешня, пар эс сулхăн:
Çын этемлĕхшĕн пуç хунă,
Чунĕ çутă пулнă унăн.

## XXI. Варвари инке

Колхозри ытти арăмсемпе
Варвари инке тататчĕ кантăр.
Çывăхарчĕ пĕр велосипед...
Почтальон иртет иккен-ха. Сантăр.

«Варвари инке, сана çыру!» —
Терĕ çав сатур ача хавассăн.
«Ырă пултăр, Сантăр, хыпару», —
Терĕç харăс икĕ-виçĕ сасă.

Варвари инке çыру чухлать.
Петĕр амăш вăл. Сумбай ырах-ши?
Хăвăртрах çул хĕррине тухать:
«Кӳр-ха, кӳр, ачам, хăех çырать-ши?..»

Урăхла пек курăнать алли,
Çырнă чух васканипе теес-и?..
Чĕтресе илет пур сас палли,
Тытнă кайăк пек хут виç кĕтесĕ.

«Вуласа тухам эппин наччас,
Звеньевойĕ хам та-ха, этсемĕр,
Хуса çитĕп тетĕп, чун чăтмасть,
Ман kaçалăка кăшт сĕтĕрсемĕр...»

«Ак тата! Пĕлместпĕр-им ара?
Аякри хыпар-çке, вуламасăр!»
Кантăр çурăмĕ çинче ларать
Чылайччен инке хускалаймасăр...

Шăпăр-шăпăр-шăпăр тăкăнать
Кантăр вăрринчен шултра куççулĕ.
Натали çырать иккен кăна:
Петĕр вилнĕ, татӑлнă кун-çулĕ.

Ӳлесе, ĕсĕклесе вара
Ыталарĕ кантăрне хĕрарăм.

Кĕпĕрленчĕç пурте ун тавра:
«Варвари инке, усал хыпар-им?»

Халиччен пулман йăла-и, тен, —
Тăрă урă пусĕпех инкемĕр
Макăрса юрласа ячĕ те —
Илтрĕç пĕтĕм аслă уй-хирсемĕр:

«Уничерен тухрăм, утă çултăм,
Касрĕ-çке çавам калемпĕре.
Пĕртенех те пĕр ачамсăр юлтăм,
Кам тавăрса парĕ Петĕре?

Çĕррĕм кусĕ çавракa мерченччĕ —
Тухрĕ ӳкрĕ кӳлĕ варрине.
Наталиçĕм, кин тăвас килетчĕ,
Хуйхă ӳкрĕ пуçăмăр çине.

Сан çинчен усал сăмах илтмерĕм,
Иксĕре кĕтеттĕм çав текех.
Çитеймерĕ ĕмĕтӳ, чиперĕм,
Макăратăн пулĕ ман пекех.

Çĕрĕм-шывăм илттĕр, пĕлĕт илттĕр
Чĕрене çурса тухан сасса:
Ылханап сана, чун татмăш Гитлер,
Вăрлăху сан пĕттĕр тăкăнса!

Аçупа аннӳ ан пехиллеччĕр,
Ачуна та пăчуна ан кур,
Тăпруна ан палăрттăр нимле çĕр,
Тăвăлпа эс сирĕл, хура мур!

Тытамак сана тытса хутлаттăр,
Шалкăм çаптăр пĕр-пĕр шăтăкра,
Аçа-çиçĕм хыптарса çунтартăр,
Сив кĕлне ан йышăнтăр тăпра!..»

* * *

Çаплалла сăпайлă çын, анне,
Тарăхса тем те пĕр сăвăларĕ;
Нимĕнле лăпланайман енне
Хăй каçалăкĕ патнех васкарĕ.

— Варвари инке, тен, кайăн эс?
Хамăр татăпăр. Явкай çывхарчĕ... —
Терĕç хăшĕ-хăшĕ. «Мĕн ĕçлес?
Мĕн ĕçлес килте халь ман?» — тет карчăк.

Карчăк çав! Сасартăках темле
Пĕрĕнчĕк пит-куçĕ ырханланчĕ.
Янаххи çаплах чĕтренкелет.
Ирпе çеç паян вăл капла марччĕ.

Арсăр арăм хальлĕн ял çинче
Пурăнатчĕ вăл хуллен, пĕр майлăн,
Ĕмĕтне усратчĕ ачинче,
Халь мĕнле ĕмĕтпеле йăпанăн?

Эртелре пулмасăр йăпану,
Тек ăçта вăл пирĕн пек çынсемшĕн?
Акă санăн сарлака ану,
Кил-йышу, епле унран писейĕн?

Туй тăваççĕ сăтăр çерçисем,
Чĕвĕл-чĕвĕл тек чĕвĕлтетеççĕ.
Таçта кантăр вăррине çисе,
Ахăрнех, вĕсем кĕшĕлтетеççĕ.

Хамрăн-çке вăрри те, сӳсĕ те,
Кантăрпа та кун курать хуçалăх.
Халăх пуйрĕ — кашнинех çитет,
Хамăр мар-им тӳсĕмлĕ çав халăх?

«Атьăр-ха татар пăртак касчен», —
Терĕ салтак амăшĕ вăраххăн.
Ун каçалăкĕ танах иккен.
Ушкăн — уншăн. Епле-ха пăрахăн?

Ăшăрах сăмах тупа-тупа
Калаçса шав татрĕç вара, татрĕç...
Темĕн чухлĕ çĕнĕрен купа
Шучă пек тăва-тăва тăратрĕç.

Сĕмленсе килет кĕскелнĕ кун,
Купасем çине пăхса илетĕн:
— Улăп çарĕн шлемĕсем-ши ку
Е пике-хĕр тухйисем-ши? — тетĕн.

* * *

Тăлăх арăм Варвари инке —
Аптрамансемпе вăл урам урлă.
Чĕнтĕрленĕ сарă калинкке
Халиччен кўртменччĕ кун пек хурлăх.

Çитрĕ ак ĕçченĕмĕр килне,
Тăчĕ-тăчĕ те вăл... кĕреймерĕ!
«Наталийĕн амăшĕ патне —
Кулине патне каçам-ха», — терĕ.

Пĕрле ўснĕ тантăш, ял хĕрех,
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтри тăхлачă.
Кам унран ытла хута кĕрес?
Унпала ăш-чик лăпланаканччĕ...

Кулине килтех тăрмашнă-мĕн,
Пахчаран каç кўлĕм таврăнайнă;
Варвари килессине пĕлмен,
Чĕртсе янă пулнă хуран айĕ.

Урам урлă тантăшĕ ăна
«Ман килес» тесе те калаймарĕ.
«Петĕр!» — терĕ те аран кăна
Ўкеймесĕр сак çине вырнаçрĕ.

Шарт сиксе çўçенчĕ Кулине,
Анчах арăм хурлăхĕ мĕн евĕр
Чун татса йĕмелĕх пулнине
Çав самант вăл тавçăрсах илмен-тĕр.

Каярах кăна, ăш кўтнипе
Сывлăшне аран леш çавăрсассăн,
Кулине ăнланчĕ пĕтĕмпех,
Хăй макăрса ячĕ чарăнмассăн.

Наталийĕн çыруне ăна
Варвари инке вуласа пачĕ.
Мĕнпеле сиплес çунан çынна?
Акă пиçрĕ Кулинен апачĕ.

Кулине сăра ăсса кĕрет.
Савăнма кăна мехелĕ юлнă:

Мĕнле пысăк, аслă тĕнчере
Ачисем пĕрне-пĕри тĕл пулнă!

Ах анчах, пĕтмерĕ-çке вăрçи:
Юлашки туппа лăплантарма та
Кирлĕ пулĕ çавă чĕрĕ сын,
Чун памасăр çук ярса пусма та.

Наталийĕ те... хăй çырнă та, —
Теплерех шăпа хăйне тӳр килĕ?
Тем курма та ĕлкĕрĕн унта!
Таварăнччĕ ашшĕ-амăш пилĕ.

Çапларах — сăмахпала-и е
Шухăшпа кăна-и — икĕ арăм
Сĕмленсе кулянчĕç: Энтрие,
Германа асилчĕç — пурте хамрăн...

Килчĕ ак хуçа — Илле пичче,
Каçрĕ кӳршĕрен Сăпани карчăк,
Ват Хĕветĕр кĕчĕ пахчинчен, —
Пурте вăрăнчĕç хуйха сасартăк.

Вулаттарчĕç çыруне татах,
Ашшĕ хăй вуларĕ — ăшĕнче те,
Сасăпа та: хĕр çырать, паллах.
Хаш сывларĕç. Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?!

Наталийĕн чĕрине вĕсем
Кăшт кăна çак каç кĕрсе пăхсанччĕ!
Хурланса çырать вăл, хĕрхенсе,
Чун варри çапах та ун пытанчăк.

Калама пултарайман, хăйман,
Хал çитмен япаласем мĕн чухлĕ!..
Çăлтăрсем пуçтарăнчĕç таçтан,
Ял урлах выртать Хур кайăк Çулĕ.

Тен, чăваш салтакĕ те çавна
Çăлтăр витĕр курăнан çул тенĕ.
Инçетри çĕршывсенче сана,
Хамăр çĕр, савса вăл кĕвĕленĕ.

Хăй çути пайтах çунсассăн тин
Салтак амăш урам урлă каçрĕ,
Ун ăшне Аптрамансен çемйин
Ăшă кăмăлĕ кĕрсе вырнаçрĕ.

Ял çинче çӳрет çĕнĕ хыпар,
Ах, усал хыпарăн ури уттă!
Варвари чĕртмерĕ вут-кăвар, —
Хускалассăн туйăнмарĕ хул та.

Кулине инкемĕр ахлатса
Тӳшекне хăпартрĕ, вырăн сарчĕ.
Тĕпелте хуллен шăкăлтатса
Выртрĕç ватă старикпе ват карчăк.

Кăшт тăрсан лăпланчĕ калаçни,
Юлашки сăмах тухать асаплăн:
«Эх-хех-хех, старик, — тет Сăпани, —
Тепĕр чунĕ катăлчĕ-çке ялăн...»

## XXII. Генерал чĕнет

Пулемет кана пĕлмерĕ.
Ыттисем лăпланнă чух
Кунĕн-çĕрĕн тĕрĕлтетрĕ
Пĕр каппайчăк ăçтиçук.

Çывăхра-и вăл, инçе-и?
Пĕр кунта пек, пĕр лере...
Нимĕç чиркĕвĕ çинче-и,
Подвалта-и, — шав перет.

Аптраман çавна тытасшăн
Шухăшларĕ пит нумай.
Шăп тытсассăн, тĕп тусассăн
Вăхăт çитрĕ кулянма.

Ма тесессĕн кĕреймерĕ
Рейхстага вăл чи малтан,
Ма тесессĕн çулĕ-йĕрĕ
Пычĕ питĕ катаран.

«Ларас марччĕ çав ухмахăн
Аптраман çулĕ çинче!

Вĕрес марччĕ ун пуçтаххăн
Йытăлла кун каçиччен.

Тен, хăй те сывах юлатчĕ
Хăйĕн нимĕç çĕрĕнче,
Манăн ятăм та пулатчĕ
Рейхстаг чулĕ çийĕнче...»

Тарăхать çапла пĕр тăтăш
Аптраман Энтри паян.
Виктор Басов, ырă тантăш,
Йăпатать ăна хутран:

«Эс эрех ĕçсе юлман-çке!
Юлашки пулемета
Пĕтермен пулсан пулмастчĕ
Çитесси ман хамăн та.

Эп кăна-и? Пур взвода вăл
Пуç йăтма памарĕ те!
Эс, юрать-ха, хурçă савăл
Çапрăн çав эсремете.

Взвод пĕлет: çавах вăл сансăр
Кĕрейместчĕ рейхстага.
Е кая юлатчĕ ахăр,
Халь унта — самант паха».

— Çавă çав! Хăвах каларăн.
Эп, тен, Атăл хĕрринчен
Берлина çити шутларăм
Çав шуйттан рейхстаг çинчен.

Чи малтан кĕрес килетчĕ
Çав сăпса йăви ăшне,
Хам куçпа курса тĕллесчĕ
Теттĕм чи юлашкине.

Çук, пулмарĕ, юрĕ ĕнтĕ... —
«Аптраман Андрей Ильич! —
Янратса дневальнăй чĕнчĕ. —
Пур повестка сан валли».

— Шет суда? — «Çук, çук, каларĕç
Тин кăна кунта штабран,
Генерал чĕнет, вăр-вар эс!
Кăшт ăна-кăна ăнлан...»

— Йыхăрать пулсан — çитесчĕ,
Çĕн комдив вĕт, курмалла.
Салтакран пуçланă теççĕ,
Çитнĕ ав генерала... —

«Кур-ха, кур!» — кулать дневальнăй.
Çурт янрать. Шăп пĕр хутне
Взвод вырнаçнă: тĕкĕр, ванна...
Çуса яр вăрçун тарне!

«Хырăнас!» — тет Аптраманĕ,
Бритвине пăрса лартать.
«Зо-лин-ген... Ĕхĕ... Германи...
Паллашса пăхар пăртак...

Япала тума пĕлеççĕ,
Пит çӳхе иккен хурçи.
Ăс-пуçне кăштах сиплесчĕ
Çав каппайчăк мул хуçин...»

Хырăнса тасалчĕ, çурĕ,
Улăштарчĕ çухине.
Тăхине хытарчĕ, тухрĕ
Кайрĕ вăл комдив патне.

Ординарецпа калаçрĕ
Алăкран кĕнĕ чухне:
— Генерал ытла хаяр-и? —
Тесе ыйтрĕ сых ятне.

«Пĕлĕн!» — терĕ леш, сержанчĕ,
Хăй пекрех çынна курса.
Шалалла вăл кӳртсе ячĕ
Хыçĕнчен хуллен кулса.

Адъютант умне вăш-вашшăн
Пычĕ тăчĕ Аптраман.
— Чĕннĕ те мана... Мĕн-ма-ши? —
Ыйтрĕ вăл саламласан.

«Кирлĕ пулнă пулĕ», — терĕ
Капитанĕ кăшт чеен.
Кĕрсе тухрĕ те тĕллерĕ
Алăка аллипелен.

Кĕрекен çине пăхмасăр,
Тем çырса мăн креслăра
Хурарах, лутра та каçăр
Генерал лара парать.

«Чăваш мар пуль те?» — сĕмленчĕ
Аптраман хăй ăшĕнче.
Генерал пăхса тинкерчĕ,
Тем йĕрлерĕ хут çинче.

«Хушнипе эп килтĕм халĕ...» —
Алă йăтрĕ кĕç Энтри.
— Вольно! — терĕ генералĕ
Нумайрах тытса юри. —

Аптраман? — «Так точно, эпĕ!»
— Чăвашран эппин? — «Чăваш».
— Ну — земляк. Ĕçсем мĕнле пек? —
«Япăх, генерал юлташ!»

— Япăх? Ак тата! Мĕскершĕн?
Мĕн çитмерĕ? Мĕн пирки? —
«Ваннăра мунча кĕретĕн,
Ни ăшши çук, ни милки...»

— А! Ку тĕрĕс ĕнтĕ, тĕрĕс! —
Кулса ячĕ ветеран. —
Хам та, шăллăм, тен, пĕр хĕрĕх
Шăмат кун эп çапăнман.

Милĕк тетĕн? Хурăн çулçă
Сарĕ таврăннă çĕре, —
Терĕ вăл. Энтри кăшт кулчĕ:
«Курăнать ĕнтĕ сире...»

Генерал тăрать: — Пĕр взводшăн
Рейхстага çул уçакан
Эсĕ пулнă теççĕ. Орден
Ыйтрĕç сан ятупалан.

«Рат старатсă!» — тетчĕ манăн
Асатте ун пек чухне...»
— Чим, унпа кайран мухтанăн,
Тĕрĕслер-ха мăнукне. —

Куçлăх витĕр чеереххĕн
Куçне хĕсрĕ генерал: —
Лейтенант кунта сĕнет-мĕн
Хĕрлĕ Çăлтăр... тен, сахал? —

«Парни мар паха, хисепĕ
Хаклă, генерал юлташ!»
— Хам та çав çапла теп эпĕ.
Хăш район сынни? — «Шлаваш».

— Варринче пурнан апла, — тет
Генерал, — эп хам тури... —
«Чăваш çĕрĕ пысăк мар вĕт,
Курма пулĕ», — тет Энтри.

Генерал кулать. «Чĕнетĕп
Хăнана», — тет леш хăйса.
Асли пăхрĕ сехетне те:
— Юрĕ, — терĕ, — тав чыса!
Пырăп тен сывах юлсан.

Колхозран мĕскер çыраççĕ? —
«Берлинра илмен те-ха,
Çын çитменнипе аптраççĕ,
Хĕн килет ака-суха.

Лашисем те сайрарах-тăр, —
Кавалери как никак.
Малашне ĕнтĕ час трактор
Пулĕ кашни çĕмрĕк танк...»

Генерал итлерĕ шăппăн:
— Орден илнĕ ятпала
Саламлатăп! — терĕ, ăшшăн
Алă тытрĕ тăванла. —

Сывă пул! — «Сунатăп сывлăх!» —
Терĕ, шалт туса, Энтри.

Утса тухрĕ çăмăл, чыслă —
Урайне лекмест ури.

Генерал пирус тивертрĕ:
«Урăхла тăван тĕнче!
Салтакки те урăх...» — терĕ
Савăнса хăй ăшĕнче.

Аса илчĕ вăл сасартăк
Вăтăр çул ытлашшипех
Курнине: йăлт татăк-татăк
Сăнланать кинори пек.

Аса илчĕ вăл: мĕн чухлĕ
Вырăсла пĕлмен этем
Ĕлĕк çупкă çинĕ пулĕ
Пĕр-пĕр хлын фельдфебельтен!

Аса илчĕ вăл хăй каччă
Чухнехи юрăсене.
Татăлса йĕрсе юрлатчĕ
Ят тухсан çын ун чухне...

«Аптраман-и-ха? Тупаççĕ
Хушамат та — мĕн ку чух! —
Терĕ вăл кулса пăртакçă. —
Ку чăнах та аптрас çук...

Кунпа намăс курмăн!» — терĕ,
Пычĕ кантăкĕ умне.
Анакан хĕвел хĕретрĕ
Унăн ылтăн пакунне.

* * *

Берлинрах, ишĕлеймесĕр
Юлнă тепĕр мăн çуртра,
Кам чухлайĕ кĕçĕнрех пĕр
Çын чунне çав вăхăтра?

Ыйхă вĕçрĕ Аптраманăн,
Хупаймарĕ вăл куçне.
Басов пурте çывăрсассăн
Пычĕ ун койки патне.

Пычĕ, ларчĕ, темле ырнăн
Шухăшларĕ тем çинчен.
Орден курчĕ тусĕн хывнă
Гимнастерки çумĕнче.

— Пĕлтерме юрать халь, тусăм, —
Терĕ Виктор Энтрине, —
Саншăн эпĕ алă пусрăм
Леш... рейхстаг стени çине. —

«Маншăн?! — терĕ Энтри тантăш,
Тăчĕ ларчĕ юнашар. —
Саккунлах та мар ку сан та,
Юрĕ, юлтăр, пăсас мар...»

## XXIII. Хамăр ял

Хамăр ял... Хăш ял вара вăл?
Елчĕк е Куснар?
Сиктĕрме, Виçпӳрт, Янавăл?
Вăл та, ку та мар.

Хамăр ял тесе хальхаççăн
Пирĕн халăхра
Пĕр-пĕрне çынсем калаççĕ
Шӳт тумалларах.

Мускавра-и, Хусанта-и, —
Земляку ялан
Йăл кулса сана пуç тайĕ:
«Хамăр ял, салам!»

Шупашкар вырăсĕсем те
Хуларан инçе
Çав ятпах пуплеççĕ ĕнтĕ
Пĕр-пĕрин çинчен.

Пристань-и унта, вокзал-и, —
Час-часах вĕсем
Тĕл пулсассăн: «Хамырьялы!» —
Теççĕ шӳтлесе...

Берлинра ку. Фридрихштрассе
Ятлă урампа

Ик салтак утса пыраççĕ
Пысăк утăмпа.

Пĕри çӳллĕ, мăк сухаллă,
Мăйăх вĕçĕсем —
Йăлт Чапаевла, пĕр аллă
Çулсенчи этем.

Тепри çамрăк, «тĕксĕр кайăк»,
Эрнере пĕрре
Хырăнсассăн та пит лайăх
Ун чухне пире.

Ик салтак хĕрсе утаççĕ, —
Хушупа, куран.
Ик салтак сăмах пуçлаççĕ
Утнă хушăран.

«Эп сана пăхап-пăхап та, —
Тет сухал, мăн сас, —
Курнă çын пекех эс, фактă! —
Хамăр ял пулас?»

Вырăсла перкелешет-ха,
Çамрăкки пăхать:
— Хамăр ял? Тен, пулĕ, — тет хăй. —
Эсĕ ăçти-ха? —

Чăвашла каларĕ хучĕ.
Ват салтакăн кĕç
Ялтăрарĕ куçĕ-пуçĕ:
«Курнă тетĕп-ĕç!..»

— Курмасан та курнă пултăр, —
Терĕ çамрăкки.
Хăй кăларчĕ шурă тутăр:
Нӳрлĕ пек çамки...

«Хăш ялсем эс? — тет сухалĕ. —
Чим-ха, каласар...»
— Эс ялнех пĕлесшĕн халĕ,
Районне те мар!

Хăш çĕршыв тесе ыйтмашкăн
Манас марччĕ сан.
Пĕтĕмпех эп каласассăн
Кайăн эс ăнтан.

Польша, Венгри, Югослави, —
Тухрăм эп веçех.
Халь ак пирĕн полк ялавĕ
Берлинра вĕçет... —

«Вăл апла-ха... Пулкаларĕ.
Хам та, шăллăм, эп
Çур Румынипе Болгари
Çĕрне виçрĕм теп.

Миçе шыв выртмарĕ урлă
Эпир пынă чух!
Тĕрлĕ юхăм, авăр курнă,
Атăл пекки — çук.

Мĕнле йывăç тĕл пулмарĕ:
Граб, платан, каштан...
Çав-çавах асран каймарĕ
Йăмрапа юман.

Хăш хулан чулне ман аттăм
Таптамарĕ çак?
Асăмра — çеремлĕ ялăм,
Пахчари сукмак.

Ĕнтĕ вăрлăх шўтерет-тĕр
Карчăк сыв пулсан.
Купăста акма черет-тĕр
Ăшăрах тăрсан.

Интереснă: манăн карчăк
Колхоз мар чухне
Шапаран пĕлсе пыратчĕ
Купăста срукне.

Шапа кĕçĕр кăшкăрсассăн
Çав каçах вара
Пахчана кайса акмашкăн
Хатĕрччĕ вăрра.

Вăрçăччен ăна пахчаçă
Турĕç колхозра.
Шаписем халь... хунамаççĕ, —
Шыв таса, ара.

Шыв таса та тарăн, çутă, —
Гидростанци пур.
Карчăк шалт аптрарĕ: «Çук, — тет, —
Пулас мар-ха хур!»

Мускавран кӳртерчĕ куçлăх,
Районран текех
Аллă пуслăх, утмăл пуслăх
Тултрĕ кĕнеке.

«Вĕренсе юлни юрарĕ!» —
Терĕ те вара
Сасăпах вула пуçларĕ
Пушă вăхăтра.

Асанне йăли пăрахăç
Пулчĕ майĕпе.
Çимĕçсем ларта пуçларĕç
Йăлт кĕнекепе.

Халь ман карчăк тем те турĕ,
Мухтанмасăрах —
Хăйне евĕрлĕ Мичурин
Хамăр колхозра.

Çавă çав: паян — кĕтӳçĕ,
Ыран — ятлă çын.
Ют çĕрте çăкри те йӳçĕ,
Мĕн мана Берлин?

Хăямат тетни-мĕн эсĕ
Çыннăн чĕрине!
Вăл туртать, çулне пĕлмесĕр,
Хамăр çĕр еннех...»

— Çулĕ ун Германи витĕр
Иртнĕ-мĕн, пичче! —
Терĕ яш салтак. — Час çитĕр.
Эпĕ илтнĕччĕ...

Мĕн илтни... ку тĕлĕкреччĕ:
Курнă эп йăмра,
Юрă-сăвă илтĕнетчĕ
Пирĕн урамра.

Клуб тавра яшсен шăв-шавĕ
Чĕтретет çĕре.
«Акатуй е Май уявĕ»? —
Тетĕп тĕлĕкре.

Вăранап — курап çак явăл
Нимĕç хулинех...
Салтаксем таврăнасса вăл
Пулнă пулинех?

Пĕр сăмахпалан — халь эсĕ
Çыр-ха пушă чух:
«Тыр вырма пырап» тесессĕн —
Йăнăш пулас çук.

Карчăкна кала: усратăр
Самăр такине,
Салатне калчалантартăр,
Ларттăр хăмлине.

Ĕçкĕ пулĕ питĕ шеп те,
Мĕн калас тата?
Алтăрне тытма, тен, эп те
Пулăшăп унта... —

«Тем пекехчĕ, тем пекехчĕ!» —
Терĕ ват салтак.
Сад пекки тĕлне çитеççĕ,
Чарăнаççĕ ак.

Йывăç сулхăнĕ. Лараççĕ
Çĕмрĕк сак çинче.
Чĕлхесем пакăлтатаççĕ,
Шухăшсем — инçе.

Çамрăкки кăларчĕ енчĕк,
Леш — «катюшине».
Йӳçĕ тĕтĕмĕ çĕкленчĕ
Икĕ пуç тĕлне.

Ват салтак пĕр-иккĕ харăс
Сывласа илсен:
«Ак фашист вăл, кур та лар эс, —
Терĕ ерипен, —

Хулисем те хула евĕр,
Хăйсене кура...
Пурăнасчĕ вĕчĕхмесĕр,
Мĕн çитмен мура?»

— Çĕр çитмен, — тет ун юлташĕ, —
Хамăрăн çĕрте
Хамăра чура тăвасшăн
Пулнă Гитлер, — тет.

«Çĕр çитмен ĕнтĕ, чăнах та,
Ав — рейхстаг çине
Миçе йĕс этем тăратнă
Пирĕн çĕр енне.

Тахçанах пире хăмсарнă
Пулĕ ку енчен.
Çын сахал та ав — хăпарнă
Кĕлетке вĕсен.

Хăратасшăн пулнă ахăр
Вырăс салтакне.
Çук, эпир пит хăрамастпăр,
Пытăмăр патнех».

— Вĕсем статуйăсем пулнă,
Памятник пекки;
Вĕсене илемшĕн тунă, —
Терĕ çамрăкки.

...Нӳрлĕрех тăрать çанталăк.
Плащ-палаткине
Уртса янă çирĕп çамрăк
Хулпуççи çине.

Вĕçсе килчĕ çил пĕр ластăк,
Вăлваскать таçта;
Сирчĕ ячĕ çил сасартăк
Симĕс брезента.

Хулпуççи çинче ешерчĕ
Полевой пакун.
Ансăр виç хăю хĕрелчĕ
Çавăнтах ак ун.

Ват салтак çавна сăнарĕ:
«Вăл апла иккен!..»
Пĕр сăмах та шарламарĕ
Хăй курни çинчен.

«Манăн вăхăт çитнĕ», — терĕ
Леш хайхи сержант,
Сехетне тытса итлерĕ,
Пăхрĕ пĕр самант.

— Эппин, час куратпăр ахăр? —
Терĕ ват салтак.
«Ахăрнех, çапла, куратпăр,
Сывă пул, земляк!»

Яшт тăрса сержант якатрĕ
Хăйĕн çи-пуçне,
Пăшалне вăл шăлкаларĕ,
Пăхрĕ çын çине.

Рядовойĕ тăпăр-тапăр
Алă йăтнăччĕ, —
Леш устав çинчен манмасăр
Пычĕ йăпшăнчĕ.

Ыталашрĕç, çĕр çăтасшĕ!
Çыпăçрĕç пĕрле.
Çулĕпе пĕри — шăп аппиĕ,
Тепри — ывăлĕ.

Пыр тĕпне темскер капланчĕ
Хĕпĕртенипе.
Вара утрĕ леш, сержанчĕ,
Хăйĕн ĕçĕпе.

«Кайрĕ, — терĕ тем çухатнăн
Ватăрах чăваш, —
Кам ара ку? Каснă лартнă —
Аптраман тавраш!..»

## XXIV. Таврăну

Аслати кĕмсĕртетмесĕр
Асамат кĕпер хывмасть...
Тăнăçланчĕ çĕнĕрен çĕр.
Вăрçă пĕтрĕ. Çын хавас.

Мир хыпарĕ вĕçрĕ акă,
Сарăлать ламран лама.
Çитрĕм эпĕ — мир салтакĕ —
Хам çуралнă ялăма.

Маншăн хаклă кашни кайăк,
Шырланти кашни чечек.
Тĕл пулать пăру, тиха-и, —
Тинкереп тин курнă пек.

Вар пусне лартса хăварнă
Кашни ешĕл йăмрана
Ыталас килет халь манăн
Тав туса лартакана.

Ырă çын пĕлсе упранă
Шыв ишен кĕр тăпрана:
Тăпраран чĕр чун çуралнă,
Тăпрапа вăл тăранать.

Ырă çын çĕре юсанă,
Тикĕсленĕ вар-вĕре.
Хăй çинчен çеç мар шутланă
Пурăнса вăл тĕнчере.

Çавнашкал такамшăн янтă
Ырлăх кÿнĕ этеме —
Хăйне мар, ĕçне курсан та
Именетĕн-çке темме.

Вăл йăмра пулин те лартнă,
Эп мĕн лартăп çĕр çине?
Мĕскерпе эп ырă ятлă
Пулăп тетĕн ун чухне.

Тарăн мар пулсан та пĕр йĕр
Хăварас килет вара.

Çуралас тăванăм пĕлтĕр:
Эп те утнă çĕр тавра.

Эп те утнă, сухаланă,
Çинĕ тертлĕ çăкăра.
Шухăшне те шухăшланă
Çĕр çинче хама кура.

Çĕр — çĕрме пуян, хăватлă,
Ан ўркен кăна, ĕçле.
Çакăнта çуралнă, ватлăп
Çакăнтах çынпа пĕрле.

Сывлăм ўкĕ, тăм та ўкĕ,
Çўрĕ ăшă çил вĕçсе.
Ўхĕрсе виртлешĕ ўхĕ,
Чĕвĕлтетĕç чĕкеçсем.

Аслă Атăл юхса иртĕ
Шупашкар çумĕпелех.
Шелепи çулне эп çитĕп
Чăвашла пупле-пуплех.

Тен, кирлех те пулмĕ урăх:
Сăввăмсем малтан вилсен
Маншăн пулĕччĕ пит хурлăх, —
Юлас марччĕ вĕсенчен.

Пĕр сехет пулин те юррăм
Куçне хуптăр каярах.
Тен, вăрах вăл янрĕ уйрăм, —
Пурăнать-çке а й - я - р а!

Çын пекрех тирпейленсессĕн,
Тен, мана та, сăвăçа, —
Чапшăн мар пулсан, хисепшĕн
Йыш хăвармĕ манăçа.

Тен, — ăçтан пĕлме пултарăр? —
Ман ята та хуртарма
Кăмăл тăвĕ тĕп хуламăр
Пĕр-пĕр урлă урама.

«Ун пирки пайтах хӑтланчӗҫ
Урлӑ-пирлӗ палкама», —
Тейӗ те Ваҫлей Иванчӑ
Ҫырса ҫапӗ пӗр хӑма.

Ах, чӑнне чӑн пек курсассӑн
Мӑн урам е тӑкӑрлӑк!
Тӑвӑр хулана кун-каҫӑн
Ма татах эп тӑвӑрлӑп?

Уншӑн мар хӗрсе ӗҫлетпӗр,
Ҫук: тӑван сӑмахпала
Халӑха ҫӗклесчӗ тетпӗр,
Йыхӑратпӑр малалла.

Шыв пек, ҫӑкӑр пек пулинччӗ
Вулаканшӑн ҫав сӑмах,
Ырӑ кӑмӑлӗ тулинччӗ
Ҫыннӑн кӑшт вуласанах.

Ҫав сӑмахпала кӗринччӗ
Ҫӗнӗ ӗмӗт сыпӑнса,
Сивӗ чух вӑл ӑшӑтинччӗ,
Хал паринччӗ ывӑнсан.

Ҫавнашкал ку чух: поэзи —
Куллен-кунлӑх япала.
Мӗльюншарӑн ҫӗкленеҫҫӗ,
Вӑй илеҫҫӗ унпала.

Ҫав-ҫавах — чӑнне калатпӑр —
Поэтсем эпир ялан
Ыранхишӗн те ҫунатпӑр
Тем парсассӑн та паян.

Тунӑ пек ӗҫпе кӑшт-каштӑн
Умӗнчи малашлӑхне,
Пултарулӑхне шанмашкӑн
Вӗрентсен чӑваш йӑхне —

Нимӗнле мухтав та урӑх
Кирлӗ марччӗ, тусӑмсем.
Хупланам та — шӑттӑр курӑк,
Тикӗслентӗр тӗмескем.

* * *

Пире пурнăç халаллană
Пĕр атте те пĕр анне.
Шăп çаплах çĕршыв та панă
Пĕрех çех-мĕн кашнине.

Ту çынни тупа мухтанĕ,
Хир çынни — çеçен хирпе.
Маншăн ак чăваш юманĕ —
Чыс, тĕрек, илем, тирпей.

Хура тинĕс, Шурă тинĕс,
Хĕрлĕ тинĕс те пулать.
Пирĕн тинĕс — ешĕл симĕс,
Çулçăпа вăл хумханать.

Аслă-аслă çĕр те пулĕ,
Пур чуххи те тăвăрри.
Пирĕн кăмăл мĕнпе тулĕ?
Эпир — аслă çĕр варри.

Авалтан тăван кĕтесĕм —
Вырăс халăх варринче.
Русь тесен, Раççей тесессĕн
Эп те пур ун ятĕнче.

Çавăнпа чун пек усратăп
Ашăмра эп ун ятне.
Урăм-сурăм шыв-шурта та
Пылчăк ямăп ун патне.

Унпала хĕвел çĕн питлĕ,
Çĕр те, пĕлĕт те хитре.
Унпала юрри те сиплĕ
Кăмăл туртнă сехетре.

* * *

Хушăран çанталăк хăмăр,
Хушăран уяр тӳпе.
Çавнашкал эпир те хамăр
Кăмăлпа, чун-чĕрепе.

Эп юрларăм тĕрлĕ юрă —
Хыттине те çемçине.

Тĕрлĕрен сăмах йĕр турĕ
Чунăм чĕлĕхĕ çине.

Хăш сăмах хаяр тухсассăн —
Вăхăчĕ йăваш мартан.
Тепĕр чух эп панă сассăм
Вăл килмест иккен хамран.

Çĕр-çĕр урлă, тинĕс урлă
Пурăнать-ха çичĕ ют.
Пĕрре мар вăл кӳчĕ хурлăх,
Халь те акă ун çав шут.

Хупăрласшăн вăл, таптасшăн
Пирĕн ешĕл пуссене;
Тилпĕрен вăрри акасшăн
Пирĕн лăпкă ăссене.

Çавăнпа çиллес те пултăм,
Пултăм тавлă-шавлă та:
Тарăхса тухан вут-çулăм
Хыптăр терĕм çав юта;

Çăварне пĕçертĕр терĕм
Вăл элек уçсассăнах...
Савнă çĕр, çуралнă çĕрĕм!
Сан çинчен ăшă сăмах.

* * *

Аптраман тавраш... Ăçта вăл?
Ăçтарах-ши çĕр çинче
Натали, Энтри те Павăл,
Кулине, Илле пичче?

Ăçтарах-ши кӳршĕ-аршă —
Леш Самаевсем, Верук?
Виктор Басов ăçтарах-ши?
Пур-ши çав çынсем е çук?

Ăçтарах Вано Сохадзе —
Натали çăлнă грузин?
Кам пуç хучĕ, кам çухалчĕ,
Кам сывах — телейлĕ çын?

Мӗн халпа тӑрать Хӗветӗр?
Мӗнлерех ун карчӑкӗ?
Герман хыпарне пӗлместпӗр, —
Çук та çук, йӗп марччӗ-çке?..

Вӑл Аптраманах-ши халӗ
Ват аслашшӗ калашле?
Кам пӗлтерӗ-ха, кам калӗ?
Чимӗр, калӑп малашне.

Пит ан хистӗр-ха: йӗркеллӗ,
Атьӑр Атӑл хӗррине.
Атӑл анӗ кӑшт тӗтреллӗ.
Сулхӑн. Пристань. Ир енне...

Çӑлтӑрсем сӳне пуçланӑ,
Бакен çеç мӑчлаткалать.
Икӗ çыннӑн ыйхӑ тарнӑ,
Икӗ çын çӑвӑнкалать.

Лайӑхрах пӑхсассӑн халӗ —
Ик салтак пек курӑнчӗ.
Кӑн-кӑвак диагоналӗ
Шалпар атӑ кунчинче.

Гимнастеркисене хывнӑ,
Пилӗкре пит шӑллисем.
Çӳçенсе илеççӗ сыввӑн
Сивӗ шывӗ сирпӗнсен.

Шӑлкаланчӗç те тумланчӗç,
Çаврака куçкӗскине
Кӑларса пӑхса юсанчӗç,
Харӑс чикрӗç кӗсйине.

Бакен мӑч турӗ те сӳнчӗ,
Кимӗ пулчӗ куç тӗлне.
Ватӑ бакенçӑ лӑш сулчӗ
Сарӑ вӗçлӗ кӗсменне.

Тӗтрене хӑех вӑл сирнӗн
Юхӑм май ярӑнтарать,
Пархатарлӑ, лӑпкӑ ирӗн
Хӗвелне чӗнме каять.

* * *

Атӑлпа ишет вӑш та вӑш
Шурӑ акӑш, шурӑ акӑш...
Тур ҫырлах! Миҫемӗш хут
Акӑш пулчӗ пӑрахут?

Тиркесессӗн танлаштарӗҫ
Урӑхпа та ун сӑнне,
Хальлӗхе ман унта мар ӗҫ:
Чӑнласах та пристане
Пӑрахут ҫав ирпеле
Тӗтре витӗр сас парсассӑн
Усрав акӑш евӗрлех
Ҫитрӗ, йӑпшӑнчӗ йӑвашшӑн.
Икӗ йӗкӗт ун ятне
Курчӗҫ — «Герцен» тенине;
Кӗчӗҫ, утрӗҫ пӗр енне,
Пычӗҫ тухрӗҫ хӳрине:
Нимӗскер тума та ҫук,
Вырӑн пит сайра ку чух.
Ҫак этемлӗх ывӑл-хӗрӗн
Канӑҫ ҫук-мӗн кунӗн-ҫӗрӗн,
Тӑрӑшсах-ҫке тӑрмашатпӑр
Хамӑр чӑмӑр ҫӗр ҫинче,
Каллӗ-маллӗ ҫул каятпӑр,
Ҫулӗсем ҫаплах инҫе...

А! Хӳре пулсан — хӳре,
Тӗлӗнтерӗн-им пире?
Канатсем ҫине лараҫҫӗ
Хире-хирӗҫ ик салтак,
Хутаҫҫисене салтаҫҫӗ,
Ухтараҫҫӗ тем шалта.

Аҫтӑрхан арбузӗ тухрӗ
Ак пӗрин. Хуҫи ӑна
Виҫнӗ пек ҫӗклесе пӑхрӗ
Ал лаппи ҫинче кӑна.

«Аптрамасть, сулмаклӑ ҫимӗҫ!» —
Терӗ вӑл, хӑй пӑхкалать,
Арбуза ҫырусӑр симӗс
Глобус пек ҫавӑркалать.

Те вăл çĕнĕрен çырасшăн
Пур патшалăх чиккине?
Те пĕр чикĕ хăварасшăн?
Кам пĕлет салтакăнне!

Пекĕпе вăл кăшт йĕрлерĕ,
Шăп вăта çĕртен чикет.
Натăрт! терĕ, шатăрт! терĕ,
Арбуз уйрăлчĕ икке.

Вăрри сирпĕнчĕ, саланчĕ,
Тутă та хура йăлтах.
Юлташне касса тыттарчĕ
Малтанхи чĕлле салтак.

Пылланса тăрать кĕрпеклĕ
Хĕрлĕ çимĕç — хĕрринчен.
Август уйăхĕн хĕвелĕ
Асамат пек ун çинче.

Çырткалаççĕ перекетлĕн
Кулачпа та çаралла.
Хуппине хĕрли пĕтсессĕн
Ывăтаççĕ Атăла.

Тăсăлать таçта, пĕтмесĕр,
Ĕмĕрхи тутар юрри.
Пăрахут тесен итлейĕр —
Палăрать тутар пурри.

Кутамкки çине выртать те
Меллĕрех, таянарах, —
Йышлăн-и, пĕччен пырать-и, —
Янратать тутар вара.

Чăваш шăппăн çул çӳрет вăл,
Урăлла юрлакана:
«Пархатар кураймĕ», — тет вăл,
Мухтамасть питех ăна.

Вырăс пур — ун кăмăл сийĕ
Тинĕс хумĕ пек шултра,
Ма тесессĕн вăл — Россия,
Ыттисем — йăлт ун тавра.

Вăл пăхать хăюллăн, танлăн,
«Эй, сыхлан!» тесе иртен
Грузчиксен сасси хăватлăн
Илтĕнетчĕ ĕлĕкрен.

«Эй, сыхлан!» — тесе матрусĕ
Ывăтатчĕ канатне.
Юрринче ун Атăл тусĕ —
Стенька Разин ĕмĕрне.

«Эй, сыхлан!» — Çав хулăн сасă —
Урăх вăл никамăн çук.
Вăл чĕтретнĕ касă-касă
Пур патшалăха ун чух.

Ĕлĕкрех çаплаччĕ Атăл,
Çаплаллаччĕ кăмăлсем.
Халь, паллах ĕнтĕ, расна вăл:
Çĕнĕ пурнăç — çĕн этем.

Халь юрлаççĕ, тиркемеççĕ
Чăвашсем те урăллах...
Ик салтак апат çиеççĕ,
Вĕсен шухăш урăхла.

Тӳпеттей пек çеç хăварчĕç
Арбуза, кĕç ун ăшне
Алтса çирĕç те тултарчĕç
Ывăç-ывăç вăррине.

Çуланса кăна выртаççĕ
Пĕрчисем «тӳпеттейре».
— Эй, çакна килте акасчĕ! —
Тет пĕри. — Илес-тĕр, э? —

«Колхозра арбуз пулмасть-и?»
— Пурри пур-тăр та, çапах
Аçтăрхан йăхне тăвас! — тет,
Пуçтарать леш тăрăшсах.

Кĕсйинчен хаçат кăларчĕ,
Тăкрĕ те — хĕвел питне —
Аяккинерех вăл сарчĕ
Нăрă пек пĕрчĕсене.

Вара выртрĕ тăсăлса вăл
Салтакла — шинель çине.
Пăхкаларĕ «Тăван Атăл» —
Виçĕм çул илнĕскерне.

Ун юлташĕ гимнастерка
Кĕсйине хĕссен-хĕссен
Кăларать «Василий Теркин» —
Туснă татăк-кĕсĕксем.

Пит паха тирпейлĕ çӳлĕк
Çийĕнчен — таса шкапран —
Кĕнеке илсе хĕрӳллĕн
Сăвăпа кăшт ăшăнсан.

Пит паха сăран тăпсаллă
Классиксем выртсан ума
Ылтăн сас паллиллĕ, анлă
Томсене уçса хупма.

Чап-мухтав, çĕршыв çунуçăн,
Сăвăç — халăх йыхравçи —
Пур тӳлек çĕре те уççăн
Вĕçтерсессĕн çавра çил.

Чап-мухтав, çавна илтсессĕн,
Инçетри ăшă пӳртри
Ĕмĕрне вăрçман этемĕн
Салтакла тапсан чĕри.

Анчах эс çĕр хут мухтавлă,
Окопри çынпа выртса,
Сăввупа та асăнмалăх
Ун чунне кăшт ăшăтсан!

Тĕссĕрленнĕ, лӳчĕркеннĕ,
Котелок паранкипе
Çыпăçтарнă çак поэма —
Вăл салтак винтовки пек.

Хăш чухне пулать салтакăн:
Табак пур та, хучĕ çук,
Тем çурса та вăл туртмашкăн
Хатĕр ăшĕ çуннă чух.

«Теркин» та пăртак шар курнă:
Кĕнекин виç хĕррине
Çын тирпейлĕн касса туртнă,
Тĕкĕнмесĕр çырнине.

Çавăнпа пырать те халь вăл
Гимнастерка кĕсйинчех...
Авăсать тӳлеккĕн Атăл,
Çул те çывăх, те инçе?..

Малтанах пĕлсе тăратăр:
Атăлпа ишен чи капăр,
Чи паха пăрахутсем
Шупашкар тĕлне çитсен
Тӳсеймесĕр-чăтаймасăр
Çухăраççĕ-мĕн пĕр тапхăр.

Акă ку та сасă пачĕ.
«Тăван Атăл» вуласа
Кăтăш пулнă çын вăранчĕ,
Сикрĕ тăчĕ васкаса:

«Шупашкар-им?» — Çав пулать-тĕр, —
Терĕ «Теркин» вулакан.
Вăл татах вулама хатĕр,
Куçĕ мăч та хупăнман.

Тĕрткелешрĕç те пĕр авăк
Тухрĕç Атăл хĕррине.
Улăхса çитсен сасартăк
Чăр тинкерчĕç пĕр-пĕрне:

«Аçтăрхан арбузĕ?! Вăрлăх!
Анас мар-и?» — Ну тата...
Пулĕ-çке вăл Атăл тăрăх,
Çикелеттĕмĕр кунта. —

«Пирĕн ял инçе те, юрĕ,
Тупăп-ха Шупашкарта...»
— Ан кулян. Мĕн тет Мичурин?
Аçтăрхан халь хамăрта! —

«Г е р ц е н» виççĕ кăшкăртсассăн
Кайрĕ Атăл варрипе.

Салтаксем сывларĕç ассăн,
Утрĕç Атăл хĕррипе.

Пĕр киоск куçа тĕл лекрĕ,
Сарă тет пĕри, вулать.
«Сарă мар, сăра!» — тӳрлетрĕ
Тусĕ ун кула-кула.

— Сăр... сăра... — «Хĕн пек-им?» — Шутсăр! —
«Пĕр сăмах вĕрентĕн те!»
— Тултарар-и? — «Куç пек! Унсăр
Чăвашра илем пĕтет.

Ял тени йăмраллă пултăр,
Пыл-сăра хăмлаллă пултăр
Теççĕ пирĕн таврара
Такмака çапса вара.

Пирĕн вату тухтăр пурччĕ,
Шап-шурахчĕ те — маттурччĕ.
Çав пĕрре каларĕ хучĕ:
— Авалхи хура ылханлă,
Тӳсме çук ĕмĕрсенче
Уйранпа сăра сыхланă
Чăваша çак çĕр çинче, —
Терĕ вăл иккĕленмесĕр.

Çав пăртак йӳтенĕ лекĕр
Ман тăванччĕ хăй — мучук,
Çавăнпа эп, ăçтиçук,
Тӳсейместĕп пуль ĕçмесĕр,
Тен, ун мелĕ кивĕрех-тĕр,
Ман ĕç мар-ха вăл ку чух...

Йăмăк! Пичĕке пуçла-ха».
— Кая юлтăр: пуçласа. —
«Ах, телейĕм çук! Уçла-ха,
Тен, тĕпне тутли ларса...

Ай-яй кăпăкĕ пит шурă!
Вĕр-ха, вĕр пăртак кăна.
Хуш тата пĕр пӳрне çурă.
Халь саккунлă. Тав сана!»

— Сав мана! — тет хĕр хăюллăн,
Йăл кулса пăхса илет.
«Сăмаху пит çыпăçуллă,
Савасса... аçу пиллет».

— Атте çук çав... — «Чăнласах-и?!
Хăш ялсем эс?» — Хамăр ял. —
«Эп те хамăр ял». — Хусах-и? —
«Урçа мар-ха...» — Ну, кал-кал! —

«Ах, чĕлхи ытла та вичкĕн!
Кам хăйранă ку хатер?
Ху валли тултар-ха — иккĕн
Шаккаса ӳпĕнтерер...»

Хĕрнĕçем чăваш салтакĕ
Сар хĕре калаçтарать.
Юлташне вара вăл акă
Вырăсла ăнлантарать:

«Тунсăхларăм! Тен, çич-сакăр
Çул йĕркеллĕ калаçман.
Чĕлхене манни чăн мар-тăр,
Аннене ăçтан манан?

Берлинра курсаттăм эпĕ
Пĕр чăваш генерала, —
Чăвашлах пуплет, атте пек:
— Кам тавраш? — тет. — Лар, кала... —

Ну... унпа питех лараймăн:
Генерал вăл — генерал!
Хăй ахаль пит вашаватлăн:
— Хăш район эс, — тет, — хăш ял?..»

— Да, — тет вырăсĕ, — туртать-тĕр... —
«Тен, кино курса тухар? —
Тет чăвашĕ. — Ав театр».
— Хутаçпах-и? Лайăх мар... —

«Ну çӳрер-ха, эп илесшĕн
Кучченеç пекки курсан.
Ман трофейăм, ху пĕлетĕн,
Сывă пуç та виç суран...»

Икĕ тус утса пыраççĕ
Шупашкар урамĕпе;
Хăш чух алă йăткаласçĕ
Астумасăр, çарти пек.

Астуса илсен кулаççĕ:
Пакун çук, саккунлă мар.
Сад пахчи патне тухаççĕ:
— Чим, афиша пур, вулар... —

«Савнă тусăм, хура куçăм».
— Ну, кăна ман курмаллах! —
Тет чăвашĕ. — «Халĕ, тусăм,
Пăрăнар çакăнталла.

Пĕр юлташ мана çыратчĕ...
Çак урампала пулас...
Ун кунта хăйне пĕр дача».
— Пысăк çын-им? — «Как калас...

Çĕр касма сентре парсассăн
Ма ыттишĕн кулянан?
Хамăр ялччĕ те, хальхаççăн
Куçнă-ха вăл хулана.

Çурт сăрлать». — Маляр-им? — «Маçтăр!
Чăн художник темелле.
Чим-ха, çак асфальт çулпа-тăр,
Çак çăка хушшипеле...

Э, автобус та çӳрет-мĕн!
Чарăну — кунта; тăхтар.
ЗИС çиçсе тухсан мĕн тейĕн?
Ав вăл çитрĕ. Виктор, лар!..»

— Ку ята эп илтнĕ ахăр? —
Тейĕ манăн вулакан.
— Точно! — тет салтак пек автор:
Таврăнать ман Аптраман.

Басова вăл, çула майăн,
Хăнана илсе кĕрет.
Тепĕр сыпăк вуласассăн
Пулăн эс кĕрекере.

## XXV. Сывлăш çавăрни

Çавăрса илер-ха сывлăш
Геройсем çиткеличчен.
Лашана та тулăх сырăш
Кирлĕ вăрăм çул çинчен.

Манăн та пăртак канмалăх
Янтă сырăш пулмасан
Тупмалла паян çаранлăх
Урхамах-Пегаспалан.

Тăлласа ярам пĕрер çĕр
Е çапам вĕрен пăти.
Геройсем вĕсем çӳреччĕр, —
Çамрăксем-ха, вăйпитти...

Сарлака, ем-ешĕл улăх!
Эп — яшран çав улăхра.
Чунăм туртнă пултарулăх —
Лирика вăл урăхла.

Çамрăк сăвăç сăвăланăн
Сар хĕвел кулса ярать.
Сарă ĕнтĕ, мĕн калайăн?
Юратать чăваш сарра.

Куласса кулать хĕвелĕ, —
Хăмăр пĕлĕт леш енне
Пытанса та вăл илкелĕ,
Астутарĕ тĕрлине.

Кашниннех телей те хурлăх,
Пурнăç — кăткăс япала.
Роза татăн — йĕплĕ хулă
Вăрттăн тирĕнĕ алла...

Эп çуралнă çĕрĕм-шывăм
Аслă çĕрĕн варринче
Пурăнать-ха ырă-сывă,
Чиперех вăл халиччен.

Çич çĕр юрă пĕлнĕ ватă
Тенор Хветĕр Кевĕрли

Йăвалать таçта кăçатă, —
Ĕççĕр юррăн мĕн кирли?

Кăсăя Ваçлейĕ сăвăç
Кăмака туса çӳрет...
Ман каллех — хальччен те — çав ĕç
Ĕмĕрхи кĕрешӳре.

Мĕн тăвас! Çăмăлланусăн
Ăнсăр пулнă та анне
Юр юрланă çамрăк пусăн
Асăнса хăй ачине.

Çав юрра итле тăркачă
«Юрăç пул!» тесе мана
Пехилленĕ эпи карчăк
Пат татса кăвапана.

Кĕввине кĕвĕлеймерĕм,
Сăввине сăвăласа
Ĕмĕре эп ĕмĕрлерĕм
Тарăхса та савăнса.

Кĕрешӳ-и, çапăçу-и?
Пурте пулчĕ пулмалла.
Унсăр халь — такам та туйĕ —
Каяймастпăр малалла.

Кашниех ăса вĕрентрĕ,
Ăс çукки чышкисемпе
Çемçерех çĕртен тивертрĕ
«Çын ан куртăр» тенĕ пек.

Саламат та леккелерĕ,
Вут тукмакĕ те хăш чух.
Çын: «Чăн çул кăтартрăм», — терĕ,
Хăйĕн — чăн сукмак та çук.

Ах, мĕн чухлĕ «реформатор»,
Дон Кихот хăраххисем
Чăвашра эпир курман-тăр
Лăпкăн халь аса илсен!

Кашниех вĕсем пĕрер йĕр
Хушрĕç ман çамка çине,
Кăвакартрĕç кашниех-тĕр
Манăн çӳç пĕрчисене...

Тӳррипе калас пулсассăн,
Урăх ĕç пĕлмен пирки
Час-часах сывлатăп ассăн, —
Тăвăр пек сăмах йĕрки.

Пурçăн хурчĕ çутă пурçăн
Явалать те хăй тавра,
Çиппине сын çăмхалуçăн
Хăй шалта типсе ларать.

Поэта çав хурт пек тенĕ
Пĕр ватти ĕлĕк-авал.
Шухăшларăм та пĕччен эп —
Аванни кунта сахал.

Аптрамасть-ха — хăйне майăн
Пурçăнах пулсан юрри.
Сӳс пулсассăн, мĕн тăвайăн?
Вăл та кирлĕ тейĕр-и?

Кăсăя тавраш Васлейĕн
Сăвăпа чĕри кӳтсен
Ырă пурнăçĕ вĕçленĕ
Кăмака ăшшипелен.

Тав çакна малтан ăнкарнă
Тăрă пуçлă çынсене!
Чĕрине вĕсем кăкарнă
Ушапуç юпи çумне.

Сăввупа кăна юлсассăн
Куçма-куçăн тĕнчере,
Хĕнтерех вара, юлташçăм,
Çулсерен вăл хĕнтерех.

Калĕç акă: «Хирĕçӳсĕр!
Пĕр конфликт шыра-ха, туп!
Ни кахал çын çук, ни ӳсĕр,
Ни усламăç çук, ни пуп...»

Пулнă ĕнтĕ, пулман мар-тăр
Тĕрлĕ йăпăх-япăх та.
Анчах хăй пулман-çке автор
Çавăн чух тăван ялта.

Хальлĕхе, **конфликт** тесессĕн,
**Хирĕçӳ** тесен мана,
Эп çакна асилтересшĕн
Тиркесе вулакана.

Ырă ятлă вулаканăм!
Пулчĕ аслă **хирĕçӳ**.
Çав амантнă чунăм манăн
Нихăçан та пирчес çук.

Манăн, санăн, кашни çыннăн,
Çын чăнах та çын пулсан,
Чĕри витĕр тухрĕ минăн
Вăрçă-харçă шар çурса.

Пур конфликтсенчен те вирлĕн
Пычĕ пĕр конфликт унта:
Халăха — кун-çул е вилĕм,
Эс çавна туйсассăн — тав!

Çак кĕнекене хупсассăн
Шухăшла та пуç тавра
Усалпа эс пит ан асăн
Салтака — мана — вара.

Кĕнеке пĕтмен-ха, шухăш
Вĕçленмен пек туйăнать.
Хурлăх, савăнăç — йăлт хутăш:
Аптраман йăх пурăнать.

## XXVI. Килте

### 1

«Тĕлĕк курнă эп, аслашшĕ, —
Тет асламăшĕ паян, —
Шур тĕпеклĕ сар чăх пур-и?
Çавă çап-çара çĕртех
Çăмарта туса пăрахрĕ.

Ах, ара, ку çĕмрĕлет вĕт
Тетĕп те чупса пырсах
Çав çăмартана илетĕп,
Пăхрăм: шĕвĕр пуçĕнчен
Шăтнă та иккен, мăнтарăн».

— Ну вара мĕн? Шăтнă — шăтнă, —
Тет Хĕветĕр хытăрах.
«Ах, аслашшĕ, темшĕн эсĕ
Ĕненместĕн ку чухне
Тĕлĕке те, нимĕне те.

Эпĕ тĕлĕк тĕлленесшĕн
Каç Энтрийĕн кĕпине
Пуç айне хурса выртсаттăм,
Ав кăтартрĕ те хайхи,
Тĕлĕк тем усал-тĕсел-им!»

— Ну апла мĕне пĕлтерĕ? —
Тет Хĕветĕр йăвашрах.
Сăпани татсах каларĕ:
«Килме килĕ çав ача,
Анчах килĕ аманса вăл».

— Вăрçă чарăннă. Çын сывă.
Тĕлĕксĕр те килĕ-ха, —
Тет Хĕветĕр. Сăпанийĕ
Хăйĕннех: «Килсен аван,
Тĕлĕкĕ пит уçă халĕ».

— Тĕллĕ пултăрччĕ эппин тĕк, —
Тет старикĕ килĕшсе, —
Чухлаймастăп эпĕ ним те,
Курăнмаççĕ тĕлĕксем.

* * *

Грузовик çинчен анайрĕç
Иккĕн икĕ еннелле —
Сукмакпа кĕрсе те кайрĕç
Варлă-вĕрлĕ хирелле.

Икĕ енĕ — сарă хăмăл,
Çĕмелсем те суратсем.

Çĕкленет хускалнă кăмăл
Хамăр ял çывхарнăçем.

Çĕмелсем кăçал пит йăвă,
Туй сайра пулмасть иккен.
Мĕн тери телей вăл — сывă
Пуçпала киле çитсен!

Тăкăс-çке Чăваш çĕршывĕ:
Ял çумне таяннă ял.
Шав ĕрчет, хунать хĕр-ывăл,
Çук ăна чарас вăй-хал.

Юриех, утсан-утсассăн,
Пĕр-пĕр ту пекки çинчен
Тавралла пăхас пулсассăн —
Вăтăр ял та курăн тен.

Ĕлĕкрех, яла пыруçăн,
Чи малтан чиркӳ тăрри
Курăнатчĕ сиввĕн, юттăн,
Çӳçенетчĕ çын чĕри.

Тĕрлĕ тамăкĕ, çăтмахĕ,
Ĕмĕр çук леш тĕнчесем
Хăрататчĕç. — Тен, чăнах-и? —
Тетчĕ пулĕ хăш этем.

Халь эпир яла пыратпăр —
Е эс шыв башни куран,
Е сасартăк элеватор
Кармашса пăхать таçтан.

Аптраманăн куçĕ çивчĕ:
Авă радио мачти.
Леш — пожарнăй хуралтиччĕ,
Çавă... Курăнчĕ ытти:

Çил арманĕ, склад та ферма,
Клубăн симĕс тимĕрри.
Аптраманăн, тем ĕçтернĕн,
Талпăнса сикет чĕри.

Çав клубра чылай вăл пулчĕ
Савнипе... Юлашки хут
Ташлани миçе çул тулчĕ?
Ан шутла, салтакăм, ут...

Пилĕк çул тухман куççулĕ
Пат тумлать тусан çине.
Басов та сăнарĕ пулĕ, —
Палăртмарĕ курнине.

«Темĕскер... куçа çӳп кĕчĕ...» —
Тесе пăрăнчĕ Энтри.
Вĕлтĕртетрĕ тутăр вĕçĕ,
Хĕп-хĕрлех ик куç хĕрри.

Рельс лартса тĕреклĕ çыхнă
Ик хăма хĕреслетсе.
Икĕ чĕлхепе-мĕн çырнă
«Поездран сыхлан!» тесе.

Виктор Басов асăрхарĕ
Чăвашла сăмахсене.
Тĕрĕсех вăл халь вуларĕ,
Чăр пăхтарчĕ тантăшне.

Астуман та Аптраманĕ:
Çакăнтан миçе каçман!
Шпал-и, курăк-и, вăрман-и —
Хăнăхнă та — сăнаман.

«П о е з д сăмаха çыратăр
Вырăслах эсир иккен», —
Терĕ Басовĕ. — Çырмасăр!
Çук пулсан кивçен илен.

* * *

Йăмра йĕн çывăхарчĕç
Униче хапхи патне.
Сывлăш çавăрчĕç, кăшт ларчĕç,
Шăлкаларĕç тусанне.

Пилĕк-ултă вĕрлĕк чикнĕ
Ик юпаллă ç и л  х а п х а.

Элтиван хуралçă вилнĕ,
Кам кунта ларать-ши-ха?

Ак ялтан чупса тухаççĕ
Ик ача, ик шакла пуç.
Хапхана яри уçаççĕ,
Ялкăшать тăватă куç.

«Эп сана паллатăп!» — терĕ
Пĕр ачи Аптраманне.
Тусне хушрĕ хăй: «Валери,
Чуп Илле пичче патне!»

Леш чупма кăна тăрсаччĕ.
— Чим-ха! — терĕ Аптраман.
Иккĕшне ик кĕмĕл пачĕ
Тахçанхи йăлапалан.

Ыткăнать тинех Валери,
Чавтарать çара уран.
Укçине пăхсан тĕллерĕ
Энтрие тепри куçран:

«Сан Испани тенки çук-и?»
— Çитеймерĕм... катара... —
«Е Норвегин? Люксембургăн,
Бельгин те юрать вара».

— Пулаймарăм çав унта та, —
Терĕ йăл кулса Энтри.
«Ну, тепре кайсан пулатăн,
Илсе кил ун чух, юри?»

— Юрĕ, юрĕ, — тет ял-йышĕ,
Леш çаплах пакăлтатать:
«Хăшĕ Венгрийĕнне, хăшĕ
Польшăнне тупса парать.

Пур Болгарин, ячĕ л е в а,
Пур Румынин те пĕрер.
Пур Германин, ку чухне вăл
Чи йӳнни пуль тĕнчере...»

— Эс таҫта ан тар пуйсассӑн?! —
Тет Энтри шикленнӗ пек.
«Ҫук, эпир музей тӑвасшӑн
Хамӑр класс ачисемпе».

Аптраман кулса куҫарчӗ
Ҫав ача мӗн тенине.
Вырӑсла вӑл ӑнлантарчӗ
Басова ун ӗмӗтне.

* * *

Пӗрене ҫинче лараҫҫӗ
Карчӑксем картипеле;
Ҫӑм чаваҫҫӗ, ҫӑм арлаҫҫӗ,
Кун илемӗ — кӗнчеле.

Август уйӑхӗн хӗвелӗ
Сулӑнать каҫ еннелле.
Пӗр ача ҫӳрет — телейлӗ
Пӗчӗкҫеҫ кӳмипеле.

Ҫул ҫинче — йӑмра турачӗ,
Тӑвӑл хуҫнӑ пулинех.
Ачана пӑртак ку чарчӗ.
«Тӑр-р-р!» — тет вӑл кӳмине.

Ак кӳми ҫине тиерӗ
Туллиех йӑмра ҫулҫи.
— Пул сутатӑн-им? — шӳтлерӗ
Хирӗҫ пулнӑ ватӑ ҫын.

«Мӗн калатӑн-ши, мучи, эс?»
Тенӗ пек пӑхать ача.
Ун тӗнчи илемлӗ, тикӗс:
Сутнӑ, илнӗ, ҫи анчах.

Салтаксем тӗлне пулсассӑн
Мучи хыврӗ ҫӗлӗкне.
Ӗҫӗ пур пулас — васкавлӑн
Пӑрӑнать вӑл пӗр енне.

Халь салтак тӗлӗнтерейме,
Таврӑнах тӑраҫҫӗ те...

Ял-йыша та ял этемĕ
Паллаймарĕ пулĕ, тен.

Ача çеç юта курсассăн
Чăр тинкерчĕ те пĕрре —
Хăй ĕçнех тытать хавассăн
Никам çук пек тĕнчере.

Кăлтăр-кăлтăр... шав туртать-ха
Кантрапа вăл кӳмине,
Çаврăнса пăхсах пырать хăй
Кăлтăрмачĕ куснине.

Тантăшсем тинех сăнаççĕ:
Ачасем ялта сайра.
Ашшĕсемсĕр хунаман çав, —
Ар йăх пулнă вăрçăра.

— Салтаксем килеççĕ мар-и? —
Терĕ ак пĕр асанни.
«Пирĕн пулĕ-ха, хыпарĕ
Пурччĕ, — терĕ Сăпани. —

Вăл пулсассăн та паллаймăн,
Миçе çул ĕнтĕ килмен...»
Хăй пăхать, пăхать, мăнтарăн,
Ал тупанĕ айĕнчен.

Ак салтак утса та çитрĕ:
— Сывă-и, кинемейсем? —
«Сывă-ха. Ху шеп-и?» — Çирĕп! —
«Ларăр». — Ларăпăр чĕнсен.

Мĕнлерех колхозăн мулĕ?
Тултарать-и кăмăла?
Çăкăрлă-тăварлă пулĕ,
Хуртлă-хăмăрлă? — «Çапла!

Пурăнса пăхсассăн курăн...» —
Тет пĕри кăшт хытăрах.
— Ялăн тĕрлĕ явлăк пур ун, —
Тет тепри, — мĕнех вара?

Валеҫӳ кӑҫал та пулчӗ,
Килес ҫул та пулӗ-ха... —
«Аюях! Энтри...» — Йӑл кулчӗ
Сӑпани тӑхлачӑ халь.

Тӑчӗ, пычӗ, ыталарӗ,
Шӑппӑн тӗршӗнчӗ ҫумне.
— Асанне ҫапах палларӗ, —
Тет Энтри хӑй тантӑшне.

«Тӗлӗкре курсаттӑм мар-и, —
Тет асламӑш Энтрине, —
Чим-ха, ак каласа парӑп...»
— Юрӗ, юрӗ, асанне... —

Тутӑрне юсарӗ карчӑк,
Пуҫтарать ӗҫне: хӑна!
Пӑхкаларӗ те — сасартӑк
Чӗнчӗ пӗчӗк ачана:

«Петӗр! Ай сӑмсу тавраше!
Мӗн тӑвар ку сӑмсана?
Юсӗ тухнӑ, ҫӗр ҫӑтасшӗ.
Кил-ха, кил, тытар ӑна.

Ак ҫапла тытар та акӑ
Ҫӗклесех ҫапар юсне.
Ӳлӗмрен ҫав акӑш-макӑш
Ан кӑлартӑр вӑл пуҫне!

Йӑмӑкун ачи, чиперӗм,
Наталийӗн ҫак ҫеҫке.
Ашшӗ... ашшӗ килеймерӗ...»
— Эп пӗлетӗп. — «Ҫавӑ-ҫке.

Вӑрҫӑ уншӑн пуҫ пӗтти ҫӗр
Пулчӗ ҫав. Пиччӳпелен
Пӗр-пӗрне курман-и иксӗр?»
— Ҫук. — «Ҫуках-тӑр... Эх, Кервен!..

Ку — кукку пулать, туратӑм, —
Терӗ карчӑк ачана, —
Патретне пӑхах тӑраттӑн,
Халь к у к к а те ак ӑна».

Куккăш чĕнчĕ: — Кил-ха, Петĕр,
Кил, ан ютшăн, ма таран? —
Карчăк хушрĕ: «Именет-тĕр,
Пĕчĕкрех çав-ха, айван.

Юлташу хăш ял? Э, вырăс...
Ашшĕ-амăш пур пуль те?
Пур пулсан самай-ха... Пыр эс,
Утăр... пуплĕпĕр килте».

Ик салтак, пĕр ватă карчăк,
Тепĕр пĕчĕкçĕ ача —
Ăрăва усрас çĕр шанчăк,
Çитĕнсе пыран калча —

Ерипен кăна уттарчĕç
Тăкăрлăк хĕррипеле...
Пĕлĕт ан хуплатăрахчĕ
Хамăр тунсăх хĕвеле.

* * *

Хĕрĕх пĕрмĕш çул, çулла,
Пăсăлнă кĕрекене
Çĕнĕрен халь çын тулать
Аптраман Илли патне.

Тултарать Илле пичче
Кашнине расна черкке.
Кам пурри-çукки çинчен
Шарламасть-ха кĕреке.

Кулине инке кăна
Сăрине ĕçтернĕ чух
Асăнать: «Ку — Гермăна,
Те вăл чĕрĕ-ха, те çук...»

Тултарса лартать вара
Ытлашши курка пĕрре.
Акă çурт хуçи тăрать,
Çамкине пăртак пĕрет:

— Эпĕ, вырăс йăлипе,
Тост каласшăн... Хамăршăн!

Çĕнтерӳшĕн тетĕп эп,
Партишĕн те халăхшăн! —

«Тĕрĕс! — терĕ уçă сас. —
Вырăнлă сăмах, юлташ!
Халăх халь... мĕнле калас, —
Йăлт пĕр Аптраман тавраш».

— Ку Иван Исайчă-çке! —
Тетĕр пулĕ. Çавă ку.
Аптраман ĕçен ĕçке
Лекмеллех ĕнтĕ çак кун.

Улшăннă Самаев та,
Ун хăрах çанни пушах.
Сулахайĕпе йăтать
Черккине. Шӳтлет хăй шав:

«Тем пулас та тем килес,
Те тăкса ярас тата,
Те калле туртса илес,
Те сасартăк сĕвĕрлес, —
Пултăр пĕрех хут шалта!»

Янк тутарчĕ те Иван
Тав туса хăйматлăхне
Ӳпĕнтерчĕ янракан
Черккене лĕпки çине.

Басов, кăшт именерех
Сăнаса лараканскер,
Йăл кулса илет пĕрре,
Хăй сăпайлă та чипер.

Ак Самаев хайхине:
«Мĕн пăхатăн? Тыт та яр!
Аслă вырăс халăхне
Алтăр тивĕç, черкке мар!»

— Перекет! — тесе çĕклет
Ват аслашшĕ: Энтрипе,
Викторпа шаккас килет,
Кармашать вăл черккипе.

Вырăсла перкелешет:
«Наша, ваша — пурте, вçе,
Сначчăт, мы — удин Раççей,
Сам салтак, ехветтĕр!» — тет.

Карташне кĕрсен юрать...
Пĕр вăл Виктор орденне —
Мухтавне тытса курать,
Пĕр Энтрийĕн «Çăлтăрне».

Темĕскер аса илсе:
«Ах, асламăшĕ, мĕнле
Ăс памарăн эс?!» — тесе
Тухрĕ вăл пăлтăрнелле.

Ак Георгий хĕресне
Çакрĕ кĕчĕ ват салтак.
Ларчĕ хăйĕн вырăнне
Танлă, тӳрĕ, шăпăртах.

Виктор курчĕ те кулать:
— Значит, воин, ветеран? —
Леш пуçне кăна сулать:
«Никак нет, эп — Аптраман!»

Шӳт те кулă, савăнăç.
Вак-тĕвек шăл йĕренсем
Тĕттĕмччен халь явăнĕç
Пӳрт тавра кĕшĕлтетсе.

* * *

А Палля? Ăçта вара вăл
Аптраманăн кĕçĕнни?
Килте çук, инçе халь Павăл,
Икĕ çул ялтан кайни.

Картинсем те вăл сăрларĕ,
Асламасов чапĕ те
Ăна канăçлăх памарĕ,
Шав çĕклерĕ ĕмĕте;

Сăвăпа та аппаланчĕ,
Çырчĕ вăл шкул хаçатне.

«Ялава» та ярса пачĕ
Вăтансах пĕр-иккĕшне.

Аполлон Иванч, учитель:
«Ман вĕренекенĕм те
Поэта тухма пулчи, тен», —
Тетчĕ ял ҫинче-мĕнте.

— Юнĕ шĕвĕ! — тетчĕ ашшĕ. —
Мухтайран иртеймесен
Ан та тытăнтăр. — «А как же, —
Тетчĕ леш, — трук мар, хуллен...

Хăйĕнче пулсан ан хирĕн.
Астăватăп: Чĕмпĕрте
Константин Васильч та пирĕн
Ҫакăн пек ачахчĕ те,

Мĕн кăтартрĕ вăл, асту-ха,
Ак Кĕҫтук те эс ăна!
Чăвашра ку чух эс туп-ха
Ун ятне пĕлмен ҫынна...»

— Чăвашра кăна-и! — тетчĕ
Аптраманĕ малалла. —
Кĕҫтенттинĕн амăш сĕчĕ
Сиплĕ пулнă пулмалла... —

«Халăх сипĕ, чун хавалĕ! —
Тетчĕ леш. — Мĕн ĕмĕртен
Тĕлĕрни вăранчĕ халĕ.
Ҫĕнĕ ят хăпарĕ тен!..»

Витеймерĕ сăвăҫ терчĕ,
Пулаймарĕ капитан.
Вăтам шкул ҫаплах пĕтерчĕ
Пирĕн кĕҫĕн Аптраман.

Чăмăр ҫĕр ҫине пĕрремĕш
Атом бомби ӳкнĕ ҫул
Мускавра йăлт ҫĕнĕрен-мĕн
Вăл суйларĕ аслă шкул.

«Репин та пулса пулмарĕ,
Пушкин та пулаяс çук.
Атома кăшт чухлас мар-и
Чухлама май килнĕ чух?

Лайăх сăвăç — иккĕ, виççĕ,
Тен, çитет çак ăрăва...
Вăтам çеç пулсан та — физик
Кирлĕрех халь çĕршыва».

Çавнашкал шутларĕ Павăл,
Вĕренсе пырать хастар.
Ма тесессĕн хăй, паллах, вăл
Вăтам çеç пуласшăн мар.

Аякри тăван пырсассăн,
Палляна ыйтса пĕлсен,
«Студентра вăл», — тет мăнаçлăн
Ват аслашшĕ ун çинчен.

Студентсем те килекенччĕ,
Ку таçта çу ирттерет?
Пит çырсах каймасть студенчĕ,
Ахăрнех, вĕсен секрет...

* * *

Çĕр урайлă сулхăн лаç.
Ĕмĕрхи хăмла шăрши.
Карташне кĕресшĕн каç,
Лăпкă-лăпкă пек çĕршыв.

Наталипеле чипер
Хĕр юлташĕ çав лаçра
Пăшăл-пăшăл темĕскер
Калаçаççĕ паçăрах.

Ахаль чух тăхăнакан
Тумпа мар хĕр; ун кĕпи —
Йăлтăр-ялтăр пурçăнтан,
Тĕсĕпе те хӳхĕм пит:

Кăвакарчăн пĕсехин
Курăнса çиçсе илет.

Хӑй вӑл явнӑ пиҫиххин
Ҫӳҫине пӗтӗркелет.

Хальтен-халь анас хӗвел
Алӑк ҫурӑкӗсенчен
Сапалать ҫуткам сентел,
Вылянать хӗр питӗнче.

Пытарма пултарайман
Савӑнӑҫ та пур унта,
Ҫӑмӑл хурлӑх та куран,
Вӑрттӑн канӑҫсӑрлӑх та.

Ку — Самаева Верук,
Кӗтсе илчӗ савнине.
Ҫав-ҫавах кӗме хал ҫук
Пат тӳрех савни килне.

Именет вӑл, вӑтанать
Сапӑрах кӑмӑлӗпе.
Аванах та мар ӑна, —
Сӗкӗнсе ҫӳренӗ пек.

Юлашки шупка шевле
Ҫунӑхан Верук сӑнне
Ачашланӑн ҫиҫкелет,
Чуптӑвать те — лап сӳнет.

Арсӑр юлнӑ арӑмпа
Ар кӗтсе упраннӑ хӗр
Мӗн ҫинчен, мӗн кӑмӑлпа
Калаҫса лараҫҫӗ-тӗр?

Калӗ мӑнтӑр ҫӗр сире,
Эп пӗлместӗп нимӗн те.
Ырӑ каҫ ҫитертӗрех
Ӗмӗтленнӗ ӗмӗте.

* * *

Уйӑх паларчӗ. Хапха,
Алӑк-кантӑк уҫӑлни
Кӗҫӗр пычӗ вӑраха,
Час выртмарӗ кил ҫынни.

Сăпани те ерипе
Тулăн-шалăн пĕрехмай
Кĕлете е нӳхрепе
Утрĕ пулĕ çав чылай.

Уçă çакнă вăчăра
Халь те ав кил картинче
Уйăхпа çиçсе пырать
Чĕр çитти кантри çинче.

Ав аслашшĕ та шалтан
Кантăкне уçса ярать:
«Ма кĕмерĕ карчăк ман?
Сăпани! Ура шăнать...»

— Ах, çакна! — тет карчăкĕ. —
Вăтанасчĕ çамрăкран... —
Паллă ĕнтĕ: хĕрĕнкĕ.
Мĕн тăвайăн? Аптраман!..

Кăшт тăрсассăн лаççинчен
Натали сасси анчах
Илтĕнет çинçен, çемçен,
Хурлăхлăн та пек кăштах.

Хура куçлă Петĕре —
Çумĕнче тапкаланса,
Алхасса выртанскере —
Çупăрлать вăл юрласа:

«Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан çапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Ăшă çумăр чаш та чаш,
Ӳс, калчам, çĕклен эс яш,
Çӳлерен çӳле кармаш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

Юлташпа эс пул юлташ,
Усалпа эс ан паллаш,
Тăшманпа ан пул йăваш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Вырăспа та тăванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте — пирĕн хурăнташ,
Çывăр пĕчĕкçĕ чăваш!
Малалла утсан — малаш,
Каялла юлсан — каяш,
Чăн çултан эс ан аташ,
Çывăр, Аптраман тавраш!»

**2**

Аптраман тавраш вăранчĕ,
Пуринчен малтан лаçран
Пĕчĕк Петĕр сасă пачĕ:
«Тăр, анне, чăпар автан
Виççĕ авăтрĕ, хы-ы-тă!»
— Хытă тетĕн? Тăмалла... —
«Эп паян та пулă тытăп», —
Терĕ Петĕр малалла.

— Тытăн, тытăн, — терĕ амăш, —
Эс кунтах тытман пуль те? —
Вырăнне вăл йăпăш-япăш
Хыпаларĕ: — Çук-ха, — тет. —

Халь кукки пур, намăс пулĕ! —
«Пахчара ман кӳлĕ пур, —
Терĕ Петĕр, — пысăк кӳлĕ».
— Юрĕ, ывăлăм, маттур! —

Пăлтăр алăк сасси пулчĕ,
Шăппăн тухрĕ Кулине.
Сиплĕ сĕт шăрши ак тулчĕ
Кăшт тăрсан кил картине.

Нумайччен чăрăлтаттарчĕ
Кукамай ĕне сĕтне,
Петĕрĕ валли хăварчĕ
Çăрине çилли тĕпне.

Уйрăм сурĕ, витсе лартрĕ
Алкумне куркипеле,
Хапха уҫрĕ те ăсатрĕ
Ĕнине кĕтĕвелле.

Ак Энтрийĕ те вăранчĕ,
Тухрĕ утă ăшĕнчен.
Атă тăхăнчĕ те анчĕ
Карташне сайхах ҫинчен.

Пĕлĕте вăл пăхкаларĕ:
Кунĕ ырă пулмалла.
Шăм-шакне хуҫлаткаларĕ
Салтакри йăлапала.

Таҫта рельс сасси тĕнлетрĕ,
Хăлхара чĕтрет ҫинҫен.
— Миҫе ҫапрĕ? — «Улттă», — терĕ
Натали пусма ҫинчен.

Ывăлин питне ҫăвать хăй.
«Эп те! Эп те тетĕп-ҫке,
Куккипе айт-тва тăвап-ха!» —
Терĕ пĕчĕк Петĕркке.

Алăран вăл ҫăлкаланчĕ
Питне шăлнă-шăлманах,
Чупса анчĕ, хăлаҫланчĕ
Куккăш ҫумĕн аванах.

Ҫӳлелле вара ҫĕклерĕ
Куккăш тăкăс ачана:
— Хушамат мĕнле-ха? — терĕ. —
Тем... манатăп эп ҫавна. —

«Аптраман-Сумбай! — Йĕркеллĕн
Тавăрать ача, унтан
Аллине тăсать пĕрерĕн:
Ку — Сумбай, ку — Аптраман!
Ку — Сумбай, ку — Аптраман!..»

Натали ытараймасăр
Пăхрĕ ывăлĕ ҫине:

Ӳснĕçем курать вăл, ахăр,
Тепĕр Петĕрĕн сăнне.

— Тăнине те мантăн пулĕ? —
Тет Энтрийĕ. — Е тин çеç? —
«Çывăх мар-çке Горький çулĕ, —
Терĕ лешĕ, — кучченеç

Çăмарта пĕçерсе хутăм,
Кукăль çупрăм... пыл, улма...»
— Ну, апла эс тивĕç пултăн
Манăн паттăр тусăма. —

«Тивĕçли — нумай шырамăр —
Тупăнĕ-çке вăл ку чух.
Пирĕн урăх пуль шăпамăр,
Шӳт тума та кăмăл çук».

— Йывăра ан ил-ха эсĕ, —
Терĕ пиччĕш йăмăкне, —
Пĕр атте-анне кĕтесĕ
Тăвăр пулмĕ хăй йышне. —

«Уншăн мар, Энтри... Пĕлетĕн:
Йывăр маншăн çак кунсем».
— Ăнланап. Е эп чул тетĕн?
Урăхланĕ-ха, кĕтсем... —

«Кĕт те кĕт!.. Эп вĕренесшĕн.
Ну, хам тĕллĕн çăмăл мар.
Кăçалтан кайса кĕресшĕн —
Е Хусан, е Шупашкар...

Çак пăртак аталансассăн
Урăхланĕччĕ-и тен».
Ывăлне пăхса вăл ассăн
Сывласа илет хуллен.

— Эпĕ пысăк! — терĕ Петĕр,
Хăй чĕрне вĕççĕн тăрать;
Çын çинчен куçне илмесĕр: —
Пысăк, пысăк! — кăшкăрать.

«Пысӑк, пысӑк, пысӑк!» — терӗ
Хӑвӑрт амӑшӗ ӑна;
Пӑчӑртарӗ, хӗсӗрлерӗ
Хӑй ҫумне вӑл ачана.

«Ав мӗн пысӑкӑш вӑл, куккӑш,
Пӑх-ха эс хурамккана.
Ӑм сана! Ӑм, энӗс, путӑш!
Ҫисе ярӑп ак хӑвна!»

— Эп сана хӑвна ҫиетӗп,
Ам! — тет Петӗр амӑшне.
«Эс ҫиен-ҫке ҫиессе те», —
Тет леш ирӗксӗр хӑйне.

Ҫаплалла каласрӗҫ иккӗш, —
Виҫҫӗш тейӗпӗр, — паян.
Тухса утрӗ вара пиччӗш
Пахчари сукмакпалан.

* * *

Басов пурӑнчӗ, чыс курчӗ
Виҫӗ кун ҫак кил-йышра.
«Ну, хӑналӑх срукӗ тулчӗ! —
Терӗ вӑл ӗнер вара. —

Тур каларӑш — виҫҫӗ тетчӗ
Ӗлӗк пирӗн асанне».
— Пӳртӗн те тӑват кӗтес те, —
Терӗ шӑппӑн Кулине, —

Тепӗр каҫ выртан пуль тетпӗр. —
«Ҫук, унтан эсир мана
Аллӑн пилӗк пӳрне тейӗр.
Хӑвӑр пырӑр хӑнана».

— Пырӑн та... этем кун-ҫулӗ...
Ан ятла эппин, каҫар,
Пӑхаймарӑмӑр та пулӗ,
Ял ялах ҫав, хула мар. —

«Лайӑх, тетя, питӗ лайӑх!» —
Терӗ Басов ҫурмалла.

— Лайăххи ĕнтĕ... хăй майăн
Пурăнать этем çапла. —

Çавнашкал ĕнер калаçрĕ
Энтри амăш хăнипе.
Куç хупи-хупми çĕр каçрĕ
Виктор кил шухăшĕпе.

Энтрирен малтан вăл анчĕ
Çав сайхах çийĕнченех.
Пахчана уттарчĕ каччă
Аслăк айĕн пĕччченех.

Тухрĕ те — унта Хĕветĕр
Улмуççи сышать иккен.
Калаçтарчĕ темĕн те пĕр —
Шăп Энтри çывхариччен.

Викторĕ туртма тăрать те
Старике пирус сĕнет.
Леш пăртак хыпса пăхать те:
«Чĕлĕмпе турт, шăллăм», — тет.

— Мĕншĕн? Мĕн вара пит чĕлĕм? —
«Чĕлĕм тутă çӳретет».
— Ун тутти... ăçтан-ха пĕлĕн? —
«А вăл шыв пит ĕçтерет...»

Те чăнах калать старикĕ,
Те шӳтлет хăй мелĕпе?
Виктор пăхрĕ те пĕр-иккĕ
Ун çине — чăнах та пек.

Куçне çеç пăртак хĕстернĕ
Шур сухаллă Киремет.
Виктор, темĕскер систернĕн,
Тепĕр хут пăхса илет.

Кулчĕ ячĕ çамрăк каччă.
Лешĕн пĕрĕнчĕк тути
Çавна çеç кĕтсе тăратчĕ.
Хĕ-хĕ-хĕ! кулать ватти.

Шӳт тумашкăн юрамасть-им
Уçă кăмăллă çынсен?
Шӳт тума Хĕветĕр маçтăр —
Авалхи шайпа, çемçен.

«Улмуççи авлантаратăп, —
Тет аслашшĕ Энтрие, —
Авкăстра сĕткен çăра та...»
Шахвăртать старик чее.

— Хам та пулăшăп-ха... — терĕ
Ним сисмен пекех Энтри.
«Колхоз сачĕн çук типтерĕ,
Çавна пулăшаймăр-и? —

Терĕ шухăшлăн Хĕветĕр. —
Шăнчĕ сад пĕр хĕлĕнче,
Çавăнтан варах чĕртетпĕр,
Шанчăк çамрăксем çинче.

Салтаксем килех тăраççĕ,
Майлаштарăр-ха часрах.
Тухăç пулĕччĕ пăртакçă,
Килтине ăна — хамах...»

* * *

Калаçсах юлать аслашшĕ.
Икĕ тус шыв хĕррине
Çăвăнасшăн, уçăласшăн
Анчĕç сар каçма çине.

Тепĕр икĕ пахча урлă
Веруксен пахчи иккен
Вĕт хăвallă та шыв-шурлă
Курăнать анат енчен.

Çумăрсем çăвах тăраççĕ,
Шыв çитет пахча патнех.
Армансем шеп авăраççĕ
Çăнăхне те салатне.

Çирĕк витĕр, çĕмĕрт витĕр
Ылтăн-кĕмĕлĕн, çинçен

Курăнать — хĕвел шевли-тĕр —
Аптраман каçми çинчен.

Ак вара — чипер, тирпейлĕ,
Кăшт вăтанăçлă та пек
Хăпарать телей хĕвелĕ
Шыв арманĕ хыçĕпе.

Çав самант çуталчĕ кайрĕ
Веруксен çăка каçми.
Икĕ каччă асăрхарĕ:
Хĕр тăрать пуси-пусми.

Хĕр тăрать те хĕр пăрать-мĕн
Кăшт хăмăртарах çӳçне.
Мĕнешкел чуна вăратмĕ
Çав картина ун чухне?

Пăрчĕ, пăрчĕ те силлерĕ,
Сапаланчĕç кăтрисем.
Ĕнчĕпе хĕвел тĕрлерĕ
Ун пуçне типĕтнĕçем.

Кăн-кăвак купальник çийĕн
Пĕркенет хĕр сар халат.
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитнĕн
Килнелле вăл çăрхалать.

Тантăш каччăн кăмăл савăк,
Пытараймăн хăнаран.
— Çавă-им? — тет Басов. «Çавă», —
Тет хĕрелнĕ Аптраман.

Çавă ĕнтĕ. Туй пулать-тĕр
Кĕркунне кĕрлĕхĕпе.
Ял паян тума та хатĕр,
Кăшт йăлашăн тăхтăп эп.

Пиччĕш урлă, Герман урлă,
Каçмалла та-ха Энтри,
Авланмашкăн та кăшт хурлăх:
Тен, хыпар илмĕпĕр-и?..

Уншăн-куншăн тем каламĕ,
Ӳпкелемĕ те тăван, —
Ял йăли-çке, ял халамĕ,
Пĕлтерсе хуни аван.

* * *

Хальлĕхе, шывран тухсассăн,
Викторпа юлашкинчен
Шеп кăна апат тусассăн,
Ăсатсассăн станцинчен,

Аптраман — официаллă
Тенĕ пек — правленине
Пырса кĕчĕ, пачĕ алă
Унăн председательне.

Вăрçă хыççăн председатель
Çав Самаевчĕ каллех.
Сывлăхран пуянах марччĕ,
Халь хавшанă пек пушшех.

Çавăнпа çапла ун шучĕ:
Çын тупасчĕ çийĕнчех.
Çакăн пек калаçу пулчĕ
Унăн кабинетĕнче.

«Што ты эс, юлташ, кĕместĕн? —
Терĕ вăл. — Шав хăналан?
Мĕн тăвас тен, мĕн ĕçлес тен?
Партпуху ыран, ан ман».

— Тăвасси, Иван Исайчă...
Вĕренес-и тен пăртак? —
«Хăм... Каллех кунта эп, сначчăт,
Атнă ут пек тăпăртат!

Çăмăл мар хăлаçланмашкăн
Сулахай алăпала...
Пĕр сăмахпала — халь санăн
Председатель пулмалла».

— Эпĕ? Манăн? — «Тата камăн?»
— Хăвăнах пуль. Мĕн пирки? —

«Эп курак хăваламашкăн —
Пахчана, хăяр мĕлки!

Чирлĕ эп. Райком каларĕ:
Çын туп терĕ. Тупрăм та!»
— Ăс çитеймĕ. — «Совет Çарĕ
Ăс памарĕ-им унта?

Марш, атака, наступлени...
Халь ялта та çав иккен.
Пулăшăп. Правлени членĕ
Тăвĕç-ха мана та, тен».

— Опыт çук, Иван Исайчă. —
«Опыт вăл хĕр мар, ăна
Эс хĕве хупаймăн, каччă!
Опыт — халăх, самана...»

— Лайăх мар апла, хăйматлăх:
Эсĕ вăрçă вăрçнă чух
Аттене суйланă халăх,
Халĕ — ывăлĕ... çук, çук! —

«Што ты эс! Апла пулмасть-и?
Çав аван та! Чим-ха, чим...
Аптраман тавраш династи
Теесрен хăратăн-им?

Калаканĕ пулĕ... Парти,
Парти сĕнĕ сан ятна.
Ну, паллах, вăл демократи:
Суйлавпа. Чухлан ăна...

Çын çук, шăллăм, ху пĕлетĕн:
Хăшĕ пĕтрĕç пуçĕпех,
Хăшĕ «ман пахчам, кĕлетĕм,
Ман ĕнем» тет кунĕпех.

Хăшĕ пур — çартан килет те
Паспорт та илмест кунта:
Ĕçкелет те, çикелет те —
Хулана вĕçет, янта.

Акнă, вырнă, çапнă, пиçнĕ
Хулара, ун шучĕпе.
Ялта çеç пит йывăр пиçнĕ,
Ваçанкка йĕпленĕ пек.

Мĕн вара колхоз, кала-ха:
Çил хапхаллă ют карташ
Е вăл хамăр кил-çуртах-и?
Эс çавна ăнлан, юлташ!

Кун пирки çапла шутлап эп —
Ал çитерĕç-ха пĕрре:
Хуларан калле çын тапĕ
Ялсене, уя-хире...»

Аптраман Энтри итлерĕ
Темле çĕнĕ ĕмĕтпе.
«Парти, парти ал çитерĕ!» —
Терĕ лешĕ хăйшĕн пек.

## XXVII. Кĕрхи хыпар

Аптрамансем пӳртре тăваттăн:
Асли — Хĕветĕр асатте —
Аллисене кăшт вылятмашкăн
Тем каскалать ытахальтен.

Асламăшĕ арлать, сĕвемĕ
Çĕре çитех ун тăсăлать.
Илле пичче темле кичеммĕн
Хаçат пăхкаласа ларать.

Тĕпел кукри енчен шăлт та шăлт
Илтĕнкелет-ха: Кулине
Çăвать-тĕр чашăк-тирĕк, кашăк, —
Апат çитернĕ пулинех.

Аптрамансем пӳртре тăваттăн.
Тулта кĕрхи кĕр кураксем
Вĕçеççĕ чалăшшăн, хăяккăн,
Йăл-йăл курнаççĕ халь вĕсем.

Чиркӳ çинче (халь — тырă склачĕ)
Чăвăлтатаççĕ чавкасем:

Уяртрĕ, шăнтĕ час. Аванччĕ, —
Кĕпçеленеççĕ калчасем.

Чӳречерен шак-шак шаккаççĕ:
«Илле пичче, сана пакет.
Ял Советне уттар. Памаççĕ.
Темле особо важный тет».

Илле фуфайка çакса ячĕ.
Çитсе кĕрет: ют çын ларать.
Ыйтса тĕпчерĕ, ал пустарчĕ,
Сургучлă мăн конверт парать.

Часрах килне васкать кил пуçĕ;
Чĕре йăшкать, чун ыратать.
Хăçан ку пакета вăл уçĕ?
Анчах ак çитрĕ. Хăпартать.

Машинкăпа тем пичетленĕ
Чăкăртатан шур хут çине.
Хуçамăр ăна мар тинкернĕ,
Вăл асăрхать чăвашлине.

Çӳхе, тăваткăл пирус хучĕ.
Тӳп-тӳрĕ, вĕтĕ сас палли.
Пăхать Илле — сасартăк курчĕ,
Палларĕ: Германăн алли!

Вула пуçларĕ куç илмесĕр
Вăл номĕрленĕ хутсене.
Итлеççĕ виççĕн пĕр çын евĕр,
Сăмах чĕнмесĕр пĕр-пĕрне.

**1**

...Германи. Тыткăн. Госпиталь баракĕ.
Клин патĕнче пит йывăр аманса,
Тăнран тухса, эп тыткăна çаклантăм.
Им-çам парса касса сипленĕ чух
Эп, ăнсăрскер, калаçнă нимĕçле.

Тăна кĕрсен — сестра та, тухтăр та
Манпа раснах çемçен пупле пуçларĕç.

Чĕнеççĕ нимĕçле — эп шарламастăп.
Мĕн пĕлнине эп пытарасшăнччĕ:
Ют çĕршывра ют халăхăн чĕлхи
Ытти чухне вăл кирлĕ пулĕ теттĕм...
Тăлмачĕ — ирсĕр сутăнчăк, шурри —
Шăл тунипе йĕлпĕрсе илчĕ те:
«Брось, Аптраман! Сан йышшине пĕлетпĕр,
Ĕнер эс хăвна ху тыттартăн», — терĕ.
Мана тинкеререх пăхса иртеççĕ:
Вĕсемшĕн эпĕ — рядовой çеç мар...

2

...Ак хĕрĕх виççĕмĕш çулхи январь.
Çулталăк çурă вăрçă тапранни.
Хышар-хăнарсăр пĕтнĕ салтаксем —
Эпир кил-йышсене хурлантаратпăр.
Эп те çаплах хыпарсăр шутланатăп.
Анчах эп пур-ха, пур, тăванăмсем!

3

Кĕске туналлă, чăмăр нимĕç тухтăр
Пăхсан ытла ариецах та мар,
Мана калаçтармах вăл тăрăшать:
Мĕнле-ха рядовой тата чăваш
Пĕлет  пулать çак чаплă чĕлхене?
Епле ăнлантарас-ха ман ăна?
Çав çул Мускав тавра — аспирант мар —
Профессор та, писатель те пĕр çын пек
Пăшал тытса кар тăчĕç хурала.
Ик-виçĕ ют чĕлхе пĕлекенсем
Аманчĕç, пуç та хучĕç, ма тесессĕн —
Пур халăхшăн та, пур чĕлхешĕн те
Çĕкленчĕ халăх татăклă вăрçа.

4

Январĕн вуннăмĕшĕ. Чылайччен
Калаçрĕ чăмăр тухтăр манпала:
Германи мисси, нимĕçсен культури...
Анчах кама вăл лекрĕ çав культура!
Кам тивĕçлĕ ăна ку чух, кам сыхлĕ?
Сыхлакансем нимĕçсенчен те пурччĕ,

Вĕсен çул пуçĕ ячĕпе чĕнетчĕç
Чăвашсенех пĕр пирĕн колхозра.
Ăста-ши халь вăл? Хăтăлайĕ-ши?

5

Январĕн çирĕм пĕрмĕшĕ. Паян
Нимрен малтан çул пуçăмăр асра.
Вилмен, вилмест вăл, вилмĕ нихăçан та,
Çĕнтерĕве ертсе пырать çара.

6

Февралĕн виççĕмĕшĕ. Темĕн пулнă?
Паян медперсонал салху, çиллес.
Суран çыххисене кăрт-карт туртаççĕ...
Германи траур юпăнчи пĕркеннĕ:
Сталинградра шар курнă нимĕçсем.

7

Ĕнер пуçланчĕ март. Çырас килмест.
Суранăм тӳрленет. Юсаннăçемĕн
Мана тĕпче пуçларĕç хытăрах.
«Эс коммунист, — тет тухтăр, — ан пытар!» — тет.
Мĕн тейĕн-ха? Эп партире тăманччĕ,
Анчах унран нихçан та ютшăнман,
Ыран-и, тепĕр кун-и — пĕрлешеттĕм,
Хатĕрленсе çитмен пекчĕ хама.
Çурма интеллигент айванĕ мар-и!
Кусем шанмаççĕ: партирех шутлаççĕ.
Анчах эп партие улталаймастăп,
Вăл çав тери паха та пысăк маншăн!
Эхер те коммунист мĕн тӳснине
Тӳсме тивсессĕн — хаваспах эп хатĕр.

8

Март. Саккăрмĕш числа. Салам, аннеçĕм,
Ват асаннем, Тамара, Натали!
Мĕнпе чыслатăр ирĕклĕх кунне?
Мана коммунистсен шутне кĕртсе
Таçта илсе каяççĕ — паллă мар-ха:
Концлагере е çак барак хыçне...

9

Апрель пуçламăшĕ. Германи. Лагерь.
Хырсем кашлаççĕ... Хамăр хырлăх мар ку!
Ту-чакăл хушшинче унта-кунта
Аран упраннă кукăр йываççем
Кашлаççĕ килĕшӳсĕр те çиллессĕн,
Çак хĕсĕр çĕршыва ӳпкелесе...
Ĕçлетпĕр. Кирлĕ-ши çак пирĕн ĕç?
Вататтпăр чул, тем шăтăкĕ алтатпăр,
Алтсан-алтсан каллех çав шăтăка
Хăй тăпринех яратпăр — мĕн тума?
Этемлĕх мăшкăлĕ, тĕнче кулли!

10

Апрелĕн вун пĕрмĕшĕ. Манăн кун.
Паян эп çирĕм саккăр тултаратăп.
Тăвата катăк сахăр пухрăм та
Икел кофипеле сим пыл симлерĕм:
Ĕçки те çав, çики те çавă пулчĕ.
Атте-анне, сывах-ха ывăлăр,
Ун хушамачĕ те Аптраманах,
Асаттене пĕлтерĕр — савăнтăр,
Анчах çитеймĕç çав çырăвăмсем...
Йĕри-тавра пралук карса тыттарнă,
Вăл чĕрĕп пек, шăртланнă аçтаха пек.
Тăват енче тăвата пулемет,
Кĕтессенче тата тепрер лараççĕ.
Мĕн чухлĕ тӳсĕпĕр — пĕлмест никам та.

11

Пĕрремĕш майшăн мăшкăлтăк шывне
Тата шĕветерех антарса пачĕç.
Хуралнă, пусăхнă, хĕрхӳ паранкă —
Пĕрер паранкă çын пуçне шăп тиврĕ;
Хуппипелех çăтатпăр та — «ĕçе»,
Пур шăнăрсем сӳслениччен тӳнккетпĕр.
Тата мĕн курасси ай пур-ши-ха?

12

Берлин. Тĕрме. Ик çул тултарчĕ вăрçă.
Çак çӳп-çӳхе пирус хучĕсене

Ку таранччен ҫырнисемпе пӗрлех
Аран-аран илсе кӗме пултартӑм.
Мана ҫак тыткӑна «юри лекнишӗн»,
Нимӗҫсене хӑйсен чӗлхипеле

Ӳкӗтлесе пассивлатас шутпа
Хам пӗлнине пытарнӑшӑн тата
Туссем пирки шӑтманшӑн айӑплаҫҫӗ,
Пуҫланчӗ пулмалла тӗнче камичӗ...
Асап иккен суйма пӗлмен ҫынна!

**13**

Тӑван ҫӗршывӑмри тӑван кӗтес!
Эп сан историҫӳ пулас тесеттӗм.
Тӑван йӑха тӑван сӑмахпала
Хӑй кун-ҫулне ӑнлантарас килетчӗ:
Хыҫне пӑхсан — тӳсӗмӗпе мухтантӑр,
Умне пӑхсан — ӗнентӗр телейне,
Йӗри-тавра тем анлӑш тавракурӑм —
Р о с с и я пуррипе вӑл хӗпӗртетӗр
Тесе ӗҫлеттӗм савнӑ ӗҫӗме.
Анчах истори ҫ ы р а к а н н и мар,
Т ӑ в а к а н н и с е н ч е н пӗри пулса
Эп лекрӗм тимӗрленӗ нӳхрепе.
Ҫапах истори малаллах пырать.
Чул, тимӗр, вут — этем ӑсне чараймӗҫ,
Историе тӑваканни вӑл — халӑх!
Апла пулсан ҫыраканни те пулӗ.

**14**

Пуҫланчӗ август, юлашки ҫу уйӑхӗ.
Кӗрхи шӑна вӑл хытӑрах ҫыртать:
Тӑшманӑн кӗркунни инҫех те мар-тӑр...
Мана хӗн кӑтартаҫҫӗ, асапласҫӗ.
Атте-анне ан пӗлтӗрех ҫакна.
Тен, пурте пӗтмӗпӗр, хӑшне хӑтарӗҫ,
Хӑшӗ-пӗри пултарӗ хӑтӑлма,
Кайран пӗлтерӗҫ асапсем ҫинчен...
Халь, следователь патӗнчен ансассӑн,
Кунта никам пӗлмен чӗлхепеле —

Чăваш чĕлхипеле — çак хут çумне
Пăталаса хуратăп тăшмана,
Питлетĕп, ылханатăп эп ăна!

15

...Германи маншăн пушă ят çеç марччĕ:
Тĕп никĕс хывакансенчен пуçне —
Бетховен, Гете, Дюрер, Гегель, Кант
Сахал тĕлĕнтермен мана хальччен.
Эп Гейне юррине ытараймастăм,
Çак нимĕç чĕлхипех вăл çырнă-çке.
Мĕнле-ха çавнашкал чечен, илемлĕ
Халап-юмах, легенда хывнă халăх —
Поэт, философ, музыка ăсти —
Мĕнле вăл çак çурмаккая пуççаптăр?!
...Чул карташне вун пилĕк минута
Мана илсе тухаççĕ çӳретме.
Çӳп-çап, хура-мара тăккалакан
Пĕр шăтăк тавралла тек çаврăнатăп.
Çав шăтăк хĕррине тенеплерен
Паранкă шăтнă — çинçешке пĕр авăр,
Çавна пăхса эп хавасрах утаттăм.
Паян çав чĕрĕ пурнăç паллине,
Çав имшеркке пĕртен-пĕр хунава
Ытлашширех тинкертĕм пулмалла:
Хуралçă — тăхлан куçлă кĕлетке —
Ман пĕчĕк телее час асăрхарĕ,
Мана чарса мăнаçлăн пычĕ те
Паранкă аврине çăлса пăрахрĕ...
Эх, мĕскĕн!

16

Сентябрĕн пиллĕкмĕшĕ. Ик эрне
Манпа пĕрле Стоянов Крум ларать —
Пăлхар çынни. Чĕлхеçĕ. Софирен.
Эп ăçтанне пĕлсен пит хĕпĕртерĕ:
«Ак пин çултан тĕл пултăмăр та!» — тет.
Пăлхар-чăваш теорийĕ вĕсен те
Сас панă пулнă-мĕн пĕр хушăра.
Ашмарина аван пĕлет. Вуланă...

### 17

Октябрĕн çирĕммĕшĕ. Хĕснĕçемĕн
Хĕссе пыраççĕ пирĕн пурнăçа.
Çапах эпир халь иккĕн. Вăраха-ши?
Крум чăвашла чухлать, эп — пăлхарла.
Хушшăмăрти тăлмачăмăр ялан —
Хăватлă вырăс халăхĕн чĕлхи.
Анчах нумай вĕренейместпĕр пулĕ...

### 18

Ноябрĕн çиччĕмĕшĕ. Çак куна
Капла та ирттермешкĕн тиврĕ-мĕн!
Ку манăн юлашки уяв пулмасть-ши?
Паян славян ăрăвĕсем çинчен
Калаçрăмăр Стояновпа чылай.
Укçа хутаççине силлекенсем
Çав йăхсене тĕнпе, йăлисемпе
Пĕр-пĕринчен ютшăнтарман пуласассăн
Мĕнле хăват вăл — славянсен тĕнчи!
Эпир?.. Аспарухсен юлашкисем
Пин çул ытла славянланса пырсассăн
Пире — Россия варринчисене —
Пин çул кирлех те пулмĕ малашне.
Чĕлхе пирки калатăп эп кунта.

Ытти? Пĕлмешкĕн йывăр: çĕнĕ халăх —
Совет çĕршывĕн халăхĕ пулса,
Ăс-тăн варса, юна хутăштарса
Чăмăртанатпăр пулмалла йăхсем.
Мĕнпур славян соборĕн чанĕнчен
Пин хут хăватлăрах «Аврора» залпĕ!

### 19

Ноябрĕн çирĕм тăххăрмĕшĕ. Паллă:
Мана кунтан кăларас çук... Çĕршывăм,
Вăраннă халăхăм, тăванăмсем!
Çитереймерĕм çамрăк ĕмĕте,
Хамран килмерĕ, айăп ан тăвăр.
Чунтан-вартан сире савса юлатăп,
Чăваш çĕршывĕ, ирĕклĕх, Россия...

* * *

Çапла пĕтет çав сапаланчăк,
Сархайнă хут çинчи çыру.
Хыпарсăрччĕ те — пурччĕ шанчăк,
Ак çитрĕ, Герман, хыпару.

Хыпар çитейрĕ — шанчăк пĕтрĕ,
Ӳксе çухалчĕ вăл тинех.
Илле пичче пуçне лăш пĕкрĕ,
Сывларĕ ассăн Кулине.

Шур тутăр вĕçĕпе хупланă
Ăшаланан тута-çăвар
Вĕри сывлăшпала тăртаннă —
Сăмах уçса каласла мар.

— Мăнтарăн ывăлĕ! — теейрĕ
Аслашшĕ. Сăпани йĕрсе:
«Кервенĕм, — терĕ, — килеймерĕ...
Ак хам выртайăттăм кĕрсе...»

Атте-аннен таса куççулĕ
Çуса яраймĕ хыпара.
Ун пек хура хыпар мĕн чухлĕ
Çӳрет илемлĕ çĕр тавра!

* * *

Машинкăпа çаптарнă хучĕ,
Ун çырăвĕ — вăл ак çапла
(Ăна куçармаллах ман пулчĕ,
Кĕскен пулин те, чăвашла):

«Кун ырă пултăр, ырă çыннăм!
Тинех лăпланчĕ самана.
Сире çыру çырма шут тытрăм,
Ӳпкев ан тăвăрсам мана.

Кĕтмен çĕртен чăрмантаратăп,
Хама та йывăр çав тери.
Çапах, чĕлхемĕрсем расна та,
Анланăпăр пĕрне-пĕри.

Ман савнă ывăл Крум Стоянов
Чун иллисем тĕп тăвиччен

Пĕр-ик ҫыру кăларса янă
Тус урлă нимĕҫ тĕрминчен.

Пĕрремĕш ҫырурах вăл сирĕн
Ывăлăра аса илет,
Вăл ҫырнине ярать: пит ҫирĕп
Усрамалла тесе хистет.

Унпа пĕрлех ҫав манăн ывăл:
«Историк Герман Аптраман —
Хăй халăхĕшĕн хаклă ҫын вăл», —
Тесе хушса хурать кайран.

Унтан вăл, теприне ҫыруҫăн,
Пĕлтерчĕ хурлăхлă хыпар:
Ывăлăра вĕлернĕ... Уншăн
Кулянтăмăр пĕр кун ҫеҫ мар.

Вăл ҫырнă хутсене пурне те
Усрарăм эпĕ чиперех.
Хамран шухăшласа пĕлетĕп:
Сире вĕсем халь тем пекех!

Ют чĕлхене эп чухлаймарăм,
Кăтартнă адреспа вара
Ярса парам тесе шутларăм
Посольство урлă хăвăра.

Ҫырни татах та пулнă пулĕ,
Анчах каларăм паҫăрах:
Крума хăйне те тивнĕ пуля
Ҫав тĕрмерех кăшт каярах.

Мĕн тăвăпăр? Ҫапла пуҫ хучĕҫ
Нумайăш халăх ĕҫĕнче.
Ан хыптăрах тек вăрҫă вучĕ,
Тĕрен тăвар ун хĕҫĕнчен!

Пĕр хуйхă пуснăран чи ҫывăх
Тăван пекех курап сире.
Чунтан сунатăп ырлăх-сывлăх.
Младен Стоянов. Софирен».

## XXVIII. Ыт-тĕкел

Инçетрен вăрман кати пек
Ешерсе ларать хăмла.
Пĕлĕт янкăр, сывлăш типĕ,
Вăхăт çитнĕ: татмалла.

Ши те пи кайса ĕрченĕ
«Маттясем» пур анипех
Чăмăртаннă пит чеченĕн —
Виноград çупкăмĕ пек.

Шерепеленсе лараççĕ
Пралуксем çинче вĕсем,
Антараççĕ те татаççĕ
Сортăн-сортăн хĕрĕсем.

Хĕрĕсем те, арăмсем те,
Ачисем те пур, куран.
«Туй тумалăх пулчĕ ĕнтĕ, —
Шӳт тăваççĕ хушăран, —

Каччисем килех тăраççĕ,
Хĕр пасарĕ — шăп çур ял.
Ахăрнех, çавна кура çав
Ăнчĕ пуль хăмла кăçал».

— Тепле-ха... чипер кĕртмесĕр
Каламашкăн хĕнтерех. —
«Гектартан вун икĕ центнер
Тухмаллах, илетпĕрех...»

Шалчасем чиксе кăшт-каштăн
Лаç хыçне, лупас хыçне
Нумаях хăмла тăваймăн, —
Аслăлатнă ун ĕçне.

Халь хăмла пахчи, плантаци
Илтĕнет калаçура.
Юпасем айне хупланчĕ
Темиçе гектар уйра.

* * *

Энтрипе Иван Исайчă
Ярăнса утса çитсе
Вăрман çумĕн çывăхарчĕç,
Тăчĕç чĕлĕм тивертсе.

Хăрах алăллă Самаев
Хăй çумне чикарккине
Сăтăрса чĕркенĕ майăн
Каччă пăхрĕ ун çине.

— Хамăнне туртса ярсам-и... —
Сĕнчĕ вăл шултра «Казбек».
«Пăрахма хушать те амăш, —
Терĕ леш, — тем катăк пек.

Ну, пирус, пирус вăл — тулă,
Эп ыраш çăкришĕнех...»
«Казбекне» вăл хăлхи урлă
Хучĕ, чĕртрĕ хăйĕннех.

«...Хăмлапа чăваш çĕршывĕ —
Федерацире малта.
Малашне унпа, тен, сывлăш
Çавăрăпăр хамăр та...»

Калаçать Иван Исайчă
Хăй хуçалăхĕ çинчен.
Тинкерсе итлет яш каччă,
Паллашмах вăл тухнă тен.

Кутăруçăн «председатель
Улшăнать» текен хыпар
Ял çинче пит сарăлсаччĕ,
Тепле-ха... пăртак тăхтар.

Пухусем пулни ку темĕн
Илтĕнсех каймарĕ-ха.
Демократи-çке! Мĕн тейĕн?
Юрама пĕл халăха.

Уншăн марччĕ, куншăн марччĕ, —
Çыннине хурлама çук...

Шалалла кĕрсе уттарчĕç,
Хирĕçех килет Верук.

Ашшĕ чĕнчĕ: — Эсĕ мар-и? —
«Эпĕ». — Мĕн эс? Кам патне? —
«Сармантей Çерукĕн Клари
Çӳпĕ кĕртнĕччĕ куçне.

Куршанак çӳппи пеккиччĕ,
Ĕнерех кăлартăм та
Мĕнлине пĕлессĕм килчĕ, —
Çӳпĕ çеç те мар кунта...»

Чĕлхепе вăл çулаттарнă
Хăй куçне иккен малтан.
Леш Крахьян çуласа ларнă,
Çав-çавах кăларайман.

Тĕшмĕш амăшĕн, Крахьянăн,
Хăйĕн те трахома-çке!
Тен, хĕре ертсе те янă...
— Ах, касать-ха çав инкек! —

Тарăхса илет Самаев.
Аптраман ытахальтен:
«Ну, хăмла мĕнле?» — тет. — Лайăх!
Хӳхĕм! — тет Верук чеен.

Энтрипе Верукăн туйĕ
Çывăхрах тесе ялта
Калаçатчĕç те, — ним çуйĕ
Илтĕнмерĕ-ха тата.

«Ĕç пĕтсен ĕнтĕ... Октябрь
Уявне хăварнă тем?..» —
Текелерĕç те пĕр тапхăр
Шарламарĕç-ха çынсем.

«Мĕн эпир яратпăр юмăç?
Кĕр мăнтăрĕпе часах
Майлаштарĕç, сынран юлмĕç», —
Терĕç хăшĕ савăнсах.

* * *

Мотоциклне утланнă
Вĕçкĕнрех пĕр бригадир
Вĕçрĕ çитрĕ, вут вутланнăн,
Çав хăмла патне çав ир.

— Телефон патне чĕнеççĕ, —
Терĕ вăл Самаева, —
Килте çук теп — срочно! — теççĕ, —
Райкомран! Шыра тавай!..

Йĕтеме кайма тухсаччĕ,
Çитерем эппин калле... —
Аллине Иван Исайчă
Сулчĕ çеç ял еннелле.

«Эс, юлташ, пăртак мĕн ту-ха,
Куркала ăна-кăна,
Мĕнех мар пулсан эп тухăп», —
Терĕ вăл Аптрамана.

Мотоциклĕ пытанайрĕ —
Аптраманĕ Верукпа
Вăрмана кĕрсе те кайрĕ
Ăсатса ярас шутпа.

* * *

Кĕр енне-çке, кĕр енне!
Кĕренленнĕ вĕрене.

Сархаять чечен çăка,
Кăштăр-кăштăр кăштăркка
Шĕшкĕсем кĕшĕлтетсе
Ларкалаççĕ тĕмĕпе,
Мăйăрне шĕкĕлчесе
Илеймен-ха пĕтĕмпех
Вичкĕн çил те, вăхăт та,
Çын та йăлт асăрхайман, —
Йывăççи çинчех паян
Куркалать, тататъ Верук,
Чăмăртать ывăçине:
«Ытă-и, тĕкел-и?» — тет.
— Ытă, — тет Энтрийĕ. «Çук!»

Кăтартать хĕр аллине:
Мăшăр мăйăр йĕкĕлтет.

«Пĕлеймерĕн те, сана
Тӳлеттермĕп ĕнтĕ эп, —
Эс татман та пуль-ха теп...» —
Тет Верук Аптрамана.
Янăрать чее кулли.
Мăшăр мăйăр юнашар —
Тутă, сарă, туп-тулли:
«Кил, çиетпĕр çурмашар...»

Çурмашар çав, çурмашар,
Урăхла пулмалла мар.

Аптраман вăрманалла
Пĕчченех кĕрет шала.
Сас тумасть Верукĕ те,
Хăй кĕтет, кĕтет, кĕтет...
Ак Энтри те мăйăр тупрĕ,
Вĕтлĕхрен кулса вăл тухрĕ,
Чăмăртать ывăçине:
— Ытă-и, тĕкел-и? — тет,
Чăр пăхать Верук çине.
Леш кăшт шухăшларĕ те:
«Ытă пулĕ те... ыйтар
Тĕкелнех», — тет, ывăça
Хăй уçасшăн явăçать:
«Ну, кăтарт-ха, ан пытар!»

Ах, тĕкел çав, мăшăр çав,
Мĕн тăвайăн пурнăçа!
Чĕрене ăçтан улталăн?..
Мăйăрне Энтри шутлать,
Кĕç манать те пур шута вăл —
Йĕкĕр мăйăр пек туталлă
Верукне чап чуптăвать.

Темле кайăк пĕр-пĕччен
«Ыт-тĕкел» те «ыт-тĕкел»
Тенĕ пек йăслать темччен.
Çывăхри юман çинчен
Патлатса ӳкет икел...

## XXIX. Сывпуллашу

Çитет! Чĕре, ăс-пуç та алă
Туса çитернĕ япала,
Эс пултăн вăхăт пек васкавлă,
Ларсамччĕ йывăç юпалла.

Тăпри путса çĕрпе танлашнă
Салтак тĕмескисем çине,
Шывра хăйăрпала пăтрашнă
Пăшал яман алсем тĕлне;

Ют тыткăнра çăвар уçмасăр
Тӳссе çĕнтернисем умне,
Вĕсем тупа улăштармасăр
Юнланă хӳмесем çумне —

Эс вăхăтлăх юпа пек ларччĕ,
Ĕçленĕ ĕçĕм, паянтан.
Вара тек ним те кирлĕ марччĕ,
Ĕçчен çынпах шутланăп тан...

Шуралчĕ Атăл шурăмпуçĕ,
Йăлăм автанĕ авăтать.
Çанталăк лăпкă. Сывлăш уçă.
Çĕр иртрĕ, пĕтрĕ сăвă та.

Час юлашки пăнча эп лартăп
Темле пит сиплĕ эмелпе
Хул-çурăм та, чĕре те, вар та
Лăштах кайса ĕшеннĕ пек.

Ĕшеннĕ, йăшнă, суптăркана,
Анчах пĕтмен-ха ĕненӳ.
Çапла пулать ăмăртаканăн:
Вăл — пархатарлă ĕшенӳ.

Çапла çанталăк тăвăл умĕн
Шăп лăпланса тăрать хăш чух...
Сĕнксе çӳретĕн: «Ку мĕн? Ку мĕн?
Пултарăп-ши тата е çук?»

Черновикрен çырса илмешкĕн
Хал çитеймессĕн туйăнать.

Пĕри «пултарăн-ха» тесессĕн
Каллех пăртак вăй хушăнать.

Туртать илемлĕ çут çанталăк,
Унта вăл сиплĕх, вăй лаççи.
Яри уçса яратăн алăк,
Килсе кĕрет йыхравçă çил.

Чĕкеç юрри, хурсен кикакĕ,
Ачасемпе аппалану...
Вара каллех юпах тиха пек
Выля пуçлать хавхалану.

Ватту çитмен-ха, шухăш шухă,
Тăн-пуçунтан т ă м пуç пулман.
Çĕре çитсессĕн те, асту-ха,
Джамбул старик çынран юлман.

Аптрамансем те пурăнаççĕ,
Тӳссе ирттерчĕç инкеке...
Çапах тăхтар-ха: вăрçă-харçă
Нуши çинчен ку кĕнеке.

Пытараймастăп: юрататăп
Тирпейлĕ, туслă кил-йыша.
Кирек хăçан, кирек ăçта та
Хутне кĕмешкĕн тăрăшап.

Тепре эп тавăрăнăп-халĕ
Аптрамансем патне, паллах.
Вĕсен чĕкеçлĕ çурчĕ, ялĕ
Туртать ман кăмăла çаплах.

Анчах халь мар, халь мар эп пырăп
Наталисен пусми умне.
Чунтан-вартан сунатăп ырă
Вĕсен ĕрчевлĕ ăруне.

Çакна эп Йăлăмра çыратăп,
Куккук сассиллĕ хырлăхра.
Хупман чӳречерен куратăп
Вăранакан Шупашкара.

Ик радио юпи — хапха пек,
Кĕç-вĕç ун витĕр тухсанах
Таçтах каяс çынла пăхап эп,
Каятăп та пулас, чăнах.

Каяс! Çитет сăвăламашкăн.
Поэзие кĕрейменни,
Кĕртмешкĕн май çукки — халь маншăн,
Тен, чи пахи те чеченни.

Каяс, каяс! Эп тунсăхларăм
Этем пек чĕрĕ этеме.
Поэтăн та пурах-çке арăм,
Ачи те пур йăх ĕрчетме.

Хăш чух çĕр варринче сасартăк
Куçне уçать те мăшăру
Калать хурать: «Супса ларатăн...
Хăçан пĕтет-ши ку лару?»

Вара пур музăсен эрешĕ
Чăл-пар вĕçет аяккалла.
Çапла-ши, урăх тĕрлĕрех-ши, —
Поэзи — кĕвĕç япала.

Ан ўпкеле мана, юлташăм,
Тăванăм, ывăл амăшĕ, —
Эп санăн тўсĕмне мухтасшăн,
Сан сисĕмне... Ăнланăн-ши?

Каçар эс хăй çути сўнменшĕн:
Эп лартăм ыйăха татса
Кĕнекемри пайтах çынсемшĕн,
Вĕсем те сан пекех таса.

Тăрсам! Эс канлĕ çывăратăн
Пĕчĕк ача пек хутланса.
Тăрсам, вăратчĕ ывăла та,
Тăрат ăна тумлантарса.

Атя, Атнер! Аçу пĕтерчĕ,
Пĕр парăмне вăл татрĕ-ха.
Ун шухăшĕ, асапĕ, терчĕ —
Сана нимех те мар вăл халь.

Атя! Пиçиххине хытар та,
Чупса анар шыв хĕррине.
Ку пирĕн финиш та пуль, старт та —
Çак сывлăм ӳкнĕ ирхине.

Чупар, чупар... Аван-и, Атăл!
Вăй-хал парсамччĕ ырана.
Шыва чăматăп шăмпăл-шампăл,
Хумсем çапаççĕ çырана...

* * *

Пăхам-ха çаврăнса. Ăçта-ши
Тĕп никĕсĕ çак кĕнекен?
Малтан ман Аптраман тавраш̆ĕ
Кăшт урăхлаччĕ те-и, тен.

Асран кайми çулхи июнĕн
Хăрушă, тĕттĕм каçĕнче
Сасартăк улшăнчĕ ун чунĕ,
Ун, манăн, сан... мĕнпур тĕнчен!

Çыра пуçларăм эп пăртаккăн
Салтак çинчен çав çулхине.
Анчах тӳрех калап: салтакăн
Нуши ӳкменччĕ пуç çине.

Салтак кутамккине çакмасăр,
Унпа çунмасăр пĕр вутра
Сăмах витти те манăн, ахăр,
Çукрахчĕ пулĕ çав хутра.

Вара тапранчĕ... Кашни аршăн
Çĕре илес тесе калле
Еçлерĕç иккĕш алылмашăн —
Кăранташпа пăшал куллен.

Вара эп куртăм: мĕн вăл вăрçă,
Мĕн вăл окоп... Кашни кунах
Мĕн чухлĕ хирĕлчĕ те хăрчĕ
Этемлĕх пахчинчи хунав!

Вара ăнлантăм эп — мĕн маншăн,
Кам маншăн вăрçăри чăваш.

Самаев пек калас пулсассăн
Йăлтах вăл — Аптраман тавраш.

Салтак пуçпа эп евитлетĕп:
Сталинградран Берлин таран
Нимле йăх-ях икĕпитле те
Курмарăм хамăр халăхран.

Хампа пĕрле кӳтсе те выртнă,
Ăшша та пиçнĕ тантăшсем,
Ыратнине тӳсме шăл çыртнă
Шăллăмсемпе йăмăкăмсем,

Çулта пĕр флягăран шыв сыпнă
Юлташăмсем! Ăçта эсир?
Миçен упрантăр ыррăн-сыввăн?
Мĕскер тăватăр-ши çак ир?

Эп астăватăп: вăрçă хыççăн
Шупашкара эп таврăнсан
Унта пуçтарăннăччĕ йышлăн
Калав та сăвă çыракан.

Çартан килейнисем те пурччĕ —
Артиллерист та, летчик та.
Литературăн çӳллĕ çурчĕ —
Вĕсемшĕн крепоçчĕ унта.

Ĕнер кăна вĕсем çĕнтернĕ,
Паян — çав крепость хапхине
Тапса уçмашкăн кĕпĕрленнĕ,
Сăнатчĕç пĕр-пĕрин вăйне.

Эп астăвап — салтак тумтирлĕ
Çап-çамрăк çын, пăхма йăваш,
Сăвăласах каларĕ вирлĕ:
«Эпир вăл Аптраман тавраш!»

Ăçта эс, сутă чун? Пар алă!
Вулайăн-ши çак йĕркене?
Мĕн калăн-ши савăнтармалăх,
Хупсассăн çак кĕнекене?

Мĕн калăн-ши çĕклентермелĕх,
Вăй-хал хушмалăх эс халь тин,
Тав-шавлăх е чĕрре кĕртмелĕх,
Хурлантармалăх та пулин?

Пурне те хатĕр эп илтмешкĕн,
«Вуламасан та аптраман»
Тенине çеç паян ман, темшĕн,
Илтес килмест сан пек çынран.

Тавах сире, ăçта пулсан та,
Мĕн каласан та ман çирен,
Мана хаяр сунман тус-тантăш,
Ватти, яшши! Тавах сире.

Çыран, иккĕленен, шыратăн...
Калать хурать те хăш юлташ —
Хăвна йăлт урăхла куратăн:
«Эпир вăл Аптраман тавраш...»

Илтсессĕн эп темле вăтантăм,
Анчах пăртак шухăшласан
Çав сăмаха ăшра пытартăм
Чи пысăк парнепе пĕр тан.

1941—1954

# АЧА-ПĂЧА ВАЛЛИ ÇЫРНИСЕМ

## СУЛПИКЕПЕ ВАЛЁМ ХУН

*(Юмах)*

Халь те мар, ĕлĕк те мар,
Чăн та мар, тĕлĕк те мар;
Пуçпала кăшт пушкарсан —
Суя мар, элек те мар.

Асатте ача чухне
Аттепе пĕр çулхине
Кайăка эп кайнăччĕ
Шурă Атăл улăхне.

Сунар пулчĕ пит пуян:
Вĕçмен хур, уксах куян,
Суккăр пăчăр тытрăмăр...
Унта мар-ха ĕç паян.

Çав тери инçе çĕре
Аташса çӳре-çӳре
Касăлман турта ялне
Лекме тивнĕччĕ пире.

Шыра Туп кил-çуртĕнче
Эпир çĕр çĕрленĕччĕ,
Сарăнман сентре çинче
Ак çакна итленĕччĕ.

### 1

Пĕр чăваш шăши ӳстернĕ:
Тем çитернĕ, тем ĕçтернĕ —
Шăши пулнă пăши пек,
Хăть суха ту шăшипе!

Çитĕнтернĕ те вăл пуснă,
Пасара сутмашкăн тухнă
Ун шăналăк пек тирне.
Хăй калана çынсене:
«Кам çак мĕн тирне ăнкарĕ —
Çав халех илме пултарĕ
Манăн çитĕннĕ хĕре».
Çук, пĕлмерĕç-ха тире.
Каяллах çакса вăл кайрĕ.
Анчах вĕçрĕ тир хыпарĕ,
Çитрĕ питĕ инçете, —
Йĕкĕлтет пур йĕкĕте.

Чăн та, çыннăн пур пĕртен-пĕр
Ытарма хал çук чипер хĕр:
Пичĕ — пиçнĕ пĕрлĕхен,
Куçĕ çĕмĕрт пек иккен,
Куç шăрçи вут пек çунатĕ,
Куç харши — чĕкеç çуначĕ:
Савăнсассăн сарăлать,
Кăтăрсассăн карăнать,
Кӳренсессĕн пĕрĕнет,
Тӳлек чух вăл тӳрленет.
Тăпăл-тăпăл тутисем
Йĕкĕр măйăр пек тесен
Тĕшшисем вĕсен мĕнле-ши?
Кам татса тĕшлемелле-ши?
Тикĕс, тачă та чечен
Ĕнчĕ шăл çăварĕнче.

Тухйи айĕн туй çĕленĕн
Шăвăнса тухса илемлĕн
Сархӳри вĕçне çити
Явăнать кăтра çивти.
Çинçерен-и, хитререн-и:
«Сĕрме купăс măйĕ», — тенĕ
Пилĕкне хăш-пĕрисем

Сăхланса та хĕрĕнсе.
Утти акăш ишши евĕр,
Кулли шуçăм шевлипе пĕр,
Чĕлхи çепĕç, çу пекех,
Ячĕ унăн — Сулпике.

Ак таçтан-таçтан вĕçтерчĕ
Хĕр килне тем тĕрлĕ евчĕ...
Пурте çав тери хĕре,
Пĕр пус хулăмсăрскере,
Кин туса кил-йыш хушасшăн,
Çынсенчен малтан юрасшăн.
Каччисем те хăшĕсен
Кисĕп пек кăна иккен, —
Çул çитмен хĕр çураçмалăх,
Çук лаша кӳлсе лармалăх!
Çав-çавах ярать çынна
Ашшĕ-амăш хăтана.
Анчах пурте аптăраççĕ:
«Эк, пулать кам мыскараçă!
Тупнă та-мĕн тир!» — тесе
Тĕлĕнеççĕ этемсем.

Тĕрлĕ ăрăмçă-асамçă
Çав тери çавăркалаççĕ,
Ĕмĕр выльăх-чĕрлĕхпе
Тăрмашни те чĕмсĕр пек,
Ĕмĕрне пуçтах сунарçă
Пулнисем те пуç сулаççĕ:
Пĕлеймеççĕ мĕн тирне,
Илеймеççĕ пикене.

Сулпике çӳрет хурланчăк.
Инкĕшпе шыва вăл анчĕ:
«Çав шăши тирне, инке,
Халь те пĕлеймеççĕ-çке», —
Тет шывне ăсса йăтсассăн,
Сывласа илет хăй ассăн.
Шăп та лăп çав самантра
Выртнă-мĕн çĕлен шывра,
Чееске́р, çав шыв çĕленĕ
Хĕр калаçнине итленĕ,
Сиснĕ унăн хуйхине,

Кӗҫ пырать вӑл хӗр килне:
«Сирӗн темле тир пур теҫҫӗ,
Палласассӑн — кучченеҫӗ
Пысӑк имӗш... Ҫав тире
Курма пулмӗ-ши пире?»
Кӑтартать тирне хӗр ашшӗ.
«Ку мӗн тирӗ, ҫӗр ҫӑтасшӗ?!» —
Тет малтан чеепелен
Палламиш пулса ҫӗлен:
«Ку мӗн кайӑк пулчӗ-ши?

Пулсан пулӗ ку шӑши!»
Тӗлӗнсех каять хӗр ашшӗ.
Ӑҫтиҫукӑн хурӑнташӗ
Пул-ха эс пӗртен-пӗрех
Хӗрӳпе ҫак тӗнчере!
Ха, эсрел тарҫи! Ха, явӑл!..
Турткаланчӗ те пӑртак вӑл,
Ним тума та ҫук: хӗрне
Пама пулчӗ ҫӗлене.

Сулпике ҫакна пӗлсессӗн
Сехӗрленчӗ тем лекессӗн.
Картишне туха-туха
Вӑл кӑвак урхамаха
Ыталать те чун хавallӗн
Хуйхине ӑна калать-мӗн.
Ак хӑйне пӗрре ҫынлах
Урхамах хушать сӑмах:
«Ан хурлан, пикеҫӗм, илӗн
Хупала эс виҫӗ милӗк,
Виҫӗ катӑк чул тата
Виҫӗ пӗрчӗ тулӑ та
Виҫӗ пуҫ тури; ан ман —
Шӑмӑ турасем! Унтан
Виҫӗ пӗрчӗ шӑрт тупатӑн,
Ху мана тытса утланӑн», —
Тет ӑна кӑвак лаша.
Сар хӗр килчӗ канаша,
Лӑпланать тинех пӑртак вӑл,
Мӗн-мӗн кирлине алхапӑл
Тытӑнать ак пуҫтарма,
Шарламасть хӑй никама.

Ак хайхи-майхи çĕленĕ
Ар туйне пыма чĕнтернĕ
Пĕтĕм несĕлĕпеле
Шăвăнать хĕр килнелле.
Савăнса явкаланаççĕ,
Хӳрипе çапкаланаççĕ,
Чашкăрса та шăхăрса,
Ункăн-ункăн çаврăнса,
Пур ватти-вĕтти, вăтамĕ,
Кĕçĕнни — татах, татах-мĕн
Çывхараççĕ хĕр патне,
Сырса илчĕç кил-çуртне.
Хĕр шалта йĕрет те, хăйĕн —
Чунĕ çук пĕркенчĕк айĕн.
Алăкран та кантăкран,
Пĕтĕм шăтăк-çурăкран
Çĕленсем кĕрсе тулаççĕ,
Туй тăваççĕ, çуй тăваççĕ.
Вăхăт çитрĕ. Каймалла.
Сулпике кил-йышпала
Сывпуллашрĕ, пил тутарчĕ,
Урхамах утне утланчĕ.
Тухса кайрĕç çĕленсем
Хĕр илсе, кĕпĕрленсе.
Çул çинче çĕлен туй пуçĕ
Çул тытма хушасшăн пулчĕ
Хĕрпеле урхамаха.
Хĕр каларĕ: «Епле-ха
Çӳремен çула эп тытăп?
Эпĕ сирĕн хыççăн пырăп».
Хирĕçмерĕç çĕленсем,
Кĕшĕлтетрĕç ĕненсе.
Йăвисем патне çитсессĕн
Хăйсенчен малтан кĕртесшĕн
Пулчĕç çав юлан ута,
Хĕр каллех калать кунта:
«Халиччен пĕлмен çĕре эп
Епле-ха малтан кĕрейĕп?
Кĕрĕр хăвăр, хыçăртан
Эп те кĕрĕп утпалан».
Çĕленсем кĕрсе пĕтеççĕ,
Хĕр тăрса юлать пĕчченçĕ,
Çавăрать те лашана —

Каялла вӑл ыткӑнать!
Ҫӗлен-каччӑ кӗтрӗ-кӗтрӗ,
Ҫук, кӗмест ҫураҫнӑ хӗрӗ.
Тухрӗ пӑхрӗ йӑвинчен —
Пӗр никам та ҫук иккен.
Тарӑхса урсах вӑл кайрӗ,
Куҫӗ ҫиҫӗм пек вылярӗ,
Чӗлхи тухрӗ тӑсӑлса
Вут-хӗлхем сапаласа;
Авкаланчӗ, тармакланчӗ,
Хӳрипе тӑрса хӑтланчӗ,
Вара пур вӑйӗпелен
Виҫҫӗ шӑхӑрчӗ ҫӗлен.
Ҫавӑнтах мӗнпур тӑваткӑл
Ҫут ҫанталӑкран алхапӑл
Чашкӑрса та ҫилленсе
Пухӑнаҫҫӗ ҫӗленсем.
«Этем хӗрӗ улталарӗ!
Хӑвалар-и те тытар-и,
Шыҫтарар-и пит-куҫне,
Пӗтерер-и ун пуҫне!» —
Тет урса этем кӗрӳшӗ,
Хӑй ҫине пӑхма хӑрушӑ.
«Пӗтерес!!!» — тет ҫӗр ҫинчи
Пур ҫӗлен калта шаччи.

Ак тапранчӗҫ, хӑвалаҫҫӗ,
Юлан ут йӗрне тытаҫҫӗ:
Авӑнса та явӑнса,
Айлӑн-ҫийлӗн арпашса
Урӑм-сурӑмӑн куҫаҫҫӗ,
Кустӑрма пулса кусаҫҫӗ.
Хӗр пӑхайрӗ ҫаврӑнса —
Хытрӗ кайрӗ хӑраса:
Хуп-хура, чӑпар та хӗрлӗ,
Сарӑ, симӗс, тӗрлӗ-тӗрлӗ
Ҫӗленсем — ҫӗр палӑрми,
Куҫ анне шӑнӑҫайми...
«Урхамахӑм, урхамахӑм!
Мӗн тӑвар эпир, кала-ха?
Ҫӗленсем йӗрлеҫҫӗ-ҫке», —
Тет мӑнтарӑн Сулпике.
«Виҫӗ милӗкне пӑрах эс», —

Терĕ ăслă урхамахĕ.
Хĕр пăрахрĕ. Çавăнтах
Вĕтлĕх-чăтлăх, çăтăрмах
Йывăçлăх ӳссе те ларчĕ,
Тăшмана вăл чăрмантарчĕ.

Анчах тухрĕç пăртакран
Çĕленсем çав чăтлăхран,
Çĕнĕрен хĕрсе йĕрлеççĕ,
Пĕлĕт пек тусан çĕклеççĕ.
«Урхамахăм, урхамах!
Хăвалаççĕ-çке татах,
Çитеслех пыраççĕ, çывăх!..»
«Виçĕ чул пур санăн — ывăт!» —
Тет кăвак лаша хĕре.
Хĕр чулсем тытса перет.
Çавăнтах ак чăнкă, çӳллĕ
Тупала картланчĕ çулĕ.
Çĕленсем ку тапхăрне
Тăрса юлчĕç ту хыçне.
Асапланчĕç-асапланчĕç,
Хашкаса пулин те — каçрĕç,
Тĕтĕм-сĕрĕм кăларса
Хăвалаççĕ чашкăрса.
«Урхамахăм, ырă утăм!
Мĕн тăвар-ши халĕ, тусăм?»
«Сапса яр хай туллуна!» —
Терĕ ăслă ут ăна.
Сулпике каллех итлерĕ,
Виçĕ пĕрчине силлерĕ.
Çавăнтах иккен хыçра
Пĕр йăрансăр, çăп-çăра
Сарă тулă ӳссе ларчĕ,
Тăшмана вăл чăрмантарчĕ.
Çыхланса та пĕтрĕç те
Тухрĕçех çĕте-çĕте
Çĕленсем çав тулă витĕр.
Халь тата хăрушă, чиксĕр
Вут-кăвар пĕрĕхтерсе
Хăвалаççĕ сĕмсĕрсем.
«Урхамахăм!..» — тет пикемĕр.
Ăслă ут хăех сисет-тĕр:
«Ывăт виçĕ туруна!» —

Терĕ вăл унтах ăна.
Ывăтайрĕ хĕр — сасартăк
Виçĕ шăмă турараан ак
Хĕрлĕ, шурă та ула
Вăкăр кĕтĕвĕ пулать.
Ахăраççĕ, мĕкĕреççĕ,
Çĕленсем çине кĕреççĕ
Вăкăрсем хаяр вăрçа,
Чĕрнисемпеле çăрса
Таптаса йӳнчеттереççĕ,
Хура юн кӳллентереççĕ;
Мăйракисемпе çурса,
Пыршă кумнă пек кумса
Таткалаççĕ, чӳпĕклеççĕ,
Çинчĕк улăм пек силлеççĕ...
Йышлăн пĕтрĕç çĕленсем,
Çав-çавах вĕçерĕнсен
Юлашки-тĕлешкисем-мĕн
Юлан ут патне çитесшĕн:
Чашкăрса, хĕлхемленсе,
Курăка-çулçа ĕнтсе
Çывхараççĕ мур-амакăн...
«Урхамахăм, урхамахăм!..» —
Тет каллех хĕр лашана.
«Пăрахсам хайхи шăртна!» —
Тет кăвак лаша ăна.
Çавăнтах кĕтӳ сысна
Пулчĕ тăчĕ пăрахсассăн;
Сыснисем шултра та каскăн,
Асавне хăйра-хăйра
Çĕленсем çине вара
Сиксе ӳкрĕç те пĕр харăс —
Сывламашкăн та памарĕç:
Çирĕç ячĕç пĕтĕмпех,
Йăланки юлмичченех.

**2**

Хĕвел аннă. Каç та пулнă.
Сулпике пырать салхуллă.
Пит инçе хăй çĕрĕнчен
Тартнă-мĕн ăна çĕлен.
Урхамахĕ те ĕшеннĕ,

Хăй те хытă сĕлтĕркенĕ.
«Хырăм та хыр тăрринче,
Кăшт кансан та пырĕччĕ...» —
Тенĕ шухăшпа пĕр тапхăр
Уттарса кăна пырать хĕр.
Пăхкалать: таçта малта
Хăй çути йăлтăртатать.
Хĕр утне пăртак васкатрĕ,
Çитрĕ, анчĕ те шаккарĕ:
«Хăнăр мар, тăванăр мар,
Ют хăять чăрмантарма;
Инкекпе çӳретĕп-çке те,
Çĕр каçма пулмасть-ши тетĕп...»
«Кирек кам пулсассăн та
Йăтса каймăн-ха çурта.
Кĕрсе вырт, канах, çӳревçĕ,
Пирĕн алăк уçă...» — теççĕ.

Сулпике утне кĕртет.
Хун пурнать-мĕн ку çĕрте.
«Каçа хирĕç кам килет-ши?» —
Тесе ыйтрĕ хун пĕлесшĕн,
Вăл чĕнтерчĕ пикене
Хăйĕн чаплă пӳлĕмне.
Сулпике, пăртак именнĕн,
Именсен пушшех илемлĕн
Хун умне кĕрсе тăрать,
Çăкăнать, салам парать.
Хун пике çине пăхайрĕ —
Курсанах ытараймарĕ:
«Ирт, чипер хĕр, малалла,
Лар пăртакçă манпала...» —
Терĕ вăл ăна йăвашшăн
Кăмăлне кăшт çавăрасшăн:
«...Çак тери çи-пуçпала
Эс ăçта каян капла?
Шет туя ларма тумланнă
Тес килет сана халь манăн».

Сулпике йăлтах пĕлтерчĕ.
Çăмăл мар-мĕн хĕрĕн терчĕ.
Йĕркипе кала-кала
Вăрăма кайрĕ халап.

Хун пит кăмăллăн тăнларĕ,
Хĕр ăсне-пуçне сăнарĕ,
Çаврăнуллă сăмахне
Килĕштерчĕ унăнне.
Каласа пĕтерчĕ те хĕр,
Хун пуçне пĕксе чĕнмесĕр
Ларчĕ кăшт; унтан хĕре
Хăйĕнне вăл пĕлтерет:
«Тĕнчере нумай-мĕн хурлăх,
Анчах унсăр пурнăç юрлă,
Унсăр савăнăç мĕнне
Пĕлме йывăр çынсене.
Инкекӳ сан пысăк пулнă,
Хăтăлни пит хаклă, чунăм!
Тупăн эс ăраскална.
Халь итлемĕн-ши мана?
Эп пуян, ман ирĕк аслă,
Çын калаçăш — эпĕ ăслă;
Халиччен нимле тăшман
Ман ура çине пусман.
Тĕнчипех мана пĕлеççĕ,
Валĕм хун тесе чĕнеççĕ.
Ман çурта, ман хуралта
Çĕр аран-аран йăтать.
Анчах çак кил-çурт илемĕ —
Çыншăн çеç; мана, пикемĕм,
Çĕр мунча пек вăл ку чух,
Ма тесессĕн — ывăл çук!

Ик çунат пек ман ик арăм,
Хурлама пĕрне те халăм
Çитеймест, çапах та ман
Харсăр кăмăлăм тулман.
Аслă та хăватлă халăх,
Чап тытан паха патшалăх
Ар ача çукне пула
Хам вилсен юта юлать.
Вăйпитти этем-ха эпĕ,
Кĕскелмен кун-çул хисепĕ;
Анчах ăмăрт кайăк та
Чĕппине йăта-йăта
Е сăртран тĕртсе куç умĕн
Вĕçтерет малтан хăй çумĕн.

Арăслан та çурине,
Вылятса хăй хӳрине,
Чĕрнепе асав шăлсенĕн
Йăлине пĕчĕкренех-мĕн
Вĕрентмешкĕн тăрăшать.
Çын та çав-çке, апăрша:
Хăй çулланнăçемĕн, ахăр,
Яшланать вăл тепĕр тапхăр,
Ывăлне кура тăра
Ăс парать ăна вара...
Эс мана ятна каларăн,
Сулпике — пит пархатарлă,
Пит илемлĕ ят. Çаплах
Хам эп чĕнĕттĕм. Анчах
Манăн хунлăх, ман патшалăх
Паянтан сана яланлăх
Хун пике ятпа чĕнсе
Аслăлаттăрччĕ тесе
Сăмаха эп тапратсаттăм:
Пул ман виççĕмĕш çунатăм!
Пӳрни пӳрт умне килет
Тенĕ пек, тен, кам пĕлет? —
Эс ман ывăл амăш пулăн,
Тен, çуратăн паттăр улăп...»

«Хунăм! — терĕ Сулпике, —
Чысу пысăк ху пекех.
Кĕренке ăса çитет тет
Пĕр мăскал телей тивсен те.
Эп виçеймĕп хам ăса,
Анчах урăх хапсăнса
Шырам мар-тăр, кăмăл тултăр:
Мĕн каларăн — çавă пултăр!»

Çав каçах авланчĕ хун,
Виçĕ арăм пулчĕ ун.
Çĕр çĕрлеççĕ, кун кунлаççĕ,
Те пайтах пурăнкалаççĕ,
Те сахал — çав хун пĕрре
Инçетри таçти çĕре
Çул каймашкăн шухăш тытрĕ,
Каяс кун çапла вăл ыйтрĕ:
«Аслă арăм! Килелле

Эпĕ таврăннă тĕле
Мĕн хатĕрлесе эс хурăн?
Мĕнпеле мана эс юрăн?»
«Ырă хунăм! Халиччен
Пĕр этем те активмен
Тĕнчере çук сиплĕ, тутлă
Ĕçмепе çиме туп-тулăх
Хатĕр пулĕ сан валли», —
Тет пуçне тайса асли.

Хун çырлахрĕ. «Эс, вăталăх
Арăм, мĕн мана халаллăн?»
Ку калать: «Хам арласа,
Хам тĕртсе, хам шуратса,
Çакă ылтăн çĕрĕ витĕр
Тухмалла çӳхе, пĕри те
Тăхăнса курман кĕпе
Çĕлесе парнелĕп эп».

Хун çырлахрĕ. «Кĕçĕн арăм!
Эс мĕнпе хаваслантарăн?»
Сулпике хăйса çитет:
«Эп çуратăп ывăл, — тет, —
Ун пĕр пичĕ уйăх пулĕ,
Тепринче хĕвел йăл кулĕ.
Ылтăн çӳçлĕ пулĕ вăл,
Кĕмĕлрен шăранĕ шăл».

Хун çырлахрĕ, сывпуллашрĕ,
Аякри çула вăл кайрĕ.
Вăхăт иртрĕ чылаях,
Сулпике хайхи, чăнах,
Уйăх питлĕ, хĕвел сăнлă,
Ылтăн çӳçлĕ, кĕмĕл шăллă
Сарă ывăл çуратать,
Çав тери хăй юратать;
Анчах леш арăмĕсем-мĕн
Кĕвĕçеççĕ çав телейшĕн;
Курайманçĕ ачана,
Пĕтерме хавас ăна.
Ак пĕрре, ун амăш авăн
Çаптарма тухса кайсассăн,
Илчĕç те хайхискерне

Кайрĕç хупрĕç витене,
Сăпкине вырттарчĕç анчăк.
Амăш çитрĕ хыпкаланчăк,
Пычĕ пăхрĕ — сăпкара
Йыт çури вырта парать.
«Ай! тепе, тепе, ăнманă!
Ывăл сăпкине вырнаçнă!»
Кăкăрне тытать, чĕнет,
Йыхăрать вăл ачине.
Шыраман çĕр хăвармарĕ, —
Картишне тухма васкарĕ:
Ухрĕ аслăк тăррине,
Кĕчĕ сурăх картине.
Ёнесем патне ухтарчĕ.
Ут витинелле уттарчĕ:
Ачине-мĕн витере
Ĕмĕртсе тăрать кĕсре...
Тепĕр кун каллех вăл кайрĕ,
Анкарти ĕçне васкарĕ.
Икĕ арăм — пĕр кавар:
Вăл кайсан нумай та мар
Ачапа вĕсем айкашрĕç, —
Ёнесем патне ярайрĕç.
Сăпкана ун вырăнне
Хучĕç леш йыт çуринех.
Сулпике килне килсессĕн
Çавăнтах чупать кĕç-вĕççĕн
Хăй ачи патне, анчах —
Анчăк çеç унта каллех.
Вăл тӳрех халь чупса тухрĕ
Картишне, шырарĕ, тупрĕ:
Хĕрхенсе ун ывăлне
Ĕмĕртет иккен ĕне.

Тепĕр кун та авăн-сарăм
Ĕçĕпех каять çĕн арăм.
Икĕ аслă хун пике
Хыпса ӳкрĕç тем пекех,
Шухăшларĕç, меслетлерĕç,
Ачана çĕклерĕç те кĕç
Кайрĕç ячĕç пуçилле
Аякри пĕр сĕт кӳлле.
Сулпикен ăшĕ çунать-çке,

Куç харши — чĕкеç çуначĕ —
Кӳренсе ун пĕрĕнет,
Ырра мар чĕри сикет.
Килне утрĕ хыпкаланчăк:
Сăпкара выртать хай анчăк.
Ухтарать, шырать, анчах
Çук-çуках паян ача.
Кăлăхах вăл тулăн-шалăн
Чупкалать, йĕрет мăнтарăн.
Инкеке тата çав кун
Печĕ çитрĕ Валĕм хун.
Кĕрсенех: «Ну, аслă арăм,
Ман парне нумай та, — парăм
Пысăк санăн, — кĕрекӳн
Чысĕ шеп-и?» — терĕ хун.
Аслă арăм аптрамарĕ,
Темĕн те пĕрпе сăйларĕ,
Çавăрчех хун кăмăлне,
Хун парать ăна парне:
Хантăс çĕррĕн хаклă чулĕ,
Ĕнчĕпе ахах тем чухлĕ,
Тарăн тинĕс тĕпĕнчен
Тин кăларнă чăн мерчен...

«Эс мана темле ăсталăх
Кăтартасшăнччĕ, вăталăх,
Астăватăн-тăр мĕнне?» —
Терĕ хун иккĕмĕшне.
Ак вăталăх арăм хыврĕ
Пӳрнинчен пĕр ылтăн çĕрĕ,
Çĕрĕ витĕр чип-чипер
Кăларать, кантра пекскер,
Лăст силлет те —йăлтăр-ялтăр,
Çӳп-çӳхе кĕпе куратăр.
Тĕлĕнет хун, тăхăнать —
Çĕн кĕпе чухах ăна.
Çавăнтах ку арăмне те
Парнесем парать вăл. Ĕнтĕ
Юлашки арăмĕнчен
Ыйтрĕ: «Эс мĕнпе кĕтен?»

Каламашкăн пикенейрĕ
Сулпике — леш икĕ йĕрĕх

Ăна пӳлчĕç харăсах,
Хун тавра йăркаланса:
«Тĕнчене йĕрĕнтерен ĕç!
Йыт çури çуратрĕ! — терĕç, —
Ав выртать вăл сăпкара».
Пычĕ, пăхрĕ хун, вара
Хăй тарçисене каларĕ:
«Ман çурта вăл мăшкăлларĕ,
Çĕртрĕ ман ăру ятне...
Сĕм вăрманăн варрине
Виç кĕтеслĕ пура пурăр,
Алăк-кантăкĕ ан пултăр,
Хупăр çав пура ăшне
Арăмпа ун анчăкне».
Хун хушайнă — тарçă тунă:
Илнĕ кайнă, хупнă хунă.

### 3

Пурăнать ман Сулпике
Пурара йыт çурипе.
Пурăнать сахал, нумай-и,
Йыт çурийĕ пура айĕн
Вăрмана тухма часах
Шăтăк турĕ хай чавса:
Сунара çӳре пуçларĕ,
Йĕрсене, шăрша чухларĕ,
Кулленех тытса килет
Тĕрлĕ кайăк вăл киле.
«Эс, пикем, пит ан кулянччĕ, —
Выçă вилмĕпĕр», — тет анчăк.
Ак пĕрре вăл вăрманта
Вунă тилĕ тытнă та
Тирне сӳнĕ, килне тултнă,
Шăтăк умĕн сарса хунă.
Тилĕ хӳрисемпелен
Выляса выртать иккен.
Çав самант иртсе пыраççĕ
Шкутавсем*, курах каяççĕ

---

* «Шкутавсем тесе авал вирьялсене каланă», — терĕ юмахне каласа паракан 80 çулхи Анна Красильникова (Анна аппа) — Тутар Республикин Элкел районне кĕрекен Сиктĕрме çынни. Хальхи хăш-пĕр чĕлхеçĕсем çав авалхи чăваш сăмахĕ скиф тенине пĕлтернĕ пулĕ теççĕ.

Тирсемпе çак анчăка:
«Йытă тир вăрланă, ха!»
Сулпике илтет: «Ан тивĕр
Ман йытта, — тет çурăк витĕр, —

Вăрламасть вăл, хăй тытать...»
«Çын та пур иккен кунта, —
Теççĕ шкутавсем, — пикемĕр,
Выртма ямăн-ши пĕрер çĕр?»
«Ярасса эп ярăп та,
Кĕме çук-çке ман пата,
Чӳрече касса парсамăр,
Алăкне туса лартсамăр, —
Çĕр касарăп, ирхине
Парăп вунă тир — çине».

Шкутавсем туса параççĕ,
Çĕр каçсан кайма тăраççĕ.
Йыт çури калать: «Пике!
Эп каям-и çынсемпе?
Усăлса пăртак килем-и,
Çут тĕнче халне пĕлем-и?»
«Ан кайсамччĕ, анчăкăм,
Эс кăна ман шанчăкăм», —
Терĕ Сулпике, хăрарĕ.
Йыт çури çапах та кайрĕ.
Шкутавсен тивет çул май
Хун кил-çуртĕнче пулма.
Анчăк та унта çакланчĕ,
Сак айне кĕрсе пытанчĕ,
Шăппăн выртрĕ итлесе
Çав çынсем мĕн пуплессе.
«Ну, хăнам-вĕрлем, пĕлтерĕр:
Мĕн курса илтсе çӳрерĕр
Инçетри ют çĕрсенче?
Мĕн халпа тăрать тĕнче?
Мĕнешкел тĕнче мехелĕ?» —
Ыйтрĕ Валĕм хун йĕркеллĕ.
«Мĕн курни-илтни, ара...
Виç кĕтеслĕ пурара,
Сĕм вăрманăн варринче пĕр
Ытарма хал çук чипер хĕр
Пурăнать йыт çурипе.

Йыт çури йăлтах çын пек —
Теветкеллĕ те чухлавлă.
Çав çынсем валли пĕр алăк
Тата виçĕ чӳрече
Касрăмăр-ха ыйтнипе».

«И! Халап-и вăл! Вăл пĕтнĕ,
Тахçанах ĕнтĕ вăл çĕрнĕ! —
Тет хун арăмĕ. — Ак эп
Пĕр халап пĕлтерес теп:
Те инçе, те çывăх пулĕ,
Те тӳрех, те кукăр çулĕ,
Çитейсен çитес çĕре —
Пур çăрха ула кĕсре,
Тăршшĕ тăхăр вунă утăм,
Урлăш — утмăл çав ыр утăн,
Хăй хăмлать утмассерен,
Ак ăçта халап сире!»

Йыт çури пурне те илтрĕ,
Вăрттăн тухрĕ те вăл — сикрĕ,
Вĕçрĕ сĕм вăрманалла
Вĕр çĕнĕ хыпарпала:
«Хун кил-çуртĕнче, пикеçĕм,
Ак çапла-çапла пуплеççĕ...
Çитейсен çитес çĕре —
Пур тет имĕш пĕр кĕсре...
Эп çавна кайса илем-и,
Çавăтса кунта килем-и?»
«Аюях! — тет Сулпике. —
Эс ытла та кĕçĕн-çке,
Эп сана ярас теменччĕ,
Çавăтсах килсен — тем пекчĕ».

«Курăн!» — терĕ йыт çури,
Палт çеç пăрăнчĕ хӳри,
Сикрĕ, ыткăнчĕ те анчăк
Сĕм вăрман ăшне пытанчĕ.
Ак ертсе килет хайхи
Кĕсрене, хыçран тихи —
Çĕр те, пин те мар — çук шучĕ:
Утнăçем хăмлать-çке учĕ!
Кĕтӳпе кĕшĕлтетсе,

Выляса та кĕçенсе
Пырса çитрĕç, чарăнаççĕ...

Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ, —
Анчăк кайрĕ сунара,
Çирĕм сăрă кашкăра
Йĕрлесе çав кун вăл тытрĕ,
Сÿсе килчĕ кашкăр тирĕ.
Сарса хучĕ вĕсене
Пÿрт умне, çул хĕррине.
Çулпала каллех пыраççĕ
Шкутавсем, курах каяççĕ:
«Кашкăр тирĕ мар-и çак?
Ăçтан тупнă йытă? Ак!
Камăнне вăрланă анчăк?»

Сулпике яр уçрĕ кантăк:
«Ан тивсемĕр ман йытта,
Вăрламасть вăл, хăй тытать».
Шкутавсем йăлт тĕлĕнеççĕ:
«Çĕр вырттармăн-ши эс?» — теççĕ.
«Вырттарма вырттарăп та,
Лашасем валли карта,
Кĕмелли хапха тумашкăн
Сире эпĕ тархасласшăн;
Хаксăр пулмĕ: çирĕм тир
Харăс парăп ыран ир».

Шкутавсем туса параççĕ,
Çĕр каçсан кайма тăраççĕ.
Анчăк çулăхрĕ каллех:
«Яр, пикем, çынсемпеле...»
Сулпике пит шикленмерĕ:
«Кай эппин те — таврăн», — терĕ.
Шкутавсен тивет çул май
Хун кил-çуртĕнче пулма.
Анчăк та унта çакланчĕ,
Сак айне кĕрсе пытанчĕ,
Шăппăн выртрĕ тăнласа
Этемсем мĕн каласса.
«Ну, хăнам-вĕрлем, пĕлтерĕр:
Мĕн курса-илтсе çÿрерĕр
Аякри ют çĕрсенче?

Мĕн халпа тăрать тĕнче?
Мĕн хакпа мĕскер туянтăр?
Мĕнле мул вылять ку тапхăр?» —
Ыйтрĕ хун шкутавсенчен
Алтăр-тирĕк хушшинчен.

«Туянни тем мар та, хунçăм,
Сĕм вăрманпала тухуçăн
Виç кĕтеслĕ шур пӳртре
Выртма тивнĕччĕ пире.
Пӳртĕнче пурнать иккен пĕр
Ытарма хал çук чипер хĕр;
Пур ун ăслă йыт çури;
Пур тата ула кĕсри —
Тăршшĕ тăхăр вунă утăм,
Урлăш — утмăл çав ыр утăн,
Утнăçем тăвать тиха, —
Шутне маннă хуçи халь;
Тем сарлакăш вăл тыттарчĕ
Ут карти, хапха тутарчĕ
Çакă пирĕн эртеле
Çирĕм кашкăр тирĕлле».

«Çав халап — халап пулать-и!
Пĕтнĕ, çĕрнĕ вăл халап! — тет
Хунăн арăмĕ. — Ак хам
Эп сире халап калам:
Те инçе, те çывăх пулĕ,
Те тӳрех, те кукăр çулĕ —
Кăлтăрттин арман ларать,
Кунĕн-çĕрĕн авăрать;
Пĕр енчен — сирсен сирейĕмĕн —
Сим юхать ун, тепринчен-мĕн
Хăла пылĕ патлатать,
Виççĕмĕш енчен тата
Тĕрлĕ-тĕрлĕ тутлă çимĕç
Тăкăнать хисепсĕр имĕш.
Ак ăçта, сире калап,
Тĕнчери чăн-чăн халап!»
Йыт çури пурне те илтрĕ,
Вăрттăн тухрĕ те вăл — сикрĕ!
Вĕçрĕ хăйĕн кил-çуртне,
Хыпар турĕ хуçине:

«Хун керменĕнче, пикеçĕм,
Ак çапла-çапла пупleççĕ...
Аякра, тaçти çĕрте,
Кăлтăрттин арман пур тет...
Эп çавна кайса пĕлем-и?
Кустарса илсе килем-и?»
«Аюях! — тет Сулпике. —
Эс ытла та кĕçĕн-çке,
Эп сана ярас теменччĕ,
Кустарсах килсен тем пекчĕ...»
«Курăн!» — терĕ йыт çури,
Палт çеç пăрăнчĕ хўри;
Сикрĕ, ыткăнчĕ те анчăк
Сĕм вăрман ăшне пытанчĕ.

Кун иртет те çĕр иртет,
Сулпике кĕтет, кĕтет...
Ак тепре те хĕвел анчĕ,
Тин килет-мĕн харсăр анчăк.
Кăлтăрттин кусса пырать,
Пылпа сим юхса пырать,
Тăкăнать-çке темĕн-темĕн
Тутлă çимĕç куснăçемĕн.
Çитрĕ, ларчĕ ак арман,
Чарăнмасть хăй авăрма.
Çавăнтах юсман, икерчĕ,
Çуллă пăтă вăл пĕçерчĕ;
Тĕрлĕ кукăль, пўремеç
Йыхăраççĕ çиме çеç.
Ăшаланчĕ, тухрĕ карăш,
Кăвакал, шăрттан, тултармăш;
Чăкăтсем хăй йĕркипе —
Кăшăлĕ-кăшăлĕпе,
Тĕрлĕрен юр-вар, сĕт-турăх
Тата темĕн те пĕр урăх...
Пухăнать ĕçме-çиме,
Çук ăна ниçта чикме.
Сулпике шап-шурă хурăн
Хуппинчен тем чухлĕ турĕ
Эрешленĕ тăрăссем;
Хурама хупне сўсе
Пураксем те ăсталарĕ,
Çăкине те таткаларĕ

Ырçапа çӳпçе валли;
Çук, çитмест ун хумалли.

Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ...
Йыт çури — хастар сунарçă —
Кайрĕ акă сунара:
Хĕрĕх те пĕр сăсара
Йĕрлесе тытса хур турĕ,
Пуринне те тирне сӳрĕ;
Йăтса килчĕ, пӳрт умне
Сарчĕ вăл хĕвел çине;
Выляса, канса выртатчĕ —
Шкутавсем иртсе пыраççĕ:
«Сăсар тирĕ пулмари?
Ăçтан тупнă йыт çури?
Камăнне вăрланă анчăк?»

Сулпике яр уçрĕ кантăк:
«Ан тивсемĕр ман йытта,
Вăрламасть вăл, хăй тытать».
Шкутавсем йăлт тĕлĕнеççĕ:
«Çĕр вырттармăн-ши эс?» — теççĕ.
«Вырттарма вырттарăп та,
Лаçпала нӳхреп тата
Пĕр кĕлет туса памашкăн
Сире эпĕ йăлăнасшăн.
Хĕрĕх те пĕр сăсара
Парăп тетĕп-çке вара...»

Шкутавсем туса параççĕ,
Çĕр выртсан кайма тăраççĕ.
Анчăк явăçрĕ каллех
Çав шкутавсемпе пĕрлех.
Вăрман урлă, хир-хир урлă,
Шыв-шыв урлă çĕрĕ пулнă;
Тиветех вĕсен çул май
Хун кил-çуртĕнче пулма.
Анчăк та унта çакланчĕ,
Сак айне кĕрсе пытанчĕ,
Шăппăн выртрĕ итлесе
Этемсем мĕн пуплессе.

«Ну, хăнам-вĕрлем, пĕлтерĕр:
Мĕн курса-илтсе çӳрерĕр

Аякри ют ҫӗрсенче?
Мӗн халпа тӑрать тӗнче?
Хӑш ҫӗрте мӗнле ҫанталӑк?
Еплелле ӑс-хал, ӑсталӑх?» —
Ыйтрӗ хун шкутавсенчен
Алтӑр-тирӗк хушшинчен.

«Тӗнчере тӗрли, хун, — терӗҫ
Шкутавсем, — чӑнах ку, тӗрӗс.
Сӗм вӑрман варринче пур
Виҫ кӗтеслӗ шурӑ пӳрт,
Ҫав пӳртре пурнать иккен пӗр
Ытарма хал ҫук чипер хӗр.
Пур ун ӑслӑ йыт ҫури,
Пур тата ула кӗсри —
Тӑршшӗ тӑхӑр вунӑ утӑм,
Урлӑш — утмӑл ҫав ыр утӑн,
Хӑй хӑмлать утмассерен.
Пур тата тӗлӗнтерен
Кӑлтӑрттин арманӗ хӗрӗн,
Авӑрать вӑл кунӗн-ҫӗрӗн,
Пӗр енчен ун сим юхать,
Тепринчен ун пыл тухать;
Виҫҫӗмӗш енчен таттисӗр
Тӗрлӗрен апат астивӗр.
Ҫитмӗл ҫичӗ ҫимӗҫ, тен,
Ёлкӗрет куҫ хупиччен!
Пурлӑхне пике усрасшӑн:
Хӗрӗх те хӑрах сӑсаршӑн
Кӗлетпе нӳхреп те лаҫ
Туса патӑмӑр ҫав каҫ...»

«И! Халап-и вӑл! Вӑл пӗтнӗ,
Тахҫанах ӗнтӗ вӑл ҫӗрнӗ, —
Тет хун арӑмӗ, — ак хам
Эп сире халап калам:
Те инҫе, те ҫывӑх пулӗ,
Те тӳрех, те кукӑр ҫулӗ, —
Пур этемшӗн чун уҫҫи
Лапсӑркка пӗр улмуҫҫи.
Улмисем сиксе ташлаҫҫӗ,
Ҫулҫисем ҫупса лараҫҫӗ,
Пӗр улма тататӑн та —

Çавăнтах çав вырăнта
Виç улма ун çитĕнет-мĕн,
Ак вăл чăн халап тесессĕн!»
Анчăк илтрĕ пĕтĕмпех,
Вăрттăн тухрĕ те кĕçех —
Хăй пӳртне те вăл каймарĕ —
Пан улми патне васкарĕ,
Илсе килчĕ йывăçа.
Тĕлĕнет пике хуçа:
«Ак тĕнчемĕн пархатарĕ!
Ăçтан тупрăн? Кам каларĕ?»
Анчăк тĕплĕн пикене
Пĕлтерет еплеллине...
Пурăнсан çапла пăртакçă
Шкутавсем каллех выртаççĕ
Сулпике патне кĕрсе.
Йыт çури каять ерсе;
Хун патне каллех çакланчĕ,
Сак айнех кĕрсе пытанчĕ,
Шăппăн выртрĕ тăнласа
Этемсем мĕн каласса.

«Ну, хăна-вĕрлем, пĕлтерĕр:
Мĕн курса-илтсе çӳрерĕр
Аякри ют çĕрсенче?
Мĕн халпа тăрать тĕнче?
Хăш çĕрсем мĕнпе мухтавлă?
Самана кĕвви мĕн майлă?» —
Ыйтрĕ хун шкутавсенчен.
Сăмаххи лешсен — хăйсен:

«Самана кĕвви вăл саккăр
Тенисем, ыр хун, чăнах-тăр.
Сĕм вăрман варринче пур
Виç кĕтеслĕ шурă пӳрт,
Çав пӳртре пурнать иккен пĕр
Ытарма хал çук чипер хĕр;
Пур ун ăслă йыт çури,
Пур тата ула кĕсри —
Тăршшĕ тăхăр вунă утăм,
Урлăш — утмăл çав ыр утăн,
Хăй хăмлать утмассерен.
Пур тата тĕлĕнтерен

Кăлтăрттин арманĕ хĕрĕн,
Авăрать вăл кунĕн-çĕрĕн.
Пĕр енчен ун сим юхать,
Тепринчен ун пыл тухать,
Виççĕмĕш енчен таттисĕр —
Тĕрлĕрен апат астивĕр,
Ситмĕл сичĕ çимĕç, тен,
Ĕлкĕрет куç хупиччен:
Аш-какайĕ, юрĕ-варĕ...
Иксĕлми-мĕн пархатарĕ!
Пур тата ун чун уççи —
Лапсăркка пĕр улмуççи.
Улмисем иксе ташлаççĕ,
Çулçисем çупса лараççĕ.
Пĕр улма татса çисен —
Виç улма ӳсет иккен».

«Ку халап — халап пулать-и!
Пĕтнĕ, çĕрнĕ ку халап! — тет
Хунăн арăмĕ. — Ак хам
Эп сире халап калам:
Те инçе, те çывăх пулĕ,
Те тӳрех, те кукăр çулĕ —
Пур сĕт кӳлĕ çĕр çинче,
Пур ача ун варринче,
Ун пĕр пичĕ уйăх евĕр,
Тепĕр пичĕ — хĕвелпе пĕр,
Ылтăн çӳç те кĕмĕл шăл, —
Акă чăн халапĕ вăл!»

Йыт çури пурне те илтрĕ,
Вăрттăн тухрĕ, тапрĕ сикрĕ
Вăрмана вăл, хăй килне,
Хыпар турĕ пикене:
«Хун керменĕнче, пикеçĕм,
Ак çапла-çапла пуплеççĕ...
Пур сĕт кӳлĕ пĕр çĕрте,
Кӳлĕре ача пур тет...
Ун пĕр пичĕ уйăх евĕр,
Тепĕр пичĕ — хĕвелпе пĕр,
Ылтăн çӳç те кĕмĕл шăл, —
Ак епле илемлĕ вăл!
Эп çавна кайса илем-и,
Сан патна йăтса килем-и?»

«Шеремет! — тет Сулпике. —
Манăн ывăл пулĕ-çке...»
Макăрса-йĕрсе вăл ячĕ.
«Ан кулян, — тет ăслă анчăк, —
Кăкăру сĕтне суса
Пар мана, юсман юрса».

Сулпике юсман пĕçерчĕ;
Йыт çури тухса вĕçтерчĕ, —
Çитрĕ кӳлĕ хĕррине,
Сарса хучĕ юсманне.
Хай ача ишсе тухайрĕ,
Çирĕ те вăл — ыйхăларĕ.
Анчăк йăтрĕ ачана,
Илсе килчĕ вăрмана.
Сĕм вăрман çуталчĕ кайрĕ.
Сулпике ăна палларĕ:
«Ашшĕне ĕнтĕ, хуна,
Чĕнĕп, — терĕ, — хăнана...»

Шкутавсем каллех пыраççĕ,
Çула май кĕрсе выртаççĕ.
Йыт çури пĕрле ирех
Тухрĕ вăрăм çул-йĕре.
Хун патне пырса çакланчĕç,
Пытанмарĕ урăх анчăк,
Йыхрава вăл пынă халь.
Хунăн çав пĕр сăмахах:

«Ну, хăна-вĕрле, пĕлтерĕр:
Мĕн курса-илтсе çӳрерĕр
Инçетри ют çĕрсенче?
Мĕн халпа тăрать тĕнче?
Мĕнешкел тĕнче мехелĕ?
Пур çĕрте те пĕр хĕвел-и?
Уйăх-çăлтăр та пĕрех-и?
Тĕрлине те куртăр-и?»
«Аслă хунăмăр! — пĕлтерчĕç
Шкутавсем. — Хĕвел пĕрреччĕ
Халиччен çут тĕнчере;
Уйăх-çăлтăр та пĕрех,
Çавсемех тесе яланлăх
Шухăшпа тăратчĕ халăх.

Халĕ — çĕнĕ уйăхпа
Çĕн хĕвел пур, çавăнпа
Аслăран ăслă çынсенĕн,
Ĕмĕрхи çăлтăрçăсенĕн
Кĕнеки те паянтан —
Йăлт пăрахăç, хун, ан шан!
Вăрман урлă, хир-хир урлă,
Шыв-шыв урлă эпир пулнă.
Сĕм вăрман варринче пур
Виç кĕтеслĕ шурă пӳрт.
Çав пӳртре пурнать иккен пĕр
Ытарма хал çук чипер хĕр;
Пур ун ăслă йыт çури,
Пур тата ула кĕсри, —
Тăршшĕ тăхăр вунă утăм,
Урлăш — утмăл çав ыр утăн,
Хăй хăмлать утмассерен.
Пур тата тĕлĕнтерен
Кăлтăрттин арманĕ хĕрĕн,
Авăртать вăл кунĕн-çĕрĕн.
Пĕр енчен шав сим юхать,
Тепринчен шав пыл тухать,
Виççĕмĕш енчен таттисĕр
Тĕрлĕрен апат астивĕр,
Çитмĕл çичĕ çимĕç, тен,
Ёлкĕрет куç хупиччен:
Икерчи, пăтти, юр-варĕ...
Иксĕлми-мĕн пархатарĕ!
Пур тата ун чун уççи
Лапсăркка пĕр улмуççи.
Улмисем сиксе ташлаççĕ,
Çулçисем çупса лараççĕ.
Пĕр улма татса çисен —
Виç улма ӳсет иккен.
Пуринчен чапли, хуçамăр,
Пур ача — хĕр шăллĕ, ахăр:
Ун пĕр пичĕ — уйăх, пĕл,
Тепĕр пичĕ ун — хĕвел,
Çӳçĕ ылтăн, шăлĕ кĕмĕл,
Çавăнтан пит тĕлĕнтĕмĕр.
Çав пике чĕнет сана,
Aслă хун, халь хăнана,
Йыхрава вăл йытă ячĕ,

Çын ăслах вара çак анчăк...»
Хун кӳренчĕ кăшт, çапах:
«Юрĕ, пырăп, — тет, — анчах
Пĕр татмасăр, пĕр сыпмасăр
Кĕленче кĕпер хывтарăр
Хăвăр хапхăр патĕнчен
Ман хапха таран ирччен».
Анчăк илтрĕ, хыпаланчĕ,
Кайнă чух каларĕ анчăк:
«Вырт та çывăр, хун! Ирех
Курăн эс çав кĕпере».

Хун ирпе пуçне çĕклейрĕ, —
Чăн та хатĕр-мĕн кĕперĕ.
«Ну, — тет арăмĕсене, —
Чыс тăвар çав пикене.
Кĕленче кĕпер пит капăр,
Каймаллах пулать-тĕр ахăр...»

Кайрĕç, çитрĕç хăнана
Инçетри çав вăрмана.
Тăршшĕ тăхăр вунă утăм,
Урлăш — утмăл, ула утăн
Тихисем аякранах
Янратаççĕ таврана.
Виç кĕтеслĕ пӳрчĕ умĕн —
Хун курать — чăнах та пур-мĕн,
Кăлтăрттин арман ларать,
Сим те, пыл та кăларать.
Çавăнтах — куçна илеймĕн! —
Сарăлса ларать илемлĕн
Этемсемшĕн чун уççи
Лапсăркка пĕр улмуççи.
Çулçисем çат-çат çупаççĕ,
Улмисем сиксе ташлаççĕ.
Хун пĕрне татса пăхать —
Виç улма ӳссе ларать.
Çавăнтах пустав сартарнă
Пусмисем çинче — мăнтарăн
Амăшпе хун ывăлĕ.
Ун пĕр пичĕ — хĕвелех,
Тепĕр пичĕ — уйăх унăн,
Шăлĕ кĕмĕл, çӳçĕ ылтăн.

Хăй вăл кĕмĕл савăта
Хўхĕм ылтăн çăмарта
Кустарса ярать хаваслăн.
Тем сарлакăш, сĕм-сĕм аслă
Вăрмана йĕри-тавра
Çутатса ялтраттарать:
Витĕрех курнать пур çулçă,
Пур чечек. Ак каç та пулчĕ.
Çав-çавах пур чăтлăхра
Кăнтăрла çути тăрать.

Хун Сулпикене палларĕ,
Пĕр сăмахсăр ыталарĕ.
Хун ачи хăй ашшĕне
Пур нуши-тамашине
Йĕркипе каласа пачĕ,
Ашшĕ халь йăлтах ăнланчĕ.

«Хĕрлĕ çыр хĕрри хитре
Е йĕтем тăпри сире?» —
Терĕ Валĕм хун ик аслă
Арăмне вара ытарлă.
«Сенĕк пулччăр урасем,
Кĕрепле — аллăмăрсем,
Çўç-пуç шăпăр пултăр...» — терĕç,
Икĕ арăм кĕвĕлерĕç.

Хун кăна илтсен çапла
Пат тўрех вара калать:
«Чĕрĕллех алтса чиксен те
Çылăх пулмĕччĕ те ĕнтĕ,
Анчах эпĕ — Валĕм хун —
Кăларман ун пек саккун.
Кăмăла çĕклен çак кун
Хаяра ан ертĕр чун.
Авалхи асаттесенĕн
Йăлине эп асилесшĕн:
Салтăр-ха сурпанăра,
Çыртса çурăр çурмаран, —
Çуррине хама хăварăп,
Çуррине эп çыхса ярăп
Кĕвĕçен куçăрсене;
Сĕм вăрманăн леш енне
Ертсе кайĕ сире анчăк,

Ан ўпкелĕр, ик ăмсанчăк!
Çут çанталăк сарлака,
Манăр манăн алăка...
Виç-тăват арăмпала
Пурăнас усал йăла
Паянтан пăрахăç пултăр, —
Пĕррепех çын ырă куртăр!»

Епле хушнă — çапла тунă:
Кайса ячĕ анчăк хунăн
Икĕ аслă арăмне,
Аташтарчĕ вĕсене.
Тин пуçларĕç лăпкă, канлĕ
Пурăнмашкăн виççĕн халĕ,
Тин кураççĕ ырă кун —
Сулпикемĕр, Валĕм хун,
Савнă ывăл, ăслă анчăк.
Тахçанах çапла аванччĕ!

1939

## ИТЛЕМЕН ИЛТЕПИ

*(Юмах)*

Асатте ман тем те курнă,
Вăл каларĕ пĕринче:
«Юмахпа юсавлă пурнăç,
Халаппа чипер тĕнче,
Пĕл çакна, ачам, эс!» — терĕ;
Вилнĕ чух сăран уртмах
Вăл мана савса пиллерĕ,
Çакса ячĕ хул урлах.

Уçрăм пăхрăм: урăм-сурăм
Такмаксем, халап-юмах,
Юрăсем унта эп тупрăм, —
Туллиех иккен уртмах.
Çавсене халь эп пĕрерĕн
Кăларатăп, ачасем,
Итлĕрех мана йĕркеллĕн,
Иртнине чухлас килсен;
Паянхи кунпа ĕнерĕн
Уйрăмне уйлас тесен.

* * *

Хамӑр пек ҫынах-мӗн пулнӑ
Пӗр ялта ҫак тӗнчере:
Выльӑх тытнӑ, тырӑ тунӑ,
Ӗмӗрленӗ ӗмӗре;
Вӑхӑт ҫитнӗ те куҫ хупнӑ,
Арӑм тӑлӑх хайхискер.
Ачисем те юлнӑ унӑн —
Виҫӗ ывӑл, виҫӗ хӗр.
Икӗ аслӑ ывӑл ячӗ
Кирлӗ пулмӗ, тен, пире.
Кӗҫӗнни ятне манманччӗ:
Унӑн ячӗ Илтирек.
Икӗ аслӑ хӗр ятне те
Нуши ҫук-ха пӗлме пит.
Кӗҫӗнни кирлех пуль тетӗп,
Унӑн ячӗ Илтепи.

Ҫав виҫ ывӑл, виҫ хӗр амӑш,
Упӑшкасӑр юлнӑран,
Хуйхӑпа ӗҫет кӑшт та кӑшт;
Кунсерен е хупахран,
Е кӳршинченех вӑл ӳсӗр
Таврӑна пуҫлать килне.
Ак пӗрре, килсе кӗрӳҫӗн,
Вӑл калать аслӑ хӗрне:
«Сивӗ шыв ӗҫесчӗ, хӗрӗм,
Ӑсса кил-ха, ӑш ҫунать...»
Хӗрӗ амӑшне итлерӗ, —
Ҫарранах тухса чупать.

Ӳсӗр амӑш хӑпӑл-хапӑл
Ҫаклатать хурать пӳртне.
Ҫитрӗ хӗр, тӑрать тулта вӑл,
Йӑлӑнать уҫса кӳртме:
«Кӳрт, аннем, кӗрхи ҫанталӑк
Сивӗ мар-им халь, ара?
Кӳрт часрах, уҫсамччӗ алӑк,
Шӑнса кӳтрӗ ман ура».
Амӑшӗ калать мӑнаҫлӑн:
«Хӑвӑн аслӑ пиччӳне
Сӑмах пар качча пымашкӑн, —
Уҫӑп, кӳртӗп ун чухне».

«Ара, йывăр çылăх мар-и
Тăвана кайма, анне?
Уншăн çĕр те çăтса ярĕ!»
Тет тултан хĕр амăшне.
«Кирек мĕн пулсан та, унсăр
Кӳртмĕп», — терĕ леш хĕре.
Хĕр шăнать: çарран вăл, тумсăр,
Килĕшет ирĕксĕрех.

Виç кунтан ун аслă пиччĕш
Ирттерет туйне туса.
Пурăна пуçларĕç иккĕш
Арлă-арăмлă пулса.
Пурăнсан çапла пĕр авăк
Çаксен амăшĕ каллах
Хĕрĕнкĕ килет, вăталăх
Хĕрне вăл çапла калать:
«Сивĕ шыв ĕçесчĕ, хĕрĕм,
Ăсса кил-ха, ăш çунать...»
Ку та амăшне итлерĕ,
Çарранах тухса чупать.

Ӳсĕр амăш хăпăл-хапăл
Çаклатать хурать пӳртне.
Çитрĕ хĕр, тăрать тулта вăл,
Тархаслать уçса кӳртме:
«Кӳрт, аннем, кĕрхи çанталăк
Ăшă мар-çке-ха, ара;
Кӳрт часрах, уçсамччĕ алăк,
Шăнса кӳтрĕ ман ура».
Амăшĕ калать мăнаçлăн:
«Ху вăталăх пиччӳне
Сăмах пар качча пымашкăн, —
Уçăп, кӳртĕп ун чухне».

«Çырлахсам! Мĕн çылăх мар-и
Тăвана кайма, анне?
Уншăн çĕр те çăтса ярĕ!»
Тет тултан хĕр амăшне.
«Кирек мĕн пулсан та, унсăр
Кӳртмĕп», — терĕ сас хĕре.
Хĕр шăнать: çарран вăл, тумсăр,
Килĕшет ирĕксĕрех.

Виç кунтан вăталăх пиччĕш
Ирттерет туйне туса.
Пурăна пуçларĕç иккĕш
Арлă-арăмлă пулса.
Пĕр мехел çапла иртсессĕн
Çаксен амăшĕ каллах
Ĕçсерех килсе кĕрет-мĕн,
Хăй кĕçĕн хĕрне калать:

«Сивĕ шыв ĕçесчĕ, хĕрĕм,
Ăсса кил-ха, ăш çунать...»
Илтепийĕ те итлерĕ,
Çарранах тухса чупать.
Усĕр амăш хăпăл-хапăл
Çаклатать хурать пўртне.
Çитрĕ хĕр, тăрать тулта вăл,
Тилмĕрет уçса кўртме:
«Кĕрт, аннем, кĕрхи çанталăк
Сивĕ-çке паян, ара.
Кўрт часрах, уçсамччĕ алăк,
Шăнса кўтрĕ ман ура».
Амăшĕн каллех çав юрă:
«Хăвăн кĕçĕн пиччўне
Качча кай, вара эс юрăн,
Уçăп, кĕртĕп ун чухне».

«Ай, аннеçĕм! Çылăх мар-и?
Тăвана эп кайăп-и?
Уншăн çĕр те çăтса ярĕ!» —
Терĕ çамрăк Илтепи.
«Кирек мĕн пулсан та, унсăр
Кўртмĕп», — терĕ ватă сас.
Хĕр шăнать: çарран вăл, тумсăр
Йĕрсе ячĕ татăлса.

Çилленсе шывне вăл сапрĕ,
Çапса ватрĕ витрине.
Хăй çапла вара каларĕ,
Ывăтса кĕвентине:
«Кĕвентем кĕсмен пулинччĕ,
Саланса выртан витре
Пĕчĕк кимĕ пек юхинччĕ
Çак шывпа çак сехетре...»

Сар кĕсмен пулса тăрайрĕ
Çавăнтах кĕвентерен,
Пĕчĕк кимĕ сыпăнайрĕ
Ватнă йывăç витререн.
Тăкнă шыв юхма тапратрĕ,
Пулчĕ вăл çырма часах.
Ларчĕ те хĕр ишсе кайрĕ
Киммипе хум кăларса.

Кайрĕ-кайрĕ, çитсе тухрĕ
Çырмапа вăл Атăла.
Атăл тăрăх кимĕ юхрĕ
Шыва май анаталла.
Те вăрах анать чипер хĕр,
Те сахал çапла — курать:
Чăнкă Атăл хĕрринче пĕр
Пĕчĕкçеççĕ пӳрт ларать.

«Ăшăнма кĕрем-ха», — терĕ
Илтепи, кĕç киммине
Çыр хĕрринелле вăл тытрĕ,
Çитрĕ, анчĕ çĕр çине,
Йывăçран кимме кăкарчĕ,
Кĕсменне кимми ăшне
Шаларах чиксе хăварчĕ,
Хăй уттарчĕ пӳрт патне.

Улăхса вăл çитрĕ, кĕчĕ —
Пӳртĕнче пĕр хĕр ларать.
Çулçӳревçĕ ăшшăн чĕнчĕ,
Анчах хĕр ăна калать:
«Хăрамарăн та-и, тантăш,
Çак пӳрте килсе кĕме?
Çакăнта хальччен нихçан та
Эп курман ют этеме.

Çак çурт пуçĕ — вăпăр карчăк,
Çын юнне ĕçекенскер.
Эп ун хăрхăмĕ, эп тарçă,
Хам хăратăп — пит тискер!
Йышлă çын пуçне вăл çирĕ
Хăйĕн тимĕр тыллипе.
Халь те акă вăхăт çитрĕ —
Час вăл килĕ сиккипе.

Çисе ярĕ вăл сана та;
Анчах карчăк çитиччен
Эп шăпăр туса тăратăп
Сана алăк сыппинче;
Çапла хăтăлăн эс», — терĕ
Хăрхăм хăйĕн хăнине,
Шăпăр турĕ те тăратрĕ.
Вăпăр çитрĕ ак килне.

Вăл çÿçне-пуçне тустарнă,
Хура юпăнчă майлах
Çÿçĕпе хăйне хупланă;
Чĕрнисем шĕвĕр, авмак.
Темле кайăк ĕренкеллĕ,
Куçĕ мăч та хупăнмасть.
Пăшатан пек икĕ шăлĕ
Çăварне шăнăçаймасть.

Çÿлти шăлĕ ÿссе аннă —
Тăрăннă янаххине,
Аялти шăлĕ ăнманнăн
Кĕрсе кайнă сăмсине.
Кĕчĕ çеç çав вăпăр карчăк —
Кăн-кăвак сăмси пĕрре
Сывлăша ун нăш тутарчĕ:
«Ху! Этем шăрши кĕрет...»

«Кинемейĕм, кунĕн-çĕрĕн
Çын çинче-çке ху çÿрен.
Çын шăрши кĕмесĕр пирĕн
Мĕн шăрши кĕрес пÿртрен?» —
Терĕ хăрхăм хĕр, йăпанчăк.
«Кÿр эппин çав шăпăра
Пĕрех хут çием!» — тет карчăк,
Шăлне шатăртаттарать.

Хĕр каларĕ: «Ара, шăпăр
Кирлĕ-çке урай шăлма...»
Тухса кайрĕ вара вăпăр
Çут çанталăк анлама.
Хĕрсем ĕç пуçтаркалаççĕ,
Тасатаççĕ пÿрт ăшне,
Кĕнчеле пăртак арлаççĕ,
Çăмхалаççĕ çиппине.

Ак таçта шăлт-шалт шалтлатрĕ,
Карчăк кам пуçне çиет?
Час мелке туса тăратрĕ
Хăрхăм хĕр Илтепие.
Вăпăр çитрĕ, нăш шăршларĕ:
«Мĕн ку çак этем шăрши
Ман пӳртрен кĕре пуçларĕ?
Ман апат кунтах мар-ши?»

«Кинемейĕм, кунĕн-çĕрĕн
Çын юнне ĕçсе çӳрен.
Çын шăрши кĕмесĕр пирĕн
Мĕн шăрши кĕрес пӳртрен?» —
Терĕ хăрхăм хĕр, йăпанчăк.
«Кӳр эппин çав мелкене
Пĕрех хут çием!» — тет карчăк,
Сирпĕтет сĕлекине.

«Кăмака шăлма мана вăл
Кирлĕ-çке-ха», — терĕ хĕр.
Каллех вăпăр хăпăл-хапăл
Тухса кайрĕ нимĕнсĕр.
Хĕрсем ĕç пуçтаркаларĕç,
Хутăр хутăрчĕç, вара
Илтепи хăйса каларĕ:
«Атя, тантăшăм, тарар.

Ма кунта пурнас-ха санăн
Çав усал карчăкпала?
Тупас çук вăл вырнаçсассăн
Аякри пĕр-пĕр яла».
«Юрĕ», — терĕ леш. Кĕç тепĕр
Тапхăр тылă сиктерет.
Çавăнтах Илтепие хĕр
Йĕп туса умне тирет.
Вăпăр çитрĕ, нăш шăршларĕ:
«Ма пӳртрен çаплах çак ман
Çын шăрши тасалаймарĕ?
Кунтах пулĕ-ха тăшман!..»
«Кинемейĕм, кунĕн-çĕрĕн
Çын ашне çисе çӳрен.
Çын шăрши кĕмесĕр пирĕн
Мĕн шăрши кĕрес пӳртрен?» —

Терӗ хӑрхӑм хӗр, йӑпанчӑк.
«Кӳр-ха ҫав йӗппе эппин
Пӗрех хут ҫием!» — тет карчӑк.
«Ара, ку тӗрӗ йӗппи,
Унпа, ырӑ кинемейӗм,
Сан валли сума суса
Эп сурпан вӗҫӗ тӗрлеттӗм...» —
Терӗ хӑрхӑм хӗр суйса.

Хыпаланчӗ вӑпӑр карчӑк
Ҫут тӗнче касма каллах.
Икӗ сар хӗр тухса тарчӗҫ
Вӑл куҫран ҫухалсанах.
Сӑрт ҫинчен вӗсем васкавлӑн
Анчӗҫ Атӑл хӗррине,
Ларчӗҫ те кӗтсе аптранӑ
Илтепин кимми ҫине,

Атӑл тӑрӑх ишсе кайрӗҫ
Шыва хирӗҫ,варрипе.
Ҫаврӑнса хӑрхӑм пӑхайрӗ,
Курчӗ: Атӑл хӗррипе
Тыллине ӑнманӑ карчӑк
Сиктерет те сиктерет.
«Ҫырлахсам! — тет хӗр. — Пӑхсамччӗ,
Хӑвалать хайхи пире».

«Пӗр сӑмах та ан чӗн, — терӗ
Илтепи ӑна, — шӑп лар...»
Хӑй ишет, кӑпӑк чӗнтӗрӗ
Варкӑшса пырать вӑр-вар.
Ак кайсан-кайсан хӑранӑ
Хӗр каллех ҫӑвар уҫать:
«Юлмастех-ҫке ҫав ӑнманӑ,
Ҫиетех пуль-ҫке пуҫа...»

Хӗр ҫапла сӑмах калайрӗ —
Кимӗ лекрӗ хӑйӑра;
Ларчӗ те вӑл тапранмарӗ;
Икӗ тантӑш хуйхӑрать.
Ҫав самант ҫӑхан иртет-мӗн
Атӑл урлӑ кранклатса.
Йӑлӑнать ик сар хӗр мӗскӗн
Ак ҫапла такмакласа:

«Çăхан ту-ус! Çăхан тус!
Вĕçсем пирĕн ял çине.
Тăвана эс хыпар ту
Пирĕн кимĕ ларнине».
«Хама юрĕ хура куçăр, —
Тет çăханĕ, — кранк! кранк! кранк!»
Вĕçсе кайрĕ. «Пуçна пултăр!» —
Терĕç ик хĕр харăсах.
Кĕç чакак вĕçсе иртет-мĕн
Атăл урлă чалкăшса.
Тархаслать ик сар хĕр мĕскĕн
Ак çапла такмакласа:
«Ырă пул, чакак аппа!
Вĕçсем пирĕн ял çине,
Тăвана каласа пар
Пирĕн кимĕ ларнине».

«Хама юрĕ чакăр куçăр, —
Тет чакакĕ, — ча-как-как!»
Вĕçсе кайрĕ. «Пуçна пултăр!» —
Терĕç ик хĕр харăсах.
Кĕç куккук вĕçсе иртет-мĕн
Атăл урлă ярăнса.
Тилмĕрет ик сар хĕр мĕскĕн
Ак çапла такмакласа:

«Эй, куккук тăхлачăмăр!
Вĕçсем пирĕн ял çине.
Тăвана каласа пар
Пирĕн кимĕ ларнине».
Куккук ним те шарламарĕ,
Хăй хĕрхенчĕ хĕрсене,
Хăвăртарх яла вaскарĕ,
Çитрĕ, ларчĕ пӳрт çине:

«Ку-ку, каччăм! Ку-ку, каччăм!
Хĕрлĕ çыр валли чӳке
Хĕрлĕ вăкăр пусса парччĕ, —
Тет куккук Илтиреке. —
Сар куркапала шерпет ĕç,
Сарă тирĕкпе юсман
Чӳклесе çисем чипер эс», —
Тет куккук ăна унтан.

Илтирек ăнланаймарĕ
Çав куккукăн сăмахне.
Шухăшларĕ-шухăшларĕ,
Кайрĕ ăрăмçă патне:
«Ĕмпичей, — тет, — паян пирĕн
Пӳрт çинче куккук автать.
Эп ăнкараймарăм нимĕн,
Эс итлемĕн-ши тата?»

Пычĕ лешĕ, — чухлаймарĕ,
Вара ик хăлхи патне
Ик çĕрĕ тытса тăнларĕ,
Тин ăнкарчĕ мĕскерне:
«Хĕрлĕ çыршăн хĕрлĕ вăкăр,
Шыв-шур амăшшĕн шерпет,
Çул сыхне юсман хывсамăр
Тет иккен вăл, шеремет», —

Тесе ватă ăнлантарчĕ.
Хатĕрленчĕç чӳк тума:
Пĕр чĕрес шерпет тултарчĕç,
Пĕçерттерчĕç шур юсман,
Вăкăр çаватрĕç те тухрĕç
Ял хыçне пĕр çырмана.
Авалхи шайпа чӳк турĕç,
Ĕçрĕç-çирĕç пĕр кана.

«...Пĕлменнишĕн каçарах,
Пĕлнипе çырлах, ыр чӳк!
Пирĕн мелсĕр алăра
Кĕнеке те, хут та çук...» —
Терĕ ăрăмçă, пĕр алтăр
Шыв сапса вăкри çине.
Хĕрлĕ вăкăр лăстăр-лăстăр
Силлесе илет хăйне.

Вăл силленсенех ялта ак
Илтирек амăшпеле
Пиччĕш-аппăшне сасартăк
Çĕр çăтать ярать пĕрле.
Пӳрчĕпех анса каяççĕ.
Килчĕ каччă чӳклесе:
Пӳрчĕ çук, ларать пĕр лаç çеç,
Хытрĕ кайрĕ тĕлĕнсе.

Атăл шывĕн анĕнче-мĕн
Çав вăкăр силленсенех
Тапранать хай ларнă кимĕ
Вырăнтан чип-чиперех.
Икĕ сар хĕр ишрĕç-ишрĕç —
Пулчĕç леш çырма тĕлне.
Кĕрсе кайрĕç, ишсе çитрĕç
Илтепин тăван ялне.

Илтепи пӳртне шырарĕ —
Пӳрчĕ çук, лаççи пĕччен.
Илтирек вăтанчĕ кайрĕ
Икĕ сар хĕр умĕнче.
Пĕлтерес пулать: пĕр ятлă
Пулнă икĕ çав пике,
Иккĕш те пĕр сăн-сăпатлă,
Хăшне йăмăк тес иккен?

Илтирек каллех çул тытрĕ
Хайхи ăрăмçă патне:
«Йăмăка палласчĕ»,— терĕ,
Ыйтрĕ мĕн тумаллине.
Ăрăмçă ăна каларĕ:
«Лаççуна вут хур та ху
Ух аври чутласа лар эс,
Аллуна касам пек ту.

— Аюй, аллăм! — те те ырă
Çавăн чух сăна вара:
Йăмăку вут урлă пырĕ,
Ют хĕр пырĕ вут тавра».
Ăрăмçа тав турĕ каччă,
Тухса кайрĕ те килне
Вăл калана пек хăтланчĕ,
Пĕлчĕ йăмăкĕ хăшне.

Пурăнсан çапла кăшт виççĕн,
Илтепийĕн аташне
Илтирек качча та илчĕ,
Йăмăкне те хăйĕнне
Çав кунах качча пиллерĕ
Хăй пекех аван çынна.
Икĕ туй пĕрле кĕрлерĕ,
Чапĕ кайрĕ таврана.

Туйĕнче эп хам та пултăм.
Илтепи киммипелен
Ярăнса ишсе те куртăм
Çак яла çывхариччен.
Халь вĕсем те чӳк тумаççĕ
Тĕшмĕшпе аппаланса:
Сирĕн пек ăспах пурнаççĕ,
Пурте кĕнĕ колхоза.

## ÇАРĂК

*(Юмах)*

Пурăнаççĕ тĕнчере
Карчăкпа старик пĕрре.
Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ,
Кантăк витĕр курăнаççĕ.
Шухăшлаççĕ çакскерсем
Кăшт пуйса пăхас тесе.
Шухăшлаççĕ-шухăшлаççĕ,
Шур ука пек шуралаççĕ.
Ак хайхи тăпрас çине
Çарăк акрĕç маччине.
Вăхăт çитрĕ: çарăк пулчĕ,
Тăпраса тулли вăл тулчĕ.
Çурăк витĕр урайне
Çарăк тăсрĕ хӳрине;
Унтан ун хӳри-тымарĕ
Тĕпсакай тĕпнех вырнаçрĕ.
«Ку тата мĕн тамаша?
Карчăк, кил-ха канаша.
Кун пек çарăк эп курманччĕ,
Ырлăха-ши тымарланчĕ?»
Улăхса пăхать старик,
Тĕлĕнет вăл çав тери:
Çарăк ашкăрнă та кайнă,
Пӳрт çи витĕр тухнă тарнă;
Пĕлĕтех вăл çӳлелле
Кармашать çулçипеле.
Чикмекпе старик хăпарчĕ,
Урине усса вăл ларчĕ,
Пăхрĕ, курчĕ: витĕрех

Çарăк тухнă пĕлĕтрен.
Çын тата пăртак çĕкленчĕ,
Те чăнах ку, те тĕлленчĕ:
Иккĕмĕш те виççĕмĕш,
Тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш,
Улттăмĕш пĕлĕт те пур-мĕн,
Çарăк шав пырать. «Çĕр курмĕ
Кунашкал тамашана», —
Тет старик, хăй хавшанать,
Юлашки вăйне вăл пухрĕ, —
Çичĕ пĕлĕт витĕр тухрĕ.
Çарăк пӳлĕх пахчине
Ертрĕ кĕчĕ хайхине:
Сарăлса ларать капмаррăн,
Епле-ха ăна кăларăн?
Кăларса хăтланиччен
Çăтмахрах пурнас-и тен.
Анчах карчăк аялта-çке,
Карчăка та хăпартасчĕ.
Анчĕ хай старик калла,
Карчăкне хыпар калать...
«Улăхарччĕ, улăхарччĕ
Хăвăртрах, старик!» — тет карчăк.
Ак хайхи старик миххе
Карчăкне персе чикет;
Шăлĕпе çыртса йăтать те,
Чикмекпе тапаçланать те!
Карчăкки ялан ватта
Йӳтетсе пырать шалта:
«Час çитетпĕр-и, старик? — тет. —
Çăтмаха кĕретпĕр-и?» — тет.
Старикки темскер мăрлать,
Çăварне уçма хăрать.
Карчăккин, хăпарнăçемĕн,
Пĕрех юрă, çав пĕр çемĕ:
«Аякра-и-ха çăтмах?
Улăхасчĕ-çке часрах!»
Старикки сăмах чĕнмесĕр
Мăшлатать чĕлхесĕр евĕр.
Ултă пĕлĕт витĕр ак
Тухрĕ вăл çапла ырах.
Юлашки пĕлĕт çывхарчĕ,
Минретет пушшех хай карчăк:

«Çăтмаха нихçан капла
Çитес çук эп санпала.
Темле путсĕр çарăк тупнă,
Хăвăртрах хăпар, ватсупнă!»
Старикки, çиллипелен,
Улăхса çитнĕ-çитмен
(Пĕрех пусăм пусмаллаччĕ)
Тӳсеймесĕр печĕ ячĕ:
«Е, усал ашапатман!
Ĕнтĕ çитрĕмĕр, лăплан».
И! унччен те пулаймарĕ,
Вăл курса та юлаймарĕ —
Карчăкки миххипеле
Печĕ анчĕ çĕрелле.
Çичĕ пĕлĕт витĕр ӳкрĕ,
Укичченех чунĕ тухрĕ.
Старикки пĕлĕт çинче
Пӳлĕх аслă пахчинче
Карчăкне юпа чысларĕ,
Асăнса пичке пуçларĕ.
Эп те пултăм юпинче,
Çичĕ пĕлĕт тӳпинче.
Асату юрри юрларăм.
Сухала çыртса ташларăм.
Алтăрпа ĕçрĕм сăра,
Тав туса мĕн пурсăра.

1941

## КĂВАКАРЧĂН

*(Юмах)*

Юмах юпа тăрринче,
Халап хапха тăрринче.
Хам урхамах çийĕнче,
Ура йĕнер пуссинче.

Тухса кайрăм хапхаран,
Тусан вĕçрĕ чăл та пар.
Халап чупрĕ хыçăмран,
Юмах выртрĕ юнашар.

* * *

Пурăнаççĕ тет иккен
Пĕр мучей, пĕр кинемей.
Пурăнаççĕ ерипен
Кĕтсе ырă вилĕме:
Такăнмасăр çын ӳкмест,
Ватăлмасăр çын вилмест.

Ак тухать пĕрре мучей
Туйипе туяланса,
Пычĕ-пычĕ — умĕнче
Çĕр выртать çуркаланса.
Çурăк витĕр вăл пăхать —
Хăй çути йăлтăртатать.

Ку мĕн тамаша тата?
Старик тимĕр туйине
Чиксе ячĕ, пăлхатать,
Пĕлмест нимĕн иккенне.
Сасартăках çурăкран
Ячĕç тытрĕç туяран.

«Яр-ха, ярччĕ туяна,
Ан кул ватă çынсенчен...»
«Хĕрне парăн-и мана?» —
Терĕ сас çĕр айĕнчен.
А старикĕн виçĕ хĕр,
Пĕринчен пĕри чипер.

«Парăп», — терĕ аптраса
Ним тума пĕлмен мучей.
Килне çитрĕ, хуйхăрса
Ларать кĕлет умĕнче:
«Хăшне парăп, хăш хĕрне?
Пĕринчен пĕри хитре!»

Аслă хĕрĕ тухать те
Ашшĕне парать салам:
«Апата кĕрсем, атте,
Пиçнĕ хур пайламалла».
Ашшĕ йăтрĕ те пуçне
Калать хăйĕн сăмахне:
«Кĕрессе эп кĕрĕп те,
Çĕр çурăкне çураççан

Кайăн-и эс, хĕрĕм?» — тет.
Хĕрĕ ӳкрĕ хăраса:
«Аюк, аттеçĕм, аюк!
Эп унта каяссăм çук».
Вăтанса питне хупса
Кĕрсе кайрĕ пӳртелле.
Ашшĕ юлчĕ пуç усса
Хăйĕн хурлăхĕпеле:
«Хăш хĕре пама хал пур?
Пĕринчен-пĕри маттур!»

Вăталăхĕ тухать те
Ашшĕне парать салам:
«Апата кĕрсем, атте,
Пăтă куç пуçламалла».
Хаш сывлать те ватă çын
Сăмахне хушать вăл тин:
«Кĕрессе эп кĕрĕп те,
Çĕр çурăкне çураçсан
Кайăн-и эс, хĕрĕм?» — тет.
Хĕрĕ ӳкрĕ хăраса:
«Аюк, аттеçĕм, аюк!
Эп унта каяссăм çук».

Вĕттĕн-вĕттĕн çеç пусса
Кĕрсе кайрĕ пӳртелле.
Ашшĕ юлчĕ пуç усса
Хăйĕн хурлăхĕпеле:
«Хăшне парăп ытарса?
Пĕринчен-пĕри таса!»

Кĕçĕн хĕрĕ тухать те
Ашшĕне парать салам:
«Апата кĕрсем, атте,
Сим-шерпет тутанмалла».
Ашшĕ хăйĕн кĕввинех
Такмаклать кĕçĕннине:
«Кĕрессе эп кĕрĕп те,
Çĕр çурăкне çураçсан
Кайăн-и эс, хĕрĕм?» — тет.
Хĕр ӳкмерĕ хăраса:
«Кайăп, атте, — терĕ ку, —
Кайăп, санăн ирĕкӳ».

Ашшĕ кĕчĕ шур пӳртне,
Хĕрĕ утрĕ хыçĕнчен.
Ак хайхи кусем патне
Çитрĕç çĕр çурăкĕнчен.
Тытăнаççĕ хĕр пăхма,
Тĕпчеме те сăнама.

Хушрĕç виçĕ чипере
Умлă-хыçлă юрлама,
Хăшĕ юрлĕ хитререх —
Çавна пулчĕç суйлама.
Аслă хĕрĕ пуçласа
Çапла ячĕ юрласа:
«Какалан сар чăххине
Сарă тулă сапмăп эп,
Мĕкĕрен шур ĕнине
Шурути хыптармăп эп,
Шăхăран кил çĕленне
Шăхăртса сĕт лартмăп эп».

«Ку пире питех тĕс мар, —
Терĕç хĕр суйлакансем, —
Теприне юрлаттарар,
Кун сăвви ытла кичем».
Ак вăталăхĕ тухать,
Тухйине ухса юрлать:
«Пĕкече тытса курман —
Хирлӳне эп хирес çук,
Ăмăрт кайăк тĕл пулман —
Çĕмĕрен çитерес çук,
Çурăкра эп çуралман —
Хĕсĕнсе çӳреес çук».

«Ку та пирĕн йышши мар, —
Терĕç çурăк çыннисем, —
Теприне илтсе пăхар,
Ун мĕнле-ши сăввисем?»
Вара тухрĕ кĕçĕнни,
Ун çапла сăвви-çемми:
«Хĕрелсе хĕвел ансан —
Эпĕ сарăп вырăнне,
Чĕркуççи çине ларса
Эпĕ салтăп урине,

Шурăмпуçĕпе тăрса
Эпĕ çакăп хуранне».
«Ак ку пирĕн ал çемми!» —
Терĕç те хайхискерсем,
Хăех кӳлĕнчĕ кӳми:
Кĕпĕр-кĕпĕр сиктерсе
Çавăнтах çĕр çурăкне
Илчĕç кайрĕç пикене.

Пурăнаççĕ те самай,
Те сахал — çĕр çурăкне
Аслă аппăшĕ ларма
Кайрĕ йăмăкĕ патне.
Пырса кĕчĕ, тĕлĕнет:
«Мĕншĕн хам килмерĕм?» — тет.

Пӳрт те мар, кĕлет те мар —
Виç кĕтеслĕ пĕр кермен;
Йывăçран та пураман —
Хывнă тĕрлĕ чулсенчен.
Вутăн-хĕмĕн вылянать,
Куçкĕски пек курăнать.

Пĕр хӳми çине пăхать:
Пăлан пуçĕ, мăйраки,
Çунатне сарса ларать
Амăрт кайăк кĕлетки,
Путене, ăсан, куккук...
Миçе тĕрлĕ кайăк çук!

Пăхать тепĕр еннелле:
Упа-кашкăр тирĕсем,
Тилĕсем тĕркипеле,
Арăсланăн çилхисем...
«Ма-ши хам килмерĕм, ма?» —
Тет татах ларма хĕр ман.

Пăхать виççĕмĕш енне:
Сăнăсем, пĕкечесем,
Кĕлтипех сăран йĕнне
Чиксе хунă çĕмренсем.
Аврланă уххисем —
Пĕринчен-пĕри ĕлккем:

Аври тар йывăççинчен,
Эрешленĕ ĕнчĕпе,
Вĕçĕсем хĕç тимĕртен —
Шĕвĕр те çинçе йĕп пек;
Вĕлтĕр-вĕлтĕр хӳрисем —
Çуранкайăк* тĕкĕсем.

Пăхрĕ, курчĕ йăмăкне —
Шăрçа-тенкĕ ăшĕнче.
Тенки пулĕ пĕр-пĕрне —
Умĕнче те хыçĕнче.
Шăрçисем ярăмĕпе —
Асамат кĕперĕ пек.

Упăшки пырса кĕчĕ:
Ука-пурçăн çийĕнче,
Симĕс атă уринче,
Çĕлен тирĕ пуçĕнче,
Вăр çавра çӳç хĕррипе
Нухрат янă йĕркипе.

«Мĕншĕн хам килмерĕм?» — тет
Каяллах ларма хĕр ман.
Шухăшлать те хĕрĕнет
Кĕрӳшне сăхлантарма:
Епле халĕ çав, ара,
Ун хăй майлă çавăрас?

Йăмăкĕ, ăна-кăна
Тавçăрмасăр нимĕн те,
Пĕртăван çав хăнана
Чысласа мунча кĕртет.
Хăй анать ачипеле
Аппăшпе кĕме пĕрле.

Мунчин чулĕ — чăн мерчен,
Лапки — шурă кĕленче,
Валашки пăхăр иккен,
Курки çутă кĕмĕлтен,
Мĕлки — пурçăн, сĕлти — сĕт,
Шывĕ — сим, ăшши — шерпет.

---

* Страус.

Çăвăнаççĕ савăнса,
Чӳхенеççĕ чун уçса.
Аппăш тухрĕ васкаса;
Йăмăкĕ ача çуса
Кая юлчĕ кăшт кăна;
Калать аппăшĕ ăна:

«Йăмăкăм, кӳр ачуна,
Хам йăтса хăпарăп», — тет.
Йăмăкĕ парать çакна,
Хăй татах мунча кĕрет.
Аппăш ун кĕпи-йĕмне
Тăхăнать те хăй çине

Хăвăртрах тухса утать
Килнелле ачипелен.
Йăмăкĕ тухать, курать:
Кĕпи-йĕмĕ çук иккен!
Кăвакарчăн пулчĕ те —
Вĕçсе кайрĕ инçете.

Аппăш çитрĕ ачипе
Хăй кĕрӳшĕн кил-çуртне.
Йăмăкин çи-пуçĕпе
Улталарĕ кĕрӳшне:
Унпа арлă-арăмлă
Пурăна пуçларĕ вăл.

Анчах акă пĕр инкек:
Алăри ачи йĕрет:
Çупăрлать çĕнĕ инке,
Ачашлать те илĕртет,
Чуптăвать ăна, савать —
Чарăнмасть ача çавах.

Çав хутрах йĕрре илтсе
Йăпатмашкăн мĕскĕне
Кунсерен пырать вĕçсе
Кăвакарчăн кермене,
Алăк çывăхне ларать,
Ак çапла сăвă калать:

«Ан йĕр, ачам, а-ан йĕр:
Хăйра кăкăр пулчĕ-тĕр,

Çавăнпа карăнмасть-тĕр;
Сĕчĕ сухăр пулчĕ-тĕр,
Çавăнпа вăл тухмасть-тĕр,
Ан йĕр, ачам, а-ан йĕр...»

Çапла кăмăлсăрланса
Кăвакарчăн сăвăлать,
Виç çавра сăвăласан
Каялла вĕçсе каять,
Тепĕр кун татах пырса
Хăварать вăл юрласа:

«Ан, йĕр, ачам, а-ан йĕр...»
Çук, ачи пушшех йĕрет.
Упăшки, аптранăскер,
Юмăça каять пĕрре:
«Ачама тем пулчĕ, — тет, —
Ие улăштарчĕ шет?»

Юмăç пăхрĕ те калать:
«Ачу тĕрĕс-тĕкелех,
Анчах ĕç çапла-капла...
Арăму пирки килет...
Амăш мар вăл ачуна,
Тыт эс кăвакарчăна...»

Мĕн мелпе тытмаллине
Вăл ярать ăнлантарса:
«Çатмапа кермен умне
Ларт, — тет, — сухăр шăратса».
Хушнă — тунă. Хураллать.
Кăвакарчăн кĕç ларать.

«Ан йĕр, ачам, а-ан йĕр...»
Виç çавра юрларĕ те
Вĕçĕп кайăп тенĕскер —
Тек хускалаймарĕ те:
Кăлăх çапрĕ çунатне,
Арçын пычĕ ун патне.

Тытрĕ çеç çунатĕнчен —
Икĕ алă тăсăлчĕ,
Тытрĕ çеç тунисенчен —
Икĕ пĕçĕ яшт тăчĕ,

Шăлчĕ çех пĕсехинчен —
Кăкăр-çурăм çаврăнчĕ.

Шăлчĕ пуç тĕпекĕнчен —
Măшăр çивĕт çитĕнчĕ,
Шăлчĕ кайăк питĕнчен —
Этем ĕренки кĕчĕ,
Чуптăвайрĕ тутинчен —
Чĕм те кĕчĕ кĕлеткен.

«Хунякам! — терĕ вара
Çын хăй арăм аппăшне , —
Мĕскерпе ăсаттаран
Ху аçу-аннӳ патне:
Лĕрке йытă леçтĕр-и
Е юпах тихамăр-и?»

«Юрĕ-çке юпахăр та», —
Терĕ лешĕ кĕрӳшне.
Ак арçын тиха тытать,
Кăкарать хунякăшне
Çав юпахăн хӳринчен,
Шарт çапать пушшипелен.

Вут-кăвар тивертнĕ пек
Ыткăнса ӳкет юпах,
Сиккипе те юрттипе
Вăл чупать, чупать, чупать;
Çул çинче кĕвĕçскере
Тапкалать те вĕлерет.

Măшăр халĕ те пулин
Пурăнать-ха, сывă-ха.
Ĕнтĕ ывăль ывăлин
Ачисем авланнă халь.
Урăм-сурăм туйĕнче
Эп уртмахçă пулнăччĕ,

Юптару юптарнăччĕ,
Такмакланăччĕ такмак,
Тихине те курнăччĕ:
Тихи пулнă урхамах,
Урхамах çинче юмах,
Юмах тупсăмĕ — чăнах.

1941

# ТӐВАН ҪӖРШЫВ

*(Поэма)*

Мӗн-ши вӑл Тӑван ҫӗршыв?
Аякра-ши, ҫывӑх-ши?
Аякра та, ҫывӑх та,
Каласа парам, тӑхта.

## 1

Йывӑҫ пӳрт. Урам енче
Виҫӗ ҫутӑ чӳрече.
Ярӑнса ӳсет йӑмра.
Каш кашлать вӑл ҫумӑра;
Уяра вӑл лӑпланать,
Шухӑша кайса ларать.
Эс вӑраннӑ-вӑранман
Вӑл пӑхать пӗр кантӑкран:
«Хӗвел тухнӑ, тӑмалла,
Чуп, ачам, — тет, — шкулалла».
Каҫпала йӑмра сана
Тепӗр хут пӑхса сӑнать:
«Ку ачи аван-ҫке те,
Кӗнеке вулать-ши? — тет. —
Вӗренет-ши урокне?
Намӑс пулмӗ-ши хӑйне?»
Эс юлмастӑн намӑса,
Ӳстерсех пыран ӑса;
Ху та хытӑ тӑрӑшан,
Юлташна та пулӑшан.
Шав калатӑн: «Вӗренер!»
Ма тесессӗн — пионер.

Сан килӳ Вӑтакасра,
Хамӑр кас ялан асра,
Ҫавӑ-шим ҫӗршывӑмӑр?
Ҫав та, ҫав кӑна та мар:
Анаткас та пур ялта,
Турикас та пур тата;
Вӗсенче те ачасем,
Пӗр класра ларакансем.
Хамӑр ял вӗҫне тухсан

Эс çеремлĕ çул куран;
Çав çулпа утсан-утсан
Эс шоссе çине тухан.
Çулăн икĕ хĕррипе
Йывăç лартнă йĕркипе;
Тикĕс сарнă чулпала
Унталла та кунталла
Ыткăнаççĕ машинсем —
Çăклисем, çăмăллисем.
Тĕлĕнсе пăхса тăран:
Ачасем аташасран
Аслă çулăн хĕррине
Юпа лартнă, ун çумне
Шĕвĕр пуçлă ик хăма
Çырса çапнă вулама.
Пĕр хăми çине Канаш
Тесе çырнă çав юлташ,
Теприне вăл пит катмар
Авса хунă — Шупашкар.
Çавă-им çĕршывăмăр?
Çав та, çав кăна та мар.
Лартăн эс машин çине,
Кайрăн эс Канаш енне.
Канашра пур пысăк шкул —
Кĕр, вĕрен те ăслă пул.
ФЗО пур Канашра,
Вăл та вĕрентет ырра:
Çӳрĕн чыслă çи-пуçпа,
Çут медальлĕ карттуспа,
Пĕлсе çитĕн тĕрлĕрен
Машинсем эс тĕпчесен.
Юсăн эс унта вакун,
Хаçат вулăн кашни кун.
Савăтра нумай çынсем,
Пурте сан юлташусем.
Пурте пулăшĕç сана,
Тухăн эс, ачам, çынна!

Канаш мар пулсан ытах,
Шупашкар та çав çулпах,
Анчах тепĕр еннелле,
Паçăр эп каланилле.
Шоссерен инçех те мар

Чугун çул пур юнашар.
Чашкăрать ав пăравус,
Билет ил те ура пус,
Кĕр эс симĕс вакунне,
Лар эс сарă сак çине.
Пăхса пыр чÿречинчен
Хулана çитериччен.
«Шупашкарăм, шур хула!» —
Тет пĕри юрла-юрла.
Чăнласах-мĕн, чăнласах:
Шурă çурчĕ ытларах.
Аслă шкул та пур унта,
Пур паха театр та:
Алексеев Бориса
Курмаллах унта пырса,
Пăхмалла вылянине,
Илтмелле култарнине...
Хулара музей те пур,
Эс ăна та çитсе кур:
Иртнине те хальхине
Пĕлсе çитĕн ун чухне.
Картинсем кăтартакан
Пĕр çурта кĕме ан ман.
Галерея ăçтине
Ыйт та — калĕç ун тĕлне:
Спиридонов ăстарах
Е Сверчков — пăх лайăхрах.
Картинсем тума вĕрен, —
Шкулĕ пур художниксен.
Сăнаса пăх сассуна,
Янкăр уçă пулсанах —
Юр ăсти пулма вĕрен,
Шкулĕ пур юрлакансен.
Пионер çуртне кĕрсе
Лар пĕрре хĕпĕртесе:

Журналсем пăх канмалла,
Шахмăтла вылякӑла,
Кур спектакль каçхине
Çĕнĕрен те çĕннине...

Такăр-такăр Шупашкар,
Такăнмасăр утăмлар,

Советсен çуртне çитер,
Çурчĕ пысăк çав хатер.
Милиционер тăрать,
Аллипе салют парать:
«Мĕн ĕçпеччĕ? Кам патне?» —
Тет вăл кĕрекенсене.
Пĕр тирпейлĕ кинемей
Тытăнать ак пуплеме.
Хăй вăл шупăрĕ çумне
Çакнă Ленин орденне.
Милиционер пăхать,
Шалт! тăвать те çул парать.
Çак çуртра иккен вĕсем,
Халăх шаннă ĕçченсем.

Çакă-ши çĕршывăмăр?
Çак та, çак кăна та мар.

Ав килет пĕр пăрахут,
Кăшкăрать вăл ут-ут-ут!
Кĕç туран тепри анать,
Ăна хирĕç сас парать:
Ут-ут-ут! Утатпăр-çке,
Вăрăм çул пулать кĕске.

Утса ан та васкаса
Кĕрсе лар çӳлти класа.
Çӳлтинех лекеймесен
Аялти те пырĕ тен.
Тăвалла е аната —
Атăл вăрăм, лар атя.
Контролерĕ тĕрĕслет:
«Билет пур-и?» — «Ак билет!»
Сăмахран, сан каймалла
Атăлпа анаталла:
Сылтăмра сăрт-ту куран,
Ту çинче хура вăрман.
Сулахай енни раснах
Тикĕсрех те вашăкрах:
Сарă хăйăр та çаран,
Утă ӳснĕ мăй таран.
Ваш та ваш çӳрет çави,
Илтĕнет юрри-сăвви.
Ялкăшать йăваш кăвайт,

Пиçнĕ пулă пăсланать.
Йӳле пилĕклĕ мучи
(Пулăçи е хуралçи)
Çутă-çутă хĕвелтен
Ват кусне аллипелен
Сулхăнланă та тăрать,
Пăрахут вăл ăсатать.
Çаран урлă — шаларах —
Ватă хырлăх палăрать,
Ватă хырлăх леш енче —

Уçăрах ĕшнесенче —
Мари халăх пурăнать,
Пĕрлешсе вăл ыр курать:
Çĕр акать, вăрман ĕçлет,
Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетет;
Шав çӳрет вăл сунара,
Юратать хурт-хăмăра;
Çырлине те пуçтарать,
Кăмпине те тăварлать;
Йывăçран вăл çырмалли
Хут тăвать шкулсем валли.

Марисем ĕçчен ялан,
Марисем — пире тăван.
Ма тесессĕн марисем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

Иртрĕн Сĕнтĕрвăрринчен,
Куславкка патне çитен;
Малалла шусан-шусан
Курăнса каять Хусан.
Эс тутар çĕрне тухан,
Тутарсем мултан пуян:
Хамăр пек тыр-пул акса
Вăйлатаççĕ колхоза,
Тĕрлĕ хапрăк-савăт та
Сахал мар вĕсен унта;
Çĕр ăшне тĕпче пĕлсе
Нефть уçлаççĕ пикенсе.
Ачисем тарла-тарла
Вĕренеççĕ тутарла.

Тутарлах халь сăвăсем
Кăлараççĕ сăвăçсем.
«Чаплă сăвăç кам?» — тесен
Габдулла Тукай вĕсен,
Ну, паллах, аса илен
Мусана та Джалиле.
Вырăсла та тутарсем
Вĕренеççĕ халь хĕрсе,
Ма тесессĕн вырăсла
Ленин çырнă кĕнеке,
Вулакан тухать ăсла,
Ку уçать ĕмĕрлĕхе;
Нимĕнрен те хăрамасть,
Нихăçан та аптрамасть...
Сывă пул-ха, Тутарстан!
Тутарсем — пире тăван.
Ма тесессĕн тутарсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

Кăшкăрать те хутран хут —
Шав шăвать-ха пăрахут.
Atăлпа кайсан-кайсан
Атăла хутшăнакан
Чулман Атăл теекен
Юхăм шыв курса иртен,
Кама теççĕ вырăсла,
Юлчĕ сулахаялла.
Унăн вĕçĕ пит инçе,
Кам пурăнать ун çинче?
Ӳркенмесĕр тăвалла
Хăпарсан çав шывпала,
Нухрат Атăл теекен
Вятка шыв тĕлне çитсен
Удмуртсен çĕрне анан,
Утнăçемĕн паллашан.
Пур вĕсен Ижевск хули,
Чылаях пăшал вулли
Çав ятпа тухса тăрать.
Пур сунарçă астăвать.
Иртнĕ аслă вăрçăра
Удмуртсен пăшалĕ те
Тăшмана хĕртес тĕлтен
Чапа тухнăччĕ вара.

Удмуртсен çĕршывĕнче
Ĕмĕрхи сĕм вăрмансем,
Удмуртсем шывпа инçе
Юхтараççĕ сулăсем.
Пăчăк-пуртă сассипе
Янăрать хура вăрман,
Тырă-пулă пуссипе
Çаврăнать машин ялан.
Ĕлĕк, тĕттĕм çĕр тесе,
Пуç яран вăрманлăхра
Халь çынсем хĕпĕртесе
Пурăнаççĕ ырлăхра.
Пĕрлешсе тăрăшнăран
Пусăм çирĕп, çул яка.

Пурнăç тĕттĕм чăтлăхран
Тухрĕ çутă уçланка.

Удмуртсем утаççĕ тан,
Удмуртсем — пире тăван.
Ма тесессĕн удмуртсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

Шурă Атăл лекиччен
Малалла ишсен-ишсен
Пушкăртсен çĕрне кĕрен,
Кĕнĕçемĕн тĕлĕнен.
Пушкăртсен халь тем те пур:
Хура нефть тапса тăрать,
Тимĕре ташлаттарать,
Шурă кăмăс хăпарать,
Чир-чĕртен вăл хăтарать.
Аш та, çу та — каткипе,
Тырă-пулă та чипер.
Эсĕ лайăх пĕлекен
Нарспипе Сетнер çинчен
Çырнă сăвăç та иккен —
Пушкăртри чăвашсенчен,
Ун тăпри те Пушкăртра,
Çăмăл пултăр çав тăпра.

Сывă тăтăр Пушкăртстан!
Пушкăртсем — пире тăван,

Ма тесессӗн пушкӑртсем —
Совет ҫӗрӗн ҫыннисем.

Малалла — ҫурҫӗрелле
Хӗвел тухӑҫ еннелле
Кайнӑҫемӗн — комисем,
Ненецсем те эвенксем,
Манси, хант, якут, коряк,
Ойротпа хакас, пермяк,
Эскимос, бурят, чукча...
Мӗнле халӑх ҫук, ача!
Кунашири утравпа
Сахалин таран лапах
Тӗрлӗрен чӗлхе тӑнлан,
Пурте пирӗншӗн — тӑван,
Ма тесессӗн йӑлт вӗсем —
Совет ҫӗрӗн ҫыннисем.

Ҫӗршыва пӑхатӑн та
Мӗн кӑна ун ҫук-тӑр тен.
Хура тинӗс кӑнтӑрта,
Шурӑ тинӗс ҫурҫӗрте.
Эп пулсаттӑм пӗринче
Шурӑ тинӗс хӗрринче.
Карелсем иккен унта
Пурӑнаҫҫӗ ӗлӗкрен.
Мрамор, кварц, гранит, слюда —
Туллиех ҫӗрте вӗсен.
Ҫӗр ҫинче — паха вӑрман,
Хаклӑ, хытӑ хурӑнсем;
Кӳлӗ, кӳлӗ... Хушӑран —
Тырӑ-пулӑ анисем.
Сулхӑнрах ҫӗр. Ҫак ҫӗрте
Шурӑ тинӗс хӗрринчен
Балтие канал иртет:
Шывпалах унта ҫитен.
Тӳлекрех ҫӗр. Ҫын курман
Кайӑк-кӗшӗк картисем
Кунта вӗҫнӗ авалтан,
Хӑраман ҫынран вӗсем.
Кунта хӗл те вӑрӑмрах,
Ҫунашка пит хисепре:
Хӑнана та ҫунапах

Пырса илнĕччĕ пире.
Кунта кантĕлĕ текен
Кĕсле пек япалана
Юратаççĕ, пит чечен
Пултараççĕ калама.
Мăшăршарăн сак çине
Ваттисем лараççĕ те
«Калевала» çеммине
Кĕвĕлеççĕ хăш çĕрте:
Алла-аллăн тытăнса,
Ерипен сулкаланса
Вейнемейнĕн шăпине
Пĕлтереççĕ çынсене,
Ильмаринăн кун-çулне
Кăлараççĕ куç умне.
Юмахпа йăпаннă-çке
Ĕлĕк халăх ăрăвĕ.
Халь кунта та çĕн йĕрке,
Юмаха чăн турĕ вăл.
Карелсем те ĕнтĕ халь
Тухрĕç паллă халăха:
Аслă халăх çумĕнче,
Вырăссен хӳтлĕхĕнче
Пурăнаççĕ чип-чипер
Хăйсен республикипе.

Карелсем — пире тăван
Пур ытти йăхпа пĕр тан,
Ма тесессĕн карелсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

Сарлака Россия-Русь!
Никама та çук чару:
Тĕрлĕрен чĕлхепеле
Юрă хур, вĕрен, пупле...
Çавă-ши çĕршывăмăр?
Çавă! тетпĕр яланах,
Çавăнта кун куртăмăр.
Тав, мухтав Российăна!

Кăшкăрать те хутран хут
Шав ишет-ха пăрахут.
Аслă вырăс çĕрĕпе

Кунĕпе те çĕрĕпе
Аната вăл çул тытать.
Атăла хумхантарать.
Атăл анлăланнăçем
Çĕнĕрен çĕн хуласем
Куç умне тухса пырать,
Ак Ульяновск курăнать.
Кам пĕлмест çав хулана?
Кам сума сумасть ăна?
Унта Ленин çуралса
Ӳснĕ, пирĕн телее,
Çутă çул-йĕр кăтартса
Панă тĕттĕм Раççее.
Унта пĕр чăваш Иван
Мĕскĕн тăлăх туратран
Вĕренсе, ăсла тухса
Хăй вĕрентнĕ-мĕн ăса
Ял çинче ятне пĕлмен
Ачаран вăл çĕкленсен,
Иван Якăльча вара
Пурте пĕлнĕ таврара.

Юлчĕ Куйбышев хули,
Çывхарать Саратов та.
Çав-çавах çын туп-тулли, —
Шав кĕрет пăрахута.
Волгоград патне çитсен
Тин сайралчĕ ерипен:
Чаплă вăрçă вырăнне,
Çĕнтерӳ, мухтав çĕрне,
Курма анчĕ çын нумай
Кăшт канса çӳренĕ май.
Сталинград!.. Манасла мар:

Йышлă паттăр хушшинче
Пурччĕ пĕр Максим Пассар,
Халь астурăм ун çинчен.
Вăл нанай этемĕччĕ,
Çĕпĕр сĕм вăрманĕнче
Пакшана вăл куçĕнчен
Персе тытнă вăрçăччен.
Çав сунарçăпа пĕрле
Вăрçă вăрçрăм эп хĕлле.

Хăйĕн снайпер пăшалне
Хĕстеретчĕ те çумне
Çывăха та аякка
Вăл çӳретчĕ кайăка.
Сăрă симĕс «кайăксем»
Фашист ятлăччĕ ун чух.
Вĕсене çав пĕр этем
Тытрĕ ик çĕр вăтăр штук.

Наная ăçтан манан?
Нанайсем — пире тăван,
Ма тесессĕн нанайсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

Атăл пырĕ. Аçтăрхан.
Каспи тинĕсĕ унтан.
Халăхсен сĕм авалхи
Хупăна пĕлмен хапхи.

II

Каспие çитиех иккен
Тем сарлакăш Казахстан.
Темиçе хут Англирен
Пысăкрах вăл, шутласан.
Çитсенех çакна туян:
Казахстан çĕрме пуян —
Рис та пур, çĕр мамăк та,
Тулă та, çĕр кăмрăк та,
Ылтăн та пур, пăхăр та,
Чей ĕçмешкĕн сахăр та.
Выльăх-чĕрлĕх ун ку чух —
Хисепне те пĕлес çук.
Ĕлĕк хир тăрăх ялан
Куçакан казах çынни —
Пурăнать кил-çуртпалан,
Çĕнтерсех пырать çĕнни.
Çĕн хула Караганда,
Çĕн хула Балхаш унта.
«Улма ашшĕ» теекен
Тĕп хули Алма-Ата
Ешерет садсемпелен,
Йыхăрать яша, ватта,

Йыхӑрать ачасене
Хӑйӗн хӳтӗ сулхӑнне;
Тӗрлӗ-тӗрлӗ шкулӑнне
Ярах уҫнӑ алӑкне:
«Кирек кам, кирек ӑҫта
Пултӑр вичкӗн те ӑста;
Тӗпчӗр, пӗлӗр тӗнчене,
Ҫӑмӑл пултӑр ҫынсене...»
Хут пӗлмен казах шкулта
Вӗренет, тухать ҫутта.
Ленин уҫнӑ аслӑ ҫул,
Иксӗлми телей умра.
Ҫӗр ҫулхи старик Джамбул
Ярса тытнӑччӗ тумра.
Вӑл юрлатчӗ ҫӗкленсе
Ҫамрӑк вӑй тапни ҫинчен,
Хӑнтӑр ҫӑмлӑ тихасем
Савӑнса сикни ҫинчен.
Вӑл юрлатчӗ чикӗри
Хускалми тусем ҫинчен,
Йывӑр чух пӗрне-пӗри
Пӑрахми туссем ҫинчен.
Вӑл юрлатчӗ самана
Ырлӑхне кӗвве хурса
Ҫӗн тӗнче тӑвакана
Чӗререн сума суса.

Пархатарлӑ Казахстан!
Казахсем — пире тӑван,
Ма тесессӗн казахсем —
Совет ҫӗрӗн ҫыннисем.

### III

Каҫпиех пырса кӗрет
Аякран Туркменистан,
Ҫӗршыва хитрелетет
Хӑйне майлӑ сӑнпалан.
Кам курман Ашхабада?
Кӑтартасчӗ темӗн пек.
Пурӑнсаттӑм кӑшт унта
Эп Хумма Ҫеменӗпе.
Ҫурҫӗр енӗ — Каракум,

Тем сарлакăш пушă хир.
Çавăнта пулсан пĕр кун —
Пĕлĕр шыв хакне эсир.
Пуянсем пур çăлкуçне,
Пур пусса та хăйсене
Илнĕ пулнă çавăрса,
Сад ӳстернĕ шăварса,
Тарçăсен ĕçĕпелен
Ырă курнă ĕмĕртен.
Алă-утмăл арăмпа
Тăнă пĕр-пĕр Харамбай.
Чухăнни пур — шывшăнах
Тара лекнĕ çав çынна;
Пĕр тĕвешĕн, сурăхшăн,
Хĕр илмелĕх хулăмшăн
Асапланнă вăл ялан,
Çав-çавах авланайман...

Кăнтăр енĕ — Копет-Даг,
Ту çиçет тĕрлĕ тĕспе:
Шурă, сăрă та кăвак,
Тăссан алă çитес пек.
Нумаях пулмасть этем
Кунта пулнă урăхла:
Мăн калпаклă туркменсем
Чухлаймастчĕç вырăсла.
Тенкĕ çакнă арăмсем
Тутине хупла-хупла
Ирткелетчĕç именсе,
Вăтанса та хĕрелсе.
Халь вĕсен çап-çутă çул,
Хăратмасть текех мулла.
Кĕнеке, кино та шкул
Çитрĕ кашни аула.
Çĕр те, шыв та пур ку чух,
Арăмшăн та тӳлес çук.
Ĕçлемешкĕн те сатур,
Савăнмашкăн та маттур.
Шăнкăр-шăнкăр караван —
Шăнкăравлă тĕвесем
Пухăнаççĕ тавраран
Тĕрлĕ пурлăх тиесе:
Тутлă-тутлă çимĕççем,

Каракуль çĕлĕкĕсем,
Эрешленĕ кавирсем
Хатĕрлеççĕ туркменсем.
Пĕрлешсе пурăннине
Çитни çук çав ку чухне.

Пурăнах, Туркменистан!
Туркменсем — пире тăван,
Ма тесессĕн туркменсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

IV

Туркменсен çĕршывĕпе
Казахстанăн хушшинче
Пурăнать ĕмĕртенпе
Тепĕр халăх халиччен.
Шурă тĕрĕллĕ хура
Тӳпеттейлĕ узбексем —
Авалтан çав таврара
Пулнă çĕрĕн ăстисем.
Рис пăтти çиетпĕр-и?
Вăл — узбекăн тĕш тырри.
Тăхăнатпăр-и кĕпе? —
Узбексен мамăкĕпе.
Çутă пурçăн-и пуçра? —
Ун хуртне узбек усрать.
Тутанатпăр-и урюк? —
Узбексен вăл вĕçĕ çук!
Виноград ĕметпĕр-и? —
Тăрăхли е чăмăрри
Çитĕнет Ташкент енче,
Узбексен пахчисенче...
Яланах капла пулман:
Хăй мĕн-мĕн тунисене
Астивсе те курайман
Ĕç çынни авал чухне.
Хан, патша ĕмĕртенпех
Курайман узбексене,
Кăлăхах пĕр-пĕринпе
Хирĕçтернĕ йăхсене.
Узбексен ачисене
Вĕренмешкĕн те яман,

Узбексен хĕрĕсене
Кун çути те кăтартман:
Сĕм хура пĕркенчĕкпе
Хупăрланă вĕсене,
Хура ут хĕлĕхĕпе
Каркаланă пит-куçне.
Халь пĕр танлă çын узбек,
Мăшкăла вăл юлмĕ тек.
Аслă ирĕк аякка
Курăнать вăй-халĕпе,
Туслăх çулĕ сарлака —
Фергана каналĕ пек.
Çӳлте мар, пĕлĕтре мар,
Çĕр çинчех телей тăвар.
Турă, хан, патша, эмир
Кирлĕ мар этемсене.
Шухăша, ăс хăватне
Пуç таятпăр халь эпир.
Ахаль мар халь узбексем
Алишер Навоине
Пиншер чалăш çĕклесе
Лартрĕç çӳллĕ ту çине *.

Чечеклен, Узбекистан!
Узбексем — пире тăван,
Ма тесессĕн узбексем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

**V**

Узбексен кӳрши пулать
Сеп-сенкер Таджикистан;
Сăртлă-туллă курăнать
Аякран, таçтан-таçтан.
«Çут тĕнче тӳпи» текен
Çичĕ çухрăмлă Памир
Пĕлĕте перĕнекен
Улăп сăнлă вăл каç-ир.
Мĕн çук унăн ăшĕнче?!
Ылтăн, кăмрăк, нефть, тăвар

* Узбекистанри альпинистсем Ала-Таун 4282 метр çӳллĕшĕнчи тӳпи çине хăпарса чултан пирамида хывнă. Ун тăррине Навои кĕлеткине лартнă.

Вăл пытарнă ютсенчен,
Халь пире калать: «Кăлар!»
Тӳремрех çĕре ансан
Тĕлĕнтерĕ садсемпе.
Пĕр çĕршывăн икĕ сăн —
Ешĕл никĕс, пăр тӳпе.
Çут тĕнче тӳпи çине
Чи çӳле хăпаракан
Чи хăватлă çын ятне
Панă çав тĕле кайран.
Çавăнпа Памир çинче
Аслă Ленин пикĕ пур.
Хăпарсан ун тӳпинчен
Таçтине курать маттур.
Ту пек тăр, Таджикистан!
Таджиксем — пире тăван,
Ма тесессĕн таджиксем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

**VI**

Кăвакарчĕ юнашар
Тепĕр сăртлă-туллă çĕр.
Шухăшпа унта вăр-вар
Вĕçрĕмĕр те ӳкрĕмĕр.
Памирпа Тянь-Шань, Алтай
Тăвĕсен тăрăхĕпе.
Пурăнаççĕ-мĕн чылай
Кăркăссем ĕлĕкренпе.
Ешĕл курăк çитерсе
Çӳретеççĕ кĕтӳсем,
Çĕр ĕçне те пикенсе
Вĕренеççĕ халь вĕсем.
Тулă, мăкăнь, мамăк та
Ӳстереççĕ шăварса;
Шурă чĕкĕнтĕр лартса
Сахăр та тума ăста.
Кăпăшка кĕççе сарса
Сăмавар умне ларса
Чей ĕçет кил-йыш кал-кал
Е вулать хаçат-журнал.
Ĕлĕк чух хиртен хире
Куçнă хӳтлĕхсĕр этем

Пухăнать халь пĕр çĕре,
Йышпала тăвать ĕçсем.
Вăл тĕртет пир-авăрне,
Вăл катать халь чул тăва,
Вăл сарать çырма шывне,
Çĕнĕ такăр çул тăвать.
Чикĕре пур ту тăрри,
Унăн ячĕ Хан-Тенгри.
Хан-Тенгри пăрне малтан
Çын ури йĕр хăварни —
Пулнă пирĕн çĕршывран,
Пулнă вăл совет çынни.
Çичĕ пин çурă метра
Çын хăпарнă ту çине,
Çĕнтерӳ ятне вара
Панă вăл çав тӳпене.

Сыхласам çĕнтерĕве,
Пархатарлă Кăркăсстан!
Пур тăван йăх евĕрлех
Кăркăссем — пире тăван,
Ма тесессĕн кăркăссем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

### VII

Каçпи урлă каçрăмăр,
Хумхантартăмăр шывне.
Апшерон çурутравне
Çитсе якăр ятăмăр.
Çакăнта мĕн авалтан
Пурăнать Азербайджан,
Пархатарлă, ăшă çĕр,
«Вут çĕршывĕ» тенĕскер,
Ма тесен кунта мазут
Хыпса çуннă хутран-хут.
Тĕттĕм пулнă çын малтан.
Чухлайман ăна-кăна.
Çав вута таçтан-таçтан
Пуççапма пуçтарăннă.
Тĕрлĕ чир-чĕр амакран
Сыватать çав вут тесе
Тĕвепе, ашакпалан

Халăх пынă йӳтесе.
Кун хута та çĕр хута
Чӳк чӳкленĕ çав вута.
Сурахан текен çĕрте
Халь те пур чӳк вырăнĕ.
Анчах урăх сăн кĕртет
Çав вутах халь çĕршывне.
Сĕм вăрман пек хуп-хура
Вышкăсем Баку тавра.
Пуççапмасть этем вута,
Хăрамасть çĕр вутлансан.
Хăй çĕртен çав мазута
Кăларать вăл уçласа.
Пур çĕршыв тăрăх кунтан
Саланать вара мазут,
Кĕрлет трактор унпалан,
Хум касать мăн пăрахут.
Унпалах пилот тата
Вĕçтерет самолета.
Пурăнать Азербайджан,
Пĕр мазут кăна-и ун?
Пулă, мамăк, рис, шафран...
Шав пуять вăл кунран-кун...
Чи пахи мĕскер тесен —
Ăсĕ çĕнĕ этемсен.
Аслă сăвăç Низамин
Çĕрĕ халь ытарайми.
Ун сăваплă вил тăпри
Ĕмĕр канлĕ пултăр-и.

Чаплăлан, Азербайджан!
Сан йышу — пире тăван,
Ма тесессĕн йăлт вĕсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

## VIII

Бакуран пуйăспалан
Кайнă чух — сисмесĕрех —
Эс тухатăн ăнсăртран
Тепĕр евĕрлĕ çĕре.
Караяз юлсассăнах,

Тбилиси çывхарнăçем
Кĕркелеççĕ вакуна
Пашлăк çыхнă грузинсем.
Грузи! Хаклă тĕрĕ пек
Çав çĕр пирĕн çĕршывра.
Йкĕ халăх çĕрĕпе
Явăнса юхать Кура:
Грузипе Азербайджан
Пĕрлешет Курапалан.
«Пĕртăван эсир ялан,
Тахçанах, ĕмĕртенпех», —
Тенĕ евĕр çав çырман
Хумĕсем пупленĕ пек.
Пуянсен патши кăна
Юнашар халăхсене
Харкаштарнă-мĕн ăна,
Пĕтересшĕн пĕрлĕхне:
Ĕçлĕ халăх çил-тăвăл
Ан çĕклетĕр тенĕ вăл.

Грузи! Эпĕ астăвап
Давид-Ту текен тăва,
Астăвап ун хӳттине
Ларнă хӳхĕм хулине,
Тбилиси вăл грузинла
«Ăшă çĕр» тени пулать.
Тăтăшах хĕвел кулать,
Юрататъ мĕнпур çынна.
Çавăнпах-и, тен, кунта
Кирек кам пулсассăн та,
Çын хисепĕ яланах —
«Вăл хăна!» — текен сăмах.
Ту çинчен пĕр каçхине
Пăхрăм эп Тбилисине,
Ун чухне вăл пĕтĕмпех
Ӳпĕнтернĕ пĕлĕт пек.
Сĕм тĕттĕме çĕр хута
Яр çураççĕ çăлтăрсем:
Çӳлтисем те çутă та,
Пин хут çутă çĕртисем!
Юмахри пек çак çĕре
Кам юратмĕ пĕр пĕлсен?
Вĕретмесĕр-мĕнсĕрех

Вĕри шыв тухать çĕртен.
Сиплĕ шыв вăл çав — пӳрте,
Мунчана юхса кĕрет.
Çăвăнсаттăм эпĕ те
Хăнара унпа пĕрре.
Грузи! — Мĕн авалтанпах
Поэтсен хӳтти, сăпки.
Давид-Ту çинче канать
Грибоедов шăм-шакки.
Пушкин, хăй çĕршывĕнчен
Хуса янă вĕри чун,
Грузинсен юррипелен
Кăшт лăпланнă йывăр кун.
Лермонтов та, Пушкин пек
Пуç ярса тĕп пулнăскер,
Грузинсен çĕршывĕпе
Туслă пулнă çав хатер,
Юратаççĕ-мĕн кунта
Чăн чĕреллĕ поэта!
Нихăçан та кивелмен
Руставели кĕнеки —
Качча панă чухнехи
Хĕр парни вăл ĕлĕкрен:
Ашшĕ-амăш çав юрра
Пиллесех чиксе ярать.
Халь те витĕмлĕ пĕр сас
Пачĕ çак çĕршыв пире:
Маяковский çуралса
Паттăрланнă Грузире.
Грузинра та — курап эп —
Тухрĕç, çĕрĕ пуйнăçем,
Кăпăкланнă Кура пек
Хавхаланнă сăвăçсем.
Мĕн ӳсмест çак çĕршывра?
Чей тесессĕн — чейĕ пур,
Апельсин, лимон умра.
Хăшне савăн — кас та хур.
Мандарин йывăççисен
Сап-сарах çимĕçĕсем,
Юри çакнă темелле —
Татмалла та çимелле.
Виноград çупкăмĕсем —
Пăхсан витĕр курăнать.

Пархатар курать этем,
Çĕршывне те пуйтарать...

Грузи каймĕ асăмран,
Грузинсем — пире тăван,
Ма тесессĕн грузинсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

### IX

Грузипе юнашарах,
Арарат таврашĕнче,
Пурăнать тахçантанпах
Тепĕр халăх çĕр çинче.
Йышлă мар та шучĕпе —
Унăн хăйĕн сăнĕ пур;
Хăй чĕлхи, йăли, хăй пек
Вăл сатур, хитре, маттур.
Ту çĕршывĕ тикĕс мар,
Çав-çавах та ĕлĕкрен
Тăрмашать кунта патвар
Ĕçпе писĕхнĕ эрмен:
Сăрт ватать те чул чутлать,
Кĕрен туф текен чула
Аякри Мускав таран
Турттараççĕ çакăнтан.
Вашăк ту аяккипе —
Выльăх-чĕрлĕх кĕтӳпе.
Ăсталаннă тĕрлĕрен
Чăкăтсем тума эрмен.
Çăм арлаççĕ авалтан,
Хатĕрлеççĕ чĕн-сăран.
Хушлăкра, тӳрем çĕрте,
Ешереççĕ пахчисем.
Тĕрлĕ çимĕç сăн кĕртет
Пахчине пиçсе çитсен.
Винограчĕ те хăйсен,
Абрикос та пур иккен,
Персик, груша тĕрлĕрен,
Шăварма çеç ан ӳркен.
Пĕр Аракс çырми кăна
Çитес çук пур таврана,
Çавăнпа та эрменсем

Шыв шыраҫҫӗ хӗрӗнсе.
Ту ҫинче, таҫта ҫӳлте,
Севан ятлӑ кӳл пур тет;
Вӑл тулли ӗмӗртенпех —
Тем сарлакӑш алтӑр пек.
Ҫав шыва халь аяла
Антараҫҫӗ эрменсем;
Тем чухлех хире, яла
Шӑварать вӑл аннӑҫем.
Темӗн чухлӗ этемсен
Янк ҫуталчӗҫ пӳрчӗсем,
Ильич лампочкипелен
Вӗренеҫҫӗ ачисем...

Пулнӑ ӗлӗк Кавказра
Чаплӑ сӑвӑҫ эрменрен,
Виҫӗ халӑх халиччен
Ун ятне усрать асра:
Виҫ расна чӗлхепелен
Юрӑ хывнӑ вӑл иккен:
Эрменле те грузинла
Тата азербайджанла.
Никамран та ютшӑнман,
Пур йӑхсемшӗн те пӗр тан
Шӑрантарнӑ вӑл сӑвва.
Ячӗ ун — Саят Нова.

Халь ун халӑхӗ ҫапла
Таврари пур йӑхпала
Пурӑнать пӗр ҫӑвартан:
Эрменсем — пире тӑван,
Ма тесессӗн эрменсем —
Совет ҫӗрӗн ҫыннисем.

X

Кавказран майӗпеле,
Хура тинӗс хӗррипе
Хӗвел анӑҫ еннелле
Ҫул тытатпӑр йӗркипе.
Ту, вӑрман та ҫеҫен хир,
Сӑрт, тӳрем... Ак хайхине

Килсе тухрăмăр пĕр ир
Украина çĕршывне.
Сарлака та тикĕс çĕр,
Мăнтăркка хура тăпра.
Шурă-шурă чĕкĕнтĕр,
Сарă тулă çăп-çăра.
Тулăран, вăл ĕлкĕрсен,
Çимĕç пулĕ тĕрлĕрен.
Шурă чĕкĕнтĕр тени
Пыллантарĕ сахăра.
Куç тулли ав сап-сарах
Хĕвел çаврăнăш ани.
Кукурус пусси кашлать,
Мĕн çинчен вăл шухăшлать?
Шухăшлать вăл — çак çĕре
Çичĕ ют пусни çинчен.
Шухăшлать вăл ирĕкре
Савăнса ӳсни çинчен.
Пахчара арбуз пиçсен —
Пыл пекех-çке астивсен;
Миçе тĕрлĕ грушисем,
Чийисем, черешнисем!
Украинăн хăйĕн çав
Кăмрăкĕ те, тимĕр те;
Эс паллană трактор ав —
ХТЗ — çӳрет хирте;
Çĕнтерӳллĕн çĕмĕрет
Хытта юлнă çĕрсене,
Вăл ылханĕ ĕмĕрех
Харам пыр тăшмансене.

Витерӳллĕ, паттăр сас
Çĕнĕрен парать Донбасс.
Индустриллĕ çĕршыва
Кăмрăк кирлĕ çăкăр пек,
Шахтер йышĕ çĕр чавать
Кунĕпе те çĕрĕпе,
Çĕнĕрен çĕн йĕр хывать
Кăмрăк çĕрĕ ăшĕпе;
Пиншер тонна вăл вара
Хаклă кăмрăк кăларать.
Пирĕн çĕрĕн çĕн йăла:
Лайăх ĕçсене суллен

Уявпа палăртмалла —
Уйрăм кун пур салтаксен,
Чугун çул çинчи çынсен,
Уйрăм кун пур шахтерсен.
Чап, хисеп ĕçченсене,
Орден — тивĕçлисене.
Украина! Днепртан
Епле уйăрăн сана?
Ун хăвачĕ мĕн таран
Вăй паратчĕ халăхна!
Сикрĕ тухрĕ тискер çул:
Кĕр кĕрлен Днепрогэса
Тăшман çĕмĕрчĕ ун чух
Йывăр бомба пăрахса,
Анчах килчĕ çĕнтерӳ:
Днепр шывĕ тепĕр хут
Ĕçе кӳлĕнчĕ хĕрӳ,
Ялтăртатрĕ çĕнĕ вут.
Çултан-çул та кунран-кун
Пархатарлă ячĕ ун.
Днепр шывĕ хĕрринче,
Вата Киев хулинче
Русь патшалăх чи малтан
Чăмăртаннă авалтан.
Днепр хумĕ халиччен
Халаплать кобзарь çинчен.
Çав кобзарь Шевченко-мĕн,
Украина сăвăçи;
Вăл кĕрешнĕ ирĕкшĕн,
Пулнă тăвăл йыхравçи.
Тĕнчери пур йăхсене
Тан курса юрланă вăл,
«Йывăр пусмăр сăнчăрне
Тат!» — тесе хăварнă вăл.

Украин туссем пире —
Тăван халăх ĕмĕре,
Ма тесен украинсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

## XI

Украинăпа танах
Чап, хисеп молдавана!
Сăртлă-туллă сĕм вăрман:
Вĕрене те граб, юман.
Фашистсен хĕскĕчинче,
Улпутсен ани çинче
Асапланнă ĕмĕрне,
Шав ылханнă шăпине.
Молдаван ачисене
Фашистсем шкула яман,
Ырлăх килчĕ вĕсене
Пирĕн ирĕк саккунран.
Çавăнпа, нимрен малтан,
Ачасем туска çине
Халь çыраççĕ пурпалан
Ак мĕнле сăмахсене:
«Тав хута кĕрекене —
Аслă Ленин партине!»

Ырă куртăр молдаван!
Молдаван — пире тăван,
Ма тесен молдавансем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

## XII

«Украина — ылтăнăм,
Белорусси — тăванăм!» —
Тетчĕç пирĕн салтаксем
Вăрçă умĕн, вăрçă чух.
Çав çĕре эп, ачасем,
Нихăçан та манас çук.
Иртрĕм вăрçă хушнипе
Белорус çĕршывĕпе.
Куртăм кăмăллă, йăваш,
Кăвак куçлă çынсене.
Çĕрĕнче ӳсет ыраш,
Йĕтĕн-кантăр çитĕнет.
Вырăн-вырăн лачака
Талккăшпех иккен вĕсен.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ мăйăрсем

Астивет кунти этем,
Астивет те хатĕрлет
Аякри туссем валли.
Тăвайккийĕсем тулли
Путек-сурăх кĕр кĕрлет.
Тутă тулă та урпа
Йышлă тырă-пулăран,
Тĕрлĕ пулă тытупа
Палăрать çав молдаван:
Савăт-савăтăн тaçтах
Вăл консервă ăсатать.
Çырла-çимĕç ĕрчетсе
Кун курать кунти хресчен;
Виноград çырли хĕссе
Юхтарать пылак сĕткен.
Çав пылак сĕткен йӳçсен
Пичĕки-пичĕкипе
Хаклă-хаклă эрехсем
Вăл сĕрет кĕркуннепе.
Пуйтарать патшалăха,
Кĕрекелĕх те юлать:
Пĕри кин кĕртме пăхать,
Тепри хĕр парать туйла.
Çĕршывне кура унта
Хăй манерлĕ сăвăсем,
Хăй манерлĕ ташă та
Тапранать молдавансен.
Халăхпа пĕрле çапла
Савăнать ĕçри ĕçчен.
Анчах ку ăраскала
Яланах пĕлмен иккен.
Нумаях та мар капла
Пурнăç пулнă урăхла:
Чухăн-чухăн молдаван
Çĕр те, çăкăр та курман;
«Бульба» теççĕ паранка
Белорус этемĕсем.
Кушăхтарнă тăрăшсах
Çын çав путлăх вырăна,
Бульбăпа тăрантарса
Шав ĕрчетнĕ вăл сысна.
Эс ак шăл щетки илен,
Ăна тунă-çке шăртран.

Белоруссире иккен
Чи ăста шăрт суртлакан.
Шав кăларнă торф тата
Ĕçченсем лачакаран,
Çырмалли таса хута
Хатĕрленĕ йывăçран.
Йывăç йышлă: хăма çур,
Чĕр пӳрт çилĕх чĕренче.
Шăрпăк хапрăкĕ те пур
Белорусси çĕрĕнче.
Чиперех çапла сынсем
Пурнăç тунă-мĕн. Анчах
Белоруссие пайтах
Шар кăтартрĕç фашистсем.
Куртăм эп ялĕсене:
Кăмака мăрйисем çеç
Хуп-хура ларатчĕçĕ
Юнаса тăшмансене.
Фашистсем çунтарнăран
Белорус ĕç çыннисем
Чăвашсен çĕрĕ таран
Тухнăччĕ ун чух çитсе.
Халь пур халăхпа пĕрле
Белорус та хăй килне
Тирпейлерĕ ĕçпеле:
Йăлт тăвать мĕн кирлине,
Пилĕк çуллăх планпала
Утăмлать вăл малалла.

Ыр сунар ăна чунтан:
Белорус — пире тăван,
Ма тесен белоруссем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

**XIII**

Акă Белоруссирен
Неман шывĕ ĕлĕкрен
Литвана юхса кĕрет,
Балти тинĕсне лекет.
Литвинсем çавах та çав
Пĕлеймен савăнăçа:
Пуянсем хĕтĕртнĕрен

Ютшăнатчĕç пирĕнтен.
Ют патшалăх хуçисем
Нимĕç, швед е акăлчан
Пире йытă пек çисе
Пурăнатчĕç çавăнтан.
Юхăнтарнăччĕ литвин
Хăй çĕрне — хуçа мартан:
Цемент, кирпĕч те пулин
Кўрсе тăнă вăл ютран.
Чи паха ана-çаран
Пулнă йăлт кулаксенче.
Вăтам-чухăн парăмран
Тухайман хăй виличчен.
Сăхнă çех ĕç сыннине
Банксемпе лавккаçăсем.
Час-часах пирĕн енне
Пăхкаланă литвинсем.
Халĕ ирĕк халăхсен
Ирĕк йышĕнче вĕсем
Советла йĕркепелен
Пурăнаççĕ çĕкленсе.
Ĕмĕт çитрĕ литвинсен,
Анчах нимĕç ун чухне
Çитсе тапăнчĕ хиврен
Вĕсен çамрăк телейне.
Ирĕк пурнăç тутине
Туйнă çын пур çиллипе
Сирчĕ нимĕç пусмăрне
Тусĕсем пулăшнипе.
Сывлăш çавăрчĕ Литва,
Ешерет вăл тырăпа.
Бомба алтнă çĕршыва
Тикĕслет ыраш, урпа,
Ăçта кирлĕ РТС,
Пулăшу парать машин;
«Совхозсем те ĕрчетес!» —
Тет совет ĕмĕтлĕ çын.
Немăн шывĕн хумĕпе
Гидростанцисем туса,
Ĕç-хĕлне çăмăллатса
Вăл ĕçлесшĕн Улăп пек.
Сахăр, супăнь, сĕт, юр-вар,
Цемент, хут, сăран, резин...

«Пурте пулĕ, ютшăн мар,
Хамăршăн!» — тет халь литвин.

Сывă тăр, Литва, ялан!
Литвинсем — пире тăван,
Ма тесессĕн литвинсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

**XIV**

Балти тинĕс хĕрринче
Тепĕр халăх пурăнать.
Белорусси çĕрĕнчен
Тепĕр шыв унта тухать.
Хĕвел анăçри Двина
Тетпĕр эпĕр çав шыва.
Латышсем Даугава
Теççĕ латышла ăна.
Латви! Пултăм эп унта
Хĕрĕх çиччĕмĕш çулта.
Уçă кăмăллă, аван,
Вашаватлă этемсем.
Тахçанах вырăспалан
Хурăнташлă-мĕн вĕсем.
Ик çĕр çул Раççейпеле
Туслă-варлă пурăннă;
Хăналашнă та пĕрле,
Сутă тунă, пулăшнă.
Анчах нимĕç, акăлчан
Раççее шав курайман.
Çав мурсем хĕтĕртнипе,
Пуянсем хистенипе
Латышсем те вырăсран
Пĕрре татăлнă кайран.
Капитал çĕршывĕпе
Совет çĕрĕ хушшине
Тăрса юлнă кайăк пек
Çав çĕршыв-мĕн ун чухне.
Лешсем туртнă лерелле,
Халăх пăхнă ку енне:
Хăть хăрат, хăть элекле —
Пирĕн чăнлăх курăннă.
Ак хайхи, литвинсем пек,

Латышсем те çав çулах
Пулса тăчĕç пирĕнпе,
Пурнăç кайрĕ урăхла.
«Янтарь Латви» теекен
Лĕп кăна паха çĕрне
Ĕмĕрне курми хитрен
Курчĕ халăх ун чухне.
Шухăшларĕç фашистсем
Тавăрма ĕлĕкхине:
Ватрĕç, çĕмĕрчĕç вĕсем
Латышсен килĕсене.
Хăваларĕç пинĕпе
Латвирен лаша-ĕне.
Чĕлхипе-çăварĕпех
Сăнчăрларĕç сынсене:
Калаçтарчĕç нимĕçле,
Латышла эс ан пупле!
Анчах эпир фашиста
Пуç тайса кĕтмерĕмĕр:
«Йытă вилĕмĕ йытта,
Тĕп пул эсĕ!» — терĕмĕр,
Тытрăмăр та çухаран
Çавăртăмăр çапрăмăр,
Вăл тăмашкăн хăтлансан —
Кирлĕ çĕртен тапрăмăр.
Асăнтартăмăр ăна —
Ĕмĕрхи çав тăшмана.
Янтарь Латви халь ялтрать:
Пахчисенĕн, тинĕсĕн
Пĕр тĕс халĕ ытларах —
Курăнаççĕ симĕсĕн.
Симĕс, ешĕл, ешеркке!
Çĕнĕ пурнăç, çĕн йĕрке.
Балти тинĕс хĕрринче,
Латышсен курортĕнче
Самăр-самăр буржуй мар —
Хамăр евĕр этемех.
Юсанар-ха, вăй хушар
Ĕçченреххĕн ĕçлеме.
Торф, вăрман пире кĕтет,
Электромашин асра;
Радио, велосипед
Савăтне юсас часрах;

Вакунсем тăвас, карап
Тумалли ĕçе майлас.
Пулă, сахăр ытларах,
Ĕлкĕртес фарфор, фаянс...

Пуй эс, Латви, паттăрлан!
Латышсем — пире тăван,
Ма тесессĕн латышсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

## XV

Балтин виççĕмĕш йăхĕ —
Вăл Эстони халăхĕ.
Халь те, ĕлĕк те, ялан
Юрлама юратакан
Эстонсем кунта вара —
Нарва ятлă шыв тавра.
Тырă-пулă та ӳсет
Çакăнти çĕр çыннисен;
Аш та йышлă, сиплĕ сĕт
Антараççĕ ĕнисем.
Чăкăт-çу туса кунта
Çĕкленет ĕçчен хресчен.
Фосфорит та, сланец та
Тупăнать çĕр айĕнчен.
Сланецран асфальт, бензин,
Лак тăвать вĕреннĕ çын,
Сланецран вăл халь тата
Газ тăвасшăн малалла.
Халь çав газ Ленинграда
Çитрĕ те пăрăхпала.
Газ яшка та пĕçерет,
Газ вăл чей те вĕретет.
Чыс, тирпейлĕх, перекет —
Ак мĕне вăл пĕлтерет.
Пур вăрман та çав çынсен,
Тупăш пысăк ĕçлесен.
Тинĕсе, шыва пула
Пурте хăнăхнă пулла.
Эстонсен кунтан пуçне
Пур тата хăймайлăхĕ:
Сакăр çĕр утрав çине

Сапаланнă халăхĕ.
Сапаланнă та пулин
Пĕр чунпа вăл пурăнать;
Ирĕк кăкăррăн, туллин
Çĕнĕ юрă вăл юрлать.
Латвипе Литва пекех
Çак çĕршывăн çамрăк чун.
Вăл пĕр евĕр инкекех
Тӳснĕ вăрçă пынă чух.
Пинĕн-пинĕн эстонсем
Курнă хĕн концлагерьте,
Пăшăхра пăчланнăçем
Хытă шаннă ĕмĕте.
Çутă ĕмĕт Мускавран
Кремль çăлтăрĕ пулса
Пур йăхсемшĕн те пĕр тан
Çуннă ĕмĕр манмасса.

Хура кунĕ хыçала
Юлтăр пирĕн çĕршывсен.
Ырлăхпа телей алла
Кĕрсе тăтăр кунсерен.
Янăратăр юрă ян!
Эстонсем — пире тăван,
Ма тесессĕн эстонсем —
Совет çĕрĕн çыннисем.

**XVI**

Ак çапла вун пилĕк çĕр
Пулчĕ танлă, пулчĕ пĕр.
Çав вун пилĕк çĕршывран
Чи вăйли сĕм авалтан,
Халиччен те, ĕмĕрех —
Вырăс çĕрĕ тĕнчере.
Пуринчен те пысăкрах
Тăршшĕпе-урлăшĕпе.
Тинĕсрен те тарăнрах
Ĕмĕрхи шухăшĕпе;
Тусенчен те чăнкăрах
Тӳрĕ паттăрлăхĕпе,
Хурçăран чăтăмлăрах
Халăх харсăрлăхĕпе;

Тăвăлран та хивререх
Çилленсессĕн çиллипе;
Хĕвелтен те хĕмлĕрех
Юратсассăн чĕрипе —
Вырăс çĕрĕ тĕнчипех
Ялкăшса, çиçсе тăрать;
Çĕнĕ Мускав çутипе
Тĕнчене çул кăтартать.
Вырăс çĕрĕн вырăнĕ
Хăш картта-ши çырăнĕ?
Тинĕсрен те тинĕсе
Халь выртать вăл ейĕлсе.
Курăр: Калининградран
Лăпкă океан таран,
Франц-Иосиф çĕрĕнчен
Хура тинĕс хĕрриччен —
Аслă вырăс халăхĕн
Астăван аваллăхĕ,
Паянхи пуянлăхĕ,
Çуталан малашлăхĕ.
Мĕн çук вырăс çĕрĕнче?
Кам пĕлмест-ши ун çинчен?
Çĕпĕр сĕм вăрманĕсем,
Хаклă тирлĕ кайăксем,
Ырă-ырă пуллисем,
Ытарма çук хулисем —
Киввисем те çĕннисем,
Кивĕрен çĕнелнисем:
Горький, Новгород та Псков,
Киров, Вологда, Ростов,
Парăнми вăй Ленинград,
Парăнми вăй Сталинград;
Пенза, Кемерово, Орск,
Урал-ту чĕри — Свердловск,
Яш хула Магнитогорск.
Яшраххи пур — Комсомольск...
Пур хулашăн пуç хула
Авалтан Мускав пулать.
Ĕмĕр-ĕмĕр мухтава
Тивĕç сутă Мускава
Пур чĕлхеллĕ халăх та
Аслăлать, савать, мухтать.
Сакăр ĕмĕр çĕр çинче

Пурăнать Мускав хули.
Нихăçан ĕмĕрĕнче
Вăл пулман тăшман кулли.
Хан тавраш та хапсăннă —
Мускава хур тăвайман,
Пан тавраш та тапăннă —
Мускава пусарайман.
Француз килнĕ — французa
Мускав пулнă серепе.
Гитлер килчĕ каппайса —
Намăс курчĕ тĕнчипе:
Кĕреймерĕ Мускава,
Хăй пуçне çăтрĕ çăва.
Ĕмĕртен Мускав пире
Хăй тавра пĕрлештерет.
Аслă Ленин пилĕпе
Ырăссен паха хули —
Пуç хула пур çĕрĕпех,
Пур йăхсемшĕн куç тулли.
Ĕç тĕнчин хӳтти — Мускав,
Яланах ун пĕр ялав,
Тĕттĕм каç е çутă ир —
Курăнать вăл çынсене:
«Танлăх, ирĕклĕх те мир!» —
Тесе çырнă ун çине.
Кам çук вăйлă ырăссен?
Хĕç витмен çар пуçĕсем —
Александр Невскирен
Чапаева çитиччен.
Аслă кĕнекеçĕсем,
Çĕре çĕнетекенсем —
Ломоносов генирен
Мичурина çитиччен.
Таврана янратакан
Композиторсем кунтан:
Глинкăпа Чайковские
Эс итлетĕн телее.
Тĕнчене тĕлĕнтерен
Артистсем ырăссенчен:
Кам пĕлмест Шаляпина,
Станиславские кăна?
Чап кӳрен çыравçăсем,
Халăха çĕклекенсем:

Пушкинран, Белинскирен,
Толстойран та Горькирен —
Маяковский таранччен.
Пур хăватлă ăс тӳпи,
Пур малашлăхăн шăпи —
Тĕнчене çĕнетекен,
Партие ӳстерекен
Ленин та йăхĕпеле
Вырăс халăх ывăлех.
Тĕрлĕ халăх хушшинче
Вырăс — пирĕншĕн пичче;
Эпĕр — пĕчĕк халăхсем —
Пурте унăн шăллĕсем.
Ма тесессĕн вырăс — Русь —
Турĕ аслă пĕр Союз,
Ма тесессĕн пĕр çĕре
Пĕрлештерчĕ вăл пире,
Хăйĕн аслă çĕрĕнче
Çирĕплетрĕ çĕн тĕнче,
Çĕн тĕнче те тан тĕнче.
Пур йăха тăван тĕнче.
Унăн ячĕ вырăсла,
Тутарла е чăвашла,
Мăкшăлла е марилле —
Кирек хăш чĕлхепеле
С о ц и а л и з м пулать.
Хамăр тунă çав тĕнче —
Улăп пек çĕр варринче.
Пилĕк çуллăх плансемпе
Хывнă никĕсĕ халь ун —
Хурçă, тимĕр те чугун.
Çĕн тĕнчешĕн кунран-кун
Хыттăн сасăланă пек —
Темĕн çӳллĕш мăрьесем
Кармашаççĕ пĕлĕте.
Чи маттур ĕçлекенсем,
Ăстасем пирĕн çĕрте:
Пĕтĕм шухăш-ĕмĕтне
Хытарса, чăмăртаса,
Вăрçăри пек кар тăрса
Кулленхи ĕç тухăçне
Ӳстересшĕн халь вĕсем
Тăрăшаççĕ тимлесе.

Çын «хура» ĕçре ĕнер,
Паян кун вăл — инженер,
Çĕн ăслай та çĕн меслет
Шыраса тупма пĕлет:
Йыш ĕçне çăмăллатать,
Тупăш та нумай паратъ.
Çуркунне кашни çулах
Çĕнĕ савăнăç пулатъ:
Ленин премине парса,
Хаçата кĕртсе ăнне
Пур çĕршыв та харăсах
Тав тăвать çав ĕçчене.
Шахтерсем шахта анса
Кăлараççĕ кăмрăкне;
Туçăсем тăва чавса
Хатĕрлеççĕ рудине;
Домнăсем çав рударан
Юхтараççĕ чугунне,
Мартенсем çав чугунран
Шăратаççĕ хурçине.
Тимĕр-тăмăр çул тытать
Тĕрлĕ-тĕрлĕ савăта;
Ăстасем патне çитсен
Вăл тем те пулать иккен:
Пăравусĕ чашлатса
Вакунсем ертсе тухать;
Силлесе те ташлатса
Чугун çул тăрăх чупать.
Тракторсем, комбайнсем
Кĕр кĕрлеççĕ уй-хирте.
«Тав сире, хуларисем!» —
Тет колхозник, хĕпĕртет.
Чи çӳле, чи аякка
Вĕçекен самолетсем;
Йăлтăр-ялтăр, яп-яка
Çĕнĕ автомобильсем:
Пăхсан куç шарса каять,
Тĕрлĕ марка, тĕрлĕ ят.
Анчах халĕ пур ятне
Санăн савăннă чĕрӳ
Пуçтаратъ пĕр ят патне:
Вăл — Победа, Ç ĕ н т е р ӳ.
Çĕнтерӳ! Чи илемли

Пур ятран та вăл пире;
Кисренми, сиккеленми
Шанчăклă хурал мире.
Пур çĕршывăн сăнĕ пек
Курăнать халь çав сăмах,
Аслă парти ячĕпе
Юнашар вăл яланах.
Ирĕк халăх пуйнăçем
Ырăланĕç пурнăçсем:
Ачасен, пысăккисен,
Ваттисен, вăйпиттисен
Пурте пулĕ пулмалли,
Çавăнпа çынсен алли
Ывăнма пĕлмест иккен,
Çавăнпа эпир ĕçчен.
Çав куна ĕненнипе
Йывăрри те çăмăл пек.
Пирĕн пек пуян ун чух
Тĕнчере те пулас çук.
Çакăнтах, çак çĕршывра,
Эпир кайăпăр вара
Маларан та малалла
Коммунизм ятпала.
Çав куна çитмешкĕн эп
Хам та-ха ĕмĕтленеп.
Çак тăнпа, çак пуçпалах
Сирĕнпе пĕрле çапла
Юрлăп тетĕп ун чухне
Коммунизм юррине.

1948—1956

# ĂНЛАНТАРУСЕМ

Чăваш халăх сăвăçи Петр Петрович Хусанкай (1907—1970) «Çырнисен пуххин» тăваттăмĕш кĕнекине эпикăллă анлă поэмăсем, «Аптраман тавраш» сăвăллă роман тата ача-пăча юмахĕсем кĕнĕ. Вăхăчĕ енчен «Çĕрйĕркелӳ» малтанхи поэма шутланать. Ăна 1930 çулта çырма пуçланă. Ун хыççăн — «Магнитту», вара — вăрçăччен çырнă юмахсем тата вăрçă вăхăтĕнче çуралнă «Таня» поэма. «Аптраман тавраш» романпа поэт вăрах ĕçленĕ, вăрçăччченех шухăшласа хунă та 1941 çулта вăй хурса тăрăшма пуçланă. 1946 çулта поэма ячĕпе пичетленнĕ. 1954 çулта якатса пĕтернĕ, пичете сĕннĕ. 1957 çулта уйрăм кĕнеке тухнă.

Тулли сюжетлă пысăк хайлавсемпе чăваш поэзине хăюллăн пуянлатса Петĕр Хусанкай хăй эпикăлла шухăшлама пултарнине, поэзин пур тĕсĕсене те алла çавăрса илнине кăтартса панă.

Тăваттăмĕш кĕнекери кашни хайлавах чăваш сăмахлăхĕн историйĕнче ырăпа палăрса тăрать. Вĕсене пурне те вăтам тата аслă шкулсен программисене кĕртнĕ, темиçе сыпăкне ачасем пăхмасăр калама вĕренеççĕ. Вăхăт хăвăрт иртет, сисĕнмесĕрех улшăнса пырать. Апла пулсан та П.П.Хусанкай эпики, çепĕç е çиçĕм сăввисем пекех, кивелмест-ха. Çĕршывпа халăх шăпине, ăс-хакăл историне вĕсем питĕ çирĕп кĕрсе юлчĕç. Мĕншĕн? Шухăшпа илем пуянлăхĕ пуррипе, сăмахĕсен хăвачĕпе, вăхăт сăнарĕпе. Самана тапса тăрать вĕсенче. Саманипе пĕрле этемлĕхĕн нихçан кивелмен ĕмĕчĕсемпе ăс-тăнĕ кĕрлесе пырать. Ĕçĕсемпе пĕрле çыннисем çĕкленсе тăраççĕ. Хурлăхĕ, нуши, асапĕ тем чухлех, анчах ырă ĕмĕтпе пĕрлешнĕ халăх аптрамасть, кашни пĕрне хăй ретĕнче тытса такăнса ӳкме памасть. Каярахпа ку пулăма ĕмĕрсем ăмсанса пăхĕç, тĕпчевçĕсем тĕлĕнсе тишкерĕç. Чăваш çынни вара хăйĕн иртнĕ историне ӳкерчĕкре курнă пек палласа вуласа пурăнĕ.

Петĕр Хусанкайăн сăвăллă эпики пирки халиччен пайтах çырнă. Халĕ вара, пĕтĕм еткерĕ кĕнекеленсе тухнă хыççăн, юри тепре тарăн тишкерсе хаклама вăхăт çитрĕ.

Вăхăт анлăшĕ нумай-нумай япала, пулăм, ăсталăх çине пачах урăх куççемпе пăхма, урăх инçетлĕхрен курса хаклама май парать. Ку ăнлантарусенче кашни хайлава хак пама вырăн çук,

çапах та пĕтĕмлетсе хăварас килет: Петĕр Хусанкайăн эпикăллă поэмисемпе сăвăллă романĕ — чăваш сăмахлăхĕн ылтăн пурлăхĕ, тĕнче литератури умĕнче чыса хăпартса тăракан ăсталăхĕ, хуралман ахах.

Ĕмĕрсем иртнĕçемĕн этемлĕхĕн илемлĕх туйăмĕсем ылмашăнĕç, XX ĕмĕрте пулса иртнисем тахçан авал тĕлленнĕ юмаххалап пек пулса юлĕç. Пĕрех те «Магнитту», «Таня», «Тăван çĕршыв» поэмăсем литературăра гранит пек çирĕп упранĕç.

## ЭПИКĂЛЛĂ ПОЭМĂСЕМ

### ÇĔРЙĔРКЕЛŸ

Поэма малтанхи хут уйрăм кĕнекен Шупашкарта 1932 çулта пичетленнĕ. Хăйĕн «Суйласа илнисем» кĕнекине хатĕрленĕ чухне сăвăç ăна тӳрлетнĕ, якатнă тата «маяковскилле» картсенчен хăтарнă.

Халĕ пĕр катрен (тăватă йĕркелĕх) шутланакан çавра малтанхи кĕнекере çапла курăнать:

Пуçлатăп
            çĕрйĕркелӳ
                        калавĕ.
Пĕр
    акрономпа
        мишавай кăна
                нихăçан та
                        касса
                            чикĕлеймĕ ăна.

«Картлашкасенчен» хăтарнă хыççăн 932 йĕркерен 200 йĕрке тăрса юлнă. «Çĕрйĕркелӳ» поэма кĕнеки вулавăшсенче пуррине шута илсе «Çырнисен пуххине» автор тӳрлетнĕ, анчах халиччен пичетленмен тĕслĕхне (редакцине) кĕртме йышăннă. Тӳрлетнĕ ал çырăвĕ поэтăн килти архивĕнче тата Чăваш таврапĕлӳçисен пĕрлĕхĕнче упранать.

Сăмахсене ăнлантарни:

*Мишавай* — çĕр виçевçĕ, çĕр уйăракан.
*Тырпурки* — тырă акнă, çапнă, авăртнă чухне усă куракан савăт, такана.
*Фордзон лаши, ăйăрĕ* — Америкăри Д.Фордзон компанийĕ кăларакан пĕчĕк тракторсем.
*Хура кăтат* — килте тĕртнĕ хаклă йышши пир-авăр.
*Тĕктăмалăх* — ытахальтен, ахалех.
*Ситрелчĕк* — сӳтĕлчĕк, сапаланчăк, арăш-пирĕш.
*Буслай Ваçки* — Василий Буслаев, вырăс халăх сăмахлăхĕнчи хастар та ирĕклĕ паттăр.
*Монокль* — хăрах кантăклă куçлăх; б и н о к л ь — икĕ кантăклă куçлăх.

**МАГНИТТУ**

Поэмăна Челепи (Челябинск) тăрăхĕнче аслă ĕçсем вĕресе тăнă вăхăтра вырăна кайса çырнă. Пысăк хайлавăн «Пĕве» ятлă сыпăкĕ Мускавра тухакан «Коммунар» хаçатра 1933 çулхи çĕртмен 15-мĕшĕнче çапăннă. Çав çулах «Магнитту» кĕнеке Патшалăх илемлĕ литература издательствинче (М.-Л., 1933) пичетленнĕ.

Кĕнеке вĕçĕнче вырăсла резюме панă. Унта хайлав тĕшшине палăртнă: «Поэма — широкое полотно, отражающее громадную работу, проделанную многотысячной армией строителей Магнитки в период сооружения гиганта — и не менее сложную борьбу, которую ведут доменщики Магнитогорска за чугун и металл. Инженеры, рабочие, техники, комсомольцы, крестьяне, впервые пришедшие на огромную стройку из глухих деревень, — ударники и вредители, иностранцы и степные кочевники — одним словом, все огромное человеческое море, которое переливалось на площадке строительства, — таков типаж поэмы — единственного произведения чувашской литературы, посвященного производственным темам и являющегося по своим чисто литературным достоинствам выдающимся событием». Каярахпа «Тиев каять Магниттуне...» тата «Сăрт-ту ĕçченĕсен юрри» сыпăксем «Чăваш илемлĕ литературин» антологине кĕнĕ, «Поэмăсем» (1960), «Суйласа илнисем» (1970, 2) тата ытти кĕнекесенче (вăл шутра шкул вулантăкĕсенче те) тухнă.

«Çырнисен пуххине» «Суйласа илнисен» 2-мĕш кĕнекинчен кĕртнĕ, ăна автор хăй тӳрлетнĕ. Малтанхи кăларăм «маяковскилле» картлашкасенчен тăнă. Сăмахсене е пуплевсене мĕнле тӳрлетнине танлаштарса икĕ редакцин тĕслĕхĕсене (йĕрке паллисене малта кăтартнă) ятарласах пăхса тухăпăр.

4-мĕш йĕрке.

Ăçталли, хăшĕ чи татăклăн
пирĕн *ĕмĕр* сăнне çырĕ?

*Кун-çул* тесе тӳрлетнĕ.

Хăшĕ
самана тинĕсĕнчен,
хăш карап
юлашки мил таран
ишсе тухĕ
ванмасăр?

*Тӳрлетнĕ тĕслĕхĕ:*

Шавлан, хумханан тинĕсрен хăш карап
Патвар та хастар ишсе тухĕ ванмасăр?

12. Хутма нехт пĕтсен
пирĕнпе карап иштĕр!

15—16. Икĕ йĕрке,
икĕ çтиль
ăмăртать:

искусствă —
карап
е илемлĕ питкуç
вăл?

20. Макнитту çинчен
литераттур çеç.

23—24. ...илейрĕ-ши вăл
çавăрса
тĕп тема —
сисĕнет-ши унта
мĕльюнсен вăй-халĕ?

25—28. Атя
сăнава,
сверхутарлă çарăм,
тăшманăн тшаспанчĕ
урса чăнкăртатать хăть.
Марш,
парттисан рифмăсем,
тăватшарăн!

Кăкра малалла!..

## Атач атакĕ

2—3. сивлек тунтăр тунхахĕсенчен
тапранать те
пăлан çурăмĕ пек
тăсăлать
хăмăр йĕр.

7—8. ...ирĕлет
Аçипе Европа уйăран
ту йăран.

9—12. Урал!
Кеолоки калать:
палеосой тет,
çавăн чух
хытса ларнă имĕш
çак сăртсем
тĕнчен икĕ пайне те
пĕр валĕллĕ сăйĕпе
Чысласшăн
чикке...

*Палеозой* — чул ĕмĕрĕн малтанхи тапхăрĕ.

14. Ылттăн,
шурылттăн,
пăхăр,
кĕмĕл...

*Шур ылтăн* — ылтăнран хаклăрах металл (выр. платина).
*Йĕс* — сарă пăхăр (выр. латунь).

15. *Гранит, диорит, диабаз, мрамор, яшма* — хаклă йышши чулсем.

18—20. Хурăн,
кетăр...
мăйăр шĕкĕлчет пакша.
Ача чухнехи
шкул карттинĕ, —
пыр та
ларт тапă часрах,
авăрла пăшал.

25—28. ...вăрçă-харçă.
Тамăрлан куçнă имĕш
уксахласа
...çутарчĕ
пек
Йармак,
Кăчăм хан
лÿшкенсе тухать аса.

26. *Уксах Тимĕрсем* — Тамерлан, монголсен çар пуçĕ.
27. *Рылеев К.Ф.* (1795—1826) — вырăс поэчĕ, декабрист.
28. *Ермак Тимофеевич* (çуралнă çулĕ паллă мар—1585) — казаксен атаманĕ. Вăл казаксен ушкăнĕпе 1581—1585 çулсенче Çĕпĕрĕн хĕвел анăç енне кайса Кучум хана çапса аркатнă. Кашлăк ятлă тĕп хулине йышăннă. Вырăс халăхĕ Ермака ырăпа асăнать, мухтаса юрлать.
29. *Пугачев Е.И.* (1742 ç. патнелле — 1775) — 1773—1775 çулсенче Уралпа Атăл çинчи хресчен вăрçине ертсе пынă «патша».

35. Атьăр
Магнитту çине...
37. Виç, компăс, пульса...
39—44. Тахçан
çĕр чăмăрĕ
пĕр тăтăш вулккан пек
шĕввĕн пăтранса
кусса çаврăннă тапхăр
мĕльярт çул ĕлĕк...
Çĕр
тин пиçсе тухнă çăкăр пек вĕри
кăчăр кăна хытнă хупăлă чух...
47—49. Чалт сирпĕннĕ те
тимĕр хумĕ,
пĕтĕм
килес революцисене хаярлан...
тăвата тĕм:
52. ...нумайччен тĕшленнĕ
пăра шăлĕ кĕтсе.
54. ...ăна
кирлĕрех
хастар йĕкĕтсем.

60. ...сайралнă çарне йăпатса чакнă чух...
62. Тепĕр майлă хĕç
хыврĕ
вун саккăрмĕш çул.
Плььуххĕр — Каширĕнăн
паттăр утречĕ...

63. *Блюхер В.К.* (1890—1938) — граждан вăрçи паттăрĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ.

*Каширин Н.Д* (1888—1938 ) — иккĕмĕш рангри командарм, паллă çар пуçĕ.

65. Пиншер çухрăма
чикĕ урлă хӳтерчĕ
67—70. Алтнă Пашков...
алтнă акционерлă ВАГАО.
Анчах
Аттач
парăнман çăмăл аллăн,
таптарнă калла
мул тăсан тукмака вăл.

*Пашков А.И.* (1900— ) — экономист, СССР Ăслăлăх Академийĕн член-корреспонденчĕ.

71—74. Ултçĕр вунултă меттăр пулнă,
ултçĕр вунулттă
паян та.
Никĕсĕнченех
чукунлă,
кат та
шăрат —
янтă.
81—82. Унтан
Заварицкий
каллех:
«ма унăн
сахал?
Икçĕр çитмĕл пиллĕк
хăюллăн».
Ак вăтăрмĕш çул...
«Поэт калашле
эп кеолăк мар.
Ман алла
Сăмах савăтне
шанса панă республĕк.
Анчах
эп сире каласан:
малалла
милйон тонна çитĕ
тесен —
тĕрĕс пулĕ».

Ку йĕркесем 1933 çулхи кăларăмра кăна тĕл пулаççĕ.

87—90. Эп
шантарап:
польшевисăмăн штурăмĕ,
пирĕн тĕнче сăн-сăпатне улăштарас ĕç
çут çанталăк енчен
çитменлĕх курмĕ.
Вăхăт шăлтăрмисем
пире май...
92—93. Килес
пилĕкçуллăхшăн
парĕ сас.
Амерĕксенчен...

*Гольфстрим* — Атлантика çурçĕр пайĕнчи ăшă юхăм.

*Сан-Луис* — Бразилин çурçĕр-хĕвел тухăç пайĕнчи хула.

*Дирборн, Детройт* — СШАн çурçĕр пайĕнчи хуласем, унта автомобиль промышленноçĕ вăйлă аталаннă.

*Генри Форд* (1863—1947) — чи паллă монополистсенчен пĕри (автомобиль промышленноçĕн концернне ертсе пынă).

103—104. пăшалшăн та хĕçшĕн,
тупăшăн, йĕтрешĕн.
...Эп историйе
ырă ĕçпе кĕресшĕн.
107—109. Ĕмĕр тăршшĕнче
пирĕнпе пĕрле
тарăхнăшăн...
Таса унтервут пулар...

117. *Эльзас-Лотарингi* — тимĕр-тăмăрпа пуян çĕр, кунта нимĕçсем 1871—1918 çулсенче хуçаланнă, 1945 çулта территорие яланлăхах Франци аллине куçарнă.

*Лапланди* — ку территорие Финлянди, Швеци, Норвеги тата Раççейĕн чиккине лекекен «Кольский» çурутравĕн хĕвеланăç пайĕ, Скандинави çурутравĕн çурçĕр пайĕ кĕрет.

119. Кĕскен:
вĕсен криçĕсĕ
йарăшсăр йăлттарин...
121—124. Эпир тĕлĕнмĕпĕр
çитес çулсем
пирĕн ерттеллĕ
юнкштурăмлă турис
пĕр-пĕр самолет чиккинче çӳресе
тăп чарăнсан...
128—131. Эпир
тĕлĕнместпĕр ĕнтĕ халĕ
Курск аномалийĕнчен,
Кварччельтен.
Тата ик-виç çул тĕпчевĕ
мĕн калĕ?..

*Курск аномалийĕ* — СССРти чи пысăк тимĕр бассейнсенчен пĕри пулнă. Курск, Белгород тата Орел облаçĕсене кĕрет.

*Ткварчели* — Абхазири хула, йывăр промышленноçăн центрĕ. Кунта çĕр кăмрăкĕ кăлараççĕ.

136. Тăвар-ха
тăвас пеккине,
138—144. А халлĕхе,
темă фапăл туптарнă май,
йышăн конкретлă рутник,
алт та чав.
Пĕтĕм Союсран сăрхăнан
утарлă вăй...
А халлĕхе иншенер
Тмитриев
пире,
Талвирпе иксĕмĕре...

*Талвир А.Ф.* (1909—1979) чăвашсен паллă çыравçи, повеçсемпе романсен авторĕ.

147—150. Технĕк реккорчĕ.
Кайла сайра.
Хурçă,
алмас вĕç
электăр пăран.
Аристронк станĕсем
кранк та кранк хайăраç,
чула хăваллаç
вунпĕршер меттăра.
155—159. Таçтан
калăн —
кнопка пусайрĕç...
çитрĕ кусса...
слонла каçăртса
хурçă хопăтне.
Çитрĕ,
хашăлтатрĕ...
161. пĕшкĕнчĕ,
астиврĕ те...
166. ...вĕçтерчĕ Тумккар
Ай-Тарла çине.
...Торуошшĕр,
Трайлĕр —
вакласçĕ...

*Думкар* — хăй тĕллĕн пушанакан вакунсем.
*Доруошер, Трайлер* — руда ваклакан машинăсем.

172—175. А халлĕхе,
томнăна хутиччен,
Тмитрийĕв иншенер
пире
çакна каласа пĕлтерет
ту çинчен,

çакна
хăй ĕçхĕлĕ çинчен
пĕлтерет...
177. ем-ешĕл куракчĕ,
лăс пек çырла.
(1960 çулхи кĕнекере:
«Ем-ешĕл выртатчĕ, лăс пек çырла»)
Кăркăс кĕрисем...

Поэт «кăркăс», «казах» сăмахсене пĕр тан ылмаштарса каланă. Халь ку сăмахсем икĕ халăх ятне пĕлтереççĕ пулсан, ĕлĕк вара çыравçăсем ку сăмахсемпе пĕр пĕлтерĕш вырăнне усă курнă.

179—180. Швейцари пейсашĕ! —
Ӳкер, сăрла.
Иккĕмĕш сыпăк ĕçчен хĕрĕсем...
186—195. А вăл тĕм
Макнитăн пĕр проччăнĕ çеç,
çитменнине
ют сий тачка —
пушă тăм.
...(калавçă йăтрĕ
кăткăс кăна пĕр кӳмĕркке рута)
...куратра?
Ак çак...
— тимĕр. Утмăл проччӑн вăл кунта.
Çакна
курасшăн марччĕ сийенçĕ,
оппортунисĕ —
пĕр-пĕр Антçелевĕч —
сиенçĕн арманĕ çине
шыв тиетчĕ...
тулмасть план,
кĕлевĕç!..
204. Поппов прикати —
интернационаллă.
207—214. Лессокурски —
реккорт! —
вуникĕ ваконет.
Сакмаров прикати
плана ялан
çĕр хĕрĕх, çĕр аллă проччӑн
тултаратчĕ.
Комсомолец Лоççĕв
Караççенккăпалан,
Кортейĕвпалан —
çĕр вунçичĕ проччӑн.
Слесăр Севасьянăв
вунултшар сехет...
Фетоççейĕв машинça та
картни килĕшет...
216—221. Варăчкĕн —
чи малтанхи утарнĕк.
ватă ĕнтĕ...

Астăвăр, атьсем,
планăр пултăр таса!..
Пăра сахалччĕ...
Пĕлĕм пек пулатчĕ...

225. Аттач çине çакрĕ ярлик:
«Авари!»...

229. ...такки плана чакарма памарĕ

235—237. Выртмасть ту
юлхавлă Раççей кутникĕн.
Лекентăпа витĕннĕ Аттач
çук ĕнтĕ,
пур —
çамрăк,
вĕри
Капакков рутникĕ.

**Сăрт-ту ĕçченĕсен юрри.** 1933, 1935 çулсенче тухнă текстсенче «Сăрт-ту ĕçченĕсен юрри» вырăнне «Сăрт-ту ĕççыннисен юрри» тенĕ.

«Салам, çĕнĕ çĕршывăмăр —
Хастарлă йăх чĕрçи.
Ăçтан тупăпăр-шырăпăр
Тепре кун пек çĕршыв?»

1935 çулта тухнă текстра:

2. «Вĕри алра кайла».

*Кайла* — чул кăлармалли икĕ вĕçĕ те шĕвĕр пуртă.

7—8. ... магнит тăвĕ,
...кĕмĕл магнит.

## Пĕве

2. васкавлă,
хавха,
кукăр-макăр çырма...

5—6. вăл
çиллĕ-тăвăллă
курай шăхăравĕ,
вăл
Альмухаметовăн
лирĕккипе пĕр

8. ...тĕпсĕр авăр.

9. Вăл
манăн юлташ
Хаптраккип Ипрахимăн...

14. ...систиплинлă утарнĕк — дисциплинлă ударник.

17. *Сакăлталлă* — картлă-картлă.

22—23. Марттен,
томнăсем,
коксохимĕ —

мĕнпурĕ
ыйтаççĕ шыв.
30. Волххов, Кура та
улăп Тнеппăр...
31—32. Пĕтĕм çĕршыв шăнăрне...
çĕнĕ —
электăр юн...
35. Çук.
Чĕр хастарлăхпа...
36. Пĕвеç
çтихийлă Раççейе.
37. Пĕвеç
кив сисĕм ĕмĕт-шухăш
пăтранчăк çырмине.
Пĕвеç
39. Пуслай чарусăрлăхпе...

49. *Кăтăрать* — тарăхать, аташать.

50. ...кăпăк кăларать
çăварлăхланă утпа пĕр.
56. Эси
малтан
çитсе
ишĕн...
59. ...ăмăртаççĕ:
— эй, эсĕр...
61—62. Пире
эсĕр
пурпĕрех çитейместĕр —
ăшăнар пăртак
çинчĕк улăм чĕртсе...
63—64. ...пуçсем çаврăнмаççи
сирĕн унта?..
65. ...хăлтă çăрăнмасти?

*Хăлтă* — кăпăш, çемçе.

66. Сурăр...
69—70. «Компрăт, хеноссĕ, товарĕш,
кардаш, иптеш те юлташ» —

*«юлташ»* сăмаха акăлчанла, нимĕçле, вырăсла, тĕрĕкле, тутарла, чăвашла çапла калаççĕ.

71. Вавилон пашни...

Халап çакна пĕлтерет: Авалхи Вавилонра çынсем турă патне пĕлĕте çити башня тума пикеннĕ. Тарăхса кайнă турă башня тăвакансен чĕлхисене пăтраштарса янă та, вара вĕсем пĕр-пĕрне ăнланми пулнă. Çапла майпа, башня туса турă патне çитес ĕмĕт пăчланса ларнă.

Магниттăва та çак шăпа кĕтмест-ши тесе автор юриех, вулакана кăсăклантарас шутпа, «Ку Вавилон пашни мари халь — икĕ пинмĕш çулта?» тесе ыйтать. Çийĕнчех çапла хуравлать:

73. «Çук,
кунта
çур сăмахран ăнланаççĕ;
куçпа,
алăпа
калаçаççĕ çынсем».
76. пурте
илтеç...
77. ...хĕвел шăрăх
80—82. йывăр...
епле пулсан та
чи ыррисен
ăспуç тăрă,
шухăш:
— нăкрах пусам-ха! —
85. Кам курнă
хĕлле
пăр айне
ахаль тумлăн...
88—89. ...пулнă вăл
мăкшă çынни —
лум
пăр айне
ӳкернĕ.
90. ...хуçанним?..
92. тенĕ те вăл —
чăмнă.
94. Шăрпăк
хыптарать пушар,
ан манăр,
96. ...вăл шыва ан кайтăр.
104. А кирлĕ пĕлмешкĕн,
ман шухăшпа.
105. Ак ун патречĕ...
116. ...питсем çунăхнă,
куçа карнă тĕтре.
118. ...çур çăкăр чикнĕ те...
120. ...хыпаланчăк,
тăкăс хула.

*Тăкăс* — тăвăр.

123. Çĕкленĕ вăл исвĕç,
тăм,
алепастăр.
128. Тĕрĕс ал-урашăн.
131. Хыпар:
Уралта
ăсаççĕ ылттăн...
134. Вĕт тутлăланма пултаратăн...
138. «...çесон хупăнсан»
каяс мар малалла?..
140. ...А пĕтнĕ-тĕк пĕтнĕ!
143. Кăрлач шартлами.
— 35° те 40°.

*Кăрлач* — январь.

148. Анчах вĕт
прикатă
утарлă.

151. *Кирка* — катмак.

155. 105,
110,
120,
130 кĕç —
сахал пек проччăн
пултăр 150 хăть.

159. Саттонски прикати —
веçех...

162. ...ку патуша пек...

*Патуш* — тĕп, тупан.

163. *КИМ* — Çамрăксен интернаци пĕрлешевĕ.

164. «Ултă мĕльюн ун килйышĕ халь» — автор кунта çав вăхăтри комсомолецсен йышĕ пирки асăнать.

167. ...хăть ăçта та.

174. ...вăл —
колхоса
хурçă никĕс хурасшăн.

175. Сăнлăхшăн мар
«хурçă».

180. Халь ав вăл
конкретлă ĕçпе
хĕрĕнет.

198. ...хăçан
путĕç
ку çынсем? — тет.

209. ...валют кирпĕçне...

230. ...карланкă тĕпне
урлах.

232. ...пур-ха урăхла тĕнче.

233. Икĕ касак...

237. «...эс куратни хăть?» — тет.

238. ...Салмантан
Хикмет.

238. Куратăп
хăйăр та ĕнĕл, — тет Салманĕ.

*Ĕнĕл* — чул.

241. Ку пулнă
шăпах пĕве сыпăннă самант-мĕн...

242. Тарса ĕлкĕрнĕ шыв...

244. Касак «пĕсмĕлле» касăхать.

246. Тыт, чар ак
тарăн...

253. Саламаликкĕм — сывах-и, чипер çӳреççĕ-и?

254. Пĕве пайрамне...

256. Лĕш
ячĕç ик юланут
чĕлпĕре.
259. ...Салман...
261. Хикмет те утне...
262. ...кусне аллипе сулхăнтса.
266. ...тет Хикмет.
269. ...тесе
кăркăссем
пуçсене сулласçĕ...
271. Ку —
пирĕн аваллăх, сĕмлĕх...
275. Тальянккă сасси илтĕнми...

*Тальянккă* — музыка инструменчĕ.

285. *Серенада* — юратакан хĕре (çынна) халалланă юрă.

290. ...чĕмсĕр ухмах уйăхран?
294. ...чĕ-не-ет
чĕр чĕ-ре..

Ку вариант висĕ çаврара тĕл пулать.

296. ...савни райкома чĕнсен.
298. Курăнаç ман шатрасем.
319. Шырăпăр çĕрĕн те кунĕн...
321. Нихăçан та пирĕн пулмĕ...
326—327. Çăлтăрсем çеç
тăнă хуралла.
Тата
комсомолĕссем
хураллаççĕ
328. сарлака та
тăнлă Урала.

*Тăнлă* — тăмлă.

331. Мăшăр мĕлке...
337—338. — Ме! —
Курок вĕçрĕнет...
Хырăм айăн ан шу
калталла.
341. Кам каларĕ
«вăрçă пирĕн çук»
тесе?
344. Кам
хĕç мар тет
шĕвĕ хурăça?
346. ...тăпра купĕ?

*Купĕ* — кубĕ.

348. Купометтăр —
тăшманшăн тупăк.
351. Çавăтах,
ертсе пыр...

352. ...çĕнĕрен çĕнĕ
çĕнтерĕве...

**Чугунпа чугунçăсем.** 3. *Митта Васлейĕ* (1908—1957) — чăвашсен паллă поэчĕ.

«Хулăн сас» поэмăн малтанхи ячĕ «Çĕр чĕлхи», авторăн 30-мĕш çулсенче çырнă паллăрах произведенийĕ.

5—6. Миçе хутчен,
çав чĕре пек
çăмăллăн
таптăр тесе,
хам чĕрĕ чĕреме
8—9. Эп —
çирĕп те ирĕк,
хавас та кăмăллă
леçрĕм
ун çут анинче çÿреме.
Эп çирĕп...
10. Юнашар
мĕльюн алăллă тĕрек.
11—12. Эп ирĕк,
мĕншĕн тесен
ман талант
тарçă мар...
14. Шăраннă чукун пĕлĕте каран шуçăм
16. ...кăтартать
тÿрĕ шухăш...
17. Эп кăмăллă,
ма тесессĕн...
18—19. Чĕрене
манăн та
ăшăтрĕ чĕрем
хăйне май.
Ăрăскаллă.
20. ...çынпа пĕрле илтнĕшĕн эп
«тăр!» камантă.

25. *Мистер Фребель* — Магнитту стройкине Америкăран ĕçлеме илсе килнĕ инженер.

30. Çаксем-шим
ăс куç умĕнче...
33—34. Урăх унăн хуйхин сăлттавĕ,
урăх инкек...
38—39. Ана
теорем чăтлăхĕ...
Хăйĕн ĕçĕнче...
41—44. Анчах тĕлĕнет вăл:
ма райком çекреттарĕ
пăртак иншенер пулман-ши?
«Мистĕр Фрепĕл!
Сирĕн срукăр

польшевиксемшĕн
вăрăм та вăрах...

46. «...пĕрремĕш томна»
тенĕ вăл райкомра.

47. Фрепĕл хирĕçлемен...

50. Нумаях чухлать-ши томнă мĕнне? —
тенĕ.

51. Тсех пуçлăхĕ курчĕ:
«Мистĕр Фрепĕл!..»

*Тсех* — цех.

54—55. Фрепĕл
кĕскен çеç:
«Аван, — тет, — ол райт».
Монтташ прикатирĕ:
«Прикатă
пачĕ...»

57. Йышăнати мистĕр? —
Ыйтсамăр, тăлмача...»

61—66. *Джек Лондон* (1876—1916) — тĕнчипе паллă çыравçă.

Вăл тĕртрĕ пирус...
Чылайччен пирус савăтне вăл тинкерчĕ:
ку
— чăннипе —
уншăн тунă тавар...
Райкомçăн маххоркă...
райкомçăн ĕçки...

67. Веçех...

71. Вăл
шахмăт хăми çинче пек
курасшăн...

73—74. Унтан,
пур фикур та лартса тухсассăн,
чĕнĕччĕ вăййа вăл
хăть Хенри Форта та...

*Генри Форд* (1863—1947) — пуян монополистсенчен пĕри, автопромышленность концернĕн ертӳçи.

75—77. Ĕç пултăр тирпейлĕ,
тĕплĕ те илемлĕ:
металли сан,
йывăçи —
ку, çиçтере пĕл.
Тата ĕç...

79. «Темппи — темппи! ...
е ĕлкĕреймĕп?»

80—82. Пирус манăнса
ĕмĕнмесĕр кĕлленнĕ.
Пирус хучĕ çинче
пĕчĕкçеççĕ Кремĕл,

пуçра —
Мускав...
Мавсолей...
Ленин...

*Герберт Уэллс* (1866—1946) — акăлчансен паллă çыравçи, ăслăлăхпа ĕссĕм (фантастика) романĕсен ăсти.

84. Сехре Терентейĕ —
тепĕр ен
65—86. Хăçан
вĕсем
çывхарса тĕл пулĕç?
Ыйтăр-ха
мистĕр Фрепĕлтен.
89—90. Сехре Терентейĕ
çамрăк чăваш çеç вĕт,
Фрепĕлĕн...

91. *Гераклит* — пирĕн эрăччен пурăннă паллă философ. Вăл каланă тăрăх, «пурте юхать, пурте улшăнать», «пĕр шыв юххинех икĕ хут кĕме çук».

95—96. Вăл шухăшлать:
«Ма-ши ку
Пĕрлешӳллĕ
Штатсен
революци пĕрлĕхĕ начар?..
98. Хăçан
Комун ирĕкĕпе...
102—103. ...пирĕн çĕре
юратса
ăшшăн
пулăштăр —
кам епле пултарĕ...
106—111. Лăпкă океан
е тăвăллă Атлантти —
пĕр пек паспăртпа,
атту паспăртсăрах,
совет çыннисем карапланччĕр.
Штăп пур портсенче
пилĕк юплĕ çăлтăр
çунса мăнкăмăллăн...
пуриншĕн
пур енлĕн...
114. ...монтташ прикатирĕ çеç.
116—117. Таçта
кĕçĕр
шухăшсем ыйха сирчĕç.
Фанер хăмапа пӳлсе тунă пӳлĕм.
122. Пилĕк хутлă çуртсем
хăпараççĕ.
123—128. А мистĕр Фрепĕл...
пулин,
пултăрах:

вăл
Терентей патĕнче
хăнара çеç...
Монтташ прикатирĕ
çăмăллăн сывларĕ.
Умра «Ленинисăм никĕсĕсем»
тата...
— çĕр çăттăр! —
акăлчан словарĕ
выртать
куçа
хулăнăшĕпе хистесе.

130. Мистĕр Фрепĕл.
Хывăр куçлăхăра!
Монтташ прикатирĕ
кĕçĕр тупа турĕ
сирĕнпе калаçмашкăн
тăлмачăсăрах.
«Ленин супотнĕкре» —
Сокколов карттинĕ,
вăрахăн
сăнарĕ
Сехре ăна.
Хальччен вăл
хисеплĕ крамăт илнĕ,
халь...
тепĕр ĕмĕт
унта вăранать.

*«Ленин субботникре»* — Соколов И.А. (1890—1961) художник, гравер, живописец, Раççей ӳнерçĕсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, СССР Художество академийĕн член-корреспонденчĕн ӳкерчĕкĕ.

140. Ятне
сана
ортĕнласа парсассăн!
«Кĕвĕçӳ» хĕтĕртмест комсомолĕса»...

Ку йĕркесем 1933 çулхи кăларăмра кăна тĕл пулаççĕ.

142—144. ...ĕçхĕл пек хăватлă,
ялав пек таса —
Ильичăн ятне
илме тивĕç пулсан
вăрахăн,
куллен тăрăшса,
каппаймасăр?..

146. «...Вот те на». — «Ак сана» вырăнне.

148—149. Сехре Терентейĕ
уттарчĕ çмена.
Параллеллĕ йĕрсене...

*Лобачевский Н.И.* (1792—1856) — вырăссен паллă математикĕ, Хусан университечĕн ректорĕ, Чăвашра пурăннă.

152. Нимĕнле иккĕленӳ те
пулмастчĕ.
Претçетаттĕл...

153—159. Юлташсем!
Сире паллă пуль тетĕп:
эпĕр
пĕрремĕш томна ярас срука
пĕр кварттăл
ытлашшипех
кĕскететпĕр.
Кунтан
тĕлĕнмелли çуках.
...ĕçе хăвăртлаççĕ.
...ĕмĕр курман паттăрлăхпа
юн сĕрлет.
Ĕç, Сталĕн киларĕш, —
мухтав пирĕн,
чап.

Юлашки «Ĕç... — чап» йĕркесем 1933 çулхи кăларăмра кăна.

160—161. Утарнĕкĕн пулмĕ сăмах ун сĕре,
каларăн,
сталăпăть —
кӳрт пурнăçа.

*Сĕре* — ахаль кăна, пустуй.

*Сталăпăть* — апла пулсан.

1933 çулхи вариантра тĕл пулакан «Мĕн чухлĕ эпĕр сирĕнпе тачăрах» йĕрке каярахри вариантсенче çук.

163—164. Мĕн чухлĕ хăвăртлăр
эсĕр тĕксе —
çавăн чухлĕ
ĕç юртĕ часрах.

*Юртĕ* — кайĕ, шăвĕ.

165—170. Эпĕр
сире хисеп паман тăк,
е эсĕр пиртен
йĕрĕнсе ютлашсан...
...камантă!
Апла пулмĕ ку пирĕн енчен,
пулман та...
Калăр, юлташ Омекă.
Омекă.

171—172. Нумай чарăнса тăмăп эпĕ,
Конешнă
пирĕн ӳсет ĕç хисепĕ.

177—178. Конкретлă,
хамăр савăта илсессĕн,
мĕн куратпăр эпĕр
паянхи кун?

180. ...лере —
хурçă-тимĕр
тутăхса выртать.

181. ...хутасшăн çапăçатпăр...

*Агрегат* — пĕрлештерсе майланă темиçе машина е хатĕр.

183. Хатĕри пирĕн марттен?

*Блюминг* — хăватлă прокат станĕ.
*Соцхула* — çĕнĕлле пурăнмалли вырăн, социализм хули.

186. Вопче...
man шутпа...
тăхтас пулать.
Претçетаттĕл
187. Сăмах илет
иншенер Тренпă.
188. Эп килĕшетĕп
халь тухнă коллекăмпа.
190. ...пур пĕр хăрушлăх:...
194. ...анчах
пит начар
ăна варлаканĕ.
195—196. ...ăстисем умĕнче...
... кĕрсе ўксен.
198—201. ...ĕлкĕрсессĕн
харăс
мĕн пур тсехсем.
Пирĕн
вĕсенчен
вĕренес пулать халĕ.
Тимĕр-тăмăр вăл —
пысăк искусствă,
ан манăр.
...хăй шухăшне калĕ...
204. Кунта çакна калас пулать:
206. ...хатĕр мар-ха пирĕн.
207. Çтенасем чĕрĕрех-ха,
типмен-ха,
тата пур çук.
208—215. Анчах
мана хушрĕç
каламашкăн вирлĕн:
Пĕрремĕш томнă
чĕртĕннĕ тĕле
парăпăр
эпĕр те
таса хваттирсем.
Ёненĕр:
чукун хĕрĕвĕпеле
ĕлкĕрĕç суртсем
хăвăртрах типсе.
Пĕри
«кăпăкланнă хăмăт»
тет кунта.
Лăпланăр, юлташ!

...туртăнатпăр иккен
пур чунтан.
217—218. Йăвăр та...
Пĕлетпĕр хамăр!
220. Пулăшатăр тăк...
221. Альпĕрт Хейм.
Хурçă кĕпер.
222. Хеноссĕн!..
224—226. Тĕлĕнетĕп:
ма вăл
малтан пуплерĕ?
Впроччĕм,
паллă мĕскершĕн апли...
...ют патшалăх спетсиалисĕсем.
229—233. ...хăймастпăр
темп тесе çăвар уçма.
Пур
пĕр вырăс сăмахĕ:
савтрă.
...маттерйал...
...тўрлетме кирлĕ...
çук хутмалли...
пословетсă
235. ...çав сăмахпала:
237—240. «Пўрократăн савтрăкĕ —
хĕрĕх ушĕн урлă».
...нимĕç
пурне те
хăй пĕлмелле.
...çав сăмах
çўрет те савăт тăрăх,
эп
пайан кун
тăрăшам хăть мĕнле...
242. Кăларăр
ăна
словартан
хăваласа,
пăхăр —
тен хамăр хушăрах...
...ак халь
çав Ловеласа...

*Ловелас* — хĕрарăмсем хыççăн чупакан çын.

246. — РКИ йĕрлĕ...

*РКИ* — рабочисемпе хресченсен инспекцийĕ.

247. ...сут,
проккурор...
Марш
ху сăмахупалан пĕрле,
рашчут илме...

252. *Шихта* — шăратмалли хутăш: руда, кăмрăк, шлак т.ыт.те.

254—260. Ак сакăр уйăхран
— чакмăпăр пĕр шит те —
хутăр хăть саккăрăшпех...
Мухтанмастăп,
анчах
Аттачăн темпĕ
пекки...
Тимĕр-тăмăр —
пысăк искусствă...
Тата вăл —
пĕлетĕр —
пысăк политтĕк.
Пирĕн кашни
чукун кăмаки...
262. Ан тив, халь
чĕвен тăрса пăхтăр
Мак-ки —
263. мĕскерле хĕвеллĕх
пирĕн патăрта.
264—265. ...хисеплĕ Тренпă,
анчах
Омекăпа сирĕн срук...
268—272. Хăйĕн фирмине кĕрĕшсен...
конешнă
эсĕр шухăшлăр-ха...
Вĕсен унта паллă:
пиллĕк-тĕк...
...пăсмаç шăпллăха
А эпĕр
кунта...
273—275. Кам вăл Омекă?..
ни трепă вĕсем пире,
ни не трепа,
Эп çакăнпа пĕтертĕм.
277—281. ...Çĕршыври
металл выçлăхĕ.
Илтетре:
«машшинн»
теç уйсем,
сисетре?
Кунта
ик иншенер
умлă-хыçлă хăт...
тухрĕç
срука татас маршăн,
çапах та
томнă хутăпăр эпĕр.
282. «Тăвата шит —
кирек ăçта та пĕр аршăн»

*Аршăн* — вăрăмăш виçи — 0,71 метр.

284—286. Пилĕкçуллăхăн шичĕ
раснах чармака,

аршăна вăл
виççĕ те шăнăçас çук тен.
Шанăр...

287—288. ...хутăнĕ
татнă срукра та
срукчен.
Тав...

289. ют патшалăх ăстисене:

290—291. Альпĕрт Хейм калани
пит те тĕрĕс:
савтрăк
пайтах тĕлсенче сисĕнет.

294—295. ...хăйĕн ĕçĕ пек
хапăл туни.

296. Çакăн пек
куçма-куçăн...

297—298. ...пур инкеке те
виçсе малтан,
инкек алăкран кĕричченех
сулăн...

300. Намăс пире
шанчăкран тухсассăн...

302—303. Намăс
ути-утайми пырсан
аслă
партти çулпуçĕн ятне панă савăт.

306—309. Эп тухасшăн та марччĕ.
Маншăн паллă:
пин алă
тăвасшăн
çĕкленчĕç иккен, —
тек палăртаттăр...
...кĕлеткен.

310—311. ...чĕп мар,
хăрамĕç.
юлашки ораттор каларĕш...

312—313. ...Простă намăс.
Совет çăкрине çийетĕр,
товарĕш!

315—316. Конешнă
кавычкăпала
«коллекă», —
пуласшăн мар...

318—319. Юлташсем каланине
кунта тепĕр хут
калас мар тесе —
манăн сăмахăм кĕске

320—321. сакăр уйăхран,
çиччĕре-и хут —
массă хастарлăхне
ан пӳл...

322—325. Массă вăл пирĕн халь
хурăмсăр, тĕссĕр,

кĕтӳç хыççăн çавăтăнан...
Унта
Влассăвăсене
куратăр эсĕр,
Сехресем
халь пуçлаç
ĕç çанталăкĕ тума.

326. Унта
ик-виç революцире пиçнĕ

327—329. Шуйпорота пеккисем...
Нуль вăл,
конешнă,
йăнăшни иккĕн-виççĕн,
анчах вăл пире-çке...

330—331. Юлашкинчен
эпĕр вĕт
хамăр массă —
Станукран уйрăлмасăр
ӳснĕ ăстасем.

332. ...клас ятне варламасăр...

335—337. Партти куçне
çивĕчлер
тавçăруллă.
Классăр пурнăçа
çывхаратпăр эпĕр
хаяртан та хаяр
клас кĕрешĕвĕ урлă.

340—341. Шалунăн кашни вакунне çак лосăнка çĕршывăм çакрĕ. Ответлă кашни шитшĕнех сотсалисăмла çул çарĕ.

Ку çаврăмăн («Тиев каять Макниттуне») 1933, 1935 çулсенчи кăларăмĕсенче «иншенер Детройтран (Тетройăтран)» йĕрке тĕл пулать. Каярахри текстсене ăна кĕртмен.

346. Сăмах Куславккари стандарт çуртсем туса кăларакан завод пирки пырать. 1933, 1935 çулсенчи текстсенче «стантарт çуртсем Куславккаран» йĕрке «иншенерсем Керманирен» сăмахсенчен каярахра вырнаçнă.

350. *...пĕрмай* — иртен.

352. *Днепропетровскра* — Петровский ячĕпе хисепленекен металлурги завочĕ вырнаçнă; кунтах пăрăх завочĕ те пур.

354. куçаççĕ, леçĕнеç пĕрмай...

356. «Мыттишчă — Сурăмран — вакун»

*Мытищи* — Мускав облаçĕнчи хула. Кунта çул-йĕр машинисем тăвакан, приборсем туса кăларакан заводсем пур.

357—358. Чулхуларан — пензинлесех
автомопилĕ...

363—366. Шанмасăртарах,
вăрттăн...
Яш пăхрĕ те...
...Пăртак курса-им

çӳрес?
Топрĕ, топрĕ.
367—374. Сирĕн йышши çав ĕнтĕ —
пĕркунче,
...пĕри
çырсаччĕ:
— Кокс кăмакисене
тӳпинчен
пĕрремĕш çурт антратсит тултарнă...
Тонпас антратсичĕ —
мĕнне калас!
...çав шурналçă...
мĕншĕн тесен
375—378. Прокопйĕвск шахтисенчен кăмрăк çак.
Эпир —
унта...
Ак
Уралпа Куспасăн
ричак,
акă
вĕсен
тĕп тӳлемĕ ăçта.
379—380. Пирĕн
çук кăмрăк
хамăрăн,
Куспасăн
хăйĕн
рута çук ун.
381. Анчах
ун
паха коксламан кăмрăк...
383. Çапла
таварпа тавар
улăшăнать.
385—386. Пĕр вунă вакун
ытлашш тĕк...
вăрçмастпăр эпир.
388—389. ...пиртен
хăть çур тонн çеç
ким çиттĕр.
Никама та мар вĕт,
лартатпăр —
хамăра...
391. Акă
кокс,
тĕрĕсрех —
кăмрăк çулĕ:
малтан авăртатпăр эпир ăна...
395. Патарейăн
кашнин
69 кăмака.
397. ...уйăратпăр тĕрлĕ кассене:
аммиака...

399—402. ...хĕпхĕрлĕ те лапчăк
кокс кăна.
403—404. «Атьăр!»
Хавхаланать ман ăста.
Паттарей тĕлĕнче
йăл та йăл...

1960, 1970 çулсенче çапăннă «Çав, çуттăн çунса, ялкăшать пулĕ» йĕрке 30-мĕш çулсенчи текстсенче курăнмасть. Ун вырăнне малтанхи вариантра «йӳçамăш тес пуль Ванерккешĕн» тени тĕл пулать.

407. ...терĕ çитсе чарăнсан Остап.
«Час пиçети?»
Эй! Кам унта?
409. Кокстĕртевçĕ машшин çинчен:
Хатĕр. Час.
411. «...каппайтăр каппайчăк Америк,
та-с».
412—413. ...кукăль
тухать пиççе.
Хăппăл-хаппăл
электăрвуссем
наччас
414. ...вирхĕнтереç çиççе...
416—420. Кунта
акăш-макăш
пăс капланать
шур пĕлĕт-шур пĕлĕт пек
çӳлелле.
Кукăль сивĕнет...
рутапа,
исвĕспе хутăш —
томнă çимелле.
421—422. ...Сая ямастпăр нимĕн
Çак пăспа çеç...
423. ...пролеттарин мимми
çĕрни мĕн?
Курăпăр вĕт уссине,
а, тусăм?
Ырă ятлă пулас йăла
манра çук...
427. Курăпăр,
тетĕп...

1933 çулхи кăларăмра çак йĕркесем пур:

«Юлташ Алекçеĕв.
Парăр алă.
Сехре Терентейĕпе
эсĕр,
кирек мĕн тесен те,
пĕр калăп.
Хăшăр пысăкрах? —
Халь виçместпĕр.

Пурӑнӑҫ
хӑех
виҫсе кӑтартӗ.
А халлӗхе эсӗр те,
Сехре Терентейӗ те —
исопретаттӗл,
хайлавҫӑ
(таса пӑлхарсемшӗн кӗртеп).
Сехре
линквис мар,
чӗлхеҫӗ мар.
«Юрлама вӗренекен»
ҫырман вӑл.
Ашмарин сӑмах пуххипе
ӗҫ ӑнма
пултараймасть унӑн,
паллӑ.
Ун лапоратторийӗ те
пӗчӗкҫеҫҫӗ —
хайхи пӳлӗмех,
фанер хӑмаран.
Анчах пысӑкрани,
Иван Елексейччӑ,
пуҫларӑр эсӗр хӑвӑр
малтан?
Пӗлетӗп,
пайтах йывӑрсем
куркаланӑтӑр.
«Ӑҫта кармашаттӑр?
Тӳсеймӗ пыршӑр!».
Ыран тен ҫӗре этиссонлӗ
талантӑр,
паян ӗҫсӗрлӗх —
пӑчӑртать сире пиршӑ.
Упра вӑйхална
поттентсиллӗ кени.
А кени тулашнӑ:
— ҫиес килет, — тенӗ.
Ахаль ҫырӑнман
«Юрлама вӗренекен».
Кайран,
хими формӑлӗсем хушшинчен,
аса илтӗр пуль,
Керманире
тен
салхуллӑн
«Сунтал» конорарӗ ҫинчен.
Телейлӗ
вӑл тӗлӗшрен
Терентей —
Макниттӑвӗнчи
монтташ прикатирӗ:
пиршӑ ҫук халь пирӗн ӗнтӗ.

Ĕç хăй йыхăрать этемме,
пыр та çырăн.
Ĕçле те вĕрен,
шухăшла та кăлар,
млатук пăрахсан
тсирккульна тыт алла.
Мĕскер меслетлет-ши вăл,
утарнĕк?
Мĕскер пирки пăшăрханать,
мĕн çинчен?
Ăçталла
вăл яш миммине
шутарнă
тем пысăккăш
тимĕр-тăмăр тĕнчинче?
Сехре
(суяс марччĕ)
пĕлмест тен хими те,
эсир
$H_2O$ тетĕр,
вăл калать шыв.
Анчах
ун
хайли
ĕç асаплăхне кимĕтĕ,
хăвăртлĕ ĕçе.
Кирлĕ мар хайла-ши?
Прастуй çеç ÿкерчĕк
вăл панă БРИЗа
монтташ ĕçне çăмăллатас пек кăна-мĕн,
БРИЗ пăхса тухнă,
шутланă та çырса —
13.000 курăннă
тĕш экономи.
Сахал-и?
Çитĕ.
Мускав хайлавçин
парни те
кунтан пысăкрах-тăр.
Пултăр.
Кермание те
кайман вĕт-ха çын,
çын тултарман
çирĕм икĕ çул та.
Парăр алă,
йулташ Алексçейĕв!
Ўсеççĕ коллекăрсем.
Пулăр сапăр.
Сехре Терентейĕ пеккин
халь
инçе-и
сире çитесси?
Шутласа кăларсам».

*Кимĕт(ĕ)* — кат, чакар, сахаллат.

439—440. Çур меттăртан
пăрланать сурчăк,
Питрен
çилсем парттисанлаç.

442. ... пин кратăс...

444. Шалт çак кĕвĕ пек —
чăнчăнла.

445. *Январь* — кăрлач.

451. ...кĕвĕлĕ ташă...

454. Кун пек çанталăк, ачапча?

458. ...хăçанччен чăтайăн!

466—468. Малтан юхнинченех
хывар
Ленин пичĕ,
хывар
Сталĕн сăнĕ!

471. ...коммунис
ахăрнех кĕтменччĕ

476. пĕтĕм çĕршыва...

484. ...вăл ӳтлĕн кăтартнă...

491. *Сальто — мортать* (сальто-мортале) — акробат сывлăшра пуçхĕрлĕ çаврăнни.

493. ...парĕ
пин тонн...

495. Варттанио велоççипетçă.

496. Металл халь
пирĕн çĕршывăн
шутсăр,
реçин та,
потшипнĕк те
хамрăн пиçеççĕ.

499—500. ...хăвăртланă...
çухравлă рекламсăр...
тĕпрен...

501—503. ...Чукун сывă пултăр! —
Чĕрĕ япала пек...
...сльочĕ...

505. *Гладиатор* — авалхи Римри цирк кĕрешӳçи, тарçă.
506. *Патриций* — авалхи Римри аристократ (улпут).

509. Клатиаттăрсем мар.
Анчах кашни —
Спарттак...

510. ...прушинлет
ӳт-тире.

511—513. ...эпĕр...
спетсовккăпа эпĕр
пин хут хитре.
Вунпĕр хушшинче...

514. ...куçсемпе Сехре?

516—517. Унӑн куҫӗсем халь тата хӗсӗкрех.
...шырать вӑл?
518. ...тытӑнчӗ ӗҫе.

*Президиумӗ* — пуху президиумӗ.

519—523. Калаҫаҫҫӗ
утарнӗк хыҫҫӑн утарнӗк.
Кӗскен.
Шӗв шыва пӑрса илнӗ веҫех.
Витӗмлӗн,
тӳррӗн,
татӑклӑн.
Кашни пӗчӗк пуплеврех
палӑрать
анлӑшӗ,
пысӑкӑшӗ савӑтӑн; ...
528. — Парӑпӑр, —
тер ҫакӑнта...
530-532. Юнашар —
ҫӗрчавансен прикатирӗ...
Макнитту историне...
...пулса кӗрӗ.

*«Интернационал»* — пӗтӗм тӗнчери пролетарисен гимнӗ.

534. Раснах янтӑравлӑ
ҫӗнӗ хулара.
535. ...чӑйнипех вӗт
537—540. Сехре Терентейӗ
(астӑватри, шыратьчӗ)
Тупрӗ вӑл халь
ҫав ҫынна:
— Мистӗр Фрепӗл!..
Сывӑ-и, — терӗ акӑлчанла.
541. Фрепӗл
палларӗ:
«Компрӑт Сехре».
542-544. хӑй машшинӗ патне уттарнӑн...
«Эпӗ-и?
Чим?..
Ан калаҫӑр сӗре,
конешнӑ эп халь
утарнӗк!»
545. ...кӑмӑллӑ сӑн-пичӗ:
«Ҫырӑр мана, йышӑнатӑп...
Худ пай!

## «МАГНИТТУ» ПОЭМӐНА КӖМЕН СЫПӐК

Тӗнче тенине
юратать пур чӗр чун та,
юратма вӑхӑт ҫук тени —
суя.

Каçарăр:
эп те пĕрре хыпса çунтăм,
халь те ĕнĕк шăршине туяп,
халь те
çав хĕрӳпе
эп пуян.
Юратать
Сехре Терентейĕ те,
мĕн тăвăн?
Çирĕм иккĕ
Петтоки поэми çеç мар,
çирĕм иккĕ
пулать иккен çул та —
талхăрнă чух чĕрере
çич çырман.
Юратать вăл,
анчах...
— О, çамрăклăх! — тейĕпĕр
эпĕр
хамăр йăнăша асилсе.
Конешнă,
Ромео мар Терентейĕмĕр,
çук халь хĕрсем те
Джульет майлисем.
Анчах мĕн тăвăн
вăл чĕнмесĕр,
вăрттăн
куç хывнă этем
утарнĕк çеç мар тăк?
Мĕн тăвăн
ун пăхса курăнми савнин
чĕлхийĕ
Шекспир чĕлхиех пулсассăн?
Руф Плод —
тăлмач.
Акăлчан çынни.
Хĕр-и,
хĕрарăм-и —
Рсай пек ыйтмастăн.
Йывăр пĕлмешкĕн:
мĕнле тĕллев
пуçра çитĕнет-ши
пуçтах бригадирăн?
Йывăр пĕлмешкĕн:
хăш еннелле
çăмăл çунатлă фантазилле
вĕçсе вăл ӳкмест
каçăн-ирĕн?

Калаççӗ:
ют чӗлхене
савни урлӑ
вӗреннӗ пек
пысӑк телей
çук-и, тен, теç.
Анчах
ма-ши Руфӗн чӗлхи
пит юрлӑ,
ма
Сехрепе сӑмахлать вӑл кӗскен çеç?
Мӑнкӑмӑллӑх-им?
Рассӑ-им?
О, Терентей!
Хушшӑрта
чӑнласах тӗпсӗр пусӑ-им?
Мистӗр Фрепӗлпе
эс пуплӗпех терӗн те,
мисс Плоу чӗлхи
урӑхла-им кӑшт, тусӑм?
Ма
юрату
домнӑ мар-ши?
Ма
чӑкӑлтӑш
ун монтажӗ?
Ма
ку çынпа
хамӑр ял пек —
енчӗк илсе,
илсе явлӑк
çук пӗр-пӗрне çывхармашкӑн?
Ма
юрату
чикар мар-ши:
чӗртрӗн —
сӳнтертӗн.
Ма-ши
вӑл
стаккан шыв
пулман-ши:
ӗçрӗн те
шалт ӳпӗнтертӗн —
пӗтрӗ те йӗр пур пек тертӗн.
Çук,
стаккан мар —
хӑруш авӑр,
çук,

чикар мар —
пушар вăл...
Каçарăр, тархасшăн:
сентименталлă
лачакана
эп пуçлап пăрăнма.
Çапах та
ман савăт ачи
металл пек
тарĕ
хăйшĕн
пĕрре çак проблема.
Сунатăп эп
ăнăçлăх
Сехренех —
вырăс-и пулĕ савни,
акăлчан-и.
Анчах
ак мĕне
эп пĕлесшĕн хĕрĕнеп,
пĕлесшĕн пĕтĕм кăмăлтан эп:
мĕн калĕç-ши
пирĕн
пиçнĕ тутасем,
мĕн калĕ
хисеплĕ
Юркка Иванĕ
çак майраран майрана
тус тесе...

## ТАНЯ

«Суйласа илнисен» 2-мĕш томĕ (1970) тăрăх пичетленет. Маларах пичетленнисене танлаштарса пăхнă.

«Таня» — чăваш сăмахлăхĕн паллă хайлавĕ. Ăна вăтам шкул программипе вулантăксене (хрестоматисене) кĕртнĕ. Сыпăкĕсене пăхмасăр калама вĕрентеççĕ. Поэмăна 1942 çулта Петр Лидовпа Сергей Любимов хаçатçăсем Петрищевăри паттăрлăх çинчен «Правда» хаçатра «Таня» тата «Кто была Таня» очерксем пичетлесе кăларнă хыççăн çырнă. Хĕр партизансен паттăрлăхĕ пĕтĕм çĕршыва хумхантарнă. Маргарита Алигер, Юлия Друнина тата ытти сăвăçсем Таня паттăрлăхне халалласа сăвăсемпе поэмăсем пичетленĕ. Петĕр Хусанкай поэми сулăмлăрах та вирлĕрех пулса тухнă.

Яш-кĕрĕм вăрçă вăхăтĕнче тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартни çинчен халĕ тĕплĕрех те анлăрах пĕлетпĕр. Тăшмана хирĕç çамрăксен вăрттăн отрячĕсем хаяррăн çапăçнă. Сахал мар паттăра фашистсем çака-çака вĕлернĕ.

Мускав патĕнчи хаяр çапăçусем хыççăн 1942 çулхи кăрлачăн 14-мĕшĕнче Петрищево ялне 444-мĕш полкăн Андрей Хмелев капитан (вăрçă хыççăн Шупашкарта пурăннă) ертсе пыракан 1-мĕш батальонĕ ирĕке кăларнă. Таня партизанка ӳтне юр айĕнчен кăларса ял варрине чыс-хисеппе пытарнă. Зоя Космодемьянская отрячĕн комсоргне Вера Волошинăна та тăшман Крюково ялĕнче çакăн пекех тискеррĕн вĕлернĕ. Ку ялсенче вăрçă хыççăн палăксем лартнă, музейсем уçнă.

Совет Союзĕн Геройĕсене Зойăпа Александр Космодемьянскисене тата вĕсен амăшне Мускаври Новодевичье масарне пытарнă.

Поэмăри Таня сăнарĕ, Мускаври 201-мĕш шкулта вĕреннĕ Зоя Космодемьянская пурнăçне уçса кăтартса, пысăк пĕлтерĕшлĕ, нумай-нумай паттăр хĕр упраçа мухтакан пĕтĕмлетӳллĕ сăнар пулса тăнă.

## «АПТРАМАН ТАВРАШ» СĂВĂЛЛĂ РОМАН

«Çырнисен пуххине» романа халиччен тухнă мĕн пур сыпăксене шута илсе кĕртнĕ. Никĕсĕнче — 1957 çулта Шупашкарта пичетленнĕ кĕнеке тата сăвăç килĕнче упранакан 1969—1970 çç. тӳрлетнĕ хутсем. Хăш сыпăк хăçан тата ăçта пичетленнине «Ăнлантарусенче» палăртса пынă. Тӳрлетнĕ е ылмаштарнă тĕслĕхсене кунта, вырăн çуккипе, палăртма май килмерĕ. Уйрăм ятсемпе йывăр сăмахсене кашни сыпăкрах ăнлантарса хăварнă. Тĕрĕссипе, П.П.Хусанкай усă курнă, хăй тунă, çĕнетнĕ сăмахсем халĕ пурте сăмахсарсене (словарьсене) кĕнĕ. Çавăнпа вĕсене анлăн ăнлантармасан та юрамалла.

«Аптраман тавраш» сăвăллă роман — чăваш классикин паллă хайлавĕ, чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн пултарулăхĕнче уйрăмах курăмлă вырăн йышăнса тăракан кĕнеке. Атăл тăрăхĕнчи халăхсен литературинче П.Хусанкай ыттисенчен малтан пысăк хапаллă хайлав çырма шут тытнă. Уйрăм сăвăллă новеллăсенчен тăракан «Аптраман таврашĕ» — тĕнче литературинче палăрнă сăвăллă романсем хушшинче хăйĕн тĕшшипе, хапипе, сăнарлăхĕпе раснан тăракан хайлав. Ун пахалăхне тĕрлĕ халăх тĕпчевçисем темиçе хутчен уйрăммăн палăртса каланă.

«Аптраман тавраш» романа чăваш литература тĕпчевĕпе критики тĕрлĕ сӳтсе явнă. Роман пахалăхĕ пирки М.Я.Сироткин, Е.В.Владимиров, Г.Я.Хлебников, В.А.Долгов тĕпчевçĕсем, Н.Ф.Илпек, А.С.Артемьев, А.Е.Алка тата ытти нумай çыравçă хăй шухăшне каланă.

«Тăван çĕршывшăн пынă аслă вăрçă çулĕсенчи чăваш халăхĕн пурнăçне поэт тарăн та пур енлĕн сăнласа панă, ку тĕлĕшпе произведение: вăл чăваш халăхĕн вăрçă çулĕсенчи пурнăçĕн энциклопедийĕ тесен те йăнăш пулмĕ», — тенĕ Н.Любимов («Тăван Атăл», 1959, 2№, 91 хут енĕ). Чăнах та, хайлавра халăхăн 1941—1945 çулсенчи хавхи, аптраманлăхĕ, паттăрлăхĕ,

чăтăмлăхĕ витĕр тапса тăрать. Янăравлăхĕпе, шухăш пуянлăхĕпе, çĕкленӳлĕхĕпе вăл вулакана паян та хăват парать.

Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕ Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланиччченех С.В.Элкерпе сăвăллă роман пирки сахал мар калаçнă, çавăн пек пысăк хапаллă хайлав чăваш поэзийĕнче кирлине вĕсем сиссе тăнă. Икĕ çамрăк вара ăмăртмалла тенĕ пек эпикăллă поэзи ĕçне тытăннă. Анчах тискер вăрçă сăвăçсен ĕмĕтне нумайлăха татса хунă.

**Сăвăллă роман историйĕнчен**

Сăвăллă роман вĕçне 1941—1954 çулсен паллине лартнă пулсан та — ăна ытларах вăхăт çырнă. Сăмахран, «Натали кĕпе тĕрлет» сыпăк 1939 çултах «Ĕç хĕрарăмĕ» журналта тата 1941 çулта ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче «Çамрăк большевик» хаçатра пичетленсе тухнă. Паллах, ку тата ытти сыпăксене («Йăкăнат», 1939; «Элтиван», 1940) çырнă чухне сăвăç пуçĕнче «Аптраман тавраш» поэма е роман çырасси пулман-тăр. Анчах сăввисем романа юрăхлă пулса тухнă пулсан, вĕсене çырнă вăхăт та роман историнех кĕрсе юлать.

Çапла вара, поэт роман жанрĕ патне нумай-нумай шыравсем, шухăшсем витĕр пынă. «Малтан ман Аптраман таврашĕ кăшт урăхлаччĕ те-и, тен?» — тесе ахальтен ыйтмасть сăвăç роман вĕçĕнчи «Сывпуллашура». Пысăк хайлав, паллах, пиçсе пынăçемĕн тем тĕрлĕ улшăнса, якалса пуянланнă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вăхăтĕнчи хиври лару-тăру, халăхăн çирĕп кăмăлĕ поэта паттăрлăха, аптраманлăха, чăтăмлăха мухтама хистенĕ.

Чăваш халăх талайĕн тĕп паллине — кирек мĕнле лару-тăрура та чăтса, çĕнсе тухма пултарнине — аптраманлăха — романра мала кăларса пынă. Синкерлĕ самана сывлăшне драмăланă ĕçсем урлă кăтартма меллĕ тесе шутланă малтанах сăвăç. Анчах драмăланă роман трагеди енне туртнă. Ку вара сăвăçа килĕшмен. Сюжет йĕрĕ, сăнарсем, ĕç-пуç малтан палăртнисенчен урăхла палăрнă. Вĕсем çинчен автор çапла çырса хăварни пур.

*Элюк асатте* — Аптрамансенчен чи ватти, сакăр вуннăра пырать. Хыткан та яштак старик. Салтак, «Якур хĕресĕ» илнĕскер. Хĕресне те, аслашшĕн — тĕп Аптраманĕн — медальне те («Не нам, не нам, а имени твоему») карчăкĕн çӳпçинче усрать. Хурт ăсти. Сĕрме купăс калать. Ват çын мелĕпе тăсарах калаçать. Хĕрĕнкĕрех чухне е пĕр-пĕр урăм-сурăмпа хавхаланса çĕкленсен — кăшкăрашарах пуплеме те пултарать. Çамки тавра кăшăл — е пушăтран, е пĕр-пĕр хăю татăкĕнчен: «çӳç-пуç тирпейĕшĕн». Сухалĕ çăрах мар, янахĕ çинче кăна.

*Савнепи (Сăпани) асанне* — «чăн-чăн чăвашран», вăрттăн тĕне кĕрсе венчетленнĕскер. Урăх чиркĕве кĕрсе курман. Сурпанне пăрахма пултараймасть: «Пиртен тухнă йăла мар». Сур-

пан тавраш уншăн — мăшăрлану палли, тӳрĕлĕхпе варлăх символĕ, хĕрарăм чысĕ, тасалăхĕ. Тĕшмĕш усравçи. Стариккин сăмахĕнчен тухаймастех. Çитмĕлсенче.

*Илле пичче* — Элюк асаттепе Савнепи асаннен ывăлĕ. Аллăран иртсе пырать. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи салтакĕ, нимĕç тыткăнĕнче пулнă. Хут пĕлет. Тирпейлĕ колхозник. Ачисене вĕрентсе кăларасшăн тем тӳсме те хатĕр. Сăмаха ытлашши вакламасть.

*Кулине* — Илле пиччен мăшăрĕ. Çемçе кăмăллă хĕрарăм.

*Герман (Кервен)* — Аптрамансен çăвар уççи. Юратнă ывăл. Кăçал Мускав университетне пĕтерсе аспирантурăна юлнă. Историк. 24 çулта.

*Энтри* — Герман шăллĕ, колхоз пахчаçи, Мичуринран пуçне никамах та йышăнасшăн мар. Çĕр, тăпра çынни. Тĕрлĕ гуманитарлă ăслăлăхсем уншăн пулсан — тĕлĕк, халап. Вăтам шкул пĕтерейментерехех пахча-сад ĕçне вăраннă. 20 çулта.

*Натали* — кăçал вăтам шкул пĕтернĕ. Аслă шкула кĕрес ĕмĕт вĕçтернĕ хĕрĕн ыйхине. Çум çумланă хушăранах хатĕрленет. Германпа Энтри йăмăкĕ. 18 çулта.

*Тамара Турхан* — Натали тусĕ. Кăçал мединститутăн пĕрремĕш курсне пĕтернĕ. 19 çулта.

*Палля* — Аптрамансенчен чи кĕçĕнни. 14-ра. Вĕренет. Çулла сӳре сӳрелет, «хĕл кaçмалăх ĕçкунĕ тăвать». Сăвă çыркалать.

*Иван Ильич Самаев* — колхоз председателĕ, 40 çулалла.

*Якку* — сельисполнитель. Çулланнă çын. (Малалли картинсенче чылай урăх çын хутшăнмалла пек.)

Малтан Илле пичче ашшĕ Элюк ятлă, кайран Хĕветĕр ятпа тĕл пулать. Илле мăшăрне «амăшĕ» тесе палăртса пынă. Каярахпа вара вăл Кулине пулса тăрать.

Самаев Иван Исаевич малтан «Иван Ильич» пулнă. Унăн юратнă сăмахĕ «чăваш». Каярах поэт героя «юлташ» тесе калаçтарнă:

Мĕншĕн тесен «Иван Исаевич Самаев... Пурне те вăл чĕнет: «Юлташ!»

«Аптраман тавраш» — 11 курăнуллă драма пайĕ — вăрçă пуçланнипе вĕçленет. «Аптраман тавраш» поэма вара вăрçă хыпарĕпе пуçланать. Хайлав каярахпа поэма хапине туртăнма тытăнать, вĕçленеймен драма хатĕр-хĕтĕрĕ романăн «Пĕрремĕш кун» сыпăкĕ пулса тăрать.

Кĕçех (Илемлĕ литература, 1942, 9) «Аптраман тавраш» поэмăн 6 сыпăкĕ пичетленсе тухать: «Аптраман Энтрипе тусĕ», «Ашшĕн çырăвĕ», «Илмен кӳлĕ хĕрринче», «Разведкăра», «Натали кĕпе тĕрлет», «Аптраман Энтри кăмака шăлать».

Малалла çырăннăçемĕн «Аптраман тавраш» хайлав пуянланса, сарăлса пырать. Энтри тĕп герой пулса тăрать, вăл паттăр ĕçсемпе палăрать.

Вăрçă-харçă пăтăрмахĕсем, Илмен кӳлĕ хĕрринче тăшман киммине сирпĕтни, тыткăна лексе курни, çапăçура юлташа

пăрахса хăварманни, туслăха упрани ун чухнехи вăхăт чĕмне тĕрĕсех уçса парать.

«Разведкăра» сыпăка вулакансем (уйрăмах фронтра пулнă воинсем) çителĕксĕр çырнă, салтакăн хаяр чунĕ, вутри шухăшĕ унта курăнмасть тенĕ. Чăн та, 1942 çулччен поэт фронтра пулса курман. Хаçатра вуланипе хумсас (радио) итлени пĕр япала, вăрçă тарĕпе юнĕ — пачах урăх. Ун чухне хальхи пек инçекурăм (телевидени) ĕçлемен, çавăнпа шухăшласа кăларса сăнарлама вара ĕлĕкхине пĕлни кăна çителĕксĕр пулнă. «Тӳрех калап: салтакăн нуши ӳкменччĕ пуç çине», — тет поэт каярах. «Салтак кутамккине çакмасăр, Унпа çунмасăр пĕр вутра Сăмах витти те манăн, ахăр, Çукрахчĕ пулĕ çав хутра». Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр сăна та вĕрен! Поэт çине тăрса малалла çырать. Сĕтел хушшинче канлĕн рехетленсе лармалли вăхăтра çуралман «Аптраман тавраш». Вăл вăрçă ĕнĕкĕ витĕр килнĕ.

Поэма 1946 çулта уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать. Унта 1942 çул хыççăн хушнă сыпăксем самаях кĕреççĕ.

Аптрамансен несĕл тымарне уçса пани, халăхра аптраманлăх вăйĕ ĕлĕкренпех шăранса пыни, çав пахалăх тискер вăрçăра чăтăмлă пулма хăват пани уйрăм сăнарсем урлă уçăлса тухать. Энтри те, Натали те питĕ çирĕп. Ыттисем те çавах. Аслашшĕ салтак пулнă, причак çинĕ те — ăна ĕмĕрне те пăсман! Акă мĕнле çирĕп саккунпа пурăнаççĕ Аптрамансем. Пĕри теприне тивĕç!

Пĕр Аптрамансем кăна-им çирĕп? Самаев хĕрĕ Верук та Энтрие тивĕç хĕр. Пĕтĕм халăх чăтăмлă, пиçĕ, шăла çыртса вута кĕме пултарать. Çак шухăша Петĕр Хусанкай ĕнентерӳллĕ калама пултарнă. Ун чухне уйрăм халăх паттăрлăхĕ, çирĕплĕхĕ çинчен калаçма та юраман-ха. Пĕтĕм совет халăхĕ çинчен плакатла хитре çырма çеç чарман. Чăваш аптраманлăхне тĕнчене евитлеме хăюлăх çитерни — П.Хусанкайăн литературăри паттăрлăхĕ.

«Аптраман тавраш» 1954 çулта калăпланса çитет. Кĕнеке кăларакансем ал çырăвне кĕтеççĕ, плана кĕртеççĕ. Поэт ĕлкĕреймест. Пуçра çĕнĕ сăнарсем, сыпăксем, сăвăсем. Çулсерен çĕнĕ сыпăксем тухса пыраççĕ: «Ыт-тĕкел» (Ялав, 1954), «Сарлака çунат» (Тăван Атăл, 1955), «Ашшĕ çырăвĕ» (Çамрăк коммунист, 1957) тата ыттисем поэма пайĕсем пек пичетленеççĕ. Вырăсла куçарнă сыпăксем вара çак вăхăтра хаçат-журналсенче «роман сыпăкĕсем» тесе тухаççĕ. Тĕслĕхрен, «Советская Чувашия» хаçатра пичетленнĕ «Коммунист тесе хисеплĕр» сыпăка «роман пайĕ» тесе палăртнă.

1955 çулта поэт Мускава вĕренме тухса каять, ал çырăвне кĕнеке издательствине парса хăварать. Романпа ĕçлеме чарăнмасть. Кĕнекеçĕсем патне вăл çырсах тăрать — романа лайăхран лайăх тăвас килет унăн. Тем тесен те — чăваш литературинчи пĕрремĕш сăвăллă роман!

Тăрăшни харама кайман. 1957 çулта кĕнеке вулакан патне

ҫитет, вулакана пысӑк савӑнӑҫ кӳрет. Ӑнӑҫлӑ пулса тухнӑ вырӑнсене шкул ачисем туххӑмрах пӑхмасӑр каласа ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ.

Эпикӑллӑ поэзи анлӑшӗ чӑваш сӑмахлӑхӗшӗн Хусанкайччен те ют япала пулман. Улӑп халапӗсене, мӑн кӗрӳ такмакӗсене упракан халӑх авалсенче паттӑрлӑх эпосне те пӗлнӗ. Анчах ҫав ӑсталӑх ҫухалнӑ. Халӑх ӑстисене «каснӑ, вӑтӑрнӑ, чӗрӗллех ҫӗре чиксе» пӗтернӗ. П.П.Хусанкай чӑваш сӑввине эпика анлӑшне тепӗр хут ҫавӑтса тухнӑ. Поэтӑн тепӗр паттӑрлӑхӗ ҫакӑ.

Тӗнчене ҫавӑракан ӗҫсем витӗр чӑваш ҫыннисен чунӗ упранса, ҫирӗпленсе, пуянланса пынӑ. Вӑрҫӑ-харҫӑ Сумбай Петӗрӗпе Наталин, Аптраман Энтрийӗпе Верук юратӑвне хытӑ тӗрӗслет. Пурнӑҫшӑн, малашлӑхшӑн туртӑнаҫҫӗ роман сӑнарӗсем. Ҫак туртӑм каярах ҫырнисенче — «Тӗп ҫурт», «Шупашкар карлӑкӗсем», «Телей», «Польшӑн пӗчӗк хулинче», «Варвари инке», «Генерал чӗнет», «Хамӑр ял», «Таврӑну», «Сывлӑш ҫаврни», «Килте», «Кӗрхи хыпар», «Ыт-тӗкел», «Сывпуллашу» сыпӑксенче — витӗмлӗрех пулса тухнӑ. Ӳсӗмленнӗ кӑмӑл-туйӑмпа хакласа Петӗр Хусанкай малтан ҫырнӑ «Разведкӑра» тата «Натали Петӗре фронтран ҫырать» сыпӑксене романран кӑларса пӑрахать.

Юлашки хут халӑх поэчӗ романа «Суйласа илнисем» кӑларӑмӑн виҫҫӗмӗш кӗнекине кӗртме хатӗрленӗ чухне пӑхса тухать. Хӑй виличченех вӑл ӑна тӳрлетнӗ, асӑрханӑ йӑнӑшсене юсанӑ. Тӗслӗхрен, кӗнекере «ҫак вӑрман» тесе пичетленнӗ. Поэт пусӑмласах «**ҫам** вӑрман» тесе юсать. *Ҫам* — чӑтлӑх, вӗтӗ хунавлӑ вӑрман.

«Ашмарин словарьне уҫатӑп: Сайра пулин те скобкӑра Унта эп хам ята вулатӑп...» — тет роман геройӗ А.И.Турхан. Чӑн та, чӑваш историйӗнче Турхансем йышлӑ: Хӗветӗр, Якку, Энтри Турхансем чӑвашлӑх ӗҫӗпе пайтах ӗҫленӗ. Турхан Энтрийӗ романа историрен килнӗ тесех каламалла.

Тӗпчевҫӗсем «Аптраман тавраш» сӑвӑллӑ романра поэт хӑй пурӑннӑ вӑхӑтри ҫынсене сӑнарланӑ тесе палӑртнӑ. Хӑй пурӑннӑ, хӑй хутшӑнса кӗрешнӗ вӑхӑт ҫинчен ҫырнӑ чухне пӗлнӗ ҫынсене поэт илемлӗ хайлава кӗртме шикленсе тӑман.

Поэт архивӗнче Анат Тагил хулинче пурӑннӑ чӑваш Петр Николаевич Сумбаев ҫырса янӑ асаилӳ упранать. Унта вӑл «Аптраман тавраш» роман валли сӑвӑҫ унӑн ятне суйласа илнине палӑртать.

Ҫапла аса илет П.Н.Сумбаев: «Хусанта вӗреннӗ чухне эпӗ... чӑваш чӗлхине вӗренме ҫӳреттӗм. Хам профком членӗ пулнӑ май Петӗр Хусанкая хамӑр общежитие вырнаҫма пулӑшрӑм. Ҫакӑнтан вӗренсе тухиччен эпир туслӑн пурӑнтӑмӑр.

Пушӑ вӑхӑтра Петӗр Ҫӗпӗрти аптраман чӑвашсем ҫинчен, Сумбай хушамат камран, хӑҫан пулса кайни ҫинчен мана пӗрмай калаттаратчӗ. «Аптраман» сӑмах вара ун ҫӑварӗнчен каймастчӗ. Асаттепе асанне мӗнле калаҫнисене темиҫе хут ыйтса ҫыратчӗ.

Ҫакна та калам. Ман аннепе Петĕр Хусанкай амăшĕ те Варвари ятлă пулнă... Каярах, чăваш писателĕсемпе пĕрле тĕл пулсан: «Паллашăр, ку Сумбай Петĕрĕ, ман герой!» — тетчĕ».

1957 ҫулта чăвашла тухнă «Аптраман таврашĕн» жанрне палăртман. Вырăсла пичетленнине роман тенĕ. Вăл 1959 ҫулта «Семья Аптраман» ятпа Шупашкарта пичетленсе тухнă. Романа вырăссен паллă ăстисем Петр Дружинин, Александр Казаков, Сергей Поделков тата Вера Потапова сăвăҫсем куҫарнă. Тăрăшса, аван куҫарнă. Пĕтĕмĕшле куҫарăва Николай Сидоренко тӳрлетнĕ. Вырăсла кăларăмра, ăна кĕскетнĕ пулсан та (Верукпа Петĕр ҫырăвĕсене кĕртмен), «сăвăллă роман» тесе хăюллăнах палăртнă. Кĕнекен авторĕ ҫинчен тулли евтӳ (справка) панă.

Ку кăларăмра «Аптраман тавраш» сăвăллă роман нихҫанхинчен туллин пичетленсе тухать. Кĕскетнĕ сыпăксене «Ӑнлантарура» пичетленĕ.

**Роман сыпăкĕсене ăнлантарни**

**Халал.** 1948 ҫулта П.П.Хусанкайăн ывăл ҫуралать, вара поэт ăна халалласа сăвă ҫырать. («Чĕре юрри», 1952).

«Халал» сăввине поэт роман умне лартать, вăл пĕрремĕш хут 1957 ҫулхи кĕнекере пичетленсе тухать.

1959 ҫулта «Семья Аптраман» кĕнеке пичетленет. Унта валли «Халала» А.Казаков куҫарнă.

*Атнер Хусанкай* — тĕпчевҫĕ, филолог, наци юхăмĕн паллă ертӳҫи, Шупашкарта пурăнать.

**I. Несĕл.** Сыпăк 1946 ҫулта пичетленнĕ. 1948 ҫулта тухнă «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекене улшăнмасăр кĕнĕ. Кĕнеке хатĕрленĕ май сыпăка чылай анлăлатнă, 1957 ҫулта пичетленнĕ. Вырăсла А.Казаков куҫарнă, «Семья Аптраман» кĕнекене (1959) кĕртнĕ.

Малтанхи вариантра ҫакăн пек йĕркесем пур:

17—20.
Ун чухне ҫыру та пурччĕ,
Вăл калать: «Не нам, не нам,
А имени твоему», — тет, —
Турра имĕш, патшана.

21—22.
Чухлайман ăру аслашшĕ
Ҫав ҫыру мĕн иккенне.

25—26.
Чухлайман старик нимпе те:
Темскерле вăй ун чухне...

32.
Ак ҫапла юрланă-мĕн...

**II. Верук ҫырăвĕ.** Пĕрремĕш хут 1946 ҫулта «Аптраман тавраш» кĕнекере пичетленнĕ. Ун хыҫҫăн 1948, 1957 ҫулсенче

тухнă сыпăк вĕçне улăштарнă. 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕмен.

Малтанхи вариантра çапла çавра пур:

Сывă пул-ха. Трахпунктра
Ачасем кĕтеççĕ пуль,
Ак ĕнтĕ юхать куççуль.
Хĕрхенетĕп вĕсене,
Анчах ним тумалла мар, —
Çунтарма тивет хаяр...
Сывă пул! Илсессĕнех
Çырса яр. Кĕтме хал çук.
Сан тусу — пĕччен Верук.

**III. Вăрманта**. 1942 çулта «Илемлĕ литература» журналта «Аптраман Энтрипе тусĕ» ятпа пичетленнĕ.

1946, 1948 çулсенче тухнă кĕнекесене «Энтрипе унăн тусĕ» ятпа кĕнĕ. 1957 çулта «Вăрманта» ятпа тухнă. Вырăсла В.Потапова куçарнă.

235—253. Йĕркесене тĕп варианта (1957) хушса кĕртнĕ. Малтанласа вĕсем вырăнне урăх çавра пулнă:

Кĕç Мускав хыпарĕ анчĕ
Энтрисен казармине:
Вăрçă... — Ак хайхи! Тапранчĕ... —
Тет Энтри хăй юлташне.

«Что же! — терĕ Виктор Басов
Репродуктор умĕнче. —
Тăшман тапăнчĕ пулсассăн
Аркатар ним юлмиччен!..»

1951 çулта Н.Петров хăйĕн статйинче («Çĕнтерӳпе туслăх кĕввисем». Тăван Атăл. 3№) ку вырăна сивленĕ: «Аптраман тавраш» поэмăра... Викторпа Энтри вăрçă çине çăмăллăн пăхнă пек туйăнать». Çапла каланине Петĕр Хусанкай шута илнĕ, икĕ çаврине кăларса пăрахнă. «Вăрманта» сыпăкра вăрçă пуçланни паллă мар.

**IV. Тĕп çурт.** Пĕрремĕш хут 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере пичетленнĕ. 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере вырăсла тухнă. А.Казаков куçарнă.

**V. Натали кĕпе тĕрлет.** Сăвăллă романăн малтан çырнă сыпăкĕ. 1939 çулта «Ĕç хĕрарăмĕ» журналта, 1941 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнче «Çамрăк большевик» хаçатра пичетленнĕ. 1946 («Аптраман тавраш») тата 1948 («Сăвăсемпе поэмăсем», «Пирĕн çамрăксем») çулсенче пичетленсе тухнă. 1957 çулта чылай улăштарнă. Сыпăка вырăсла А.Недогонов куçарнă. Куçару 1947 çулта «Молодой большевик» хаçатăн 5-мĕш номерĕнче тухнă.

**VI. Пĕрремĕш кун.** Сыпăка 1941 çулта сăвăллă драма евĕрлĕ çырнă. Ал çыру Петĕр Хусанкай архивĕнче упранать. «Пĕрремĕш кун» малтанхи хут 1957 çулхи кĕнекене кĕнĕ. Вырăсла

А.Казаков куçарнӑ. 1959 çулта «Семья Аптраман» кӗнекере тухнӑ. Сыпӑк сайра сӑмахсемпе пуян.

19. Тӑваттӑри *улма-чӑпар...* — тӑватӑ çулхи улма-чӑпар тӗслӗ ут.

55—56. Шӑрçа, няням. Вӗттисене тухья çумне сӑрса ратчӗç... «*Няням*» тесе ачасене ачашласа чӗнеççӗ; *сӑрса яр* — çыпӑçтарса яр, çавӑрса çых, лартса тух.

72. Сарса илсен те сарӑп мар. *Сарӑп* — сиен.

105. Апат валемлесе паратчӗ. *Валемлесе* — пайласа, валеçсе.

144. Пӳлер хули таврашӗнчен... *Пӳлер хули* — Атӑлçи Пӑлхар патшалӑхӗн XII—XIII ӗмӗрсенчи тӗп хули. Тутар Республикинче хулаш вырӑнсем пур.

160. Турахупсем те тукалатчӗ... *Турахуп* — сӳс тасатмалли шӑрт.

175. Пӑятамсем кӑмӑлсӑрланнӑ... *Пӑятам* — упӑшка ашшӗ.

212. Макинтошӗ — теприн че. *Макинтош* — çумӑр витермен плащ.

246. Мольберт вӑл — чун пек япала. *Мольберт* — картина ӳкернӗ чухне усӑ курмалли станок.

280. Ку — хантӑсла, ку — мӗшкӗлле... *Хантӑс, мӗшкӗл* — масмак е кӗпе тӗррисен ячӗсем.

383—384. Сурпан çакнӑ хашакран. *Хашак* — сӑнӳкерчӗк лартмалли рама.

403. Ват суха пуçӗ, хӑйчикки, шӗшли, чакми, пур ӗлӗкхи... *Хӑйчикки* — хӑйӑ çунтармалли хатӗр; *чакма* — çулу.

465. ...Хрансус саманинчен варах... *Хрансус самани* — Франципе Раççей хушшинчи вӑрçӑ вӑхӑчӗ (1812—1814).

467. Хай леш... Наплюн патшапалах... *Наплюн патша* — Наполеон Бонапарт (1769—1821), Франци императорӗ.

470. Хӑйсен Парижӗнче кайран... Наполеонӑн арканнӑ çарне хӑваласа вырӑс çарӗ 1814 çулхи пуш уйӑхӗнче Парижа пырса кӗнӗ.

481. Пӗлтернӗ имӗш йӑнӑрал. *Йӑнӑрал* — генерал.

490. Ахаль салтак çеç мар — ехветтӗр. *Ехветтӗр* — ефрейтор.

607. Хӗветӗр ӗмпичче. *Ӗмпичче* — ашшӗн пиччӗшӗ, хисеплесе чӗнни.

612. Чӑм тӗл пултӑн — эс хӑна. *Чӑм* — сӑра савӑчӗ, кӑкшӑм.

647. Шур çӑмпа-мӗн хӑнтӑрланӑ. *Хӑнтӑрланӑ* — шараç, йӗсме тытнӑ. Кунта «шурӑ çӑмпа тытса тухнӑ» тесе ӑнланмалла.

675. Айвазовский çырнӑ тинӗс... *И. К. Айвазовский* (1817—1900) — вырӑссен паллӑ ӳнерçи. Ӳкерчӗкӗсем: «Тӑххӑрмӗш вал» (1850), «Хура тинӗс» (1881) т. ыт. те.

690. Пуçламан кӗрен мускат. *Мускат* — иçӗм çырлинчен тунӑ эрех.

711. Сӑрлӑ пыр пек йӳтемен-тӗр. *Сӑрлӑ пыр* — апата тиркекен çынна çапла калаççӗ.

790. «Ай-яй!» — тет ват Аптраман. Çак йĕркери «ват» сăмаха автор 1970 çулта пичетлеме хатĕрленĕ ал çырăвĕнче тӳрлетнĕ. 1957 çулта кĕнекере «ват» вырăнне «вăл» кайнă. Çак тӳрлетĕве П.Хусанкай Уйăп Мишшине парнеленĕ кĕнекене ятарласа кĕртсе хунă.

**VII. Шупашкар карлăкĕсем.** Сыпăк пĕрремĕш хут 1957 çулта тухнă кĕнекере пичетленнĕ. 1970 çулта уйрăм кĕнекен кăларма панă ал çырура пĕр йĕрке улăштарнă. Вырăсла 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере «Родная Волга» ятпа тухнă. Куçараканĕ — А.Казаков.

5. Союзăмăр — пĕр несĕл килĕ... *Несĕл* — тăван, йăх.

13. Янка Купала пурăнатчĕ Элкер Çеменĕ патĕнче... *Янка Купала* (1882—1942) — белорус халăх поэчĕ; *Çемен Элкер* (1894—1966) — чăваш халăх поэчĕ.

51. Сасун Давичĕн ырă килĕ... *Сасун Давичĕ* — эрмен халăх эпосĕн геройĕ. Кунта «Эрмен çĕршывĕ» тенине пĕлтерет.

71. Виçеллĕ: «Хальлĕхе эс кунăç!» *Кунăç* — çырлах, килĕш.

90. Юп курчĕ килсĕр çӳревçе. *Юп курчĕ* — ырă турĕ, хисеплерĕ.

138. Серебряный асаттесем, Тябуковсем сарса хăварнă... *Серебряный, Тябуков* — Шупашкар — Канаш çулне тунă çĕрте чапа тухнă чăваш çыннисем.

145. Айхăрса кĕçенчĕ капăр... *Айхăрса* — айхашса, тапранса кайса, тăпăртатса.

219. «Кам хулана? Кам вакуирнăй?» *Вакуирнăй* — «эвакуированнăй» тесе ăнланмалла.

315. Канасрах та пулĕ çавă... *Канасрах* — çăмăлтарах, канлĕрех.

316. Ухлĕм курăк çуласси...

*Ухлĕм курăк* — урăхла çерçи тырри, шурут та теççĕ.

331. Е шуçихурах пек урнă... *Шуçихурах* — шыв çинчи хурах.

404. Толстовка унăн çийĕнче... *Толстовка* — пиçиххиллĕ вăрăм кĕпе (Л.Толстой тăхăннăран çапла каланă).

**VIII. Петĕр çырăвĕ.** 1946 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере, ун хыççăн пĕр улшăнмасăрах 1948 çулта «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекере пичетленнĕ. 1957 çулта юсаса кăларнă. Çав кĕнекерен илсе пичетленĕ.

**IX. Натали вĕренет.** 1946 çулта «Аптраман тавраш», 1948 çулта «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекесенче пичетленнĕ. 1957 çулта çĕнетсе кăларнă. Вырăсла А.Казаков куçарнă, куçару 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере тухнă.

**Разведкăра**. 1942 çулта çырнă, «Илемлĕ литература» журналăн 9-мĕш кăларăмĕнче пичетленнĕ. 1946, 1948 çулсенчи кĕнекесене улшăнмасăрах кĕнĕ. Каярах темиçе хут юсаса çĕнетнĕ пулин те 1957 çулхи кĕнекене кĕртмен. Ниçта та пичетленмен. Юсанă варианта илсе кăтартатпăр:

Икĕ йĕкĕт, икĕ тантăш
Пурăнаççĕ ротăра:
Уйрăлмаççĕ нихăçан та,
Йĕкĕреш пекех вара.

Пурăнаççĕ тӳрĕ, ырă
Икĕ тантăш, ик юлташ.
Пĕр юлташĕ — сарă вырăс,
Тепĕри — хура чăваш.

Хăвăрах ĕнтĕ чухлатăр:
Виктор Басов вăл пĕри,
Теприне те астăватăр:
Аптраман текен Энтри.

Ак пĕрре иккен яраççĕ
Иккĕшне разведкăна.
«Тăвĕç, — теççĕ, — пултараççĕ,
Пиçнĕ, — теççĕ, — кăшт кăна...»

Икĕ йĕкĕт шăппăн кулнă,
— Ясно! — тенĕ итлесен.
Тăвасси пит йывăр пулнă,
Тем те килнĕ çав ĕçрен.

Канашлаççĕ те пăртакçă
Кăткăс вăрттăн хушупа
Васкаса тухса каяççĕ
Икĕ тантăш — пĕр тупа.

Хăш тĕлте кăшт чупкалаççĕ,
Хăш тĕлте тăхтаççĕ-ха
Е çĕре выртса тăнлаççĕ
Ĕненмесĕр шăплăха.

Хырăмпа шăвас та пулчĕ:
Тыр пусси, çаран, вăрман...
Кашни йывăç, кашни çулçă
Тем пытарнă пек санран.

Иккĕн мăч та куç хупмасăр
Тинкереççĕ тавралла.
Систермесĕр, курăнмасăр
Вĕсем кĕчĕç пит шала.

Тăшмансен тылне куç хыврĕç.
Курчĕç, пĕлчĕç мĕн пурне.
Асăрхарĕç пире хирĕç
Хатĕрленĕ вăйсене.

Йăпшăнса туссем выртаççĕ.
Ку мĕн? — Пĕчĕк ăвăссем
Куçкĕрет ураланаççĕ,
Хускалаççĕ пăхнăçем.

Пĕр-пĕрне туссем тĕртеççĕ,
Канашлаççĕ ерипе.
Ăвăссем лере пуплеççĕ
Темĕнле ют чĕлхепе.

Ку — пырать-мĕн вĕтлĕх витĕр
Фашистсен пĕр ушкăнĕ.
«Сирер мар-и, — терĕ Виктор, —
Çавсен ешĕл тумтирне?..»

Акă шатăртаттараççĕ
Икĕ тус автоматпа.
Фашистсем кĕç-вĕç тараççĕ,
Ыткăнаççĕ чăл та пар.

Урлă-пирлĕ тĕркĕшеççĕ
Васкарах пĕр-пĕринчен;
Чăлханса, атса пĕтеççĕ
Турат-çулçă ăшĕнче.

Хыçран хăйăр юхтарса та
Пуçран сĕрĕм вĕçтерсе
Тарчĕ ушкăн çăттă-çаттă
Тĕллемесĕр перĕшсе.

Ушкăн тарчĕ те хăварчĕ
Тем чухлех ăшă виле.
Каркаланчĕ хуçкаланчăк
Чĕр турат серепелле.

Выртăрах ăвăс çулçийĕ
Витĕнсе, ариецсем!
Ӳтĕре ак час хурт çийĕ,
Шăршă сарĕ çил вĕçсе.

Ешĕл çулçă та типеймĕ —
Сирĕнтен яланлăхах
Тарĕ «ырă йăх илемĕ»,
Çав-и чапăр, калăр-ха?

Савнă арăмăр та пур-тăр,
Ачăрсем те килĕрте...
Мĕн шырарăр — çавна тупрăр,
Урăх ыйтмăр нимĕн те.

Нимĕне те хапсăнаймăр,
Касăлтармăр нимĕншĕн.
Мĕн сире! Ефрейтор, ахăр,
Шухăшланă сирĕншĕн.

Вăл каларĕ: «Пулăр, — терĕ, —
Тивĕç Тимĕр хĕресе».
Йывăççи те лекеймерĕ,
Çакăнтах пĕтĕр çĕрсе...

Йĕрĕнсе пăхать те Басов
Пăрăнать вилесенчен.
Кĕç курать вăл: шăпăрт, сассăр
Тусĕ ун выртать иккен.

Пычĕ пăхрĕ — Аптраманăн
Юн тапать кăкăрĕнчен.
«Тусăм!.. Чĕрĕ-ха, аманнă...» —
Терĕ Виктор ăшĕнче.

Бинт кăларчĕ те вăл çыхрĕ
Хăй юлташĕн суранне.
«Тăну пур-и? — тесе ыйтрĕ. —
Пăх-ха, пăх-ха ман çине...»

Хăй сасартăк сăнран кайрĕ,
Тĕтреленчĕç куçĕсем.
Сиксе тухрĕ сивĕ тарĕ
Тусĕ хирĕç чĕнмесен.

Шыв сыптарчĕ ăна Виктор.
Энтри уçрĕ те куçне
Тем ĕнрешрĕ шăлĕ витĕр,
Вăл палларĕ пуль тусне.

Леш ăна ак ыталать те
Тапратать унпа шума.
«Ну, Андрей, мĕнле капла? —
тет. —
Çăмăлрах-и сывлама?..»

Аптраманĕ тапхăр-тапхăр
Йынăшса кăна илет.
Хăй çапах та — ан хăратăр
Тет пулас — пăртак пуплет.

«Ничего... — тет вăл. —
Пали!..» — тет.
Аташа пуçлать каллех.
Виктора асап пулин те
Шăватех вăл унпала.

Путăк-шăтăк, тикĕс мар çĕр,
Ёлкĕресчĕ-çке çитсе...
Ку енче кĕтсе тăраççĕ
Юлташсем, командирсем...

Вăрмантан та тухрĕç акă,
Кĕчĕç сар ыраш ăшне.
Шăвăнаççĕ те — сукмакăн
Йĕр юлать вĕсен хыçне.

Ăнсăртран тăшман сăнарĕ,
Куç хывать вăл çав йĕре.
Хăй йыттисене кăтартрĕ,
Йĕрпеле вĕслеттерет.

Сĕлеке тăкса юртаççĕ
Ик уралла йытăсем.
Юн шăршипеле ураççĕ,
Сунмĕç тейĕн çитессе...

Хуса çитрĕç те пĕр харăс
Ячĕç выççăн кăшкăрса.
Иккĕшне те илсе кайрĕç
Сĕтĕрсех ак допроса.

Фашист пуçлăхĕ пуçларĕ
Хăй ĕçне Аптраманран.
Темшĕн вăл салтма каларĕ
Суранне унне малтан.

Ёненмест-и е курасшăн
Вăл Энтрийĕн чĕрине...
Çăхансем кăрт-карт туртаççĕ
Юнпа хытнă çыххине.

Салтса ячĕç. Куçне хупнă,
Шăлне çыртнă Аптраман.
«Ну, кала, — тет салă кӳпнĕ
Сысна куçлă юнсăхан. —

Миçе тупă унта сирĕн,
Миçе танк пур хатĕрри?
Фанертан вĕсем е çирĕп?..»
— Эп пĕлместĕп, — тет Энтри.

«Ах, пĕлместĕн! Час пĕлтерĕп...
Урăхла пуплем санпа...» —
Тет те нимĕç офицерĕ
Чышкипе питрен çапать.

Аптраман пуçне сулларĕ.
«Эп пĕлместĕп», — тет каллех.
Çиллине шăнараймарĕ
Тарăхса çитен палач.

Талăрса, хĕрелсе кайрĕ
Вăл тăлмач куçарсанах.
Каллĕ-маллĕ уткаларĕ,
Хăй чеен хушать сăмах:

«Эс... мĕскер эс пытаратăн?
Сан патшалăху ăçта?
Мĕншĕн санăн, азиатăн,
Çапăçас-ха çакăнта?

Ав вăл, вырăс... вăл пытарĕ,
Ун патшалăхĕ пур çав.

А сана мĕн! Пĕрех мар-и
Кам пулсассăн та хуçа?..»

Куçарать тăлмач... — Çук! — терĕ
Аптраман Энтри хытах.
Басов шăп-шăпăрт итлерĕ:
Мĕн хăтланĕç-ши тата?

Тилĕрет, урать палачĕ:
Çавăнтах Энтрийĕнне
Аллине пăркăчлаттарчĕ,
Йĕп чикет чĕрни айне...

Виктор урăх тӳсеймерĕ:
«Мĕн тăватăр, эсрелсем?!
Чунăр пур-и сирĕн? — терĕ, —
Ярăр, хам эп пĕлтерем...»

Палач савăнчĕ: «Пит лайăх!
Пултаратăн, вырăс, — тет, —
Сып-сывах кунтан эс кайăн,
Асапламăпăр пĕртте...»

Аптраман илтет çав тарăх
Тĕпĕнчен тухан сасса.
Вăл пĕлет ăна... сасартăк
Хăй каять кăвакарса.

Хура çӳçĕ ун чалланчĕ
Пĕр самант вăхăтĕнчех.
«Виктор... Басов...» Энтри манчĕ
Ыратан суран çинчен.

«...Е чăнах тăшмана калĕ
Виктор хамрăн вăрттăна?..»
Аптраманăн ăсĕ халĕ
Вырăнтан хускалнăнах...

Виктор хатĕр «каламашкăн»:
Пычĕ те палач умне
Тăхăнтарчĕ вăл сулмаклăн
Тăнлавран ак хайхине.

«Акă ман сăмахăм!» — терĕ.
Фашист ӳкрĕ çаврăнса.
Çавăнтах тепри тĕллерĕ
Пăшалпа ăна вăрçса.

Çавăнтах пăшал шартлатрĕ,
Анчах Виктор — вырăнтах.
Хăй кусне хăй те шанмарĕ,
Мĕн курать-ха вăл кунта?

Леш пăшал тытса тĕлленĕ
Нимĕç тӳннĕ, ыттисем...
Йăлт аллисене çĕкленĕ,
Комиссар кĕрет килсе.

Салтаксем кĕшĕлтетеççĕ:
— Халĕ! Комиссар юлташ!
Ку вĕт пирĕн Басов! — теççĕ.
Комиссар кулать: «Чăн та!»

Аллинче наганĕ унăн,
Вăл палларĕ Виктора.
Аптраман та ăна курнă,
Вăл хăех тăрса ларать.

Комиссар выртма каларĕ
Пырсанах Энтри патне.
«Хăвăрт! Госпитале ярăр.
Çыхăр, — терĕ, — суранне».

Йăтрĕç Энтрие тăваттăн,
Алă пачĕ комиссар:
«Ну, часрах чĕрĕлсе таврăн,
Çапăçар-ха... Тавăрар!»

Виктор Басов ыталарĕ
Çывăхран-çывăх тусне,
Нимĕскер чĕнме аптрарĕ,
Шăлчĕ çех кăвак куçне.

«Çыр... Андрюша!» —
кăшт тăрсассăн
Кăшкăрать вăл хыçĕнчен...
Çын нумай пулин те Басов
Çав тери паян пĕччен...

Туслăх, туслăх! Пĕрех мар-и
Сан ăшшу çак тĕнчере?
Канлĕ ĕç, вăрçă пушарĕ —
Пур тĕлте те чĕр чĕре.

Анчах чи хăватлă ĕмĕт
Чĕрене çунат хушсан
Ун чух туслăх та-мĕн ĕмĕр
Пĕрĕнми çунатлă сан.

Вăркăшать çунат çав анлăн,
Хӳтĕлет сан шанчăкна.
Ăнсăртран вăл амансассăн —
Ху аманнă пек сана.

Сана йывăр, сана хурлăх;
Ун чĕри таппи çинчен
Ял-ял урлă, хула урлă
Эс пĕлетĕн, эс илтен...

**X. Ашшĕн çырăвĕ.** Сыпăк 1942 çулта «Илемлĕ литература» журналта пичетленнĕ. 1946 тата 1948 çулсенчи кĕнекесене кĕнĕ. 1957 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче «Çамрăк коммунист» хаçатра çĕнĕлле пичетленнĕ. Вырăсла А.Казаков куçарнă, 1959 çулта тухнă «Семья Аптраман» кĕнекене кĕртнĕ. 1970 çулта пичетлесе кăларма хатĕрленĕ ал çыруран илнĕ.

**XI. Госпитальре.** 1941 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере «Аптраман Энтри сăвă çырать» ятпа пичетленнĕ, 1948 çулта тухнă «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекене улшăнмасăр кĕнĕ. 1957 çулта çак сыпăк çĕнелсе «Госпитальте» ятпа пичетленнĕ. Вырăсла С.Поделков куçарнă.

**XII. Агитпунктра.** Сыпăк 1946 çулта тухнă «Аптраман тавраш» кĕнекене кĕнĕ, 1948 çулта «Сăвăсемпе поэмăсенче» пĕр улшăнмасăрах пичетленнĕ. Сыпăка кĕнекене (1957) кĕртес умĕн пăхса тухса якатнă. Вырăсла С.Поделков куçарнă, 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере тухнă.

**XIII. Натали — медсестра.** Сыпăк пĕрремĕш хут 1942 çулта «Илемлĕ литературăн» 9-мĕш номерĕнче тухнă. 1946 çулта «Аптраман таврашра», 1948 çулта «Сăвăсемпе поэмăсенче» пичетленнĕ. 1957 çулта тухнă «Аптраман тавраш» кĕнекене çĕнетсе кĕртнĕ. Вырăсла С.Поделков куçарнă, 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере пичетленнĕ.

**Натали Петĕре фронтран çырать.** Пĕрремĕш хут 1946 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере, ун хыççăн 1948 çулта «Сăвăсемпе поэмăсенче» пичетленнĕ. 1957 çулта кăларнă «Аптраман тавраша» кĕртмен.

Çыраймарăм кутăруçăн,
Хăвăнтан та пит илмен...
Пĕлтерем сана эп, тусăм,
Пĕр грузин ачи çинчен.

Нумаях пулмасть пит вирлĕн
Вăрçнă чух çав грузина
Йăтса тухрăм... Халь вăл пирĕн
Госпитальре. Юсанать.

Вано ятлă вăл. Амантнă
Уринчен мăнтарăна.
Халь хавас вăл шўт тума та,
Тен, строя час таврăнать.

Хушамачĕ ун Сухадзе,
Кулăшла пек туйăнать.
Хăш чухне вара «сухаçă»
Тетĕп эп кулса ăна.

— Халь суха — кивелнĕ хатĕр,
Кая юлнă, — тетĕп те,
«Юлтăм çав, юрать-ха трактор
Сĕтĕрет...» — тесе тĕртет.

Эп ăна хам трактористка
Пулнине пĕлтернĕччĕ...
А ун аппăшĕ — артистка,
Паллă тет хăйсен енче.

Хăй пахчаçă — бригадир вăл:
Сыпать тĕрлĕ улмуççи,
Ĕрчетет инжир та слива,
Ну — колхоз мичуринçи.

Эп унпа йăлтах туслашрăм,
Пит çемçе кăмăллăскер,
Хам пичче пекех юратрăм,
Эс ан шухăшла темскер...

Вăл пит йывăрччĕ малтан та,
Часрах чĕрĕлтĕр тесе
Хам юна ăна эп патăм;
Халь пырать вăл тĕкелсех.

«Эпир ĕнтĕ пĕртăван халь,
Тен, тата та çывăхрах...
Мĕскерпе эп тав тăвам-ха?» —
Тет ялан мана вара.

Çĕнтерӳ вĕт ку! Ку пултăр
Малтанхи сăнавăм ман.
Ну ытти... ытти те пур та,
Медицина енпе мар.

Ун çинчен шарламăп халĕ...
Сывă пул та паттăр пул!
Ыран пурăнăç мĕн калĕ,
А паян ман паллă çул.

**XIV. Парне.** 1946 çулта «Аптраман тавраш», ун хыççăн 1948 çулта «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекесене кĕнĕ. 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере çĕнетсе пичетленĕ. Вырăсла С.Поделков куçарнă, 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕртнĕ.

**XV. Илмен кӳлĕ хĕрринче.** 1942 çулта «Илемлĕ литературăн» 9-мĕш номерĕнче пичетленнĕ. 1946 çулта «Аптраман тавраш», 1948 çулта «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекесенче тухнă. 1957 çулта «Аптраман тавраш» тата 6-мĕш класра вĕренмелли «Тăван литература» кĕнекесенче пичетленнĕ. Сыпăка вырăсла С.Поделков куçарнă, 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕртнĕ. Сыпăк 1961 çулта пăлхарла (куçаруçи И.Дашев) «Болгарский воин» журналăн иккĕмĕш номерĕнче пичетленнĕ.

**XVI. Аптраман кăмака шăлать.** 1942 çулта «Илемлĕ литературăн» 9-мĕш номерĕнче «Аптраман Энтри кăмака шăлать» ятпа пичетленнĕ. 1946 («Аптраман тавраш»), 1948 («Сăвăсемпе поэмăсем») çулсенче тухнă. 1957 çулта («Аптраман тавраш») кăштах улăштарнă. Вырăсла С.Поделков куçарнă.

**XVII. Сарлака çунат.** Пĕрремĕш хут 1955 çулта «Тăван Атăл» журналăн 1-мĕш номерĕнче пичетленсе тухнă. Ун хыççăн автор сыпăка юсаса çĕнетнĕ. Çĕнĕ варианчĕ 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекене кĕнĕ. Вырăсла А.Казаков куçарнă, 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере пичетленнĕ.

Малтанхи вариантра (1955) 236-мĕш йĕрке хыççăн романа кĕмен 17 çавра пулнă:

Çав кунах, хĕвел ансассăн,
Тавтапуç тесе калан
Телеграмма та васкавлăн
Çитрĕ акă Сталинран.

Хĕпĕртерĕç, хавхаланчĕç
Ял-йышсем калама çук.
Кил-йышне те савăнтарчĕ
Председатель килте чух:

«Самолет колхоз туянĕ,
Сталин хăй хута кĕрет:
— Сирĕн ĕмĕт пурнăçланĕ,
Илья Федорович, — тет».

Ашшĕ, аслă Аптраман,
Куçĕсем раснан таса.
«Хулăн хутлă телеграмĕ», —
Терĕ вăл хыпаланса.

«Чим, Хĕветăрччă тесе
Ман ятпах каланă тем?
Куншăн — халь çĕре кĕрсен
Нимĕн те шикленмĕттĕм!

Мĕнле çын та ман çинчен
Шухăшлать пулать иккен!
Мĕнле çын та ман ята
Астуса тăрать унта!

Кам ачи? — Хĕветĕрĕн!
Аптраман тесех çырать-и?
Тен, паян ехветтĕрĕн
Миталне çакма юрать-и?

Сăпани! Ăçта-ха пирĕн,
Ăçтарахчĕ парне пирĕ?
Пир тăрăхĕпе çавна
Чĕркемĕрĕн-и?» — Чăнах,

Чăн, илсе кĕрем, аслашшĕ,
Ан вырттар ахаль ăна.
Пирĕн пек çынна манманшăн
Тавтапуç ку Сталина!

* * *

Çуркунне кунсем те вăрăм,
Лампа çутрĕ кин çапах.
Тăрпине кăшт ернĕ хăрăм,
Сăтăрать вăл тăрăшсах.

Ун хунямăшĕ, хуняшшĕ
Тăрăх сак çинче, малта.
Сăпани пуплет: — Аслашшĕ,
Эс те пулнă-çке салтак? —

«Ну вара?» — Сана çар пуçĕ
Çавнашкал хисеп туса
Çыру янăччĕ-и? — «Çук çав,
Ун чухне патша пулса,

Патшасем вĕсем пит ямĕç...»
Тĕпелте, сĕтел çинче,
Халь те Сталин телеграмĕ,
Вулаттарчĕç темиçе.

Чылайччен пуплеççĕ кĕçĕр
Кил-йышра савăннипе.
Сăпани те акă вĕçсĕр
Калаçать мăшăрĕпе:

— Эх, старик! Эпир пурнатпăр,
Мĕнле пурăнĕç сынсем?
Йыш çинче кăна-çке паттăр,
Вăй пулсассăн та этем. —

«Ну, çак карчăк вара манăн!
Пур тĕнчешĕн кулянать.
Çын пурнаймасран хăранăн,
Çын — хăй те çапла калать».

— Çăмăл мар-çке-ха, аслашшĕ,
Пурте — халăх чунĕсем... —
Вăрахчен пырать канашĕ
Хăй çутисĕр те вĕсен.

**XVIII. Коммунист тесе хисеплĕр.** Сыпăк пĕрремĕш хут 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере пичетленнĕ. Вырăсла С.Поделков куçарнă. 1957 çулта «Советская Чувашия» хаçатра, 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере кун çути курнă.

75. Варăшрах пĕр сăрт хысакĕ. *Варăшрах* — вашăкрах сăрт.

110. Тенĕ «фокке вульф» сĕрлет. *«Фокке-вульф»* — фашистсен çар самолечĕ (завод ячĕ).

185. Лăчăр-лăчăр путмарпа... *Путмар* — йывăç сак.

191. Тăварпа кăшт тамалтарнă... *Тамалтарнă* — тасатнă, çутатнă.

202. Тав, мерттес салтак тусне! *Мерттес* — тавтапуç.

422. «Хенде хох!» сăмах вăл илтрĕ... *Хенде хох* — нимĕçле «аллуна çĕкле» тени пулать.

538. «Тельман, Тельман. Гитлер çук!» *Эрнст Тельман* (1886—

1944) — Германири тата пĕтĕм тĕнчери рабочи юхăмĕн паллă ертӳçи, фашистсем Бухенвальд концлагерĕнче тискеррĕн вĕлернĕ.

**XIX. Телей.** 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере пичетленнĕ. А.Казаков куçарни 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере тухнă.

**XX. Польшăри пĕчĕк хулара.** 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере пичетленнĕ. Вырăсла А.Казаков куçарнă, «Семья Аптраман» кĕнекене кĕртнĕ.

**XXI. Варвари инке.** Малтан 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере пичетленнĕ. А.Казаков куçарăвĕ 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕнĕ.

**XXII. Генерал чĕнет.** 1957 çулхи «Аптраман тавраш» кĕнекерен илнĕ. С.Поделков вырăсла куçарни «Советский воин» журналта (1957, 8№) тата «Семья Аптраман» кĕнекере (1959) пичетленнĕ.

**XXIII. Хамăр ял**. Малтан 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере пичетленнĕ. Вырăсла С.Поделков куçарнă. Куçару 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕнĕ.

**XXIV. Таврăну.** 1957 çулта «Аптраман тавраш» кĕнекере пичетленнĕ. 1960 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче «Марий коммуна» ятлă çармăс хаçатĕнче тухнă (çармăсла куçараканĕ — М.Казаков). Вырăсла П.Дружинин куçарнă, 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕнĕ.

**XXV. Сывлăш çаврăни.** 1957 çулта «Аптраман тавраш-ра» пичетленнĕ. 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕртнĕ. Вырăсла куçараканĕ — А.Казаков.

**XXVI. Килте.** «Аптраман тавраш» кĕнекерен илнĕ. «Семья Аптраман» кĕнекере (1959) вырăсла тухнă. Куçаруçи — П.Дружинин.

**XXVII. Кĕрхи хыпар.** Сыпăка чи малтан 1957 çулта «Аптраман таврашра» пичетленĕ. Вырăсла куçарăвĕ (А.Казаков) 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕнĕ.

**XXVIII. Ыт-тĕкел.** Малтан 1954 çулта «Ялавăн» 10-мĕш номерĕнче пичетленнĕ. 1957 çулта «Аптраман тавраша», вырăсла куçарни (А.Казаков куçарнă) 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекене кĕнĕ.

**XXIX. Сывпуллашу.** Пĕрремĕш хут 1957 çулта «Аптраман таврашра», ун хыççăн 1959 çулта «Семья Аптраман» кĕнекере (А.Казаков куçарнă) пичетленнĕ.

25. Ĕшеннĕ, йăшнă, суптăрканă... *Суптăрканă* — халран кайнă, вăйĕ пĕтнĕ.

## АЧА-ПĂЧА ВАЛЛИ ÇЫРНИСЕМ

**Сулпикепе Валĕм хун.** Сăвăланă юмах шкул ачисен юратнă хайлавĕ пулса тăнă. Ăна 1939 çулта çырнă. Юмах нумай хутчен пичетленнĕ.

Çырнисен пуххине Шупашкарта 1963 çулта уйрăммăн кăларнă кĕнекерен илнĕ (тӳрлетӳçи — Александр Галкин сăвăç).

**Итлемен Илтепи.** Вăрçăччен çырнă. «Юмахсем» (1953) кĕнеке тăрăх пичетленет.

**Кăвакарчăн. Çарăк.** Тăван çĕршывăн аслă вăрçи умĕнхи çулсенче Петĕр Хусанкай ача-пăча валли сăвăллă юмахсем самай ăсталанă. 1941 çулта «Хатĕр пул» журналта унăн «Кăвакарчăн» (2№) тата «Çарăк» (4№) пичетленнĕ.

Сăвăллă юмахсем 1953 çулта «Юмахсем» ятпа уйрăм кĕнекен тухнă. Çавăнтан илсе пичетленĕ.

**Тăван çĕршыв.** Поэмăна 1948 çулта шкул ачисем валли ятарласа çырнă. Вăл 1950 çулта пичетленнĕ. Каярахпа пайсене хушса тӳрлетнĕ, Совет Союзне туса хунăранпа 50 çул тултарнине палăртса 1972 çулта тепĕр хут кăларнă. «Çырнисен пуххине» çав кăларăмран илсе кĕртнĕ.

Çурчĕ пысăк çав хатер. *Хатер* — анатри пуплев сăмахĕ, «çав тери» теме юрать.

Шупăрĕ çумне — шупăр. *Шупăр* — вирьял сăмахĕ, паха пир-авăртан çĕлетнĕ çиелти шурă тум.

*Габдулла Тукай* (1886—1913) — тутар халăхĕн чаплă сăвăçи.

Ĕлĕк тĕттĕм çĕр тесе Пуç яран вăрманлăхра... — *Пуç яран*, пуç илене яран — пăлхавçăсене, халăх ĕçĕшĕн кĕрешекенсене аякри тĕттĕм çĕрсене тытса яни, хупса хуни.

*Муса Джалиль* (1906—1944) — тутар халăхĕн паттăр ывăлĕ, чаплă сăвăçи, Ленин премийĕн лауреачĕ, Совет Союзĕн Геройĕ.

Шурă кăмăс хăпарать... *Кăмăс* — кĕсре сĕтĕнчен йӳçĕтсе тунă сиплĕ уйран.

«Калевала» çеммине... *«Калевала»* — карел халăхĕн авалхи паттăрлăх халапĕ (эпосĕ).

*Джамбул Джабаев* (1846—1945) — казах халăхĕн чаплă юрăçи, акынĕ.

*Алишер Навои* (1441—1501) — узбек сăмахлăхĕн классикĕ, тĕпчевçĕ, ăсчах.

*Низами* (1141—1209) — азербайджан халăхĕн чаплă сăвăçи, тĕпчевçĕ.

*Шота Руставели* (XII ĕмĕр) — грузи халăхĕн чаплă сăвăçи, «Тикĕр тирĕллĕскер» поэма авторĕ. Ку поэма сыпăкĕсене чăвашла Петĕр Хусанкай, каярахпа пĕтĕмпех Петр Семенов куçарнă.

*Саят-Нова*, чăн ячĕ Арутюн Саядян, (1712—1795) — эрмен халăхĕн гусанĕ, чаплă сăвăçи, эрменле, грузилле, азербайджанла çырнă.

ХТЗ çӳрет хирте... *ХТЗ* — Харьковри трактор завочĕ кăларнă кача урапаллă малтанхи тракторсем.

*Т.Г.Шевченко* (1814—1861) — украина халăхĕн паттăр ывăлĕ, чаплă сăвăçи, художникĕ, шухăшлавçи, революционерĕ.

***Виталий СТАНЬЯЛ***

# ТУПМАЛЛИ

Чăваш поэзийĕн çар пуçĕ. *В. Станьял.* . . . . . . . . 3

**ЭПИКĂЛЛĂ ПОЭМĂСЕМ**

Çĕрйĕркелӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Магнитту . . . . . . . . . . . . . . . . . . 35
Атач атакĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Сăрт-ту ĕçченĕсен юрри . . . . . . . . . 43
Пĕве . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
Чугунпа чугунçăсем . . . . . . . . . . . 54
Таня . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 69

**АПТРАМАН ТАВРАШ**
*(сăвăллă роман)*

Халал . . . . . . . . . . . . . . . . . . 102
I. Несĕл . . . . . . . . . . . . . . . . . 104
II. Верук çырăвĕ . . . . . . . . . . . . . 109
III. Вăрманта . . . . . . . . . . . . . . 111
IV. Тĕп çурт . . . . . . . . . . . . . . . 118
V. Натали кĕпе тĕрлет . . . . . . . . . . 123
VI. Пĕрремĕш кун . . . . . . . . . . . . 128
VII. Шупашкар карлăкĕсем . . . . . . . . 150
VIII. Петĕр çырăвĕ . . . . . . . . . . . . 170
IX. Натали вĕренет . . . . . . . . . . . 172
X. Ашшĕн çырăвĕ . . . . . . . . . . . . . 181
XI. Госпитальре . . . . . . . . . . . . . 184
XII. Агитпунктра . . . . . . . . . . . . . 187
XIII. Натали — медсестра . . . . . . . . 192
XIV. Парне . . . . . . . . . . . . . . . . 196
XV. Илмен кӳлĕ хĕрринче . . . . . . . . 200
XVI. Аптраман кăмака шăлать . . . . . . 204
XVII. Сарлака çунат . . . . . . . . . . . 207

XVIII. Коммунист тесе хисеплĕр . . . . . . . . . . 220
XIX. Телей . . . . . . . . . . . . . . . . . 235
XX. Польшăри пĕчĕк хулара . . . . . . . . . . . 245
XXI. Варвари инке . . . . . . . . . . . . . . 259
XXII. Генерал чĕнет . . . . . . . . . . . . . 264
XXIII. Хамăр ял . . . . . . . . . . . . . . . 270
XXIV. Таврăну . . . . . . . . . . . . . . . 277
XXV. Сывлăш çавăрни . . . . . . . . . . . . . 291
XXVI. Килте . . . . . . . . . . . . . . . . 294
XXVII. Кĕрхи хыпар . . . . . . . . . . . . . 318
XXVIII. Ыт-тĕкел . . . . . . . . . . . . . . 328
XXIX. Сывпуллашу . . . . . . . . . . . . . . 333

**АЧА-ПĂЧА ВАЛЛИ ÇЫРНИСЕМ**

Сулпикепе Валĕм хун *(юмах)* . . . . . . . . . . 339
Итлемен Илтепи *(юмах)* . . . . . . . . . . . . 367
Çарăк *(юмах)* . . . . . . . . . . . . . . . 378
Кăвакарчăн *(юмах)* . . . . . . . . . . . . . 380
Тăван çĕршыв *(поэма)* . . . . . . . . . . . . 389
*Ăнлантарусем* . . . . . . . . . . . . . . . 426

ОРДЕНА «ЗНАК ПОЧЕТА»
ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
ГУМАНИТАРНЫХ НАУК
ПРИ КАБИНЕТЕ МИНИСТРОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПЕТĔР ХУСАНКАЙ
ÇЫРНИСЕН ПУХХИ
**Тăваттăмĕш том**

ПЕДЕР ХУЗАНГАЙ
СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ
**Том четвертый**

Редколлегия:

**Ю.М.Артемьев, В.В.Никифорова, В.Г.Родионов, В.П.Станьял, А.П.Хузангай**

Составитель и автор комментариев
**В.П.Станьял**

Редактор ЧГИГН *В.П.Станьял*. Редактор издательства *Р.К.Куприянова*. Художник *В.Н.Гончаров*. Художественный редактор *Н.Н.Тихонова*. Технический редактор *Л.К.Егорова*. Корректоры *Г.И.Алимасова, Т.И.Кириллова, Н.П.Печникова, А.Г.Владимирова, З.И.Гаврилова*. Компьютерная верстка *М.В.Филипповой*.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—953003. Изд. лиц. №06317 от 26.11.01. Подписано к печати 28.04.03. Формат 84x108 1/32. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 25,2. Учетно-изд. л. 26,31. Тираж 1000 экз. Заказ № К-3807. Изд. №29.

РГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12б. РГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

**Хусанкай П.П.**

Х 98 Ҫырнисен пуххи. Тӑваттӑмӗш том. Эпикӑллӑ поэмӑсем, «Аптраман тавраш» сӑвӑллӑ роман, юмахсем. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2003. — 479 с.

Ҫырнисен пуххин тӑваттӑмӗш кӗнекине чӑваш халӑх поэчӗ П.П.Хусанкай 1930—1956 ҫҫ. ҫырнӑ «Ҫӗрйӗркелӳ», «Магнитту», «Таня», «Тӑван ҫӗршыв» поэмӑсем, «Аптраман тавраш» сӑвӑллӑ роман тата ача-пӑча юмахӗсем кӗнӗ. Вӗсене хӑҫан ҫырнине кура вырнаҫтарнӑ. Кӗнеке вӗҫӗнче ӑнлантарса панисем пур.

**УДК 821.512.111**

**ББК 84 (2 Рос=Чув) — 4**

**ISBN 5-7670-1283-0**

66=00



Чăваш кĕнеке издательстви